К83.39(=Чув)6-8
К 89
Ч-45273

Владимир КУЗЬМИН

МАН МĂН ПУРНĂÇ

иккĕмĕш кĕнеке

Национальная библиотека ЧР
4-045273

К83.3(=Чув)6-8
К89

Владимир КУЗЬМИН

МАН ПУРНĂÇ – МĂН ПУРНĂÇ

Иккĕмĕш кĕнеке

Шупашкар
2013

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-4
К 89

К 89 **Кузьмин В.П.**
Ман пурнăç — мăн пурнăç. 2-мĕш кĕнеке. Шупашкар, 2013. — 468 стр.

Проверено 22 МАР 2017

Ч-45273

национальная библиотека
Чувашской Республики

© Кузьмин В.П., 2013

УМĔН КАЛАНИ

«Ман пурнăç - măн пурнăç» мăн хайлавăн пĕрремĕш кĕнеки Шупашкарти «Çĕнĕ вăхăт» издательствăра 2007 çулта пичетленсе тухнăччĕ.

Унта эпĕ хамăн ачалăхран пуçласа журналистикăна тухнă тертлĕ те интереслĕ çыру çулĕ çинчен каласа панăччĕ. Вăрнар, Элĕк, Йĕпреç районĕсенче тата республикăри «Çамрăк коммунист» хаçатра пуç мимине мĕнле тарлаттарса ĕçлени, хама çырма вĕрентекен, пулăшакан, çав хушăрах ура хуракан хура чунлă çынсен портречĕсене сăнарланăччĕ.

Пурнăçри йывăрлăхсене пурне те çĕнтерсе эпĕ хăюллăн малалла талпăннă, умри тĕллевсене пурне те тенĕ пекех пурнăçланă. Çавăнпа халĕ хама хам телейлĕ тесе шутлатăп.

«Ман пурнăç - măн пурнăçăн» иккĕмĕш кĕнеки: 1974 çултан - паянхи кунччен. Манăн нумай çулхи ĕç Чăваш журналистикин историйĕнчен пĕртте катăлса юлман пуль тесе мухтанма та пултаратăп.

Автор.
2012 çул.

КАЛЛЕХ ШУПАШКАРТА - ПИЧЕТ ÇУРТĔНЧЕ
«КАШКĂРСЕН ЙĂВИ» ТЕ ĂШĂ

СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ Орган Чувашского обкома КПСС, Верховного Совета и Совета Министров Чувашской АССР

Шупашкара куçмалли ыйтусем хăвăрт татăлса пычĕç, мĕншĕн тесен эпĕ Йĕпреçрен «Советская Чувашия» хаçата хам ирĕкпе ыйтса каймастăп-çке, обком йышăнăвĕпе куçатăп. Николай Анатольевич Вороновский вилнĕ хыççăн партин Чăваш обкомне ертсе пыма Илья Павлович Прокопьева суйланăччĕ. Ун вырăнне идеологи ыйтăвĕсемпе ĕçлеме, пушаннă пукана Александр Петрович Петров йышăннă. Михаил Иванов редакторпа идеологи секретарĕ патĕнче калаçура пултăмăр. Петров юлташ мана ăнăçу сунчĕ. 1974 çулхи çурла уйăхĕн 2-мĕшĕнче обком бюроне чĕнчĕç, парти пурнăç пайĕн заведующийĕ тата редколлеги членĕ пулма çирĕплетрĕç. Тепĕр вичĕ кунтан Михаил Иванович приказ çырчĕ.

Кузьмин Владимир Прокопьевич родился 19 августа 1937 года в д.Хорнзор Вурнарского района ЧАССР. Окончил Вурнарскую среднюю школу и Горьковскую высшую партийную школу. Служил в Советской Армии. Работал в Вурнарской, Аликовской, Ибресинской райгазетах и республиканской газете «Молодой коммунист». Пишет очерки, фельетоны, рассказы. Член Союза журналистов СССР.

Эпĕ ĕнтĕ каллех Шупашкарта - мухтава тухнă Пичет çуртĕнче.

Редактор мана хăйĕн ĕçтешĕсемпе паллаштарчĕ. Унăн çумĕ Василий Степанович Подузов 3-мĕш хутри урам енчи пӳлĕме илсе кайрĕ. Унта пропаганда пайĕпе ман пай пĕрле иккен. Манăн литсотрудник Константин Иванович Филин. Пропаганда пайне Исаак Кириллов ертсе пырать. Пулăшаканĕ унăн - Иван Николаевич Кузьмичев. Мана шăпах Подузов ларнă пукан кĕтнĕ.

Редакторăн тепĕр заместителĕ Алексей Иванович Муллин промышленность, строительство аталанăвĕпе, экономикипе

ăнăçлă ĕçлени палăратчĕ. Ун вырăнне халĕ Чăвашрадиоран Николай Михайлович Скока илсе пынă. Çамрăкскер. Михаил Иванович арăмĕ Валентина Андреевна тытса пыракан редакцире журналист ăсталăхне вĕреннĕскер. Çапах та Муллин, ун аталанăвне сăнаса тăнă май, ăна пулăшать.

Пичет çурчĕ

Редакци штабне Вениамин Григорьевич Станюков ертсе пырать. Пур материал та яваплă секретарь алли витĕр тухать. Ял хуçалăх ыйтăвĕсене çутатассишĕн Анатолий Федорович Никонов хуравлă. Эпир вĕреннĕ чухне Михаил Ивановичпа иккĕшĕ вĕсем Чулхулана партшкул çумĕнчи курсра ăс пухма пынăччĕ. Вăл килĕнчи çĕр лаптăкĕнче ӳстернĕ пахча-çимĕçне, улма-çырлана тăварлама-консервлама-пылаклатма маçтăрри çинчен пĕлтĕмĕр. Шупашкарти пĕр пульницара тĕп врачра ĕçлекен арăмĕ ăна чăматанĕпех çав банкăсене тултарса «канма» ăсатнă. Чăматан пек тепĕр мăн сумкинче унăн тем тĕрлĕ майпа тутлантарса хатĕрленĕ, типĕтнĕ-тăварланă пулăччĕ. Сăрпа Атăл пулăçи чăваш ачисене хăналатчĕ. Ял хуçалăх пайĕнче ăна, вырăнта ларма пĕлмен юмахçа, Григорьева Юлия Григорьевна хытă пулăшать иккен. Нина Петровна Полянская витĕмлĕ, кăсăклă статьясем çырать. Евгений Павлович Мешалкин никама мешать тумасăр (кансĕрлемесĕр) пуçа чиксе, пирус мăкăрлантарать. Михаил Прокопьевич Ижеев, эп Вăрнарта чухне, ялан Кульцава çӳретчĕ, халĕ те Сергей Коротков председатель мыскарисене аса илет. Василий Яковлевич Яковлев (Виссарион Веников), хăйĕн фельетонне номере лартманшăн, ответлă секретарьпе чашкăрса илчĕ. Тепĕр фельетонист-кулăшçă Анатолий Иванович Финько вĕсем хушшинче сăхсăхса ларать. Собкорсене чĕнмелли кун пулнă пулас. Петр Гурьевич Кольцовпа Леонид Павлович Решетников хăйсенчен çамрăкрах Лев Леонидович Кузьмина çырма «вĕрентеççĕ». Лешĕ те, Свердловск университетĕнче журналистикăна вĕреннĕ, унти «стариксемпе» пĕр пăт кăна мар тăвар çисе янăскер, вĕсене хăйсене сăнарлăрах çыртарасшăн курăнать. Ленинград универ-

ситетĕнче арăмĕпе пĕрле вĕреннĕ Михаил Иванов Нева хĕрринчен Атăл çыранне дипломлă журналистсене, талантлă çамрăксене илĕртсе килнĕ. Владимир Жебит, Иван Михеев, Александр Иванов, Николай Пейков ваттисем каланине чăл-чăл пăхса итлесе лараççĕ. ТАСС корреспонденчĕ Алексей Николаевич Студенецкий апат вăхăтĕнче шахматла выляса илесшĕн.

Чăннипех хаçат «кашкăрĕсем» пухăннă. Эпĕ те республикăри чи вăйлă редакцие лекрĕм. Савăнмалла та, хăрамалла та. Анчах пĕри те мана хирĕç шăл шаккамасть, пăвса пăрахса ман юна ĕçме шутламасть, пурте юлташла кăмăллăн, пĕр танлăн калаçаççĕ, ĕçлĕ хутшăнусене хаваспах хутшăнтараççĕ.

«Советская Чувашия» хаçат редакцийĕнче ĕçлекенсен пĕр пайĕ: (сулахайран сылтăмалла): Канаш енчи собкорĕ Леонид Павлович Решетников, çырусен пайĕн заведующийĕ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Нина Петровна Полянская, пропаганда пайĕн заведующийĕ Исаак Пантелеймонович Кириллов, Михаил Иванович Иванов редактор, строительство пайĕн заведующийĕ Николай Михайлович Скок, Владимир Алексеевич Жебит.

«Советская Чувашия» КПСС Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тата Чăваш АССР Министрсен Совечĕн органĕ. Витĕмлĕхĕ те, яваплăхĕ те питĕ пысăк. Министрсен Совечĕн председателĕ Михаил Васильевич Зайцев ман валли редакцие икĕ пÿлĕмлĕ хваттер панă. Бюрократи машинипе пĕр çаврăм тăвиччен манăн «Атăлта» ыр̆ă курмалла. Ĕç хыççăн Василий Подузов мана хăна çуртне илсе кайса ятарлă уйрăм пÿлĕме вырнаçтарса хăварчĕ. «Хваттер» пур. Шупашкара çÿлти шайра куçарса чĕнсе килнисене тата партин академийĕпе аслă шкулĕ хыççăн чĕнсе илнисене урамра вырттарман. Йĕрки çирĕпчĕ.

Карл Маркс урамĕнчи кирпĕчрен тунă виçĕ хутлă «Атăл» хăна çурчĕ. Ăна 1932 çулта Благовещени чиркĕвĕ вырăнĕнче туса лартнă. Утмăлмĕш çулсен варринче хăна çуртне илем кĕртсе тĕпрен юсанă. Ун çумĕнче,

Атăл енче, радиопа электротаварсен лавкки пурччĕ. 1943 çулта хăна çуртĕнче 324-мĕш Стрелковăй дивизи штабĕ ĕçленĕ. Унпа хирĕçех, урам урлă, «Атăл» ресторан, Чăвашпотребсоюз кантурĕ, сылтăм енче, тăварах, К.В.Иванов ячĕллĕ литература музейĕ. Каярахпа, хăна çуртĕнчен инçех мар, Чăваш патшалăх театрĕн çуртне туса лартнăччĕ.

Атăла пĕвеленĕ хыççăн, 1979 çулта, Карл Маркс урамĕнчи 6-мĕш çак çурта та, историпе çыхăннă нумай çуртсемпе пĕрлех, ватнă.

Хаçачĕ вырăсла тухнă май, хăш-пĕр материалсем вырăс чĕлхипе пичетленеççĕ.

Биографии собратьев по перу

***К.И.Филин** родился 15 марта 1915 года в Сокольском районе Ивановской области. В довоенные годы ему довелось быть и колхозным счетоводом, и библиотекарем, и председателем колхоза. В журналистику пришел в 1939 году редактором многотиражки. А в грозные годы войны Константин Иванович редактировал газету 6-й бригады войск НКВД, командовал батареей.*

После Великой Отечественной всю жизнь Филин связал с журналистикой. С 1956 года работал в газете «Звезда Алтая». А в 1967 году Филин стал собственным корреспондентом «Советской Чувашии» по Алатырскому «кусту». Перед выходом на пенсию работал старшим литсотрудником отдела партийной жизни нашей газеты. Из-под его пера вышло немало корреспонденций не только во славу КПСС, но и о партийной косности и заорганизо-

ванности. Не раз от журналиста Филина доставалось мошенникам и ворам.

К.И.Филин награжден орденами Красной Звезды, Отечественной войны 2 степени, медалями «За победу над Германией», «За освоение целинных земель».

Константин Иванович умер в 2002 году. Светлая память ему, моему собрату по перу, умному помощнику в работе.

Редакцие ура ярса пуснă кунах «кашкăрсен» çулĕпе чупма пуçларăм. Володарски ураменче мĕн-мĕн палăртнине Советсен çуртĕнче ырласа «симĕс çутă» панăскер, умра чăрмав çук, аяккалла пăхмасăр малалла çеç каймалла. Умри тĕллевĕ - халлĕхе Филин сĕтелĕнче. Константин Иванович, тăлпан, вăтам пӳллĕ, пуçне кăшт сылтăмарах чалăштарса питĕ тăнласа итлекен, витĕр пăхакан, сăн-питне çурхи хĕвелле çиçтерсе илнĕ хыççăнах кĕрхи ăмăр çанталăкла улăштараканскер, çăварне карса пăрахмасăр шăл витĕртерех калаçса шухăшне татăклăн пайла-пайла кăлараканскер, хыт хуплашка ăшĕнче мĕн выртнине кăтартрĕ, ыран, виçмине, çитес эрнере мĕн çавăрттарса пăрахмалли палăртусемпе паллаштарчĕ. Обком пленумĕсенче, канашлăвĕсемпе семинарĕсенче ялан идеологи çумăрĕпе исленнĕскершĕн маншăн çӳлти хăват нимпех те хăратмарĕ, ăçта тата хăçан кама ытларах шăварса пулăшмалли, хĕвел çутине кăлармалли кăсăклантарчĕ. Константин Иванович сĕннипе эпĕ хам çине ял райкомĕсене илтĕм. Маншăн вĕсем çывăхрах, çитменнине тата ăна та хĕрхентĕм. Самай çулланнă çын, вăрçăра амантнă ури сисĕмлех чăрмантарать пирĕнпе тан чупмашкăн, хула хăнăхăвĕ те хăйĕнчен уйăрасшăн мар пулас. Хăлхи начар илтни уншăн мĕн тери йывăррине эпĕ вăл телефонпа калаçнă чухне хĕрхенсе ăнлантăм. Сасă хумĕпе алăк уçăла-уçăла каять. Хăйĕн журналист хĕрĕвĕ чакман, пӳлĕме сăлтавсăрах кĕркелесе тухакан Подузовăн чĕмсĕрлĕхне шӳт çиçĕмĕпе çунтарса ирĕлтерме те ухутах.

Биографии собратьев по перу

Иванов Михаил Иванович *родился в 1927 году в д. Эльбарусово Мариинско-Посадского района, в конце 1944 г. окончил Эльбарусовскую среднюю школу и в свои неполные 17 лет был призван в Красную Армию, отправлен на службу на Дальний Восток. Учился в 58-й фронтовой школе воздушных стрелков-радистов. В составе 782-го бомбардировочного авиаполка участвовал в войне против империалистической Японии. Затем в той же части (до демобилизации в 1952 г.) служил на полуострове Камчатка.*

В 1958 г. окончил факультет журналистики Ленинградского государственного университета и более 45 лет проработал в различных редакциях. Был редактором газеты «Молодой коммунист», 8 лет — заместителем редактора и 15 — редактором газеты «Советская Чувашия». После выхода на пенсию в течение четырех лет руководил пресс-центром Государственного Совета Чувашской Республики.

С 1998 г. М.И.Иванов — доцент факультета журналистики Чувашского государственного университета.

Член Союза журналистов СССР с 1959 г. Автор книг «Человек из легенды», «Перед восходом солнца», «Приглашение в Чувашию», «Рядом с Камо», «Встречи на Тиссе и Волге», «Этих лет не смолкнет слава» и др. За книгу «Радуга над Волгой» ему присуждена республиканская журналистская премия им С.В.Эльгера.

За участие в Великой Отечественной войне награжден орденом Отечественной войны 2-ой степени и многими медалями. Его труд оценен орденами Трудового Красного Знамени и «Знак Почета», памятным знаком «300 лет российской прессы».

Свыше 10 лет возглавлял Комитет защиты мира республики. В феврале 1997 г. избран председателем совета организации ветеранов ВОВ — воинов-дальневосточников.

Михаил Иванович свой богатый опыт передает молодежи, неустанно преподает студентам основы журналистики и практику газетного дела.

В то же время маститый журналист очень много помогает аппарату правления Союза журналистов ЧР, продолжает издавать новые и новые книги. В 2011 году стал кандидатом исторических наук.

* * *

***Кириллов Исаак Пантелеймонович** родился в 1934 году в д.Карабай Шемурша Шемуршинского района, председателем правления СЖ работал с 7 июня 1989 по 30 января 1990 гг.*

И.П.Кириллов трудился в журналистике около 50 лет. Работал литературным сотрудником газеты «Коммунизм ялавĕ»,

заместителем редактора газеты «Молодой коммунист», редактором газеты «Пионер сасси».

В 1974–1990 гг. трудился в газете «Советская Чувашия», вырос до главного редактора. С ноября 1991 г. — начальник редакционно-издательского отдела РГУП «Издательство «Чувашия», зам. редактора газеты «Вестник недели». С 2004 г. — редактор учебных изданий Чебоксарского института экономики и менеджмента — филиала Санкт-Петербургского политехнического университета.

Унпа хирĕç ларакан Кузьмичев та чăтаймасть вара, ирĕклĕ сăмах-юмах хуранне тăвар хушса, шухăш тĕтрелĕхĕнчи пуçне хавас кулăпа çăмăллăн уçăлтарса илет. Эпир Кирилловпа, чӳрече çумĕнчисем, ваттисен хăйне евĕр перкелешĕвне хирĕçлемесĕр, куç айĕн пăхса, ăшра кулатпăр.

Иван Николаевич та фронтра пулнă, аманнă, вăрçă хыççăн Балти тăрăхĕнче вырăсла тухакан мăн хаçат редакторĕнчех ĕçленĕ, икĕ идеологи хушшинче нушаланакан тӳсĕмлĕ халăхсене çĕнĕ пурнăç тума хавхалантарнă. Партин Тĕп Комитечĕ ăна каярахпа «Красная Чувашия» хаçат редакцине вăйлатма тесе Шупашкара куçарнă.

Лăпкă Чăваш çĕршывĕ, Атăл кăмăла кайнă ăна хаяр çапăçу çулĕсем хыççăн. Пĕчĕк, шуранкарах хĕрачине çавăтса пынăччĕ. Регина ятлă. Кузьмичевсен савăнăçĕ кĕçех пирĕн пӳлĕме те тултарчĕ.

Пермьри ташă ăстаçисем Шупашкарта Надежда Павловнапа çеç мар, Кузьмичевсен ылтăн тĕпренчĕкне те суйласа илнĕ иккен. Иван Николаевич Регинăна Сахарова шкулне вĕренме ăсатрĕ. Хореографи училищине пĕтернĕ Шупашкар хĕрĕ каярахпа çĕршыври паллă çăлтăрсем хушшинче çиçетчĕ. Пулас балерина ашшĕ Кузьмичев ăсĕпе те, хĕрӳлĕхĕпе те, маçтăрлăхĕпе те республикăра ятлăччĕ. Планеркăсенче, летучкăсенче хăйĕн шухăшне, пропаганда пайĕн малашлăхне хĕрсе кайса пурне те ĕнентерме тăрăшатчĕ, çĕнтереймесен, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтреме тытăнатчĕ. Нервисем хавшанăччĕ пулас. Евгений Мешалкин унпа чĕрре кĕрсе каятчĕ. Канаш чиркĕвĕн прихучĕ, пупĕ халăха

пăтратни çинчен тĕпчевлĕ чылай анлă статья çырчĕ Кузьмичев. Михаил Иванович та чее. Кăткăс, хирĕçлевлĕрех хайлавсене малтан редколлеги членĕсене вулаттарать, унтан обкомра палланитарать, вара тин номере лартать. Редколлеги членĕсенчен чылайăшне тивĕçтермен çак статьяшăн планеркăран тарласа, чĕтресе тухнă ватă журналист кунĕпе тухăçлă ĕçлеймерĕ. Çак ĕçпе çур уйăх тăрмашни харама кайрĕ-çке. Мĕн тăвăн, шухăш вылявĕ ирĕкре пулин те, алла сăнчăртан вĕçертейместĕн. Редакторĕсем те пешка вырăнĕнче кăна пулнă-çке КПСС идеологийĕн ултав вăйӑинче.

Биографии собратьев по перу

***Никонов Анатолий Федорович** родился в 1924 году в городе Ядрине, призван в Красную Армию в июле 1942 г. По прибытии в часть его определили на курсы радиоспециалистов, а по их окончании направили в партизанский отряд имени С.Лазо, базировавшийся в лесах Могилевской области. После освобождения области партизанский отряд присоединился к регулярным частям Красной Армии и сержант А.Ф-.Никонов продолжил службу фронтовым радистом. По рекомендации ЦК Компартии Белоруссии его направили на краткосрочные курсы редакторов. После их окончания он работал в редакции газеты «Гродненская правда». С этого времени его трудовая деятельность была всецело связана с журналистикой. После демобилизации в 1947 г. А.Ф.Никонов работал заведующим отделом и ответственным секретарем газеты «Молодой коммунист», заведующим отделом сельского хозяйства газеты «Советская Чувашия». В 1969 г. принят в Союз журналистов СССР. Умер в 1984 году.*

* * *

***Решетников Леонид Павлович** родился в 1923 году в д. Федоровское Кировской области. Окончил Марийский педагогический институт. В печати проработал свыше сорока лет, в 1962-1988 годах — в «Советской Чувашии».*

С ним я знаком еще будучи редактором Ибресинской райгазеты «Çӗнтерӳшӗн» («За победу»). Как собкорр «СЧ» он часто бывал в хозяйствах нашего района, много писал об ибресинцах. Совместно участвовали в общественно-политической жизни района. Его, как честного журналиста, уважали наши руководители, с ним по-товарищески считались: первый секретарь райкома КПСС Лермонтов Николай Григорьевич, председатель исполкома районного совета депутатов трудящихся Турханов Алексей Васильевич и другие товарищи. Между ним и главами района никогда не было никаких серьезных конфликтов. Как собрату по перу и я уважал его, и как старшего товарища ценил. Пришлось по совместной работе с ним развивать журналистскую деятельность в одном коллективе. Он всегда вовремя и с высокой профессиональной хваткой готовил немало злободневных материалов по нашему заданию для отдела партийной жизни. Стал заслуженным работником культуры РСФСР — награжден медалью «За доблестный труд».

* * *

Юрий Сергеевич Кирилловпа (сулахайра) Николай Константинович Пейков.

Мода çурчĕ (Дом Мод) тăвакансем çинчен Пейков пĕрер полосаллă 6 материал çырчĕ, репортер-рекордсмен ятне илчĕ. Çуртăн кашни хучĕ хăпармассерен – пĕр «шедевр».

* * *

Кольцов Петр Гурьевич *родился в 1926 году в д. Полевые Пинеры Яльчикского района, был призван в Красную Армию в 1944 г. Прошел боевой путь до Восточной Пруссии, принимал участие в штурме города-крепости Кенигсберга, за что награжден медалью.*

После демобилизации из армии П.Г.Кольцов стал профессиональным журналистом. В 1952—1986 гг. работал заведующим отделом промышленности и транспорта канашской городской газеты «За коммунизм», заведующим отделом писем и рабселькоров редакции газеты «Советская Чувашия». Будучи специальным корреспондентом этой газеты, часто писал о строительстве Чебоксарской ГЭС и завода промышленных тракторов.

Награжден орденом Отечественной войны и медалями.

Судьба свела нас с ним город вагоностроителей Канаш. Мы, вурнарские журналисты, часто встречались с канашскими коллегами, обменивались опытом работы. Когда я пришел в «Советскую Чувашию», он был собственным корреспондентом. При встрече в редакции у него всегда завязывалась непринужденная беседа и по работе, и по другим проблемным вопросам. «У тебя материалы как железобетонные», - не в обиду отмечал он по поводу моих публикаций на партийную тему. В его разговоре я улавливал внутреннюю доброту в свой адрес.

Когда я работал в газете «Вучах» Чувашского общественно-культурного центра, Петр Гурьевич руководил театром ЧОКЦа. Так второй раз мы потрудились в одном коллективе.

* * *

Михаил Прокопьевич Ижеев, скромный, но в то же время строгий, вмиг не подпускающий любого к своей душе высокого роста, добродушным лицом твердохарактерный чуваш, при-

Журналисты Н.М. Скок, Л.Л. Кузьмин.

сосавшийся в семью русско-чувашских коллег, не баловался лишними словами, а всегда разговаривал деловито, четко, умно.

Первые встречи с этим известным журналистом были у меня на Вурнарской земле.

Во время правления Советским Союзом Иосифом Сталиным до 1953 года, позже Никитой Хрущевым в Чувашии особенно прославился выдающийся деятель колхозного производства Сергей Ксенофонтович Коротков. Возглавляемый им колхоз имени Сталина-Ленина считался в стране в первой десятке. И в полеводстве, и в животноводстве, кольцовские русские крестьяне добивались ежегодно высоких результатов. На всесоюзных совещаниях и всесоюзной прессе они гремели заслуженно. При советском «крестьянском помещике» в роли пресс-атташе от «Красной – Советской Чувашии» состоял собственный корреспондент Евгений Николаевич Ефремов. Даже московские журналисты до встречи с Коротковым снимали шляпы перед ним.

По важным проблемным вопросам сельского хозяйства в Вурнары частенько приезжал и Ижеев. Не показывая свою журналисткою гордость, он заглядывал к нам в редакцию райгазеты, не считая нас газетчиками-районщиками, приглашал с собой ехать в Кольцовку. И вместе с ним мне не раз приходилось участвовать в дружелюбных беседах в компании Короткова. После таких встреч так захотелось хорошо и интересно писать. Некоторые острые моменты сохранились в памяти моей для создания творческих портретов.

Впоследствии Ижеев раза-два приезжал в Вурнары на партийные конференции и давал в своей газете обстоятельные, политически выдержанные, обьективные отчеты о деятельности коммунистов и трудящихся района.

Отрадно, что с ним я состоял в одной партийной организации Компартии Российской Федерации (КПРФ) в последние годы его жизни (2010).

С нами он общался прямолинейно, был уважаем. В беседах много вспоминал о своей творческой жизни. И вот его воспоминания о своих коллегах:

«Славу любой газеты куют имена. У «Красной Чувашии» были они и после, когда переименовали ее в «Советскую Чувашию».

Алексей Студенецкий. Первый раз его имя появилось в 1932 г. под очерком о колхозе «Новая жизнь» Цивильского района. Автору было двадцать лет. Тогда же он получил постоянную прописку в прессе. Алексей Студенецкий участвовал в зимних боях под Москвой. После ранения вернулся в родную редакцию. Писал обстоятельно и смело. Талантливый журналист перед выходом на заслуженный отдых полтора десятка лет проработал корреспондентом ТАСС по Чувашии. Именно в те годы проявлял глубокий интерес к историческому прошлому республики и ее столицы. Им была написана книга «Знакомьтесь: Чебоксары...». Его роман-хроника «Клад», вышедший отдельной книгой, запомнился тысячам читателей.

Вениамин Станюков начал писать еще в конце двадцатых годов.

Он знакомил читателей с жителями села Яншихово-Норваши Янтиковского района. Любопытная деталь: по инициативе этого активного селькора местный колхоз был назван «Красной Чувашией». Стихией Станюкова был спорт. На стадионах города он появлялся чаще всего в качестве футбольного арбитра. Знал имена всех спортивных знаменитостей, лучше него не писал о спорте, кажется, никто. В то же время Вениамин Гаврилович много лет оставался ответственным секретарем редакции.

Учительница физики Абашевской средней школы Чебоксарского района Зоя Григорьева в годы молодости пробовала писать литературные зарисовки про сельчан. Это ее и «погубило». «Советская Чувашия» заманила к себе. Школа потеряла ценного специалиста, а читатели приобрели талантливого журналиста. На протяжении трех десятков лет Зоя Григорьева вела заочные беседы с учителями, библиотекарями, работниками Домов культуры, деятелями науки, литературы и искусства. Даже сейчас в папках пожилых читателей можно увидеть газетные вырезки с очерками Зои Григорьевой. Журналистка стала заслуженным работником культуры России, награждена орденом «Знак Почета».

В недавнем прошлом в республике пользовался известностью фельетонист Виссарион Веников. Под этим псевдонимом творил свои сатирические произведения бывший фронтовик, опытный журналист Василий Яковлев.

Газета делается и руками читателей. Это было нашим девизом. В течение года редакция получала тысячи писем. И все они проходили через заботливые руки Нины Полянской, чьи первые заметки появлялись в районной газете еще в годы войны, когда она пришла на Алатырский паровозоремонтный завод, освоила специальность токаря. Труд Нины Петровны был отмечен орденом Дружбы народов».

На снимке (слева): Михаил Прокопьевич Ижеев, Афанасий Михайлович Иванов, Юлия Григорьевна Григорьева, Алексей Васильевич Морсков, Сергей Васильевич Карташов, Петр Гурьевич Кольцов, Семен Матвеевич Семенов (бывший редактор) на встрече ветеранов печати в редакции «СЧ», 1987 г.

Ҫӳлтисен ӗмӗтсӗр талпӑнӑвӗнче пирӗн Михаил Иванов та, хушма пулӑшун пӗр пӗчӗк вӑйӗ кӑна шутланнӑ пулин те, малалла сикекен, талпӑнакан хӗрӳ ӗҫченехчӗ. «Кашкӑрсен йӑвине» ӑслайсӑр, ҫирӗп тытса тӑраймастӑн. Унсӑрӑн Мешалкинсем икӗ хӑлха хушшинчен те, Никоновсем икӗ ал пӳрнисем витӗр те, Кузьмичевсем икӗ пит-куҫ умӗнчен те сисмесӗрех шӑвӑнма пултараҫҫӗ. Пурне те асӑрхаса тӑмалла, пурне те хӑвӑн еккипе лӗпӗстеттермелле, пурне те хӑвӑн ҫул кӑтартса пымалла. Ертӳҫӗн чун сисӗвлӗхне пурне те ӗнентермелле, пурне те пӗр сас ҫемми-

не ёнерме вӗрентмелле. Курӑнатчӗҫ ҫак енсем редакторӑн. Ӑсталӑх пултарулӑхӗпе типсе ларнӑ журналист-хушалист марччӗ вӑл. Ӑслӑ чӗлхепе ҫивчӗ ҫырнӑ хайлавӗсене унӑнне малтан та вуласах тӑнӑ, обком бюровӗпе редактор сӗтелӗ хушшинче тертлӗ ҫуталса тухакан тишкерӳ, илем статйисене хаваспа кӗтсе илеттӗм.

Яков Ухсай ун пӳлӗмне хушӑран мӗншӗн кӗрсе тухнине ӑнланаймастӑм. Поэт хӑйӗн вырӑсла куҫарнӑ сӑввисене, поэмисемпе романӗсен сыпӑкӗсене черетсӗр пичетлеттересшӗн тархасласа ыйтать пуль, тенӗччӗ. Ҫук иккен, чӑваш халӑх поэчӗ Михаил Ивановпа чӑваш литературин паянхи кун-ҫулӗ пирки тавлашма пырать иккен. Вӗсен хӗрӳ калаҫӑвне тепӗр темиҫе ҫултан ман хамӑн та хутшӑнма тӳр килнӗччӗ.

Республика пульницисӗр пуҫне Шупашкарта республика иккӗмӗш пульници те пурччӗ. Ӑна халӑхра партстационар тетчӗҫ. Вӑл Мускав проспекчӗн 49-мӗш ҫуртӗнче, Етӗрне ҫулӗ ҫине тухнӑ ҫӗрте, сулахайра вырнаҫнӑ. Унта партипе совет, Аслӑ канаш, профсоюз, комсомол пуҫлӑхӗсемпе мӑшӑрӗсем тата ачиппчи, парти номенклатурине кӗртнӗ коммунистсем, депутатсем сипленнӗ. Вӑл шутра КПСС Чӑваш обкомӗн издательствин, издательство кӑларакан хаҫат-журнал редакцийӗсенчи хуравлӑ ҫынсене те ҫав пульница ҫумне ҫирӗплетнӗ. Унта ҫулсерен сывлӑха ҫирӗп йӗркепе тӗрӗслесе тӑнӑ. Ертсе пыракан органсенчи аслӑ тата ҫурма аслӑ пуҫлӑхсем профилактика енӗпе кашни ҫул уйӑхлӑх сипленнӗ-каннӑ. Унсӑр пуҫне вӗсем курортсемпе санаторисене те пӗр сиктермесӗр ҫӳренӗ. Ҫапла майпа вӗсен ҫулталӑкра икӗ уйӑх кану-сиплевре иртнӗ.

Тӑтӑшах тӗрӗслесен такамӑн ӳт-пӗвӗнче те мӗнле те пулин чир паллийӗ е чирӗ хӑй тупӑнатех. Мана та ҫапла пульницана вырттарчӗҫ 1984 ҫулхи ҫу уйӑхӗнче.

Кунта чирлӗ е профилактика сывалне лекнӗ ҫынсене пӑхнӑ пек республикӑра урӑх ниҫта та пӑхман. Поликлиникине пырсан та чирлӗ ҫыннӑн сиплев картти-кӗнекине тухтӑр патне хӑйсемех пырса паратчӗҫ. Пур ҫӗрте те тасалӑх, культурӑлӑх. Ӗҫлекенӗсем пурте ытти пульницари пек хӑр-хар мар, ҫепӗҫҫӗн калаҫаҫҫӗ, кӑмӑла уҫаҫҫӗ. Хӑйсеннисӗр пуҫне, чи вӑйлӑ та ӑста тухтӑрсене ытти пульницасенчен чӗнсе илнӗ. Апатне тутлӑ ҫитереҫҫӗ. Буфечӗ те тӗлӗнмеллискерччӗ. Мӗн кӑна ҫуккӑччӗ унта - обком буфетӗнчи пек «Посольски» шур эрех таранах. Уйрӑм пӳлӗмсенче пурӑнакан аслӑ пуҫлӑхсем «хӑнисене» ҫавӑнтах йышӑнма, чуна уҫса калаҫма пултарнӑ. Пӗр паллакан сестра мана та

И-45873
Национальная библиотека
Чувашской Республики

пилĕк кĕленче «Посольски» туянса панăччĕ. Эрех дефициччĕ вăхăтĕнче кайран, пульницаран тухсан, çуралнă куна уявлама шăпах майлă пулăшнăччĕ.

Терапи, хирурги, неврологи уйрăмĕсенче выртакансем хушшинче Шупашкарти тата районсенчи хуравлă çынсем нумайччĕ. Пушă вăхăтра каласма çеç ан ÿркен. Эпĕ КПСС обкомĕн политика сатирин журналĕнче Николай Максимов редакторăн заместителĕнче ĕçлеттĕм. Акă, çу уйăхĕн 12-мĕшĕнче пирĕн виççĕмĕш хута, хирурги уйрăмне хĕссех, терапи уйрăмĕнче сипленекенсене куçарчĕç. Иккĕмĕш хутра юсав ĕçĕсем пуçланнăччĕ. Вĕсен хушшинче Ухсай Яккăвĕ те сисĕмлĕн курăнса кайрĕ. Ăна 31-мĕш палатăна вырнаçтарнă иккен. Кăнтăр апачĕ пирĕн сĕтел хушшинче турĕ. Каçпа, коридора тухсан, ун патне пырса лартăм. Вăл сарлака çемçе креслора ларатчĕ. «Советская Чувашия» хаçат редакторĕ Иванов аялтан хăпарчĕ. Виççĕмĕр литература ыйтăвĕсемпе самай вăхăт калаçрăмăр. Темле кăткăс ыйтуллă материала вулама илсе килнĕ редакци курьерĕ Михаил Ивановича пиртен хăпăтса кайрĕ. Манăн та вăхăт урăхларахчĕ. «Яков Гаврилович, эпĕ халĕ аяла, пĕрремĕш хута, анатăп, унта, 4-мĕш палатăра, Аркадий Эсхель выртать, салам каласа ямастăр-и ăна? - терĕм. Вăл ман çине питĕ тĕлĕнсе кăнн пăхрĕ те, тарăхуллăн лаплаттарса хучĕ: «Мĕн тума кирлĕ вăл мана? Вара чăнах ун патне каятăн-и эсĕ?» Эпĕ, ăнланса, хирĕç тавăртăм: «Çук, ун патне мар, вăл выртакан палатăра Йĕпреç райкомĕнче ĕçлекен Анатолий Васильч Семенов пур. Ĕмĕрхи чирĕпе йĕркеллĕ утаймасăр асапланать, çавăн патне». «Апла пулсан, юрать. Вăл çынна эпĕ хам та питĕ хĕрхенетĕп. Шалккă ачана. Йĕпреçре эпĕ пĕр çынна, райкомĕн пĕрремĕш секретарьне Сергеева, пĕлеттĕм. Унта виçĕм çул пулнăччĕ, вăрман çинчен статья çырма кайсан. Ун чухне эпĕ ăна çав статьяна питĕ тимлĕн те анлăн сÿтсе явма ыйтнăччĕ, ун хыççăн вăрмана тĕлсĕр нумай кастарма чарас пирки ытларах шавламалли çинчен аса илтернĕччĕ. Итлемерĕ вăл мана. Хăрарĕ. Карьерăшăн тăрăшаççĕ вĕсем. Николаев министр та, никам та хăнк та тумарĕ. Вăрманне çаплах капашсăр нумай касаççĕ.» Кăшт ларсан, вăл хушса хучĕ: «Эсхель вăл чее, вăтăр çиччĕмĕш çултах

хăйĕн тилĕ сăнне пире кăтартрĕ, вăрçă вăхăтĕнче «ухмаха тухса» пăхрĕ, аялти хута неврологине ахальтен лекмен пуль».

Каçпа Чехов çинчен телефильм пулчĕ. Яковлев лайăх вылать. Телевизор умне Михаил Ивановичпа юнашар креслăна кĕрсе ларчĕ те Ухсай, вĕçне çитичченех çăвар уçмасăр лăпкăн пăхрĕ.

Çу уйăхĕн 13-мĕшĕ. Яков Ухсай паян пирĕн сĕтел хушшине лекмерĕ. Ун вырăнне пĕр карчăк ларчĕ. Апат хыççăн тĕл пултăмăр. «Лар-ха кунта, калаçар»,- тет. Юнашар сăранпа витнĕ тенкел çине лартăмăр. Вăл коридорпа иртекен кашни çынна сăнать, ăна хак парать: «Ку пысăк начальник пулмалла, ытла мăнаçлăн утать. Шутсăр нумай хунаса кайрĕç халь начальниксем. Хăйсем кăткă пек, çапах кăткă пек ĕçлемеççĕ, уссине нимех те тумаççĕ.» «Çак хĕрĕн куç харшине пăх-ха? Ытти хĕрарăмсен куç харшийĕ аялалла усăнать, кун, çӳлелле, ак çапла тăрать». Писательсем пирки калать: «Писатель пеккисем пĕрне-пĕри издательствăна тапса кĕртсе яраççĕ, кайран хăйсемех тапса кăлараççĕ.» Галкин пирки темиçе ыйтрĕ. Ĕçлет, тетĕп. «Укçа нумай кирлĕ ăна. Укçашăн çунать. Ефимовĕ та вăрăм укçашăн вилсе каять. Мускавра кашни çул кĕнеке кăларса тултарчĕ те, кĕнекисем макулатура вырăнне пуйăс вакунне те шăнăçмаççĕ пуль. Чăвашсен çамрăк писаталĕсене Мускавра пичетленме вырăн памаççĕ вĕсем. Халь тӳрех роман çыраççĕ. Сирĕн Максимова та романсем çырма маларах тытăнманшăн хăйне «Капкăна» кăлармалла. Самай пултаруллăскер ачи. Лаврентий Таллеров та ытлашши лăпăртатать, çын вуласа пĕтермелле мар тем чул çырать. Кама кирлĕ вĕсен пустуй сăмах купийĕ? Кĕске çырма пĕлмеççĕ. Кĕске çырма йывăр. Ватăрах, вайлăрах писательсем вуламаççĕ вĕсене, ĕлĕк Çемен Элкер Куçма Турхана тата ытти шĕвĕ çыравçăсене ăшаланă пек хак паракан çук. Укçашăн хут вараласçĕ.»

Çу уйăхĕн 17-мĕшĕ. «Тихий час» вăхăтĕнче эпир Михаил Иванович Ивановпа Гузовский вăрманĕнчи сукмаксемпе чылайччен уçăлса, калаçса çӳрерĕмĕр. Пульницаран тухса çӳреме ирĕклĕх пурччĕ. Çурт кил хушшийĕнчи саксем çинче ларса та чĕлхе якатма вăхăт тупăнатчĕ. ХДБсем (ходячий дневной больнойсем) туллиехчĕ унта. Районсенчен килнĕ хăш-пĕр пĕрремĕш секретарьсем, ĕçри персональнăй «волгисемпе» хула тăрăх «майра купарчи» те пуçтарса çӳретчĕç. «Сывалмашкăн» темле рационпа та тăранмалла-çке.

Ухсай пире кĕтсе ываннă. Кил хушшинчи беседкăна майлашăнса ларсан, Яков Гаврилович каллех хăйĕн юррине пуçларĕ.

– Пирĕн чăваш литератури çавнашкалах шĕвелсе каясса пĕлнĕ пулсан, эпĕ нихçан та çав литературăна кĕмен пулăттăм, – терĕ вăл тарăхнипе питне-куçне хăрушлантарса.

Михаил Иванович чăваш халăх поэтне хирĕçлем пекки турĕ:

- Ытла çивĕччĕн касни мар-и ку? Поэзире те, прозăра та курăнкалаççĕ-çке паллă ятсем...

Иванова каласа пĕтерме памасăрах ура çине сиксе тăчĕ Яков Гаврилович, икĕ утăм уксакларĕ те, аллине ласт! сулса ларчĕ, иксĕмĕр çине те шăтарасла пăхса, каларĕ:

- Эсир, мĕн, Михаил Иванович, издательствăпа литература журналĕсене тата Писательсен союзне хăйсен аллине çавăрса илнĕ чее тилĕсемпе упа-кашкăрсене литературăри паллă ятсем выранне хурасшăн-им? Тырă уйĕнчи шăрчăксем вĕсем, сăмахран, Галкин, Орлов, Ефимов, Луч... Галкин вăл, тĕрĕссипе, çуккă - тахçанах вилнĕ. Галкинпа Ефимов, Орлов, хăйсен сăввипоэмине тата проза хайлавне пĕр кунтăкра пăтратсан, хăшне кам çырнине те пĕлеес çук. Пурин те пĕрешкел чĕлхе, сăнарсăр чухăн чĕлхе. Е тата комсомол чуппипе хыçалалла пăхмасăр ĕрĕхсе пыракан Емельянов... «Ялавпа» «Тăван Атăл» прозаикĕсем Васçлей Игнатьев, Петĕр Львов, Аркадий Малов литература ликбезĕнчен вĕрентсе кăларман, Сергей Михалков-Дядя Степа милици патаккипе хăмсарса мухтав ялавĕ айне тăраттарман пулсан... Сăнарçăсен камантинчи рядовой салтакран çӳлерех хăпараймасчĕ те вăл.

- Издательство пĕр çынсен кĕнекисене çеç кăларать-çке. Библиотекăсенче вĕсен кĕнекисене хума вырăн çитмест. Эсир пĕлместĕр пуль-ха, пире, редакцисенче ĕçлекенсене ĕнтĕ, Ленин çулпуç субботникĕсенче кашни çул чукун çул станцийĕнчен улттăмĕш çухрăмри издательствăн складне ĕçлеме илсе каяççĕ. Юнашарах - макулатура склачĕ. «Коммунизм ялавĕнче» ĕçлекен Валерий Николаев мана пĕррехинче çавăнта туртсах илсе кайрĕ, тĕлĕнтерсех пăрахрĕ. Виçĕ грузовик тулли кĕнеке тиесе килнĕ Книготорг складĕнчен. Анатолий Емельяновăн, Георгий Ефимовăн тата ытти «классиксен» вĕр-çĕнĕ кĕнекисем иккен. Издательствăн кăçалхи планĕнче каллех - вĕсен кĕнекисем, икшер тиражпа, аллă пиншер экземпляр таран кăлараççĕ. Ытти писательсен ал çыравĕсене, ятарласа «părахăçласа», каялла тавăрса параççĕ. Совеç пур-ши вĕсен? - терĕм эпĕ.

Михаил Иванович кулкаласа çеç ирттерсе ячĕ, Яков Гаврилович çапла каларĕ:

- Ефимовăн литинститутра вĕреннĕ чухнехи юлташĕсем Мускавра нумай. Вăл - вĕсен хӳттинче. Емельянов - пырса тĕкĕнмелле мар йăпăлтисемпе парти функционерĕсен карти ăшĕнче. Çавăнпа чăваш литературин макулатура тăвĕ Шупашкарта купаланать. Çавна шута илĕр эсир - макулатура вăл ылтăн купи мар, хăвăрт пĕтет. Икĕ тиражпа кăларнă кĕнекесемшĕн вĕсем икĕ хут ытларах гонорар-укçа сăптăрса илеççĕ. Сире эпĕ, Михаил Иванович, Чăваш çырулăхне, Чăваш литературине вырăсла тухакан хаçатра кирлĕ чухлĕ вырăн панишĕн, хамăр халăх патриочĕ тесех мухтатăп. Малашне те çаплах тăрăшăр хамăрăн Чăваш культуришĕн. Ку таранччен эпĕ литературăпа искусство материалĕсем нумай пичетленине «Советская Чувашия» хаçатра курманччĕ-ха. Хамăр çын эсир. Парти ĕçлевçисем халлĕхе литературăшăн, халăх культуришĕн сахалтарах çунаççĕ-ха. Вĕсене ĕç, аш-какай, сĕт нумайрах кирлĕ. Çыннăн пур енĕпе те аталанмаллине манаççĕ. Секретарьсем хушшинче культурăшăн çунакан сахал. Çавна ăнланман çын вăл ăçтан-ха халăха вĕрентсе, ăнăçлă ертсе пыма пултартăр. Çавăн йышшисене ытларах çунтарăр-ха эсир, Михаил Иванович, хăвăр хаçатунта; эсир, Владимир Прокопьевич, - хăвăрăн «Капкăнунта».

Çу уйăхĕн 21-мĕшĕ. «Советская Чувашия» редакторне Михаил Иванова Ухсай Яккăвĕ чăннипех юрататех пулас, унпа ялан питĕ сăпайлăн, ытти хăш-пĕр киревсĕрсемпе чакаланса калаçнă пек мар, ăшшăн калаçать. Ĕнер те пульница картишĕнчи сак çинче чавсаланса хирĕç пăхса ларчĕç, тем çинчен питĕ тăрăшса пуплерĕç. Эпĕ вĕсене кансĕрлес мар терĕм. Тăххăр тĕлнелле пĕрле кĕтĕмĕр. Иккĕмĕш хута хăпарса çитнĕ тĕлелле Ухсай калать:

- Миша, ватăлатăп, кĕçех сакăр вунна та çитĕп. Тăн пур чух калаçса юлар.

Ĕнер Яков Гаврилович калать: «Ĕçхĕлĕн ун пуçĕ çĕрĕк, шухăшлама янкăр таса пуç кирлĕ».

Çу уйăхĕн 22-мĕшĕ. Ухсай паян питĕ савăнăçлă! Пĕр пĕчĕк хĕрарăмпа калаçса ларатчĕ. Эпĕ пырса лартăм. Калаçу çамрăкланас ыйту çине куçрĕ. «Пĕр узбекăн арăмĕ çамрăк пулнă. Юрату каçĕсенче парăнас мар тесе упăшки ялан çерçи тытса чĕрĕлле çинĕ, арăмне çураçтарнă»,- терĕ Яков Гаврилович. «Апла упăшкана эпĕ те çерçи тытма вĕрентетĕп-ха киле таврăнсан»,- тесе ахăлтатрĕ хĕрарăм.

Çу уйăхĕн 23-мĕшĕ. Ĕнер Йĕпреçри Коля Андреев тусăм ман пата пычĕ, 70 çул тултарнă ятпа Ухсайăн Мускавра тухнă икĕ

томлă сăвă-поэма кĕнекисене пачĕ. Яков Гавриловичран ыйтрăм та, «Каярахпа çырса паратăп»,- терĕ. Хăй укол хыççăн выртнăччĕ. Мана пульницаран кăларас умĕн асăну сăмахĕ çырса парнелерĕ.

Ватăлнă, алли те чĕтревлĕ çыракан пулнă. Эпĕ кайнă чухне тулта Михаил Ивановичпа тенкел çинче ларатчĕ. Хĕвел çинче ларма юрататъ вăл. Хушăран ун патне Аркадий Эсхель пырса ларатчĕ, хăй ун патне лармастчĕ. Вăрттăн кашни кун пĕр пирус туртатчĕ. Хĕрĕ, пырсанах, унăн кĕсйисене ухтарса тухатчĕ: пирус шыратчĕ. Эпĕ вĕсене, çыру ĕçĕнчи туссене, иккĕшне те алă парса хăвартăм.

ЯКОВ УХСАЙ

ИЗБРАННЫЕ ПРОИЗВЕДЕНИЯ
В ДВУХ ТОМАХ

ТОМ
ПЕРВЫЙ

СТИХОТВОРЕНИЯ
•
ПОЭМЫ

ПЕРЕВОД С ЧУВАШСКОГО

Вл. Кузьмин тусăма
асăмăн чыспа –
май 25, 1974. Я. Ухсай

МОСКВА
«ХУДОЖЕСТВЕННАЯ ЛИТЕРАТУРА»
1983

Халĕ каллех 1974 çула, «Советская Чувашия» редакцине, таврăнатăп.

Шупашкар хăмăчĕ районтинчен чылай йывăр, лавĕ те

кёрнеклёрех. Туртма вăй, ăсталăх ытларах кирлĕ. Вырăсла. коллегăсенчен кая мар, яка çырмалла. Пур енлĕн çивчĕ пулмалла. Мухтанчăксен сăра куркине кĕрсе ӳкмелле мар.

Районсенче, хулари пысăк парторганизацисенче пулса пуçлăхсемпе, уйрăм çынсемпе калаçса блокнота тултарнă хыççăн, «киле» таврăнатăп. Карл Маркс урамĕнчи «Атăл» хăна çурчĕ мана иккĕмĕш хутри пушă пӳлĕм сывлăшĕпе кĕтсе илет. Виçĕ хутлă чул çурт умĕнчи йывăçсем çине пăхса илетĕп те шалалла васкатăп. Ваннăра çăвăнса тасалсан е аялти буфета сардельки-сосиски çиме анатăп, е урам урлă «Атăл» ресторана каçатăп. Унта журналистсемпе, писательсемпе калаçса чĕлĕм тĕтĕмĕпе хутăш çунатлă шухăш симпылне ĕçсе киленетĕп. Вĕçленмен калаçăвавлашăва юлташсемпе Атăл çыранĕнче е Хĕрлĕ площадьри паркра малалла тăсатпăр. Ĕçре нихçан та пуш вăхăт çуккă та, кăшт канма тесе каçалапа ман пӳлĕме «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн парти пурнăç пайĕн заведующийĕ Алексей Гаврилович Крысин пырса ларать. Муркаш ачипе пирĕн хăйне евĕр ăмăртуччĕ. «Александр Петрович мана паян каллех Кузьмин пек çырмалла тесе телефонпа тĕксе илчĕ, санран тухать», - текелесе мĕн кирлине систерет. «Юрать, апла малашне çак «Атăл шывĕ» пекех юхтармалла пуль статьясене те, вара вăл мана сан пултарулăхупа сĕксе илĕ», - тесе хăна сĕтелĕ хатĕрлетĕп. Обком секретарĕ Петров кашни ир тенĕ пекех шăнкăравласа тăрать, хаçатра тухнă ылтăн пучахпа тислĕке хамăра чи малтан шăршлаттарать.

Хама пур енĕпе те ирĕклĕ туйсассăн та, чунăм пурпĕрех Йĕпреçреччĕ, çемьене хăвăртрах хулана илсе килес шухăш-ĕмĕтпе çывăрса каяттăмччĕ. Çакă асамлă вырăнта, 1932 çулта Благовещени чиркĕвĕ вырăнĕнче туса лартнă çуртра, ыйхă та хăнари пек вĕçетчĕ, темле сăнарлă тĕлĕксем явăнатчĕç. Ĕç сĕтелĕ ирех хăй çумне ыталатчĕ.

Ĕç хучĕсем хатĕрлеттерме хула тăрăх лиска йытăлла чупатăп. Кашни чиновникĕ патне кĕрсе тухасси чĕр нуша. Пур çĕрте те черет, тӳрех кĕрсе кайма пуçласанах пурте çухăраççĕ. Хула совет ĕçтăвкомĕн председателĕ Ефремов кирлĕччĕ. Секретарĕ, пĕр усал хĕрарăм, йышăну пӳлĕмĕнче чиперех суйса лартрĕ мана. Юлашкинчен чăтаймарăм, унран ыйтмасăрах алăка шаккаса кĕме пуçларăм. Нĕрсĕр хĕрарăм мана пиншак аркинчен каялла туртать, кăшкăрса, хытах. Константин Филипповичĕ «Кĕрĕр, тархасшăн», - тесе мана хирĕç утать. Хваттер хучĕ çине хăвăрт алă пусса пачĕ те, малалла ĕç пирки калаçса лартăмăр.

Пĕрремĕш хутри сылтăмри виçĕ чӳречи тата пуçĕнчи тепĕр чӳречи - пирĕн хваттерĕн. Тăварахри тăваттăмĕш çурчĕн иккĕмĕш хутĕнче малтанхи хваттер пулнă.

Пӳртрен тротуарпа Энгельс урамне тухатпăр. Унтах - автобус чарăнакан вырăн. Çул леш енче - ешĕл вăрман. Çуртăн сулахай енче - хырлăх. Ытармалла мар тĕлĕнмелле вырăн. Унтан уйрăлас та килместчĕ, уйрăмах - мăшăрăмпа ачасен.

Тăван Йĕпреçе тухса вĕçтертĕм. Тăнсăрсене мĕншĕн шанса параççĕ-ши хуравлă вырăн? Мородин текен чăкăлташ, чĕлхе якатса карьера картлашкипе хăпарса пынăскер, Вăрнар ял хуçалăх производство управленийĕ пур чухнех паксăртарах сăмахĕсемпе пуçлăхсене сăлтавсăр айăплама хăтланатчĕ. Пĕлĕвĕ çитмен пирки тавракурăмĕ хăйĕн орбитинчен иртейместчĕ. Çавăнпах ăна 1973 çулта парти райкомĕн инструкторĕнчен пăрас тĕллевпе Йĕпреç поссовечĕн председательне сĕнсе суйлаттарчĕç. Манăн ĕнтĕ çав бюрократа пуççапма тиврĕ. Йĕпреçри хваттере парса хăварни çинчен ĕнентерекен хутсăр мана Шупашкарта ордер памаççĕ. Афанасий Дмитриевич эпир хваттере ирĕклетсен тин справка çине алă пусатăп, тет. Ăçта хумалла вара ман çемьене хамăн хваттер пур çинчех? Виççĕ тĕл пулса вăрçтартăм. Тăваттăмĕш хутĕнче тин секретарĕ Мородинран вăрттăн кирлĕ хута туса пачĕ.

Редактор «Волга» машинине пачĕ те, Муллинпа Çĕнĕ кăнтăр енче пуш хваттер шыратпăр. Хусанкай урамĕнчи 9-мĕш çурт кăмăла кайрĕ, 67-мĕш хваттере палăртрăмăр. Кĕçех пире ордер пачĕç. Пĕр хушă пуян пулса куртăм. «Атăл» хăна çуртĕнче те ятарлă пӳлĕм пур, уншăн редакци тӳлесе тăрать. Йĕпреçри Герцен урамĕнчи 2-мĕш çуртри 2-мĕш хваттертен те тухман. Шупашкарта та икĕ пӳлĕмлĕ çĕнĕ хваттер пур. Акă, куçмалли вăхăт çитрĕ. «Красный фронтовик» колхоз председателĕ Велит Кери-

мов Кĕлĕмкассинчен грузовик тата çăмăл автомашина Йĕпреçе ярса пачĕ. Ăсатма туссем-юлташсем пухăнчĕç. Ялти туйра 1973 çулта Çĕрпел учителĕсем парнеленĕ гитарăпа юрласа ташлатпăр кил картинче. Надьăпа Борис вĕренекен музыка шкулĕн директорĕ Геннадий Григорьевич Степанов баянпа тата вĕсен кĕрӳшĕ Валентин Петрович Кузнецов гитарăпа кĕвĕ шăрантараканнисем. Валентин Кузнецов япала пушатма çăмăл автомашинăпа Шупашкарах пĕрле ларса пычĕ. Çапла эпир Шупашкар çыннисем пулса тăтăмăр.

Ĕç йĕркеллех пырать. Пӳлĕмре - туслăх кăмăлĕ. Василий Подузов шӳтлекелеме кĕрсе тухать. Филина пĕр редакцирен 40 тенкĕ укçа ярса панăччĕ.

Хучĕ-извещени сĕтелĕ çинче выртать. Константин Иванович çукчĕ. Василий Степанович курчĕ те ăна, никама сăмах хушмасăр 40 хыçне тепĕр 0 хушса çырчĕ, туххăмрах тухса кайрĕ. Филин уксахласа çитрĕ, переводшăн савăннипе çӳхен кулса илчĕ, «Шăпах менелник тума çитет» тесе почтăна вашкăртрĕ. Ун чухне тĕп почтамт Хĕрлĕ площадь çумĕнче, Нижегородски урамĕнчи пасара каякан çул хĕрринчеччĕ. Константин Иванович часах таврăнчĕ, пире куç айĕн пăхать. Эпир чĕнместпĕр. Сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ те, тарăхнипе мăш-мăш тăвать. Çав вăхăтрах Подузов кулкаласа çитрĕ. «Ну, Костя, ĕç хыççăн «Атăла» шыва кĕме анатпăр-и? Пирĕшти-официанткăсене курманни нумай пулать», - терĕ. Филин «Ачапча!» - терĕ те чалăшшăн пăрăнса ларчĕ, тутине тăсрĕ. Шăрчĕ час иртмест иккен, темиçе кун ăшă кулă палли сисĕнмерĕ Константин Иванович пит-куçĕнче.

Муллин юлташпа эпир ахальтен çутă хваттер шырамарăмăр пуль. Шавлă мар. Хĕвел ирех чӳречерен кĕрет, кăнтăрлапа тепĕр енчен ăшатать.

Хамăрпа хирĕçех, çул урлă, 20-мĕш номерлĕ вăтам шкул. Римма Ильиничнана ĕçе çӳреме те, ачасене вĕренме те питĕ çывăх. Акă эпир балкон çинчен вĕсем кил хушшинче выляннине сăнатпăр.

Филинăн çуралнă кунне чаплăн паллă турăмăр. Авалхи тусне Подузова та чĕнчĕ. Кузьмичевсем, Кирилловсем, эпир арăмсемпе тата ытти юлташĕсем пулчĕç. Эпĕ тӳрех командировкăран персе çитрĕм Мир урамне.

Васиилй Степанович ытлашши сăмах ваклама юратмастчĕ, пуринпе те шӳтлеместчĕ, юман каска пек тӳрĕ куçса çӳретчĕ, ăш чирĕпе аптăратчĕ, куçран тӳрĕ те тĕрĕс калама никам умĕнче те вăтанмастчĕ. Ăста çырнăшăн, материалсене пĕлсе редакциленĕшĕн, пустуй чăкрашланманшăн, хĕвĕнче чул тытманшăн хисеплетчĕ пулас ăна Иванов редактор. Мана та, ытти çамрăксене те пулăшма яланах хатĕрччĕ, пĕрле канашласа шухăша вăйлатса çитермешкĕн пирĕншĕн вăхăтне шеллеместчĕ.

Иван Николаевич Кузьмичев та, Константин Иванович Филин та хăйсен ĕçри-пурнăçĕнчи пуянлăхне ăшра пытарса усрамастчĕç, кирлĕ вăхăтра яланах ăслă канашсем-сĕнӳсем паратчĕç.

Пичет çуртĕнчен тăварах, Ярославски урамĕнче, чăваш шӳрпи столовăйĕ уçăлнăччĕ. Иккĕмĕш хутра савăклăх вырăнĕ те пурччĕ. Çавăнта Иванов редакцире ĕçлекенсемпе мăшăрсем валли 1975 çула кĕтсе илмешкĕн кану каçĕ йĕркелерĕ. Çемьесем пĕрле пухăнса туслăн калаçни, савăнăçлăн юрласа-ташлани камшăн япăх пултăр-ха? Çĕнĕ тĕлпулусем, паллашусем пурин кăмăл-туйăмне те çĕклентерчĕç.

Пирĕн витĕмлĕ пулăшу

Редакцин парти пурнăç пайĕ КПСС Тĕп Комитечĕн йышăнăвĕсен никĕсĕ çинче обком мĕн палăртнине райкомсем, хулакомсем тата парткомсем мĕнле пурнăçласа пынине, вĕсем халăх хуçалăхĕпе культурине епле аталантарма вăй парса тăнине пур енлĕн тĕрĕслесе халăха пĕлтеретчĕ. Майĕсем-мелĕсем кунта нумайччĕ. Чи паллă, анлă ыйтусемпе хаçатра парти комитечĕсене ертсе пыракансен, обком секретарĕсемпе пай пуçлăхĕсен хăйсен енчен калаçмаллаччĕ-канашламаллаччĕ. Анчах та, обкомăн пĕрремĕш секретарĕ яланах хӳтерсе тăнă, эпир хамăр палăртнине вĕсене çырма сĕннĕ пулин те, вĕсенчен çивĕч статьясем, шухăшлав тишкерĕвĕсем килсех каймастчĕç. Пирĕн вара ирĕксĕрех хамăрăн тума тиветчĕ хуласемпе районсене ертсе пыракансен ĕçне.

Хăйсене губернатор пек тытма хăнăхнă, камантлама ăсталанса çитнĕ пуçлăхсем статья мар, доклад та çырман-ха. Пай

пуçлăхĕсем, пулăшаканĕсем хатĕрлесе панă отчетсемпе справкăсене конференцисемпе пленумсенче, семинарсемпе канашлусенче пуç çĕклемесĕр вуласа паратчĕç те, тăвăллăн алă çупнипе хастарланса, каçăрăлса тăратчĕç. Çĕрпӳ райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Коротков кăна уйрăлса тăратчĕ ытти «патшасенчен». Унăн яланах çĕнĕ шухăш пурччĕ. Обкомра манăн унпа тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ. Ăста, пултаруллă йĕркелӳçе пĕр пысăк ыйту тахçанах канăç памасть иккен. Районсен ăмăртăвне пĕр енлĕ йĕркеленине пула вĕсене тата ыттисене те куçса çӳрекен ялавсемпе мала тухнăшăн паракан дипломсем, парнесем лекмеççĕ. Сăмахран, патăрьелсемпе елчĕксем, вăрмарсемпе каçалсем хура тăпрапа пуян, Атăл çывăхнерехри районсен тăпра пулăхĕ чухăн. Тырпул тухăçлăхĕ, çавна май выльăх-чĕрлĕх тупăшлăхĕ, ăçта тата камăн ытларах пулни паллă ĕнтĕ. Манăн сĕнĕве пурнăçласа, Максим Иванович питĕ тĕплĕ, типтерлĕ статья çырса пычĕ редакцие. Ăна пĕрле юнашар ларса хаçат тивĕçне çитертĕмĕр. Редакци

Канашсемпе йĕпреçсен ĕçлĕ ăмăртăвĕ. 1974 çулхи февралĕн 16-мĕшĕнче канашсем Шăхасанти культура çурчĕ умĕнче хăнасене кĕтсе илнĕ самант. КПСС Йĕпреç райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Николай Григорьевич Лермонтов тата райком бюровĕн членĕ, «Çĕнтерӳшĕн» хаçат редакторĕ Владимир Прокопьевич Кузьмин канашсен çăкăр-тăварне кăмăллăн йышăнаççĕ. Сылтăмра - КПСС Канаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕн Егор Васильевич Роштовăн (варринчи) ĕçри каманти.

йышăннă кунах вăл пичете кайрĕ. Обкомăн пĕрремĕш секретарĕ Илья Павлович Прокопьев, паллах, ăна вуламасăр ирттерсе яман. Çакăн хыççăн республикăри социализмла ăмăрту палăртăвне, çĕр пулăхне кура, зонăсем тăрăх йĕркелерĕç.

Парти пурнăç пайĕ тата тепĕр ăнăçлă утăм турĕ. Йĕпреçпе Канаш районĕсем эпĕ Шупашкара куçса киличченех вăйлă ăмăртма пуçланăччĕ. Лермонтовăн ĕç пӳлĕмĕнче «Çĕнтерӳçĕ -района - социализмла ăмăртура пысăк ӳсĕмсем тунăшăн» хĕрлĕ вымпел çакăнса тăрать. Хавхалантару наградине йĕпреçсем тунăччĕ. Ăна пама икĕ район комиссийĕ выльăх-чĕрлĕх енĕпе 20, уй-хир тупăшлăхĕпе 7 кăтарту ӳсĕмне палăртатчĕ. Виçĕ уйăх хыççăн квартал кăтартăвĕсене е Канашра, е Йĕпреçре ушкăнпа сӳтсе яватчĕç. Камăн мĕн çĕнни пур - çавна мала хума тăрăшатчĕç. Ĕç хавхаланăвĕ кăна мар, культура аталанăвĕн илемлĕх хумĕ те пĕр-пĕрин хушшинче анлăн сарăлнăччĕ. Икĕ район хуçалăхĕсем, предприятийĕсем, организацийĕсем килĕшӳ çине алă пуссах хĕрсе ăмăртма пуçларĕç. Çирĕп йĕркеленнĕ ырă пуçарăва пĕтĕм республикăра сарас тĕллевпе эпĕ Николай Григорьевич ячĕпе «Советская Чувашия» хаçатра тата тепĕр уйрăм статья хатĕрлесе пичетлерĕм. Обкомăн идеологи секретарĕ Александр Петров уншăн тав турĕ. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, йĕпреçсемпе канашсен пуçарăвĕпе республикăри районсем хушшинче социализмла ăмăртăва çĕнĕлле йĕркелесе ярасси çинчен обком йышăнăвĕ тухрĕ. Ăна пурнăçлама пирĕн партпайăн та вăя шеллемесĕр хастар ĕçе кӳлĕнмелле пулчĕ.

Хаçатăн, сăмахăн вăйĕ пурччех çав. Коммунистсен, партгрупоргсен, парторганизаци секретарĕсемпе партком членĕсен ячĕпе тата мĕн чухлĕ çулăмлă статья пичетленмен-ши, вĕсен ячĕпе халăх хушшинчи чĕрĕ калаçусем пуçарман-ши? Пуçри чи лайăх шухăша, анлă тавракурăмлă малашлăх ĕмĕте çав çынсен шухăшĕ туса, хаçатăн йĕркелӳçĕ, хавхалантаруçă, кăтартуçă шайне ӳстерме пулăшнă. Маншăн вăл пурнăçри чи хĕрӳ те хавхалануллă, ĕмĕтлĕ ĕçчĕ.

Ĕç планĕпе килĕшӳллĕн, çав хавхаланупа Вăрнара çитрĕм. Редакци шоферне Василий Павлова Шупашкара каялла ятăм та (редактор çапла тума хушнăччĕ) тимĕр карта хыçĕнче ларакан тăпăлкка, илемлĕ çурта кĕтĕм. Икĕ алăк витĕр кĕмелли хăйĕн пӳлĕмĕнче КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Купчиков кĕтсе ларать. Мана курсан Альберт Тимофеевич сĕтел хушшинчен çăмăллăн вашкăртса тухрĕ те вăйлă аллисемпе ыталаса илчĕ. Таçханхи тусăм-çке. Унпа эпир вăл ВЛКСМ райкомне ертсе пынă,

эпĕ райхаçат редакторĕн заместителĕнче ĕçленĕ чухне çывăхланнăччĕ. Эпĕ мĕншĕн килнине пĕлекенскер вăл мана сĕтел çинче купаланса выртакан хут папкисем çине кула-кулах тĕллесе кăтартрĕ:

- Акă сан валли ĕç. Пай пуçлăхĕсене анчахрах илсе килтертĕм. Санпа ларма ман май çук. Илья Павлович пĕрремĕшсене питĕ васкавлăн пухать.

Мĕншĕнне эпĕ ĕнерех пĕлнĕччĕ-ха. Парти тĕп комитечĕн инструктор-кураторĕ Мускавран килнĕччĕ, уй-хир ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессипе шăв-шав çĕкленĕччĕ. Пирĕн пĕрремĕшĕ Прокопьев та çавăнпа район «кĕпĕрнаттăрĕсене» хытах тĕпĕртеттерет ĕнтĕ.

- Пай пуçлăхĕсене эпĕ паян вырăнтах ларма хушнă, мĕн кирлĕ - вĕсенчен ыйтатăн, пичетлеме машинисткăна хушнă, хырăм выççан, ресторана илсе каяканни те пур. Каçар, каçпа тĕл пуличчен, - тесе вăл питĕ хăвăрт тухса вĕçрĕ.

Сĕтел çинчи папкăсене шĕкĕлче-шĕкĕлче кун ирттертĕм, пĕрремĕш секретарь статйине çырса машинкăпа пичетлеттертĕм, вуласа йăнăшсене тӳрлетсе ларатăп. Райкомрисем килĕсене саланчĕç. Эпĕ - «пĕрремĕшĕ», район «кĕпĕрнаттăрĕ» вырăнĕнче. Хуçи те персе çитрĕ, акă. Чăтайманнипе, хутсене ман аларан туртсах илчĕ те вăл сасăпа вулама пуçларĕ:

«Когда в год семидесятипятилетия со дня рождения легендарного героя Гражданской войны Василия Ивановича Чапаева золотоноща протянули нам руку дружбы, вурнарцы охотно пошли навстречу, согласились с ними по-настоящему, по-боевому потягаться. В этой истории много ярких событий, достижений, побед в трудовом сотрудничестве и в области культуры. Положительны результаты многих дружественных встреч. Так что, есть что вспоминать, чем похвастаться и помечтать о будущем.

С тех пор дружат труженики Золотоношского района Черкасской области Украины и Вурнарского района Чувашии. Между районами заключались договоры на трудовое соперничество. При подытоживании их результатов ежегодно обменивались рабочими делегациями и творческими бригадами. В ходе этого были налажены деловые контакты между промышленными, сельскохозяйственными предприятиями, коллективными хозяйствами, социально-культурными службами, органами народного образования. Наибольшим расцветом экономического и культурного сотрудничества ознаменовались шестидесятые-семидесятые годы.

На фотоснимке (слева направо): А.Т.Купчиков, Космонавт-3, дважды Герой Советского Союза Андриян Григорьевич Николаев, председатель Вурнарского райисполкома Сергей Степанович Волков, первый секретарь Чувашского обкома КПСС Семен Матвеевич Ислюков на молочно-товарной ферме колхоза «Янгорчино» Вурнарского района ЧР.

Вурнарский химический завод поставлял украинцам удобрения, гербициды, передовые хозяйства, как«Янгорчино», «Гвардеец», имени Ульянова— семена картофеля элитных сортов. По примеру и опыту золотоношцев в Вурнарском районе начали электромеханизацию животноводческих ферм, внедрять внутрихозяйственный расчет и денежную оплату труда в колхозах, организовывались механизированные звенья по возделыванию зерновых и пропашных культур. Оживилось социальное строительство. Сявалкасинцы и янгорчинцы создали коммунхоз, в крупных населенных пунктах открылись детские комбинаты. Украинцы нам выделяли семена конопли, кукурузы, гороха, люцерны, озимой пшеницы «Мироновская-808».

И поныне регулярно проводятся праздники украинско-чувашской дружбы в Золотоношском и Вурнарском краях.

Недавно мы получили письмо из Золотоношского райкома Компартии Украины. Далекие друзья нас поздравляют с успешным завершением сельскохозяйственного года, одновременно сообщают и о своих успехах. Особенно отличились соревнующиеся с нашими хозяйствами колхозы «Большевик», «Украина», «Червоний прапор», имени Калинина и Ленина, которые получили с каждого гектара свыше 40 центнеров зерновых. Они и впредь намерены усилить сотрудничество с нами.

Обращение золотоношцев довели до участников совещания районного хозкультактива и решили направить ответное письмо.

Взаимное общение и нам, и им, безусловно, дает много полезного. Увидев в колхозе имени Мичурина поточный метод уборки гороха, председатель сявалкассинского хозяйства Г.З.Захаров сразу начал применять новый метод у себя. Полученные от украинцев новые сорта зерновых распространили по всему району и сразу же повысили урожайность. По их примеру улучшили агротехнику. От нас научились они полной механизации производства картофеля и очень довольны высоким урожаем. Вопросы экономического, социально-культурного развития рационально разрешаются, используя лучшее в соревнующихся районах. На Украине специально изучили ведение внутрихозяйственного расчета и сейчас в двенадцати хозяйствах начали его внедрять. Нас удивило, что у них в каждом хозяйстве действуют детские ясли-сады. И нам это под силу. В колхозе «Янгорчино» скоро откроется детский комбинат.

Еще одно новшество нашли мы у них: выращивание пропашных культур полностью механизировано. Так пришлось создать в районе 4 звена, которые славно поработали на полях и показали значительный экономический эффект. Этот метод думаем расширить и при выращивании зерновых. Взаимовыгодное сотрудничество во всех сферах жизнедеятельности вдохновляет наши народы на новые творческие замыслы и успехи...»

Первому секретарю
Золотоношского райкома Компартии Украины
тов. ПИЛИПЕНКО Владимиру Никитичу
Председателю исполкома Золотоношского райсовета
народных депутатов ШАПОВАЛУ Владимиру Ничипоровичу.

Горячо и сердечно поздравляем вас и в вашем лице всех коммунистов и трудящихся братской Золотонощины!

Рады сообщить вам, что высокие социалистические обязательства района успешно выполняются. Соревнованием охвачено около десяти тысяч человек, три тысячи из них борется за получение высокого звания ударника коммунистического труда. 238 рабочих, 66 животноводов, 520 механизаторов досрочно справились с заданиями пятилетки.

Перевыполняется план по реализации промышленной продукции. Правофланговыми являются коллективы химического завода, швейной фабрики, типографии.

Серьезный экзамен выдержали труженики сельского хозяйства. По урожайности зерна и картофеля район занял первое место в республике. Выполнены государственные планы сдачи сельскохозяйственных продукций.

Дорогие друзья-золотоношцы! И в будни и праздники всегда мы чувствуем себя рядом с вами. Мы радуемся вашими успехами. Пусть крепнет и расцветает дружба и сотрудничество между братскими районами и народами!

«Хăйĕн статйине» вуласа тухнă хыççăн вăл мана вăрнарсен çак рапорчĕпе паллаштарчĕ, унтан çурăмран юлташла çапса илчĕ те, йăлл кулса, хăй Украинăра пулни, хахулсемпе туслашни, вĕсене Вăрнар тăрăхĕнче мĕнле савăнтарни çинчен кулăшсемпе хутăш каласа пама пуçларĕ.

- Кама кăна курмарăм пуль ĕнтĕ эпĕ хам пурнăçра, кампа кăна юнашар ларса калаçмарăм, камран кăна тĕлĕнмерĕм. Шутлатăп та, эпир пурте ахаль этемсемех. Çавна май темшĕн пĕр тĕлпулу аса килчĕ. Итле. Андриян Николаев ĕнтĕ тĕнчене тĕлĕнтернĕ тĕнчен аслă çыннисенчен пĕри. Чăваш çĕршывне вăл тепĕр чухне ниçта хаçат-радиопа пĕлтермесĕр майлăн килсе çӳренĕ. Пĕррехинче космос паттăрне манăн та кĕтсе илсе ăсатмалла пулчĕ. «Вăрттăн эртеле» эпир Вăрнар вăрманне ухутана илсе кайрăмăр, паллах, саккуна пăссах, заказникре хир сысни тата пăши тытма пулăшрăмăр. Уçланкăри кăвайтă умĕнче вăл, чун уççиллĕ пуплеме пуçланăскер, пире çĕнĕлĕх пĕлтерчĕ: «Мана вăрман хуçалăх техникумĕнче Вăрнар учительници те вĕрентетчĕ, çавăнпа маншăн тури Çавал тăрăхĕ пурнăç çулĕ çине ăслăлăх кутамкки çакса янă çывăх вырăн шутланать». Маттур вĕт эпир, вăрнарсем! Акă, ку статьяпа та украинецсемпе чăвашсен туслăхĕ вăйланса, интернационализм туйăмне çирĕплетсе пыни çинчен хамăр майлă мухтанса та илме пултаратпăр. Ман енчен кунта хушмалли нимĕн те çук. Эсĕ, Володя, ман чуна кĕрсе лартăн пуль статьяна çырнă чух. Сана уншăн тав туса тата пĕрле тĕл пулнă ятпа золотоношăсен парнине кăларас пуль сейфран, - хăвăрт-хăвăрт калаçрĕ вăл.

Сĕтел çине кĕçех хитре кĕленче «Горилка с перцем» тухса ларчĕ. Çав самантрах пӳлĕме райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕ Сергей Степанович Волков хăйĕн «адьютанчĕпе», райпо председателĕпе персе çитрĕ. Каçхи канашлу пуçланчĕ...

Сăмах-юмах вакланă хушăра сисмен те çав эпир вăхăт пирĕн çине пăхмасăр малалла чупнине... Манăн уписательнă Йĕпреçе

çитмеллеччĕ. Эпĕ те Волковсем тухса кайсассăн тин ун пирки тусăма пĕлтертĕм çав.

Çул-йĕр питĕ япăхчĕ вăл вăхăтра. Патшалăх укçа уйăрмасть, районсен хăйсен вăйĕпе тума майĕ çук. Вак чулпа асфальт ылтăн пек хаклă. Тӳрĕрен Йĕпреçе çитме кăнтăрла та чĕр нуша. Райкомăн «Волгăпа» «уазик» пур. Купчиков хăйĕн çăмăл машинине Илья Иванович шоферĕпе ялне, Уйкас Кипеке, ирччен янă. «Уазикĕн» шоферĕ ĕç хыççăн ĕçсе лартнă. Ершепуçне çитме машина тупатчех-ха ĕнтĕ пĕрремĕш секретарь, анчах унтан Йĕпреçе çитме çулĕ çуккă. Вăл вара «Родина» колхоза шăнкăравларĕ. Унта аран-аран тĕп агронома Васильева тытрĕ. «Çиччас эпĕ Кузьмина сирĕн пата çитеретĕп, эсĕ ăна лаша çине утлантарса Йĕпреçе çитер, любой ценой», - тет Альберт Тимофеевич. Васильевĕ конюхсене тупаймастăп, мана вĕсем пурпĕрех итлемеççĕ тесе хуравлать. Вăл вара урăх вариант шыраса тупрĕ, Канаш хула комитетне шăнкăравларĕ, унта дежурнăй анчах, дежурнăйне пĕрремĕш секретарĕпе çыхăнтарма ыйтрĕ. Çапла икĕ секретарь килĕшсе татăлчĕç. Мана Канаш вокзалĕнче кĕтсе илеççĕ. Кĕçех Мускав енчен пуйăс килмелле. Мана перрон çинче мĕнле палламалли пирки калаçса татăлчĕç те, Купчиков мана пуйăс çине лартса ячĕ.

Эпĕ вакунран тухрăм та, сулахай алăра «Правда» хаçата тытса тăратăп. Пĕр-пĕр конспиратор пекех. Акă ман пата капăр тумланнă икĕ çамрăк çывхарчĕç те, хăйсемпе паллаштарчĕç, «Счастливого пути» терĕç те, «Волга» автомашинăна кĕртсе лартрĕç. Çапла эпĕ çирĕм çухрăм вырăнне сакăр вунă çухрăм туса, Йĕпреçе кая юлмасăрах çитрĕм.

Тепĕр ирпе Альберт Купчиковăн статйи редакцири кирлĕ сĕтел çине килсе выртрĕ, тӳрех набора кайрĕ, вулакансем патне çитрĕ. Çавă ĕнтĕ вăл хаçат оперативлăхĕ. Уншăн эпĕ çеç мар, мĕн чухлĕ журналист вăйне-ăсне шеллемесĕр, вăхăт-çул нушине уямасăр тăрăшнă, редакци хушнине пурнăçласа хăйне май хăпартланулла та савăнăçлă юлнă пуль.

Ĕçлес кăмăл ӳссе пынă чух

Коммунистăн, çыннăн шалти туйăмне халăх çине ăнланулла кăларма çăмăл мар. Психологи, философи енĕпе пуçу çавăрттармасть пулсан, ан та ăскан, ан та хускат пуç мимине. Унсăрăн уй-хир ĕçченне те, выльăх пăхакана та, хурçă шăратакана та, çурт тăвакана та, ертӳçе те вулакансем умĕнче намăслантаратăн çеç. Санăн йăлтах ун шухăшĕпе-ĕмĕчĕпе тухмалла пичет тĕнчине.

Пролетарии всех стран, соединяйтесь!

Коммунистическая партия Советского Союза
ЧУВАШСКИЙ ОБЛАСТНОЙ КОМИТЕТ КПСС

Вместе с пропуском предъявлять партбилет.

ПРОПУСК № 281

тов. Кузьмину В.Д.

на право входа на заседание
VII пленума обкома КПСС

Общий отдел обкома КПСС

18 марта 1975 г.

Хаҫат редакцийӗнче ӗҫлекенсен пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ Нина Полянская хӑйӗн ӗҫ планӗпе килӗшӳллӗн пай пуҫлӑхӗсенчен кашни уйӑхрах черетпе отчет итлетчӗ. 1975 ҫулхи ака уйӑхӗн 8-мӗшӗнче эпӗ редакцири пуҫламӑш парторганизаци умӗнче хамӑрӑн пай мӗн-мӗн тума ӗлкӗрни тата малашне ҫутатма палӑртнӑ хайлавсенче этем чунне ытларах уҫса пама кӑтартмалли мелсем ҫинчен каласа патӑм:

«ЗА ДЕЙСТВЕННОСТЬ СОРЕВНОВАНИЯ

В конце прошлого года при составлении плана работы отдела партийной жизни мы стремились отражать основные направления в освещении вопросов социалистического соревнования. Все материалы, публикуемые под рубрикой "Партийная жизнь" и на партийные темы вообще должны быть под знаком усиления организаторской работы парторганизаций по обеспечению безусловного выполнения и перевыполнения заданий и социалистических обязательств завершающего года и пятилетки в целом. Сюда прежде всего относятся выступления руководителей райкомов и горкомов КПСС, секретарей первичных парторганизаций о том, как коммунисты вскрывают неиспользованные резервы и ведут борьбу за приведение их в действие, организуют соревнование за успешное завершение пятилетки, как совершенствуется организационно-партийная работа в связи с подготовкой к предстоящему съезду КПСС.

Значительная часть материалов отдела посвящена практическому претворению в жизнь важнейших положений, выдвинутых Генеральным секретарем ЦК КПСС тов. Л.И.Брежневым в его выступлениях в 1974 году. С этой целью запланировали серию материалов на темы:

- Утверждение партийного стиля в руководстве хозяйством.

- Партийные организации в борьбе за всемерное повышение эффективности производства, за повышение качества работы.

- Коммунисты в трудовом коллективе.

- Усиление демократических начал в управлении производством.

Систематически публиковать материалы, освещающие работу партийных организаций по претворению в жизнь программы преобразования Нечерноземья, внедрению передового , руководству социалистическим соревнованием.

Для реализации этих направлений отделом составлены конкретные темы для заведующего, корреспондента и собственных корреспондентов газеты.

Прошел первый квартал этого года. Что же нам удалось сделать за минувшие месяцы?

В новый год вступили со статьей секретаря парткома колхоза "Прогресс" Чебоксарского района Ефимова "На марше". "Наш колхоз,- писал он,- находится на марше, следуя курсом, намеченным XXIV сьездом КПСС. Партийная организация колхоза будет всеми средствами добиваться, чтобы борьба за выполнение и перевыполнение заданий пятилетки стала глубоко внутренней, личной потребностью колхозника".

Внутренняя, личная потребность человека, человека труда за производство, за судьбу принятых обязательств, за судьбу пятилетки - эта тема стала одной из главной в дальнейшей работе отдела. В этом мы еще в начале года получили значительную помощь со стороны редактора газеты коммуниста Иванова. Так появились статьи члена КПСС, участника Великой Отечественной войны, ударника коммунистического труда, слесаря цеха №11 Чебоксарского машиностроительного завода Черемисова "По-ударному, по-боевому", членов КПСС, ударников коммунистического труда Чебоксарского агрегатного завода Данилова, Иванова, Куцанкова, Тимофеева и Акулова "Призывает рабочая совесть", члена КПСС, слесаря штампово-инструментального участка Чебоксарского литейно-механического завода Виноградова "Минута час

бережет" и другие. Рубрика «Эффективность нашего труда» стала постоянной отдела партжизни в газете.

Одновременно продолжаем публиковать статьи коммунистов, партийных и профсоюзных активистов, партгрупоргов и секретарей первичных парторганизаций из серии "Человек и коллектив".

По вопросам партийного руководства экономикой, организации социалистического соревнования, повышения авангардной роли коммунистов, политической и трудовой активности трудящихся, дальнейшего повышения боевитости первичных парторганизаций и партгрупп в течение первого квартала было организовано и опубликовано 30 авторских материалов, из них выступило 15 рядовых коммунистов с нашей помощью.

В газете появилось ряд материалов об организаторской работе партийных комитетов, первичных парторганизаций, профсоюзных и комсомольских организаций по изучению, обобщению, пропаганде и распространению передового опыта и опыта передовиков в трудовых коллективах республики.

Но в освещении вопросов социалистического соревнования трудящихся Чувашии наш отдел, по моим расчетам, еще не достиг того, чего требуется от нас. Мы пока с Константином Ивановичем Филиным недостаточно находим и умело пропагандируем лучшие образцы труда и управления производством, организации социалистического соревнования, не в полной степени добиваемся их широкого распространения, хотя этим делом напрямую должен эффективно заниматься отдел промышленности редакции. На мой взгляд, нельзя взваливать чужой груз на наши плечи. Не можем еще показать как следует социальное, экономическое и политическое значение социалистического соревнования. Слабо освещаем деятельность парторганизаций, направленных на развитие инициативы трудящихся, повышения ответственности кадров за порученное дело. А проблемы формирования чувства ответственности за порученное дело, укрепления дисциплины труда должны быть в центре внимания работы отдела.

Соревнование — это действенное средство коммунистического воспитания трудящихся. Оно играет большую роль в формировании социально активной личности. Но в освещении вопросов социалистического соревнования в нашей газете все же главенствует однобокость, описательный характер героев труда. Мы и другие отделы, не раскрываем их внутренний мир. Отталкиваем-

ся от труженика - человека. Вам разве не видно, что нет в нашей газете художественных очерков, зарисовок о коммунистах? Эта беда не только нашего отдела, а в целом - редакции, работающих в ней коммунистов, всего творческого коллектива.

Да, были попытки со стороны некоторых наших даровитых журналистов да и нештатных авторов создать в своих произведениях социальный портрет коммунистов - героев труда, но... безрезультатно. Материалы получились слабыми, не отвечающими требованиям журналистики. Но все же думаем, что рубрика "Коммунист и его дело" скоро снова притянет к себе читателей газеты.

Я обращаюсь к вам, к коммунистам, опытным журналистам не зарываться в повседневке, а повернуться лицом к человеку труда и обогатить газету острыми публицистическими статьями, очерками о коммунистах и передовиках производства.

Сегодня, в ходе обсуждения передовой статьи газеты "Правда" от 26 марта с.г. "Пресса и опыт передовиков", мы должны говорить не только о том, что сделано, а и о том, что еще не сделано.

Анализируя работу отдела после прошедшего партийного собрания и совещания у редактора, мы пришли к выводу: работу отдела по освещению вопросов социалистического соревнования вкорне изменить. Эту работу проводить еще целеустремленнее, глубже, шире. В связи с этим отдел намечает до конца года такие главные направления:

- Низовые звенья партии и соцсоревнование.

- Практика организации соревнования.

- Пропаганда передового опыта и партийные организации.

- Сопоставление партнеров по соцсоревнованию (экран трудового соперничества»).

- Подведение итогов соревнования, гласность, стимулирование коллективов.

- Эффективность нашего труда.

- После критики (о недостатках организации соревнования).

- По следам обязательств.

- Действенность соревнования.

Каждое направление подразделяется на отдельные темы, например, "Низовые звенья партии и социалистическое соревнование».

Статьи партгрупоргов:

- Оперативность плюс гласность.

- Заинтересован каждый в принятии социалистических обязательств и обсуждении итогов соревнования.

- Слушая отчет партгрупорга.

- Партгруппа и дисциплина труда в коллективе.

- Статьи секретарей цеховых и бригадных парторганизаций.

- Мастер - организатор соревнования (о повышении роли мастера на производстве).

- По форме и по существу (об упущениях цехового партбюро в организации соревнования).

Таким образом на основе этих направлений составляем отдельный месячный план освещения социалистического соревнования партийными организациями. Итак, в апреле мы наметили дать в печать такие материалы:

- Статью секретаря партбюро Алатырской обувной фабрики Хохлова "Качество — дело наше кровное" (опубликовано).

- Скотника колхоза "Ленинец Ядринского района Миронова "Размышляя над квартальными итогами" (выполнено).

- Статью первого секретаря Моргаушского райкома КПСС Григорьева "Сила договора" (будет опубликовано 10 апреля).

- Статью партгрупорга агрегатного завода Яковлева (выходит завтра).

- Письмо рабочего завода "Проммеханизация" (Мариинский Посад) о чувстве хозяина производства.

- Статьи о личном вкладе коммуниста в девятой пятилетке, о моральном и материальном стимулировании в одном из колхозов Шемуршинского района и о работе временных партийных групп колхозов и совхозов на весеннем севе.

У нас в плане, кроме этих мероприятий, множество задумок о жизни и деятельности районных и городских комитетов, парткомов заводов, комбинатов, фабрик, колхозов, совхозов, творческие встречи в парторганизациях, трудовых коллективах, рассказы о коммунистах, передовиках производства.

Одним словом, отдел всегда будет в гуще жизни партийных, профсоюзных и комсомольских организаций. В этом нам поможет наш боевой актив».

«Не то ждали мы от вас», - недоброжелательно произнес резко коммунист М.И.Иванов в ходе обсуждения вопроса

дня, но свою мысль не развил дальше. После собрания мы с товарищем Филиным с огорчением обсуждали высказывания в свой адрес редактором... Психологически я улавливал кое-что, но чего еще сверхмощного захотел он от нас — до сих пор остается в тайне.

Çурăмран çĕçĕпе чикнĕ пекех

Сахал мар çĕнĕлĕх палăртнăччĕ Константин Филинпа иксĕмĕр çулталăк вĕçлениччен. Кашнийĕн пултарулăх малашлăхĕ çирĕп палăрнăччĕ.

Анчах... Утнă-чупнă чухне те, шывра ишнĕ е сывлăшра вĕçнĕ хушăра та хăвпа хăш самантра мĕн пулса иртессине чухласа та юлаймастăн. Манпа та çаплах пулса тухрĕ. 1975 çулхи утă уйăхĕн пуçламăшĕнче канма шутларăм. Арăмпа савăнса çӳретпĕр. Отпуск вĕçленсен ĕçе тухрăм та... Ман сĕтел хушшинче урăх çын ларать: Афанасий Михайлович Иванов. Мана Филин вырăнне литсотруднике куçарнă. Редактор мăк-мак тукаларĕ те, «парти обкомĕнче» мана итлемерĕç, эпĕ пĕртте ун пек тăвасшăн марччĕ, вăхăтлăха ĕçле-ха, кайран куç курĕ» текелесе лăплантарма хăтланчĕ. Эпĕ обкома кайрăм. Александр Петров хырăмне хĕртме Хура тинĕс хĕррине вĕçнĕ. Унсăрăн ман ыйтăва урăх никам та хускатмасть иккен. Çынсен çемйинче - савăнăç, пирĕн - хуйхă.

Сăлтавĕ пĕр чăваш-ентеш çинче пулнă мĕн. Вăрнар райкомне ертсе пыракан Анатолий Викторович Емельянова республикăри культура министрне куçарнăччĕ. Ун хыççăн район тилхепине тытнă Альберт Тимофеевич Купчиков, хăйне Емельянов хваттер ыйтăвĕпе Вăрнарта нушалантарнă вăхăтра (Купчикова пурăнма хăйĕн хваттерне час пушатса паманшăн), манпа чунне уçса калаçнă май, тарăхнипе, «Кам вăл Емельянов? Завклуб»,- тесе чунне кантаратчĕ. Республикăн çав «аслă зав-клубĕ», ытла чухăн та капашсăр йăшăлтату министерствинчен хăтăлас шутпа пулас, СССР писательсен Союзĕ çумĕнчи Литература аслă курсне сăнарлăх тăмĕ пуçтарма каять. Икĕ çул хушшинче Михалковсемпе туслашса пĕтнĕ хыççăн, курсран вĕренсе тухнă писателе Шупашкарта ĕçе вырнаçтармалла-çке. Анчах, ăçта? Пĕрре алăра тытса курнă министр пуртвĕльне урăх ăна памаççĕ. Унăн çав шайлă вырăнах ларас килет, çӳлтисем-патшисем пурте ăна майлă. Тытаççĕ те куçараççĕ вара Афанасий Михайлович Иванова ман вырăна. А.В.Емельянов Иванов вырăнне ЧАССР Пичет комитечĕн председателĕ, портфельсĕр министр пулса тăрать.

Пĕлнĕ вĕт-ха Анатолий Викторович вăрттăнла çак хăтлану хыççăн камăн-камăн нуша курассине?

Ун пирки эпĕ ăна Вăрнар çĕрĕ çинче, Нурăс хыçĕнчи вăрман уçланкинчи вут умĕнче, районти акатуй çеммипе аса илтернĕччĕ. «Ан кулян, Володя, пурнăçра тем те пулать, малалла та пурнатпăр-ха, аптрамастпăр», - тесе шӳтлĕн тапса кĕртрĕ вăл шĕл кăвар ăшне çунса пĕтмен юман тураттине йăлтăркка пушмакĕпе.

Çапла вĕсем, вăл вăхăтра çын шăпилле вылякан кушак пек хăтланнă парти пуçлăхĕсем. Пире, парти салтакĕсене, хуть те хăш вăхăтра та темле вучаха чикме, темле çĕрте-çĕре куçарма-çавăрттарма та намăсланман.

Çав 1975 çулта ман шăпапа вылянă хуравлă çынсемпе манăн тĕл пулма, калаçма, хушăран черкке çĕклеме те тӳр килет, анчах вĕсенчен пĕри те манăн çемье пурнăçĕ ун хыççăн мĕнле çулпа кайни пирки кăсăкланмасть. Ним те пулман пекех пакăлтатаççĕ. Çапах та... куçран тӳррĕн пăхма вăтанаççĕ. Пурпĕрех туяççĕ пулас хăйсен айăпне. Эпĕ те ку таранччен хама хам мĕнле улталанине пит лайăх куратăп. Вĕсен шухăшне эпĕ тахçанах кĕнĕ, вĕсен усал ĕмĕтне курнă. Вĕсем хăйсемшĕн çеç çуннине те туйнă.

Партократсен вăйийинче пешка пулас килмерĕ, Чăвашрадио пуçлăхĕн çумĕ Николай Михайлович Дубинин сĕннипе, Николаев урамĕнчи 4-мĕш çурта хаваспах куçса пытăм. Аслă хуçи Павел Афиногенович Крысин мана хăйĕн пысăк коллективне ырă кăмăлтанах йышăнчĕ.

2000-мĕш çулхи ака уйăхĕн 20-мĕшĕ - çу уйăхĕн 6-мĕшĕ, 2009 çулхи раштав.

* * *

«Советская Чувашия» хаçата манран ытларах хамăн мăшăрăм Римма Ильинична кăмăллатчĕ. Йĕпреçре пурăннă чухне ăна чи малтан çырăнма сĕнетчĕ. Мана унта, Шупашкара, ĕçлеме чĕнсен, вăл хирĕçлесе тăмарĕ, килĕшрĕ, çыннисемпе пĕр чĕлхе тупма пултаратăн пулсан, яра пар, терĕ. Мана çав хаçат журналисчĕсем ăслă тавракурăмлă лайăх çырни килĕшет, туятăп эс анлăрах уççа тухасшăн çуннине тесе хушса хучĕ килĕшӳллĕн.

«Коммунизм ялавĕ» хамăрăн чăваш хаçачĕ пулин те, вăл манăн чуна та кантараймастчĕ. Вулакан чи малтан тарăн шухăшлавлă, хăйне туртăмлă, пулăшуллă хыпар-сăмах кĕтет-çке хаçатран. «Советская Чувашия» ку енĕпе çӳллĕ шайраччĕ. Жур-

налисчĕсем питĕ вăйлăччĕ. Каярахпа та эпĕ хам унта ĕçлеме пынă вăхăтри журналистсемпе çыхăну тытма пăрахман. 1983 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче манăн «За гвоздями» ятлă шӳтлĕ калав пичетленчĕ. Ун хыççăнах, редакцире ĕçлекен паллă журналист-писатель Аристарх Дмитриев («Молодой коммунистра» та пĕрле ĕçленĕччĕ) мана тĕлĕнтерсех пăрахрĕ. Хăйĕн яланхи ăшă куллипе тыткăнласа, калать: «Эс, Володя, пире нушалантартăн та, савăнтартăн та. Сан кулăшла хайлавна вуласа, халăх ассах кайнă. Кашни районтан çыру капланса килме пуçларĕ: пурне те пăта кирлĕ, пурте пăта ăçта тупмалли адрес ыйтаççĕ. Хăвах пĕлен, хуçалăхра усă курмалли простой пăта ниçта та çук. Çĕнĕ çул ячĕпе çапла эс аслă пуçлăхсен пуçне сатира пăти çапса, республика халăхĕн пурнăçĕнче усăллă йĕр хăвартăн. Мулутец».

СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ
Орган Чувашского обкома КПСС, Верховного Совета и Совета Министров ЧАССР
Суббота, 1 января 1983 года
ЗА ГВОЗДЯМИ
Поделись улыбкою своей...!

За гвоздями

Дмитрий, которого еще с детства прозвали Ломовым за неуклюжесть да за неповоротливость, живет в деревне Родники. Деревня богатая - односельчане строят свои дома один краше другого. Покряхтел, почесал в затылке Дмитрий и, чтобы не ударить лицом в грязь, поднакопил денег да и тоже поднял каркас дома из силикатного кирпича...

Вот уже и крыша покрыта шифером, осталось кое-что заколотить да трубу печную вывести. Скоро бы и новоселье отпраздновал, да вот загвоздка какая вышла - гвозди кончились.

День, другой, третий лежит на лавке Дмитрий Ломовой, смотрит на мир прекрасный сквозь дыру, оставленную для печной трубы, ждет, когда завезут в сельмаг гвозди. На четвертый день жена Дарья, вернувшись с поля, сдернула мужа с лавки.

- Несчастная моя долюшка женская, - запричитала она, - у других мужья как мужья, трезвые да резвые, а этот колодой валяется на лавке, ждет, пока ему дом достроят... Собирайся! Сосед Лариван в Чебоксары едет, подбросит тебя, там гвоздей достанешь...

Помчались они с Ларинаном, как говорится, ветру навстречу.

В городе Лариван поехал по своим делам, а Дмитрий отправился по своим. К вечеру он обошел все хозмаги, наполнил котомку гвоздями и прочими скобяными товарами, выпил пива, закусил пирожком и отправился на автовокзал. Кассирша продала ему билет почему-то аж до Норусова - это на полсотни километров дальше его Родников. Сев в автобус, он представил, как обрадует жену гвоздями и как скоро закончит строительство дома, и успокоился.

Через некоторое время в низине показались Родники.

- Друг, тормозни у околицы, - попросил Дмитрий водителя.

- Не положено, - не оборачиваясь, хмуро ответил водитель. И, указав пальцем куда-то за спину, добавил: - Безграмотный, что ли? Читай...

Дмитрий повертел головой. На стекле, за спиной водителя, было написано: «Высадка пассажиров только на автовокзале».

- Прочитал? - полюбопытствовал шофер. - Так-то... А в Родниках автовокзала нет. Значит, едем до Норусова.

В Норусове, оказывается, билеты продавали тоже только до Чебоксар. Можно было взять также билет до Казани и до Горького, а с железнодорожной станции можно было уехать хоть до Владивостока. Дмитрий выпил пива, закусил пирожками, вздохнул, взял билет на автобус. До Чебоксар.

С пригорка снова открылись родные Родники. Ломовому даже показалось, что на крыше его недостроенного дома кто-то есть.

Автобус мчался под горку со свистом.

- Друг! Товарищ и брат! - проникновенно заговорил Дмитрий, пробравшись к кабине водителя. -Оставь ты меня здесь. Останови! Дарьюшка меня ждет... Жена, значит. Тормозни...

Водитель указал рукой за спину - мол, читай... А устно добавил:

- Чудной вы народ, пассажиры... Вот построят в Родниках автостанцию - за милую душу остановлю.

Родники скрылись в низине. В Чебоксары автобус прибыл поздно, обратного рейса уже не было. Дмитрий, попросившись, переночевал у сердобольного попутчика. Утром он выпил пива, поел пирожков, подошел к кассе, взял билет, надеясь на какой-нибудь «авось», но никакого «авося» не дождался, молча и угрюмо прокатился до Норусова и уже там обнаружил, что забыл в Чебоксарах, у сердобольного попутчика, котомку с гвоздями. Хочешь-не хочешь, нужно было возвращаться. В Чебоксарах он отыскал гостеприимного хозяина, взял гвозди, но на улице уже опять была ночь...

Утром Дмитрий выпил пива, поел пирожков, подошел к кассе, но тут обнаружилось, что денег на билет не хватает. Ни до Норусова, ни до Родников. Вскинув на плечи котомку, Ломовой отправился пешком по знакомой до каждого кустика дороге.

- Вот моя деревня! - еще раз вспомнил классику Дмитрий, когда с пригорка открылись Родники. - Вот мой дом родной!

На крыше родного дома не было видать никого. Зато... Дмитрий протер глаза. Нет, зрение его не обманывало: над крышей торчала печная труба, а из трубы бойко кучерявился дым. Собрав последние силы, путник поспешил к дому.

- Дарьюшка! Женушка! А вот и я! - воскликнул Ломовой. - Гвозди вот привез... Как ты тут без меня?

Дарья, высоко подняв подол сарафана, мыла полы и язвительно ответила:

- Сосед Лариван давно обеспечил гвоздями. Здорово с ним живем.

ЧĂВАШРАДИО ХУМĔСЕМ ÇИНЧЕ

«Пирĕн патра калаçма ан ÿркен те, чĕлхуне çыртма ан ман»... Комитет председателĕн алăкне шаккаса уçичченех хăлхана кĕнĕççĕ унăн çумĕ Николай Дубинин кулкаларах та асăрхаттараххăн калани.

Иккĕшĕн ĕç пулĕмĕсем хушшинче кăнтăр енчи чăваш пики пиçсе çитнĕ анис улма пек питне йăмăхтарса, кăтра пĕлĕт хыçĕнчен йăлкăшса тухнă хĕвел куллиллĕ куçĕпе ăшăтса, папка сарнă вăхăтри сĕткенлĕ хăва хунийĕ пек пиçĕхсе, туртăмлăн каçăхтарса ларать. Йышăну пÿлĕмĕнчи тулăх кăмăла хамăн уçăлнă кăмăл çумне хушса кĕрсе кайрăм Чăваш эфирĕн-микрофонĕн Патши патне.

Павел Афиногенович, мана унччен те кăшт паллаканскер, ĕçĕм-пуçăма хут тăрăх лайăх пĕлекенскер, ăшшăн кĕтсе илчĕ. Чăвашрадиори лару-тăрупа кĕскен паллаштарчĕ, йывăрлăхра пулăшма пулчĕ, ăнăçу сунчĕ.

Биографии собратьев по перу

Крысин Павел Афиногенович родился в 1923 году в д.Басурманы Моргаушского района, по окончании Мариинско-Посадского техникума землеустройства и мелиорации, в мае 1942 г. добровольцем ушел на фронт.

После войны учился в Казанском юридическом институте. Работал в Шумерлинской районной прокуратуре, в Чувашском обкоме КПСС. В сентябре 1959 г. был направлен на работу в редакцию газеты «Коммунизм ялавӗ»: был заведующим отделами советского строительства, сельского хозяйства, пропаганды, заместителем редактора. По окончании газетного отделения Высшей партийной школы при ЦК КПСС в 1965 г. был утвержден председателем Государственного Комитета ЧАССР по телевидению и радиовещанию, проработал в этой должности 19 лет.

С 3 ноября 1971 по 21 марта 1984 гг. П.А.Крысин возглавлял Союз журналистов ЧАССР.

Его многолетняя плодотворная работа и многогранная деятельность отмечены почетными званиями «Отличник телевидения и радиовещания СССР», «Заслуженный работник культуры ЧАССР», орденом «Знак Почета», памятным знаком «300 лет российской прессы». Лауреат республиканской журналистской премии им. С.В.Эльгера. В 1997 г принят в Союз писателей СССР.

Микиш Павăлĕ (Павел Афиногенович Крысин) 1923 çулхи кăрлачăн 25-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Пăсăрманта хресчен çемйинче çуралнă. Икĕ аслă шкултан вĕренсе тухса, юрист тата журналист дипломĕсене алла илнĕ, республикăри хаçат-журнал редакцийĕсенче ĕçленĕ, çирĕм çула яхăн телевиденипе радиовещанин патшалăх комитетне ертсе пынă, вунвиçĕ çула яхăн республикăри журналистсен союзĕн ертӳçи пулнă. Виçĕ çул çурă вăрçăра пулса, нимĕç тата яппун хурахĕсене хирĕç çапăçнă.

Вăл - Чăваш Республикин культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, республикăри журналистсен С.В.Элкер ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ. Ăна Хĕрлĕ Çăлтăр, 2-мĕш степеньлĕ Отечественнăй вăрçă, «Хисеп палли» орденсемпе тата нумай медальпе наградăланă, «Раççей пресси-300 çулта» хисеплĕ паллăна панă.

П.А.Крысин - Раççей писателĕсен тата журналисчĕсен Союзĕсен членĕ. Халиччен унăн «Тем те пулать пурнăçра», «Хăвилосăф», «Хушаматлă алăк», «Пылак ĕмĕтпе пурăнатпăр» ятлă сатирăпа юмор кĕнекисем, «Парăнман, çĕнтернĕ» очерксен пуххи тата ытти произведенисем тухнă.

Патăрьел районĕнчи Дубининсем республикăра паллă çынсем. Вĕсенчен пĕри «Коммунизм ялавĕ» хаçатра, тепри Йĕпреçри вăрманпромхозра, ĕçлетчĕç. Николай Михайловичĕ КПСС обкомнех çитнĕччĕ, пропагандăпа агитаци пайĕнчен ăна ЧАССР телевиденийĕпе радио патшалăх комитетне кадрсем вăйлатас тĕллевпе куçарнă. П.А.Крысин председателĕн эфир енĕпе ĕçлекен заместительне журналистикăра пиçсе курманскере, çĕнĕ вырăнта, паллах, çăмăлах пулман. Çапах та вăл Радио çуртĕнче хăйĕн пултарулăхне кĕске вăхăтрах кăтартма пултарнă. Компартин Чулхулари аслă шкулĕнче вĕреннĕ чухне çывăх палашнăччĕ унпа. Партшкул çумĕнче аслăрах коммунистсене татах та ăсларах тумалли курс ĕçлетчĕ. Çавăнта КПСС Чăваш обкомĕ те хăйĕн «салтакĕсене» ярсах тăратчĕ. Вĕсен ретĕнче пĕррехинче Николай Михайлович Дубинин та яр уççăн курăнса кайрĕ. Чулхулара ирĕклĕн пурăннă вăхăтра вĕсен те тем тĕрлĕ мыскарасем пулкалатчĕç. Акă çапла:

«Чулхула тăрăх çӳресе кунланă хыççăн çĕрлене юлса кайнине те сисмен Григорий Луч, Николай Дубинин тата Элĕк хаçатĕнче ĕçленĕ Иван Михайлов журналист. Пыр выççи вĕсене хупахсем енне пăхтарать. Пĕрин алăкне пырса тĕртессĕ, тепринне - шалтан çаклатнă. «Мускав» ятли патне çитсен, Лучăн çамки, ăслă шухăш пырса кĕнипе, тата сарăлса каять, вара вăл швейцара кăчăк туртать:

- Африкăран, Конго патшалăхĕн Мускаври посольствинчен, Лумумба юлташĕ, - тĕллесе кăтартать вăл хуп-хура сăнлă Михайлов çине. - Ак ку - унăн тăлмачĕ, эпĕ - обкомран, акă, курăр, - тет «КПСС» тесе çырнă хĕрлĕ хуплашкана çӳлелле çĕклесе.

Хуп-хура Михайловпа хурарах сăнлă Дубинин тăрăшсах чăвашла калаçаççĕ.

Швейцар вăшт çухалать, кĕç пĕр чипер хĕрарăма чĕнсе тухать. Хăнасен пӳлĕмне илсе кĕрсе хĕремеслениччĕнех хăналаççĕ Патрис Лумумба юлташĕсене.

«Тăранман пыр тем те тутарĕ, чăвашран негр та пултарчĕ ваçка, турă усала сиртĕрех малашне», - тесе вăрттăн сăхсăхса илет Дубинин. Манăн «Тутлă-йӳçĕ мунчара» кĕнекерен.

1975 çулхи авăн уйăхĕн варринче мана Венгри Халăх Республикинче кăларнă «Репортер-2» аппарат шанса пачĕç. Самай калăплă, йывăрскер, хулпуççи урлă çакса çӳремеллискер. Манăн унпа çынсен калаçăвне çырса Чăваш тĕнчине кăлармалла.

Çапла эпĕ Чăваш АССР Министрсен Совечĕн телевиденипе радиовещани комитечĕн корреспонденчĕ пулса тăтăм. Крысин çумĕ Дубинин мана иккĕмĕш хутри пĕр пӳлĕме тĕртсе кĕртсе ячĕ.

Пропаганда пайĕн пуçлăхĕ Кузнецов, тăлпан кĕлеткине ташлама хатĕрленнĕ чухнехилле сиктеркелесе, пире хирĕç утрĕ, алă парса, мана çурăмран лăпкарĕ:

- Йĕпреç вăрманне касса çитет, халĕ пĕрле Атăл тăрăх сулă юхтарăпăр.

Пӳлĕмре ларакан Петр Волковпа Леонид Степанов-Маяксем куллипе тĕртсе илчĕç:

- Малтан Атăл шывĕнче шыва кĕртсе пăхар-ха ăна, пире путараймасан, хăй те путмасть...

- Путмасан, пĕрле юхтарăпăр чăваш сăмахне сулăласа, - терĕ кăмăллăн Дубинин.

- Чĕлхепе тем касма та, чĕр сăмаха сулăласа-сулăмлатса тĕнче юххипе юхтарма яланах хатĕр эпир,- тесе ансăр пĕчĕк чăматанран астараканнине туртса кăлартăм.

Мана кĕтекен пуш сĕтел çинче кĕтеслĕ стакансем - Маленков «черккисем» - наччасрах шăнкăртатса юрласа ячĕç. 1953 çулта Георгий Максимилиановича СССР Министрсен Совечĕн пуçлăхне суйланă хыççăн кăларнăччĕ чĕрĕк литра яхăн кĕрекен мăн стакансене. Совет халăхне çăмăллăн сывласа ямаллăх туса панă ырлăхшăн чунтан савăнса, чухăнлăхра хĕсĕнсе çитнĕ çынсем çĕршыв хуçине тав туса çав стаканран сăра-эрех ĕçме пуçларĕç. «Маленков стаканĕ» халăх сăмахлăхне кĕрсе юлчĕ. Эпĕ те, çав стакана çирĕп тытса, «Атăл шывĕпе», радио тытăмĕн пĕр хĕрӳ ушкăнне хăюллăн кĕрсе кайрăм. Мана та сулă юхтаракансен пĕр кĕсменне шанчăклăн тыттарчĕç. Мĕншĕн тесессĕн эпĕ вĕсемшĕн пурнăç юхăмĕнчен ăнсăртран туртса кăларнă паллă мар «пулă» марччĕ. Радиона ялан çырса тăнă, ку ачисене пĕлнĕ, Кузнецовпа пĕр хушă Йĕпреçре пурăннă.

Валентин Михайловичпа эпĕ хам Вăрнарта ĕçленĕ чухнех паллашнăччĕ. Вăл «Коммунизм ялавĕн» Йĕпреçри корреспон-

денчӗччӗ. Пирӗн района пырсан, редакцие кӗменни пулман, пире рейдсем тума та хутшӑнтаратчӗ, ӗҫлеме вӗрентетчӗ. Пӗррехинче, 1962 ҫулхи ҫулла, Кузнецов редактор пӳлӗмне хашкаса кӗчӗ. Эпир Тихонов-Ялгирпа ҫитес номере палӑртса лараттӑмӑрччӗ. Валентин Михайлович, алӑ панӑ-паман, телефон аппарачӗ еннелле ҫаврака мӑн пуҫне сӗлтрӗ:

- Петр Алексеевич, пит васкавлӑн Шупашкара тытар-ха, Якимовпа шутсӑр хӑвӑрт калаҫса илмелле.

- Мӗн сиксе тухрӗ тата? Ҫӗнӗ хыпар паратӑр-и?- кулӑллӑрах пуплекелесе Тихонов Шупашкар ҫулӗ ҫине часах тухрӗ.

- А-а! Михаил Николайч-и? Сывах-и? Сывах пулсан, аван. Эпӗ Вӑрнартан-ха. Тихонов пӳлӗмӗнчен. Сассинченех пӗлтӗм ӑна, тетӗр-и? Мӗн-ха, партпухӑва паян ҫитейместӗп. Вӑрнар районӗнче икӗ кун иртрӗ. Кӳлхӗрри кӳллинче шыва кӗрсе тусанран тасалма та ӗлкӗреймерӗм. Тин ҫеҫ «Трактор» колхозран персе ҫитрӗм. Ыран Йӗпреҫре рейд ирттересшӗн. Вӑйлӑ материалсем пулаҫҫӗ...- хыпӑнса калаҫрӗ хӑйӗн редакторӗпе хаҫатӑн «хамӑр коррӗ».

Кӑшт мухтанса илес килчӗ-ши Кузнецовӑн, ресторанта каҫхи апат сӗтелӗ хушшинче, питне хӗрлӗ сӑн ҫапма пуҫласан, вӑл ахӑра-ахӑра юптарчӗ:

- Ӑнлантӑр-и, нимле Кӳлхӗрринчен те мар, Йӗпреҫрен персе ҫитрӗм-ҫке эп паҫӑр. Ай, ҫав Тенюшева ла-ай-йӑх! юсаса хӑвартӑм. Тек вӑрӑм чӗлхине ҫырттӑр, мана ҫӗлен пек вӑрттӑн ан наркӑмӑшлатӑр. Ӗҫӗ ҫаплах пулса тухрӗ. Кӗтӗм пӗр майлӑ самантра редакцие. Шӑпах апат вӑхӑчӗ. Пӳлӗмсенче никам та ҫук. Редактор пӗчченех саркаланса ларать. «Иван Яковлевич,- терӗм хаяртараххӑн,- хӑҫан пӑрахан эс ман ҫинчен Шупашкара шалӑп пама?!» Сехри хӑпнӑскер, вӑл мӑк-мак тукаларӗ те, аллине телефон еннелле тӑсрӗ, темле номерпе шӑнкӑравларӗ. «Милици...» теме ӗлкӗрчӗ кӑна, ман ак ҫак юман чукмар хӑлха чиккинчен пырса тивнипе палтӑрах урайне кӑптӑртатса ӳкрӗ, элекҫӗ йытӑ ҫури пек нӑйкӑшма пуҫларӗ: «Тархасшӑн ан вӗлер, Валентин Михайлович, ентешсем эпир. Туслах пурӑнар. Сан ҫинчен урӑх никама, ниҫта пӗр сӑмах каламас...» Почтӑна кӗрсе Роза телефонисткӑна хытарса хӑвартӑм: «Икӗ сехет хушши Тенюшева Шупашкарпа ан ҫыхӑнтар!» Чукун ҫул каҫӑвӗ умӗнче вутӑ тиенӗ машина пуйӑс иртсе каясса кӗтет. «Ӑҫталла?» «Вӑрнаралла». Лартӑм та... ҫитрӗм сирӗн пата. Тӳрех, авӑ, редактор патне. Хэ-хэ, юсамалла унашкаллисене, тимӗрҫӗ сунталӗ ҫинче султтанпа кӳпкесех туптамалла...

Кĕçех вĕсен çулĕсем уйрăлнăччĕ. Никита Хрущев çĕршывра черетлĕ камит кăтартма пуçласан, Йĕпреç районне тунката пек тĕплерĕç те, «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçат редакторне Иван Тенюшева, çĕнĕ нурнăç тума тата пысăкрах ăс пухмашкăн, Мускава çитиех вĕренме ячĕç. Корреспондент (хамăр корр.) пунктне пĕтернĕ хыççăн, Валентин Кузнецов Шупашкаралла тапрĕ. Тем тума та пултаракан хастара, Патăрьел паттăрне, Михаил Якимов редактор хăйĕн чĕлĕм тĕтĕмĕн ăшшине туртрĕ. Володарский урамĕнчи Пичет çуртĕнче те, Иван Яковлев проспектĕнчи çĕннинче те «Коммунизм ялавне» вăй-халне шеллемесĕрех вĕлкĕштерчĕ. Те редактор пӳлĕмĕнчи тĕтĕмпе чыхăнчĕ, те Чăваш уçлăхне хăлаçланса тухас терĕ, Кузнецов радио хумĕнче «Пропаганда» ятлă карап капитанĕ пулса тăчĕ.

Акă, халĕ вăл мана хăй ытамне илчĕ. Патвар Туçа паттăрĕ икĕ хул хушшине виççĕмĕш ачине хупрĕ.

ЧАССР телевиденипе радиовещани патшалăх комитечĕн пропаганда редакцийĕ: аслă редакторĕ Валентин Михайлович Кузнецов, редакторĕсем - Петр Иванович Волков, Элĕк районĕнчи Мăн Этментен; Владимир Прокопьевич Кузьмин, Вăрнар районĕнчи Хурăнсур Çармăсран; Леонид Александрович Степанов-Маяксем, Канаш районĕнчи Маякран (стр.50). Телефонĕ те асрах: 2-15-36.

Республика хаçачĕсенчи пекех, пирĕн редакци те Чăвашрадиора питĕ курăмлăскер, çитменнине тата нумай енлĕскер. Тăватсăмăра самаях тарлаттармалли мунча. Ытти редакцисенчен хăйне евĕр хуравлăх пире вичкĕнрех те асăрханулларах пулма ыйтать.

Тĕп хуланалла вĕçиччен Кузнецовпа пирĕн пĕрле Йĕпреç вăрманĕнче çырла-кăмпа пуçтарма та, вăрман çыннисемпе хурăн шывĕ юхтарма та сахал мар тӳр килнĕччĕ.

Радио ĕçĕ хаçатри пек мар, самай кăткăс. Çырса, машинкăпа пичетлеттерсе, секретариата хатĕр материал пани мар. Кунта пĕр-пĕр çынна магнитофон ленти çине çыриччен ăна тикĕс калаçма хатĕрлес пулать: мĕн çинчен каламаллине, мĕнле чĕлхепе калаçмаллине ăнлантаратăн, шухăшне-пуплевне хут çине çырса паратăн... Сăмса умне микрофон çывхартсан тата малтан шăкăл-шăкăл калаçакан тăнлă çынах тытамак тытнă пек чĕтреме пуçлать, чĕлхине çăтса янăн мăк-мак тукалать, шухăшне пăтрататать. Тексчĕ яка, чĕлхи таса, сăмахĕ пĕр кăлтăксăр пулмалла, çӳлтен хушнă йĕртен иртмелле мар. Аслă редактор тĕрĕслесе юсаса тухнă текстпа пĕрле магнитлă лентăна сасă операторĕсене кайса па-

ратăн, вĕсемпе айланса çĕнĕ лента çине çыратăн. Кузнецов алă пусса парать те, сан лăпăртатăву ун хыççăн тĕп редактор пӳлĕмне лекет. Александр Николаевич Николаев ăна, пит типтерлĕ, васкамасар вуласа-итлесе, малалла кайма ирĕк парать. Пичет çуртĕнчен килнĕ варттăнлăх кантурĕн çынни - главлит хаччи - нумай-нумай инструкци ыйтнă шайпа виçет-тĕпчет: а тăрук Патăрьелĕнчи механизациленĕ арман, Йĕпрес çумĕнчи аэродром, 1941-42 çулсенчи хĕлле чавса Сăр тăрăхĕнче тăшмана тытса чармалли хутĕлев хӳми туни, Çĕнĕ Шупашкарта мĕн туса кăларни çинчен те пленкăра сас-хура пур. Вĕсем пирки ют çĕршыв разведкисем пĕлсен... Шыраса тупатчĕçех мĕн те пулин, вара çав

В.М.Кузнецов


Л.А.Степанов

В.П.Кузьмин

П.И.Волков

вырӑна касса пӑрахаҫҫӗ. Тин материал радио хуҫи Дубинин умне пырса выртать. Николай Михайлович ӑна тата вулать, итлет, тем йӑнӑшӗ шырать, тӳрлетет, юсать, эфира ӑсатса ярать.

КПСС обкомӗн номенклатуринчи пуҫлӑхсене пит сыхлатчӗҫ халӑх сӑмахӗнчен... Унта райкомпа райӗҫтӑвком, хулакомпа хулаӗҫтӑвком пайӗсен заведующийӗсем, завод-фабрика директорӗсем, колхоз-совхоз хуҫисем таранах кӗртсе тултарнӑччӗ те... Бригадирсемпе цех начальникӗсене кӑштах тивертсе илме ирӗк пурччӗ ӗнтӗ пирӗн. Критика тени йӑлтах тимӗр решетке ку енчеччӗ. Пуҫлӑх патне ҫитиччен... Мускава ҫурран кайса килетӗн.

Комитетра - телевиденипе радиовещани студийӗсем. Радиора, Николаев урамӗнчи 4-мӗш ҫуртра, пропаганда, юлашки хыпарсен вырӑсла-чӑвашла, ҫырусемпе ӗҫлекен, промышленность, ял хуҫалӑх, литературӑпа драма, ачасемпе ҫамрӑксен, музыка, ылмаштару передачисен вунпӗр редакцийӗ. Вӗсенчен чи хуравли те пысӑкраххи-анлӑраххи - пирӗн. Республика хаҫачӗсен парти пурнӑҫ, пропаганда, совет строительствипе йӑла, культура пайӗсен ыйтӑвӗсене эпир тӑваттӑн пропаганда редакцийӗнче эфира ӑмӑртса кӑларатпӑр. Хаҫатрипе танлаштарсан, икҫӗ ҫын вырӑнне мекӗрленетпӗр.

Журналистика «кашкӑрӗ» Валентин Кузнецов радиора та куҫӑмлах хуҫаланать. Пиртен чылай аслӑ, пурнӑҫ тути-масине тӑраничченех тутанса-ҫисе пӑхнӑ, Патӑрьел енчи Туҫа ялӗнчен, авиаци ветеранӗ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи вӗҫевҫӗ-штурман. Ӗҫе палӑртас, пропаганда пайне-редакцине кирлӗ курспа-йӗрпе тытса пырас йӑла хӗрӳ чунлӑ салтакранах сыхланса юлнӑ пулас. Йӑнӑшмастчӗ.

Туртакан лашана ялан йывӑр тиенӗ пекех, Валентин Михайловича тата тепӗр канӑҫсӑр та нумай енлӗ хушма ӗҫ тупса панӑччӗ. Тӳпенелле кӑшт вӗҫсен, йӑлл кулать те хӗвеллӗн, хӑпартланса илет вӑл: «Партбюро пирӗн радио-телевидени халӑхне мӗн парать? Выговор. Профком мӗн парать? Хваттер, ясли-сад, путевка, пулӑшу... Крысин та мансӑр пӗр ыйту татса параймасть. Во кам аллинчче эсир - шӑпӑрлансем. Акӑ, заявлени пекки сӑрмаклӑр та, ун ҫине хушаматӑма кукӑртса хуратӑп та, профком кассине кутӑн сиплетӗр те, шӑнкӑр-шӑнкӑр нухрат сассипе Лакрей вӑрманӗ еннелле юрттарӑпӑр ӗҫ туса пӗтерсен. Атӑл шывне юхтарӑпӑр майӗпен. Пурнатпӑр-ха!»

Уҫӑ кӑмӑлларан, шӳтлеме юратнӑран, сӑмахне тытма пултарнӑран, хӑюлларан пулас, эпӗ хӑйне евӗр ҫак мӑнкӑмӑллӑрах,

уçă чун-чĕрелле, тăлпан кĕлеткелле, илемлĕ сăн-питлĕ, чăн-чăн чăвашла калаçакан-çыракан журналиста Йĕпреçрех кăмăлласа пăрахнăччĕ. Коминтерн урамĕнче хăй туяннă йывăç пӳртре кил тытса пурăнатчĕ. Арăмĕ, чип-чиперкке, çаврăнăçуллă, артистка майлăрах йăрăс чăваш хĕрарăмĕ парикмахерскинче çынсене илем кӳретчĕ. Икĕ ывăл шкула, урамра чупатчĕ. Хисепреччĕ Кузнецовсем вăрман çыннисем хушшинче.

Мана тулли стакан янравĕпе хăйсен йышне илнисенчен пĕри - Канаш хыçĕнчи Маяк тăлпанĕ Леонид Александрович Степанов илемлĕ очерк, калав-повесть çырса халăхра писатель ятне, çыравçăсен ушкăнĕнче Маяксем хушма ятне çирĕплетме ĕлкĕрнĕскер, манран çур çул кăна кĕçĕнскер, хăйне маймар аслăрах тытма хăтланать, хушăран кампа та пулин чĕрре кĕме те хатĕр. Пустуйран мар, паллах. Тĕрĕслĕхшĕн, хăйне, юлташĕсене, пире те хутĕлесшĕн. Ку ĕнтĕ унăн япăх енĕ мар. Çутçанталăк, ашшĕ-амăшĕ панă чĕрĕ вăй кăтартăвĕ. Вăрнар тăрăхĕнчи Кульцав кĕрӳшĕ-ман кӳршĕ, Хусанкай урамĕнче, «Союзпичет» патĕнче, урам урлă çуртра пурăнать. Командировкăсене кайсан та, ĕçрен те киле пĕрле таврăнатпăр. Хуннĕне, Социализмла Ĕç Геройне Александр Данилович Ашанина, ял Совет председателĕ пулнăскерне, таврари ятлă çынна тахçантанпах пĕлетĕп. Ĕç паттăрĕсем çав вырăс ялĕнче йышлă: вун виççĕ таранах. Коротковĕ хăй - икĕ хут Герой. Вĕсем çинчен эпир райхаçатра, «Коммунизм ялавĕнче» сахал мар тĕрленчĕк-очерк пичетленĕ. Леня ялан вара «Хуннĕм салă илсе килнĕ-ха, атя, Володя, «Стрелкăна» кайса пыр çулне уçар, лайăх антăр тесе, сысна çăвĕпе сĕрер»,- тет те Степанов, сехет йĕппи пиллĕкрен чупса иртсен, пуçне алăк еннелле сулать. «Стрелка» вăл çĕнĕ стадион çумĕнчи, Гагарин урамĕнчи хупах, унта эрехе вакласа ярса паратчĕç.

Йĕпреçре редакторта ĕçленĕ чухне Шупашкартан магнит кассетине сасă тултарма пыракан Леонид Степанов репортер мансăр хĕрсех çӳрейместчĕ. Вăрман вăйĕ парса пулăшаттăм, хавхалантараттăм хăнана.

Элĕк ачине, Кашкăр Петĕрне, темшĕн пĕрле чĕнместчĕ Степанов Кульцав салине çиме. Пĕр пӳлĕмре ларсан та, сукмакĕ уйрăм иккен вĕсен - кашнин урăхларах. Петр Иванович Волков кăмăлĕпе аванах темелле. Райхаçат хыççăн радиорах кун-çулне ĕмĕрлет, çырать, тăрмашать. Анчах та иккĕшĕн хушшинчи туйăм çиппи ниепле те çыхăнса тĕвĕленеймест.

Волков мана радио кухнин вăрттăнлăхĕсене çине тăрсах вĕрентет. Уншăн ăна пысăк тав! Пĕрле районсене тухса çӳретпĕр. Патшалăх уявĕсем, парти сьезчĕсемпе пленумĕсем умĕнхи тата хыççăнхи хĕрӳ тапхăрта курăмлă передачăсем хатĕрлетпĕр. Пропаганда штурманĕ пире, ĕçе васкатас, çăмăллатас тĕллевпе, çулçӳреве мăшăррăн кăларса ярать. Октябрь праçникĕ тĕлне Петр Иванчпа Кузнецовсен «Гвардеец» колхозĕнчен ĕç паттăрĕсене эфирта кĕрлеттертĕмĕр. Тепринче Леонид Степановпа хамăр ялта, Хурăнсурта, çĕр каçрăмăр. Манăн Çĕрпелти тусăм Василий Игнатьевич Романов хăй ертсе пыракан Ленин ячĕллĕ колхоза республикăри чи вăйлисен ретне лартнăччĕ, ял культурине никамран вăйлă аталантаратчĕ. Эфирта «Ӳсет ял-йыш - савăнать кил-йыш» передача янăрарĕ. Планеркăра эпир Крысинран «пиллĕк» илтĕмĕр.

Вăрнар районĕнчи хамăр колхоз, унăн хастар та ăслă-тăнлă пуçлăхĕ Романов çинчен «Ял хисепĕ» радиоочерк кăларса ятăм. Çавнах вырăсла та хатĕрлерĕм. Ылмаштару передачисен редакцине тытса пыракан Владимир Яковлев ăна хапăлласах йышăнчĕ. Ахух, манăн радио-очерк малтан Хусантан «Атăлпа Шуратăл хушшинче» радиостанцирен илтĕнчĕ, ун хыççăнах Мускавран, Пĕтĕм Союз радиовĕнчен янăрарĕ.

Чăваш писателĕн Иван Саламбекĕн ывăлĕ Владимир Çĕнĕ Шупашкартан ĕçе çӳрет. Автобус сахал, çынни хурт пек йăшăлтатать, лараймасăр тепĕр чухне вăл ĕçе каярах та юлать, хуçасенчен ят та тивет уншăн. Вырăсла ӳснĕ ача вырăсла калаçать. Питĕ тарăн шухăшлă, анлă тавракурăмлă çыравçă. Журналистикăра хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне тупнă тепĕр «кашкăр». Куçлăх тăхăнать. Якалма-çуталма пуçланă пуçне пĕрмай шăлать. Питне сулахай аллипе сăтăркалать те, пирус тĕтĕмне ункăлантарса, куçран пăхса илет: «Мĕнле унта, сирĕн хуçа?» «Пӳрнисемпе пыр карланкине хыпашласа ларатчĕ-ха», - тетĕп кулкаласа. «Юрать, систер, ан васкатăр, ĕç пĕтсенех кунта çавăтса кил». Юлташлăх енĕсем питĕ туйăмлă иккен Владимир Ивановичăн. Пулăшма яланах хатĕр. Укçа-тенкĕрен хытса тăмасть, суймасть, улталамасть. Пирĕнпе те, радиора тин çеç сасă уçса пыракан симĕс калчасемпе, хăйне мăнна хумасăр, этемле тан тытать. Çавăнпа ун çумĕнчен кăмăллăх, юрату тени уйрăлмасть. Унăн чи вăйлă тарăхăвĕ те иккĕ кăна пулас. Пĕри вăл - милици. Унта ĕçлекенсене, хĕрлĕ пакунлă «тăнсăрсене», çынна ним вырăнне хума пĕлменшĕн, тӳрккес хăтланнăшăн, пуçа каçăртса эпкамлатса-хамлатса

çӳренӗшӗн, сурсах вӑрçать. Сӑлтавӗ те пурччӗ çав. Хӑйсен хулинче ӑна пӗррехинче, хӑнаран таврӑннӑ чухне арӑмӗ лавккана çӑкӑр илме кӗнӗ хушӑра, чипер тӑраканскернех, машинӑран тухса икӗ милиционер урӑлтаркӑча тытса кайнӑ. Тепӗр тарӑхавӗ вара -журналистикӑри лӑпӑр-лапӑрлӑх. Пиçсе çитмен, ячӗшӗн майлаштарнӑ материалсемшӗн, передачӑсемшӗн, хуçасене комитет председателӗпе çумӗ таранах куçран, эртел çинче, çунтарать. Кут хыçӗнче палкаса çӳремест. Тӗрӗс тӑвать. Радио çуртӗнче вырӑссем татах пур. Валентина Андреевна Иванова промышленность передачисен редакцине ӑста ертсе пырать. «Советская Чувашия» хаçат редакторӗн, паллӑ журналистӑн Михаил Иванович Ивановӑн арӑмӗ. Питӗр ен хӗрӗ. Унӑн икӗ «кавалер»: Николай Скок тата Михаил Иванов. Передачисене вӗсем, аслӑ редакторне пултарулӑхӗпе хӑваласа çитес пекех, маçтӑрла йӗркелеççӗ. Планеркӑсенчен пӗрмаях ырӑ ятпа тухаççӗ промжурналистсем. Типтерлӗ, чӑмӑрланса çитнӗ, ӑшӑ сӑн-питлӗ, çивчӗ те туйӑмлӑ куçлӑ, татса калаçакан пуян та таса чӗлхеллӗ радио майри умӗнче арçынсем йӑшӑлах тӳрленсе тӑраççӗ, чӗлхи-çӑварне юсаççӗ, куллине улӑштараççӗ, ӑш-пиллӗхе хушса пуянлатаççӗ. Ăсталӑхӗпе унпа танлашаканни, пӗр шайра тавлашаканни Владимир Яковлев çеç. Хитрелӗхӗпе ӗнтӗ передачӑсем пленка çине куçарса çырнӑ çӗрте ӗçлекен Таня Дмитрова кӑна унпа пӗрешкел. Илем шевли юхать вӗсенчен. Куç умӗнчен çухалмаççӗ. Пӗррехинче, хӗрарӑмсен уявне палӑртнӑ хыççӑн, профком пуçлӑхӗ Валентин Кузнецов, çав пирӗштисем хыççӑн ӑмсанса хастарланса пынипе, асӑрхаймасӑр, аялти хута анмалли картлашкан виççӗмӗш пускӑчӗ çине тӳрех ярса пуснӑ та стенана чуптунӑ, тӗшӗрӗлсе аннӑ. Тӗп пуçлӑхӑн Павел Крысинӑн ун урлӑ каçса хӑпарма тивнӗ. Тепӗр кунне Валентин Михайлович пуçлӑх пӳлӗмӗнче мунча кӗчӗ.

Валентин Михайлович пуçа усмасть, Павел Афиногеновичран пурпӗрех кулма пӑрахмасть, ун айне пуласшӑн мар, пӗрмай чееленет, уçӑмлӑн вӗçесшӗн мӗн кӑна шутласа кӑлармасть пуль. Манӑн «Тавçӑруллӑ штурман» кулшӳтлевӗнчи пекех:

«Çынна ним мар йӗплеме, такамӑн йӗмне те хӑй сисмесӗрех хывса илме пултаракан Тимӗрç Михалин Валентинӗ вӗçсе килнӗччӗ те Патӑрьел тӑрӑхӗнчен, ай аташатчӗ Чӑваш çыравçӑлӑх тинӗсӗнче. Вӑрçӑ çулӗсенче çӑмӑл çунат сарса çӳл тӳпере ярӑннӑ штурман кирлӗ самантра хурчка пек тапӑнма та пултаратчӗ.

Чӑвашрадио эфирӗнче кефир ӗçнӗ хыççӑн, хайхи пилот сывлӑш уçлӑхӗнче хӑйне тӑвӑрлакан пуçлӑха тавӑрма шутлать. Хӑйӗн

пуçĕнчен пĕчĕкрех пуçлă пуçлăхĕ унăн - Павел Крысин. Афиноген ывăлĕ Чăвашрадиопа телевидение Муркашри ашшĕ сухапуçне çирĕп тытма вĕрентнĕ пекех икĕ алăпа тытса пыракан патшалăх çынни - парти тарçи. Радио-телевидени сас-курăмне йĕркелекенсен, вĕсене халăх куçне-хăлхине çитерекенсен, юрлакансен профсоюзне ертсе пыраканскер, Тимĕрç-маçтăр хăй пĕртте аслă пуçлăх çĕр çине пуснинчен начарах пусмастăп тесе шутлаканскер, халăх хушшине ăслăлăх хумĕ хĕмлентерсе янă хушăрах, тăвăл хумне те пуçлăх пӳлĕмĕ умне çапса кăпăклантарма манса кайман.

Çапла пĕррехинче... Чăваш курăм-сас-хура хуçине парти обкомĕнче кункăрара йăвалантарса янине пĕлет те Тимĕрç Валентинĕ, çиçĕмле хăвăртлăхпа хăлтăртатса илет: тинех лекрĕ!

Кĕç Шупашкарти санитарсем патне КПСС Чăваш обкомĕнчен хаяррăн шăнкăравлаççĕ: «Чăвашрадиопа телевиденире йĕкехӳре йăва çавăрнă. Пирĕн пата та, Цĕкана та çăхав хыççăн çăхав пырать. Хăрушă чĕрчун çырмалли-ӳкермелли тата архива-фонда хывнă пленкăна та кăшласа ярса халăха сасăсăр, киносăр тăратса хăварма пултарать. Васкавлă ĕçлемелле. Йĕкехӳре кĕтĕвне пĕтермелле. Ун çинчен пирĕн Мускава вăхăтра пĕлтермелле...» Обкомран тесе панă Кузнецов хушăвне Крысинăн йышăну пӳлĕмĕнче йышăнаççĕ, çийĕнчех хуçа патне çитереççĕ. Кузнецов малалла мĕн пулса тухасса чăтăмсăррăн кĕтет.

Ултав пирки ăна-кăна чухламан Афиноген ывăлĕ Павăл обком хăйне парнеленĕ аслă пӳлĕмре яланхи пекех шанчăклăн ларать-ха: ĕç хучĕсем айне хушаматне хӳрелле кукăртать, шăнкăрава хулăнрах сассипе хуплать, вăрттăн ыйтусемпе килнĕ хористкăсемпе куçлăхне хывсах кушак аçилле калаçать, «наркăмăшлă» кĕленчерен шуса ӳкнисене ура çине тăма пулăшать... Ĕç шавĕ эфирта янăрать, экран çинче кĕрлет. Акă, васкавлă татса памалли тепĕр ыйтупа вăл пропаганда редакцийĕн пуçлăхне чĕнтерет. Те столовăй апачĕ юраман, тем пулнă, унчченех хырăм пăкăртатнипе, ыратса пăрса килнипе аптăранăччĕ-ха Крысин. Çак кăткăс ыйту тата... Телевидени режиссерĕ ăна хирĕç революци пуçланă, пуçлăхсене хирĕç тăрать. Профсоюз комитечĕ пухса хирĕçле мерăсем йышăнмалла. Кузнецов пырса кĕрсенех, чăтма май çуккипе, Павел Афиногенович васкавлă çĕре вашкăртнă.

Пӳлĕмре пĕчченех тăрса юлсан, Валентин Михайлович вăхăтлăха та пулин хуçа вырăнне ларса пăхас тенĕ. Ларнă та, хăйне мăн пуçлăх пек тыткаласа, умри ĕç хучĕсене пăхкаланă. Çав

вăхăтра алăка тул енчен шаккаса пӳлĕме палламан хĕрарăмсем кĕрсе тăнă, алăри шăршлă хатĕр-хĕтĕре кавир çине лартнă.

- Санэпидстанцинчен эпир...

- Мĕнле ыйтупаччĕ?- кулса ярасран аран-аран хăйне тытса чарнă Кузнецов.

- Йĕкехӳре пирки.

- Крысин çуккă.

- Ăçта?

- Сортирта.

- Мĕн сортировать тăвать?

- Варвитти сассине. Эп нимĕн те пĕлместĕп, кунта йăпăртлăха çеç кĕнĕ çын. Хăй килсен ыйтăр, - ура çине тăрать «пуçлăх».

- Мĕнле çуккă крыса?- тĕлĕнет хĕрарăмсенчен ватăраххи.- Радиона йĕкехӳре кăшласа яма пуçланă тет, вăл... Ара, вăхăтра пĕтермесен ăна, асса кайсан... хăвăрăн кутри йĕмне кăшласа кĕрсе каять. Юрамасть аташтарма ирсĕре. Пире обком хушнă çак пӳлĕмрен пуçлама. Йĕкехӳре вăл сĕтел çинче сире хирĕç пăхса лармасть, таçта шкапра-тумбочкăра-ха. Хă, крыса çук тесе суясшăн. Пирĕн ĕнтĕ крысирен хăйĕнчен ыйтмалла: хисеплĕ Крыса хаспутин, сире наркăмăш пама юрать-и?.. Хĕрсем, пуçлăр сирпĕтме, имçам сапма. Ахаль те вăхăт сахал, хăвăртрах, пирĕн хамăрăн инструкци. Эпир нимле пуçлăх-куçлăха та пăхăнмастпăр. Хă, чиперех крыси çук, тет. Крысин вăрăм хиври пекех çаптарать.

Ăшĕнче тутлăхлăн кулса тухать пуçлăх пӳлĕмĕнчен Валентин Михайлович, вара темле ăнăçлă пысăк ĕç тунă пек хавхаланса, коридор тăрăх саркаланса утса каять.

Хырăма çăмăллатса таврăннă Крысин ĕç пӳлĕмне кĕрет те...»

Николаев урамĕнчи пурăнмалли çуртсем хӳттинче пытанса ларакан сасă керменĕнче мĕн кăна пулса иртмен пуль...

Типĕтнĕ пулă пек хытса ларнă, ыйту палли майлăрах кĕлеткеллĕ Козлюк никама пăхăнманлăхĕпе вăйлă, ту качаки пекех чĕвен тăрса мăйрака кăтартма хатĕр. Вырăсла хатĕрленĕ юлашки хыпарĕсене унăнне тĕкĕнме юрамасть, мĕншĕн тесен вăл вĕсене ахаль те маçтăр аллипе, ăста чĕлхипе малтанах саваласа якатнă, шухăшĕ-хăвачĕпе вăйлатнă. Николай Федорович пули-пулми çынпа хутшăнса çăвар тутине ямасть. Калаçма тытăнсан вара... анлă тавракурăмлă пĕлĕвĕпе пурне те тĕлĕнтерет.

Ун патне «Коммунизм ялавĕнчен» парти пурнăç пайĕн пуçлăхĕ Крысин информацисем илсе килет. Алексей Гавриловичпа

вĕсем туслă. Килĕнче пĕччен пурăнакан ватă журналиста Мур-каш ачи хушăран апат-çимĕçпе те, ĕçмелли-çимеллипе те пулă-шать иккен. Вĕсемпе хутшăннă май, эпĕ Козлюк кăмпа яшки питĕ юратнине пĕлтĕм. Кăмпине Алеша пырса парать: чĕррине те, йӳçĕтнине те, типĕтнине те. Ырă чунлă икĕ çыравçă туслăх кăмăлне çĕклентерсех тăраççĕ.

Парти обкомĕнче мĕн-мĕн пулса иртнине комитет пуçлăхĕ Крысин та халăха хыпарласа тăмаваскать. Вăл, КПСС обкомĕн бюро членĕн кандидачĕ пулнă май, сĕп-свешĕй информаци чи малтан тупать бюро канашласа шавланă вăхăтра. Çапах та Козлюк ытларах чухне Алексей Гаврилович хыпарĕсемпе усă курать. Павел Афиногенович ай урса çӳрет вара. Аптрана енне вăл Козлюка планеркăра тапăнать. Николай Федорович хуçан пушă вĕçĕ çине пĕрешкел сăмахсем çыпăçтарса хурать: «Кам маларах çитерсе панă тата кам ăстарах çырнă информаци маншăн ылтăнран та хаклăрах.»

Обкома ертсе пыракансем республика хаçачĕсен редакторĕсене ытларах мала хураççĕ. Вĕсем ялан - бюро членĕсем, сасăллă «инквизиторсем». Бюро членĕн кандидачĕ ларура калаçма пултарать, анчах ыйту татса панă чухне унăн алă çĕклеме право çук. Радиопа телевидение хакласах кайманнинчен е комитетне ертсе пыракан юлташа ытлашшиех хисеплеменнинчен килетши çакă? Ун пирки эпĕ республика коммунисчĕсене ертсе пыракан Ислюковсемпе Вороновскисенчен те, Прокопьевсенчен те ыйтса тĕпчемен. Партин çирĕплетнĕ йĕркине пăхăнма хăнăхнă çынсем ăна ман пекех кулленхи пурнăç йĕрки пуль тесе шутланă.

Пĕр артистлă театр пур тата пирĕн. Спектаклĕсене лартаканĕ-кăтартаканĕ комитет пуçлăхĕ хăй. «Коммунизм ялавĕпе» «Советская Чувашия» хаçатсен ирхи тишкерĕвне Чăвашрадио халăха хыпарлать. Редакцисемпе килĕшнĕ тăрăх, уншăн вĕсем укçа тӳлеççĕ: кашни тишкерӳшĕн - 15 тенкĕ. Те нухрат çитменрен, те кĕсйи тулайманран, каçалапа типографине ытларах хуçа хăй чупать. Кĕвĕçӳ те, хирĕçӳ те юнашарах çав ун пек чухне. Ку ĕçе Дубининпа редакцисен аслă редакторĕсем çăмăллăнах тума пултараççĕ-ха та... Пурпĕрех нухрат камичĕ, нумай сериллĕ фильм пек, кунран-кун вĕçĕмсĕр тăсăлать. Валентин Кузнецов коридора тухсах ахăрттарать: «Пирĕн главнăй журналистăн кĕсйинче, çивĕч перопа вичкĕн магнитофон вырăнне, - măкалнă хачăпа типме пуçланă клей кĕленчи шакăртатать». Ара, тишкерӳ хатĕр-

ленĕ чухне хаçат материалĕсене пичете пама пухса çитерни страницăсенчен касса илсе хут çине çыпăçтараççĕ-çке. Хачăпа клей - тишкерÿçĕ хĕç-пăшалĕ.

Ял хуçалăх редакцийĕн алăк çурăкĕнчен пĕрмай тĕтĕм йăсăрланать. Аслă редакторĕ Степанов çăварне пирус хыпнă та, хăлхи çумне телефон трубки хĕстернĕ те, е Йĕпреçпе, е Сĕнтĕрваррипе хĕрсех калаçать. Йĕпреç вăрманĕнчен Геннадий Кузнецов, Атăл хысакĕнчен Петĕр Вашават ăна радио апачĕпе- хатĕр кассетăпа тăрантараççĕ. Пулăшаканĕ, лутакарах тăлпан Самсоновĕ тутине сулахай куçĕ еннерех чалăштарса, йăх-йăх кулать: «Противогаз тăхăнса ĕçлемелле пуль». Пĕр пирусне сÿнтеричченех теприне чĕртсе янă Илья Александрович, хÿререн туртнă сысна пек хăрт-харт тукаласа, пукана чĕриклеттерет: «Ларса шăлавара çĕтиччен, уç сывлăшалла тухмалла пулать пуль сан, Николай Федорович, противогазна сысна ферминче тăхăн. Кулса лариччен, акă задани: шыраса туп та республикăри чи нумай çура илекене, сысна пăхакан паттăра çырса кил, ыранхи передача валли». Хуçинчен те вăйлăрах мăкăрлантарса тухса вĕçтерет Самсонов корреспондент чуппипе. Моряк хыççăн пÿлĕмре сывлăш хумĕ çеç варкăшса юлать. Пĕрне-пĕри ăнланса, хисеплесе, кулакулах мăшăлтатаççĕ «ял ĕçченĕсем», мĕн чухлĕ паттăра, новатора, пуçлăха уçлăха кăлараççĕ. Степановĕ хăй çамрăклах райхаçат редакторĕнче ĕçленĕ чухнехи мыскарасене, Самсоновĕ, шакла пуçне кăтăрт-кăтăрт хыçкаласа, хăй тинĕсре те путманнине аса илме тытăнсанах паллă: киккирикĕсем кăштах хĕрнĕ.

Пиллĕк тĕлнелле алăкра Степанов пирусĕ курăнса кайсанах, Валентин Михайлович куçлăхне çамки çинерех улăхтарать те, лĕхлетет: „Тăхта, Илле, ала пусма ирĕк пар, акă, пулчĕ те передача, ыран шавлатпăр, халь хул ирĕкленчĕ, тем тытма та пултарать». «Кĕтеп, пуллуна ан манса хăвар»,- илтĕнсе юлать Илья Александровичăн хăйăлтирех сасси.

Кузнецов Сĕнтĕрваррине пулла кайма ухută. Вашаватсем Шупашкар «пулăçин» вăлтине миххи-миххипе, катки-пичкипе пулă хыптараççĕ. «Балык тума юрататăп, а-а-ах тутлă!..»- тесе мухтанса ларать пирĕн хуçа. «Илсе килсе çитер-ха апла пире пĕрер татăк та пулин, атту вуплă пекех хытса ларан»,- тесе хăюллăн пуçне çĕклет Леонид Степанов, тутине чĕлхипе çуллаca. «Ытла нумайăн эсир, хэ-хэ, акă сире, тип пулă та çитет»,- тесе черетпе пĕрер хĕç пулă персе парать. Çынран кулма юратать те вăл, çапах кăмăлне хĕвел çинче типĕтмест. Мир анлă урамĕн-

чи хваттерне чёнсе мана хăналать, тăварланă тачка пуллине-балыкне хытмасăрах тутантарать.

Тепĕр пулă хуçи çыпçăнчĕ тата Кузнецов çумне. Элĕкьен çыравçи. «Пулă» тресчĕн кантурĕнче тĕрмешекен Виссарион Синичкин. Кăсăя пекех чĕвĕлтетсе-юрласа çавăрса ячĕ пирĕн ăмăрткайăкăн пуçне. Передача хыççăн передача... Ырлаççĕ те, ятлаççĕ те пулă тытса, пулă сутăн илсе халăха сутакансене. Пирĕн пуçлăх та пулă кĕтĕвĕ çавăрса илчĕ сĕрекине. Пире çеç пуçлăх енчен вĕçекен тип пулă эрнере пĕрре тенĕ пек леккелет. Юлашкинчен чăтаймарĕ Кашкăр Петĕрĕ: «Эсĕ, Виссарион, ман ентеш пулан, пирĕн пӳлĕмрен тухма пĕлместĕн, эпир те пулăшатпăр сана, анчах сан пулă пуçне те кăшласа, пулă хӳрине те ĕмсе кураймарăмăр», - тесе тарăхсах мăкăртатрĕ. Çакăн хыççăн тин Кăсăя тăварланă виç çупах çĕклесе килчĕ. Сăри-эрехĕ каллех хамăртан пулчĕ.

Литературăпа драма редакцийĕ пĕрмай писательсемпе артистсене, ӳнер ăстисене пухать. Фойепе коридора шăнăçаймаççĕ, уйрăмах - пĕр-пĕр пысăк радиоспектакль лартнă чухне. Петр Кузьмич Андреев, тутар чăвашĕ, хăй те чун-чĕрипе тутар майлăскер, чăваш халăхĕн пултарулăх эткерлĕхне пухса эфирта тава тивĕç илнĕскер, самай палăрнăччĕ радиожурналистикăра. Хăй пекех лăпкăн та уççăн янăраççĕ-илтĕнеççĕ унăн передачисем. Кĕленче пăкки уçма вĕренсе çитейменскер, вăл сатту радио итлекенсен чунне уçма, хавалне çĕклеме пултарать. Андреев шавлăрах ĕçтешĕсен хӳттине кĕме асăрханать, хăйĕн илемлĕх ушкăнĕн шавĕпе пĕрле эфирта ярăнать.

Журналистикăра хăйсен шăлĕсене кăтартнă «кашкăрсемсĕр» пуçне радиора тата икĕ кашкăр пур. Петр Волковăн шăллĕ Александр, Саша, çамрăксене астарать, «Ăраскалăн» малтанхи редакторĕсенчен Георгий Красновран тата Венера Большоваран вăйлăрах та интереслĕрех передачăсем эфира кăларассишĕн чĕмсĕррĕн шухăшласа кумлать коридор тăрăх. Яланхи йăлапа ун валли те пĕр-пĕр çĕнĕлĕх тупса килетĕп çула тухсан.

Кузнецов пире кӳршĕсемпе хутшăнса ĕçлеме чармасть. «Эп хушнине нателă тусан, хăть те кам валли тем армак-чармакĕ те сăрмаклама пултараттăр, пĕр-пĕрне пулăшмалла», - тесе хавхалантарать çеç. Çавăнпа Илле Степанов валли те час-часах çыратăп. Иван Степанова та çĕнĕ хыпарсем чăвашла парса тăратăп.

Мункул пит-сăнарлă Ивана, таçта аякра курас пулсан, чăваш тесе те калас çук. Чунĕ вара - чăн-чăн чăвашăн. Информаципе,

çĕнĕ хыпарпа, ку енĕпе никам çĕнтерейми маçтăра Алексей Студенецкие çывăх тăрать, Пĕтĕм Союзри радион Чăвашри ятарлă корреспонденчĕпе Юрий Князевпа хăюллăнах тупăшать, хушăран ăна, кучĕ-пуçĕ пĕр майлăскерне, çĕнтерет те.

Çырас, çĕнĕрен те çĕнĕ, халăха хумхантаракан, кашни итлекене шухăша яракан усăллă передачăсем хатĕрлес килет. Чупатăн-чупатăн, нушаланатăн-нушаланатăн, мĕн чухлĕ хĕрӳлĕх, ăсталăх каять кашни ĕçе. Лайăххине ырлаççĕ, япăххине хурлаççĕ. Хамшăн, авторшăн, чун уççийĕ вырăнне çеç юлать. Укçи-тенки... Шалăвĕ уйăхне 70 тенкĕ. Гонорарне, хушма ĕç укçине, 70 тенкĕрен ытла пĕр пус та тӳлемеççĕ, хăть те 700 тенкĕлĕх çыр. Çавăн пек йывăр хуплав выртать пирĕн пуç çинче - Мускав хуппи. Ăна çĕклесе хушăк шыракансем те пур-мĕн. Редакцисене нухрат кашнинех шутлă уйăрса параççĕ. Аслă редактор çав пуянлăха куçран пăхса пайлать, тăкаклать, чи малтан хăй çинчен те манмасть ĕнтĕ. Çав укçаран штатрисен хĕрĕх процентне çеç илме ирĕк пур. Ыттине штатра тăман корреспондентсене е радиокăларăмсене хутшăнакансене тӳлемелле. Хамăр чикке çитсен вара - ултав пуçланать. Аслă редактор, хăйне усă тăвас, пире те кăшт сыпмаллăх-çырткаламаллăх шăнкăртатаканни пултăр тесе, эпир тунă ĕçшĕн паллакан пĕр-пĕр çывăх журналист ячĕпе пирĕн гонорара ун çине лартса парать. Вăхăт çитсен лешĕ укçине илет те пире парать, тепĕр чухне тата е пирĕн валли кăшт кăна хăварать, е пĕр пус юлмиччен ĕçсе ярать. Çавăнпа Кузнецов вĕсене гонорар илнĕ кун куçран вĕçертмест, касса çывăхĕнчех утса çӳрет.

Яла кайсан, анне те кулянать, çав пур-çук укçашăн çавăн чухлĕ вĕренсе нушалантăн-ши, ывлăм, çынсем, авă, сан пек хаçатпа та, кĕнекепе те пуçа çĕмĕрмесĕрех мĕнле çавăрттараççĕ, сана урăх çĕре таçта та ĕçе чĕннĕ, темшĕн килĕщмерĕн, тет куççуль кăларса. «Ан кулян, анне, мана, пирĕн çемьене, пирĕн тĕп киле хăйсен пуçтахлăхĕпе кисретнĕ çынсенчен эпĕ пĕртте хавщакрах тесе шутламастăп, пурпĕрех вĕсенчен ирттеретĕп пурнăçа. Ĕмĕтсĕрсене пурпĕр çĕр маларах çăтать», - тесе аннен куççульне таса тутăрпа шăлса типĕтсе, малаллах чупатăп.

Патшалăх уйăрса панă хĕрĕх-утмăл шайлă укçана пĕтермеллех пулнă çав, унсăрăн ăна ниме пăхмасăр списать тăваççĕ. Сыхласа хăварас тесе хăшĕсем, сăмахран, Николай Дубининах, радиоспектакльсем майлаштарса пăхрĕç, гонорар укçине, алкаш-çыравçăсен пыр шăтăкне ярас мар тесе, çывăх çыннисем е арăмĕсем çине çырса хучĕç. Элĕк Кашкăрĕ Петĕр выçăлла уласа ячĕ. Çулпуç

кучĕ хыҫĕнчи Аслă ҫуртран тĕрĕслевҫĕсем персе ҫитрĕҫ. Ҫамка ҫине намăс кĕлеми ҫапрĕҫ «ултавҫăсенне».

Ыйткалакана юлашки типнĕ ҫăкăр татăккине панăн тăрантарса усранă пекех туйăнать. Хаҫат-журнал редакцийĕсемпе издательствăсенче ĕҫлекен ҫыравҫă, кантурта ларать-и вăл е ирĕкре чупать, хырăм карăниччеч ҫимелĕх те, пыр карланкине картне лартмалăх та, майрапа тинĕс хумĕн кăпăкĕнче ҫăвăнса киленмелĕх те укҫа ĕҫлесе илет пулсан, ҫав вăхăтрах радио-телевидени чурисем-тарҫисем хура ҫăкăр татăккипе тăварланă килька хыпса хырăма суйса нушалантараҫҫĕ. Мĕн тери тĕрĕсмарлăх! Ҫавна пулах ĕнтĕ халăхра палăрнă вăйлă журналистсем Павел Крысин нушаланса ларттарнă икĕ хутлă тăваткал кермене хăйсен ĕҫ кĕнекисене сарса пырса кĕме асăрханатчĕҫ. Манашкал нуша кулачĕ ҫинисем е хаҫатра-журналта вăй ҫитерейменнисем, е радио ĕҫне чун-чĕрипе парăннисем кăна шăла ҫыртса тăрмашаҫҫĕ. Талантлă, малкурăмлă ачасемех, «стариксемех», «кашкăрсемех» пур телерадиокомитетра. Хаҫат-журнал ĕҫĕпе ҫеҫ вĕсен уйрăмлăхĕ питĕ пысăк. Чăтма ҫуралнă та, эпĕ те вĕсемпе пĕрле хамăн пултарулăх ҫимĕҫне сывлăша сирпĕтетĕп.

Унччен... радиора ĕҫлекенсене хаҫатҫăсем ытлах карт хуманнине те пĕлеттĕмччĕ. Вĕсене хурласа, вĕсенчен кулса мĕнмĕн кăна каламастчĕҫ пуль. Ман та хамăн ята ярас килмест. Сасă ҫырмалли аппаратпа халăх умне тухсан, вăтанатăп, хама хам журналист ырăнне те хумастăп. Акă пĕррехинче...

Максим Коротков партĕҫлевҫĕ-ҫĕнтерӳҫĕ Ҫĕрпӳре ҫĕнĕлĕх революцийĕ тăвать. Уй-хир, выльăх-чĕрлĕх тупăшĕпе чапланса пырать. КПСС обкомĕ Кĕтерне паттша хулинче канаш пухнă. Кузнецов унта мана тăн парса ячĕ. Обкомрисемпе пĕрле Павел Крысин та мăнкăмăллăн утса ҫӳрет, ҫав хушăрах мана пĕр-пĕр ăслă канаш пама та манмасть. Пĕтĕм партноменклатура, хам пурне те паллакан ертӳҫĕсем умне «Репортерпа» тухсан, пит хĕрелчĕ, ҫухалса кайрăм... Ытла та намăс пек туйрăм, залран тухса тарас вĕҫнех ҫитрĕм. Президиум сĕтелĕ хушшинчен обком секретарĕ Александр Петров ăшшăн кулса пуҫне пĕкнĕ, аллипе хуллен сулса саламланă хыҫҫăн тин лăпланса лартăм, майлă, ҫулăмлă репортажах турăм, передача эфира кайсан, черетлĕ тунтикун эртел канашĕнче-тавлашăвĕнче Крысинран тепĕр «пиллĕк» илтĕм. Ҫакăн хыҫҫăн чун вăхăтлăха лăшах пулчĕ.

Ҫитмĕл улттăмĕш ҫула аялти хутра, телевиденипе радиовещани хорĕн анлă пӳлĕмĕнче, концертсем ҫыракан студире, ко-

митетăн мăн йышĕпе кĕтсе илтĕмĕр: ĕçрĕмĕр-çирĕмĕр тăраниччен, юрларăмăр-ташларăмăр кăмăл туличчен - пуçлăхсем, журналистсем, операторсем, техниксем, инженерсем, юрăçсем, радиотелецентр ĕçтешĕсем, пурне те ăнăçу тума пулăшакан кантур çыннисем...

Йышлăнччĕ çав эпир - йĕкехӳре кĕтĕвĕ пекехчĕ Крысин каманти. Павел Афиногенчăн кут хыçма та вăхăт çукчĕ пуль. Пур ĕçне те тума ĕлкĕрмелле-çке: хачăпа клей тишкерĕвĕнчен пуçласа хор артисчĕсен чуна уçакан сассипе тĕнчене янраттарса киленичченех. Иван Христофоров хăй мĕне тăратчĕ! Хор кӳршĕ çĕрĕсенче, Мускавра пулнисĕр пуçне, чикĕ леш енне те сисмесĕрех каça-каça каять. Председательпе унăн телевидени енĕпе ĕçлекен çумĕ Венера Большова хорпа пĕрле юрласа çӳреççĕ.

Валентин Кузнецовăн улпутланас йăла та пур. Пире, Леонид Степановпа иксĕмĕре, ытлах пусахлама май çуккине кура, Кашкăр Петĕрĕ çине утлансах ларать. Унăн материалĕсем чухăнраххине пула, ăна тапăнать те, лешин вăйсăрлăхĕпе усă курса, хайхине тарçа кӳлет. Пыраççĕ çапла пĕррехинче Николаев урамĕпе: малта Кузнецов офицер еккипе яртлаттарса утать, ун хыççан Волковĕ пуçлăх магнитофонне çĕтĕлсе хытнă сăран сумкăра йăтса, талкăшать. Пушарниксен тин çеç уçăлнă музейне репортаж тума васкаççĕ.

Мĕнле кăна мыскара пулса иртмест кунĕн-çĕрĕн Чăвашрадиора. Ак çакнашкаллине те курнă. Çавăн хыççăн ман пуçра «Пиçмен пашалу» кулăшла калав та çуралчĕ:

«Пурнан пурнăçра çын ăçта кăна çитмест, мĕнле-мĕнле ĕç тумасть пулĕ. Эпĕ те çапла, çамрăк чухне, Чăвашрадиона лекнĕччĕ. Унта алăра ручка-кăранташ вылятни çеç çителĕксĕр, тап-таса чĕлхепе хăюллăн та уççăн калама, пĕр-пĕр çын сассине магнитофон ленти çине çырма ăста пĕлмелле. Ĕçе илес умĕн мана шăпах ку енĕпе тĕплĕн тĕрĕслерĕç. Редакци пуçлăхĕ колхоз председателĕ вырăнне пулчĕ, аллинчи шлепкине çаварттаркаласа, пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ утма тытăнчĕ. Эпĕ унран, ыйтусем пара-пара, интервью илетĕп. Калаçу пĕтсен, вăл мана, çурăмран лăпкаса:

- Шăллăм, чăвашра çĕнĕ репортер çуралнă ятпа саламлатăп. Хăюллă, вăр-вар пул, пĕлнĕ çулпа хастар чуп,- терĕ.

Хĕрĕхсене çитме пуçланă, лапчăкрах питлĕ, пуклак сăмсаллă, хĕрлĕ çӳçлĕ, клеще ураллă Кадров, редакци корреспонденчĕ, пуçлăхĕ мана мухтанăшăн кĕвĕçрĕ-ши, кавăн пек пуçне пăрса, симĕс куçĕпе кăнн! пăхрĕ те ман еннелле, çапла каласа хучĕ:

- Тăхтăр-ха, çуралман тиха çине утланар мар, хăй тĕллĕн ĕçлеме пуçличчен халь пайтах тар тăкмалла, паркра хурăн шывĕ юхтарма вĕренмесĕрех, темле-ха...

Хурăн шывĕ тенĕрен, эпĕ ăна-кăна тавçăрса илеймесĕрех урама тухса чупрăм. Çывăхри парк тăрăх çӳремерĕм, лавккарах туянтăм вăрман шерпетне. Сумкăран сĕтел çине кăларса лартнă виçĕ литр кĕрекен кĕленче савăта курнипе редакци пуçлăхĕн куçлăхĕ çамки çинех хăпарса ларчĕ, корреспондентне лăкăртăк ерчĕ.

Хамăн йăнăша эпĕ каярахпа тӳрлетрĕм, вĕсене урăх йышши «хурăн шывĕ» юхтарса патăм, çапах мана магнитофонпа ĕçлеме шанмарĕç-ха, хăнăхтараççĕ те хăнăхтараççĕ. Вĕçĕмсĕр çӳретпĕр Кадровпа ял-ял тăрăх. Вăл малта, аллисене çурăм хыçне тытса, хуçалла саркаланса пырать. Эпĕ ун магнитофонне, самай йывăрскерне, йăтнă. Сысна пăхакансен, ĕне сăвакансен, тырпул ӳстерекенсен паттăрлăхне эфира сапалатпăр.

- Кадров! - терĕ пĕррехинче редакци пуçлăхĕ.- Праçник çывхарнине туятăн-и? Репортаж кирлĕ. Тулăх пурăнакан çемьене калаçтарас пулать...

Мана та унпа пĕрле ячĕ хайхи. Çитрĕмĕр Çăлкуçне. Шыраса тупрăмăр хăтлă çемьене. Ял Советĕнче каланă тăрăх, вĕсен килçурчĕ те, пурнăç пуянлăхĕ те, ватти те, вĕтти те пирĕн ыйтусене тивĕçтермелле пек ĕнтĕ.

Ултă кĕтеслĕ çурт умĕнче чарăнтăмăр та вырăсла хапхаран кĕтĕмĕр.

- Акă мĕн,- симĕс куçне мăч хупрĕ Кадров.- Репортаж картишĕнчен пуçланать. Уç-ха магнитофонна, кăлар микрофонна. Пуçла çырма!

Эпĕ вăл хушнине тăрăшсах тăватăп. Сурăх макăрчĕ - ăна çыртăм. Витерен тухнă ула ĕне пуçне силлесе му-улатрĕ. Сасă - лента çинче. Аслăк çинчен кăтиклесе вĕçсе аннă чăх та çырăнчĕ унта. Чĕвĕлти çерçисем те юлмарĕç.

- Йытă хамлатни çитмест-ха,- картишне пăхса çаврăнчĕ Кадров.-Усрамаççĕ-шим вĕсем нимле Улайкка та? Темех мар-ха ку, кӳршĕре те çырса илме пулĕ анчăка е хамăр фонотекăрах сасă шыраса тупăпăр. Кĕрер пӳрте.

Пит тарават кĕтсе илчĕç пире кил хуçисем, тĕпелелле иртме чĕнчĕç, сĕтел хушшинех кĕртсе лартрĕç.

- Ĕç вăл шапа мар-ха, шыва сикес çук, тутă хырăмпа тулăх пурнăç çинчен пуплеме те кăмăллă,- терĕ те Кадров, апата пикенчĕ.

Ял çынни Шупашкар хăнисемшĕн нÿхрепре мĕн пуррине йăлтах кăларса лартрĕ тейĕн. Сĕтел ури авăнать пуль. Кадров, пыл кăрчами тутана-тутана, самай хĕрчĕ курăнать, хăлаçлансах калаçа пуçларĕ:

- Эсир, ырă тăвансем, пирĕн кăмăла пула, эфирта янăрăр, ак. Кĕçех пĕтĕм тĕнче илтĕ сире. Кил-ха кунта, шĕвĕркке? Мĕн ятлă?

- Раман,- терĕ сĕтел çÿллĕш ача, сăмсине нăшлаттарса.

- Никамран та хăраман апла? Çырас, сначăт.

- Паллах, хăрама çуралман.

- Пурнăçа юрататăн-и эс?

- Юратап. Çупа çăкăр та юратап. Аннепе аттене те, асаттене те, Миркăна та...

- Во, епле ăслă ача ÿстеретĕр эсир! Мухтанас пулать унпа.

Кадров кĕçех Раман ашшĕне тĕпчеме тытăнчĕ:

- Йĕркипе хушаматна, ятна, аçу ятне асăнса тух-ха? Арăмна та ан хăвар. Çырма çăмăлрах пултăр.

- Аврорин Тельман Иванович,- шкул ачи пекех ответлерĕ лешĕ. - Арăма Октябрина Васильевна тесе чĕнеççĕ.

Кадров савăннипе çунатсăрах пĕлĕте вĕçме хатĕр ĕнтĕ, ыталаса чуптуманни çеç юлчĕ.

- Вăт телей-тĕк телей! - çатăлтатать хăй.- Пĕр çак ятсене асăнни репортажа çĕклентерсе ярать. Çырар малалла. Сначăт, эсир çуралнăранпах Çăлкуçĕнче пурăнатăр. Лайăх. Авланнăранпах ача-пăча туса ÿстеретĕр. Маттур. Пĕри тракториства, тепри фермăра вăй хуратăр. Аван. Уява ĕçри çитĕнÿсемпе кĕтсе илетĕр... Юрĕ, юрĕ, миçе гектар суха туни, миçе литр сĕт суни кирлех мар. Цифра радио чĕлхине пăсать. Ахаль те паллă эсир ĕçченни. Çитĕ сире чăрмантарса. Аслă ăру çыннине итлес. Ваттин пуçĕнче ылтăн, чĕлхинче кĕмĕл пулакан.

Шур сухаллă, шакла пуçлă, курпунланнă аслă кил хуçи Кадров çине куç айĕн пăхса йăлл! кулчĕ те, ăна курка тыттарчĕ. Корреспондент, кăрчама ĕçнĕ май, старике ыйту хыççăн ыйту пама тытăнчĕ:

- Хăçан çуралнă эс, мучи?

- Иртнĕ ĕмĕртех çав. Пурнап-ха пурпĕрех айланкаласа.

- Чăнах-и?- сиксе тăчĕ Кадров. - Тĕлĕнмелле çын-çке пирĕн умра.

- Ара, ма суяс ман. Ак хĕрес хурса калап. Çĕн ĕмĕр пуçланнине те, тĕнчери çĕн самана хĕвелĕ тухнине те хам куçпа хам курнă.

Сапаланнă хĕрлĕ çӳçне каялла шăлчĕ те Кадров, кушак куçĕпе мучи еннелле пăхса:

- Сначăт, так,- терĕ,- пуçларăмăр çырма. Ман хыççăн каласа пыр, атту такăнма пултаратăн, Эпĕ, те.

- Эп.

- Иван Александрович Аврорин, - те.

- Эп, Йăван Сантăрч Аврурин...

- Юрĕ, кун пек те кайĕ ват çынна, иртнĕ ĕмĕрте çуралнăскерне, ун чухне ликбез пулман. Малалла çапла кала: пин те сакăрçĕр тăхăрвун пиллĕкмĕш çулта Çăлкусĕнче çуралнă.

- Çăлкуç хыçĕнчи сĕлĕ ани пуçĕнче çулла çуралнă,- тӳрлетсе каларĕ мучи.

- Та-ак, çуралнă, тейĕпĕр,- кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ ĕнсине репортер. - Унтан мĕн тунă?

Мучи аптранипе шакла пуçне сăтăрса илчĕ, сиввĕнрех хуравларĕ:

- Мĕн тăвать ĕнтĕ çуралнă ача. Пыр каниччен çухăрнă, чĕчĕ ĕмнĕ те паппа тунă. Ӳснĕ май суха тунă, авăн çапнă, пашалу çинĕ. Салтак ячĕ тухнă та алла пăшал тытнă, кайран ревулюцие хутшăннă, кăлхуса кĕнĕ, авланнă та, арăма ача тутарнă. Ватăлнă та, кăмака çине улăхнă. Туршăн та, хĕвелшĕн те калатăп - урăх нимĕн те туман. Тархасшăн ан нушалантарăр мана урăх.

Мучи çумне çилĕмле çыпçăннă репортер пурпĕрех уйрăлмасть, вĕçĕмсĕр ыйтать:

- Питĕ чаплă пурнăç çулĕ сан, мучи. Халĕ, Иван Александрович, çав çулпа иксĕмĕр пĕрле магнитофон ленти тăрăх ытакланса тухар-ха? Так, сначăт, çуралнă, тейĕпĕр. Мĕнле сасăпа кашкăрнăха эсĕ вăл вăхăтра, мучи? Асту-ха? Так, шăпăрт ыттисем! Çыратпăр.

Мучи çăварне уçма ĕлкĕрнĕччĕ çеç, чатăр хыçĕнче ыйхăран вăраннă ача сасси илтĕнчĕ: у-аа! у-аа!

- Прекраснă!- аллисене саркаларĕ Кадров.- Мĕнле çухăрни паллă халь. Так, сначăт, чĕчĕ ĕмни те паллă. Мучи, итле-ха, мĕнле пашалу çинĕ эс ун чухне? Çакă та пит кăсăклантарать пире.

- Мĕн?.. Мĕнле пашалу, терĕн-и çак?- лăх-лăх кулчĕ мучи.- Сĕлĕ пашалăвĕ, ара...

- Юрĕ, - аллинчи тулли куркана пушатрĕ Кадров. - Хамăртан çапла хушса хурăпăр: «Сначăт, сĕлĕ пашалăвне пиçнĕ-пиçмен çăвара персе хыпнă та, хулпуççи çине çурла хурса, уя тырă вырма тухса чупнă».

Ывăлĕпе кинĕ хăналаççĕ те хăналаççĕ ман вĕрентекенĕме. Хушăран вăл кăрчамине хăех ярса ĕçет. Чĕлхи те сўтĕле пуçларĕ, пуçĕ те усăнма тытăнчĕ ĕнтĕ, хăй пур, çаплах ыйтать-ха:

- Тем те тунă... терĕн эс, мучи: революци те... колхоз та... ача та... Пĕлесчĕ, миçе ачана... ççитертĕн?

- Эп мар, карчăх тунă ачисене, улттă тан. Киле кĕçĕнни çеç юлнă. Ака вăл - кур,- ăнлантарчĕ старик Кадрова. - Пурăнатпăр çапла, халăхпа тан тенĕ пек...

- Пур-нат-пăр, пур... сначăт. Аврорр... Ок-тяб-ри-на. Тель... репор... таж, кăрч...- пушшех уçăмсăррăн мăкăртатрĕ ман вĕрентекенĕм...

Унтан сĕтел çине пуçне лăнк! ўкерчĕ.

Мучи тинех хашлатса сывласа ячĕ, пуçне пăркаларĕ те:

- Вăт, пиçмен пашалу,- тесе хучĕ.»

«Репортер-2» магнит çыравçипе «иккĕ» илсе хĕрелмерĕм. Мадьярсен-ырă çынсен чăхăмламан аппарачĕ мана та чĕвен тăратрĕ. Радио «кашкăрĕсен» йăвинче чăл-чăл пăхакан пултăм. Хăнăхнă май, ĕçĕ те ăнăçлă. Районсен, хуласен, хуçалăхсен, заводсемпе фабрикăсен тата ытти нумай-нумай организацисен ăмăртăвне мĕнпур халăх хăлхине çитеретпĕр. Парти ĕçĕ - маншăн юратнă, хăнăхнă ĕç. Райкомсен, хулакомсен, пуçламăш парторганизацисен паха опытне саратпăр, хăюллă та пултаруллă коммунистсене микрофон умне чĕнетпĕр. Канашпа Йĕпреç халăхĕ пĕр-пĕринпе ăмăртса мĕнле çитĕнў туни çинчен пысăк телепередача хатĕрлерĕм. Йĕпреç енчи «Трудовик» колхоз председателĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Антон Григорьевич Шордеев - нумай вĕренмен, халăхран тухнă, хура-шурта ўссе аталаннă хресчен, ял халăхĕн чăн-чăн пултаруллă ертўçи. Унăн пурнăçне, Пысăк Упакасси ĕçченĕсен кун-çулне, «Тăвалла» радиоочеркра аванах кăтартрăм пуль терĕм. Чăвашрадио конкурсĕнче 1976 çулшăн вăл чи лайăх хайлав вырăнне йышăнчĕ, манăн ята кăшт та пулин çўлерех çĕклерĕ.

Çутçанталăка çур шăрши çапнă вăхăталла мана Крысин хăй патне чĕнчĕ. Юнашар кăпка сар çўçлĕ, куллипе пит-куçне çамрăклатса яракан шанчăклă çумĕ Венера Петровна Большова çўлелле çĕкленсе ларать. Ытахательтен пуçланă калаçăва вĕсем шалалла туртса кĕчĕç. Мана телевиденин тĕп редакторне куçарасшăн. Килĕшем пекки те турăм, анчах шухăшларăм-шухăшларăм та, килте мăшăрămпа калаçса пăтранса илтĕмĕр те... Пурпĕрех чунăм хаçа-

тах туртать иккен. Ют кайăка читлĕхре нумай тытса усраймăн тенĕ пекех, çамрăклăх шухăлăхĕ чуна вутлантарсах пычĕ. Сăлтавĕ те тупăнчĕ магнитофона ручкăпа улăштармашкăн.

ВЛКСМ Вăрнар райкомĕнче паллашнă, Чулхулари партшкулта пĕрле вĕреннĕ Элĕкьенчи Юманай ачи Томашов, хăйне пиллĕкмĕш стройтрестри партком секретарьне суйласан, «Тракторострой» редакторне шыранă. Обкомра ăна ман çул çине вĕслетсе янă. Шыраса тупрĕ. Трактор завочĕ çинчен тĕнче шавлатчĕ те, ман та çав романтика хумĕнче ишес килсе кайрĕ. Хăнăхнă, юратнă çынсенчен уйрăлса вара Сĕнтĕрвăрри çулĕпе тухăçалла, уялла тухса уттартăм - 1976 çулхи ака уйăхĕн пуçламăшĕнче çĕнĕ ана тытса акана тухмашкăн хăпартланса, вăй пухса.

2001 çулхи пуш уйăхĕ»

* * *

Çапах та радио хумĕ çинчех ярăнатăп. Эфирта тĕнче, хамăр çĕршыв кĕрлет. Крысин каманти те саланчĕ, ахăрсаманара Венера Большовапа темиçе çын кăна телемачтăран çакланса юлчĕç. Президент администрацийĕн çӳллĕ юпи тăрринчен Крысин кермение татăлса аннă Станислав Александрович-Упаççи Чăвашрадио микрофонне алли-урипе çавăрса тытнă.

Совет Çарĕн авиацийĕн мухтавлă паттăр штурманĕ кăна мар, Чăвашрадион ăста штурманĕ те пулнă Валентин Михайлович Кузнецов вăхăтсăр çут тĕнчерен уйрăлчĕ. Пропаганда редакцийĕн экипаж членĕсем эпир пурăнатпăр-ха. Леонид Маяксемпе пичет çуртĕнче час-часах тĕл пулатпăр. Петр Волковпа вара Тени кӳлли таврашĕнче мыскарасем куратпăр. Майĕпен кулăш та çырăнчĕ:

«Мăн Этмен ачи, мăн пуçлă Петр Иванович Волков, Чăвашрадиоран хăйĕн тăван Элĕк районне командировкăна кайнă. Тени кӳлли çывăхĕнчи хуçалăхра каçуннăй ĕçне тунă хыççăн вăл ял хуçипе ытаклансах юрă шăрантарнă. Шӳтлеме юратакан ентешĕ эфир корреспондентне кефирпа çеç хăналаман-çке-ха, ырă кăмăл юххинче ма савăнса ишес мар. Чаплă хăна валли чаплă кучченеç те хатĕр ĕнтĕ: хăваран авса ăсталанă вĕр-çĕнĕ карçынккара хурсем мăшăрлăн какаклатнă.

Шупашкара çитсен Петр Иванович машинăран анса юлать те хурсене ачашлама тытăнать. Çав вăхăтра тӳпере хуркайăк карти пĕлĕте çурса кăнтăралла вĕçни курăнса каять. Волков карçынкка пушанса юлнине те сиссе юлаймасть, хурсем хыççăн сик-

се те пăхать, анчах... çунат çуккишĕн куляннипе асфальт çине лак ларать. Чĕрĕ парнесем хуркайăк картин хӳрине çыпçăничченех тинкерет вĕсем хыççăн.

Тепĕр кĕркунне Петр Ивановичăн каллех Тени çывăхĕнче пулма тӳр килет, сăмах май хăйĕн хуйхи пирки сас кăларать. Шӳтлĕ калаçу хыççăн хуçалăх хуçи ăна пĕр кăрман хур парнелет, çийĕнчен çапла калать:

- Ырă ентешĕм, енчен те эсĕ пĕлтĕр пирĕн Тени хуркайăкĕсемпе хырăмна сапланă пулсан, çак кăрман та тулли пулмастчĕ. Кăнтăра вĕçсе кайса килнĕ хыççăн вĕсем çу каçиччен авă епле йышлă кĕтӳ ӳстернĕ. Татах килсе çӳре, сан валли парне яланах пур.

Волков çавăнтанпах Тени кӳлли çывăхĕнчен хăпмасть. Сĕтел çинче унăн нихăçан та хур ашĕ татăлмасть.

- Командировкăна та пĕлсе каймалла, - хăйĕн коллегисем умĕнче мухтанмасăр чăтаймасть пултаруллă радиожурналист».

2009 çул.

ЧУН-ХАВАЛ ХĔЛХЕМĔ ЙĂЛКĂШСАН

Радио штурманĕ Валентин Кузнецов мана çĕнĕ çĕре кулкаласа ăсатрĕ. «Стройка тусанне çума килкелесе кай, Лакрей вăрманĕнчи тункатасем мăкланма пултараççĕ атту»,- тет. «Вăл унта, Тракторостройра, хамăр корреспондент пулать, гонорар укçине те кунти пек хĕрĕх процент кăна мар, çĕр-пин процент таран ним чарусăр илме пултарать, çавăнпа ăна «Репортерне» те шанса парса яратпăр», - сăмаххисене çума-çумăн çыпăçтарса калаçать Николай Дубинин. «Володя, сана пĕрремĕш ĕç тума ыйтасшăн - Трактороройăн чи çӳллĕ тӳпинчен репортаж кĕтетĕп»,- ăшшăн сĕнет Валентина Иванова.

Çапла эпĕ хам çума çирĕплетнĕ каçуннăй аппарата хулпуççи урлă çаксах тухса утрăм Николаев урамĕнчи икĕ хутлă тăваттăмĕш çуртран - çĕнĕ уçлăха, хаçат чирне сиплеме. Ручка та çивчĕ пероллă халь ман, микрофон та - çивчĕ хăлхаллă.

Хула автобусĕсем машина тăвакан завод патне кăна çитеççĕ. Автобусран ансан, сылтăм енче, пысăк вольтлă электролини юписем мăшăрăн-мăшăрăн каркаланса ларни, вĕсенчен чылай аякра пĕлĕтелле çĕкленме пуçланă капмар çурт-йĕр палли курăнать. Вĕçĕмсĕр хĕвĕшекен машинăсен çулĕпе, унтан сукмакпа тăвата хутлă тăваткал çурт тĕлне çитсе тухрăм. Умĕнче, чылай анлă лаптăк хĕррипе, курăнакан агитаци текен вăрăм щитсем вырнаçтарнă, килен-тăран хăнасем валли пуль ĕнтĕ, унта мĕн çырнине кунта ĕçлекен тухса вулас та, кăсăкланас та çук. Кăтартулăх тĕкĕрĕ. Кирлех пулас иккен вăл. Манăн та куçăм унталлах тăрăнчĕ. Эпĕ те туххăмрах пуçа хыврăм пиллĕкмĕш стройтрестăн управленийĕсемпе бригадисен социализмла ăмăртăвĕн сăрăпа палăртнă кăтартăвĕсене.

Парти комитечĕ виççĕмĕш хутра. Виçĕ пӳлĕмрен пĕрне хаçат редакцине панă. Чи мăннинче - ман хуçа. Чăннипех çапла. КПСС çĕршыва ертсе, çул кăтартса пыракан вăй пулса тăнă саманара пур çĕрте те обкомсем, хулакомсемпе райкомсем тата партком-

сем хуҫалăх пуҫлăхĕсенчен ҫӳлерех шайра тăраҫҫĕ-ҫке. Ҫавăнпах вĕсене ертсе пыракан парти генералĕсемпе аслă тата кĕҫĕн офицерĕсем те хăйсене яланах директорсемпе председательсенчен мăнăрах тесе шутлаҫҫĕ. Апла тăк, мăнкăмăллăхĕ те мăнăрах, влаҫ пушшийĕ те шăршăнлăрах вĕсен.

Ҫак анлă пӳлĕмре ларакан хура-хăмăр костюм, йăрăмлă шурă кĕпе тăханнă, тăваткал пăнчăллă галстук ҫакнă, ҫăра йăм хура ҫӳҫлĕ, пысăк куҫлăх тăхăннă Томашов чăваш та йăваш мар иккен. Тĕп Кремĕльтен анакан тӳре-шара йăли унăн пуҫ мимийĕ ҫумне те ҫилĕмле ҫыпҫăннă, ăна та харсăрлатса хаярлатнă, хăюллантарнă, хăрушлантарнă. Кăна эпĕ секретарь алăкне уҫнă ҫак самантра мар, тепĕр кунне туйса илтĕм.

Халĕ мана Радий Иванович ытамласах кĕтсе илчĕ. Вăйлă, мур ачи. Кĕлеткине курах. Хăй пекех тепĕр яштака ар ҫума пырса тăчĕ, Львов, Иван Васильевич, тесе ала тăсрĕ. Ку - Томашовăн идеологĕ, стройка ăс-тăнĕн пăттине пĕҫерекенĕ, идея хуранне чĕлхе ҫулăмĕпе хĕртсе тăраканĕ. Ҫӳллĕшĕ хăйсен икĕ метр таранах, шукăллĕхĕ пĕр пекрехех, анчах сăнĕ-пуҫĕ - уйрăмрахах. Радий Ивановичăн кĕлетки юман каска пек, Иван Васильевичăн - сарă хыр вулли пек. Пĕрин сăнĕ - ҫывхаракан аслатиллĕ ҫумăр пĕлĕчĕ пек, теприн - тӳпене тин ҫĕкленнĕ хĕвел пек. Чĕлхи те пĕрешкел мар: секретарь ҫăварĕнчен тухакан хушу манерлĕ сăмахсем хушшинче унăн ҫумĕн ҫемҫерех, тирпейлĕрех сăмаххисем манăн малтанхи хумхану хумне ҫăмăллăнрах пусарчĕҫ. Пĕри: хăрамалла мар, никама куҫран пăхмасăр, никама хĕрхенмесĕр хытăрах та вирлĕрех ҫунтармалла, тет; тепри: кашни ҫынпа питĕ асăрхануллă, ăнлануллă пулмалла, чунхаваллăха шута илмелле, тесе йăлл кулать, ҫав хушăрах ăс та парать - стройка ҫыннине усал сăмах та вăй кĕртет, эпĕ те хăнăхрăм, эсир те вĕсене каҫарăр, унпа кĕрешнин усси ҫук, тет.

Р.И.Томашов

Йĕркене хăнăхнăскер, эпĕ нимрен те хăрамастăп тесе шухăшлатăп-ха. Хам тĕллĕн ĕҫлеме те тахҫанах вĕреннĕ. Аслă стройкăна пуҫа усма килмен. Чунăм ҫĕршывăн вĕри вучахне - вĕри хураннех туртрĕ. Ҫĕнĕ строй-

трест хуҫисем-ертӳҫисем парти обкомӗнчен хӑйсене чӑн-чӑн журналист тупса пама ыйтсан, Шурӑ ҫуртрисем мана чӗнсе калассан, хаваспах кӑмӑл турӑм. Мускавсем те, шупашкарсем те Тракторостройра путлӗ хаҫат ҫук тесе хӑйранипе ӳпкелешнӗ Томашов мана чӑтӑмсӑррӑн кӗтнӗ ....

1973 ҫулхи утӑ уйӑхӗнче кӑларма пуҫланӑ «Тракторострой» хаҫата Владимир Арсюхин тата ыттисем те редакцилесе пурӑннӑ. Вӑл ӗнтӗ - вӑйлӑ журналист. Союзӗпе паллӑскер. «Советская Россия» корреспонденчӗ те пулнӑ. Ҫапах та нумай тиражлӑ, эрнере иккӗ тухакан икӗ пин ҫурӑллӑ «Тракторостроя» ударлӑ Тракторострой шайне ҫитерме мехел тупайман. Пулман унӑн ӑс-тӑн кунтӑкӗнче хаҫатҫӑ-редактор ылтӑнӗн пӗрчи. Пуҫӗ ҫыравҫӑ хӑватлӑхӗпе ҫеҫ аслатиллӗн кӗрленӗ. Мӗн тӑвӑн, уншӑн ятламалли ҫук. Кашнин хӑйӗн турӑ пани пур.

Манӑн халӗ никам та шута хуман хаҫатран пурте юратакан хаҫат туса хумалла. Обкомра, хулакомра, райкомра тата парткомра хаяр сӑмах вӗҫӗпе сӑмсаран тивертнӗ пекех - ҫитес вӑхӑтрах, васкасах, тӑрӑшсах,

Редакцире иккӗн ларӑҫҫӗ: чикан пек йӑм хура ҫӳҫлӗ, ытарлӑ, хура-хӑмӑр куҫлӑ, уҫӑ кӑмӑл сӑнарлӑ вӑтам ҫулсенчи хӗрарӑм тата пиншак ҫийӗн кӗпи ҫухавийӗсене чарлан ҫуначӗ пек сарлакан кӑларса янӑ, тӑрӑхларах питлӗ, ӗнси хыҫнех ҫитекен, хӑлхисене хупланӑ вӑрӑм ҫырӑ ҫӳҫлӗ ҫирӗм пиллӗксенчи каччӑ алӑк еннелле тинкернӗ. Партком хуҫисем эп камне пӗлтерчӗҫ те, чӳрече ҫумӗнче ларакансем сӗтел еннелле тӗллесе кӑтартрӗҫ: сирӗн вырӑн. Редакцин ӗҫ ушкӑнӗнче эпӗ виҫҫӗмӗш ҫын пултӑм. Витӗр сӑнакан куҫли, Галина Федоровна Зимина - наукӑпа ҫӗте пуҫланӑ, республикӑри палӑрнӑ журналист Александр Зимин арӑмӗмӗн. Ман ҫине питӗ ыйтуллӑн пӑхакан Сергей - Ленинградри Борис Уланов ученӑй ывӑлӗ, комсомол путевкипе Атӑл тӑрӑхне трактор завочӗ тума килнӗ романтик. Арсюхин эп пыриччен маларах ӗҫрен пӑрахса кайса вӗсене тӑлӑха хӑварнӑ иккен. Иккӗшне ҫӑмӑлах пулнӑ пулас ҫук. Вӗсем мана мӗнле хаваспа кӗтнине эпӗ малтанхи калаҫуранах туйрӑм.

Хӑш-пӗр шӑлйӗренсем манран боевой листок кӑларма каятӑн ӗнтӗ, тесе кулкалама та пӑхрӗҫ. Эпӗ вӗсене: маншӑн хаҫат пурпӗрех мӑнни те, пӗчӗкки те, тесе тавӑраттӑм. Ӗҫе ҫанӑ тавӑрса тытӑнтӑн тӑк - хӑвна шаннине шанӑҫа кӑлар, хаҫатна никамран вӑйлӑрах та чаплӑрах кӑлар, тесе ҫӗнӗ вӗри хурана пуҫа чикрӗм. Ҫырма пултаракан, хаҫата юратакан, хаҫата парӑннӑ

Сăнӳкерчĕкре (сулахайран): Борис Уланов, Галина Сергеева, Галина Зимина, Владимир Кузьмин.

ĕçтешсем маншăн хамăн икĕ аллăм пекех, вĕсемпе усă курма пĕлмелле кăна.

Сергей Уланов çивĕчрех, çамрăкрах, стройплощадкăсенче ьттларах чупма хатĕр, кулленхи ĕç çинчен васкавлă çырать. Галина Зимина шухăшлавлăрах, тĕпчевлĕрех, анлăрах статьясем шăрçалама маçтăр. Ашшĕне, Куславкка енчи чăваш ăсчахне хывнă пулас, халăх умне пули-пулми сăмахпа тухмасть.

Стройкăра хăйĕн радиостанцийĕ те пур. Кантур пӳлĕмĕсенче кăна мар, ĕç вырăнĕсенче пур çĕрте те кашни кун янăрать уçă сасă: «Тракторострой калаçать!» Передачисене хатĕрлекенĕ чиперкке вырăс хĕрĕ Галя Сергеева та пирĕн пӳлĕмрех. Партком секретарĕ унăн ĕçне йĕркелесе ертсе пыма мана хушрĕ. Пĕрпĕрин хушшинче пурте пĕр кăмăллăн, тĕп шухăшлăн ĕçлени тӳрех курăнчĕ. Радио материалĕсенчен чи кирлисене хаçата паратпăр - пичетлетпĕр. Ман енчен вĕсене пурне те пулăшу кирлине тӳрех туйрăм.

Пĕр шутласан, Тракторострой пĕр-пĕр район та, республика-область та мар ĕнтĕ, пилĕкçĕр гектар çинчи мăн кăткă йăви çеç темелле. Çул çинче ĕшенсе çӳрес çук, тух та, тĕл пул та

кампа та пулин, калаҫ, ҫыр, пичетле. Кунашкал шутлани йăнăш иккен. Ҫав кăткă тĕминче тата ун ҫумĕнче каллĕ-маллĕ йăшăлтатакан кăткăсене чарса калаҫма та, хăвна чи кирлине тупса палăртма та чĕр нуша. Темĕн тĕрлĕ техника шавĕнче хăлха хупланать, ятарлă тумтир тăхăннă сарă каскăсемпе куҫ-пуҫ алчăрать, вĕсем хушшинче хĕрарăмпа арҫыннине те пăтраштарса ятарăн. Кăмăл-туйăмĕ епле кăра тата ҫыннисен!

Томашовпа калаҫса ларатпăр. Алăкран сасартăк пĕр ҫамрăк вирхĕнсе кĕчĕ те, каскине хывса вăрăм сĕтел ҫине печĕ. Пире алă тытичченех пулемет пек шатăртаттарма пуҫларĕ:

- Ăҫта управляющи!? Заместителĕ Касьянов та ҫук...

- Лар-ха эс, лар, Альберт, лăплан. Мĕн кирлĕ сана?

Лешĕ ҫиллессĕн алă тытрĕ те:

- Бетон кирлĕ! - терĕ. - Стройкăн хырăм выҫать. Преспа сварка цехне тума пуҫларăмăр. Икĕ талăкра пин кубометр бетон хыврăмăр. Кран кирлĕччĕ - памарĕҫ. Ҫĕр чавса самосвалсене аяла анмалла турăмăр. Мĕн тăвать-ши инженер кĕтĕвĕ? Главнăйĕ хулана кайнă, терĕҫ. Пирĕн патра чупмаллаччĕ унăн, виҫĕ хоккей площадки анлăш никĕс лаптăкĕнче. Вĕсемсĕрех рекорд патăмăр. Вунвиҫҫĕмĕш управлени ăнăҫсăр мар-ха. Манăн бригада ҫĕклет ăна. Халь вара - бетон килмест. Тупăр. Парăр. Тăрантарăр стройкăна ҫăкăрпа... Эс те, Радий Иванч, ларан хут тусанĕ ĕҫсе. Сире ак, Иван Васильевичне те, пурне те вибраторпа бетон ҫăрма илсе каятăп. Кунĕпе тарласан, туятăр стройка тутине...

Ку хĕрӳскер малтан КамАЗра вăй пухнă, халĕ Шупашкарта чап илме ĕлкĕрнĕ Альберт Захаров бригадир пулнине эпĕ майĕпен калаҫуран пĕлтĕм. Партком пӳлĕмĕнчен тухсанах Сергей Уланова ун патне «хоккейла вылямa» чуптартăм. Хамăн та «Репортерпа» усă курма май тупăнчĕ. Чăвашрадио валли ырăнлă репортажах хатĕрлерĕм.

- Валентина Андреевна, каҫарăр,- терĕм Николаев урамне ҫитсен,- ҫӳл тӳперен мар, ҫĕр айĕнчен, никĕсрен пуҫларăм ҫĕнĕ ĕҫе.

Ҫак кăра йĕкĕтпе манăн туслашма, ҫывăхланма майĕсем тупăнсах пычĕҫ, каярахпа Трак ен паттăрĕ ҫинчен очерк та, илемлĕ ытти хайлавсем те майлаштарламалла пулчĕ. Альберт Михайлович манăн «Ҫăлкуҫ» романри тĕп геройсенчен пĕрийĕ Захар Смелов пулса шăранса тухрĕ.

Лиска йытăлла стройка тăрăх чупнипех хаҫат пулмасть. Редактор сĕтелĕ ҫинче темиҫе купа хатĕр материал йăтăнса вырт-

сассăн та вăл, пичетленсе вулакан патне вăхăтра çитермесен, макулатура вырăнне çеç тăрса юлать. Йĕркелӳ, майлаштару-шайлаштару, хирĕçӳ-çапăçу, килĕшӳ - йăлтах редактор алли-пуçĕ витĕр айланса, аланса тухать.

Володарский урамĕнчи пиллĕкмĕш çуртра - Пичет çуртĕнче - «Тракторостроя» виççĕмĕш кунне тин пичетлесе панă хыççăн чăтаймарăм, обкомах кайрăм. Идеологи секретарĕ Александр Петров тӳрех йышăнчĕ, лару-тăру çинчен ыйтса пĕлчĕ. Хаçат нуши ăна та тарăхтарчĕ нулас, умри ĕç кĕнеки çине темскер çырса хучĕ. Унта мĕн çырни тепĕртакран паллă пулчĕ, типографире нумай тиражлă хаçатсене те аяккалла сирсе хăварми пулчĕç, графике çĕнетрĕç, эпĕ ыйтнипе, «Машиностроитель» хаçатпа ылмаштарса, «Тракторостроя» меллĕрех вăхăт уйăрчĕç. Редакторĕпе Николай Гущенковпа малтанах калаçса татăлнăччĕ, машзаводри кӳршĕм хирĕçлемерĕ.

А.М. Захаров

Хаçата стройкăри кашни кĕтесе вăхăтра çитерессишĕн хăш-пĕр хыт çамкасемпе тĕкĕшсе илмелле пулчĕ.

Стройка ĕçĕпе тĕплĕнрех паллашса пынă май, ăнлантăм: пирĕн хаçатăн строитель чунлĕ, çамрăк çын юн таппиллĕ, комсомол чĕриллĕ пулмалла. Комсомолăн Пĕтĕм Союзри ударлă стройкинче пирĕн çĕмрен пек çĕмĕрсе чи малта пымалла, пурне те хавхалантарса тĕрĕс çул кăтартмалла, çĕннипе паллаштармалла. Чăрмавĕ, кăлтăкĕ, тĕрĕсмарлăхĕ, ултавĕ, йĕркесĕрлĕхĕ малалла кайма урана тăллать. Вĕсене хаçатра тăрă шыв çине кăлармалла. Парткома та, управляющине те, профкомпа комсомол комитетне те ĕçе ăнтарма пулăшмалла. Капашсăр анлă ĕç-пуçа виççĕн-тăваттăн çавăрттарма питĕ йывăр. Пулăшакан кирлех. Çавна май обществăлла редколлеги çирĕплетрĕмĕр, чи вĕри вырăнсенче корреспондентсен посчĕсем йĕркелерĕмĕр. Хаçата çырас кăмăллă çынсем хутшăнсах пычĕç.

Çĕнĕ тема вăл ĕç вырăнĕнче кăна мар, канашлу-ларура та çуралать. Акă, пахалăх тени хăлхана минретме пуçларĕ. Ăçта çитнĕ унта янăрать вăл. Пирĕн ăна хамăр алăпа тытса пăхса, чĕлхе çине хурса тутанса, çивчĕ куçпа çунтарса пăхмалла, халăх

умне кăлармалла: чаплине - тата чаплантармалла, кăлтăкне - хăлтăкламалла.

Пахалăхне тĕрĕслекенни нумай, анчах унăн шайне хăпартма пулăшаканни - сахал. Строительство лабораторийĕ те пур. Ăна питĕ йăрă, лутака, палка чĕлхеллĕ-çăварлă Елена Калинина инженер ертсе пырать. Ĕçшĕн, материал пахалăхĕшĕн чунне пама хатĕр. Анчах унăн çерçи пек чĕвĕлтетнĕ çинçе сасси пуçлăхсемпе специалистсен хулăн саслă павравĕнче çухалса каять. Пустуй чакаланса, чăрмантарса çӳретĕн тесе унран кулкаласа та илеççĕ. Йĕрес патне çитнĕ çамрăк хĕрарăмпа чылайччен калаçрăмăр, вара çапла шутларăмăр: стройкăра «Çавра сĕтел» йĕркелер.

Тăххăрмĕш строительство управленине суйласа илтĕмĕр. Участок мастерĕн кантур çуртне - бытовкăна тулса лартăмăр. Ш.Халилов мастер, П.Федоров бригадинчи В.Купцов звеньевой, вунпĕрмĕш управленири В.Степанов бригадинчи В.Жук звеньевой, производство предприятийĕсен комбиначĕн ОТК инженерĕ Г.Кувшинова, 5-мĕш стройтрестăн техника пайĕн инженерĕ Ю.Рассказов, «Волгостальконструкция» тресчĕн Шупашкарти монтаж управленийĕн бригадирĕ И.Сельцов, Е.Калинина тата эпĕ пĕрне-пĕри пӳлсех калаçрăмăр. Калаçăва магнитофон çине çырса илтĕм. Сергей Улановпа пĕрер блокнот çырса тултартăмăр.

Хаçатра ятарлă страница патăмăр. «Строительствăпа монтаж ĕçне лайăхлатасси - паянхи çивĕч ыйту» ятпа пичетленчĕ хĕрӳ калаçу. Икĕ енĕпе - калаçу тексчĕ, варринче - хĕрӳ самантра Илья Клочков ӳкерсе илнĕ пиллĕкĕшĕн чĕрĕ сăнĕ. Вĕсемпе пĕрле стройкăра шав çĕклерĕмĕр. Владимир Петрович Демин управляющи, хаçата типографирен илсе килсенех, хăйне пăхăнакан хуравлă пуçлăхсемпе специалистсене стройплощадкăна пухать. Çапла пирĕн «Çавра сĕтел» тавра пĕтĕм пуçлăх вырнаçса ларать.

Çав хушăрах тата парти обкомĕн иккĕмĕш секретарĕ Петр Андреевич Чичикин персе çитрĕ. Трактор завочĕ тăвассишĕн пуçĕпе хуравлăскер вăл аça çаптармасăр стройкăран нихçан та кайман. «Тракторостройăн» çĕнĕ номерĕпе обкомрах паллашнăскер, вăл калаçăва аслати авăтнă пек кĕрсе кайрĕ, хаçат тытнă сылтăм аллипе çавăрттарать те çавăрттарать, пурне те çунтарать кăна.

«А-а, эсир вăратрăр-и-ха çак ыйхă чăптисене?Малашне те тĕлĕрме ан парăр. Тин «Тракторострой» хăйĕн вăйне кăтартрĕ. Астурăм, аса илтĕм, çитмĕлмĕш çулсен пуçламăшĕнче Йĕпреçе

партконференцие пынăччĕ. Сире райком бюровĕн членне суйланă, редактора çирĕплетнĕ ятпа саламланăччĕ, ăнăçу суннăччĕ, маттур, хăрамасăрах çĕмĕрттерĕр, Кузьмин юлташ»,- тесе лапшака аллине çирĕппĕн пачĕ Чичикин.

Кĕçех «Мастер шкулĕ», «Бригадир трибуни» çуралчĕ хаçатра. «Ĕç коллективĕсем ăмăртаççĕ», «Сăмах - çĕнтерӳçе», «Ăмăрту йышăнăвĕсем мĕнле пурнăçланаççĕ», «Хута ямалли обьектра» рубрикăсем хаçатăн çунатне вăйлатса ячĕç. Завод тунă çĕре тĕп подрядчиксĕр - пиллĕкмĕш трестсăр пуçне - 25 хушма подряд организацийĕ хутшăнать. Вĕсен ĕçĕ çинчен те çырмалла-çке. Çавăнпа ĕнтĕ «Ĕç вахтинче - хушма подрядчиксем» рубрика малти вырăна йышăнчĕ.

Район тата хула хаçачĕсен ялан ĕçлекен семинарне Мускава 1977 çулхи кĕркунне хаваспах кайрăмăр. СССР журналистсен Тĕп çурчĕн планĕпе килĕшӳллĕн кашни кун занятисем интереслĕ иртеççĕ. Пушă вăхăтра хула тăрăх уçăлса, курса çӳретпĕр. Калым тăвакан Мускав фотокорреспонденчĕ пире те ярса илчĕ, сăн ӳкерчĕ.

Семинар вăхăтĕнче пире центрти хаçатсен редакцийĕсене илсе кайса вĕсен ĕçĕпе паллаштараççĕ. Хальхинче те тепĕр паллă мероприятие лекрĕмĕр. СССР журналисчĕсен Тĕп çуртĕнче, Суворовский бульварти 8-мĕш «А» çуртра, октябрĕн 3-мĕшĕнче эпир Çĕрĕн пĕрремĕш искусственнăй спутникне вĕçтерсе янăранпа 20 çул тултарнă ятпа йĕркеленĕ пресс-конференцие хутшăнтăмăр.

Конференцие СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин Пичет пайĕн заведующийĕ Всеволод Николаевич Софинский уçрĕ.

Акă эпир Хĕрлĕ площадьре тăратпăр (сулахайран): Петр Матвеев (Кӳкеç), Владимир Кузьмин (Шупашкар), Николай Максимов (Куславкка), Иван Ландышев (Хĕрлĕ Чутай), Николай Дубинин (КПСС Чăваш обкомĕ), Ванифатий Андреев (Вăрмар), Михаил Васильев (Вăрнар), Виталий Киданов (Патăрьел), Никандр Якимов (Комсомольски), Александр Миллин (Елчĕк), Кузьма Смирнов (Шăмăршă), Владимир Наумов (Етĕрне), Анна Маркова (Çĕрпӳ), Денис Гордеев (Муркаш), Аркадий Кустиков (Элĕк), Николай Кадикин (Тăвай), Василий Никитин (Канаш), Леонтий Николаев (Красноармейски), Андрей Михайлов (КПСС обкомĕн пичет секторĕ), Антип Николаев (ЧАССР журналистсен союзĕ), Алексей Белов (Шупашкар).

- Спутник наукăра паллă йĕр хăварнă, - терĕ вăл. -Тĕнче уçлăхне вĕçнĕ спутник этем ăсталанă тĕпчев япалисенчен тĕнче уçлăхне çитнĕ чи пирвайхи пулнă.

Спутник пулăшнипе Çĕр çаврăннă май атмосферăн çӳлти сийĕн çăралĕхне тĕнчере пуçласа виçнĕ, ионосферăра радио хумĕсем саланнин тупсăмне тĕрĕслесе палăртнă. Унсăр пуçне спутник орбитинчи техника енчен килекен ĕçсене тĕпченĕ.

Спутник Çĕр çийĕн 226-947 километр çӳллĕшĕнче 93 талăкра Çĕр тавра 1400 хут çаврăннă. Çавăнтанпа тĕнчере космос вĕçевĕсен çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнă.

Пĕтĕм тĕнчери «Интеркосмос» совечĕн председателĕ Борис Николаевич Петров, СССР наука академийĕн Космос тĕпчевçисен институчĕн директорĕ Роальд Зиннурович Сагдеев, медицинăпа биологи ыйтăвĕсен институчĕн директорĕ Олег Георгиевич Газенко академиксем, Тĕнче уçлăхне вĕçессине ертсе пыракан Мускав çумĕнчи центрĕн ертӳçисенчен пĕри Сергей Дмитреивич Гришин профессор, Владимир Александрович Шаталов летчик-космонавт каланисене итлесе тĕлĕнтĕмĕр: пуçа çĕнĕ информаци нумай хыврăмăр.

Шаталов Андриян Николаев космонавтран пысăк салам каларĕ: пирĕнпе питĕ уççăн, шӳтле-шӳтле калаçрĕ: эпир чĕннипе Чăваш çĕршывне пырса курма шантарчĕ. **Юлашкинчен пĕрле сăн ӳкерттертĕмĕр: Владимир Шаталов, Çĕрпӳ хаçачĕн редакторĕ Анна Маркова, Владимир Кузьмин тата ыт. те. (79 стр.)**

Тракторостроя КПСС Тĕп Комитечĕн виçĕ пайĕ, СССР строительство, СССР трактор тата ялхуçалăх машиностроени, СССР монтаж тата ятарлă ĕçсен министерствисем йĕркелесе ертсе пыраççĕ. Кашни виçĕ уйăхра виçĕ министр çумĕ Шупашкара килет. Асли - строительство министрĕн çумĕ Якубанец. Кунĕпе канашлаççĕ те Демин пӳлĕмĕнче, тавлашса-çураçса çитес квартал валли ударлă задачăсем йышăнаççĕ. Вĕсене пурнăçлама пĕтĕм çĕршыври çĕршер организаци хутшăнать. Шупашкарта вĕсем мĕнле пурнăçланнине пирĕн хаçатра анлăн, хĕрӳллĕн çутатмалла. «Ударлă задачăсем мĕнле пурнăçланаççĕ» рубрика пĕр номертен те сиксе юлмасть. Тепĕр виçĕ уйăхран Якубанец вĕсене хăй хак парать. Министерствăра вăл пирĕн «Тракторостроя» та вулама, тишкерме вăхăт тупать.

Хаçат сăнне ирхи хĕвел пек çутăлтарса уçса яракан та тупăнчĕ. Çĕмĕрле ен ачине, педагогика институчĕн илем факультетĕнчен

вĕренсе тухнă Илья Степанович Клочкова стройтрест аппаратне ĕçлеме илни пирĕншĕн мĕн тери пысăк савăнăç пулчĕ. Мĕнле, кама, ăçта, хăçан ўкермеллине ăна сăмсаран тĕллесе кăтартмалла мар. Ирпе хашкаса çитет те, ман сĕтел тулли сăнўкерчĕк сарса хурать. Суйла. Хакла. Йышăн. Хушăран Улановпа, Зиминапа «инçе çула» тухса çўреççĕ, «Инçе çул» вăл пирĕншĕн - Тракторострой хули. Хамăр никамăн мар çĕр лаптăкĕ çинчи кантурта чыхăнса ларатпăр-çке. Трест управленийĕн аппаратĕнче - 180 çын, 150-шĕ - инженер. Вăт мĕнле бюрократи камантийĕ. Шăп та лăп пĕр стройуправлени чухлĕ. Шахматла выляса кун ирттерекенĕ те, пăшăл пăтти пĕçерекенĕ те, хула тăрăх хитре кĕпейĕм шыраса кун кунлакан та, пурте - аслă стройка паттăрĕсем.

Хаçатăн ячĕ мар, унăн ятне тĕксĕм çырни мана тўрех кăмăлсăрлантарнăччĕ. Клочкова ун пирки аса илтертĕм те, вăл тепĕр вичĕ кунтан ята çĕнĕлле, уçăмлăрах, курăмлăрах тата сăнарлăрах çырса килсе пачĕ. Томашовпа Львов та, Демин та ун ĕçне ырларĕç. Урăхларах, илемлĕрех сăн-питлĕ хаçата пăхма та, алла илме те кăмăллă пулса кайрĕ. Вулакансем те, тĕрĕслевçĕ-сăнавçăтишкерўçĕ текенсем те кăлтăк тавраш тупаймарĕç. Хăйне тўленĕ шалу укçинчен пин хут та ытларах усă кўчĕ пуль ăста сăн ўкерўçĕ-художник пиллĕкмĕш стройтреста. Хаçатсăр пуçне Илья курăнакан агитаци валли мăнлатнă çĕршер сăнўкерчĕк ăслайласа пачĕ парти комитетне. Уншăн ăна лайăххăн тав тума та астумарĕç. Унăн «Запорожецĕпе» хаçатшăн усă курнине аса илес пулсассăн тата... Типографине хаçат материалĕсем набора çитерсе памалла-и, пичетленĕ номер пачкисене илсе килмелле-и, ăçта та пулин питĕ васкавлă çитмелле - Клочковăн «таксийĕ» кĕрлет кăна. Пĕррехинче иксĕмĕр хуланалла пыратпăр. Çĕнĕ Шупашкар - Шупашкар çулĕ çине пăрăнса тухнă чухне пĕр машина сулахай енчен пырса тăклаттарчĕ те... Мана кăкăртан, Илья Степановича ураран амантрĕ. Лапчăк машинăпах Ленин районĕн ГАИне кĕрлеттерсе çитрĕмĕр... Çакăн хыççăн тин унти хăрушă çул юппине светофор лартса пачĕç. Юрать-ха турриййĕ хамăр çумрах пулнă. Сывалтăмăр.

Укçа сахал тўленĕшĕнех çухалчĕ хĕрў фотомастер Траткторостройран. Хăварнă ĕçĕпе - ўкерчĕкĕсемпе - хам унтан кайиччен ех усă куртăм. Тўлевсĕр. Уншăн вăл кўренмерĕ, тав та тумарĕ, кулкаласа шўтларĕ çеç: «Манран парне пултăр пуянсене».

Пысăк малашлăхлă çамрăкчĕ Сергей Уланов. Пултарулăхĕ çĕнĕ завод çĕкленнĕ пекех ўсетчĕ. «Молодой коммунист» ачи-

семпе, уйрӑмах Алексей Шкилевпа туслӑччӗ. Вӗсем пек ӑста ҫырма тӑрӑшатчӗ, ӑнаҫлах пултаратчӗ. Шел, чӑваш хӗрӗ тупса парса Атӑлта якорь яртараймарӑмӑр. Хӑйӗн чунтуртмӑшӗ патнеллех вӗҫтерчӗ, ҫуралнӑ ҫӗршывнех мӑнна хучӗ.

Уланов вырӑнне вӑйлӑ ҫыравҫӑ кирлӗччӗ. Ун пирки манӑн пуҫра малтанах шухӑш тӗвӗленнӗччӗ-ха. Вӑрнар райхаҫатӗнче ӗҫленӗ вӑхӑтрах пӗр ачана карт хунӑччӗ. Чӑрӑш Хирлепрен Геннадий Яковлев тӑтӑшах ҫыратчӗ. Самай вуламалли хайлавсемех тухатчӗҫ унӑн. Кун кӗнекисене уҫкаласа-хупнӑ май, 1961 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 19-мӗшӗнче ҫырса хуни куҫ умне лекрӗ: «Заходил Геннадий Яковлев, селькор из колхоза «Строитель». Стремительный, начитанный, жизнерадостный парнишка. Мыслит глубоко. Его стремление о будущей жизни - вот что нравится мне. «Я люблю трудиться, неустанно, без конца», - говорит он. - Чистосердечный, не люблю кривизны в жизни, критикую лодырей, подхалимов, тех, кто мешает строить коммунизм...» С Геннадием я согласен всем сердцем».

Ӗненнӗ ҫав япшар чӗлхеллӗскерне... Эпӗ ҫеҫ мар, «Социализм ҫулӗпе» хаҫатра ӗҫлекен ытти юлташсем те шаннӑ Вӑрнар районӗнчен тепӗр ӑста пероҫӑ тухасса.

Яковлев пединститутран «пиллӗк» паллӑсемпе кӑна вӗренсе тухнине те, историксем ӑна мухтанине те, салтака кайса килнине те, граждан сыхлавӗн хуралӗнче тӑнине те, «Советская Чувашия» хаҫатра ӑста калавсем пичетленине те пӗлнӗскер, эпӗ пултаруллӑ ӗҫтешӗме тӳрех шырама пуҫларӑм. Иван Лисаев журналиста васкавлӑ хушу патӑм: «Ҫывӑх тусна тупса ман пата ҫитер».

Геннадий Яковлевпа тепӗр куннех партком пӳлӗмне кӗрсе тӑтӑмӑр. Эпӗ пӗлтернипе пуҫлӑхсем килӗшрӗҫ, редакци йышне ҫӗнӗ ҫын хутшӑнчӗ. Пичӗ-куҫӗ юмахри гномсем майлӑрах, лутака, клеще ураллӑ, тӑраннӑ кӑвакал пек мӑран Тракторострой картлашки ҫине хӑюллӑн ярса пусрӗ.

Вӑл мӗн ҫырнине вуласа тӗлӗнетӗп, ытла та яка чӗлхепе, профессионал-строитель пек ӗнентерӳллӗ хатӗрлет статьясене, тесе Галина Федоровнапа хавасланса калаҫатӑп. Зимина йӑлл кулать те пуҫне пӗкет. Чунӑмра темле ырӑ мар туйӑм йӑшӑртатса илет. Мӗншӗн ман умра чӑнлӑха пытарать-ши вӑл тесе шухӑшлакаласа, урӑх ӗҫ ҫине кӗрсе каяттӑм. Ман хушу хыҫҫӑн Александр Ходарев ячӗпе хатӗрленӗ статья Тракторостройра ҫӗнӗ хӗлхем йӑлкӑштарсан, чӑтаймарӑм, авторне, Геннадий Яковле-

ва, треста ертсе пыракансемпе партком членĕсем умĕнче мухтарăм. Ĕçпе чапа тухнă бригадир стройкăна ертсе пырассине лайăхлатмали çинчен хăйĕн опычĕпе тĕплĕн паллаштарать. Партипе профсоюз тата комсомол групписем, бригада совечĕ пулăшнипе вăл юлса пыракан строительсен эртелне мала кăларни, рабочисене бригадăна ертсе пырас ĕçе епле кӳлни пуриншĕн те кăсăклă пулчĕ. Ходарев чăн-чăн бригадир шкулĕ йĕркелет-çке. Парти комитечĕ ырланă хыççăн рабкор посчĕн членĕн çырăвне кашни коллективра сӳтсе яврĕç. Унта икĕ пин ытла строитель хутшăнчĕ. Редакци çыннисем те пĕрлех пулчĕç. Производство командирĕсем пирки тата хаçатра икĕ страница - разворот пичетлерĕмĕр, унта рабкор çырăвĕ хыççăн мĕнле ыр̆ă улшăнусем пулнине анлăн çутатрăмăр. Хĕрӳ калаçури сĕнӳсене шута илсе, пиллĕкмĕш трестри инженерсемпе техниксене çĕнĕрен аттестацилерĕç, инженер маçтăрлăхĕн университетне уçрĕç, мастерсемпе бригадирсен совечĕсене вăйлатрĕç.

Шутласан, хаçат хăйĕн тĕллевне пурнăçларĕ, ертсе пырас ĕçре курăмлă пулăшу пачĕ. Авторĕ те «пиллĕк» паллă илчĕ. Анчах та...

Ялан хăйĕн вăрттăнлăхĕпе, чеелĕхĕпе тĕлĕнтерекен чикан юмăçĕ пек ытарлă Галина Зимина пĕр ирпе ман ума «Строительная газета» номĕрне, саралма пуçланăскерне, кăшăрт хучĕ, вуласа савăнăр, терĕ. Ак тамаша! СССР строительство министерствин хаçачĕ Ходарев статйине пилĕк çул каяллах пичетленĕ-мĕн. Хушамачĕ, тресчĕ çеç урăхла. Стройки те Çĕпĕрте. Таçти чапа тухнă бригадир сăмахне кăшт улăштаркаланă çеç Яковлев. Ыттине йăлтах вăрланă. Галина Федоровнана чышкă кăтартрăм та, вăл манăн хĕрарăмсен советĕнче калаçу йĕркелемелле тесе тухса шурĕ. Тарăхăва пĕчченех ирттерсе ятăм. Хамăрăн пăтăрмаха никама та пĕлтермерĕмĕр, Геннадине хăйне те шарламарăмăр. Шăв-шав тухмарĕ редакцирен.

Зимина тепрехинче, куçпăван тарăн кӳллинчи хура шăрçисемпе йăлкăштарса, ăшĕнчен майĕпен-майĕпен шуса тухакан кăкăр уçлăхĕн сăмаххисене сывлăша сапаларĕ: «Çĕпĕр писателĕн хитре калавĕсене вăрласа хăй ячĕпе «Советская Чувашия» хаçатра пичетленĕшĕн Геннадий Яковлева ĕçрен кăларса янăччĕ». Ман сĕтеле тепĕр аçа çапрĕ, куç-пуç хуралса килчĕ. Çамрăклăх шаймăклăхĕ пулнă пуль, тесе ун çинчен часах мантăмăр. Çынни питĕ тăрăшса, хавхаланса, хастарланса ĕçлет-çке. Унсăрăн хаçат кăларма та йывăр.

Ăнсăртран тенĕ пек Яковлев хăйĕн хуйхи-суйхипе паллаштарчĕ.Суйлав комиссийĕнче, граждан сыхлавĕн службинче ырă мар хăтланнă тесе ăна партирен кăларнă-мĕн. Халĕ вăл хăйне КПСС членĕн ятне каялла тавăрса çирĕплетме ыйтать. Мĕнех, Томашов манпа килĕшрĕ, Демин та хирĕç мар. Урапана малалла кустарса ятăмăр. Яковлев ыйтăвне, хулакомран документчĕсене илсе килнĕ хыççăн, трест управленийĕн пуçламăш парторганизацийĕн пухăвĕнче сӳтсе яврăмăр, пуху йышăнăвне хамăр парткомра çирĕплетрĕмĕр, партком йышăнăвĕпе Калинин райкомне çитрĕмĕр. Партие кĕрекенсен тата коммунистсен ĕçĕсене ятарлă пăхса тухакан комиссире ветерансен мунчинче тарларăмăр. Райком бюровĕнче те чару пулмарĕ. Çул уçă - Шупашкар комитечĕ кĕтет! Ыйтăва унта пăхса тухмалли кун та çитрĕ. Томашовпа Яковлева бюро ларăвне чĕнеççĕ. Радий Иванович манран ыйтать: «Яковлев ăçта?» «Эпĕ пĕлместĕп, курман. Çула май тӳрех типографине е стройплощадкăна кĕрекенччĕ те...» «Вĕçтер. Шыра. Иккĕ валли тупса пыр». Типографине кайса килтĕм, унта çук. Стройплощадкăра эрнере те шыраса тупаймастăн. Хамăн хаçат кăларма чупмалла. Томашов вара хăйĕн çуммине Львова хушрĕ: «Кузьмин ерçмест. Хамăр машинăна ил те, Кăнтăр поселокне ăшалантар. Толя шофер вăл ăçта пурăннине пĕлет». Львовсем часах таврăнчĕç. «Виле ӳсĕр, калаçаймасть те», - хуравларĕ Иван Васильевич.

Радий Иванович мана хытах «ачашласа» аяккалла тĕртсе ячĕ те, машинăпа хулакомалла вĕçтерчĕ, çула май лартса та каймарĕ.

Ай мĕнле намăс пулчĕ мана партком секретарĕпе управляющи умĕнче. Пухупа ларусенче Яковлева сивлесе хирĕçлекенсем те пулнăччĕ вĕт, вĕсене лăплантарса, икĕ пуçлăх ултавçа çине тăрса хӳтĕлерĕç. Ман ырă ятпа витĕнсе те парти билечĕ урăх илеймерĕ, шеремет. Кайран хама ăш хыптарчĕ.

Шутсăр нумай çырнă, таçта та пичетленнĕ пирки эпĕ хамăн гонорар укçинчен хăшне-пĕрне партвзнос тӳленĕ чухне манамана та хăварнă. Яковлев çавсене таçтан-муртан чавса кăларнă. Хăйне ĕçсе ĕçе тухманшăн квартал премийĕсĕр хăварттарнă хыççăн тарăхнипе тытать те çырать ман çинчен çăхав. Хулаком çумĕнчи парткомисси пуçлăхĕ Космовский хăй килсе тĕрĕслерĕ. Мана хамăрăн пуçламăш парторганизацире, парткомра, райком комиссийĕнче, райком бюровĕнче тĕпĕртеттерчĕç, партие улталаса укçа тĕппипех тӳлеменшĕн выговор шаплаттарчĕç. Акă сана тав! Акă сана урок! Яковлев тапкине хамăн кăмăл сипечĕшĕнех туянтăм

вĕт. Хăй кайран та мана нимĕн пулман пекех ală парать. Авă епле усаллăх, икĕпитлĕх, нĕрсĕрлĕх пытанса пурăнать иккен йĕксĕк ăшĕнче. Ахальтен мар «Йĕксĕк» кулăшла калав çырăнчĕ.

Çумăрсăр аслати пекех кĕрлет стройка. Çав кĕрлевре пирĕн те хамăрăн сасă вăйлансах пырать. Хута ямалли обьектсен шутне преспа сварка тата сборка корпусĕ (ПССК), юсавпа шăрату-ремонтно-литейный цех (РЛЦ) малти вырăна тухса тăчĕç. Эпир те тата маларах ĕмĕтпе çӳретпĕр унта. «Паян ПССКра», «Паян РЛЦра» - кашни номĕр çак рубрикăсемпе уçăлать. Ывăна пĕлмесĕрех чупатпăр, çыратпăр, критикăллă статьясен витĕмлĕхĕшĕн кĕрешетпĕр.

1978 çулхи Пичет кунĕ çав тери савăнтарчĕ. Канмалли кун эпĕ килтеччĕ. Кĕтмен-туман çĕртен Хусанкай урамĕнчи 9-мĕш çуртри 67-мĕш хваттере Алексей Крысинпа Герман Желтухин пырса кĕчĕç, сывлăх суннă-сунман «Строительная газетăна» саркаласа чăштăртаттарма пуçларĕç, вула, савăн, теççĕ. Строительствăра тата строительство материалĕсен промышленноçĕнче ĕçлекенсен профсоюзĕн тĕп комитечĕпе «Строительная газета» Пĕтĕм Союзри конкурс ирттернĕччĕ. Эпĕ те хамăрăн хаçат пуххине Мускава тăратнăччĕ. Пире те шута хунă иккен. Строительсен Аслă Октябрь юбилейĕ умĕнхи ăмăртăвĕнче «Тракторострой» виççĕмĕш вырăна тухнă тата 100 тенкĕ премии илме тивĕçнĕ. Хаçатне тата редакторне Хисеп грамоти памалла тунă.

Эпĕ те, мăшăрăм та хĕпĕртерĕмĕр Союзри çĕршер хаçат хушшинче хамăрăн ят тухнăшăн. Юлташсем ман лара-тăма пĕлмеççĕ - мухмăр чĕртмелле. Сĕтел çинче ташша ячĕç вара «Атăл шывĕ» тултарнă кĕленче пичкесем.

Çулла Мускавра семинар пулчĕ. Пĕтĕм Союзри канаша строительствăри нумай тиражлă хаçат редакторĕсене чĕннĕ. Эпир иккĕмĕш стройтрест редакторĕпе Вячеслав Шингаревпа çывăрмалли çемçе вакунра тĕп хулана çитрĕмĕр. Виçĕ кун сăмах-юмах итлесе, унта-кунта пулса, коллегăсемпе калаçса, экскурсисенче кулкаласа кăштах кантăмăр.

Çул çинче мĕн те пулин кулăшли тупăнатех. Шингаревпа пĕрле арăмĕ те пĕчĕк ачапа Мускава кайма тухнă иккен. Вĕсем юнашарти плацкартлă вакунра. Пуйăс тапрансан пирĕн пата пычĕç. Унччен маларах çеç çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан Лев Кузьмин журналист çитнĕччĕ. Унăн пирĕнпе кăштах сыпас килнĕ. Хĕрарăмпа ача куçĕ умĕнче кĕленче пăкки уçасси пулмарĕ. Ашшĕ, паллаштарса, пирĕн ятсене калать: «Дядя Володя,

дядя Лев». Мальчик вытаращил глаза и произнес: «Ой, чудо! Лев! Настоящий живой лев. Какой лохматый. Нас он не сьест? Мама, я боюсь. Папа, дай-ка ему тот кусок мяса, что мы принесли. Мама, пойдем отсюда к себе...» Ребенок силком потащил маму в свой вагон. А мы посмеялись и вскоре Лев открыл долгожданную бутылку.

Оказывается он едет к своему свердловскому другу, в издательство «Советская Россия» с рукописью своей книги. Раньше они после университета работали вместе в одной газете. Потом в Москве Кузьмин опять пришел к нам в гостиницу «Урал» и с такой радостью рассказал о том, что рукопись приняли, но только в качестве подстрочника. А книга вскоре вышла.

Когда утром мы приехали в Москву, выскочили на перрон. К нам спешит жена Вячеслава с ребенком в руках. Как подошли они, мальчик пальцем правой руки осторожно показал на Льва Кузьмина: «Ой, тигр! Как большая кошка». Он, видимо, поспав, перепутал льва с тигром. Для нас нашлась потеха: «Какой магической силы ты, Кузьмин, за ночь от Льва Леонидовича превратился в Тигра Леонидовича». С тех пор он стал для нас Тигром Кузьминым. И сейчас стало смешно, видимо, поэтому незаметно перешел с чувашского на русский.

На совещании по плану поделился я со своим опытом работы.

Парткомпа, профсоюз комитечӗпе тата ВЛКСМ комитечӗпе килӗшнӗ хыççăн чупса мала тухассипе çамрăксем хушшинче ăмăртуирттертӗмӗр. «Тракторострой» парнисене çӗнсе илессишӗн питӗ нумаййăн ăмăртрӗç. 1977 çулхи çӗртме уйăхӗнчи пӗр канмалли кун трактор заводӗ тăвакансемшӗн хаваслă уяв пулчӗ.

Çӗршыв калăпăшлӗ хак та, ВЛКСМ Чăваш обкомӗпе Калинин райкомӗ панă хисеп хучӗсем те чуна çӗклерӗç. Чăвашрадиора куллен янратăп, хаçат-журналта пӗрмай пичетлетӗп. Аслă стройкăн аслă корреспонденчӗ пекех. Çавсене пӗтӗмлетсе хама хам лăплантаратăп, иртнӗ çулсенче хамран мăшкăлланă путсӗрсенчен эпӗ пурпӗрех телейлӗ тесе шутлатăп.

Хаçачӗн калăпăшӗ, шучӗ пӗчӗкрех пулин те, унта кӗрсе вырнаçнă кашни хайлав ылтăнран та хаклă пек туйăнать. Çӗршыв аталанăвӗн пӗр вăйлă тапхăрне ӗмӗрлӗхе пичетре асра хăваратпăрçке. Яланах ӗç, ăмăрту, бетон, кирпӗч, машина, трактор, кран кăна мар пирӗн тӗп геройсем - пултарулăх çыннисем те, ӳнерçӗсемпе çыравçăсем те. Алексей Талвирпа Юхма Мишши хăç-

Сăн ӳкерчĕкре: хаҫат редакторĕ В.П. Кузьмин 9-мĕш строительство управленийĕнчи Дагестан йĕкĕтне Муса Расулов монтажнике мала тухнă ятпа саламлать.

антанпа такăрлаҫҫĕ ĕнтĕ Тракторостройăн туса ҫитермен урамĕсене. Юрий Семенов-Сементер хăйĕн «Ялав» редакцийĕпе-редколлегийĕпе Альберт Захаровăн комсомолецсемпе ҫамрăксен комплекслă бригадине хутшăннă. Ҫыравҫăсемпе строительсем ăмăртма, пĕрле ĕҫлеме килĕшӳ тунă, пĕр-пĕринпе ҫывăх туслашса кайнă. Ваҫлей Давыдов-Анатри вунвиҫҫĕмĕш стройуправленири Николай Раймов бригадине шефа илнĕ те, стройкăран тухма пĕлмест. «Писательсем Тракторострой ҫинчен» ятпа вĕсене ятарлă страницăсем кăларса паратăп.

«Литературная Россия» хаҫат Шупашкарти трактор заводĕнче писательсен постне туса хунăччĕ. Унăн обществăлла редколлегине Юхма Мишшипе, Иван Лисаевпа, Валентина Ивановапа, Алексей Талвирпа пĕрле мана та кĕртрĕҫ. Хаҫатăн тĕп редакторĕ Юрий Грибов поэт, чăваш кĕрӳшĕ, хăй те хаваспах килетчĕ, Мускавра вăйлă очерксем пичетлерĕ. Эпĕ вăл ҫыравҫа сăввисемшĕн кăна мар, питĕ интереслĕ очеркĕсемшĕн юрататтăм.

Чăваш писателĕсен Союзĕнче Тракторострой ыйтăвĕ те мал ыйту шайĕнчех. Пĕрмай канашлатчĕҫ. Эпĕ те пулаттăм унта. Пĕррехинче классиксем тавлашса кайрĕҫ. Алексей Талвир обкомран килни умĕнче сĕнӳ пачĕ. Стройкăра путлĕ ҫул ҫук, чупсах ывăнатăн, пĕр-пĕр уазик уйăрса пама ҫук-ши, терĕ. Хуравĕ пуличчен Ухсай Яккăвĕ ҫатлаттарса хучĕ: «Вертолет кирлĕ мар-и тата сире?» Сăмах-юмах ҫакăнпа вĕҫленчĕ.

Судьясен хăйсен ĕçĕ. Варринчи «Тракторострой» сотрудникĕ Александр Александрович Николаев — А.Аслут журналистăн ывăлĕ.

Алексей Филипповича заводра кăна мар, стойкăра та хисеплетчĕç. Паллă писателĕн çитмĕл çулхи менелникĕ çывхарнă тĕле пиллĕкмĕш стройтрест ячĕпе ятарлă мастерскойĕнче ылтăн шывĕпе çыртарса салам çырăвĕ хатĕрлерĕмĕр. Писательсен Союзĕнче ăна манăн саламламаллаччĕ. Кайрăм. Анчах савăнаçлă пухăвĕ пулмарĕ. Менелникçĕ чирленĕ терĕç, мана килне кайса саламлама сĕнчĕç. Шăпах тата çав çурхи кунсенчен пĕринче хавас чирĕнчен сывалас текен Алексей Крысинпа Герман Желтухин ман çума çыпăçрĕç: тавай пĕрле саламлар! Çитрĕмĕр Мир урамĕнчи уйрăм киле. Алăк шăнкăравне янăратнă хыççăн шалта Талвир сасси илтĕнчĕ: «Кам унта?» Эпĕ камсем-камсем тата мĕн сăлтавпа чăрмантарма килни çинчен пĕлтертĕм. «Эпĕ халĕ Мускавран тинтерехех кăна килтĕм те, хама япăхрах туятăп-ха. Салам хуплашкине Союза парса хăварăр. Каçарăр»,- тени хыççăн шалта шăп пулчĕ. Ман хăпартланнă юлташсен сăмсисем усăнчĕç, аллисем кĕсйисене чăмрĕç...

Писательсен Союзĕпе Тракторострой хушшинче ыррипе усалли те юнашарах ытакланса утнă. Юхма Мишшин чăрсăрлăхне, никамапăхăнманлăхне çыравçăсенчен такам та пĕлет. Çĕнме çук Патăрьел паттăрне. Вăл вăхăтра пурин те коммунист пулмаллаçке. Партире тăман писатель - совет писателĕ те мар, тенĕ. Михаил Николаевича вара тăшманĕсем яхăнне те хăйсен çывăхне

ярасшăн мар. Вăйлă стратег тата питĕ ăслайçă тактик вĕсене шăхăртса хăварчĕ. Тин çеç çуралнă завод пуçлăхĕсем Юхмана инженер ячĕпе ĕçе илнĕ. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, Юхма «инженер» нимле хирĕçтăрусăр, яп-якан КПСС членĕн кандидачĕ пулса тăчĕ. Чăваш Улăпĕпе Улăп трактор хăвачĕн хайлавĕсене киленсех шăрçаларĕ, Мускаврa, Шупашкарта кĕнекесем кăларчĕ. Устав йĕркипе, вăхăт çитсен, ăна КПСС членне илчĕç.

Манăн та сăнарсем пуçра илемленсе вăй илсе пычĕç. Очерксем, калавсем çыра-çыра хутăм. «Ялав», «Тăван Атăл» вĕсене хапăлласах йышăнчĕ. Чăвашгизра кăларнă пĕрлешӳллĕ кĕнекесенче те манăн хушамат курăнкалама пуçларĕ. Вăрнар, Йĕпреç енче каярах юлнă романсемпе повеçсем пуçа канăç памаççĕ. Ĕçрен пушă вăхăтра, ĕçе кайиччен иккĕ çурăра тăрса ларса, вĕсен геройĕсемпе савăнатăп, нушаланатăп.

Чăваш писателĕсен пултарулăх-кану çурчĕ çу уйăхĕнче чĕрĕлет. 1979 çулхи çуркунне Союз правленийĕпе ВЛКСМ обкомĕ унта çамрăк прозаиксен икĕ эрнелĕх семинарне йĕркелеме йышăннă. Мана та кĕртнĕ çав списока. Пултарулăха кăтартмашкăн «Тымар» романа машинкăпа пичетлеттерсе патăм. Правлени председателĕ Николай Дедушкин полковник хăйĕн адьютантне-литконсультантне Федор Коновалов-Агивере пирĕн штаб начальникĕ тунă. Камантлаканĕ-йĕркелӳçи - Илпек Микулайĕ. Оперативлă ушкăнра эпир вунпĕрĕн: Виталий Григорьев-Енĕш, Николай Максимов, Василий Петров, Александр Волков, Герман Желтухин, Александр Угольников, Виссарион Синичкин, Иван Егоров, Елизавета Осипова, Евгений Казаков, Владимир Кузьмин.

Мана ĕнтĕ трестра чармарĕç. Управляющи, Владимир Петрович, партком секретарьне Томашова çапла çеç каларĕ: «Радий Иванч, çумра писатель пулнишĕн савăнас пулать пирĕн, тен, малашне хамăр çинчен çырнă Кузьмин романĕсене те вулăпăр, çул уçма пулăшар». Çапла çу уйăхĕн вунтăваттăмĕшĕнче «çамрăк çыравçăсен çарĕ» пĕчĕк пăрахутпа-трамвайпа Атăл леш енне касса кайрĕ. Çырана ансанах симĕс çерем-кавир çине вырнаçса лартăмăр. «Çакăнтан пуçланать семинар,- терĕ Коновалов ефрейтор.- Пултарулăх анлăшĕнче хамăр лаптăка ярса илтĕмĕр ĕнтĕ. Çак плацдармран çӳл çырана хăпармашкăн, Сăнарлăх тăвĕ çине ялав çакмашкăн хăюлланар, хастарланар. Ăнăçу сунса, тав сире!»

«Силпи» хуçи Маркиян Удалов пире ăшшăн кĕтсе илчĕ. Эпир Николай Максимовпа иккĕмĕш хутри пӳлĕмре. Пирĕн ĕнтĕ

Ӳкерчӗкре (сулахайран): пӗрремӗш ретре - Аркадий Малов, Иван Григорьев, Герасим Харлампьев, Елизавета Осипова, Николай Дедушкин, Илпек Микулайӗ, Вир Мӗтри, Александр Горшков; иккӗмӗш ретре - Евгений Казаков, Владимир Кузьмин, Александр Волков, Георгий Краснов, Павел Иванов, Маркиян Удалов, Виссарион Синичкин, Александр Угольников, Иван Егоров, Владимир Канюков, Владимир Ухли «Кувшинка» кану ҫуртӗнче.

хамăрăн хайлавсене юсаса кун çути кăтартмашкăн чăн-чăн литература шайне çитермелле, тĕрĕссипе, картне лартмалла.

Тăвата ушкăна пайлантăмăр. Чăваш халăх писателĕ Илпек Микулайĕ, Георгий Краснов, Владимир Ухли тата Владимир Канюков - ушкăн командирĕсем. Виталий Енĕше, Николай Максимова тата мана Владимир Яковлевич аллине панă. «Ялав» хаçат редакторĕ Максимов, пăрахутпа Куславккаран килчĕ, вăрах пурăнмарĕ, хăйĕн васкавлă ĕçĕпе чулхуланалла улăхрĕ.

Удалов пирĕн валли ĕç тупса хатĕрленĕ. Пулăшаканĕсем - унăн ĕçри хĕрарăмсем - кашнинех кĕреçе тыттарчĕç. Пултарулăх çурчĕн лаптăкĕнче çĕр чавтараççĕ. Вася Петров хыпкаланса çӳрекен Маркиян Петрович енне çав тери тарăхуллă куçпа пăхса илчĕ те: «Эпĕ кунта вĕсемшĕн çĕр чавма килмен, мĕн айăпа кĕнĕ-ши»,- тесе кĕреçине ывăтса ячĕ. Эпир те чавма пăрахрăмăр. Пире вара карта хыçĕнчи хырлăха хуса кайрĕç. Кунта такам валли мунча пури пураттарнă та, ăна пăсса, пĕренисене шала йăтса купаларăмăр. Чапа тухнă кивĕ мунчана хутса ячĕç. Мунча пулнă çĕре парти обкомĕн лекторĕ Семен Григорьевич Григорьев çитрĕ те тĕнчери лару-тăру çинчен лекци вуларĕ. Мускавран самай çĕнĕ хыпарсем тултарса килнĕ.

Вăрнар хыçĕнчи Упнер Хапăс ăсчахĕ ăсĕ-тăнĕпе, пĕлӳлĕхĕпе, чĕлхе-çăвар çаврăнăçулăхĕпе тахçанах темле профессор-доктортан та малалла иртсе кайнă ĕнтĕ, çапах хăйĕн кафедри-деканачĕ те, званипе хисеплĕ ячĕ те çук.

«Манăн кафедра - Чăваш çĕршывĕ, манăн итлекенĕм - мана кăмăл тăвакан халăх»,- текелесе ихĕретчĕ те, сăнне сăпайлантарса, кăххăм-кăххăм! ӳсĕрсе илетчĕ. Вырăсла та, чăвашла та никамран ăста çавăрттарать çав, ниçта пăхмасăр, ним вуламасăр сехечĕ-сехечĕпе пăталаса тытать итлекенсене. Удалов пусмăрĕнчен хăтăлнă «тарçăсем» Григорьев ытамĕнче кăмăлтуйăмне улăштарчĕç. Китай политикĕсене драконпа танлаштарни, драконне питĕ хыттăн аçтаха тесе хутлă-хутлă асăнни уйрăмах килĕшрĕ. «Эпĕ сана, Кузьмин, Вăрнарта, вăтам шкулта, истори вĕрентнĕ», тесе мана мухтаса пĕтерчĕ. Ачалăх учительне тав тăвас шухăш вăйланчĕ. Хамăр пӳлĕмре шавласа ларнă хыççăн юмахça ăсатса яма тухрăмăр Енĕшсемпе. Семен Григорьевич «Капкăна» час-часах çӳрет, Енĕшпе шахматла вылять, сăмавара хĕрлĕ эрех тултарса чей ырăнне ĕçеççĕ. Иккĕшĕ пит туслă. Шӳтниксен лаççинче Семен Григорьевич та пултарулăхне хĕртсе туптать.

Атăл çыранне хăпарсанах, кану çурчĕн картишне кĕме çаврăнакан алăк (вертушка) лартнă. Çавăнта çаврăнчĕ-çаврăнчĕ, нимепле те тулалла тухаймасть пирĕн лектор-учитель. Айланкаласа хăтăлтăмăр тимĕр тыткăнĕнчен. Чарăну патне хашкаса çитрĕмĕр, пăрахут вăрăммăн кăшăртса ячĕ, хыçалти çунаттисем шыва пăтратма пуçларĕç. «Ушел!» тесе алă сулчĕ те Семен Григорьевич ахăлтатсах кулса ячĕ. «Последний»,- хурлантарса пăрахрĕ Енĕшĕ. «Аçтахана» икĕ хулран тытрăмăр та - каялла, вертушка патнелле. Пăрахутран аннă Дедушкин кулкаласа ыйтрĕ: «Пире валли чăпăл тумалăх хăвартăр-и хăть»? «Атăл шывĕ юхсах выртать, Николай Степанович, выртса ĕçме те пулать»,- терĕ Григорьев çĕкленӳллĕн.

Вĕрентекенĕсемпе вĕренекенĕсем те хамăра шанса панă пуçлăх, Николай Филиппович тавра пĕтĕçрĕмĕр. Илпек сăпайлăн, çивĕччĕн калаçать, çынна ăнланса итлет, пирĕнпе те хăйне пĕр танлăн тытать. Сывмартарах пирки, мăшăрĕ ăна сыхласах, пулăшсах тăрать. Кăкшăмри «Литература институчĕ» кĕрлесех кайрĕ çапла. Шупашкартан кашни кун чаплă хăна килет, паллах, ĕçме-çиме кăна мар, çамрăк çыравçăсене тăн пама, хăйсен ĕçĕпе-пурнăçĕпе паллаштарма. Филологи наукисен докторĕ Михаил Федотов питĕ ăнланмалла шĕкĕлчесе хăварчĕ чăваш чĕлхине, тĕрлĕ сăмах пĕлтерĕшне кăкланă тунката тымарĕ пек кăтартса тĕлĕнтерчĕ. Литературăпа искусство çын пурнăçне илемлетсе улăштарнине хăйĕн пурнăçĕнче мĕнле тӳссе ирттернĕ самантсене чăваш халăх писателĕ, тухтăр Петр Николаевич Осипов вăрахчен асăнса ларчĕ. Çапах унăн уçă калаçăвĕ вăхăтĕнче никам та анасламарĕ. Раççей писателĕсен Союзĕн правленийĕ паллă литературоведа, критика Геннадий Митина Шупашкар курма янă. Вăл пирĕн вучаха тӳрех çĕклем вутă пăрахрĕ. Итлетпĕр, тавлашатпăр вăл каланине тăнланă май. Литература тавлашăвĕ виçĕ куна пычĕ.

Юрий Артемьев, Анатолий Емельянов хăйне евĕр çĕнĕ йĕр хăварчĕç тĕлпулу хыççăн. Теорийĕ те, практикийĕ те пĕрлех. Кăткăс та тĕрлĕ енлĕ пурнăçа чăн-чăн сăмах ăстин, сăнарлăх художникĕн куçĕпе пăхма вĕренетпĕр. Çăвар типсен… «Çар» штабĕн начальникĕ ирĕке ярса Шупашкаралла хăвалать. Акă, Вася Петров та мăн сумккапа хулана иккĕ каçса килчĕ. Ман та черет çитрĕ. Редакцисенчи гонорар укçине пухса тухрăм. Чăнкă çыранра речĕпе тăнă та, пурте мана алă сулса кĕтеççĕ.

Çав тавлашу вăхăтěнче эпир (сылтăмран): Герман Желтухин, Геннадий Митин, Виссарион Синичкин, Владимир Кузьмин.

Кулăшě, мыскарийě... Георгий Краснов çěр каçма хатěрленнě пӳлěмре икě ачаллă чиперкке çыврать иккен. Ача юратакан арçыннăн амăшне те юратас килетех ěнтě. Хветěр Агивер «чěрепе аптăранă», тухтăр пӳлěмěнчен тухма пěлмест. Улатимěр Канюков Ухли Улатимěрěн куçаруçи те пулса курнă-мěн. Пурнăç сăмсаран утмăл шаккасан, Ухли çуралнă Пӳркелне аса илнě. Автобус тулли тус-юлташ, юрăç-такмакçă чыхса тултарса Тутарстана, унăн çуралнă çěршывне çул тытнă. Юмах ярса ăш хыпнă пуль çав, сив сăра мехленě хыççăн Владимир Васильевичăн пырě шыçать, сасси çěтет те ларать. Шупашкарсем Пысăк яла кěрлеттерсе çитеççě. Хăнасене клуб умěнче çăкăр-тăварпа кěтсе илеççě, тӳрех сцена çине çěклесе хăпараççě. Халăх лăк тулли. Ухлине сăмах параççě. Васли Улатимěрě сылтăм аллине çěклесе тем хăйăлтатать, ăнланма çук, тет. Владимир Яковлевичě уч çумне тăнă та, хыттăн каласа пырать: «Салмалла салам, пӳркелсем-тăванăмсем! Эп сире манма çуралман. Пăва районне хамăр ялăн Пысăк çуни-урапипе сирěнпе пěрле çут малашлăха - коммунизмалла туртатăп. Ох, йывăр-çке лавě! Хашкаса-пăшăхса вěрилле пултăм, сасăсăр тăрса юлтăм. «Кирукпа» «Альтук» мěнле чуптараççě? Сире халě те «Юрату чул кастарать-ши?» «Тăлăх мар вăл» Ухли тěнчере «Шуркелсем» пулсан...» Ял-йышпа пěр сăмах калаçаймасăр уйрăлать çапла «чěлхесěр» писатель. Унăн никам ăнланман хăйăлти чěлхине куçараканě акă пире вар тыттарса култарать.

Çĕтнĕ чĕлхепе çыхăннă тепĕр кулăш аса килчĕ. Ухлипе çыхăннăскерех. Уч чухне эпĕ «Тăван Атăлта», Агивер тĕп редакторĕн çумĕччĕ. Пырĕ шыçмасăрах, чĕлхи çĕтмесĕрех Федор Георгиевич та, унчченхи Таллеров редактор пекех, ялан ĕç вырăнĕнче ларман пирки, хут çырса калаçма юрататчĕ. Акă, сĕтел çинче - черетлĕ хушу: «Владимир Прокопьевич! Вл. Вас. Ухли валли саламлă сăмах çырса хатĕрлĕр. Хатĕрлĕр те папкине писательсен Союзне хăвăрах çитерсе парăр. Уявĕ октябрĕн 25-мĕшĕнче 15 сехетре пуçланать. Хв. Агивер. 23.10.89 ç.»

Эпĕ вара çакăн пек Чап сăмахĕ çырса хатĕрлерĕм:

«Хисеплĕ Улатимĕр Ухли!

Ух, сатур та вара Эсир, Пӳркел чăвашĕ, турă килтернĕ пекех ăслă-пуçлă пултăр, хăвăр пĕлӳ илнипе те çырлахмарăр, чĕрĕк ĕмĕр ытла çамрăк ăрăва хăвăртан та темиçе хут ăслăрах, сăпайлăрах пулма тăн патăр.

Ух, йĕрĕ те иккен Эсир, хĕрӳ Васлей ывăлĕ, вăтăр çичче çитнĕ тĕле тĕрĕс-тĕкел утма вĕреннĕскер, Чăвашăн тĕп хулине вашкăртса çитме пултартăр. Тин çеç кун курнă пĕрремĕш пепкӳ «Кирук» Сире ун чухне тĕрĕс çулпа литература вучахне хăюллăнах сĕтĕрсе кĕрсе кайнăччĕ. Унта Эсир хăвăрăн тивĕçлĕ вырăнна тупса яланлăхах тĕплĕн вырнаçрăр. Ухли ятне чăваш халăхĕ хушшине сартăр. «Кирука» ӳстерсе авлантартăр, «Альтука» та качча патăр. «Кĕçĕн улăхра» çаран çулса ывăнсан, «Шуркелсемпе» кĕрекене кĕрсе лартăр. Пирĕн Ухли «Тăлăх мар вăл», тесе чăваш çыравçисем сирĕнпе савăнса та хурланса юрларĕç.

Ух, хастар та вара Эсир, çитмĕл пиллĕкре те яшлăха çухатма шутламастăр, пуçа ухсах Шупашкар хĕрĕсенчен чеен ыйтатăр: «Юрату чул кастарать-ши?» е чуна астарать?» Кула-кулах сирĕн «Хĕрсем пурçăн тĕртеççĕ».

Ух, маттур-çке Эсир, Улатимĕр! Сирĕн Пӳркел те Пысăк та, çавăнпах пуль кун-çулупа ĕçӳ-хĕлӳ те Пысăк. «Çĕр ешерет» пулсан, Сирĕн пурнăç татах та çĕнелсе ешертĕр, «Йывăççиçемĕн çырли» тенĕ пекех, пурнăç çырли те яланах тутлă, техĕмлĕ пултăр.

Ух, нихçан та ан хух, Ухли!

Чĕререн ырă сунса, «Тăван Атăл» редколлегийĕн членĕсемпе журнал редакцийĕнче ĕçлекенсем. 1989 çулхи юпа уйăхĕн 25-мĕш кунĕ».

Кайса саламларăм Ухлие писательсен Союзĕн хĕрлĕ кĕтесне пухăннă çыравçăсем умĕнче.

Ухли Тракторостройпа та çыхланса пăхрĕ, темле пысăк калăплă хайлавах майлаштарнăччĕ пулас. Кам çырма пултараканни-пултарайманни те çĕнĕ стройка тусанĕнчен ылгăн пĕрчи юхтарма хăтланать те, Владимир Васильевич та вăйлă романах кăлараймарĕ пулас.

Акă, Чулхуларан Максимов та таврăнчĕ. Канюков пирĕн хайлавсене пăхса тухнă. Пĕрле ушкăнра сӳтсе яврăмăр. Пуху ячĕпе Виталий Енĕше СССР писательсен Союзне йышăнма сĕнес терĕç.

Мана малтанах хаçат кăларма шаннăччĕ. Чылай шухăшласа минресе çӳрерĕм. Майлаштартăм вара. Дедушкин-Асаттене те, Кĕркури Луча та, ытти писательсене те тăрăхларах сăнларăм. Çак йĕркесем те пурччĕ:

Вĕç-вĕç куккук, вĕç куккук
Эпир çырса пурниччен...
Эпир çырса пĕтерсен,
Юман çине ларса кан.
Юман хăрса ларсассăн,
Вĕтлĕх ăшне выртса кан,
Вĕтлĕх çулçă сарсассăн,
Асла çупа ытаклан,
Кĕнекӳне кăларсан,
Кĕрекене ларса кан.

Хаçатне Валентин Бурнаевский килĕнчи архивĕ валли çатăрласа кайнă. Упраса юлаймарăм.

Юлашки кунĕнче писательсен пуçлăхĕ Николай Дедушкин персе çитрĕ.

«Семинара пĕтерес терĕмĕр. Чăваш литератури кун-çулĕнче кунашкалли пĕрремĕш хут пулчĕ. Урăх кун пек семинара килме ан тăрăшăр, килсен те, е ертсе пыракан, е пысăк писатель пулса килĕр»,- терĕ.

Акă мĕнле хак пачĕç ыттисем:

Хветĕр Агивер: «Эпир хамăр семинара «Илпек вăрманĕ» терĕмĕр. Вăйлă кашлатăр вăл. Ачисем пурте пысăк шанчăклă. Писатель хĕлхемне чалкăштарсах пырăр. Пуçланă тăк - малаллах утăр: вĕренĕр, тарласа ĕçлĕр. Чĕлхе çук тăк, писатель мар, статист. Чĕлхене хытăрах якатăр».

Владимир Ухли: «Халь ĕç пĕтрĕ. Тем те турĕç ку маттурсем: çырчĕç, мунча та хутса кĕчĕç, пире, ваттисене те, хурăн милĕкĕпе çурăм çапнă хушăрах тип мунча та кĕртсе илчĕç. Вĕренмелли сахал мар сиртен. Пĕрле çĕмĕрттерер. Таптаса анчах ан кайăр пире».

Георгий Краснов: «Василий Петров, Александр Волков, Елизавета Осипова литература тĕнчине кĕме хатĕрленсе çитнĕ çыравçăсемех. Маншăн хамшăн та семинар литература институтĕнче тепĕр класс пĕтернĕ пекех пулчĕ.»

Владимир Канюков: «Манăн виçĕ çыравçи те проза жанрĕн шăнăрне çирĕппĕн ярса илнĕскерсем. Илемлĕхе, чĕлхе вăйне туяççĕ, сăнар тума вĕреннĕ. Чăваш хайлавĕн тĕшши пур, тутă тĕшшиех пур произведенийĕсенче».

Григорий Луч: «Сире эпĕ «Капкăн» кухнипе паллаштартăм. Калав шаршанĕ-шаршанĕпех. Александр Угольников хăех Чутайран пĕр лав тиесе килнĕ. Анчах пурте ĕçкĕ-çикĕ мыскари çинчен. Ĕçкине кăларса пăрахсан, вĕсенче мĕн юлать-ши?»

Владимир Ухли: «Мухмăр».

Александр Угольников: «Капкăнăн» шăлĕ мăкалнă, теççĕ. Чăнах-ши?»

Григорий Луч: «Ăна хăвăн шăлупа витерсе, виçсе пăхмалла».

Лаврентий Таллеров: «Çамрăксен ĕçĕпе лараттăм та, питĕ савăнтăм. «Коммунизм ялавне» те сахал мар илсе пыраççĕ вĕсем чипер лайăх калавсемех. Литература страници хаçатра кашни кун пама хатĕр. Писатель çырнин воспитани енĕ вăйра».

Николай Филиппович хăйĕн юман туйралăхĕ мĕнле кашланине çав кун илтеймерĕ. Ăшчикĕ аптратнипе ăна арăмĕ хулана илсе кайрĕ, пульницана вырнаçтарнă, терĕç.

«Илпек вăрманĕ» кашлама чарăнмарĕ. Семинаристсем каярахпа, Евгений Казаковсăр пуçне (вăл юрист ĕçĕпе малалла тапаçланчĕ), СССР писательсен Союзне кĕчĕç, хăйсен тивĕçне вулакансем умĕнче вараламарĕç.

Дедушкин полковникăн - Асаттен çарĕ Шупашкар пристанне çитрĕ.

Пире Чăваш телевиденине чĕннĕ. Агиверсемпе Николаев урамне хăпартăмăр. Манăн та калаçма черет çитрĕ. Пуçра тĕвĕленнине салтса ятăм вара. Çакăн пек пулса тухрĕ хултăрч çăмхинчи çаврăм:

«Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕпе ВЛКСМ Чăваш обкомĕ ирттернĕ çак семинар-вĕренӳ маншăн, хаçат çыннишĕн, литературăра тарăннăн ĕçлеме пуçлас вăхăтра, чи паллă, асра юлмалли, хăйне евĕрлĕ шкул вырăнне пулчĕ. Чăвашсен паллă писателĕсемпе критикĕсем, чĕлхе ăстисем хушшинче пурăннă, вĕсен ăслă та çирĕп сăмахĕсене, канашĕсене итлесе ирттернĕ икĕ эрне маншăн та, пĕрле пулнă юлташсемшĕн те, паллах, пурнăçра пысăк йĕр хăварчĕ.

Эпир Николай Максимов, Виталий Енĕш, виççĕн Владимир Яковлевич Канюков юлташ ушкăнĕнче ĕçлерĕмĕр, вĕрентĕмĕр. Хамăра ăс панăшăн, малашне те пулăшса пыма пулнăшăн ăна чĕререн тав тăватпăр.

Семинар пирĕнте аслă, ăслă юлташсем çырнă произведенисене тарăнрах шухăшласа вулама, литература çине чăн-чăн этемле, чăн-чăн коммунистла пăхма тĕллев çуратрĕ, пурнăçпа ĕç çине çĕнтерӳллĕ куç-пуçпа пăхма хушрĕ. Унччен хам çырнă калавсемпе повĕçсем çине халь критикла çивĕччĕн пăхма пуçларăм. Çак семинар ĕнтĕ шăпах мана анлă, тăвăллă, нумай хирехирĕçлĕхлĕ аслă çул çине тухма пулăшĕ тесе шутлатăп.

Çырма эпĕ тахçанах пуçланă, район хаçачĕсенче ĕçленĕ чухне те, республикăри изданисенче вăй хунă вăхăтра та хамăн пуçра капланса килнĕ шухăша литература чĕлхипе çавăрса калама пиреннĕ. Геройсем те, вĕсем тăвакан ĕçсем те, çав ĕçсене тунă вырăнсем те, йăлтах тенĕ пекех, манăн хам куç умĕнче пулса иртнĕ. Нумай-нумай çынпа курса калаçнă, вĕсемпе пĕрле лайăххишĕн, çĕннишĕн, халăха, çĕршыва усă пулассишĕн кĕрешнĕ, кĕрешетпĕр те. Эпĕ вĕсене чи малтанах «Шурăмпуç çăлтăрĕ» повеçре çутатса пама шутларăм, ун хыççăн «Виçĕ юман» повĕçре çав шухăшах малалла тăсрăм. «Шурăмпуç çăлтăрĕ» ял çыннисем, ялти улшăнусем çинчен пулсан, «Виçĕ юман» - вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсене халалласа çырнăскер. Виçĕ ăру çыннисен пурнăçĕ, вĕренĕвĕ, çĕнтерĕвĕ - акă унăн тĕп тĕллевĕ.

Халĕ Шупашкарти промышленность тракторĕсен заводне тăвакан паттăр çынсем çинчен çыратăп. Çăмăл мар ку. Ăна малтан тĕрĕс куçпа курса, ăнлануллă пуçпа шухăшлама пĕлмелле. Апла пулсан, стройкăпа пĕрле, пĕр вăхăтра пурăнмалла. Унпа тĕплĕн паллашмалла, çынсен психологийĕпе, коллектив аталанăвĕпе паллашмалла. Çав стройкăна парти енчен ертсе пынине, строительсен нумай пинлĕ çарне коммунизмла воспитани панине партилле принциплăхпа пăхма вĕренмелле, пĕлмелле. Унсăрăн, паллах, халăха кирлĕ, усăллă произведени çырма питĕ хĕн.

Хăш-пĕр журналистсемпе писательсем ыйтаççĕ: «Паян мĕн çĕнни пур Тракторостройра?» Вĕсене вара шӳтле-шӳтлех калатăп: «Малтанхи сăвайсене çапнă чухнехи пекех паян та Тракторострой питĕ интереслĕ пурнăçпа пурăнать: кăсăклă романсем, повĕçсем, калавсемпе очерксем, пьесăсем çырать».

Писательсемпе культура ĕçченĕсен трактор завочĕ тăвакансемпе трактор туса кăларакансен пурнăçĕпе, ĕçĕпе тĕплĕнрех пал-

лашса пысăк калăплă, лайăх произведенисем ытларах çырмалли çинчен КПСС Чăваш обкомĕн иртнĕ пленумĕнче те çивĕч каланăччĕ. Эпир те ăна, çамрăксем, шута илетпĕр.

Тракторострой çыннисем, трактор завочĕн çыннисем çинчен çырнă истори кĕнеки, писательсемпе поэтсен вăйĕпе, тарĕпе, хĕрӳлĕхĕпе, чăваш литературинче кăна мар, пĕтĕм совет литературинче те паллă йĕр хăвартăрччĕ. Тăрăшса, пĕлсе, ăсталăха аталантарса ĕçлени кирлĕ. Вара, ман шутпа, литературăра та çирĕп утăм тума пулать. Çавăншăн тăрăшатпăр та».

Хаçат хăй çумне илем, сăнар ăстисене магнит пек туртать. Мĕн чухлĕ талант строительсем хушшинче! Демин хăйĕн çумĕ Даниловсий поэт пулнине «Тракторострой» пулăшмасăр ĕмĕрте те пĕлес çукчĕ. Анатолий Иванович, хăйне пултарулăхĕпе халăха кăтартнă ертӳçĕ-йĕркелӳçĕ, вырăс çынни, Шупашкарта чи çӳллĕ пукансенчен пĕрин çинче ларма та пултарнă, çавăнтан ăна сирпĕтсе мар, ĕçе çĕнĕлле йĕркелеме тесе, Трактористроя янă. Ĕç вĕçленнĕ вăхăтра кĕчĕ те вăл пĕррехинче, манпа чуна уçса каласа ларчĕ, стройка пирки мар, поэзи çинчен. Хам та тĕлĕнсех кайрăм вăл хăйĕн сăввисене черетлесе каланипе (вуланипе мар). Çитес номĕрте вара шăпах ăна, хамăр стройкăн тепĕр сăвăçне, юрлаттартăмăр. Пĕлекеннисем, çывăххисем, поэта алă параççĕ, саламлаççĕ... Хулакомран, райкомран вара... шăнкăрав хыççăн шăнкăрав янăрарĕ: пуçлăхсен сăввисене пичетлесе хаçат лаптăкне пĕтериччен социализмла ăмăрту пирки ытларах çырасчĕ. Эх, вăл ăмăрту ĕнтĕ... апат çинĕ чухне те яшка кашăкĕнче салма пек явăнать. Эпир темле тапсан та, мечĕк пурпĕрех хăй вырăнне кĕреймест, каялла тапса çамкаран пырса тивет.

Кăвакартнă пит-куçа халăх умĕнче пытармасăр малаллах талпăнатпăр. Стройтрест парткомĕн членне суйласан, районсенче ĕçленĕ вăхăтри пекех, ĕнсе çине хальхаççăн тумалли ĕç кутамккийĕсене умлă-хыçлă çакса тухрĕç, партком çумне сăнчăрпах кăкарчĕç. Сан чи таса, тӳрĕ çын, çӳлтен хушнине пăркаланмасăр итлекен тарçă - парти салтакĕ пулмалла, чи йывăр та кăткăс ĕçре хăвна кăтартмалла, политика, идеологи енчен çивчĕ, тавçăруллă, талпăнуллă пулмалла. Пуçа усма та, каялла чакма та юрамасть. Хамăн пурнăç туртийĕ хушшинчен тухса ӳкме шутламан та, маншăн çак тĕллевсем яланхи çул çутисем пулнă, çавăнпа эпĕ нимле йывăрлăх умĕнче те чĕтресе ӳкмен. Умрине пурнăçласа, йывăрлăхсене чăтса, - чунăмпа яланах çĕнтернĕ. Тракторостройра та - çĕнтерӳçĕсен ретĕнчех.

Хаҫат вулакансем - икӗ тӗрлӗ ҫынсем. Пӗрисем ӑна чунтан кӗтекеннисем, ҫӗнӗ хыпаршӑн, интереслӗ, тӗлӗнмелле ӗҫ-пуҫ, пулӑм ҫинчен ҫырнипе паллашса хавхаланаҫҫӗ, шухӑш-туйӑмӗнче ҫӗнӗлӗх, талпӑнулӑх хевтийӗпе мал ӗмӗт ҫуратаҫҫӗ, теприсем, каҫуннӑй алпа тытаканнисем, кӑлтӑк, йӑнӑш шыраҫҫӗ, пӑтӑрмах тупса редакторне мӗнле те пулин ыраттармалларах ҫатлаттарма тӑрӑшаҫҫӗ хура пушӑпа. Сахалӑн мар вӗсем. Парти пусми ҫӳллӗ, картлашки нумай унта. Обком, хулаком, райком, партком... Кашни пӗрер ҫапсан та...

Вӗрентекенӗсем - тата йышлӑрах. Пурте вӗсем: «...вӑт ҫавна ма ҫапларах ҫырмалла пулман-ха», «ак ку статйине капларах тумалла пулнӑ», «куна тата мӗншӗн ытлашши чаплантарса янӑ», «парти обкомӗн секретарӗ актив пухӑвӗнче критикленӗ коммуниста хаҫатра вырӑн памасан та юранӑ», «Сидоров арӑмӗнчен уйрӑлнӑ, эсир унран ҫӗршыв геройӗ туса хунӑ», «управлени начальникӗ партире те тӑмасть, сирӗн очеркра вӑл пуринчен те ӑслӑ...» Тӑршшипех ҫавнашкал асӑрхаттару, кӑтарту, хӑрату тӑсӑлать. Кашни номӗр тухнӑ хыҫҫӑн ҫӳлтен мӗнле хура ҫӗлен шуса анассине пӗлсе-туйсах тӑраттӑм, нервӑсене хытарса, наркӑмӑша хирӗҫле эмел хатӗрлеттӗм чун-чӗремре.

Томашов вӑл куҫ умӗнче ҫатӑртатса хӗремесленсе илет те, темиҫе минутран ним пулман пекех мирлӗн калаҫса каять, малашне мӗн-мӗн тумаллине пӗрле канашласа палӑртать, ырӑ сӗнӳсем парать. Унӑн заместителӗ Львов пирӗнпе куллен ҫывӑх ҫыхӑнура.

Калинин райкомӗнче нумай тиражлӑ хаҫатсен шӑпине пропагандӑпа агитаци пайӗн заведующийӗ Шурчанов татса парать. Валентин Сергеевич маларах хӑй те университетри «Ульяновеца» кӑларса тӑнӑскер, пире ӑнланать, йӑнӑш-мӗн кайсан та, юлташла ҫемҫен кӑна аса илтерет. Идеологи секретарӗ Сергеев чакаланма юратать. Зиновий Михайлович мана ҫывӑх пӗлекенскер, Йӗпреҫре пӗрле ӗҫленине манмасӑрах, ҫӑлма та, пулӑшма та ухутӑ, питӗ асӑрханУллӑ ӗҫлет.

Хулаком нумай тиражлӑ хаҫат редакторӗсен ялан ӗҫлекен семинарне йӗркеленӗ те, ӑна ертсе пыраканӗ, пропагандӑпа агитаци пайӗн заведующийӗн ҫумӗ Алексеев обком секретарӗнчен те мӑнаҫлӑрах хевтепе сассине хӑпартса канашлать васка пирӗнпе. Пире пусармалли, хамӑр шайран тата аяларах антарса пӗчӗклетмелли, кӗҫӗне хумалли чӑкӑлташлӑх пурах ҫав Герольд Михайловичӑн.

Обкомăн пичет секторĕнче «тарласа коммунизм тăвакан» хуралçăсем яланах аслăраххисен аллипе кăвар туртасшăн, «пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕ Шутин мĕн шутлĕ капла, идеологи секретарĕ Петров куçĕ тĕлне пулсан», - тесе пуçĕсене сĕлтсе тутисене часрах ал тупанĕпе хупласа хураççĕ, хаçат подшивкисем тума васкаççĕ. Те вĕсен ĕçне кашни кун хаçат йĕркеллĕ çĕленипе хаклаççĕ?..

Вĕсене тĕппипе итлесе, вĕсен кӳрентерĕвне ăша хурса ĕсĕклесе е чĕтресе ларнă пулсан, эпир нихçан та çавнашкал хĕрӳ, илемлĕ, тулăх пӳлмеллĕ хаçат тăваяс çукчĕ.

Хăйне этем нĕрĕнчен янă Геннадий Яковлев вырăнне чăнчăн этем чунлĕ хастар чăваша парнелерĕ мана Туррийĕ пĕр яра кун. Тракторострой йĕрĕ çине ӳкнĕ Петр Алексеев «Тракторостроя» хашкаса çитрĕ. «Ĕçе илетĕр-и?»- тет. Канаш леш енчи Маяк ачи ухутник пулнине пĕлнĕскер, эпĕ шӳтлесе пер яр:

Завод тăвакансем хушшинче идеологи ĕçне йĕркелесе ертсе пырассишĕн хытă тăрăшать Иван Васильевич Львов. Пӳлĕмре ларма ун нихçан та вăхăт çук. Акă вăл хальхинче те преспа сварка тата трактор пухмалли корпусран (ПССК) тӳрех ман пата кĕчĕ, Альберт Захаров бригади никĕс янă çĕрте тунă рекорд çинчен хаçатăн çĕнĕ номĕрне «Çиçĕм» информацийĕ парар тесе редакторпа канашлать.

«Çурăм хыçне мулкач çакса килсен, тӳрех Тракторострой хуранне чăмтаратпăр». Ачи чăнласах ĕненнĕ иккен, тепĕр кунне хутаçа мулкач хурса килчĕ: «Акă, манăн ухутник кучченеçĕ». Кăмăла кăмăл, тенĕ пек, ыр кăмăлтанах йышăнтăмăр ухутникĕпе трофейне те. «Юрать, тавтапуç, пăшална халлĕхе ручкăпа улăштарăн, мулкач пулькки вырăнне ăна упа-кашкăр пуллипе авăрлама тивет. Хаяр кĕрешĕве кĕретĕн»,- тесе хавхалантартăм.

Ухутник пекех чăтуллă, тĕллевне пурнăçламах пултаракан журналист пулнине Алексеев ырă ĕçĕпе кăтартса пачĕ. Йĕкĕте авлантартăмăр, туйне редакци эртелĕпех кайрăмăр. Каярахпа вăл «Советская Чувашия» хаçата куçрĕ, хăтлă хваттерлĕ пулчĕ, туслă-юратуллă çемьере ачисене ӳстерчĕ. «Тракторострой» уншăн, паллах, журналистика университечĕ вырăннех пулчĕ. Хăй те нумай усă кӳчĕ хаçата, стройкăна.

Вăл вăхăталла Шупашкарти чукун çул леш енче, Канаш çулĕ хĕрринче, Пичет çурчĕ туса лартрĕç. Володарски урамĕнчен унта куçрăмăр. Хаçат пичетлесси те çăмăлланчĕ.

Хамăн ĕçе тĕплĕн туса пĕтернĕ хыççăн тин аяккалла пăрăнаттăм, вара хаçат-журнал редакцийĕсене, Чăвашрадиона хамăн хайлавсене валеçсе тухатăп. Çавăн чухне пĕринче Телерадиокомитет председателĕ Павел Крысин мана Радио çуртĕнчи хăйĕн пӳлĕмне чĕнсе кĕртрĕ, телевиденипе ĕçлекен хăйĕн çумне Венера Большована хăвăрт килме хушрĕ. Калаçăва çапла тĕвĕлерĕмĕр: Кузьминăн кунта куçмалла. Ак çак çырăва хатĕрлерĕç вара вĕсем 1978 çулхи авăн уйăхĕн 22-мĕшĕнче:

«Управляющему стройтреста № 5
тов. Демину В. П.
Секретарю парткома тов. Томашову Р.И.

Государственный комитет Чувашской АССР по телевидению и радиовещанию просит оформить переводом увольнение тов. Кузьмина В.П., утверждаемого главным редактором телевидения.

Вопрос о переводе тов. Кузьмина В.П. согласован с секретарем Чебоксарского горкома КПСС тов. Васильковым Б.П. и зав. сектором печати, телевидения и радио обкома КПСС тов. Михайловым А.И.

Председатель Госкомитета П.А.Крысин.»

Пуçа кăштах çавăрттармалла пулчĕ. Мана шанса, ман пултарулăха ĕненсе кĕтекен хуравлă çынсем хăйсен малашлăхне Кузьмин текен журналистпа палăртаççĕ пуль те ĕнтĕ, çапах эпĕ

Иван Яковлев урамĕнчи çĕнĕ, 13-мĕш çуртăн ку енчи 8 хутĕнче те КПСС Чăваш обкомĕн издательстви, унăн хаçат-журнал редакцийĕсем, ЧАССР журналистсен союзĕн правленийĕ, Пичет вăрттăнлăхне сыхлакан комитет, пĕрремĕш хутра чаплă столовăй, çÿлте - конференц-зал, хыçалта - çĕнĕ оборудовани вырнаçтарнă типографи. Эпир те хаçат унта кăларатпăр. Нина Владимирова верстальщицăпа «Тракторостройăн» черетлĕ номерне калăпланă вăхăтра.

халлĕхе пиллĕкмĕш стройтрест штатĕнчех-ха. Стройтрест управляющийĕ Владимир Демин пĕрлешӳллĕ профком председателĕпе Лев Захаровпа СССР строительство министерствин Чăваш территори управленийĕн начальникĕ Ящук тата Строительсемпе стройматериал рабочийĕсен профсоюзĕн обком председателĕ Охотников патне çырни пур. Унта çапла каланă:

«Тракторострой» хаçат редакторĕ пулмалли талантлă журналист-йĕркелӳçĕ чылай вăхăт хушши тупайман пирки, эпир парткомпа пĕрле КПСС Чăваш обкомĕнчен тата Калинин райкомĕнчен пире тивĕçлĕ çын тупса пама ыйтрăмăр. Обком пире пысăк квалификациллĕ пиçсе çитнĕ журналист тупни çинчен пĕлтерчĕ, Чăвашрадио корреспондентне Владимир Прокопьевич Кузьмина сĕнчĕ.

КПСС обкомĕн килĕшĕвĕ хыççăн, Калинин райкомĕ ыйтнипе Чăваш АССР Министрсен Совечĕн телевиденипе радиовещани комитечĕ В.П. Кузьмина 1976 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен «Тракторострой» хаçат редакторне куçарма ирĕк пачĕ.

В.П.Кузьмин, хăйĕн хваттер ыйтăвне стройтрестра кĕске вăхăтрах татса пама шантарнă хыççăн, çĕнĕ ĕçе куçма килĕшрĕ.

Ĕçе кирлĕшĕн чĕнсе илнĕ В.П.Кузьминăн хваттер ыйтăвне черетсĕр татса пама ыйтатпăр».

Пĕрре шантарнăскер, çапах та чыса варалас килмест. Крысинсен чĕнĕвĕ пирки ĕçре сăмах хускатмарăм, шапăлтатса çӳремерĕм, паллакан пĕр çынпа çеç канашласа пăхас терĕм. Обкомăн пичет секторне ертсе пыракан Михайлов ун çинчен пурпĕрех пĕлет-ха терĕм, мĕн сĕнет. «Володя, итле,- терĕ Андрей Иванович,- телевиденине халех куçсан, эсĕ хăвăн пурнăçунта пысăк йăнăш тăватăн. Тинтеререх кăна-ха эпĕ унта пĕр пухура пултăм. Телевизионщиксем кашни тăваткал метр хваттершĕн куçа хупса пĕр-пĕрне туртса çурма хатĕр. Хваттерне анлăлатма ухутах шанчăклă пуçлăхусемпех ĕçле халлĕхе».

Ачасем ӳссе çитĕннĕ май, пирĕншĕн икĕ пӳлĕм тăвăрланса пыма пуçланăччĕ ĕнтĕ. Районтан куçса килнĕ чухне улталама пĕлмен те... Честнăй (таса чунлă) текен коммунистсемех, хăйсене парти обкомĕ пысăкрах, яваплărах ĕçе куçарнă вăхăтра, çемйисене ӳстерсе яратчĕç, иккĕн-виççĕн пулсан та, ордерĕ çинче вĕсен пилĕк-ултă çынччĕ. Вилнĕ ашшĕ-амăшне те унта кĕртни пулнă, таçта çăва патĕнче пурăнакан хунямăшĕсемпе хуняшшĕсене те çыра-çыра хуратчĕç. Манăн суеçĕ пулас шухăш çуралман. Атте-анне хăйĕн юн вăйĕпе çапла усал тутарман. Аннепе аттене те ялтан Йĕпреçе прописккăна тăратма пултарнă. Анчах усал шу-

хăша хваттере кĕртмен. Çавăнпа Шупашкарта ку таранччен нуша курнă. Юрĕ, чăтăпăр-ха, ята ярас мар, терĕмĕр Римма Ильиничнапа. Хăçан та пулин пирĕн умра та хĕвел ташлĕ. Чăвашгиза та чĕнсе пăхрĕç. Килĕшмерĕм. Мана халлĕхе «Тракторострой» ăшăтса тăрать-ха, пиншер çынпа çывăхлатса вăй паратъ.

Акă, манăн хваттер ыйтăвне татса пачĕç. 1979 çулхи кăрлачăн юлашки кунĕнче профсоюз обкомĕн президиум ларăвĕ пулнă. Григорий Иванович Охотников треста лару йышăнăвĕн протоколĕнчен илнĕ хута ярса панă:

«Нумай тиражлă «Тракторострой» хаçат редакцине пысăк квалификациллĕ кадрсемпе çирĕплетес тĕллевпе, пиллĕкмĕш стройтреста хаçат редакторĕн В.П.Кузьминăн хваттер ыйтăвне васкавлăн татса пама ирĕк парас».

Пиллĕкмĕш трестăн Уйăп Мишши урамĕнче, каярахпа ăна, вырăсла каланă чухне усал сăмахла илтĕнет тесе, Шумилов ячĕпе улăштарчĕç, тин çеç туса пĕтернĕ вăтăр çиччĕмĕш çуртра 1979 çулхи çулла виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер пачĕç. Хузангай урамĕнчи икĕ пӳлĕмлĕ хваттере стройтрест илчĕ. Трестран мана пĕр пӳлĕм лекрĕ. Уншăн çĕкленнĕ сарафан калаçăвĕ мăн çурта та шăнăçас çук.

Трактор завочĕ те ĕçлеме пуçларĕ. Строительсемпе рабочисем ур-ра! кăшкăраççĕ. Партин Тĕп Комитечĕ шупашкарсенчен тата хытăрах ыйтать: заводăн иккĕмĕш черетне палăртнинчен хăвăртрах хута ямалла! Çулталăкра 1200 трактор кăлармалли хăвата чун кĕртмелле!

Утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче çĕнĕ вырăна куçрăмăр. Хваттерте халлĕхе газ, вĕри шыв çук, лифт ĕçлемест. Вунулттăмĕшĕнче ĕçе пĕрремĕш хут Шумилов урамĕнчи 37-мĕш çуртри 132 -мĕш хваттертен кайрăм. Унтан автобус патне тухма инçерех. Çапах та пĕр пысăк ыйту татăлчĕ - хваттер ыйтăвĕ.

Мана хамăн Йĕпреçри тусăм, пĕрле ĕçлесе пурăннă Николай Максимов хăй патне «Капкăна» чĕнет. Виталий Енĕш Литинститута вĕренме кайнă. Ăна хăй щанакан çын кирлĕ. Çурла уйăхĕн 28-мĕшĕнче райком бюровĕ манне выговора - «Яковлев выговорне» - тасатрĕ - снимать турĕ. Урăх ĕçе куçма çул уçăлчĕ.

Ахаль те пилĕк-ултă çул пĕр çĕрте тăрмашсассăн, манăн урăх çĕрелле чун туртма тытăнать. Эпĕ хамăн тивĕçе Тракторостройра пурнăçларăм пуль тесе хушăран Деминпа та, Томашовпа та калаçкаласа илетĕп. Вĕсем кулкаласа пӳрнепе юнаççĕ: ăнланатпăр, тарасшăн, тăллатпăр. Вĕсем манпа килĕшме те пултараççĕ, çапах манран халлĕхе уйрăласшăн мар.

Акă, çурла уйăхĕн вĕçĕнче ĕçе пытăм та, мана Радий Иванович ярса илчĕ: «Эс унта мĕн ĕç шыраса лĕпĕртетсе çӳрен?» Максимов шăнкăравланă иккен. Тепĕр кунне, типографине кайсан, «Капкăна» кĕтĕм. Николай Николаевич обкома шăнкăравларĕ. Пичет секторĕн пуçлăхĕ Андрей Михайлов ăна çапла пĕлтерчĕ: «Кузьмина «Тракторостройран» куçарас пирки пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕпе Михаил Васильевич Шутинпа авăн уйăхĕн 6-мĕшĕнче калаçу пулать».

1978 çул. Кун кĕнекинчен.

Авăн, 7.

Паян - хаçат кунĕ. Каллех Максимов патĕнче пултăм. Коля калать: «Лайăх ĕçлени те тепĕр чух хур тăвать». Томашов хăй патĕнчен ярасшăн мар. Андрей Иванчпа вăл Шутин патĕнче пулнă. Николай Николаевич ман пирки обкомран шăнкăравласса кĕтет.

Хăть те мĕнле пулсан та, куçмаллах пулать пуль тетĕп. Пысăкрах ĕçре ĕçлесе пысăкрах усă кӳмелле. Тракторостройра маншăн ытла та çăмăл, пĕчĕк ĕç. Ун пек ĕçлеме хăнăхман.

Авăн, 11.

Максимов манаваскатать.

Ĕçре лайăхах, хăш-пĕр çынсем манран ыйтаççĕ: «Эсир чăнах кунтан каясшăн-и?» Эпĕ халь пытармастăп, тĕрĕссинех калатăп. Радий Иванч кутăнлашса ларать.

Паян - партком ларăвĕ. Каллех çав строительсен тавлашăвне, хирĕçĕвне, хăватсăрлăх сăмахне итлесе лармалла. Итлесе лартăм - 4 сехет. Хам та калаçрăм. Çумăр витĕр исленсе таврăнтăм, мур йытти пек.

Авăн, 24.

«Капкăна» куçас пирки калаçу вĕçленмен. Эрнекун Максимов та каларĕ: «Петров çине шансан çеç».

Кăнтăрла иртсен иккĕре Александр Петрович мана тӳрех йышăнчĕ. Калаçрăмăр. Ăнлантартăм. «Хамăрăн пай мĕн шухăшлать-ха»,- терĕ. Шутларăм, ку ман ĕç çинчен малтанах пĕлет-ха, çавăнпах пуль, ăсатса янă чухне: «Трактор завочĕ питĕ паллă обьект, унта пирĕн вăйлă çын кирлĕ, тен, тепĕртак ĕçлемеллех пулать»,- терĕ.

Пичет секторне кĕрсенех, Андрей Иванча Шутин шăнкăравларĕ. Петров иккĕшне те хăй патне чĕнет. Ăнлантăм, ман пирки. Кĕтсе ларатăп. Малтан мĕнле шухăш пулнă вĕсен - çавăн пекех юлчĕ. Михайлов çавнах пĕлтерчĕ обком секретарĕ патĕнчен тав-

рӑнсан: «Ан кулян, Володя, трест хуҫисем те калаҫҫӗ эсӗ унта чи лайӑх шутра тесе, эпир те кунта сана мухтатпӑр ҫеҫ. Чӑт».

Пичет ҫуртне ҫитсе Максимова кулянтарса хӑвартӑм. Томашов текен кутӑн чӑваш обком секретарӗнчен те «аслӑрах-пысӑкрах» пулса тухать капла. Пурне те ӗнентерме май ҫитернӗ. Обкомрисем те «Тракторостроя» «Капкӑнран» маларах хураҫҫӗ-и?

Пуласлӑх пирки шухӑшласах ӗҫри хӗрӳлӗхе пӗртте чакарма юрамасть манӑн. Ҫӗнӗ хӗрӳлӗхпех ӗҫлемелле. Хӗрӳлӗхе пусарма Тракторостройра ӗҫ мӑй таранах. Хамӑн хайлавсем те чун-чӗрене кӑтӑкласах тӑраҫҫӗ. Ҫырмалла. Пӗрмаях. Ывӑнма пӗлмесӗрех.

Авӑн, 28.

Типографире хаҫат туса пӗтернӗ хыҫҫӑн пӗрремӗш трест клубне каймалла пулчӗ. Унта хулари строительсен пухӑвӗ, актив, пулчӗ. КПСС обкомӗн иккӗмӗш секретарӗ Петр Андреевич Чичикин трактор заводне тӑвасси мӗнле пыни ҫинчен доклад турӗ. Чылай хӗртрӗҫ строительсене. Вӗсемшӗн пулсан вӑл ним те мар. Нимӗнле вӗри мунча та тарлаттараймасть вӗсене, тирӗ хытнӑ вӗсен.

Килте ҫӗрле вунтӑваттӑмӗш управлени бригадирӗ Евгений Ильич Сергеев, Элӗк районӗнчи Мартынкасси ачи, ҫывратмарӗ. Ҫӗн пӳрт ӗҫкине строительсене чӗнчӗ. Вӑл ман айра пурӑнать. Ун ҫинчен ҫырасшӑн-ха, пулас романра пӗр герой вырӑнне йышӑнать.

Юпа, 3.

Тӑххӑрмӗш маршрут автобусӗпе - стройкӑна. Автобус КПП (производство предприятийӗсен комбиначӗ) тата стройуправленисен кантурӗсем патне ҫитет. Унтан УПТК (производствӑпа техника комплектацийӗн управленийӗ) склачӗсем витӗр, чукун ҫул урлӑ каҫса, трест управленийӗн кантурӗ патне ҫитиччен вунпилӗк минут иртет. Ҫулӗ сукмаклӑ-мӗнлӗ, начар. Ҫапах та хула витӗр тавра ҫаврӑнса ҫӳрени мар. Тӑваттӑмӗш ҫул утатӑп ӗнтӗ ҫав ҫулпа. Ывӑнмасӑр. Хавхалансах.

Кӑнтӑрла иртни виҫҫӗре политзаняти пуҫланчӗ. «Марксизм-ленинизм тата хальхи вӑхӑт» темӑпа пӗрремӗш занятие Чичикин ирттерчӗ. Юлашкинчен вӑл стройкӑри нуша пирки нумай калаҫрӗ. Тӗлӗнмелле, те йӑлӑхса ҫитнӗ ӑна кунти ҫынсем, те хӑй халӑха тыткӑнлаймасть, те пысӑк авторитетлӑ мар, - нимле интерессӗр итлеҫҫӗ. Тӗрӗссипе, итлемеҫҫӗ те. Обкомра иккӗмӗш пуҫлӑх вӗт вӑл, республикипе курӑмлӑ ертӳҫӗ, авторитет тени пулмаллах пек. Кунтисем вара ӑна пӗр-пӗр ахаль пропагандист вырӑнне те хумаҫҫӗ. Парти витӗмлӗхӗ хавшаса, пӗтсе пырать пулмалла.

Юпа, 11.

Стройтрест хавшарĕ. Арканать. Ни план тултараймасть. Хушма подрядчиксем те юлхав юрттине куçнă. Завод тăвасси вăраха кайрĕ. Трест кантурне хутмаççĕ. Кунĕпе ларса шăнса хытатăн. Партком ларăвĕ пулчĕ тата. Çичĕ сехет çурччен шăл шаккаса ларма тиврĕ. Пустуй пакăлтатаççĕ. Кашни кварталта ударлă задачăсем йышăнатпăр, парткомра çирĕплететпĕр, вĕсем кашнинчех пурнăçланса пĕтмеççĕ. Пустуй ĕç. Кама кирлĕ? Якубанец та Мускавран хăй камантипе сайра килекен пулчĕ. Хамăр хаçатра эпир кун пирки çыраймастпăр, республика пичетĕнче кăна критиклетпĕр. Вырăсла та, чăвашла та сахал мар материал кăлартăм Тракторостройри йĕркесĕрлĕх пирки. Пуçлăхсене ку кăмăла каймасть, хир сыснилле шăрчĕсене тăратаççĕ. Обкомрисем ырлани те çителĕклĕ маншăн.

Чӳк, 1.

Хĕл ларчĕ пулас. Юр самаях шуратрĕ. Кунĕпех ĕçре. 4 сехетре партком ларăвĕ пуçланчĕ. Кун йĕркине эпĕ те хамăн пĕр ыйтăва кĕрттертĕм: рабкорсен посчĕсем, обществăлла редколлеги тата штатра тăман пайсем пирки. Хаçат ĕçне татах та вăйлатасшăн.

«Тракторострой» роман планне çĕнетрĕм, геройсене хушрăм. Çырма тытăнмалла. Атту пуç ытла тулса çитрĕ. «Тымар» роман вĕçне тухрĕ, тек мана сăнчăрламасть. «Виçĕ юман» повĕçе килте машинкăпа пичетлесе пĕтертĕм. Ытти вак-тĕвек вăл кун-каç канăвĕ вырăнĕнче кăна.

Чӳк, 5.

Ĕçре праçник хыççăнхи номĕрпе лартăм.

Тăххăрмĕш пилĕкçуллăх проспектĕнчи троллейбус линине тĕрĕслесе пăхрĕç. Урам тăршшипех çутă ялкăшса çунать. Икĕ троллейбус завод çумĕнчи машина тăвакансен техникумĕ патĕнчен чукун çул вокзалне çитиччен пробнăй рейс турĕç. Саккăрмĕш маршрут пулать. Канаш шоссипе проспект пĕрлешнĕ çĕрте халĕ çаврăнса тухмалли тунă. Завод тăвакансемпе заводра ĕçлекенсен çул нушийĕ чакать.

Чӳк, 7.

Паян - уяв. Мускавра йĕпе юр çăвать. Парад. Халăх савăнать. Пирĕн - уяр. Демонстраци. Эпир те стройтрест ушкăнĕпе унта хутшăнтăмăр. Савăнăçĕ çеç çук. Халăх хурланать, урать. Магазинсенче аш, кăлпасси тавраш̆ĕ, эрех, пирус-сигарет, конфет тупаймастăн. Маргарин, ĕне ăш çăвĕ, хытнă чăх-чĕп - талонпа çеç. Тип çу та, ĕне çăвĕ те, сĕт те, пулă та, пельмен те туянаймастăн. Килькана та черет тăрса хăпăл-хапăл илсе

1979 çулхи утă уйăхĕнче партком ларăвĕ пулчĕ. Унта партком членĕ, стройтрест управляющийĕ В.П.Демин сĕннипе партактива ырăпа чыслас терĕмĕр. Пуçламăш парторганизаци секретарĕсем, партком членĕсем, пропагандистсем çапла ятарлă автобуспа Мускава çул тытрăмăр, Внуково аэропорт çывăхĕнчи вăрманти кану çуртĕнче эрне пурăнтăмăр. Ирпе хамăр автобуспа каятпăр та, Пысăк театр патĕнчен каçпа апата таврăнатпăр. Питĕ вăйлă экскурси пулчĕ. Эпир - Мускавра (сулахайран виççĕмĕшĕ - В.П.Кузьмин).

пĕтерчĕç. Тăхăнмалли тумтир (аялти-çӳлти те), вырăн тавращĕ, чӳрече кармалли, сĕтел-пукан таçта кайса кĕчĕ. Пурте такампа ятлаçаççĕ, такамра шыраççĕ айăпне. Кун пек чухăн уяв кунĕсем эпĕ хам та ку таранччен нихçан та, ниçта та курман. Пурнăç çулсерен начарланса пырать. Халăхшăн тăрăшакан çук-ши вара пирĕн? Е хăйсен хырăмĕшĕн, хăйсен ырлăхĕшĕн çеç ĕçлеççĕ-ши, хăйсемшĕн çеç чуралла ĕçлеттереççĕ-ши мăнтарăн халăхне? Епле чаплă пурнăç шавĕ кĕрлет Мускаври Хĕрлĕ площадьре! Епле хĕрӳллĕ, чаплă сăмах палкать Генсек çăварĕнчен! Епле хавалпа саламлать ăна выç хырăмлă, хытнă тумтирлĕ совет халăхĕ? Эпир те, ухмахсем, пĕтĕм пуш вăхăта магазинсем тăрăх чупса ирттернине мансах, парти сăмахне кашни çын ăшне варăнтарассишĕн пултарулăха хĕрхенместпĕр, выçăллă-тутăллă, пурпĕрех çав çулпа пăркаланмасăр утма тăрăшатпăр. Тĕп Комитет йышăнăвĕсем пурнăç çыранне çитсе çапăнççĕ те, кăпăкланса сывлăша вĕçеççĕ. Халăх унпа сывласа чыхăнать, хавшать, аран-аран хашкать, çапах та юлашки вăйĕпе кăшкăранçи пулса хăйăлтатать: «Слава КПСС!» «КПССа - мухтав!» Хăçанччен-ши?

Чӳк, 11.

Трестра профсоюз конференцийĕ пулчĕ. Питĕ мыскараллă. Пĕрлештернĕ профсоюз комитечĕн председательне Лев Герасимович Захарова Строительсен профсоюз обкомĕн секретарьне суйлама хатĕрленнĕ май, унăн заместительне Юрий Алексеевич Петрова ОКП председателĕ тумаллаччĕ. Ку ыйтăва пур шайра та сӳтсе явса килĕшнĕ. Партком секретарĕ Томашов вĕсен ĕмĕтне «обком пурттипе» касса татнă. Конференци иккĕшне те хăй вырăнĕнчех хăварчĕ. Радий Иванович çапла вĕсен малашлăхне тĕп турĕ. Ачасен пысăкрах ĕçре ĕçлес кăмăлĕ çунчĕ, трестри кăмăлĕ те сӳнчĕ.

Хăйĕн çумĕ Иван Васильевич Львов хуравлăрах ĕçе куçнă хыççăн редакци çумĕнчи пӳлĕме Элĕк районĕнчи Вырăс Тимеш вырăсĕ Валентин Крылов йышăнчĕ. Пултарулласкер, аван ĕçлетпĕр. Ăна 1-мĕш трест парткомĕн секретарьне илсе каясшăнччĕ. Томашов ăна та ум пӳлчĕ. Çыннăн хаваслăхĕ хăйсĕрех Тракторострой читлĕхĕнчен тухса тарнине сисетĕп.

Манпа та çаплах пулса пырать.

Чӳк, 20.

ОКП председателĕпе Захаровпа ĕнер çĕнĕ троллейбус линийĕ уçнă çĕре кайрăмăр, 9-мĕш пилĕкçуллăх анлă урамĕ тăрăх завод патне çитиччен ярăнтăмăр.

Паян доклад хатĕрлерĕм. Рабкорсемпе мĕнле ĕçлени çинчен ыран редакторсен хулари ялан ĕçлекен семинарĕнче мухтанса илмелле.

Чӳк, 21.

Ĕçе тӳрĕрен, çырма урлă, чукун çул тăрăх çӳретĕп. Юр кăштах юлнă, ăшă кунсем тăнăччĕ те. Сукмак аптрамасть. Петя Алексеева «Рабкор посчĕ пĕлтерет» рубрикăпа материал хатĕрлеме ятăм. Ачи хытă ĕçлет. Галина Зиминан ачи час-часах чирленĕ пирки пире иксĕмĕре йывăрлăхĕ ытларах пусать.

Виçĕ сехет тĕлне хулакома, семинара çитрĕм. Хамăрăн ĕç çинчен пĕлтертĕм. Ытти нумайтиражкăсем ку енĕпе начартарах, начар тесен те юрать. Хăш-пĕр редакторсем кĕвĕçнĕ пек те туйăнать. Ĕçлеме пĕлсен, ӳркенмесен, тăрăшсан, тем те пулать. Йĕпреçре чухне те аптраманччĕ-ха, Донецка, Пĕтĕм Союзри семинара та лекнĕччĕ. Кунта та малта.

Чӳк, 22.

Журналистсен VIII съездне кайрăм. Çĕнĕ Пичет çуртĕнче, ларусен залĕнче пулчĕ.

Иртнĕ съездра та президиумраччĕ, халĕ те унта суйласа лартрĕç. Журналистсен Союзĕн председателĕ Павел Крысин докладра икĕ хутчен «Тракторострой» хаçата ырăпа асăнчĕ. Хамăн ĕçе лайăх хаклани савăнтарчĕ.

Правлени составне суйларĕç. Тăваттăмĕш е пиллĕкмĕш хут лекрĕм унта Чăваш АССР журналисчĕсен Союзне туса хунăранпа... Пленум вĕçленнĕ хыççăн банкет пулчĕ. Унта ĕçсеçирĕмĕр.

Коля Максимовпа киле çурран таврăнтăмăр. Вăл ман валли вырăн тытса тăрать-ха. Литература аталанăвĕ пирки нумай каласрăмăр. «Пирĕн чăваш писателĕсем паянхи пурнăçа тĕплĕн пĕлмеççĕ, «кивĕ кутамккари» япалисемпе кăна халăх умне тухаççĕ, çĕнĕлле çырмалла» - çак йĕр çинче пычĕ калаçу.

Чӳк, 29.

Партком ларăвĕнче Геннадий Петрович Алексеев экономиста партирен кăлартăмăр, тĕрĕссипе, пуçламăш парторганизаци пухăвĕн йышăнăвне çирĕплетрĕмĕр. Хальхи вăхăтра райком бюровĕ те кунашкал йышăнăва пирĕнне те хирĕçлемест. Райком, хулаком, обком ирĕк памасăр Трактороструйран пĕр ответлă коммуниста та урăх вырăна хăй тĕллĕн тухса кайма чарнă. Томашов ăна хăйĕн куçне сыхланинчен те витĕмлĕрех пурнăçласа пырать. Унашкал тĕслĕх маларах та темиçе пулнăччĕ.

Çапла экономика лабораторийĕн начальникĕ Алексеев парти учетĕнчен райкомра ирĕкленмесĕрех «Чувашгражданпроект» институтне тĕп экономист вырăнне кайса кĕнĕ. «Мĕнле-ха капла, пиллĕкмĕш стройтрестра икĕ пӳлĕмлĕ хваттер илнĕ, пысăкрах ĕç шыраса тупнă та, пăрахса каять. Намăс мар-и?» - сиксе ӳкрĕç Геннадий Петрович çине. Икĕ сехет тӳрĕç парти киллинче ним айăпсăр çынна. Эпĕ ун майлă тăрса каларăм та, эсир хăвăр та çав çул çинчех, тесе чиперех йĕплеме пуçларĕç. Пĕччен ăçтан çĕнтерен? Эпĕ хам шухăшпах юлтăм: малалла кайма пултаракан çынна завод туса пĕтериччен Тракторострой читлĕхĕнче пурпĕрех пăчлантарса усрама май çук. Çавăнпа сасăламарăм, парткома хирĕç тăтăм.

Раштав, 4.

Райкома идеологи секретарĕ Зиновий Сергеев чĕнчĕ. Кăнтăрла çитеспе унта кайрăм. Парти активĕнче тухса калаçмалла, тет. Килĕшрĕм.

Трест аппаратĕнчи коммунистсен пухăвĕ пулмаллаччĕ. Ертсе пыракан аслисемпе пай пуçлăхĕсем çук пирки ытларикуна хăвартăмăр. Ытла та йĕркене пăхăнман хуçасем те... ыттисен мĕн тумалла-ха?

Раштав, 7.

Хаçат пулса пĕтичченех, хам вырăна Петя Алексеева хăварса, Калинин районĕнчи идеологсен актив пухăвневаскарăм. Райком секретарĕ Сергеев «Тракторострой» хаçата лайăх енĕпе чи малтан асăнчĕ те хăйĕн докладĕнче, манăн та мухтанмалла пулчĕ.

Раштав, 3.

Виççĕмĕш хут парти пухăвĕ пухаççĕ. Типографирен ĕçе лĕпĕстетсе çитрĕм, çумăр çăвать те, йĕп-йĕпе пултăм. Ахалех. Уçма кворум, çын çитмест. Тĕнче кулли! Çавăнпа трестĕнче ним йĕрки çук.

Томашов партком ларăвĕ ирттерчĕ. Партком членĕ Демин управляющи Караваев министр телеграммине вуласа пачĕ. Кăçалхи план тулмасан, ĕçрен хăтаратăп, тенĕ. Владимир Петрович питĕ кулянать. Унран анчах килмен сăлтавсене пула стройка чăхăмлать. 5-мĕш трест генеральнăй подрядчик та, пуриншĕн те Мускав унран ыйтать. Унăн вара хушма подрядчиксене пăхăнтарма прави çук. Пĕччен мĕн туса çитертĕр ĕнтĕ вăл Цĕкан виçĕ пайĕ те, виçĕ министерствă та, парти обкомĕпе ЧТУС (Чăваш строительство управленийĕ) та стройкăра татăклă улшăну тăваймаççĕ те... Айăплине шыраса тупма ĕç тунинчен çăмăлрах-çке.

1980 çул. Кун кĕнекинчен. Кăрлач, 4.

Редакцире Çĕнĕ çула пĕчченех пуçларăм. Петр Алексеев Чăваш патшалăх университетне хăй тĕллĕн вĕренме кĕнĕччĕ те - хĕллехи сессире. Галина Зимина вăл е ачипе, е хăйĕн мăйăлтийĕпе бюллетень илсех тăрать те... Материалĕсене ĕнер-виçĕмкунах хатĕрлесе çитертĕм-ха. Хам та сывах мар, ура ыратнипе аптăрарăм. Паян малтан поликлиникăна кайрăм, унтан - типографине. Унта утмалли нумай, кунĕпех - ура çинче. Чăтатăп. Ĕç пирки нихçан та чир-чĕр çине пăхса тăман та, яланах, Вăрнарта та, Йĕпреçре те юлман, хаçатшăн çуннă. Килте Римма тепĕр чухуншăн вăрçса та пăхать. Чун çавăн пек, чĕре çапла пулсан, мĕн тăвăн-ха. Çынсем пек, хăш-пĕрисем пек, мăйласа килте ларса ĕçе япăхлатма шутламан. Нихçан та. Паян та виççĕншĕн ĕçлетĕп.

Кăрлач, 30.

Ĕç хыççăн трест управленийĕнчи парторганизацин уçă пухăвĕ пулчĕ. Çын чылай. Хăшĕсем кунашкал пухура пуçласа пулни курăнать. Коммунистсем ялан уйрăм канашлаççĕ-çке. Хупăнса калаçмалли, татса памалли ыйту нумай-çке партин. Вăрттăн организаци пекех. Халăхран пытараççĕ. Паян - уççăнлăх. Паян - калаçма пурте пĕр праваллă. Çапах та кашниех куçран каласа пуçлăхсене кутран хĕртме сехĕрленет. Ыран каллех вĕсен куçĕнчен пăхмалла вĕт. Çапма пĕлмен пушă вĕçĕ хăйнех пырса тивме пултарать-çке. Демин калать: «Эпĕ ĕçре пушă системи тăвасшăн мар....» Хăй çав хушăрах вăрттăн çырта-çырта илет.

Секретаре эпĕ ĕнерех çырса панă пуху йышăнăвĕн проектне пĕр улăштармасăр йышăнчĕç. Ăна пурнăçлас пулсан, кадрсем енĕпе мĕн тери пысăк ĕç тумалла. Анчах... сăмахпах юлакан-ха пирĕн. Çакăн хыççăнах тепĕр пысăк мероприяти пуçланать те акă, ун чухне пурин çинчен те манса каякан.

Черетлĕ кампани вăл - стройкăри нумай кампанисенчен пĕри, нихçан та вĕçне çитермен ĕçсен хӳри. Мĕншĕн тесен, хăй ĕçне пĕлсе, чĕререн, тăрăшса тăвакан сахал. Трестра пурте такама хушаççĕ, такамĕ тата такама хушать... вара кам мĕн çинчен хушнине те манса каяççĕ.

Алексеевпа тăватă полосаллă номер хатĕрлетпĕр. Чăваш АССРĕ 60 çул тултарнă тĕле «Ялав» журналăн улттăмĕш номерĕ валли Альберт Захаров бригадир çинчен очерк çыртăм. Чăвашгиз кăларакан кĕнеке валли Комсомольски районне очерк çырма каятăп. Канмалли кунсем унта иртеççĕ.

Илья Эренбург асаилĕвĕсене вулатăп.

Нарăс, 7.

«Коммунизм ялавĕ» валли материал çыртăм, радио-телевидени информацийĕсем хатĕрлерĕм.

Партком ларăвĕнче ĕç тухăçлăхне ӳстермелли мерăсем çинчен пăхса тухрăмăр. Черетлĕ пушă калаçу. Эпĕ трестра тăваттăмĕш çул ĕçлетĕп ĕнтĕ, кашни çул ун пирки калаçаççĕ, ĕç тухăçлăхĕ чаксах пырать. Йышăнупах иртсе каять.

Ыйту нумай лартнă, вунпĕре çитнĕ. Аран-аран вĕçлерĕмĕр. Пуçлăхсем, çурçĕр-хĕвеланăç енче пурăнакан «улпутсем», личнăй машинисемпе вĕçтерчĕç, эпир, рабочи районĕнчисем, «тарçисем», чукун çул тăрах çурран лăнкăштатрăмăр. Çапла вăл пурнăçри танмарлăх.

Ĕнер те хаçат пĕчченех кăлартăм. Верстальщица час пымарĕ те, уншăн та, секретарьшĕн те ĕçлерĕм. Райхаçатсенче ответлă секретарь пулнăскер, юрататăп чакаланма. Хаçатăн кашни номĕрне хăйне евĕр уйрăм, хитре сăнлă тăвас килет.

Нарăс, 12.

Ирхине вуннăра Журналистсен союзĕн пленумĕнче пилĕк минутлăх тухса калаçрам. Пĕр сĕнӳ патăм. Строительсен нумай тиражлă пилĕк хаçатĕнчен ЧТУСăн пĕр йĕркеллĕ хаçачĕ тумашкăн. Обкомра тата строительсен аслă кантурĕнче шухăшласа пăхма пулчĕç. Ĕçе вĕçне çитерессе шанмастăп-ха. Унпа нумай ĕçлемелле. Камăн аппаланас килет ытлашши хушма ĕçпе?

«Капкăна» каяс пирки Томашова тепĕр хут вăрçтарса пăхрăм. «Хам каяс пулсан кунтан, сана та ирĕк паратăп», - терĕ. «Апла кĕçех сывпуллашатпăр». «Мĕнле майпа?» «Хăв та куратăн пуль Мускав енчен çиçĕм ялтлатса аслатиллĕ çумăр çывхарнине?» «Ах, эс мана кунта аça çаптарасшăн-и?» «Куратăп, туятăп çапла пуласса...»

Николай Максимов хăй патне илессипе ĕç тухать пулас-ха, калаçкаларăм, тесе савăнтарчĕ. Суйлавсем иртсе кайсан обкомра тепĕр хут туртса кăларасшăн пустав айĕнчен ман «ĕçе».

Нарăс, 21.

Партком ларăвĕ питĕ шавлă иртрĕ. Çĕнĕ техникăпа мĕнле усă курнин ыйтăвĕ хĕрсех çитнĕччĕ çав. Пурте хĕремеслленсех тавлашрĕç. Кун пирки «Тракторостройра» кăларнă ятарлă страницăсемшĕн Демин хĕпĕртенĕ. Парткомăн хаçатри критикăллă материалсен витĕмлĕхĕшĕн ытларах çине тăмалла, тесе сисĕмлех асăрхаттарчĕ Томашова обком секретарĕ Чичикин.

Лару хыççăн, хăнасене ăсатсан, Радий Иванович манпа чĕрре кĕресшĕн пулчĕ: «Эсĕ ман ума ялан капкăн лартан. Çĕнĕ техникăшăн хуравли мансăрх нумай. Эсĕ те партком членĕ. Эсĕ те айăплă çав витĕмлĕх çитменшĕн. Эсĕ паян çĕнтерӳçĕ, эпĕ - пит хĕретекенĕ». «Çавăн пек çивĕч хаçат кăларма мана эсир хăвăр шыраса тупнă вĕт. Паянхи калаçу «Трактоространран» пуçланнăшăн тарăхма кирлĕ мар, управляющи пек хĕпĕртемелле çеç. Капкăн, тенĕрен, «Капкăна» куçма эпĕ яланах хатĕр. Сирĕн ума тек кунашкал капкăн лартмăп». «Тупнă - алă тытнă. Хаçат турăн - кунтах пурăн. Таçта та мухтанма пулать «Тракторостройпа». «Капкăн» пирки çапла. Илсе килетĕн обкомран çыру...» «Ун пек чух обкомран çыру мар, шăнкăрав çеç килнине иксĕмĕр те лайăх пĕлетпĕр...» «Шăнкăрав пирĕншĕн хушу та, саккун та мар, атя, тухар, машинăна кĕрсе лар, калаçăва «Россия» ресторанта тăсар».

Нарăс, 25.

Петя Алексеев ĕçе тухрĕ. Кăштах ирĕклентĕм. Ăна эпĕ халĕ вĕрентсе çитертĕм, хăй тĕллĕн хаçат кăларма та ирĕк пама пуçласшăн. Яковлев пек мар, шанма пулать.

Пуш, 6.

Томашов райком пленумне кайрĕ те хăй вырăнне мана хăварчĕ. Партком ларăвне ирттермелле пулчĕ. Пĕрремĕш хут. Партине те илтĕмĕр, хуçалăх ыйтăвĕсене те татса патăмăр. Секретарь вырăнĕнче управляющи те, ытти çынсем те итлеççĕ иккен мана. Йĕркеллех пулчĕ. Партком членĕсенчен хăшĕсем ларусене сиктерни çеç мана тарăхтарать. Хăйсем малтан унта кĕресшĕн çунаççĕ, кайран пысăк сăлтавсăрах унăн ĕçне йĕркеллĕ хутшăнмаççĕ, тĕрлĕрен сăлтав шыраса аяккалла пăрăнаççĕ. Унашкаллисене ят, чап кăна кирлĕ иккен. Томашовпа ун пирки ялан тавлашатпăр.

Пуш, 11.

Партком хутшăнман ĕç стройкăра çук. Ертсе пыракан, çул кăтартакан вăй-çке парти.

Тахçанах пĕр çивĕч ыйту хатĕрлетпĕр: стройтрестра кадрсемпе ĕçлесси мĕнле пулса пыни çинчен. Ларăва хатĕрленсе çитрĕмĕр. Комитет членĕсем, суйланнăранпа пĕрремĕш хут, пурте пĕрле пухăнчĕç. Хуравлă пуçлăхсене, специалистсене, партире тăманнисене те, йышлă чĕннĕ. Кадрсемпе ĕçлессипе управлени пуçлăхĕсем, инженерсемпе техниксем, пуçламăш парторганизаци секретарĕсем (вĕсем вунвиççĕн) çине тăрса тăрăшманнине

КПСС обкомĕнчен Тимерсянов инструктор килсе тĕрĕсленĕ чухне те палăртнăччĕ. Петр Васильевич пухăва хăй те килчĕ. Мĕн каламаллине никам та шыраса лармарĕ. Пурте - куç умĕнче. Парткомпа пĕрлешӳллĕ профсоюз комитетне те, ВЛКСМ комитетне те, Пĕтĕм Союзри ударлă комсомол стройкин штабне ертсе пыракансене те, управляющине те тивĕçлипех ятларĕç. Критикăн тĕп шухăшĕ çакă пулчĕ: пулă пуçран ан çĕртĕрччĕ.

«Партком йышăнăвĕ мĕнле пурнăçланса пырать» рубрикăпа пичетлемелли статьясен темисене, авторĕсене палăртса лартăм. Йĕпреç хаçатĕнчех шухăшласа кăларнăччĕ эпĕ çав рубрикăна. Унта «партком» выранне «райком бюровĕ» сăмахсемччĕ. Секретарьсемшĕн вăл питĕ усăллă. Тĕрĕслӳ - куç умĕнче.

Пуш, 18.

Парткомăн, райкомри пекех, политвĕренӳ кабинечĕ те пур. Ăна ырă кăмăллă чиперкке, çепĕç чĕлхеллĕ ăслă хĕрарăм Генриэтта Федоровна Батанина тытса пырать. Пулăшаканĕ унăн хурамкка, типшĕм пит-куçлă, çĕлен чĕлхиллĕ, ватта тăрса юлнă лутака хĕр, вырăслатса Галя текен Абаева тутар чĕппи. Унран унчченех темле сивĕ сывлăш хумĕ çапатчĕ те, хамăн выговор историйĕ хыççăн унпа калаçас та килми пулса çитнĕччĕ. Абаевăна партвзнос пухма хушнăччĕ. Çавă эпĕ кашни уйăхра мĕн чухлĕ тӳленине пĕлет. Каярахпа ăнлантăм, Геннадий Яковлев вăрттăн информацие шăпах унран илнĕ-мĕн. Ĕçре хирĕçӳсемсĕр пулмасть. Тутар хĕрĕн те мана тавăрмалли тупăннă. Иккĕшĕ пĕр шут тытаççĕ те... Çăхав хатĕр. Кузьмин ташла!..

Батанина йăлтах урăхла кăмăллă, çынна пулăшма васкать. Паян вăл 55 çул тултарчĕ. Йышлăн саламларăмăр. Амăшĕпе, ЧАССР тава тивĕçлĕ учительниципе, иккĕшех пĕр кивĕ пĕчĕк пӳлĕмре пурăнаççĕ. Демин çине тăнипе ăна çĕнĕ çуртра икĕ пӳлĕмлĕ хăтлă хваттер пачĕç.

Пуш, 20.

США президенчĕ Картер пирĕн çĕршыва экономика енчен хавшатмалли политика тытать те, хамăрăнах вăй илмелле ĕнтĕ. Вĕсен куçĕнчен пăхса çитет, ылтăнпа «Катерпиллер» трактор туянма тăхтамалла, теççĕ. Çавăнпа Шупашкарти трактор заводне хăвăртрах хута яма пит васкатаççĕ. Ленин çуралнăранпа 110 çул çитнĕ тĕле çулталăкра 300 трактор, çĕнĕ çулччен 700 трактор кăлармаллăх производство хăвачĕсем хута ямалла.

Калаçăвĕ те, ĕçĕ те нумай. Трактор завочĕн хĕрлĕ кĕтесĕнче «Ленинла, коммунистла пурăнар, ĕçлер» темăпа икĕ пысăк кол-

лективри коммунистсен уçă пухăвĕ пулчĕ. Строительсем, монтажниксем, «Чăваш улăпĕ» кăларакансем шавласа илчĕç.

Вуниккĕмĕш управленири Владислав Чаркин, Комсомольски йĕкĕчĕ, партком членĕ, тахçантанпах тухăçлă ĕçĕпе кĕрлет.

Ларусенче юнашар пулса, ĕçĕ-хĕлĕпе паллашса ман ун çинчен пухăннă ырă тĕслĕх хуранĕ тăкăнса кайма пуçларĕ те вара шухăшлава очерка куçартăм.

Магазинсенче шур эрехшĕн, сахăршăн çапăçаççĕ. Ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хак ӳсет, теççĕ-и.

Пуш, 29.

Типографирен обкома наукăпа практика конференцине каймалла пулчĕ. КПСС обкомĕпе СССР Наукăсен академийĕн Социологи тĕпчевĕсен институчĕ пĕрле ирттереççĕ. Теми: «Идеологи ĕçĕн КПСС Тĕп Комитечĕ «Идеологи ĕçĕпе политикăллă воспитани ĕçне малалла лайăхлатасси çинчен» йышăнăвĕнчен тухса тăракан хальхи кирлĕ ыйтусем».

Ĕçрен хăпăтса халăх пухса тултарнă, райхаçат редакторĕсене те чĕннĕ.

Мĕн пачĕ-ха вăл мана? Нимĕн те. Юлташсемпе тĕл пулса калаçни çеç. Партие ертсе пыракансен пуш параппан сассийĕ çапла пĕр чарăнмасăр шавлать çĕршыв çийĕн. Идеологийĕн вара хăмпи шăтнă. Унтан хăйăр юхать.

Ака, 6.

Максимов обкомра каллех ман пирки калаçнă. Пропаганда пайĕн заведующийĕ ман кандидатурăпа килĕшет. Николай Николаевич трест пуçлăхĕсем валли хут çырса хатĕрлерĕ, хамран парса ячĕ. Мĕнле пулĕ-ха?

Ака, 8.

«Капкăн» хутне Демин канцелярине патăм. Томашова заявлени çырса тыттартăм. Çаплах турткалашса ларать, райком çине ярать. Идеологи секретарĕ Сергеев патĕнче пултăм. Килĕшесшĕнех мар. Мĕнле хăтăлса тухмалла ку «тамăкран?»

Ака, 11.

Типографирен КПСС обкомĕн политвĕренӳ çуртне кайрăм. Унта творчество союзĕсен Ленин юбилейĕ умĕнхи пĕрлехи пленумĕ пулчĕ. Халăх нумай. Яков Ухсай председатель пулса ертсе пычĕ. Ватăлнă, йӳтенĕ, çапах шӳтне пăрахман. Павел Крысина акă мĕн каларĕ: «Халĕ художниксен правленийĕн секретарĕ Крысин доклад тăвать». Ара, Крысин журналистсен пуçлăхĕçке. Ай-вай-вай, Ухсай, ялан măшкăллать. Мухмăрла та пулма

Чăвашрадиора тата «Советская Чувашия» хаçатра пĕрле ĕçленĕ юлташăм Николай Михайлович Скок хушăран пирĕн пата кĕрсе тухать. Вăл та Тракторострой çинчен хаçат валли хĕрсех материалсем тăвать. Эпĕ ăна май килнĕ таран пулăшатăп. Стройкăра та пĕрлех çӳретпĕр. Мана вăл хăй те, унăн журналистикăри ĕçĕ те, яланах килĕшет.

пултарнă вăл. Ĕнер театрта унăн «Тутимĕр» премьери пулнăччĕ те...

Манран пĕрмай: «Эс халь те çавăнтах ĕçлетĕн-и?», Капкăна» куçман-и?» - тесе ыйтаççĕ.

Ака, 14.

Ĕçе, тавра çулпа, сехет ытла кайма тиврĕ. Томашов патне кĕтĕм, вăрçтаратăп. Райком, хулаком килĕшсен, эп хирĕç мар, тет. Çапах хăй шухăшĕнчен иртесшĕн мар, райком секретарĕпе телефонпа калаçнă хушăра мана ярас мар шухăшпа лăпăртатать.

Кайран, Пичет çуртне кайсан, Максимова хулакомăн иккĕмĕш секретарĕ Васильков, Калинин райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Федоров патне шăнкăравлаттартăм.

Трестра эксперимент цехне хута ярас умĕн трест управленийĕн аппаратĕнче ĕçлекенсенчен ятарлă бригадăсем йĕркеленĕ. Ман Петя Алексеева та унта персе чикрĕç. Зимина чирлĕ ачипе килте ларать. Каллех пĕччен тăрса юлтăм.

Трест, çичĕ квартал хушши план тултарайман хыççăн, юлашкинчен пĕрремĕш квартал планне тултарчĕ. Кун çинчен пире те çырма кăмăллă.

Ака, 17.

Партком ларăвĕччен хаçат кайса илтĕм, материалсем хатĕрлерĕм. Квартал итогĕсене пĕтĕмлетнĕ хыççăн çитес квартал задачисене çирĕплетрĕмĕр.

Томашов тинех кун йĕркине ман ыйтăва та кĕртнĕ. Кунтан ярасшăн мар шухăшпа партком членĕсене ыйтăва тепĕр майлă ăнлантарса пачĕ. Манăн та ăна хирĕçле калама тиврĕ. Управляющи Томашова хӳтĕлет. Партком членĕ, тĕп технолог, ăслă хĕрарăм Алла Александровна Семенюк ман майлă пулчĕ. Тин калаçу çилĕ улшăнчĕ.

Çу уйăхĕччен кĕтмелле пулать.

Ака, 19.

Коммунизмла субботнике васкатпăр. Эксперимент цехĕнче ĕçлерĕмĕр. Цехне май уявĕччен хута ямалла. Мускавран правительство телеграмми килнĕ. Ĕç кунта мăй таранах-ха, ку срокра ярасси темле. Пирĕн строительсем нихçан та обьект вăхăтра ярса курман та...

Ака, 23.

Мана «Капкăна» куçарас мар тесе Томашов мекĕрленсех тăрмашать. Халĕ тактикине улăштарчĕ. Обком, хулаком, райком татса патăр, редактора лартмалли çын çук, тет. Эпĕ сĕннипе килĕшмсет, Петя Алексеева темшĕн юратмасть.

Хаçат илсе килме те машина çук, выртать типографире. Очерк çырасси те çавăншăнах тăсăлса кайрĕ.

Ачи чирлĕ пирки Галя Зимина та ĕçрен тухасшăн.

Ака, 25.

Пĕрремĕш хут аслатиллĕ çумăр çурĕ, тавралăх тасалчĕ, ешерет. Паян мана Томашов хăйĕн ухмахлăхĕпе кӳрентерчĕ пулин те, Максимов ăслăлăхĕпе кăмăла çавăрчĕ. «Вĕçне çитеретпĕрех пуль-ха»,- терĕ.

Çу, 5.

Чĕлĕм туртма пăрахрăм. Темиçе çул выланкаласа мăкăрлантарса пурăнтăм. Усал йăла. Сывлăхшăн та, пуриншĕн те сиенлă. Хама хам çĕнтертĕм.

Стройтрест пуçлăхĕ Владимир Петрович редакцие пырсах Пичет кунĕпе саламларĕ. Томашов - Демин чĕнсе каласан тин. Управляющи ман майлă калаçрĕ.

«Коммунизм ялавĕнче» манăн «Партгрупорг» очерк тухнă.

Çу, 15.

Пĕрремĕш кварталшăн преми пачĕç пулин те, ĕçре пит кăмăлсăр. Томашов, вăрттăн çыртма хатĕрленекен йытă пек, куç

айӗн пӑхса ҫӳрет. Ун пек чухне унран яланах япӑххине кӗтме пулать.

Хӑйӗн ҫумӗпе Крыловпа каллех хирӗҫнӗ, ӑна парткомран хӑвалать, урӑххине илесшӗн.

Пурпӗрех мана кунтан путлӗн кӑларса ярас ҫуккине ӑнланса, Радий Иванчпа хытах хирӗҫрӗмӗр. Партбилетпа хӑратать.

Райкомра Сергеев патӗнче пултӑм. Вӑл та ҫав юрра юрлать. Хулаком ҫыннисемпе пӗрле каварлашса калаҫса татӑлнӑ та, мана ухмах вырӑнне хураҫҫӗ пуль. Мана вӗсемпе хирӗҫтерсе ярасси пулсах тухмасть. Сергеевне каласа хӑвартӑм: «Зиновий Михайлович, кун хыҫҫӑн манран пурпӗрех «Тракторострой» редакторӗ пулмасть».

Максимова «круг замкнулся» тесе кӗрсе пӗлтертӗм. «Шел, шел, мерӑсем йышӑнмалла»,- тет.

Парти ӗҫлевҫисем икӗпитленни питӗ ырӑ мар пек. Хӑйсемех хӑйсен авторитетне ҫунтараҫҫӗ. Кам ӗненӗ ӗнтӗ унашкал двурушниксене?

Ака, 19.

Хамӑр автобуспа ӗҫе ҫитрӗм. Темиҫе ҫын та манран ыйтать: «Малаллах ӗҫлесе кайрӑр апла?» Шӑматкун ман заявлени вӑхӑчӗ тухнӑ-ҫке. Уйӑх нушалантарчӗҫ. Райкомрисемпе вӑрҫас килмерӗ. Хама валли хамах тупатӑп вӗт.

Зимина отпуск ыйтрӗ. Ырантан ярас терӗм. Ачине хӗрхентӗм. Галина Федоровна пульницасем тӑрӑх чупмалли нумай, тет те. Пурпӗрех бюллетеньпе ларать. Усси унран сахал.

«Тракторострой» редакторӗ пулма хамӑр Петр Алексеева тата Чӑвашрадион ман вырӑнта ӗҫлекен Иван Перова (вӑл тӳрех хваттер ыйтнӑ) сивленӗ хыҫҫӑн, Ҫӗнӗ Шупашкарти «Градостроитель» редакторне Евгений Тазова чӗннӗччӗ. Томашов патӗнче пуласси пирки пӗрле калаҫрӑмӑр. Радий Иванч Шутинпа ҫыхӑнчӗ. Левин, Чичикина пенсие ӑсатсан ун вырӑнне суйланӑ иккӗмӗш секретарь, Томашова хамӑр патра ҫапла каланӑччӗ: «Пысӑкрах ӗҫе хатӗрленсе ҫитнӗ кадрсене сирӗн пек тытса чарни преступлени тунӑ пекех». Ҫакӑн ҫинчен вӑл халь Шутина пӗлтерчӗ. Михаил Васильевич кулать: «Кузьмина ярасшӑн мар малтан хӑвӑр чакаланаттӑрччӗ, халӗ урӑхла тӑрӑшатӑр». Андрей Иванча Ҫӗнӗ Шупашкарпа ҫыхӑнма хушнӑ, терӗҫ.

Ака, 26.

Парткомра Демина тӗпӗртеттертӗмӗр. Каҫхи улттӑмӗш шкулта строительсем те вӗренеҫҫӗ. Владимир Петрович аккӑшне пӗлсех

çавăнта вĕрентме вырнаçтарнă пулас. Икĕ уйăх иртнĕ-иртмен вăл ăна шкул урлă икĕ пӳлĕмлĕ хваттер туса панă. Пĕччен пурă-наканскерне. Пурăнмалли лаптăк нормăпа çиттĕр тесе Тамбов облаçĕнчи ашшĕпе амăшне ордера кĕрттернĕ.

Пуçлăх та пуçне усрĕ, «Тархасшăн партирен ан кăларăр», - тесе йăлăнать. Учет карточки çине çырса хумалли хаяр выговор патăмăр. Партком членĕсенчен пурте сасăларĕç. Демина ку çыр-лахтарчĕ. Атту ăна ĕçрен хăтарма патне çитнĕччĕ. Обком секре-тарĕ Левин СССР строительство министрĕпе Караваевпа кала-çнă хыççăн вăл хăтăлса юлчĕ.

Стройтрест хваттерне «вăрлама» пулăшакансем чееленсе тăрса юлчĕç. Пĕрлешӳллĕ профсоюз комитечĕн председательне Лев Герасимович Захарова, унăн заместительне Юрий Алексеевич Петрова тата управляющин йăла ыйтăвĕсемпе ĕçлекен замести-тельне Михаил Кондратьевич Громова çырса хумалла мар хаяр выговор çеç лекрĕ.

Çакăн хыççăн мĕнле куçпа пăхмалла-ха вĕсен халăх çине? Хваттер илес тесе тăвата-пилĕк çул тăрăшакан мĕн чухлĕ çын стройкăра?

Çĕртме, 3.

Паянтан редакцире каллех пĕчченех. Петя Алексеев вĕренӳ отпускĕнче. Галя Зиминан канмалли тата икĕ эрне.

Манăн каллех сăнчăр татăлчĕ, тесе Максимова кĕрсе ка-ларăм. Чăн та, Çĕнĕ Шупашкарта «Градостроитель» редакторне пымалли Александр Белова хула хаçатĕнчен ямаççĕ. Тазов ирĕк-ленеймест.

Стройкăра инженери ĕçĕ кирлĕ шайра мар. Тĕп инженерсĕр пуçне тем тĕрлĕ служба пур. Кашни хăй тĕллĕн мăшăлтатать. Партком ларăвне çак ыйтăва лартрăмăр.

Производство технологийĕ уксакланăшăн трестăн тĕп ин-женерĕ Черкасов тĕп технолога айăпларĕ. Семенюк йĕрес пек калать: «Эпĕ кунта икĕ çул усăсăр ĕçлерĕм. Эпир каланине никам та шута илмест. Мастер наряд çырса парать те, брига-дирсем ăна пурнăçлаççĕ. Управленисен тĕп инженерĕсем мана итлемеççĕ, пăхăнмаççĕ. Стройкăн пĕрпĕтĕмĕшле черетленсе пы-ракан технологи йĕрки çирĕпленейменшĕн манпа пĕрле эсир хăвăр та айăплă», - тесе çĕнтерчĕ Юрий Деомидовича хастар хĕрарăм.

Йĕрке тума йышăнтăмăр.

Çĕртме, 13.

Максимов каларĕ: «Ман ыйтăва татса пама Петров Шутина хушнă. Паян Деминсене райкомра хваттер ыйтăвĕпе ăшалаççĕ.

Çĕртме, 17.

Чичикин стройкăран çухалнă хыççăн «мат» сăмах çилпе вĕçрĕ, те бетонпа хытрĕ... Левинăн чĕлхи çӳп-çаплă мар, культурăллă çын, ăнланулла партиец-ертӳçĕ. Ун умĕнче ытлашши сăмах персе яракан та çук. Партком пӳлĕмĕнче ман çинчен калаçу пуçланчĕ. «Талантлă çынна нумай тиражлă хаçатра ĕмĕрне ирттертерер мар пуль, юлташсем. Ку ыйту обкомра ман хăлхана та кĕнĕччĕ. Петров сирĕн редактора мухтать. Кайтăр, çĕмĕрттертĕр сатирăпа. Тăнлăрах пулар»,- тесе вăл ман енне ăшă куçне ывăтрĕ.

Обком секретарĕ кайсанах эпĕ малтанах çырса хунă заявлени çине Томашова алă пустартăм. Кăмăла уçса пĕрлештерме Радий Иванчпа Атăл хĕррине кайса «Атăл шывĕпе» чӳхентĕмĕр те...

Çĕртме, 18.

Ĕнерех эпĕ управляющине те заявлени панăччĕ. Владимир Петрович министр çумĕ Якубанец хута ямалли обьектсем пирки ирттерекен канашлăва васкатчĕ, ырана хăварчĕ. Акă халĕ, хăй патне кĕрсенех: «Сирĕн заявлени çине алă пусрăм. Ăнăçу сунатăп. Пĕрле йĕркеллĕ ĕçленĕшĕн, пире хаçата вăйлатса панăшăн тав, кӳрентертĕмĕр пулсан, каçарăр. Пĕрне-пĕри манар мар. Каллех Якубанец патне чупатăп. ЧТУСра тепĕр хут канашлать, мунча кĕртет,» - терĕ.

Манăн заявлени ĕнтĕ кадрсен пайĕнче. Эпĕ паянтан - Чăваш строительство управленийĕн СССР 50 çул тултарнă ячĕллĕ 5-мĕш стройтрестăн нумай пинлĕ коллектив членĕ мар. Уйăх укçине, çĕр аллă тенке, илетĕп те... Парти хучĕсене Калинин райкомĕнчен Ленин райкомне куçарасси çеç юлать.

Сывă пул, мана çĕрщывăн анлă тĕнчине кăларнă ударлă Стройка!

* * *

Пиллĕкмĕш стройтрест парткомĕн секретарьне Томашова эпĕ Мускав енчен аслатиллĕ çумăр çывхарать тесе вăлтса калани чăн пулчĕ. Питĕ ахăрса, тăвăл çĕклесе çапрĕ вăл Чăваш çĕрне - Тракторостроя. КПСС Тĕп Комитечĕн пленумĕ «Шупашкарти промышленность тракторĕсем кăларакан завода

Атăл «улăпне» те куртăм. Нумай пин çынпа пĕрле вăл çĕршыв уттине кĕрессишĕн мĕн чухлĕ те пулин хамăн ăса, вăй-хала шеллемесĕрех тăрăшрăм пуль тесе мухтанма та тивĕçлĕ пек туйăнать.

Акă вăл - Шупашкарта пухса чун кĕртнĕ хăватлă, 330 лаша вăйлĕ трактор.

тăвасси вăраха кайнă», - тесе йышăнчĕ. Çак йĕркесем Шупашкарта йĕрке турĕç. Генеральнăй подрядчикĕн - пиллĕкмĕш стройтрестăн тата трактор завочĕн партком секретарĕсене Томашовпа Иван Иванович Долгушина ĕçрен хăтарчĕç, ăна заводăн пĕр мăн цех коллективне ертсе пыма шанчĕç, Радий Иванович та урăх ĕç тупрĕ.

Пурне те хăратакан, пурне те пусаракан хаяр парторг кунçулĕ пĕр кунтах каялла çаврăнчĕ, чакса ларчĕ.

Эпĕ ĕнтĕ вăл вăхăтра «Капкăнра» хам капкăн лартаттăм.

2002 çулхи кăрлач.

«КАПКĂНА» ПУÇА ЧИКСЕН

Капкăн 1980

1926 çултанпа тухса тăрать

Çырма вĕреннĕ вăхăтра «Капкăн» ачисене курнă-ха, Николай Амурцева, Трофим Иванов-Таçука, Николай Иванова, Виталий Енĕше, Григорий Луча алă та панă. Унăн редакторĕ 1959 çулхи пуш уйăхĕнче ман пата çырнă хурав та выртать килти хутсем хушшинче. «Хаçат-журналсемпе кĕнекесенчи корректура йăнăшĕсем çинчен материалсем нумай килеççĕ, анчах та кĕртсе çитерме май çук. Кулăшла калаçусем кĕтетпĕр. Салампа П.Александров». Кулăшсене ярса патăм редакцие, хавхалансах. Пурте тенĕ пекех кун курчĕç. Савăнтарчĕç.

Политика сатира журналĕ ун чухнех КПСС Чăваш обкомĕн органĕ вырăнĕнче пулнă - партин хăватлă хĕçпăшалĕ. Лекрĕн тĕк унăн мушки çине... Ун çывăхне пыма та, ача... Унччен вара мана обкомра кутăн-пусăн çавăрсах силлесе пăхнă та, çулăмăм çине йĕплĕ кавир сарса панă, уттартăм вара çавăн тăрăх малалла, ура вăйне туйса, пуç çаврăмне тепĕр майлă куçарса.

1980 çул.
Кун кĕнекинчен.
Çĕртме, 19.

Паян «Капкăнра» редактор заместителĕнче ĕçлеме пуçларăм. Тĕп редакторĕпе Николай Николаевич Максимовпа çĕнĕ вырăна çурăмăр.

Пиллĕкмĕш стройтреста тепĕр хут кайса килтĕм, унта хамăн ĕç кĕнекипе ытти документсене илтĕм. Тракторострой мана пурнăç хуранĕнче вĕретрĕ, шăратнă хурçă пекех хытарчĕ. Анчах юлашки вăхăтра Калинин райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Юрий Ксенофонтович Федоров тата иккĕмĕш секретарĕ Зиновий Михайлович Сергеев чуна çирĕç. Обком мана «Капкăна» куçарма ирĕк парса килĕшнĕ хыççăн та нумай чакаланчĕç. Вĕсене кура партком секретарĕ Радий Иванович Томашов суккăрла ухмахланчĕ. Парти билетне туртса илетпĕр, тесе хăратса çула чаркăч-

ларĕç. Пропаганда пайĕн пуçлăхĕ Валентин Сергеевич Шурчанов йăлтах урăхла çын - ăнланать, лăплантарать.

Пичет çурчĕн улттăмĕш хутри пӳлĕме хамăннах йĕркене кĕртме тиврĕ. Кӳршĕсем - «Тăван Атăлпа» «Хатĕр пул». Николай Николаевич капкăнçăсемпе паллаштарчĕ: илемлĕх редакторĕ Анатолий Александрович Быков, Анатолий Иванович Финько, Николай Никитич Никитин, Федор Кириллович Комаров, Валентин Михайлович Палинов фельетонистсем, Нина Степановна Орлова корректор, Зина Ивановна Иванова машинистка, çыру регистрацилекен Христина Николаевна Тимофеева. Штатра тăманнисем-пулăшакансем пур: Николай Лукич Яковлев, Георгий Яковлевич Яковлев (иккĕшĕ те маларах журналăн тĕп художникĕсем пулнă), Юрий Петрович Смирнов художниксем. Редакци коллегийĕн членĕсем: Н.Н.Максимов, А.А.Быков, Н.И.Иванов (ответлă секретарь), В.Н.Игнатьев, В.М.Палинов, Н.М.Черепанова, А.И.Финько, А.А.Эсхель. Тăххăрмĕшне мана çирĕплетрĕç.

2,6 пичет листипе уйăхра икĕ хутчен 80 пин тиражпа тухакан журнал.

Çĕртме, 23.

«Капкăн» ĕçĕпе паллашатăп. Эпĕ халиччен туман ĕç те пур кунта. Вĕренмелле, хăнăхмалла.

капкăн

1980
№ 13(838)

Главный редактор
Н. Н. МАКСИМОВ

Редакционная коллегия:

А. А. БЫКОВ
(художественный редактор)

Н. И. ИВАНОВ
(ответственный секретарь)

В. Н. ИГНАТЬЕВ

В. П. КУЗЬМИН
(зам. главного редактора)

В. М. ПАЛИНОВ

Н. М. ЧЕРЕПАНОВА

А. И. ФИНЬКО

А. А. ЭСХЕЛЬ

Питӗ интереслӗ писательсем, журналистсем ӗҫлеҫҫӗ. Кӑнтӑр апачӗ вӑхӑтӗнче шахматла выляҫҫӗ. Ытларах вылякансем: Николай Максимов, Валентин Палинов, Николай Иванов, «Хатӗр пул» журнал редакторӗ Порфирий Афанасьев, унӑн сотрудникӗ Василий Самойлов. «Тӑван Атӑл» вылямасть. Вӗсем курма пыраҫҫӗ.

Николай Никитин материалӗпе лартӑм. Мӗнле тытса пынӑ вӑл фельетон пайне? Ытла начар ҫырать-ҫке? Унчченхи Васильев-Луч редактор ӑна ответлӑ секретарьте ӗҫлеттерсе тӗрӗсех тунӑ пулас.

Хветӗр Агивер кӗрсе тухрӗ. «Ялавра» пичетленес калавушӑн ҫур литр хам ятранах ӗҫтерес-ха», - тет. Николай Николаевичпа виҫҫӗмӗр хӗрсех калаҫса лартӑмӑр. Кӗҫ пирӗн ушкӑна «хатӗрпулсем» виҫҫӗн хутшӑнчӗҫ. Тӑван республика 60 ҫул тултарнӑ ятпа Вениамин Тимакова КПСС Чӑваш обкомӗн тата Министрсен Совечӗн Хисеп грамотине панӑ. Порфирий Васильевич Самойловне, курьерне, дипломатпа лавккана васкавлӑн хӑваларӗ. Ҫурӑмӑр наградӑна.

Максимовпа юнашар пурӑнатпӑр. Вӑл - Пролетари урамӗн 14-мӗш ҫуртӗнче. Кӑнтӑр енчи чӳречи пирӗн еннеллех тухать. Ҫӗрле, ҫырса ларнӑ вӑхӑтра, унӑн ҫутине асӑрхатӑп: вӑл та ыйхӑ катса ӗҫлет. Куславккаран куҫса килнӗ чухне, эпир кунта куҫичченех, япала пушатма Афанасьевпа хашкаса ҫитрӗмӗр, анчах... Денис Гордеевсем машинӑна тасатма ӗлкӗрнӗ. Пирӗн кӗленче пушатасси ҫеҫ юлчӗ. Кӳршӗсене, пире, киле пӗрле ҫӳреме аван. Максимовпа ҫурран ҫур сехете яхӑн утатпӑр.

Николай Никитин, пенсие тухнӑ хыҫҫӑн, патшалӑх йӗркипе, тата тепӗр уйӑх ӗҫлет. Ун вырӑнне редактора Федор Комарова лартасшӑн.

Ҫӗртме, 25.

Ирхине хамӑн треста кайса юлашки ӗҫ укҫине илтӗм. Томашов патне кӗрсе заявлени ҫине алӑ пустартӑм, райком валли. Ман вырӑна Шупашкар ачи Евгений Тазов (хаҫатҫӑ мар) ӗҫлеме пуҫланӑ. Зимина хирӗлсе ҫӳрет. Петя Алексеев «Ӗҫлеместӗп Кузьмин кайнӑ хыҫҫӑн», - тесе юнтарнӑ.

КПСС Калинин райкомне кӑнтӑрла иртсен тин кайрӑм, ирпе Сергеев пулмарӗ. Парти учетӗнчен ирӗкленме ӗнтӗ виҫӗ ҫынна алӑ пустартӑм: трест управленийӗн пуҫламӑш парторганизаци секретарьне, партком секретарьне, райкомӑн пропагандӑпа агитаци пайӗн заведующине, черетре - идеологи сек-

ретарĕ. Авă мĕнле сăнчăрта эпир - пысăк-пĕчĕк номенклатура тарçисем.

Парти ĕçлевçисене унччен хисеплеттĕм, халĕ, вĕсем мана хăйсен шалти вăрттăн туйăмне, ашшĕ-амăшĕ панă тӳрккеслĕх кăмăлне кăтартнă хыççăн, вĕсенчен самаях сивĕнтĕм. Хăшĕ-пĕри ĕнтĕ чăннипе секретарь те, йĕркелӳçĕ те мар, бюрократ, хăравçă, кĕвĕç, хăйшĕн çунакан çын кăна. Вĕсем, юлташĕсенчен кăшт çӳлерех картлашкапа парти улăхне тутлă çерем кăшлама аран-аран мекеçленсе хăпарнăскерсем, çывăх çыннăн ăш-чикне те хаяр вутпа çунтарса, нервисене хавшатса, вăхăтсăр стройран кăларма пĕлеççĕ. Ленинла ĕç меслечĕ-стилĕ мар вăл. Хăйсем умĕнче ытла пуççаптарасшăн. Тавах Анлă Уçлăхри Хăватлă Вăя! Тинех пĕтрĕ манăн вĕсем умĕнче пуç çапса тăрасси, вĕсен хушăвĕпе ĕçлесси. Текех эпĕ мар, хăвăр ман куçран пăхăр, ак...

Çĕртме, 26.

Никитинпа Комаров материалĕсене юсаса кун иртрĕ. Вунтăваттăмĕш номĕре авторски вуласа патăм. Ытти фельетонсене, кулăшсене вуласа вăхăт иртрĕ. Ытла начар çыраççĕ - манран та начар.

Ĕç хыççăн Хветĕр Агивер «Ялава», саккăрмĕш хута, Максимовпа иксĕмĕре хăйĕн пулĕмне чĕнчĕ. Пулĕмĕ унăн сарай пек. Ответлă секретарь вăл. Отпуска каять. Кăкшăма, писательсен пултарулăх çуртне, виçĕ сыпăклăх (уйăх çурăлăх). Хуçи Семенов, «Хатĕр пул» хатĕрçи-хуçи Афанасьев чăл-чăл пăхса лараççĕ. Шӳтлеме те, ăслă калаçма та маçтăр хăйсем. Ытларах Юрий Семеновичпа Порфирий Васильевич калаçрĕç. Ку хутĕнче Коновалов-Агивер чĕнмесĕртерех ларчĕ.

Семенов: - Пирĕн Федор Георгиевич пĕлтĕр çичĕ уйăх канчĕ, кăçал çулталăкĕпех канма пуçару тăвасшăн, «тăванатăлсене» ăмăртăва чĕнесшĕн.

Максимов: - Вĕсен канма вăхăт çук. Редактор улăштарнă хыççăн Галкинсем çинчен çывăрма пĕлмесĕр çăхав çырмалла-çке.

Афанасьев: - Шукшин вилмен пулсан, Агивер кун пекех чап илейместчĕ. Пĕрмай ун çинчен çырса хăй чăваш писателĕ пулнине те манса кайрĕ.

Агивер: - Шукшин литературăра пурпĕрех Гарин-Михайловский шайĕнче юлать.

Утă, 1.

Геннадий Мальцевпа Денис Гордеев, пуçанасем, ман тавра явкаланса çӳреççĕ. Кулăшла калавĕсене ярасшăн. Мальцевăн кулăш

екки пур. Çынран тăрăхлама та маçтăр вăл. Луч ăна «Капкăнра» ĕçлеттерсе те пăхтарнă, анчах Геннадий Степановича капкăнçăсем хăйсен çемйине йышăнман.

Гордеевăн сатира мар, лиризм вăйлăрах, журналистикăра унăн публицистика енĕ çĕнтерсе пырать, прозăпа хастар аталанать.

Ĕç укçи, аванс илтĕм: 80 тенкĕ. Уйăхра 195 тенкĕ параççĕ, «Тракторостройринчен» нумайрах. Çитменнине тата гонорар пур: штатрисене 30, ютрисене 70 процент лекет. Мускав йĕрки çаплалла.

Чулхуларан Николай Иванов партшкул пĕтерсе килнĕ, ответлă секретарь. Дипломне, поплавок-знакне çуса пăхрăмăр, кăштах çеç. Хытă Тăвай ачи.

Максимов шофера вĕренесшĕн, машина илме хатĕрленет.

Утă, 2.

Ирпе улттăра Чĕмпĕр автобусĕпе Комсомольскине тухса кайрăм. Çĕнĕ ĕçри пĕрремĕш командировка. Малтан хĕвел хĕртетчĕ, Çĕрпӳ тĕлнелле çумăр пуçланчĕ, Канашран иртсен, чарăнчĕ.

«Октябрь ялавĕ» хаçат редакторĕ пулнă, халĕ райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕн заместителĕнче ĕçлекен Никандр Афанасьевич Якимова шыраса тупрăм, унпа Комсомольски çумĕнчи совхозра, унтан «Россия» колхозра фермăсем тăрăх çӳрерĕмĕр. Военком, майор, хăй аттине тăхăнтартса ячĕ. Хаçатăн ответлă секретарĕ, хамăн Йĕпреçри вĕренекенĕм, Володя Давыдов тупăнчĕ, отпускра иккен. «Комсомольский» совхозăн тĕп агрономĕ Вадим Васильевич Лисицын (Йĕпреç районĕнче эп ĕçленĕ вăхăтра «Гвардеец» колхоза ертсе пыратчĕ) çыпçăнчĕ тата. Вăрмана кайрăмăр. Унтан таврăнсан, кирлĕ çынсемпе калаçнă, райпо председателĕ Тумаланов патĕнче пулнă. Якимов килне илсе кайрĕ. Вăл финсен пухнă çуртĕнче хăйĕн хуçалăхĕпе пурăнать. Унта çитсен, аслатиллĕ вăйлă çумăр ячĕ. Никандрсен кил хушшинчи кăвакал чĕпписем пĕтрĕç. Амăшĕ питĕ типтерлĕ, япшар чĕлхеллĕ, таса чунлă Каçал енĕн хĕрарăм-амăшĕн кăмăллĕ, кăмака яшки пĕçерсе пирĕн ял хырăмне чăвашла тăрантарса май тупакан кил хуçийĕ пулнине эпĕ унчченех пĕлетĕп. Вăл, йĕпенсе пуçĕсене уснă кăвакал чĕпписене, карçынккапа йĕрсе йăтса кĕчĕ.

Володя Давыдов, хăйĕн поэтла пуçĕпе аслатие хăваласа ярса, шавлăн персе çитрĕ, пире вĕтĕ-вĕтĕ çумăр айне илсе тухрĕ. Эпĕ

килнĕ ятпа манăн кум нутри пуснă иккен. Лиризм туйăмĕпе унăн тăвăр хваттерне çитрĕмĕр. Аслатиллĕ çумăр уçăлса кайнă хыççăнхи хĕвел куллийĕ пекех яр-уçă Улатимĕрĕн кăмăлĕ. Йĕпреç хĕрĕсен-пикийĕсен саппунĕпе пит-куçне шăлса ывăннă хыççăн вăл тăван çĕрĕнче хăйне пăхмаллăх-савмаллăх чăтăмлă чиперкке, учительница тупнă. Пурăнаççĕ пĕрне-пĕри ăнланса, ача-пăча çеç мар, нутри те ӳстереççĕ.

Ирхине Геннадий Уткин редактор патне кĕтĕм. Вăйлă особнякра-уйрăм çуртра пурăнать. Парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕн, Тепловăн, пулнăскерĕнче. Ирхи тутлă апатпа хăналарĕç Куславккаран çавăтса килнĕ юратнă мăшăрĕпе. Редакцине çитсен, гонорар та илтĕм. Район хаçатне те эпĕ пĕрмаях çырса тăратăп-çке.

Давыдов автобуспа Шупашкаралла лартса ячĕ.

Çул çинче шухăшласа пыратăп. Çăкăр-тăварпа тараватлă кĕтсе илнĕ, ырă çул сунса ăсатса янă каçалсем çинчен манăн вĕт очерк мар, чуна хытарса, куçа хупса, публицистикăллă фельетон çырмалла, вĕсене пĕтĕм чăваш халăхĕ умĕнче намăслантармалла. Кайран ман çине вĕсем мĕнле куçпа пăхĕç? Хамăн тепре мĕнле пуçпа-куçпа пырса кĕрес? Униче алăкне питĕрсе хумĕç-и? Анчах нимĕн те тăваймастăн. «Капкăнра» манăн пулас хайлав ырăнĕ пуш-пушах. Ăна тултармасан мана кутран та, пуçран та шăршăнтарнă пушă лекет. Пушă аврине парти обкомĕ çирĕп тытса тăрать-çке.

Утă, 10.

Максимовпа писательсен Союзĕн сьездне кайрăмăр. Анатолий Емельянов докладне питĕ чее тунă, пурне те пĕрле пушăпа хĕнет, анчах пушă вĕçĕ ятарлăн никама та лекмест.

Николай Терентьев (чăваш халăх писателĕ ятне вĕсене Александр Артемьевпа иккĕшне тин çеç пачĕç) Михаил Юхмаран мăшкăлларĕ те вара: «Юхму мы образно называем спортсменом-многоборцем. Он везде и всюду старается преуспеть. Набирает помаленьку очки». Драматурги хуранне сăмсине чикнĕшĕн вăл Михаил Николаевичпа килĕшмест, пьесисем унăн начар, тет.

Георгий Ефимова, писательсен союзĕн парторгне, президиума лартмарĕç, кайран, сьезд партгруппинче, ăна Союз правленине сĕнесшĕн мар тата Мускава сьезд делегатне ярасшăн мар пĕр сехет çапăçрĕç, тет. Обком секретарĕ Александр Петров, пулăшас тесе, çак ыйтăва виçĕ хутчен сасăлаттарчĕ. Ефимова вăл

пурпĕрех çăлаймарĕ. Çыравçă тусĕсем-юлташĕсем кам мĕнлине обкомрисенчен çывăхрах ăнланаççĕ пуль çав.

Писательсем хушшинче «укçа вăрри» хунанă. Александр Галкин та çавăншăнах çуннă. Ун вырăнне паян «Тăван Атăл» редакторĕ пулма Георгий Краснова çирĕплетрĕç. Фантазиллĕ шухăшлавĕпе чап илет вăл.

Издательствăсемпе илемлĕ литература журналĕсен редакцийĕсене автор хайлавĕсене юсаса тӳрлетме-редакцилеме ирĕк панă, саккунласах. Анчах та унта - чикки пур. Галкинсем çав чикке пăсмалли çурăк тупнă. Редакцие пынă пĕр произведение те, тем пек чаплă пулсан та,- ятарласа пăсса юсамасăр кун çути кăтартмалла мар.

Паллă писательсеннех повесть-романне ятарлă майпа тĕрĕслесе, унтан-кунтан тĕккелесе, кăранташ палли тăваççĕ те... Ятарлă редакциленĕ тесе, алă пусаççĕ. Нимĕн те хирĕç калаймăн - чăнах юсанă пек. Автора тӳлемелли гонорар шутĕнчен вара хăйсем валли шăйăрса юлаççĕ. Тĕрĕссипе, автора çаратниех пулать-çке вăл.

Çавна Нурăс ен ачи, пĕрле ĕçлекен Георгий Ангер писатель сиснĕ, кирлĕ çĕре пĕлтернĕ. Шăв-шав тухнă, тăрă шыв çине кăлараканнине Галкин лачакана путарнă - майлакаласа ĕçрен хăтарнă. Эпĕ «Капкăна» пынă чухне шăпах коридорта çав шăвшав тăратчĕ. Чăваш юптаруçи Чавка - Чана Лексантăрĕ хăй те Крылов юптарăвĕн лачакине путнă-мĕн. Авă епле иккен вăл чунри курăнман икĕ питлĕх вăрттăнлăхĕ: сисмесĕр-туймасăрах çыннăн аллине кукăртать, куçне урăх тĕспе улăштарать, ĕмĕтне ямăтлатать. Шăпах «Капкăн» çăварне карнă та ĕнтĕ вĕсемшĕн... Николай Николаевич, чееленсе, асăрханса, пружинине вăйлах тытса тăрать, вĕсене унта каплаттармасть. Тĕрĕс тăвать-ши вăл кăмăл-сипет, тивĕç, хуравлăх енчен илсен?

Утă, 28.

Паян эпĕ - каллех строитель. Обкомăн политвĕренӳ çуртне тума кайрăм. КПСС Чăваш обкомĕн издательствине кĕрекен хаçат-журнал редакцийĕсенчи кашни коммунистăн строительсене темиçе кун пулăшмалла тет-и. Унта ĕç вăйĕ çитмест иккен. Пулăшни япăх мар-ха, сĕтел хушшинчен тухса вăхăтлăха алла ĕç хатĕрĕ тытни пире питĕ кирлĕ. «Советская Чувашия» тĕтĕрекенĕсемпе (хĕрарăмĕсем пурте пирус-сигарет мăкăрлантараççĕ кăна!) пĕрле кирпĕч йăтрăмăр, вăхăта пит уççăн, усăллă ирттертĕмĕр.

Утă, 30.

Кăнтăрла иртсен пиллĕкмĕш стройтрестран Петя Алексеев шăнкăравларĕ. Тунсăхлать мансăр. «Сирĕнпе ĕçлеме кăмăллăччĕ», - тет. - Çĕнĕ редактор Тазов маншăн кĕпе çумалли таз вырăнĕнче пек туйăнать». Томашов чăваш вырăнне Энвер Азизович Аблякимов тутар парткома ертсе пыма тытăнсан вĕсен çураçулăхĕ хавшани, «Тракторострой» чăн-чăн хаçат сăнне çухатма пуçлани çинчен хурланса калаçать. Тахçан çĕтнĕ премие илме пыма чĕнет.

59 тенкĕ пачĕç. Ку та юрать.

Георгий Краснов Атăл леш енчен каçнă. Пĕр-пĕрне çĕнĕ ĕç вырăнĕпе саламларăмăр. Семинарта («Илпек вăрманĕнче») пулнисем халь пурте йĕркеллĕ вырнаçса пĕтрĕç пулас, аван, тет вăл. Ĕçе çурла уйăхĕн çурринче тытăнать. Пирĕн пата, литература пайне, Крылов юптаруçă геройĕ Александр Галкин ссылкăна «канма» пырать иккен.

Ултавçă-«вăрă» ятне тивĕçнĕ Галкин редакторăн чи çывăх компаньонне Иван Иванович Лисаева «Ялав» журнала тĕртсе хăпартса, ун вырăнне «Тăван Атăла» Николай Григорьевич Григорьева вĕçтерсе антарчĕç саккăрмĕш хутран. Чăн-чăн камит лартрĕç писательсен Союзĕн правленийĕнче. США шпионĕпе Пауэрспа СССР Хăрушсăрлăх комитечĕн Абель разведчикне улăштарнă пекех. Галкинран укçине шыраса илнĕ, терĕç. Лисаевĕ вара хăйĕн хушамачĕн хӳри вĕçне те тыттарман никама та. Чăнчăн пурнăç юмахĕн сăнарĕ.

Çурла, 6.

Степан Лашманăн 85 çул тултарнине уявларĕç. Писательсен Союзĕнче, библиотекăра. Çын чылай пынă. Хăй аран-аран утать, арăмĕ çавăтся çӳрет. Калаçма начартарах калаçать. Куçĕ те хавшанă пулас. Президиумра-арăмĕпĕ иккĕшĕ,Илпек Микулайĕ, обкомăн культура пайĕн пуçлăхĕ Ольга Ивановна Талля.

Пухăвне Григорий Луч литконсультант уçрĕ. Илпек Микулайĕ, Василий Долгов, Владимир Ухли, Василий Сорокин (телевидени), Ипполит Иванов (ЧНИИ), асаилӳсем каларĕç. Николай Теветкел сăвă парнелерĕ. Леонид Степанов-Маяксем (Литфонд) кĕпепе укça пачĕ. Денис Гордеев («Коммунизм ялавĕ»), Иван Лисаев, Юрий Петров («Тăван Атăл»), Юрий Семенов («Ялав»), Владимир Кузьмин («Капкăн») - салам адресĕсем, Ольга Талля КПСС Чăваш обкомĕпе Министрсен Совечĕн Хисеп грамотине пачĕç.

Çурла, 14.

Ĕç эрни пуçланчĕ. Романпа ларма та вăхăт юлчĕ-ха. Александр Алексеевич заведующире ĕçлеме пуçларĕ, ăна чăнах литпай пачĕç. Ларасчĕ килте пĕр-ик çул кута хĕстерсе, ултав шăвшавĕ иртсе каясса кĕтсе. Выçлăх пĕтерет çав çынна. Каллех нумай-нумай автора куçран пăхтарать ĕнтĕ. Пурне те хăй майлăрах, хăй шайĕнче кăна çыртарасшăн пулас вăл. «Тăванатăлсем» пирĕн патран кукăр алăпа кăларнăскерне ĕçе ан ил, тесе Максимова малтанах кĕрсе каланă. Иккĕшĕ килĕшнĕ тĕк, мĕн тăвăн ĕнтĕ. Ман хамăн та вăл çынна ытлашши чун туртмасть, малтанах темле çӳлтен пăхса çӳрекен сивĕ куçлă пуçлăх пекчĕ те. Хамăн кăмăла тивĕçтермен çынпа ах юнашар ĕçлес килмест! Уншăн халĕ ман фельетон пайне куратор йĕркипе тытса пымалла пулать. Максимов мана малтан литпай хушса паратăп, тесе илĕртнĕччĕ. Таçтан тĕл пулаççĕ ман тĕле çавнашкал «çунса кайнă» пуçлăхсемпе редакторсем.

Максимов Куславккана кайрĕ. Эпĕ кунĕпех пӳлĕмре тăрмашса ларатăп. Çитес номер валли фельетонсем çитмеççĕ. Угольников йышшисен сăрмаланчăкĕсене çĕнĕрен туса, капкăнлатса-сăнарлатса вăхăта ирттерме тивет.

Халĕ пирĕн вырăсла икĕ страница тухать. Вĕсене Анатолий Финько «Крокодил» шайĕнче хатĕрлет. Капкăнçăсен те çав шая çывăхарах çитесчĕ.

Çурла, 19.

Паян 43 тултартăм. Тепĕр çулталăкран, демографсен палăртăвĕпе, çамрăклăх вĕçленет. Хăш-пĕр карьеристсем пек тӳп-тӳрĕ чашласа хăпармастпăр, диалектика саккунĕпе, пурнăç хушнă пек, спираль майлă майĕпен çĕкленетпĕр. Ку манăн Шупашкарти пиллĕкмĕш çаврăм - «Çамрăк коммунистран» кунта çити. «Капкăна» куçнăранпа килте Римма Ильинична та кăмăллă. Укçи-тенки те кирлех çав паянхи пурнăçра, çĕнтернĕ социализм турăмăр, анчах коммунизма ниепле те çитейместпĕр. Япали хаклă, укçи - йӳнĕ. Николай Максимов, Порфирий Афанасьев манăн паллă куна паллă турăмăр. Виçĕ журналист, хаçат мыскарисене аса илсе, чунтан савăнтăмăр.

Малтан ман пӳлĕме анлă коридортан кĕмеллеччĕ. «Молодой коммунист» çĕнĕ кӳршĕ пулать, терĕç. Редакторне нумайрах пӳлĕм кирлĕ пулнă иккен, вăл обком секретарĕпе Петровпа тавлашса-килĕшсе, «Капкăн» пӳлĕмне туртса илнĕ. Мана урăх çĕре куç-

арчĕç. Манăн анлă пӳлĕмрен Чабаев хăйне валли йышăну пӳлĕмĕ тутарать, пĕр сăрланă тутана, шеплешкене, саркалантарса лартать. Халĕ эпир Максимовпа шалта хире-хирĕç пӳлĕмре ларатпăр. Пирĕн те йышăну пӳлĕмĕ пур. Зина Иванова машинка кĕввипе кунĕпе юрлаттарать-ташлаттарать.

Авăн, 8.

Муркаш районне çĕрулми кăларма яраççĕ. Ял халăхĕ халь, патшалăх шучĕпе гаранти йĕркипе укçа тӳлеме тытăнсан, ĕçсе пĕç тăратса выртакан пулчĕ те, хула çынни çине шанса пурăнать. Епле канăç! Палиновпа Комарова виçĕ кунлăх «Герой» колхоза «Волгăпа» кайса ятăмăр.

Анатолий Быковпа Николай Яковлев художниксем пĕрпĕрне кураймаççĕ, пĕр-пĕринпе хирĕçкелеççĕ. Таланчĕ пысăк та.. Ун пек пулсан, мĕн тума пĕрле ĕçлемелле? Лукич Быкова илемлĕх пайĕн пуçлăхĕнчен сирпĕтесшĕн. Халлĕхе ун вырăнне лартмалли çын çуккă, тет тĕп редактор. Яковлевне вăл пурпĕрех унта илмест. Быковĕ тата гонораршăн хытă çунать.

Авăн, 11.

«Хатĕрпулсем» саккăрмĕш хута куçрĕç. Пирĕн улттăмĕш хута «Агитатор блокночĕпе» (парти обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан пĕчĕк «журнал») «Молодой коммунист» анчĕç.

Авăн, 23.

Хветĕр Агивер ĕçе тухнă. Георгий Красновпа ман пата калаçма кĕрсе ларчĕ. Георгий Васильевич халь Сăр тăрăхĕнчи аваллăх пăтранăвĕ çинчен роман çырса пĕтернĕ, кăçалах хăй патĕнче пичетлет. Маттур вăл, Емельяновсенчен иртсе кайрĕ. Анатолий Викторович шĕвелсе юлчĕ, хăйсен анкарти хыçĕнчи Салука вăрманĕнчен шаларах кĕреймест. Агивер калать: «Николай Максимовра çын ăшши сахал. Пысăк çынна тухсан вăл Лисаевсемпе Петровсенчен хытăрах таптама пултарать.»

Юпа,1.

Писательсем паян шăп. Ĕнер вĕсен партпуху пулнă. Партбюро секретарьне Лаврентий Таллерова суйланă. Агивере партбюро хутне кĕртмен. Ăна бюрона суйлама сĕннине, Емельянов, пуху тытса пыраканни, илти хăлхана илтмĕш пулса, çырмасăр хăварнă, тет. Хветĕр кăмăлсăр. Анатолий Викторович тăрăшнипе Георгий Ефимова, кумне, вĕрентекенне-пулăшаканне, пурпĕрех партбюрора хăварнă. Хирĕç сасăлакансем чылай пулнă пулсан та. Мĕн тума кирлĕ-ши вăл вĕсене партбюрора тăни? Ячĕсене сулăмлатма пуль çав.

Журнал пĕр уйăх юлса тухать. Икĕ типографире пичетленипе. Хамăрăн издательство типографийĕнче офсет цехĕ тин кăна хута каять. Тĕслĕ-тĕслĕ хуплашка кӳршĕри пĕрремĕш типографире пичетленет. Ытти журналсенчен уйрăлса хамăр патра профсоюз комитечĕ йĕркелерĕмĕр. Ертсе пыма мана шанчĕç. «Тăван Атăл», «Ялав», «Хатĕр пул» профком председательне Коновалов-Агивере суйланă.

Агиверпе, Красновпа калаçма та кăмăллă. Сăмах-юмахĕ те вĕсен усăллă - литература çинчен.

Акă тата Алексей Крысин пырса кĕрет те... Вăл «Коммунизм ялавĕнче» парти пурнăç пайне миçе çул улшăнмасăр тытса пырать ĕнтĕ. Тракторостройран мĕн чухлĕ материал çырса патăм, халĕ те пулăшатăп. Кумĕ пур ун - Герман Желтухин. Хула тăрăх пĕрле чупаççĕ: çĕрĕн-кунĕн, эрни-эрнипе, уйăхĕ-уйăхĕпе... Желтухинĕ Чăвашгизра ялхуçалăх литератури кăларассипе ĕçлет. Мана та кĕнекесем валли тăвата очерк çыртарчĕ. Алексей Гаврилчне промышленность пайĕн заведующийĕ Валерий Николаев ура хурса пырать. Ман пата кашни пымассерен Алексей çавăн çинчен кӳренсе калаçмасăр лăпланмасть.

Журнал çитес çулшăн сахалтарах сарăлнă. Ыран пурне те районсене агитмассăллă ĕç тума яратпăр.

Чӳк, 4.

Паян Атăл пĕвелеме пуçларĕç. Ун пирки ирех Мускавран пĕлтерчĕç. Республикăра уяв.

Кăштах хамшăн та ĕçлес тетĕп. Çынсем пушă вăхăт тупса шахматла выляççĕ, эпĕ машинкăпа роман пичетлетĕп.

Пропагандист пулнă та, политзаняти ирттертĕм. Галкинпа Комарова, Палинова тавлаштарса калаçтартăм. Александр Алексейчĕ ах чакаланса ларать, ним те килĕшмест ăна.

Василий Ермолаев художник Быков пирки обкома çăхав çырнă. Ыйтăвне сӳтсе яврăмăр. Штатра тăманнисене ум пӳлнĕшĕн Анатолий Александровича айăкран сенĕк лекрĕ.

Палинов Максимовпа иксĕмĕре çула май Хусанкай урамне хăнана илсе кĕчĕ. Валентинăн йытă çурийĕ ӳссе кайнă. Коля ăна алăра йăтса ларать. Эпĕ ытлах кăмăлламастăп апат сĕтелĕ хушшинче анчăкпа ларма. Кушак çури пулсан, урăхларах.

Чӳк, 14.

Çирĕм тăваттăмĕш номĕре набора ятăмăр. Вырăсла хушма страницăсене çĕнĕ çултан кăларасшăн мар. Обкомра ырласса

кĕтетпĕр. Анатолий Финько хăйĕн ывăлĕпе Антошкăпа Ленинграда куçса кайрĕ те, ун вырăнне «вырăс» илмерĕмĕр. Финько питĕ лăпкă, ăнланулла, пултарулла вырăс. Унпа эпир пĕр вăхăт «Советская Чувашия» редакцийĕнче те пĕрле туслă ĕçленĕччĕ, кунта та ăнтараттăмăр. Пÿлĕмĕ пушанса юлсан, тунсăх пусрĕ.

Чÿк, 17.

Георгий Красновпа Хветĕр Агивер литература ыйтăвĕсене шĕкĕлчеме чĕнчĕç. Пулăшаççĕ пек-ха мана вĕсем халлĕхе, шанчăклă çын пекех туйăнаççĕ.

Пысăк калăплă, анлă пĕлтерĕшлĕ произведенисемпе çеç ятлă пулать писатель тесен, Агивер кăштах кÿренчĕ. Хăйне куçранах тĕртсе илтĕм те, юратмасть çăмарти чăххине вĕрентнине. Ытларах мăнкăмăлланасшăн, шутсăр вăйлă çын пуласшăн. «Мана çĕнтерекенни тупăнман-ха ку таранччен», - тесе мухтанать.

Красновĕ чеерех, çĕнтерме хастарланар-ха апла тесе, черккине çĕклет, службăра хуравлă ĕçре нумай тытăнса тăмалла мар, çырма чăрмантарать, тет те йăлл кулать.

«Ялаври» Вася Петрова халĕ мăшкăлласа Кзот Ваççи теççĕ. Кзот тени вăл - кодекс законов о труде. Профсоюзра та, редактор çумĕ пулса ĕçлесе те çирĕп йĕркешĕн кĕрешсех хушма хушамат тупрĕ. Писательсем хушшинче ăçтан çирĕп йĕрке тăван? Вĕсенчен кашниййĕ - хăй патша.

Николай Николаевич КПСС Чăваш обкомĕн издательстви урлă «Запорожец» туянчĕ. 5200 тенкĕ.

Григорий Лучăн Александр Петров кумĕ ячĕпе хăратса çÿресси пĕтрĕ ĕнтĕ. Вĕсем малтан пиртен пайтах мăшкăлларĕç, халĕ хăй, хавшак çырнă пирки, пирĕн куçран пăхать. Çапах мăнкăмăлланма пăрахмасть, «Капкăна» хурласа çÿрет.

Раштав, 12.

Хветĕр Агивер 38 çул тултарчĕ. Николай Максимовпа иксĕмĕре хăй пÿлĕмне чĕнчĕ. Хăна-вĕрле пухмастăп, терĕ. Хăйĕн нихçан уйрăлми тусне, Çамрăксен театрĕнчи Алексей Васильев режиссера, пулă ăшаласа пыма хушнăччĕ, телефонпа. Алексей Григорьевич Пичет çуртĕнчен инçех мар, Мир проспектĕнче пурăнать. Çитрĕ хайхискер. Алăка уçрĕ те, «Тăван Атăлта» ĕçлекен ентешĕпе-тантăшĕпе, Патăрьелĕнчи Каншел ачипе Ваçлей Игнатьевпа иккĕшĕ, пирус мăкăрлантарса кĕреççĕ. Агивер Игнатьева калать: «Эс, Ваçça, кĕместĕн». Лешĕ çĕмĕрсех кĕчĕ,

Максимовран ыйтать: «Ярса пар-ха, Коля?» «Ман мар эрехĕ, эпĕ хуçа мар», - тет Максимов. Пирусĕсене урайне пăрахса пушмакĕсемпе пусса сӳнтереççĕ, вăрçатăр пулсан, туртмастпăр, теççĕ. Агивер тарăхрĕ те: «Васильев юлташ, эсĕ те тухатăн!» - терĕ. Иккĕшне те тĕртсе хăваласах кăларса ячĕ, пуллине илсе юлчĕ, ăна çисе ятăмăр.

Çав Игнатьевшăн лайăх çын шар курчĕ. «Ун пек, Ваçлей Игнатьев пек çынна, чăваш писателĕсем хушшинче чылай пулать курманччĕ-ха ку таранччен...» - черетлĕ черкке çĕклерĕ менелник хуçи.

Раштав, 19.

Облаçри парторганизацин XXXVIII конференцийĕ уçăлчĕ. Андриян Николаев килнĕ, унта сăмах каланă.

Финьков икĕ калавне кĕнеке валли куçартăм. Кунта, журналта, хаçатри мар. Сахалтарах та пахарах ĕçлемелле.

Александр Галкин хамăр патра (22№) «Юман» юптару пичетлесе кăларчĕ те, пĕтĕм Пичет çуртне шавлаттарчĕ. Пĕрле «Тăван Атăлта» ĕçленĕ заместителĕпе Иван Лисаевпа хăй çинчен. Хăй - Юман ĕнтĕ. Саккăрмĕш хутран Валентин Бурнаевские ман пата журнал илме янă. Парса ятăм. Агивер вĕсенчен вăрттăн йăхлатсах кулать.

Паян çитес çулăн виççĕмĕш номĕрне (февраль) набора ятăмăр. «Чувашия» издательство типографийĕнче офсет цехĕ хута кайнăранпа ĕç лайăхланчĕ, 24-мĕш номер тухса кайрĕ, çĕнĕ çулăн пĕрремĕш номĕрне çапса пĕтереççĕ.

1981 çул.

Ĕç кĕнекинчен.

Кăрлач, 6.

Çуралнă кунсене ĕçре парне парса йĕркелес терĕмĕр. Йĕпреçре чухне вăл пирĕн питĕ лайăх пулса пыратчĕ. Паян шăпах тĕп редакторăн, Николай Максимовăн, çуралнă кунĕ. 37 тултарчĕ. Ăна 6 тенкĕлĕх парне илсе патăмăр, саламларăмăр.

Хăй кайран хăналарĕ. Унта Юрий Семенова, Хветĕр Агивере, Порфирий Афанасьева, хăйсен, хăй çуралнă Кăшнаруйĕнчи (Канаш районĕ) Николай Терентьева, мана тата хамăрăн ответлă секретаре Николай Иванова чĕннĕ. Георгий Краснов Мускавран таврăнман, çавăнпа пулаймарĕ. Сăмах ăстисем юмах çаптарчĕç, кĕнекесем парнелерĕç.

Кăрлач, 8.

Максимов Пушкăртстанри «Хэнек» («Сенĕк») журнал редакторне, Марсель Салимова кĕтет. Лешĕ Мускавран таврăнать, çула май Шупашкара, Йошкар-Олана, Хусана кĕрет.

Çумăрлă юр çунипе, тĕтрепе ĕнер аэропорт каçченех хупă тăнă. Ирпе Мускав самолечĕпе хăна çитнĕ. Вăл, 1949 çулта çуралнăскер, йăрăскер, университет, партшкул пĕтернĕ. Ăна ирех редакцире кĕтсе илтĕм. Хамăр коллективпа тĕлпулу ирттертĕмĕр. Апат çиме «Россия» хăна çуртне кĕтĕмĕр. Эпĕ поликлиникăна справка илме (манăн Сочине пултарулăх çуртне каймалла), Максимов, Иванов, Салимов Сĕнтĕрвăррине кайрăмăр. Икĕ градус ăшă. Çил вăйлă, Йăлăм енне кусрĕ.

Вĕсем нуша курнă. Сĕнтĕрвăрринчен Атăл урлă çурран каçнă (Ленина Разлив урлă каçарса янă пек) Кокшайска. Унта марисен «Пачемыш» редакторĕ Петр Речкин тĕкне татнă, ăшаламан чăхпа кĕтсе илнĕ. Çурран каялла каçнă чух ăсатакансем çилтăманра çĕтсе кайнă, урисене йĕпетсе пĕтернĕ. «Николай Иванович чиперех малта siksе пыратчĕ, - каласа парать Максимов. - Сылтăм çырана çитерехпе, шыв кӳлленчĕкĕ сарăлса выртнине курсан, эс тĕп редактор, сан пире çул кăтартса малта пымалла тесе, вунă утас пек хыçала, дистанци тытма, юлчĕ». Хăйсем йĕркеллех каçнă, Шупашкара çитнĕ, тĕрĕс-тĕкелех.

Нарăс, 11.

Редакторăн кăмăлĕ начартарах, Александр Галкин пирки, ăна «Капкăна» ĕçе илнĕшĕн, партин Тĕп Комитетне çăхав янă, тет. Юхма Мишшин пирĕн патра пичетленнĕ кулăшла калавĕ пирки те çав адреспах хурласа çырнă-мĕн. Хуравĕсене обком панă. Материалсене тĕпленрех, лайăхрах хатĕрлемелле.

Кунĕ питĕ аван. Çуркуннехи пек хĕвел, ăшă. Ĕçлес, пурăнас килет. Каçпа ман пӳлĕме Николай Николаевич, Мускавран килнĕ Виталий Енĕш тата унăн хулакорĕ Михаил Лашин строитель килсе çитрĕç тинтерех уçăлнă «Эгер» ресторантан, тӳрех сĕтел çине шуррине тата шампанскине кăларса лартрĕç. Пулчĕ шапăлтатса лармалăх.

Килте иртнĕ çулхи ĕç укçине шутласа пăхрăмăр. Манăн уйăха 283 тенке ларнă. Маншăн ку чи нумай ĕçлесе илнĕ çулталăк пулчĕ пулас.

Нарăс, 16.

Писательсем лăпланман, Галкина çине тăрсах тапăнаççĕ, хăй малтан «Тăван Атăлта» хĕртнисем, путарма пуçланисем. Юрать

те пуль журналпа пуйса юлнӑ сӑвӑҫ-улпута. Ытла авторсем ҫине жирафла пӑхать. Эпир кури куҫа курмӑш тунине пула-ши, «тӑшманӗсем» ҫинчен «Капкӑнра» юптару хыҫҫӑн юптару кӑларать, лешсене шӑртлантарса пырать. Ҫавна пула пирӗн журнал ҫине те хура ӗмӗлке ӳкет.

Палиновпа Быков Элӗкре «Капкӑн» куравне йӗркеллӗ тӑвайман, тӗлпулӑвне шавлӑ ирттереймен.

Нарӑс, 17.

Парти пухӑвӗнче Максимов редактор доклад турӗ. Калаҫу ытларах пӗлтӗрхи 21-мӗш номӗрте пичетленнӗ «Пӳлме пултӑр туп-тулли» хайлав пирки пычӗ, авторне асӑрхаттарса хӑвартӑмӑр.

Ку материала редактор отпускра чухне эпӗ Федор Комарова ҫыртарнӑччӗ. Хӑш района суйласа илессине (критика географине пӑхӑнма, йӗркелеме тӑрӑшатпӑр) Николай Николаевичпа малтанах калаҫса татӑлнӑччӗ-ха. Тырпул туса илессипе те, уя тислӗк кӑларассипе те Тӑвай районӗ кайра пырать. Айӑплавӗ-критики тӗрӗсех. Ӑна райком та йышӑннӑ. Пӗрремӗш секретарӗ каннӑ май, хуравне вӑхӑтра ярайманӗҫ. Отпускран тухнӑ Павлов телефонпа кӳренсе калаҫрӗ. 1979 ҫулта Виталий Енӗш вӗсене аш-какайпа хытӑ лектернӗ пулнӑ. Халӗ Комаров ҫунтарнӑ. Аван ҫырнӑччӗ ачи. Хуравӗ те йӗркеллех килчӗ.

Ҫулталӑк кӑтартӑвӗсем тӑрӑх района, темле майпа, республикӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне пачӗҫ. Ун хыҫҫӑнах пирӗн ҫинчен Тӑвайран обкома ҫӑхав янӑ.

Хаҫатсемпе журналсенче ӗҫлекен коммунистсен пӗрлехи пухӑвӗ пулчӗ. Обком секретарӗ Александр Петров хӑйӗн докладӗнче ҫак пӑтӑрмахлӑ ӗҫ ҫинчен асӑнчӗ, капкӑнҫӑсене асӑрханулӑрах пулма аса илтерчӗ. Пичет секторӗ ку ыйтӑва партпухура сӳтсе явма хушрӗ.

Акӑ мӗншӗн лекрӗ фельетон авторне пушӑ вӗҫӗ.

Нарӑс, 23.

Тракторостройран кварталта пӗрре кулӑш-пулӑш кӑларӑмӗсем пама палӑртрӑмӑр.

Александр Угольников та «Капкӑнра» ӗҫлет. Ӑна Муркаша ятӑмӑр. Пӗвеленӗ хыҫҫӑн Атӑл хӑпарнипе шыв айне пулакан ялсен кун-ҫулӗ ҫинчен эрнере те пӗр йӗрке ҫырман вӑл.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси - ялти паянхи ударлӑ фронт. Ун пирки нумайрах ҫырма палӑртрӑмӑр.

Кун кĕнекинчен.

Пуш, 6.

Ирех Николай Лукичпа Йĕпреçе выставкăна капкăнçăсен ўкерчĕкĕсене тиесе кайрăмăр, вырнаçтартăмăр. Вĕсен халĕ культура çурчĕ çĕнни, питĕ чаплă. Киввине, йывăçран тунă икĕ хутлине, лайăх астăватăп. 1974 çулхи мăнкун каç çунса кайнăччĕ. Чиркў вырăнĕнчи культура вучахне Турă курайман-ши?.. Кинобудки йывăççем хушшинче халĕ те палăк пек ларать. Унта районти киномеханиксем пухăнаççĕ.

Максимовăн хуçăк кăмăлĕ çаплах сыпăнмасть-ха. Çăхавсем, йăнăшсем, вăрттăн тапăнусем умлă-хыçлă пулса пычĕç. «Мĕнле сăлтав тупса кунтан тухса тарас», - тет. Тĕп сăлтавĕ халлĕхе çуккă-ха. Ан та пултăр. Ун хыççăн,тен, хăйĕннех Галкин пек ĕç шыраса çўремелле пулĕ. Обком секретарĕ Петров ăна та халех вырăнтан тапратма шутламасть. Çамрăк, пултарулла редактор, тет.

Пуш, 9.

Ĕнер Николай Никитин вилсе кайнă. Икĕ уйăх ĕçменччĕ, кĕçнерникун таçта мехлесе лартнă, эрнекун хăйсен подьездĕнчех ўксе пуçне амантнă, терĕç. Пенсире çулталăк та пурăнаймарĕ.

Пуш, 10.

Хамăр капкăнçа Николай Никитина пытартăмăр. Килĕнче икĕ арăмĕ те пуç вĕçĕнче юнашар ларчĕç. Эпир, «Коммунизм ялавĕ» (вăл унта ĕçленĕ), журналистсен Союзĕ чечек кăшăлĕсем хутăмăр. Çил-тăман тухрĕ.

Пуш, 16.

Ĕçе пырсан Угольников çăрăлчăкĕпе лартăм. Ăçтан тупнă ăна Лучсем, Максимова парне парса хăварнă. Фельетон çырма ниепле те вĕренеймест, тĕрĕссипе, пулмасть унран кулăшпа ĕçлесси. Чисти йыт пулли пекскер. Çын шучĕпе тăранса пурăнаканскер. Хайлавне туса патăм, каять, уншăн вăл 35-40 тенкĕ гонорар илет, пилĕк куншăн - командировка укçи. Уншăн икĕ эрне çунтарнă. Эпĕ виçĕ сехет чакалантăм.

Çынăнне майласах, картне лартсах вăхăт иртет. Художниксем (Быков) сĕтел хушшинчен тухмасăр уйăхра икçĕр-виççĕр тенкĕ гонорар майлаштараççĕ, эпĕ... Гонорар йĕркине туса çитереймерĕмĕр. Чакаланас, юлташсене вăрçтарас килмест. Вак-тĕвек ыйту вăл, теççĕ те... Юрĕ, вак-тĕвек пултăр. Эпĕ, тĕрĕссипе, нихçан та, ниçта та пысăк гонораршăн çунман. Мана çитет.

Мăнна хапсăнсан, пĕчĕкки те пулмасть. Чăхла пĕчĕккĕн сăхсах тăранăпăр.

Пуш, 25.

Александр Угольников Муркашран темскерсем лăпăртаттарса илсе килнĕ. Пĕрне Николай Иванчпа аран-аран «Капкăн» шайне çитертĕмĕр. Йăлт çĕнĕрен юсаса тăвас пулать. Вĕсем укçа çеç илсе лараççĕ - ним усси те çук.

Ĕç кĕнекинчен.

Пуш, 26.

Парти пухăвне обкомăн пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕ Михаил Васильевич Шутин килчĕ. КПСС XXVI сьезчĕн материалĕсемпе Максимов доклад турĕ.

Галкин хăйĕн литература пайĕ çинчен асăнмарĕ, фельетон пулмасть пирĕн тесе таçта шалах кĕрсе кайрĕ. Вĕçĕнче тин паллă пулчĕ, вăл иккен авалхи «тусне», хăйне «Тăван Атăл» редакторĕ чухне тăрă шыв çине кăларнă Георгий Ангера çапса хуçасшăн, ун çинчен пире фельетон çыртарасшăн, тĕрĕссипе, çын аллипе кăвар туртасшăн.

Парторганизаци секретарĕ Николай Иванов та, хăй фельетон мĕнне пĕлменскер, пире чиперех фельетон çырма вĕрентет. Максимов пуху хӳринче ла-айăх çатлаттарчĕ вара вĕсене: «Пӳлĕмре вĕрентсе ларнипех пулмасть, хăвăрăн çырса кăтартмалла тĕслĕхшĕн».

Шутин рейдсем те ирттермелле, тет. Художниксемпе редактора ярса илчĕ. 1980 çулхи 14-мĕш номерĕн умри хуплашкине Анатолий Быков ӳкерчĕкне лартнăччĕ. Мăн хырăмлă арçынпа мăнтăр купарчаллă хĕрарăм, ĕç вăхăтĕнче, Атăл хĕрринче хĕртĕнеççĕ. Арçыннине вĕтĕ йытă ури тупанĕнчен çуллать. Лешĕ калать: «Эсĕ те çитрĕн-и-ха, Сидоров?» Кăçалхи 5-мĕш номерти умри хуплашкара пичетленнĕ Быковăн карикатуринчи самăр хĕрарăм арçынна мăйĕнчен ыталаса илнĕ, чуптуса: «За сапоги», «За кофту», «За колье», «За кольцо», «За серьги», «За туфли», «За платье», «За доху», «За шляпу» тесе тав тăвать. Ӳкерчĕкне «Юрату паллисем» ят панă.

«Эп хам пулсан, çак ӳкерчĕксене хуплашкана, тӳрех пурне те курăнмалли çĕре, лартас çук», - йĕплесе илчĕ Шутин. Вĕсемшĕн редактора хăй патне миçе чĕнтернине, мĕнле тарлаттарнине шарламарĕ. Мана та пĕрле сĕтĕрсе пынăччĕ.

Авă мĕнле хуралçăсем-хăравçăсем тăраççĕ пирĕн пуç тӳпинче.

Ака, 3.

Журнал 82 пине ҫитрӗ, эпӗ ӗҫлеме пуҫланăранпа икӗ пин хутшăнчӗ. Вăл хамăр республикăра ҫеҫ-и, пӗтӗм ҫӗршывӗпех саланать.

Ҫапах та пирӗн, редакцире ӗҫлекенсен, сатирăпа кулăш лаҫҫи мӗнле хӗм сапнине хамăр куҫпа курас, халăхра ун ҫинчен мӗн калаҫнине чӗрӗ хăлхапа илтес килет-ҫке. Ҫавăнпа час-часах районсене, хуласене, ӗҫ коллективӗсене тухса ҫӳретпӗр. Ҫапла эпир, ҫурхи хӗвел йăл кулнă кун, Йӗпреҫ енне ҫитсе тухрăмăр. Малтанах районти культура керменӗнче район ҫыннисем уйăх ытла Анатолий Быков, Николай Яковлев, Василий Ермолаев, Георгий Яковлев, Юрий Смирнов, Илья Бородкин, Валерий Игнатьев. Иван Владимиров ӗҫӗсемпе паллашма пултарчӗҫ, вӗсене тивӗҫлӗ хак пачӗҫ.

Пире КПСС райкомӗн идеологи секретарӗ Христина Сергеевна Башкирова кӗтсе илчӗ. Тӗлпулăва шкул ачисенчен пуҫласа ватăсем таранах пычӗҫ. Редакцин паянхи ӗҫӗсемпе, малашнехи планӗсемпе паллаштартăм. Николай Яковлев, журналăн илемлӗх редакторӗ, карикатуристсен пултарулăхӗ, «Капкăна» мӗнле кăларни ҫинчен каласа пачӗ. Литпай пуҫлăхӗ, чăвашсен ăста кулăшҫисенчен пӗри Александр Галкин, журналăн активлă авторӗ Василий Самойлов поэт хăйсен йӗплӗ сăввисене, юптарăвӗсене, пародийӗсене пикенсех вуларӗҫ. Эпӗ те вырăсла «Столб» калавпа култартăм.

«Эпир сире пит хавас итлерӗмӗр, сирӗн пултарулăхпа тăрăшсах паллашрăмăр, халӗ эсир пире итлӗр», - терӗҫ те йӗпреҫсем, пуҫларӗҫ хăйсен сăмахне.

Мухтаса та илчӗҫ малтанлăха. «Капкăн» корреспонденчӗсем ятарласа ҫӳресе ҫитменлӗхсене ҫивӗччӗн питлени, вӗсене вăхăтра пӗтерме пулăшни ӗҫҫыннисен кăмăлне каять иккен. «Капкăн» пулăшнипе» тунă усăллă ӗҫсем те халăхшăн лайăх. Ҫан-ҫурăм кӗҫӗтсен те «Тип мунчана» лекиччен килти хура мунчарах ҫăвăнса сипленме хатӗр пурте.

Мухта-мухтах пире айăкран тӗртсе те илчӗҫ. Капкăнăн шăлне татах те ҫивӗчлетме ыйтрӗҫ. Тата лайăхрах сăвăсемпе юптарусем, калавсемпе фельетонсем, кулăшсем ытларах кирлӗ, терӗҫ. Культура ыйтăвӗсене те, уйрăмах ҫамрăксен канăвне мӗнле йӗркеленине, куҫран вӗҫертме юраматсь-мӗн. Карикатурӗсенче те чăнлăх, илемлӗх, витӗмлӗх енӗсем ҫитсех пӗтмеҫҫӗ. Капкăн ҫапать тӗк, ун хыҫҫăн чăннипех усăллă йӗр юлтăр! - ҫапла

пĕтĕмĕшле сĕнӳ пачĕç Йĕпреç районĕнчи вулакансем-куракансем.

Тĕлпулу вĕсемшĕн те, пирĕншĕн те усăллă иртрĕ. Редакци сĕнӳсене шута илĕ.

Ӳкерчĕксен выставкине, вĕсем ыйтнипе, тата тепĕр эрнене хăвартăмăр.

Ака, 9.

Редколлеги ларăвĕнче Николай Иванов кăçалхи тăвата номĕре тишкерчĕ. Ман фельетонсене тата съезд ячĕпе çырнă сатирăллă материалсене тăрăнчĕ. «Съезд» сăмах пилĕк хутчен, «пилĕкçуллăх» пиллĕк тĕл пулать, тет. Аптриш, каллех фельетон çырма вĕрентет.

Тишкерӳçĕ литпая та ярса илчĕ. Виссарион Синичкин çырнă «Çат та пат тунать» калава «ăнланмалла мар калав», терĕ. Ку вара - тĕрĕсех. Галкин ман пата пырса парсан, ăна эпĕ редакцилесе юсанăччĕ, самаях саваласа якатнăччĕ. Александр Алексеевич хăй çавна «вуланакан, динамикăллă калав», тет. Йăнăшать вăл. Пĕлсех, хайлавĕ начаррине туйсах, хăйĕн тивĕçне чакарасшăн мар. Ун алли витĕр епле-ха начар япала тухать? Галкинăн «Юманпа» «Шăрчăк» юптарăвĕсене пĕрпеклĕхшĕн, пĕр çынсенех питлесе çырнăшăн критиклерĕ. Вĕсем шăпах Лисаев ушкăнне хирĕçлескерсем.

Ыттисен сăмахĕ çапла пулчĕ:

Аркадий Эсхель: «Журналта каçса кайса вуламалли сăвă-калав çук, уйрăмах - путлĕ сăвă. Александр Савельев-Сасăн «Шăтăк витре» калавĕнче кăшт çимеллĕх çимĕçĕ пур пек. Денис Гордеева писательсен Союзне те илтĕмĕр, чылай ăнăçлă ĕçлет, анчах «Атăла çăварлăхлар» калавĕ начар. Пирĕн редактор ялан хăйĕн шухăшне пĕлтерме васкамасть».

Николай Максимов: «Юрĕ, пĕлтерĕп кĕскен. Пурин те пирĕн чăн-чăн «Капкăнла», Иван Мучилле ĕçлеме тăрăшмалла. Съезд çинчен çырнă чухне «съезд» сăмахсăр материал хатĕрлеме çук ĕнтĕ. Ăна мĕнле сăмахпа улăштарăпăр?»

Ака, 15, юнкун.

Вырсарникун çĕрле Чăваш АССР халăх писателĕ Николай Филиппович Ильбеков - Илпек Микулайĕ вилсе кайнă. 66 çула та çитеймерĕ фронтовик-писатель.

Электроаппарат завочĕн Яков Ухсай ячĕллĕ культура керменне аслă юлташăмăрпа сывпуллашма кайрăмăр. Халăх нумай. Камшăн хуйхă, камшăн кулă, тенĕ пек, тулта, ирĕклисем, пĕр-

пĕринчен тăрăхласа тăраççĕ. Аркадий Малов хĕрарăм пухчи пек карттус тăхăнса пынă. Георгий Орлов: «Аркашка вăл нихçан та арçын япали тăхăнса курман пуль...» Георгий Краснов лĕхлетсех кулать. Орлов малалла калать: «Виссарион Синичкин вăл ĕлĕкхи уполминзаг агенчĕ пек». Лешĕ сăран пальто тăхăннă та, чисти çавăн йышши хăрушă çын пекех (ача чухне эпĕ хам та курнă вĕсене), пĕртте литература çынни манерлĕ мар.

«Коммунизм ялавĕнче» Илпек Микулайне асăнса кăларнă материалсенчен Хветĕр Агиверĕн «Асăнсах тăрăпăр» ятли чуна ытларах хумхантарчĕ.

«Хурлă эпир паян, куççуллĕ, - тенĕ унта. - 1977 çулхи çуркунне писательсен Атăл леш енчи пансионатĕнче республикăри çамрăк прозаиксен канашлăвĕ иртнĕччĕ. Ăна Николай Филиппович ертсе пычĕ. Çамрăк йыш вара çавăн чухне, хальхи пекех астăватăп-ха, хăйне, шанчăка тӳрре кăларма, «Илпек вăрманĕ» тесе каланăччĕ. Вĕçне çитичченех пулаймарĕ вăл çавăн чухне пирĕнпе, чирне пула Шупашкара иртерех каçса кайрĕ.

Питĕ тăрăшатчĕ вăл тăван литературăн ыранхи кунĕшĕн. Пулăшас тĕллевпе, алçырусене те хăйпе пĕрлех илсе кайнăччĕ. Халĕ, акă, çавăн чухне вăл ман пата хăварнă çырăвне вулатăп та, вăл питĕ пархатар чунлă пулнинчен тĕлĕнетĕп. Мĕн чухлĕ ыр кăмăл унта, çамрăка алă тăсса парассишĕн хыпăнни. Çитменнине, çамрăксене ӳлĕм хăйĕнпе çыхăну тытма килти адресĕ, телефонĕ таранах çырса хăварнă вĕт-ха. «Пурин умĕнче те парăма татма тăрăшăп, йывăра ан илччĕр, ан çилленччĕр», - хăй сывă марришĕн пăшăрханса çырса хăварнăччĕ вăл.

Тайма пуçăм сана, хаклă Микулай тете. Сана асăнсах тăрăпăр.»

Ака, 18.

Коммунизмла субботник. Издательство складĕнче, чукун çулпа улттăмĕш çухрăмра, тĕрлĕрен ĕç турăмăр: Максимов, Иванов, Галкин, Палинов, Николай Лукич, Комаров. Хĕрарăмсене чӳрече çума хăвартăмăр.

«Ялавсем» чееленсе редакцирех пытанса юлчĕç. «Хатĕр пул» йĕкĕчĕсем те вĕсемпех. «Тăван Атăл» пилĕкпе аптранă. Писательсем хушшинче мораль тĕлĕшĕнчен пăсăлнă çын нумай. Журналистсем обществăлла ĕç енĕпе вĕсенчен темиçе хут çӳллĕ шайра тăраççĕ.

Ака, 30.

КПСС XXVI съезчĕ хыççăн Максимовпа пĕрле фельетонсем валли апат-çимĕç программине пурнăçлакансене пулăшма,

Анатолий Быковпа (сулахайран) Николай Иванов пулăçсен кулăшла самантне 1992 çулхи çурла уйăхĕн 6-мĕшĕнче Юрий Дмитриев çатлаттарса илнĕ.

«Йĕплĕ салма хуранĕ» рубрика уçрăмăр. Ун валли материалсем хатĕрлерĕм. Номĕре набора панă чухне Николай Иванович вĕсене 9-мĕш страницăна лартасшăн пулчĕ. Тĕлĕнмелле. Тавçăрулăх катăкрах иккен ответлă секретарĕн.

Çу, 12-13.

«Плакат» издательство семинарне Мускава Максимовпа Быков кайрĕç. Яковлевăн та ĕмĕчĕ пурччĕ те... Чукун çул вокзалĕнче халăх йăлипе ăсатса ятăмăр.

Политвĕренӳ çулĕн юлашки занятине ирттертĕм. Леонид Брежнев докладне вĕренсе пĕтертĕмĕр. Галкина хальхи вăхăтри пропаганда кăмăла каймасть. Сенсаци кирлĕ, тет. Ватта кайнăскерне, вăрăм укçа хăвалама хăнăхнăскерне, килĕнчи лăпкă пурнăç çеç кирлĕ те. Вырăсла каласан: «мозолит всем глаза, сидел бы дома, писал себе спокойно разные басни о своих соперниках и противниках».

12-мĕш номер материалĕсене вуласа патăм. Литпай пурпĕрех начар ĕçлет. Галкин калавсем тума пĕлеймест. Сăввисем те халсăр. Ахалех килĕшнĕ вăл «Тăван Атăл» журналăн тĕп редакторĕ хыççăн

пай редакторне куçма. Укçа хурчĕ вăл - çавăнпа. Кунта вара вĕрентсе ларнипех пулмасть, хăвăн хура ĕç тумалла - сухаламалла.

«Капкăншăн» усăллăрах пултăр тесе, эпĕ ун çумне Николай Краснов - Микул Пулара çыпăçтарасшăнччĕ. Александр Алексеевич, тĕп редакторпа вăрттăн калаçса, ачана Валентин Палинов патне, çырусен пайне хăваласа ячĕ. Çамрăксемпе ĕçлесшĕн те, вĕсене вĕрентесшĕн те мар.

Манăн Галкина та, Иванова та халăх хушшине кăларас килет, ялти «Капкăн» апатне пĕрле çиес килет «Салма хуранĕнчен». Вĕсем, кутăн чуман лаша пек, каялла тапаççĕ. Пĕри - юптару пӳлĕмçи, тепри - «Крокодил» кулăшĕсене журнал хуплашкинчен майлаштарса куçарса лараканни. Вилсе каясла хăраççĕ Шупашкар хапхинчен яла тухма.

Манăн литпая та, çырусен пайне те пĕтерес шухăш пур. Пай пурри вăл ĕçе вакласа ярать, хавшатать. Вĕсене ертсе пыраканĕсенчен кашниййĕ хăйĕн интересĕсене хӳтĕлет, уншăн çапăçать. Сăмахран, Галкин сăвă-калав çаптарса панă та, уншăн пулсан - хуткупăс. Ыттине хурласа çеç ларать. Пирĕн вара пур çĕре те ĕлкĕрмелле. Юрать-ха чупаççĕ ачисем. Маттур. Ку енĕпе шухăша вĕçне çитермеллех.

Çу, 20.

Художниксем хушшинче тахçантанпах хаяр тавлашу пырать. Быковпа Николай Яковлев сысна аçисем пек хăртлатса çеç лараççĕ. Василий Ермолаев, Йĕпреçьенчи Пучинке ачи, талантлăскер, ӳнер енĕпе аслă пĕлӳ те илнĕскер, Анатолий Александровичпа вĕçĕмсĕр çапăçать. Илемлĕх пайĕн редакторне штатра тăман художникăн ӳкерӳ мелĕ килĕшмест, çавăнпа унăн ӳкерчĕкĕсене пăрса хăварма тăрăшать. Лешĕн чăнах та, хăйне майлă алă, шухăшлавĕ. Кăмăлĕ иккĕшĕн те чурăс. Пĕрне-пĕри парăнмаççĕ те, пăхăнтараймаççĕ те. Аптранă енне Ермолаев Пучинке пĕвине те, Атăла та кутăн чăммарĕ, хăйĕн тарăхăвне редакторпа пай заведующийĕ çине пăрлă çумăрла тăкма пуçларĕ. Вĕсем кӳренчĕç, хирĕç капкăн лартрĕç. Редакци коллегийĕн иртнĕ ларăвĕ вара «Пока воздержаться от публикаций рисунков Ермолаева» тесе йышăнчĕ. Хамăрăн автора çапса хуçакан юрăхсăр йышăнушăн манăн сасăлас килмерĕ.

Ермолаев Чăвашгизран пĕрмай тарăхса килетчĕ. Илемлĕ литература пайĕн пуçлăхĕ Валентин Максимов-Ахун унăн сăвă кĕнекине темиçе çул плана кĕрттермест иккен. Иккĕшĕ тавлашса кайнă. Вăл вара мана пĕринче çакна çырса парса хăварчĕ:


А, ун чышки мана юнарĕ:
„Сана хуратăп пĕтерес!
Çумăллĕ савăвусен хунарĕ,
Хавна чиктетĕн пĕтерсе!"
06. 05. 87. В. Ермолаев

Çу, 28.

Ĕçре парти пухăвĕ пулчĕ. Федор Комарова «Фельетон партин XXVI сьезчĕн решенийĕсене пурнăçланă çĕрте» темăпа доклад тутарттартăмăр. Темине хам сĕнтĕм. Кахаллăнрах калаçать, еккийĕ çавнашкал та ĕнтĕ... Хăй фельетон çырма хăнăхрĕ, «Салма хуранĕ» айне мĕнле вутă хумаллине чухлакан пулчĕ. Ачи вăл, Патăрьел йĕкĕчĕ, пултарать-ха, хĕрӳлĕхĕ те, ăслайĕ те, ăсталăхĕ те, пĕлӳлĕхĕ те хăйпе пĕрлех. Райхаçатсенче хĕртĕнсе пиçнĕскер, Шупашкара утса çитме çывăхарах пултăр тесе, çăпатине салтса, вăхăтлăха канма Кӳкеçе кĕрсе ларнă. Çавăнтан васкать кашни кун «Капкăн» лаççине.

Александр Галкин фельетонистсене каллех çĕнĕ хушу пачĕ: мораль темипе те çырмалла! Леш тĕнчене улăхиччен те тамалмасть пуль ĕнтĕ çак шереметĕн тĕп редактор сĕмĕ.

Тĕлĕнмелли унсăрах тата пур! Вуннăмĕш пилĕк çуллăх заданийĕсемпе йышăннă социализмла обязательствăсене пурнăçланă çĕрте ăнăçу тунăшăн хавхалантарма Мускавран пĕр вакун орден-медаль килнĕ. Вĕсене кама-кама памалли паллă - чи малтан пуçлăхсем хăйсем хушшинче пайласа илеççĕ, суйланчăкне ыттисене салатса параççĕ. Чăхсене тулă сапса панă пекех. Ăмăрту паттăрĕ ячĕпе кăкăрне наградăпа йăлкăштарман начальник юлмарĕ ĕнтĕ, хут тусанĕпе чыхăнса лаpакан архивариуссем те сысна пăхакансемпе тата ĕне сăвакансемпе тан орден илеççĕ те...

Чăваш обкомĕпе Аслă Канашĕ те мускавсенчен юлмаççĕ, типографире начар хут çине те пулин Мухтав хучĕ çаптараççĕ. Акă, республикăри 1805 çынна Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Хисеп грамотипе наградăланă. Пĕр харăс! Вăт мĕнле вăл массăллă хисеп!

Укçа йӳнелсе пынă пекех, награда та йӳнелсе хăйĕн хакне çухатать.

Çырмалла ун пирки, анчах кутран тапаççĕ, пуçа касаççĕ. Мускав «Крокодилĕ» те награда валеçекенсене тапăнаймасть те, «Капкăн» пушшех çăварне уçаймасть.

Çĕртме, 10.

Пирĕн улттăмĕш хутра халĕ ӳсĕр-какăр кăштах сахалланчĕ. «Виçĕ мушкетертан» (Юрий Петров, Васлей Игнатьев, Аркадий Малов) пĕрне Краснов ĕçрен кăларса янă. Улттăмĕш номĕрте Юрка айăпĕпе пысăк йăнăш кая пуçланă. Петров Элĕк райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ Иван Владимиров вырăнне Геннадий Михайлов (пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ) тесе çырса пань. Аслисем статьяна набора янă. Вĕсем иккен районсен пурнăçне пĕлмеççĕ. Авторĕ Элĕкре хăй пулнă, райком пуçлăхĕсемпе калаçнă. Çырнă вăхăтра пуçа мухмăр аркатса янă-ши? Номер типографире пичетленет. Пĕр страницине тытса пăхрăм та, йăнăш тӳрех куçа тăрăнчĕ. Краснова кĕртсе патăм. Тӳрлетрĕç, типографине 350 тенкĕ штраф тӳлерĕç. Ĕç хыççăн редактор мана чĕререн тав турĕ.

Авă мĕнле вăл ӳсĕр-какăр кукăрĕ. Георгий Васильч «мушкетерсенчен» ыттисене, пĕрле Николай Григорьевне те, ĕçкĕç чирĕнчен вăрттăн сываттарнă.

Пирĕннисем ирĕке кайрĕç. Шахматистсен тĕнче чемпионачĕ пынă пекех. Ĕç пирки калаçма та çук, алă çеç сулаççĕ: ан кансĕрлесе çӳре-ха, кунта... Ĕç вăхăтĕнче вĕт!

Утă, 12.

«Тымар» романа килте машинкăпа пичетлесе пĕтертĕм, 294 страница пулчĕ. Кăçал пĕтĕмпе пин страница ытла пичетлерĕм. 250 тенкĕ перекетлерĕм. Машинисткăсем страницăшăн 25 пус илеççĕ. Вĕсене ĕç вăхăтĕнче те пичетлеме никам та чармасть. Ĕç укçи сахал тесе хĕрхенеççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем укçине пирĕнтен нумай çапаççĕ.

Утă, 18.

Анатолий Быков 50 тултарчĕ. Ун çинчен Николай Иванов 14-мĕш номĕрте мухтав статйи çырса кăларчĕ. Çав тĕле унăн

«Капкăн библиотекинче» карикатурăсен кĕнекийĕ те тухрĕ. Редактор пÿлĕмĕнче ĕçкĕ пекки турĕ. Профсоюз обкомĕн Хисеп грамотине çеç тивĕçрĕ. Мĕншĕн, пĕлеймерĕм, взнос тÿлесе тăнăшăн-ши? Грамотине культура ĕçченĕсен профсоюз обкомĕн президиум членĕ Волков алăран тыттарчĕ. Кăмăла ăнланакан, çынна туякан, яланах пулăшма хатĕр Петр Яковлевич - издательствăн тĕп инженерĕ, директор çумĕ.

Çурла уйăхĕ.

Отпускра пултăм. Вăл вăхăтра Кĕркури Лучăн аллă çулĕ кашласа юхса иртнĕ. Григорий Васильевич 1972-1978 çулсенче «Капкăн» хуçи пулнă. «Сана 60 çул тултарнă тĕле «Капкăн библиотекинче» кĕнеке кăларса паратăп», тесе мăшкăллатчĕ «шанчăклă» ентешĕм. Е манăн ăна çирĕм çул кĕтмеллеччĕ, е вăл тата çирĕм çул тĕп редакторта айкăшса каппайланма ĕмĕтленнĕ... Эпĕ Хусанкай урамĕнчи 9-мĕш çуртра пурăннă чухне, кил хушшинчи пирĕнпе хирĕç çуртри Палиновпа Владимир Ильич Ильин (Куславккара Максимов умĕн «Ялав» редакторĕнче ĕçлерĕ, халĕ издательствăн «Вестник недели» хаçатне кăларать) патĕнче ĕçсе тăранайман хыççăн, типнĕ çăварне курак чĕппи пек карса, ман пата виççĕмĕш хутри 67-мĕш хваттере каçать, каллех кĕнеке пирки аса илет. Ман вара унăн тутине йĕпетмелле.

Васильев-Луч пединститут столовăйĕнче банкет ирттернĕ, пирĕннисене никама та чĕнмен. Хăй тепĕр виç кунтанах мухмăрла пирĕн пата сĕтĕрĕнсе çитрĕ. «Капкăнра» ĕçлекенсене, Галкинсăр пуçне, никама та кăмăлласах каймасть пек туйăнать. Менелник хыççăнхи тепĕр кунне хăйне Геннадий Мальцев милицине тыттарса янă, терĕç. Кÿкеçе машинăпа ятарласа кайса илсе килсе, редакцире тăрăшсах ĕçлеттернĕшĕн тав тунă ĕнтĕ хăйĕн экс-тĕп редакторне Элĕк мыскараçи. Тĕлĕнмелле вăл Лучран, хула, ял-ял тăрăх одеколон, лосьон пуçтарса минресе çÿрет те... Халĕ писательсен Союзĕнче литконсультантра ĕçлет.

Утă, 21.

Парти пухăвĕнче перекетлĕх ыйтăвĕ тĕпре пулчĕ. Сăмах калама тиврĕ. Ĕç вăхăтне, журнал страницисене перекетлес пирки. Атту хăшĕ-пĕри кунне икĕ-виçĕ сехет кроссворд тупса, виçĕтăвата сехет шахматла выляса пуçа ватать.

Çурла, 19.

Кану хыççăн ĕçе тухрăм. Гонорар таçта та пухăнса кайнă. Квартал премийĕ те пур.

Ĕçре паян ман çуралнă кун пирки никам та шарламасть, шăпăрт. Редакцире, хам пуçарнă йăлапа, менелникçĕне кашнине саламлаканччĕ, парне параканччĕ. Партпуху хыççăн саламлаççĕ пуль тенĕччĕ. Пулмарĕ. Максимова вара киле каяс умĕн аса илтертĕм те, иксĕмĕр çур литр ятăмăр.

Авăн, 18.

Профсоюз пухăвĕ пулчĕ. Мана каллех профком председательне суйларĕç.

Максимов çинчен парти обкомне çăхав çырнă. Мана та асăннă унта, «хăйĕн тусне пысăк ĕçе илнĕ тесе».

Авăн, 29.

Парти пухăвĕнче 10-15-мĕш номерсен пахалăхне сӳтсе яврăмăр. Тишкерĕвне опытлă,ватă журналист Яковлев питĕ тĕплĕн хатĕрленнĕ. «Капкăнра» виççĕмĕш Яковлев та пур-çке! Василий Яковлевич Канаш районĕнчи «Коммунизмшăн» хаçатăн редакторĕнче, ответлă секретарĕнче питĕ нумай ĕçлерĕ. Эпĕ ăна çавăнтанпах аван пĕлетĕп. Луч ăна ватлăхра пулăшма шутланă, хăй çумне ĕçлеме илнĕ, корреспондент шайĕнче Шăхасанта килĕнчех усранă, майĕпен Шупашкара туртса пынă, хваттер туса панă. Çурçĕр-хĕвеланăç енче, Алеша Крысин хваттерĕ айĕнче пурăнать.

Яковлев журнал номерĕсене васкамасăр, профессионал куçĕпуçĕпе тишкерчĕ: ырларĕ те, хурларĕ те.

Эпĕ кашни сотрудникăн, тĕп редактор таранах, çын ячĕпе проблемăллă çивĕч статья хатĕрлемелле тесе сĕнӳ патăм. Галкинпа Иванов ман çине сивĕ куçпа пăхса илчĕç. Автор статйи пирки тахçанах çирĕплетсе каланăччĕ, анчах «фельетон академикĕсене» редакцирен хăваласа кăларма халĕ те вăй çитеес çук пуль.

Çĕрулми туянма килте талонсем пачĕç, кашни çын пуçне 5 килограмм, вăтăршар пуспа, пĕр уйăхлăх. Купăста илесшĕн черет йышăнса пăхрăмăр, çырăнса, анчах туянасси пулмарĕ, пĕтрĕ. Нумаях пулмасть республикăра «Овощепром» трест турĕç те, халĕ ни купăсти, ни суханĕ, ни кишĕрĕ çук. «Капкăнăн» шăлне катаççĕ вĕсене, айăплисене, хĕстерме тытăнсан.

Ай-вай-вай, «коммунизмри пек» пурне те виçепе параççĕ: уйăхне сахăр 2, аш-какай 1 килограмм. Çăкăрĕ çеç вулĕрех - кунне 2 буханка çиме пултаратăн, талону пулсан.

Юпа, 13.

Николай Иванова çĕнĕрен партсекретаре суйларăмăр. Сивĕ пӳртре хĕл каçнă хăнкăла пек хытканскер, çакăн хыççăн вăл

вылямалли вӗрсе хӑпартнӑ анчӑк пек тулса хӑпарса кайнӑн туйӑнчӗ.

Николай Лукич, Быков мӑйракипе вӑкӑрла хирнине чӑтаймасӑр, редакциреи кайрӗ. Килти пултарулӑх мастерскойӗнче ӗҫлет, ҫапах карикатурӑсем парса тӑрать, Максимов пӳлӗмне е ман пата кӗртсе хӑварать. Тӗп редактор ун вырӑнне Нина Орлова хӑрахҫӑ-хӗрарӑма корректортан илем редакторне куҫарчӗ. Быковпа пӗр анлӑ пӳлӗмре вӗсем хире-хирӗҫ питӗ ҫуллӑн пӑхса ларассӗ. Чее тилӗ тумне тӑхӑннӑ Ивановӗ унтан тухма пӗлмест, ясар пике пӗҫҫисене сарасса кӗтсе, сехечӗ-сехечӗпе Анатолий Александрович ҫумӗнче калаҫкаланҫи туса ларать.

Чӳк, 3.

Редколлеги ларӑвӗ ирттертӗмӗр. Унта юлашки номӗрсене пӑхса тухрӑмӑр. Аркадий Эсхель, начар сӑввисемшӗн, каллех Галкина хурларӗ. Пьесӑсем пирки калаҫнӑ чухне: «Виссарион Синичкинран кулӑш драматургӗ пулмарӗ ӗнтӗ», - терӗ. Ман сценкӑна ырласа пӑрахрӗ. «Акӑ сана туй» текеннине. «Кузьмин вӑл Гоголь пек ҫырать», - тет, ҫурӑмран лӑпкаса. Аркадий Васильевич кут хыҫӗнче мар, куҫ умӗнче, халӑх хушшинче хурине - хура, шуррине - шурӑ, тет. «Капкӑн» ӗҫне, штатра шутланса тӑракан тепӗр тӑрпалттайран та ытларах хутшӑнать, редакцие нумайрах, пулӑмлӑрах пулӑшу парать. Кирлӗ чух никамран хытӑрах сӑнӑлама маҫтӑр пулсан та, пиртен кулмасть, пӗр-пӗр кӑлтӑк пеккине асӑрхасан, юлташла систерет, йӑнӑшран пӑрӑнмалли, асӑрханмалли мелсене аса илсе, вӗрентет. Вӑл редакцие пырса кӗрсен, чечеклӗ рамӑри Иван Мучи урайне сиксе анса паянхи вӑйлӑ сатирикпе ытакланса туслӑн калаҫассӑнах туйӑнать.

Чӳк, 25.

Кӑҫал Валентин Палинов, ҫырусен пайӗн заведующийӗ, пӳлӗмре ларсах улпутла пурӑнчӗ. Ӑна ӗнтӗ Иванов «Калаҫар-ха, вулаканӑм», «Ҫыру ҫыртӑм васкаса», «Йӗрлерӗмӗр - тупрӑмӑр», «Капкӑн пулӑшнипе», «Тип мунча» рубрикӑсем «парнеленӗ» те, ҫав подборкӑсене вӑл тӗрӗслеме янӑ ҫырусен хуравӗсем тӑрӑх, вырӑнта мерӑсем йышӑннӑ хыҫҫӑн, кӑшт кулӑшларах тукаласа, майласа ларать.

Фельетонсен пайӗн - йӑлтах вырӑна тухса ҫырмаллисем: «Капкӑн куҫӗ - ҫивӗч куҫ», «Перекет хуҫасӑрлӑха вӗтет», «Йӗплӗ салма хуранӗ». Гонорарне пӗр шайра, калӑпӑшне кура, тӳлеҫҫӗ. Ҫырусемпе лӑпӑртатсах пӳлӗмре кунне виҫҫӗр тенкӗ майлаш-

тарма пулать, фельетон çыракансен уншăн районсем тăрăх виçĕ эрне чупма тивет.

Çитес çул валли Валентин Михайловича «Перекет хуçасăрлăха вĕтет» тата «Капкăн куçĕ - çивĕч куç» рубрикăпа та материалсем хатĕрлеме хушрăмăр, çыру хуравĕсенчен янтăламалли «Калаçар-ха, вулаканăм», «Йĕрлерĕмĕр-тупрăмăр», «Капкăн пулăшнипе» рубрикăсем кăна хăварса патăмăр. Ай урать вĕт çын, ниçта кайса кĕреймест. Галкинсенчен усал тĕслĕх илсе, лăпкă пурнăçран халăх шавне тухма сехĕрленет. Халĕ ирĕксĕрех районсене каймалла.

Раштав, 18.

Александр Николаев-Аслута пĕлтĕр писательсен Союзĕн членне илмерĕç, Çемен Элкер премине те памарĕç. Шалккă ачана - чăвашсен чи вăйлă журналисчĕсен ретĕнче хăюллăн утаканскерне. Пĕлтĕр, хам кунта ĕçлеме пуçласан, тăрăшсах фельетонсем тутартăм. «Капкăн» конкурсĕнче пĕрремĕш премин партарнăччĕ. Тав та тумарĕ.

Кăçал ĕнтĕ тата ытларах çине тăмалла пулчĕ. Уншăн чылай фельетонне çĕнĕрен çырса «Капкăн» картне лартрăм, вара ăна Иван Мучи премийĕн лауреачĕ турăмăр (250 тенкĕ). «Савалан ă лауреат» пулчĕ. Паян пире хăна турĕ-ха, «тăванатăлсемпе» пĕрле. Мана хальхинче те тав сăмахĕ каламарĕ. Пăхран ылтăн йăлкăштарса панăшăн та.

1982 çул.

Ĕç кĕнекинчен.

Кăрлач.

4-16-мĕшĕсенче Чăваш патшалăх университечĕн çар кафедринче хула военкомачĕ командирсен занятийĕсене ирттерчĕ. Эпир «Тăван Атăл» редакторĕпе Георгий Красновпа ĕç хыççăн пиллĕкрен тăхăр сехетчен, канмалли кунсенче, юлашки эрнине ĕç вăхăтĕнче Мускав проспектне çӳрерĕмĕр. Николай Николаевичăн та вунулттăмĕшчен çар кунĕсем. Вĕсем, связистсем, ĕç вăхăтĕнче «канаççĕ».

11-мĕш числара Анатолий Емельянов 50 тултарчĕ. Ăна Халăхсен туслăхĕ орденпа наградăланă. Савăнăçлă пухăвне обкомăн политвĕренӳ çуртĕнче, ĕçкине «Сарпике» кафе-столовăйĕнче (пединститут) ирттернĕ. «Капкăн» ячĕпе редакцие чĕнӳ хучĕ пынăччĕ. Эпир телеграмма çаптартăмăр: «Союз писателей, майору запаса Емельянову. Горячо поздравляем пятидесятилетием и

высокой наградой Родины, шлем боевой армейский салам, желаем постоянного наступательного духа в литературе. С учебных сборов офицеров капитаны запаса Георгий Краснов и Владимир Кузьмин».

13-мӗшӗнче тактикӑпа занятисем класра тата уйра пулчӗҫ - Ҫӗньял, Хыркасси хыҫӗнче юр ашрӑмӑр. Таврӑнсан, ӗҫе кӗтӗм, ҫитес номер материалӗсене вуласа редакцилерӗм. Пурте «Семнадцать мгновений весны» сериал курасшӑн. Штирлиц-Тихонов пӗтерет ҫынсене, экран умне пӑталать. Астӑватӑп, 75-мӗш ҫулта та, эпир офицерсен сборӗнче чухне, вӑл фильма телевизорпа иккӗмӗш хут кӑтартрӗҫ.

14-мӗшӗнче, занятисем хыҫҫӑн, ҫула май Георгий Краснов «Чувашия» ресторана чӗнчӗ. Кивӗ стильпе Ҫӗнӗ ҫула шампань эрехӗпе кӗтсе илтӗмӗр. Аванскер вӑл, ҫынна ялан пулӑшма юратать, уншӑн ҫине тӑрсах тӑрӑшать. Ҫавна май, тахҫанхине аса илсе ахӑртӑмӑр.

1966 ҫулта эпӗ Йӗпреҫрен Шупашкара ӗҫпе килнӗччӗ. Хамӑр патра та, тӗп хулара та электролампочка курӑнмасть. Ниҫта тупса илме ҫук. Ҫурҫӗртен таврӑннӑ Георгий Чӑвашрадиора ҫамрӑксен редакцине тытса пырать. «Волга» ресторантан аяларах, Хӗрлӗ площадь кӗтессинче, писательсен Союзӗн ҫуртӗнче, вӗсен ӗҫ вырӑнӗ. «Манӑн ҫӗнӗ хваттерте тӗттӗм», - терӗм те, «Ҫиччас ҫутататпӑр», - тесе коридорти, пӳлӗмри ытлашши лампочкӑсене кӑларса илчӗ те, манӑн чӑматанчике чӑмтарчӗ. Шаймӑкланса та пулин, пулӑшрӗ чухӑн пурнӑҫ ачине. Кайран, хӑй командировкӑна пырсан, кашнинчех ҫавна аса илсе кулаттӑмӑр.

15-мӗшӗнче тӑваттӑмӗш номӗре типографине антарса ятӑмӑр. Художниксен йӗркеллӗ ӳкерчӗк ҫук. Те питӗ кахал вӗсем, уйрӑмах Быковӗ, те ывӑнса халран кайса пӗтнӗ... Ҫамрӑксене ытлах хутшӑнтарасшӑн мар, хӑйсен ҫӑкӑрне туртса илесрен хӑраҫҫӗ пулас.

16-мӗшӗнче ирпе юлашки занятине кайрӑмӑр. Тактикӑпа - хӳтӗлев (оборона) вӗренӗвӗ. Атӑл хӗрне, кану паркне илсе кайрӗҫ. Класра икӗ сехет теори вӗреннӗ хыҫҫӑн тӑшман тапӑнӑвне сирсе яма хӑтланкаларӑмӑр. Стройпа каялла таврӑннӑ чухне эпӗ Краснова «правое плечо вперед, марш!» тесе камантӑ патӑм та, вӑл, ҫийӗнчех тавҫӑрса илсе, манпа юнашар тротуар тӑрӑх утса кайрӗ, командирсен колонни, ҫул урлӑ каҫса, университет еннелле капланса кайрӗ. Ертсе пыракан майор асӑрхамарӗ-ши, пире чаракан

пулмарĕ, вара эпир Агиверсем еннелле çул тытрăмăр. Федор Георгиевич Гузовский урамĕнчи 17-мĕш çуртăн 3-мĕш хваттерĕнче пурăнать.

Коноваловсем пире, Канашьен пикипе - юратнă мăшăрĕпе Валя Константиновапа Аслă Каçал енчи Нĕркеç йĕкĕчĕ Хветĕр, ахăлтатсах кĕтсе илчĕç, хаваспах кухньăна чăмтарчĕç. Тӳрех сăмавар хутса ячĕç. Сĕтел хушшинче хĕрӳ калаçу пуçланчĕ. Кил хуçи темле тетрадь тупса килчĕ. Хăнасен шухăш пăттине антарса хăвармалли кĕнеке иккен. Юлашкинчен пулнă «чаплă хăнисем» Юрий Айдашпа Иван Лисаев чăх чĕрнилле сăрмакланисĕр пуçне урăх никам та мухтав сăмахĕ çырман. Черет - пирте. Сăнарлă хайлав пекки хутшăнмалла унта. Эпĕ вара, хамăрăн «çар пурнăçĕпе» çыхăнтарса, çапла сăрмаклатăм:

«Çар операцийĕн пĕтĕмлетĕвĕ.

Ман приказа пурнăçласа, Коновалов ефрейтор январĕн 16-мĕшĕнче хĕрарăм батальонĕпе, Айдашăн партизан отрячĕпе тата «Стрелецки» гварди полкĕпе Шупашкарăн çурçĕр-хĕвеланăç енчи 19-мĕш квадратра (координат 27-34) вĕрекен хĕрлĕ сăмавар тавра васкавлăн оборона йышăннă.

Коноваловăн ударлă ушкăнне хирĕç Бахус çарĕн хырăмпа шăвакан 40 хĕрӳлĕхлĕ Симĕс çĕлен вăйĕсем питĕ хаяр тăраççĕ. Командующи опорлă пункт йышăнса хăйĕн ушкăнне сăмавар тавра вырнаçтарать. Симĕс çĕлен тӳрех хăй камне систерет. Симĕс çĕленрен нихçан та хăраса ӳкмен Коновалов тӳрех унăн вăрттăнлăхĕсене уçать, тăшмана пайăн-пайăн пĕтерме тытăнать. Симĕс çĕлен те парăнмасть. Çапах та Коновалов Швейк ефрейтор мар - Агивер, газ шăршинчен те хăрамасть, камантă хыççăн камантă парать: янклаттар та, çавăрса хур! Унтан вăл часах сулахай фланга хĕрарăм батальонне тăратса, сылтăм фланга Айдашăн партизан отрядне вырттарать. Вăйсем тан мар. Коноваловăн тар юхать, юхать... вара вăл юлашки резервне, «Стрелецки» полка, çапăçăва хутшăнтарать.

Симĕс çĕлен те майĕпенех хăйĕн «юратнă тăшманне» халран ярсах пырать. Акă вăл, кĕрлесе те чашкăрса, никамах та хирĕç тăрайманнине кура, ирĕке сирпĕнсе тухма хăтланать. Çав самантрах партизан отрячĕн командирĕ Юрий Айдаш ура çине сиксе тăрать те, «Таньăшăн!» тесе, кĕленчерен сирпĕнсе тухма пуçланă Симĕс çĕлене çăварпа хупласа пуçне сĕтел çине паттăррăн хурать. Уншăн тавăрас шутпа хаярланнă хĕрарăм батальонĕ Симĕс çĕлене алла ярса илет, кĕленче тĕпне пуш хир пек çап-çутă тăратса

хăварать. «Лăпкă çывăр, боевой тус», - тесе Агивер тост-залпĕ парса паттăрĕн пуçĕ айне «Стрелецки» полкĕн пушатнă кĕленчи-гильзине хурать.

Çав вăхăтрах Етĕрне енчи Салукаран Краснов атаман вăйĕсем те персе çитеççĕ. Коновалов командующи вĕсене, хĕрнĕ Хĕрлĕ Сăмавар тавра пайласа тухса, чиркÿллĕ чан сассипе Бахуса хирĕç çапăçăва çĕклет.

Бахус çарĕн Симĕс çĕлен вăйĕсем парăнмаççĕ-ха. Паттăррăн сĕтел çине пуçне хунă Айдаш командира асăнса пурте виçĕ хутчен салют параççĕ. Унăн Тăван Юлташлăх умĕнчи паттăрлăхне шута илсе, Хĕрлĕ Сăмавар Геройĕ хисеплĕ звани туса хумашкăн сĕнÿ параççĕ.

Çав сĕнĕве шута илсе, Çар Совечĕ çапла йышăнать: 1982 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче Атăлăн сылтăм çыранĕнче Бахус çарĕсене тĕппипе пĕтерессишĕн пынă хаяр çапăçусенче хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн - Симĕç çĕлене тутапа хупласа сĕтел çине хастаррăн пуçне хунăшăн, «Çавалкас» партизан отрячĕн командирне Юрий Григорьевич-Айдаша Хĕрлĕ Сăмавар Геройĕ ятне парас.

Унăн паттăрлăхне палăртса, «Стрелецки» полкĕн Мухмăр салючĕ памалла. Ун валли пĕр ещĕк боезапас - «Стрелецки» эрех хăвармалла.

Юлташлăх çарĕсен Тĕп командующийĕ Владимир Кузьмин капитан.

Çар Совечĕн членĕ Георгий Краснов капитан.

Çакна ĕнентерсе «Стрелецки» кĕленчи - гильзи тĕпне алă пуснă».

Çапла вĕçлерĕмĕр офицерсен пухăвне.

Нарăс, 16.

Ĕçре кăмăла пăсакан пĕр путсĕр (шулер) пур. Александр Угольников. Çăмăл пурнăçа вĕреннĕскер, çын ĕнси çинче ÿпне çăпан пек лараканскер. Ятланинчен усси çук, пĕрмай суять.

Нарăс, 25.

Максимов хăйсен Эйпеçĕнче е Туçа енче çĕр лаптăкĕ илсе ĕçлемелли дача тăвасшăн. Колхоз хуçисем килĕшеççĕ, тет.

Ман та çав шухăш пур. Кил вучахне сÿнтерес марччĕ. Çуркунне çимĕç йывăç-курăкĕсем ытларах лартса хăвармалла. Ял пурнăçĕ çинчен романсем çырмалла пулать. Тен, ун чухне Хурăнсур Çармăса кайса пурăнас тейĕп те... Çитменнине тата унта канма та аван. Ют çĕрте мар - тăван ялта.

Çĕртме, 3.

Пирĕн редколлеги членĕсем Георгий Яковлевпа Владислав Игнатьев художниксем урăлтаркăча лекнĕ. Вĕсем штатра тăмаççĕха, çапах журнал ятне яраççĕ.

Çĕртме, 8.

Хăлхара апат-çимĕç программи сасси çеç. Лавккасенче çеç çимелли нимех те çук. Кăлпасси тутанса курманни хăçантанпа ĕнтĕ. Пур пеккине вăрласа-çаратса пĕтереççĕ, патшалăх парни вырăнне ют çĕре - чикĕ леш енне ăсатаççĕ, банкетсенче çăрса тăкаççĕ. Çăвар хуплама рабочисене виçепе завод-фабрикăра памалла тунă. Пире - çук. Интеллигентăн хырăм выçмасть-шим? «Капкăнра» ун çинчен çыртармаççĕ.

Тĕп редактор гонорар нумай илет тесе такам обкома çăхав янă. Финансистсем килсе тĕрĕслерĕç - йĕркеллех. Пулаççĕ вĕт путсĕрсем - ура хуракансем, кураймансем.

Угольников Хĕрлĕ Чутай районĕнче ялтах пурăнать те, паян Максимов ăна ыттисем пекех редакцире ларса ĕçлеме хытарсах каларĕ.

Çĕртме, 24.

Угольникова икĕ эрне каяллах Красноармейски района строительство ыйтăвĕсемпе материал çырма янăччĕ. Çук нимĕн те. Унта кĕрсе командировăчнăйне паллă тутарса тухнă та вăл хăйĕн Чутайне тапнă. Мана та, тĕп редактора та чирлерĕм тесе улталарĕ. Хăйĕн бюллетень те, нимĕн те çук. Максимов вара ăнлантарни çыртарчĕ, прогул тунăшăн выговор пачĕ, иккĕмĕш квартал премине касрĕ. Уншăн халĕ урать. Редактор пӳлĕмĕнчен алăка шалтлаттарса тухса кайрĕ. Айăпне туйма шутламасть. Кама хăратать-ши? Кама ытларах кирлĕскер-ши?

Парти пухăвне пичет секторĕн пуçлăхĕ Андрей Михайлов пычĕ. Апат-çимĕç программи пирки шавласа илтĕмĕр. Эпĕ фельетон пайне «Крокодил» редакцийĕнчи пек промышленность, ялхуçалăх, строительство пайĕ тăвасшăн. Тĕп редактор çăварне усăллă уçмарĕ-ха.

Кун кĕнекинчен.

Çурла, 6.

Çитес номершĕн ĕçлесе кăнтăрла иртсе кайрĕ. Максимов отпуска тухать. Эпĕ лавккана çул урлă каçса килтĕм. Георгий Краснова чĕнчĕ. Хветĕр Агивер çукчĕ. Шампань эрехне ĕçсе ярас чухне вăл та тупăнчĕ. Вĕсем Виталий Захаров писатель патне онкологи

пульницине кайса килнĕ-мĕн. Ачин сывлăхĕ пĕтнĕ, тет. Агивер сумккăран шампань эрехĕпе шуррине кăларса лартрĕ. Краснов тем сăлтавпа тухса шурĕ.

Максимов килне, пирĕн çумри Пролетари урамĕнчи 14-мĕш çурта, хăнана чĕнчĕ. Çурранах каяс тенĕччĕ. Çула май, Мир проспектĕнчи виçĕ çӳллĕ çурт сăнарĕпе «Виçĕ юман» ят панă эрех лавкки умĕнче Çамрăксен театрĕн тĕп режиссерне Алексей Григорьевич Васильева тĕл пултăмăр. Вăл Максимовăн пьесине сцена çине кăларма «хатĕрленет». Çавăнпа пуль ухутах çыпçăнчĕ пирĕн çума. Сумккăсене татах йывăрлатнă хыççăн, такси тытса, хамăр еннелле вĕçтертĕмĕр.

Арăмĕ, Клара Фотиевна, чиперкке, япшар чĕлхеллĕ Йĕпреç пикийĕ, садикрен, ĕçрен таврăнайманччĕ-ха. Хĕрĕсем апат хатĕрлерĕç.

Хĕрӳ ĕç малалла кайрĕ пирĕн. Васильев унчченех сисĕмлĕ ӳсĕрччĕ. Ахух, сĕтел çинчи кĕленчесем, турилккесем, рюмккăсем, бокалсем пĕрин хыççăн тепри шаплатса арканма пуçларĕç. Тĕп режиссер спектакль лартать тейĕн, ӳкерет те ӳкерет, упалла тем мĕкĕрет. Этем нĕрне чăннипех çухатнă-иç вăл? Мускавра та Шупашкарта хисеплĕ званисем илсе тултарнă, ахаль чухне çынсем çине урлăлла çеç пăхса çӳрекен «культурăллă çын» сыснаран та сысна иккен! Ахальтен мар ăна тусĕ Хв. Агивер те яланах «Эс - сысна» - тет. Никам та шарлакан çук путсĕре, вара чăтаймарăм, хам çунтарса илтĕм.

Кĕç Николай Николайчпа Федор Георгиевич тавлашса кайрĕç. Агиверĕ пĕрмаях мухтанать. «Халĕ вăйлă çыракан çук, эпĕ чăваш литературине тăватăп, ачасене, сире, хăпартатăп», - тет.

Максимовĕ çапла шаплаттарса хучĕ: «Эсĕ пире пулăшни - лайăх. Уншăн - тавтапуç. Анчах та пустуях мухтанатăн. Малтан хăвăн пысăк япала çырса кăтартмалла, кайран пире вĕрентмелле. Эсĕ пире пулăшнă пулсан та, пурпĕрех çырма вĕрентмен. Эсĕ пире ним вырăнне те хумастăн, шанмастăн, кĕвĕçетĕн».

Агивер хĕремесленсе çурăлас патнех çитрĕ. Такси чĕнсе, уйрăлми тусне лартса, çухалчĕ. Çакăн пек тĕв турăм вара: икĕ çыравçă хушшинче çыпçăнма пултарайман çурăк çуралчĕ пулас, иккĕшĕ те пĕрне-пĕри парăнас çук - пултарулăхĕпе те, кăмăл-сипечĕпе те.

Ĕç кĕнекинчен.

Çурла, 30.

Кăçал çĕнĕрен хута янă Политвĕренӳ çуртĕнче (Овальнăй зал) пирĕн журнал ĕçĕ çинчен парти обкомĕн идеологи комиссийĕ итлерĕ. Сăлтавĕ çакăнтан пуçланнăччĕ. Экс-тĕп редактор Григорий Васильев темшĕн урă мар «Капкăнпа», урмăшса хăлтăкланса çӳрет, хăйĕн кучĕ таса маррине мансах. Ĕнтĕ пур çĕртен те ăна шăпăрпах шăлса кăларса пăрахаççĕ. Вăрнарта мыскара кăтартса çӳренĕ чухне урине хуçрĕ, унтах пульницара вăрах сывалчĕ. Йĕпреçре тепĕр кана халăха култарчĕ. Ют çынсен одеколонĕсемпе лосьонĕсене вăрттăн ĕçе-ĕçе яракан пулнă Кĕркури Луч мар, Кĕркури Лосьон тесе кулаççĕ хăйĕнчен. Вăт çавскер çăхавпа аслă çынсене вăратнă. Редакцие КПСС обкомĕн икĕ пайĕ тĕрĕслерĕ. Тĕп редактора канма памарĕç, отпускран чĕнсе илсе, хатĕрленме, виçĕ кун срок пачĕç. Çирĕм минутлăх отчет çырчĕ. Тĕп редактора, мана, ответлă секретаре - пуçламăш парторганизаци секретарьне Николай Иванова, чĕнчĕç.

Ятларĕç те, ырларĕç те. Пĕтĕмĕшле илсен, чăтма пулать. Ытларах журнала илемлĕх енчен туса çитерейменшĕн, чĕлхе шăйрăкĕсемшĕн, кирлĕ-кирлĕ мар юмах-халапшăн ят тиврĕ. Çапах идеологи секретарĕ Александр Петрович Петров пире «надо повысить требовательность», терĕ. Ирĕке ямалла мар иккен нихăшне те. Халĕ хамăрăн хĕрелмелле пулса тухрĕ.

Авăн, 20.

Профсоюз пухăвĕнче, докладра, дисциплина пирки ытларах калаçрăм та, «Камчатка» ачисем ман çине кӳренчĕç. Хăйсем коридор вĕçĕнчи тĕттĕм кĕтесре ĕç вăхăтĕнче аякран çын пухса пуçватмăшсемпе вăхăта пустуй çунтараççĕ те... Профком председателĕнче виççĕмĕш хут манах хăварчĕç.

Максимов та халĕ сисĕмлĕ сăхма пуçларĕ. Канашра командировкăна хĕрĕх градуса çити хăй тĕллĕн куçарса тăснăшăн, Валентин Михайловича «выговор» ятлă закускăпа тăрантарчĕ, премисĕр тăратса хăварчĕ.

Юпа, 6.

Пичет секторĕнче унăн пуçлăхĕ Михайлов мана виçĕмкунах Вăрмар районĕнчен килнĕ çăхавпа паллаштарнăччĕ. Эпир йăнăш критикленĕ тесе, «Правдăна» çырса янă иккен.

Çăхавçа çураçтарма Андрей Иванчпа Вăрмара кайса килтĕмĕр - хамăр «Волгăпа». Пĕр ял Совет председательне ял лавккинчен кĕрпе тата ыттине те миххи-миххипе туянать тесе çунтарса

илнӗччӗ. Халӑх талон йӗркипе пурӑнать-çке. Георгий Яковлев ӑна çурӑм хыçне тулли михӗ хурса меклеттерсе пынине кулӑшла ӳкернӗччӗ. Ялне çитрӗмӗр. «Староста» пирӗнпе чиперех чӑркӑшланать. «Эпӗ михӗпе нимӗн те йӑтса кайман, пурне те мотоциклпа турттарнӑ, ма манран мӑшкӑллатӑр, халӑх умӗнче намӑслантаратӑр», - тет. Юрать-ха районти халӑх контроль комитечӗн председателӗ Александров ку кутӑна лӑплантармалли ун çинчен калакан çивӗч материалсем тупса пынӑ. Çавӑнпа сӑнӑласан тин пусӑрӑнчӗ çурхи хур аçи пек ахӑракан пуçа каçӑртнӑ пуçлӑх.

Кун кӗнекинчен.
Юпа, 22.

Хаçат хыççӑн çакӑнта темле, чун-чӗрипе тӳрех ӗçшӗн мар, хӑйсемшӗн çунакан журналистсен ушкӑнне лекнӗ пек туйӑнать. Хӑшӗсем мӗн чухлӗ те пулин ытларах гонорар тӑвасшӑн та вӑхӑта хӑйсемшӗн кӑна ирттересшӗн. Хӑçантанпа тӑрӑшатпӑр ӗнтӗ вӗсене кӑшт та пулин йӗрлентерме. Хӑйсемпе куçран-куç калаçса, лава пурпӗрех вырӑнтан тапратрӑмӑр. Ман çине халӗ хӑшӗ-пӗри урӑхларах куçпа пӑхать. Хӑйсен лӑпкӑлӑх пӑрне тапратнӑшӑн тав тӑвас вырӑнне... Курӑпӑр-ха, мӗн хӑтланӗç малашне. Ун пек чухне тем те кӗтме пулать.

Максимов «Запорожецпа» чупма вӗренчӗ те, хӗрлӗ «Жигули» туянчӗ (7300 тенкӗ). Редакци нушисемшӗн те час-часах хӑйӗн «консервӑ банкипе» (корпусне çӳхе хӗçтимӗртен тунӑран çапла калать) вӑшалантарса çӳрет.

Ӗç кӗнекинчен.
Чӳк, 17.

Леонид Ильич Брежнев вилнӗ пирки тата КПСС Тӗп Комитечӗн Пленумӗ çинчен (Генеральнӑй секретаре Юрий Владимирович Андропова суйланӑ) обкомран А.П.Петров ноябрьти номӗре партарасшӑнччӗ. Çӗршыври сатира журналӗсенчен никам та кун пирки материал паманнине пӗлтӗмӗр те, хаяр хуçасене çураçтартӑмӑр. «Ялав» 12-мӗш номӗрне те пичетлесе, çӗлесе хунӑ. Вӗсем çӑлӑнса юлчӗç. «Тӑван Атӑла» йӑлтах çӗмӗрсе, 12-мӗш номӗрне çӗнӗрен пичетлемелле турӗç.

Иванова каллех парторга суйларӑмӑр.

Парти пухӑвӗнче Шупашкар хулаком пленумӗн йышӑнӑвӗ çинчен ыйту пӑхса тухрӑмӑр. Николай Иванович виле пуçланӑ мучи пек аран-аран вуласа пачӗ доклад пеккине. Тухса калаçас

текен те çук. Максимов ирĕксĕр тăрса каларĕ. «Эпир, - терĕ, - хулари пуçлăхсем çинчен сахал çыратпăр. Влаçпа ытлашши усă курнăшăн, махинаци тунăшăн 60 ытла çынна парти енĕпе айăпланă, ĕçрен кăларнă». Палинов: «Вĕсем çинчен çыртармаççĕ». Комаров хушса хучĕ: «Шишка туянтараççĕ».

Темле, ытла çăмăлттайла, çиелтен, ячĕшĕн ирттерет пирĕн секретарь парти пухăвĕсене. Те вăл пысăкрах, хуравлăрах ĕç тума пиçсе çитеймен, те пултараймасть.

Тĕп редактор Иванова ĕнерех «ыран редколлеги ларăвĕ пулмалла» тесе пĕлтерме хушнă. Вăл, анчăк çурилле пуçлăх ури хушшинче явăнкаласа çӳреме хăнăхнăскер, мана ун пирки юри каламан. Ларăвне вуннăсенче ирттернĕ. Эпĕ вăл вăхăтра чиперех материалсем редакцилесе хам пӳлĕмре ларнă. Редакторĕ те систермен. Кайран Максимов ман пата кĕчĕ те, «Паян редколлеги ларăвĕ пулчĕ», - тесе мăшкăлласа пĕлтерчĕ. Кӳрентернĕшĕн ятлаççах илтĕм. Иван Мучи премине Яковлев художника пама йышăннă. Хирĕçле калаçасран хăранă-ши манран? Ара эпĕ Николай Лукичшăн икĕ аллăма çĕклеме хатĕр. Çынлăхшăн хисеплетĕп ăна, пултарулăхĕшĕн хăпартланатăп.

Чăваш журналисчĕсенчен фельетон çырма пĕлекен-пултаракан çын çуралман-ши вара? Иккĕленӳ шухăша ярать. Ăна эпĕ халĕ, «Капкăнра» ĕçленĕ май, лайăхах ăнлантăм. Валерий Николаевичран та, Александр Николаев-Аслутран та пиçмест. Паян та вĕсен хаçатла сăрмаклавĕсемпе кун ирттерсе, вĕсене çĕнĕрен «капкăнлатмалла» пулчĕ.

Журнала вăхăтра пичетлеме пуçларĕç. Кая юлса илетпĕр тесе шăнкăравлама, çырма, ятлама пăрахрĕç çырăнакансем.

Раштав, 1.

Угольников текен çын сувçем (Ник.Ивановла) сĕмсĕрленсе çитрĕ, тунтикун кăнтăрла иртсенех тарчĕ, ытларикун каллех апат хыççăнах ялне тухса шунă, паян ĕçе пачах килмерĕ.

1983 çул.

Ĕç кĕнекинчен.

Кăрлач, 4.

Çулталăк хуçăк кăмăлпа пуçланчĕ.

Пĕлтĕрхи 21-мĕш номĕрте хамăн «Юлхав ут юрттипе» вăйлă сценка пичетленнĕччĕ. Вулама та, сцена çинче лартма та пит аван. Вăрнар районĕнчи «Янгорчино» колхоз председателĕ, колхоз театрĕн режиссерĕ Федор Григорьевич Кузьмин ăна Çĕрпелти

культура çуртĕнче лартса куракансене тĕлĕнтерсе култарнăччĕ. Тен, урăх çĕрте те лартнă. Ăна ял хуçалăх институчĕн Шупашкар районне кĕрекен «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕнчи йĕркесĕрлĕхпе хуçасăрлăх тĕслĕхĕсене тĕпе хурса хатĕрленĕччĕ.

Лешсем «Правдăна» çырнă. Обкомра сехĕрленсе ӳкнĕ. Пичет секторĕнчен хашкаса çитрĕç. Редакци чĕртнĕ пушара сӳнтермелле-çке, Мускава майлаштарнă хурав памалла.

Редколлегин черетсĕр, «чрезвычайлă ларăвĕ», пулчĕ. Галкинпа Быков, мана айăпласа, çивĕчрех калаçасшăн. Иванов ытлашши шарламарĕ, темскер çырнă пек туса ларчĕ. Палинов хӳтĕлерĕ: «Ку материал та Комаровăн «Тăвай тислĕкĕ» пек пулчĕ. Ун чухне Хĕветĕре сăлтавсăрах хурлантарнăччĕ».

Кăрлач, 6.

Максимов çав çăхава хупма обкома кайса килчĕ. «Çуралнă кун ячĕпе ла-айăх саламларĕç», - тет. Секретариатра обком секретарĕсем Александр Петров, Анатолий Леонтьев (ял хуçалăх), пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Михаил Шутин тата ыттисем те пулнă. Леонтьев «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхне ертсе пыракансене пĕлтĕр хăй мĕнле мăкăрлантарни, сушилкăсем лартма пулăшни çинчен каласа пире хӳтĕленĕ-мĕн. Ун сăмахĕ ĕçе çăмăллатнă.

Тĕп редакторăн çуралнă кунне саккунлах паллă турăмăр вара.

Кăçалхи 4-мĕш номĕрте «Çырни çинчен тепĕр хут» рубрикăпа çапла пичетлемелле пулчĕ:

«Юлхав ут юрттипе» фельетон-сценка пирки КПСС Шупашкар райкомĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕнче тыр-пул пухса кĕртме, кĕраки ирттерме хатĕрленес тĕлĕшпе çитменлĕхсем чăнах та пулнă. Хăш-пĕр комбайнсем çине çӳллĕ е выртнă тырра вырмалли хатĕрсем вырнаçтарман, механизаторсене допусксем, дневниксем тата ытти те паман, топливо çителĕклĕ кӳрсе килмен, звеносем йĕркелессине кая хăварнă. Чылай йĕтемсене, сушилкăсене, тырра вĕçтерсе типĕтмелли башньăсене вăхăтра юсаса пĕтермен е вырнаçтарма та тытăнман. Кĕрхи культурăсен вăрлăхне, кĕр аки валли çĕр хатĕрлессине, вăраха янă.

Çакă тата ытти çитменлĕхсемшĕн КПСС райкомĕн бюровĕ хуçалăхăн тĕп агрономне Ю.Альдеева учет карточки çине çырса хаяр выговор, тĕп инженерне И.Мульдиярова - учет карточки çине çырса выговор панă, партком секретарьне Г.Коннова, политикăллă воспитани ĕçне япăхтарнăшăн, тыр-пул пухса кĕртмел-

Шупашкар гидроэлектростанцине тунă çĕре кайса курма профком енĕпе экскурси йĕркелерĕм. Шăпах вăл вăхăтра турбинăсем вырнаçтарма хатĕрленетчĕç. Çав ĕçсене курса, вĕсене майлаштаракан монтажниксемпе калаçрăмăр. Сулахайран: «Капкăнăн» штатра тăман художникĕ Юрий Смирнов, редакци кӳрши, «Тăван Атăлăн» ответлă секретарĕ Николай Григорьев, редактор заместителĕ Владимир Кузьмин, «Капкăнăн» активлă авторĕ-кулăшçă Василий Самойлов тата вырăсла кăларăм редакторĕ Анатолий Финько.

ли техникăна, йĕтемсене хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе принципсăр пулни çинчен кăтартса хăварнă (ку та айăплав шутланать).

Çакăн хыççăн дирекципе партком ĕçе кирлĕ пек йĕркелес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. Çавна май хуçалăхра кĕрхи ял хуçалăх ĕçĕсене йĕркеллех ирттернĕ. Анчах редакцин фельетонсен пайĕ, сценкăна хатĕрлесе пичетленĕ хушăра (вăл вăхăт икĕ уйăх ытла тăсăлать) хуçалăхра пулса иртнĕ улшăнусене шута илмен, вĕсене материала кĕртмен.

«Юлхав ут юрттипе» сценкăна хатĕрлесе пичетленĕ хушăра тимсĕр пулнăшăн, журналăн тĕп редактор заместительне В.П.Кузьмина редколлеги ларăвĕнче асăрхаттарнă».

Мĕнле пулса тухать, э? Айăплисене - айăпланă. Çулталăк вĕçĕнче кăштах çитĕнӳ пулнă та, Шупашкар райкомĕн пуçлăхĕсем ассах кайнă. Журналне пичетленĕ вăхăтра пире ун çинчен пĕлтермен, кайран тин паттăрланма шутланă.

Пире ку тĕслĕх малашне тата асăрханулларах пулма вĕрентрĕ.

Кăрлач, 10.

Максимовпа Быков Мускава каллех «Плакат» издательстви ирттерекен семинара кайрĕç. Сатира плакачĕпе, уйрăмах империализма, капитализм çĕршывĕсенчи пурнăç сăнарне питлесе хуплашкан юлашки страницисенче карикатурăсем пичетлесе Быков, Аверьянов, Смирнов, Николай тата Георгий Яковлевсем самай тăрăшса çитĕнӳ тăваççĕ. Çавăнпа «Капкăна» унта чĕннĕ.

Акă вĕсем, СССРти сатирăпа кулăш журналĕсем, çĕршыв менелникне Мускава вашкăртса çитнĕскерсем - «Крокодил» кĕрекинче. Сылтăмран тăваттăмĕшĕ - «Капкăн».

Пĕлтĕр тĕп редактор «Крокодил» менелникне кайса килнĕччĕ. «Хамăр шутран ĕçрĕмĕр-çирĕмĕр, парнине, Шупашкарта заводра ятарласа тутарнă тимĕр капкăна, килес умĕн аран-аран тĕксе хăвартăм», - терĕ Максимов такама кӳренсе. Такамĕ хăйсене тĕп хулара, Мускавра, тĕплĕн йышăнман та. Çапла хисеплеççĕ унта, периферие «капкăнĕсене».

Кăрлач, 25.

Партин Тĕп Комитечĕн ноябрьти (1982 ç) Пленумĕн йышăнăвĕсенчен тухса тăракан дисциплина ыйтăвĕ пирки партпуху ирттертĕмĕр. Мана докладчик турĕç. Тĕп редактор итлесе ларчĕ. Çунтармалла пулчĕ вара хăшне-пĕрне. Çăтмах кĕтесĕнчи пуçватмăш кахалĕсене вăратрăм.

Максимов Николай Ивановича тилĕ пек пулма хăтланнăшăн критиклерĕ. Иванов хирĕçле никама та каласшăн мар, ырă пуласшăн, кут хыçĕнче вăрттăн çыртма ăста.

Александр Угольников хăй КПСС Уставĕ ыйтнисене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен отчет туса пачĕ. Намăса пĕлмесĕрех хăйне ырласа пăрахрĕ вăл. Унăн коммунистла мар тивĕçсĕр енĕсене - улталанине, суйнине, айăпне çын çине йăвантарма хăтланнине, ĕç çине çиелтен пăхнине, ăсталăха ӳстерессишĕн тăрăшманнине - пурне те аса илтерме тиврĕ вара манăн вĕçĕнчи сăмахăмра. Вăл, Чутай шĕвĕркки, ĕнтĕ коллективран кулсах чаплă çын пулса тăрасшăн-ха... Ĕç тухĕ-ши?

Нарăс, 24.

Редколлеги ларăвĕнче Федор Комаров хăй ĕç йĕркине тата ĕçре палăртнине мĕнле пурнăçлани çинчен пĕлтерчĕ. Ку - çĕнĕлĕх. Тĕп редактор дисциплинăна хытарма пуçларĕ. Пĕчĕк пулсан та, пысăккăнах çыртать. «Иккĕ ӳсĕррине курсан, ĕçрен кăларатăп», - тет. Çапла, вĕçĕмсĕр ĕçсе çӳренĕшĕн Георгий Яковлев художника редколлеги членĕнчен хăтартăмăр. Ун вырăнне Виталий Григорьевич Григорьев-Енĕше кĕртрĕмĕр.

Нарăс, 28.

Профком ларăвĕнче хваттер черетне çирĕплетрĕмĕр. Угольников маларах сикесшĕнччĕ. Пĕлтĕр икĕ хутчен прогул турă та, куçарма килĕшмерĕç. Тĕп редактор ăна хваттер парасах та темест. «Унран майĕпен хăтăлмалла пуль», - тет. Усси сахалтарах, писатель пулассишĕн çеç çунать, журнал валли çиелтен шăйăрттарса туса парать те, пулать ун. Чутайра пурăннăшăн та командировăчнăй тӳлесе тăратпăр.

Март уйăхĕнчен пуçласа профсоюз членĕн укçине тӳрех бухгалтери тытса юлма пуçлать. Уншăн хистесех заявлени çыртарчĕç. Александр Галкин çырмарĕ. Кăлăхах. ВЦСПС пĕлтĕр çапла йышăнчĕ. Пурте пăхăнтараççĕ. Ăçта кайса кĕмелле? Профсоюз бюрокрачĕсем халĕ пуяççĕ ĕнтĕ, мĕншĕн тесен никам та ĕç укçинчен взнос пытарса хăварма пултараймасть. Вĕсен кассине бухгалтерисенчен укçа вăхăтра пырса тулать.

Пуш, 1.

Технически редактора Нина Степановна Орлована та пушă вĕçĕ сисĕмлех тивертрĕ. Пиллĕкмĕш номерĕн макетĕнче вăл «Пирĕн вăй, вăй» материала пăтраштарса вырнаçтарнă. Питĕ тĕплĕ ĕçлекенччĕ, те пӳлĕмре хирĕç пăхса ларакан «кавалерсен» куçĕ пăвнă, асăрхайман çав. Пичетлеме чарсах 6-7-мĕш полосасене çĕнĕрен турĕç, номер тухмалли вăхăт темиçе куна тăсăлчĕ, типографире графикрен тухса ӳкрĕмĕр.

Акă, тĕп редакторăн 14-мĕш номерлĕ приказĕ коридора тухса çакăнчĕ. Орловăна, чиперккине пăхмасăр, выговор панă. Номĕре юсаса çĕнетнĕшĕн редакци тӳснĕ тăкака унăн ĕç укçинчен тытса юлма хушнă. Пултарсан, çине тăрсан, такама темле те юсама пулать иккен.

Тимлĕх, тата темиçе хут çивĕчрех тимлĕх кирлĕ. Пурне те!

Пуш, 9.

Акă хайхи пирĕн редактор епле ыйтма, хĕсме пуçларĕ! Вунулттăмĕш номерлĕ приказ Александр Угольников редактора, Улатăр районĕнчи «Айбесинский» совхоза çыру тĕрĕслеме кайса çухалса пурăннăшăн, питĕ хытă асăрхаттарать, ăна редакцирех çирĕпленсе ĕçлесе ларма хушать. Ирĕклĕх чарусăрлăхне çаварлăхласшăнах Максимов.

Угольников халĕ аслă органсене çыратăп тесе, кăрккалла хăлтăкланса çӳрет.

Çу, 12.

Çĕркаç тĕлĕнмелле тĕлĕк курнă. Александр Угольников Александр Галкина вилесле ислетнĕ пек. Пурте ăна шеллеме пухăннă, нуша курнăскер профком çинчен юптару юптарса выртать. Çав вăхăтрах Хĕветĕр Комаров коммунизм ялавĕпе явакланнă çурма çарамас якăлтипе коридорта вĕтĕнсе çӳрет, хăй виле ӳсĕр. Тĕп редактор чечек айĕнче кулкаласа тăрать: «Ытла астарса ятăмăр çынсене».

Çу, 18.

Александр Угольников отпуск хыççăн хăй ирĕкĕпе ĕçрен тухса кайрĕ. Тасалчĕ пĕр йĕксĕкĕ коллективран.

Çĕртме, 23.

Николай Краснов-Пулар редактор авланчĕ, Элĕкьен хĕрне, учительницăна качча илчĕ. Туйне тăван ялта, Йĕпреç районĕнчи Туçара турĕ. Издательство автобусне çыртарса илсе патăм. Максимов Кăкшăма, писательсен кану çуртне, уйăхлăха çырма каçнăччĕ.

Утă, 12.

Тĕп редакторăн ĕнер отпуск вĕçленчĕ. Тепĕр уйăхлăх творчество отпускĕ илчĕ. Писательсен Союзĕнчен.

Александр Галкин каллех асса кайрĕ. Хăйне асăрхаттаракан, критиклекен çынсем çинчен тӳрех юптару çырать. Юрий Илюхин музыковед ăна, творчество халăхĕн пухăвĕнче чухне, юрăсем валли начартарах сăвăсем çырать, тенĕ. «Капкăнăн» 12-мĕш номерĕнче «Тăмана» юптару çапса та кăларчĕ. Хамăр та айăплă пуль уншăн, журнала вăл кунта ĕçлеме килнĕ хыççăн тавăру трибуни туса хучĕç те... Ирĕклĕ ăна.

Авăн, 16.

Мана черетлĕ çар званийĕ «майор» пама хатĕрленеççĕ. Çар комиссариатĕнчен çакăн пек хут ыйтнă. Ăна çырса пачĕç.

ХАРАКТЕРИСТИКА
на заместителя главного редактора республиканского журнала политической сатиры «Капкăн»
КУЗЬМИНА ВЛАДИМИРА ПРОКОПЬЕВИЧА

КУЗЬМИН В.П., 1937 г.р., чуваш, чл. КПСС, образование высшее - окончил Горьковскую высшую партийную школу в 1971 году, в журнале «Капкăн» работает с 1980 года в должности заместителя главного редактора.

В коллективе редакции он считается принципиальным и требовательным товарищем. Охотно выполняет общественные поручения. Активно вел пропагандистскую работу. Избран председателем профкома редакции.

Он - член Союза журналистов СССР с 1960 года. Постоянно совершенствует свое мастерство. Регулярно участвует в периодической печати. Его очерки, рассказы, фельетоны часто печатаются в республиканских газетах и журналах. Работая с активом, добивается организации злободневных материалов для журнала. Оказывает определенную помощь молодым авторам.

Тов. Кузьмин - политически грамотен, как человек честен и правдив, морально устойчив.

Настоящая характеристика выдана для представления в Чебоксарский горвоенкомат.

Главный редактор
журнала «Капкăн» МАКСИМОВ Н.Н.
Секретарь первичной парторганизации
журнала «Капкăн» ИВАНОВ Н.И.

15 августа 1983 г.

Авăн, 19.

Пирĕн пата «Коммунизм ялавĕнчен» Вăрнар ачи, Кушлавăшра çуралнă Вячеслав Кондратьев куçрĕ.

Авăн, 28.

Партпуху пулчĕ. Секретаре Николай Ивановичах хăвартăмăр. Икĕ питлĕскер, çӳрет лăпăртатса. Пĕрмай «парторг ĕçĕсене Кузьмина памалла», - тет. Хăй урăххине суйласран хăраса сехĕрленсе ӳкнĕ-ха. Тӳсме пултараймастăп çавнашкал çынсен хăтланăвĕсене.

Юпа, 20.

Хветĕр Агивер мана писательсен Союзне кĕме документсем хатĕрлеме хушнăччĕ. Рекомендацисем Александр Артемьевран, Порфирий Афанасьевран, Аркадий Эсхельтен илтĕм. Лаврентий Таллеровпа Георгий Краснов (ĕçнĕ чух шантарнăччĕ), Хветĕр Уяр пама килĕшмерĕç. Агивер малтан хастарланса çӳрерĕ-çӳрерĕ те, халĕ тем хăтланать.

Николай Максимовпа Николай Иванов Союза кĕрсе кайрĕç. Николай Иванович издательствăра ĕçленĕ чухне ачапча кĕнекисем кăларса юлма ĕлкĕрнĕ çав. 10-20 листаллă пулсан та - кĕнеке шучĕ пур. Виçĕ кĕнекерен кая мар кирлĕ, теççĕ те писатĕле кĕме... кĕнекине кăларма чĕр нуша.

Тĕп редактор Палиновпа Быкова, пайсен тăваттăмĕш квартал планне туманшăн, хытă асăрхаттарчĕ. Миçе пухура каларăм ĕнтĕ кашни номĕре планламалла, тесе. Тин, акă, 23-мĕш номĕре эп ĕмĕтленнĕ пекех планларăмăр, пурте пĕрле пухăнсах. Быков патне пурпĕрех план тени çитмерĕ-ха. Уншăн пулсан... «А Васька слушает да ест».

Профкома çаксене суйларăмăр: А.А.Быков, Н.С.Орлова, Х.Н.Тимофеева, Ф.К.Комаров, В.П.Кузьмин (председатель).

Чӳк, 1.

Парти обкомĕнчен пуху ирттерме хушнă. Пирĕн «хăрушă тĕрĕслевçĕ» Михайлов унччен питĕ тăрăшсах хатĕрленнĕ, прокурор судра юлашки айăплав сăмахĕ калас умĕнхи пекех. «Журналта пичетленекен материалсен идейăпа политика шайне ӳстерессишĕн редакцири коммунистсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен» - çапла лартрĕç кун йĕркинчи ыйтăва.

Штатра тăман художниксемпе пĕрле эпир коммунистсем тăххăрăн тата КПСС членĕн кандидачĕ пĕрре пур.

Пухăнма сăлтавĕ пулнах çав. Обкомрисенчен те мускаврисем хытă ыйтаççĕ. КПСС Тĕп Комитечĕ анчахрах пичет органĕ-

сене ертсе пыракансен материалсен идея ҫирӗплӗхӗшӗн тата илемлӗх шайӗшӗн хуравлӑха ӳстермелли ҫинчен йышӑну кӑларнӑччӗ. Ҫавӑн тавра карталанса юрлас пулать ӗнтӗ пирӗн. Михайловӑн унӑн - ташлаттармалли тӗллев. Тутапа каламалли хуткупӑсне пропагандӑпа агитаци кӗтӳҫӗсем ӑна парса янӑ, йӗплӗ кавирне вӗсем, пичет секторӗнче, хӑйсемех тӗртсе хунӑ. Пичет секторӗн пуҫлӑхӗ хӑйӗн докладӗнче пире хытӑ ҫапрӗ.

Мускавра пӗр-пӗр паллӑ Хушу ҫуралнӑ-ҫуралман, капкӑнҫӑсем те ӑна майракаран ҫулса илсе тӳрех пурнӑҫлама тытӑнаҫҫӗ-ҫке. Йӗрки ҫапла. ЦК Тӗп Комитечӗ, СССР Министрсен Совечӗ тата ВЦСПС «Социализмла дисциплинӑна ҫирӗплетессипе ӗҫлессине вӑйлатмалли ҫинчен» йышӑну кӑларнӑччӗ. Ҫавна май, штатра тӑман (ҫапах ӗҫ штатне кӗрет) пирӗн художник Николай Яковлев та хӑйне валли тема, сюжет шыраса тупнӑ: ӗҫрен ӗҫе йӑкӑртатса куҫса ҫӳрекенсене халӑха питлеттерес, култарас тесе шутланӑ. Кулӑш ӳкерчӗкӗнче ҫав йышӑну палли ярҫӑн курӑнать. Вӑл 17-мӗш номӗрте пичетленнӗ. Ҫакна Мускавра, Пичетри вӑрттӑнлӑхсене сыхлакан СССР патшалӑх управленийӗнчи цензорсем тӗрӗсех асӑрханӑ-мӗн. Карикатурӑна паллӑ йышӑну курӑнӑвӗ - никӗсӗ ҫинче кӑлармалла пулман иккен.

Ҫавӑн пекех 4, 7, 16-мӗш номӗрсенче, илемлӗх пайне тытса пыракан Анатолий Быковӑн ӗҫрен-ӗҫе чупса ҫӳрекенсемпе прогул тӑвакансене питленӗ карикатурисем идея тӗлӗшӗнчен ӑнӑҫсӑр, илемӗ енчен шупка пулса тухнӑ-мӗн.

Художниксен ҫак ӗҫӗсем, докладчик шучӗпе (обком шучӗпе ӗнтӗ!) ҫӗршыври социализмла пурнӑҫ чӑнлӑхне пӑсарах кӑтартаҫҫӗ, урӑхларах шутлаттараҫҫӗ.

Литература пайӗн пуҫлӑхӗ Александр Алексеевич Галкин ҫырнӑ «Тӑмана» юптару (12-мӗш) республикӑри писательсен Союзӗпе композиторсен Союзне хире-хирӗҫлеттереҫҫӗ иккен. Ҫавна май парти обкомӗнче хӗрӳ калаҫу пулнӑ-пать.

Шупашкарти авторемзаводран хатӗрленӗ фельетон чӑнлӑхран аякра тӑрать. Унпала обкомӑн промышленность пайӗн тивӗҫлипе ӗҫлемелле пулса тухнӑ.

«Тӗнчере идеологи кӗрешӗвӗ хӗрсе ҫивӗчленсе пынӑ тапхӑрта, - тесе кашнине сӑмсаран шакканӑ пекех палӑртрӗ Михайлов, - пирӗн те парти ыйтнӑ шайра пулмалла, социализмла чӑнлӑха пӑсса кӑтартакан тӗслӗхсене сивлесе ҫывӑха ямалла мар. Унашкалли ан пултӑр тесен, ҫавӑнпа тарӑн, ҫивӗч ыйтуллӑ ма-

териалсене пичетлес умĕн, вĕсене редколлеги ларăвĕнче сӳтсе явмалла».

Тухса калаçмалли вăхăт çитсен, Иванов, чĕтревлĕрех сассипе, яланхилле çаптарчĕ:

- Пире ятлани, критиклени - тĕрĕсех. Ăна йышăнмалла. Докладра асăннă материалсем, паллах, пурте ман алă витĕр те тухнă, анчах вĕсем çакăн пек шав çĕклессе эпĕ шутламан та. Редакциленĕ, сăнаса тĕрĕсленĕ чухне пирĕн малашне пурин те тимлĕрех пуласчĕ.

Николай Лукич тĕрĕслĕхе уççăн палăртма ăнтăлакан хĕрӳ çын. Куратăп-ха, вăл вырăнта тӳрĕ, лăпкă лараймасть. Чунĕ кӳтсе çитнипе сиксе тăма хатĕр. Çаплах пулчĕ.

- Ман ӳкерчĕке хура пĕлĕтсем тахçанах карса илнĕ. Суккăр мар. Çилĕ хăш енчен вĕрнине халĕ кăштах туйрăм, анчах, çапах та... Ăнланăр эсир, енчен те эпĕ çав летунсене урăхларах тыткăçра-композицире ӳкерсе кăтартнă пулсан, тĕп шухăша уçса кăтартаймастăмччĕ. «Крокодил» пултарулăх çуртĕнче ĕçленĕ хушăра çак ӳкерчĕк пирки мана хăвăр та лайăх пĕлекен, пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтернĕ карикатуристсем те япăххине нимĕн те асăрхаттармарĕç, мухтарĕç çеç. Тата тăнлăрах ӳкерме те майĕ пулнă пуль. Васкавлăх пĕтерет-çке. Çав-çав йышăнупа çыхăннă карикатурăна тӳрех номĕре чикмелле. Ĕлкĕреймерĕн - пушă лекет.

Çурхи вăкăр кăмăл-туйăмĕпе хастарланнă Анатолий Александрович, Элĕк енчи Куракăш чăвашĕ пулин те, вырăсла çеç калаçать, çирĕп шăлĕ хушшинчен ытлашши сăмах кăлармасть.

- Николай Лукичпа эпĕ килĕшӳллĕ (ахаль чухне нихçан та пĕр шухăшлă пулман!), - терĕ вăл яланхилле пуçне çĕклемесĕр. - Сатирăн шухăшĕ тарăн, унăн имлĕхне ĕçсе киленмешкĕн кашнийĕннех пуçĕ çитмест. Цĕкапа Совминăн çав йышăнăвĕн никĕсĕ-паллийĕсĕр ӳкернĕ пулсан художник, ăна паянхи хĕрӳ тапхăр тĕкĕрĕ теме çукчĕ. Ӳкерчĕке пăхсан, эпир чăн пурнăçпа тан пыни курăнать. Мĕншĕн, мĕне пула ӳкерни паллă.

Эпĕ хам пĕртте социализмла пурнăç сăнарне тĕксĕмлетсе ӳкерместĕп, чăнлăхран пăрăнмастăп, ĕçкĕпе аташакансене, ĕçренĕçе чавтарса ырлăх шыраса çӳрекенсене тата ытти мăшкăл тăвакансене çеç кулăшла майпа питлетĕп. Кунта пире ытлашши юсасшăн, сатира картĕнчен хирсе кăларасшăн тапаçланаççĕ.

Александр Галкинăн сăмахĕсене итлекелесе, унăн шайнемайне унчченех ăнланса çитнĕччĕ-ха. Вăл хальхинче те Аслă хушуран пăрăнма шутламаннине, ăна питĕ хапăлласа пурнăçлама

хатĕррине пысăк пуçлăх манерĕпе ĕнĕрлесе кăтартрĕ, калаçăва майĕпен-майĕпен пăрса-чалăштарса, хăй тавра хӳтĕлӳ карти çавăрса пычĕ. Юптарăвĕ унăн чăннипех чаплă-мĕн, вулакансем çеç ăна тарăннăн ăнланайман. Юптарура хăйне тупнă çыннăн сăнарĕ пурнăçра та çавнашкалах. Çавăнпа произведени хăйĕн тĕллевне пурнăçланă. Обкомрисен ĕнтĕ, çав «Тăманана» чĕнсе, унпа урăхларах калаçмалла пулнă. Пирĕнпе те этемле хăтланмалла. Эпĕ те, хама хӳтĕлесе, аслăрах органсене хускатма, вĕсенчен пулăшу ыйтма пултаратăп, терĕ.

Хăнăхнă йăлапа пуçлăх пур çĕрте те яланах юлашкинчен пĕтĕмлетӳ тăвать-çке. Вăл ĕнтĕ, пурне те итлесе, пурин сăмахĕнчен те ылтăн пĕрчи суйласа, малашлăха кăтартса парать.

- Паянхи пуху, - терĕ Максимов куçĕпе пурне те ăслăн çунтарса тухса, - шутсăр вырăнлă, хăй вăхăчлĕ. Мускав ахальтен çĕклемен шăв-шав. Ыйтăвĕ шӳтле мар, тарăн сăлтавлах. Уншăн, чи малтан, йăлтах эпĕ айăплă. Йăнăша йышăнса, коммунистла пĕтĕмлетӳ турăм: малашне кунашкал ĕçлеме юрамасть. Çав вăхăтрах ку пăтăрмах кашни коммунистах, хуравлă ĕçченех тӳрремĕн пырса тивме кирлĕ.

Сатира ĕçĕ çăмăл мар. Вулакан-куракан пирĕн çимĕçе хăйĕн куçĕпе курать, хăйĕн тутипе туять, ăнланать. Пирĕн вара пур енĕпе те пурне те тивĕçтерекен материал кăна пичетлемелле. Журнал енне никам та хăяккăн, кулса ан пăхтăр.

Николай Яковлев ӳкерчĕкĕ совет пурнăçне хирĕçлекен, мăшкăллакан произведени мар, ăнăçсăртарах пулса тухнăскер кăна вăл.

Ман енчен çирĕплĕх тата ытларах кирлĕ пуль, тетĕп.

Ахаль те районсенчен тухма пĕлмесĕр ĕçлетĕп пулин те, чăн-чăн фельетон мĕнле кĕрлемеллине вырăна тухса çӳресе кăтартмалла пулмарĕ редакци пăчлавçисене. Вĕсене нихçан та ăслă канаш сĕнмелле мар иккен. Ямшăкра темиçен юнашар лармаççĕ.

1984 çул.
Ĕç кĕнекинчен.
Нарăс, 14.

Чулхулана партшкул çумĕнче ĕçлекен зонăри партипе совет тата пичет ĕçлевçисен пĕлĕвне ӳстермелли уйăхлăх курсне ячĕç. Райхаçатсенчен Михаил Васильев (Вăрнар), Лев Шапошников-Маршал (Муркаш), Ванифатий Андреев (Вăрмар), Шупашкартан Петр Сидоров («Коммунизм ялавĕ»), Исаак Кирилловпа

Николай Пейков («Советская Чувашия») ытларах çывăх çынсем. Пирĕн ушкăн хуравçи - Кириллов. Вăл хăйне нихçан та аслă çын пек кăтартмасть. «Çамрăк коммунистра» ĕçленĕ вăхăтранпах маншăн вăл сăпайлă, ăслă çын, талантлă журналист, йĕркелӳçĕ, новатор. Унпа калаçма та, канашлама та шанчăклă.

Пуш, 16.

Чулхула анаталла хăваларĕ. Акă эпĕ - килте. Ĕçре. Максимов роман çырма пултарулăх отпускĕ илнĕ.

Утă, 3-8.

Минскра «Вожык» журнал редакцийĕнче командировкăра пултăм. Уншăн Николай Николаевича тавах, терĕм.

Эпĕ унтан таврăнсан, тĕп редактор пурне те хăй патне пухрĕ. Шур вырăссен кулăшçисем мĕнле ĕçлени çинчен каласа патăм. Лайăххи вĕсен акă мĕн:

- Чи кăсăклантаракан çыру сехечĕ.

- «Вожык» ушкăнĕсем карикатурăсем кăтартса вулакансемпе калаçаççĕ. Ӳкерчĕксене çавăнтах яланлăхах хăвараççĕ.

- Кашни номерĕн - кăларăм дежурнăйĕ.

- Гонорар лартас умĕн редакци ушкăнланса канашлать.

- Журналăн хушма кăларăмĕсене тĕп редактор редакцилесе пусса кăларать.

Эпĕ каласа пани, паллах, тавлашу хускатрĕ. Пирĕн патра вĕсем нихçан пурнăçланмĕç-ши? Эпир ку таранччен те çирĕп план юмахĕ кăна яратпăр та... Вĕсен унта ĕç планне Белоруссi компартийĕн тĕп комитечĕ çирĕплетет. Редколлеги членĕсене те Тĕп комитетра çирĕплетеççĕ. Пирĕн - тĕп редактор.

Утă, 15.

Валентин Палинов черетлĕ отпуска каяс умĕн «Камчатка вулканĕ» пĕр эрне пăкă сирпĕтрĕ.

Çурла, 15.

Канса çитереймен иккен Валентин Михайлович, каллех «Камчаткăна» чĕртсе ячĕ. Пĕр пăкки тĕп редактор çамкине çитсе çапрĕ пулас. Хуçа хаярланчĕ, Палинов айĕнчен çырусен пай пуçлăхĕн çемçе пуканне карт! кăна туртса кăларчĕ, пуш вырăна Хĕветĕр Комарова лак! лартрĕ.

Çурла, 25.

Пирĕн коллективра пурпĕрех йĕркене пăхăнасшăн мар. Чылайăшĕ дисциплинăна юратмаççĕ. Галкинпа Иванов тата çырусемпе ĕçлекен Христина Тимофеевна çеç хăйсене çирĕп тытаççĕ, хăшĕсем редакцие килкелесе курăнкалаççĕ те... ĕçре вăхăт ирт-

терсе лараççĕ. Çавăрттарса шухăшласан, çурри ытлашши эпир çакăнта. Каласассăн, асăрхаттарсассăн - хир сысни пек шăрт тăратаççĕ. Эпĕ кунта ĕçлеме килнĕренпех ĕнтĕ çавсемпе вăрçатăп, çапăçатăп, йĕрке тăвасшăн тăрăшатăп. Пурпĕрех усси çук. Кахалсем ушкăнласа кĕрешӳ пуçлаççĕ.

Чӳк, 15.

Çитес çулхи пуш уйăхĕн 16-мĕшĕнче «Капкăн» та 60 çул тултарать. Максимов юбилей комиссийĕ турĕ. Владимир Кузьмин - председатель, Николай Иванов - секретарь, Александр Галкин, Анатолий Быков, Николай Яковлев, Федор Комаров - членĕсем. План турăмăр.

Чӳк, 16.

Ивановсемпе Быковсем награда пайлама та пуçларĕç. Урăх ним çинчен те мар, кама мĕн лекесси пирки пăшăлтатса çӳреççĕ. Ĕçĕшĕн хыпсах çунмасть-ха Быковĕ. Эпĕ кунта килнĕренпе вĕсем, Ивановпа иккĕшĕ, ятарласа пĕрре колхозра, заводра, ĕç коллективĕнче пулса курман, вырăна тухса нимле материал хатĕрлемен. Вĕрекен пурнăçа хаçат, радио-телевидени тăрăх çеç пĕлеççĕ. Гонорар тесен вара... ай пайлаççĕ... Эрнипе укçа шутласа ларма хатĕр.

Чӳк, 20-21.

Обком валли «Капкăн» менелникĕ çинчен справка хатĕрлерĕм. Вырăсла.

Чӳк, 27.

Парти пухăвĕнче Владимир Прокопьевич Кузьмин коммунист КПСС Уставĕн ыйтăвĕсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен ыйту пăхса тухрĕç. Ку йăла пирĕн çирĕпленчĕ. Акă, мана та черет çитрĕ.

Пухуччен нумай шухăшлама тиврĕ. Устава тепĕр хут пăхса тухрăм, коммунист тивĕçĕсене çĕнĕрен тĕплĕн аса илтĕм. Мĕн каламаллине каларăм - мухтанмасăрах, вăтанмасăрах, хăпартлансах. Тĕрĕссипе мана хам коммунист тивĕçне чăннипех пурнăçласа пынăн туйăнать.

Чи хăрушши вăл - юлташсем, коммунистсем сан çинчен мĕн шухăшлани, мĕн калани. Çавăнпа, сăмаха вĕçлесен, хумханса кĕтрĕм вĕсем мĕн каласса.

Ыйтусем:

Николай Иванов: - Спортпа интересленетĕр-и?

- Ирпе чупатăп, гимнастика тăватăп.

Анатолий Быков: - Эсир мĕнле произведенисем çырнă?

- Пичетлени икĕ повесть пур. Газ пăрăхĕ хывакансем çинчен çырнă повĕçе «Тăван Атăлта» пичетлеме хатĕрлесе çитерне. Трактор завочĕ тăвакансемпе ял ĕçченĕсем çинчен романсем çырнă.

Тухса калаçакансем:

Георгий Яковлев: - Кузьмин юлташ вăл мана этемлĕхĕпе, кăмăлĕпе килĕшет. Редакцие пырсан, кашнинчех манран мĕнле пурăнни, сывлăх çинчен, мĕн ӳкерсе килни пирки ыйтса пĕлет.

Николай Иванов: - Владимир Прокопьевич отчета питĕ тĕплĕн туса пачĕ. Кун пек отчет пулманччĕ-ха. Унран вĕренмелли нумай. Ыттисен те çавăн пекех тимлĕ пулмалла парти поручениййĕсене пурнăçлассипе.

Николай Яковлев: - Мана унăн çынлăхĕ, çынна пулăшма тăрăшни кăмăла каять. Эпĕ унпа вăл Йĕпреçре ĕçленĕ чухнех паллашнă. Эпир Кĕркури Лучпа унта пынăччĕ. Владимир Прокопьевич патне кĕтĕмĕр. Редакторсем вĕсем ялан ирĕклĕ мар. Ку ăна-кăна пăхса тăмарĕ, пирĕнпе пыма килĕшрĕ. «Красный фронтовик» колхозра, «Ибресинский» совхозра çынсем пухтарчĕ, тĕлпулусем аван иртрĕç.

Николай Максимов: - Владимир Прокопьевича пĕлнĕ пек, паллах, кунта никам та манран ытларах пĕлмест. Эпир пĕрле ĕçленĕ, çемьесемпе пĕрле пĕр урамра пурăннă, пĕрле ĕçсе-çинĕ. Журналистикăна вăл пăрахмарĕ, унта вăйлă ĕçлет, хăйĕн тĕллевне çирĕп тытса пырать. Ачисене сывлăхлă ӳстерсе тивĕçлĕ воспитани пани те тĕслĕхлĕ. Çакна çеç асăрхаттарса хăварас килет: материалсене редакциленĕ чухне тата тимлĕрех пулмалла.

Раштав, 4.

Редакцин çитес çулхи ĕçĕ-хĕлĕ пирки калаçрăмăр. Ун умĕн виççĕмĕр - тĕп редактор, эпĕ тата яваплă секретарь, рубрикăсене тепĕр хут пăхса тухрăмăр. «Тип мунча», «Йĕрлерĕмĕр-тупрăмăр», «Капкăн» куçĕ - çивĕч куç» текеннисене кăларас терĕмĕр. «Кулăш кушелне» чăн-чăн кушелех - чăваш çыннин авалхи кушелех тума шутларăмăр. Ачасем валли «Кăвайтă умĕнче» пулать.

Иван Мучи премине парас ыйтăва пăхса тухрăмăр. Быков Юрий Смирнов художника, Галкин калавçă-сăвăçсене партарасшăн тапаçланчĕç. Эпĕ хам енчен «Коммунизм ялавĕн» промышленность пайне тытса пыракан Валерий Николаева тăратрăм. Фельетон çырма мĕн тери тертлине тата уншăн явап тытма мĕнле çирĕплĕх, чăтăмлăх кирлине ăнлантарса, редколлеги канашне ĕнентертĕм. Тĕрĕссипе ĕнтĕ Валерий Николаевичăн ку таранччен те чи вăйлă фельетон пулман. Хаçат корреспонденцине пĕр-пĕр литература сăнарĕн савăлне тĕккелесе аппаланни çеç пулнă. Савăлĕ

кулăш сăнарне шала кĕреймен. Хам пулăшнипе тĕртсе кĕртсе çеç фельетон ятне тивĕçтернĕ. Мĕн тăвăн, проблема, тематика, политика çивчĕ япала ыйтать. Çивчĕ пуртах кирлĕ, чĕлхи мăка пулин те. Çапла Николаев лауреат пулчĕ.

Раштав, 25.

Грамотăсем илме тăратнă список кĕскелсех пырать. Хамăр алапа обком али витĕр çаксем тăрăлса юлчĕç: Н.Н.Максимов, В.П.Кузьмин, Н.И.Иванов, А.А.Быков, Н.Л.Яковлев, И.П. Аверьянов, В.Е.Долгов (Мускав районĕн прокурорĕ, корреспондент).

1985 çул.

Кăрлач, 2.

Ку çула та редакци темле тунсăхлăн кĕчĕ. Нимле савăнăç кулли, палли палăрмасть çынсен пит-куçĕнче. Çапса хуçнă çын пек пуçĕсене чиксе çӳреççĕ. Темшĕн чун туртмасть ман хамăн та пăлхавлă, ултавлă эртеле. «Камчаткăна» лексен пĕр савăнăç пур ĕнтĕ.

Чăваш область профсоюз комитечĕн штатра тăман инструкторĕнче те ĕçлетĕп, районсенчи профсоюз организацийĕсен ĕçне сахал мар тĕрĕслеме тивет.

Культура ĕçченĕсен профсоюзĕн вун тăваттăмĕш конференцийĕнче, 1984 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕ, ларусен залĕнче (сылтăмран): Владимир Кузьмин («Капкăн»), Валериан Степанов («Коммунизм ялавĕ»), Зоя Романова (Писательсен Союзĕ), Илья Журавлев («Халăх шкулĕ»).

Кăрлач, 10.

Тĕп редактор ирех эртеле пухрĕ, хĕрарăмсене чĕнмерĕ. ОЦУ (обкомовские ценные указания) парап, терĕ. Чăвашăн тĕп идеологĕ Александр Петров республика хаçат-журналĕн редакторĕсене пухса калаçнă. Хаклă кăтартăвĕсем çаксем:

- Стахановла юхăм çинчен ытларах çырмалла.

- Аслă Çĕнтерӳ умĕнхи 40 ударлă эрне.

- Социализмла обязательствăсене палăртнă вăхăтчен пурнăçласси.

- Республикăри Уçă çыру кунĕнче йышăннисем пурнăçланаççĕ-и?

- Агропромышленность комплексне кĕрекен организацисен ĕçĕ-хĕлĕ.

- Редакцисенче ĕçекенсене ĕçрен кăларса ямалла. Кун пирки «Тăван Атăл» çыннисене уйрăмах хытарса асăрхаттарнă.

Пирĕн штатра тăман художник Георгий Яковлев урăлтаркăча черетлĕ лекнĕ. Николай Николаевич ăна хамăр ретрен кăларма приказ çырчĕ.

Кăрлач, 14.

«Капкăн» значокне тутарас терĕмĕр. Эскизне Владислав Игнатьев художник хатĕрлерĕ. Шупашкарта унпа аппаланакан çук та, Вячеслав Кондратьева Йошкар-Олана ятăмăр. 60 штук вырăнне 660 заказ парса килчĕ. Пинрен кая мар йышăнмаççĕ, тет.

Кăрлач, 24.

Ĕнер ӳнер канашĕ пухăнчĕ. Николай Николаевич-командирсен «çарĕнче». Быков чирлет. Пĕр кирлĕ ыйтăва Николай Иванчпа вĕсемсĕр татса параймарăмăр.

Юбилей номерӗнче варринчи икӗ страницăна (разворот) «Капкăнра» ӗҫлекенсемпе журнал тусӗсен 31 портретне ӳкерме хушнăччӗ: Юрий Смирновпа Николай Яковлева. Вӗсем хирӗҫсе кайнă. Эскизӗсене илсе пычӗҫ. Эпир пăхса тухрăмăр. Паян Максимов редколлеги членӗсене пухрӗ те, пурте Николай Лукичăнне ырласа йышăнтăмăр. Унăн портретсем яланах аванрах тухаҫҫӗ. Ăстаҫă ӗнтӗ.

Ӳкерчӗкре (174 стр). Капкăнăн туслă та ӗҫчен ҫемйи (сулахайран сылтăмалла): сӗтел хушшине ларма ӗлкӗрнисем - Вячеслав Семенов, Владимир Агеев художниксем, Василий Давыдов-Анатри поэт, Чăваш АССР халăх писателӗ Василий Алендей, Хветӗр Уяр писатель, Александр Кăлкан поэт, Николай Яковлев художник, Александр Галкин поэт, Анатолий Быков художник, Владимир Кузьмин фельетонист, Николай Максимов писатель, Николай Иванов фельетонист, Валерий Игнатьев, Георгий Яковлев художниксем, Виталий Енӗш, Владимир Ухли писательсем, Александр Аслут фельетонист, Чăваш АССР халăх писателӗ Александр Артемьев, Иван Владимиров художник; вӗсем хыҫӗнче вырнаҫнисем - Юрий Смирнов художник, Денис Гордеев писатель, Георгий Ефимов поэт, Юхма Мишши писатель, Хветӗр Комаров фельетонист, Василий Самойлов писатель, Илья Бородкин художник, Юрий Сементер поэт, Агат Сафин, Иван Аверьянов художниксем, Григорий Луч писатель; чи мала тухса тăнисем - Василий Долгов фельетонист, Аркадий Эсхель писатель, Валерий Николаев фельетонист. Вӗсене сăйлакансем - хамăрьял чăвашӗсем.

Ҫемьери ытти авторсене Н.Яковлев ӳкерсе ӗлкӗреймен.

Паянхи партпухура Александр Алексеевич Галкин КПСС Уставӗ ыйтнисене мӗнле пурнăҫлани ҫинчен отчет турӗ. Хитре калаҫрӗ. Йӗркелӗхӗ ҫителӗклех-ха унăн. Пурнăҫ биографийӗ пуян. Пултарулăхӗ ытлашшипех - юптарупа кӳпкес енӗпе. Ырларăмăр. Эпӗ пӗр сӗнӳ патăм. Ҫамрăк сотрудниксенчен кама та пулин шефа илмешкӗн. Килӗшрӗ. Йышăнăва та кӗртсе хăвартăмăр.

Кăрлач, 29.

Николай Иванча тинех ҫӗнӗ хваттер пачӗҫ.

Мана «Коммунизм ялавӗн», Журналистсен Союзӗн правленийӗн тата облпрофсоветăн 1984 ҫулхи конкурсӗнче ҫӗнтернӗшӗн, пӗрремӗш преми пама йышăннă - «Сасси ян каять» очеркшăн.

Кăрлач, 31.

«Капкăн» 60 ҫул тултарнине халалланă номӗре набора ячӗҫ. Разворотра Николай Яковлевăн анлă ӳкерчӗкӗ кайрӗ. Смирно-

ва, тăрăшнăшăн, кăштах тӳлес терĕмĕр. Юрий Петрович кӳреннĕ, ун пирки художниксен Союзĕн правленине те çитнĕ. Малтанах сĕнмелле пулман та ĕнтĕ ăна ӳкерчĕксем тума...

Нарăс, 1.

Николай Лукич Пичет çурчĕн иккĕмĕш хутри банкет пӳлĕмĕнче хăй 60 çул тултарнине паллă турĕ. Хамăр çынсем çаксем пынă: Максимов, Кузьмин, Иванов, Комаров, Краснов, Кондратьев, Быков. Хĕрарăмсем те юлмарĕç. Галкин пыман. Георгий Яковлев тарнă. Палинов хĕрне качча парать.

Профсоюз енчен Комаров 20 тенкĕлĕх тăм савăт-сапи пачĕ. Антип Николаев - ЧАССР журналистсен Союзĕн Хисеп грамотине.

Лайăх иртрĕ каçĕ.

Нарăс, 14.

Наградăсем халăх умне тухма пуçларĕç. Чăваш АССР Верховнăй Совет президиумĕн икĕ указĕ хаçатра пичетленчĕ. «Капкăн» политика сатира журналĕнче ăнăçлă ĕçленĕшĕн ӳнер пайĕн заведующине Анатолий Александрович Быкова, тĕп редактора Николай Николаевич Максимова Чăваш АССР Верховнăй Совет президиумĕн Хисеп грамотипе чыс тунă. Культура енĕпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн, «Капкăн» журнал редакцийĕн штатра тăман художникне Николай Лукич Яковлева «Чăваш АССР культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă.

Пуш, 14.

Оргкомитет çанă тавăрсах хыпкалашать. «Капкăн» библиотекин» ятарлă хулăн номерĕ хатĕр. Значоксем илсе килнĕ. Йыхрав хучĕ çаптарнă, çынсем патне ярса панă. Килмелли хăнасемпе, аслă пуçлăхсемпе калаçнă. Писательсен Союзĕн правлени председателĕ Анатолий Емельянов патне шăнкăравларăм. «Капкăнсăрах» пурăнăпăр-ха, пымастăп»,- терĕ сиввĕн. Унччен шăпах тата Юрий Артемьев ун çинчен «Капкăнра» пĕр кулăшла калав çапса кăларнăччĕ. Урăх хирĕçлекен, пире сивлекен пулмарĕ.

Савăнăçлă пухăвĕн планĕ тата президиумĕ пирки обкомра виççĕ пултăм. Пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕпе Михаил Васильевич Шутинпа пĕрмаях канашлатпăр. Вĕсен урăх ĕç çук пуль, тетĕп тарăхса. Чăн та ĕнтĕ юрист-профессионал хăйĕн юриспруденцийĕнче ăнтараймасть пуль те çав, сăмах-юмах çаптармалли пая обкомра шик шăхăрсах тытса пырать пуль.

Республикăри сатира журналне, ĕççыннисене коммунизмла воспитани парас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата пĕрремĕш номер тухнăранпа 60 çул тултарнă ятпа Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Хисеп грамотипе наградăлани çинчен указ тухрĕ. «Капкăн» кăларнă çĕрте активлă ĕçленĕшĕн «Вестник недели» хаçатăн художникне Иван Петрович Аверьянова, Мускав районĕн прокурорне Василий Ефремович Долгова, редакцин ответлă секретарьне Николай Иванович Иванова тата тĕп редактор заместительне Владимир Прокопьевич Кузьмина КПСС обкомĕпе Чăваш АССР Министрсен Совечĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Пуш, 15.

Хĕрӳ кун тинех çитрĕ. Издательство çурчĕн çиччĕмĕш хутне «Капкăн» хăнисем тулса ларчĕç. Залра вырăн çитмест. Президиума КПСС Чăваш обкомĕн идеологи секретарĕ А.П.Петров, пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ М.В.Шутин, ЧАССР журналистсен Союзĕн правлени председателĕ, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакторĕ Д.Ф.Семенов, «Советская Чувашия» хаçат редакторĕ М.И.Иванов, культура ĕçченĕсен профсоюзĕн обком председателĕ Ф.К.Павлов, «Капкăн» журналăн тĕп редакторĕ Н.Н.Максимов, унăн заместителĕ В.П.Кузьмин, СССР Литфончĕн Чăваш АССРĕнчи директорĕ В.Г.Григорьев-Енĕш, Вăрнар районĕнчи «Мир» совхоз рабочийĕ С.А.Юркин, Чăваш АССР Госкомиздат председателĕ Б.П.Васильков, журналăн штатра тăман художникĕ Н.Л.Яковлев, Чăваш АССР телевиденипе радиовещани патшалăх комитечĕн председатель заместителĕ Н.М.Дубинин, КПСС обкомĕн издательство директорĕн заместителĕ А.И.Астров, Шупашкар районĕнчи «Чебоксарский» совхозăн партком секретарĕ Л.А. Алексеев, Шупашкарти Ленин райкомĕн хуравлă çыннисем Ф.И.Гаязов, Г.А.Данилов, журналăн чи ватă корреспонденчĕсенчен пĕри Н.А.Яснопольский персональнăй пенсионер йышăнчĕç.

Пухăва эпĕ çивчĕ, вăраха тăсмасăр ертсе пытăм. А.П. Петров саламларĕ, наградăсем пачĕ. Н.Н.Максимов вăхăтлă доклад турĕ. Президиумри хуравлă пуçлăхĕсем тата А.В.Емельяновăн заместителĕ В.Г.Игнатьев салам сăмахĕсем каларĕç, хăшĕ грамота, хăшĕ парне пачĕç.

Ытти юлташсем-ĕçтешсем пирĕн çак хисепе тивĕçрĕç: профсоюз обкомĕн Хисеп грамотине - А.А.Галкин, Ф.К.Комаров, Х.Н.Тимофеева; ЧАССР журналистсен Союзĕн Хисеп грамотине - В.М.Палинов; КПСС обкомĕн издательствин Хисеп гра-

мотине - Н.Г.Краснов, Н.С.Орлова, Е.С.Тихонова, Р.К.Васильева, В.Н.Кондратьев, Н.С.Васильева.

Пуху хыççăн Хусанкай урамĕн кăнтăр енчи кафере шавлă калаçу турăмăр. Çын нумай чĕнмен. Хамăрăннисемсĕр пуçне П.В.Афанасьев (Писательсен союзĕ), В.Е.Долгов, В.Г.Григорьев, Н.М.Дубинин, штатра тăман художниксем пулчĕç.

Çу, 6.

ЧАССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Николай Лукич Яковлев çуралнăранпа 60 çул, пултарулăх ĕçĕнче 30 çул тăрăшнă ятпа Журналистсен тата Художниксен союзĕсен правленийĕсем, Мире хӳтĕлекенсен Чăваш комитечĕ, «Капкăн» журнал редакцийĕ, Чăваш патшалăх ӳнер галерийин дирекцийĕ «Сеспель» кинотеатртра выставка уçрĕç. Художник ĕçĕ-хĕлĕпе пурнăçĕ çинчен искусствоведени кандидачĕ Алексей Григорьевич Григорьев тарăннăн, тишкерӳллĕн, ăшшăн паллаштарчĕ. Хăйĕн пултарулăхне Яковлев питĕ анлăн кăтартать. Халăх йышлă.

Выставкине уçма редакцирен эпĕ кайрăм. Хăйне операци туса йывăр чиртен сыватнă, вилĕмрен çăлса хăварнă Волков профессор та чечек çыххипе пынă, салам сăмахĕ каларĕ.

Кайран Яковлев «Чăвашгражданпроект» столовăйĕнче вăйлă банкет пачĕ. Хăй питĕ савăнчĕ пулас.

Çу, 15.

КПСС обкомĕн Политвĕренӳ çурчĕн Пысăк «витинче» Чăваш АССР писателĕсен XIII съезчĕ пулчĕ.

Чăваш обкомĕ коммунизм строительствин хальхи тапхăрĕнче чăваш совет литератури умĕнче тăракан задачăсене сӳтсе явма пухăннă республикăри писательсен делегачĕсемпе хăнисене чĕререн саламларĕ. Анчах чĕри ăçта-ши, хăш вырăнта сиксе тапать-ши обкомăн - область комитечĕн?

«Чăн та, съезд паллă тапхăрта пухăннă. Пирĕн Тăван совет çĕршывĕ, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх тин кăна чаплă юбилее - совет халăхĕ иртнĕ вăрçăра çĕнтернĕренпе 40 çул çитнине паллă турĕç. КПСС Тĕп Комитечĕн кăçалхи апрельти пленумĕн йышăнăвĕсем, партин XXVII съездне кĕтсе илме анлăн хатĕрленни ĕçре тата обществăпа политика пурнăçĕнче çĕнĕ хавхалану çуратрĕç. Республикăри писательсем парти палăртса хунă историлле задачăсене пурнăça кĕртме, ĕççыннисене коммунизмла воспитани пама, хуçалăхпа культура строительствине аталантарма пысăк ĕç тăваççĕ...»

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!
Пролетарии всех стран, соединяйтесь!

КПСС Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Министрсен Совечĕ 1985 çулхи февралĕн 19 - мĕшĕнче йышăннă постановленипе Владимир Прокопьевич КУЗЬМИН юлташа

республикăри сатирăлла "Капкăн" журнал ĕçне активлă хутшăннăшăн

ХИСЕП ГРАМОТИПЕ наградăланă.

Постановлением Чувашского обкома КПСС и Совета Министров Чувашской АССР от 19 февраля 1985 года № 90

за активное участие в работе республиканского сатирического журнала "Капкăн"

товарищ КУЗЬМИН Владимир Прокопьевич - заместитель главного редактора журнала "Капкăн"

награжден ПОЧЕТНОЙ ГРАМОТОЙ.

Секретарь Чувашского обкома КПСС

Председатель Совета Министров Чувашской АССР

Çав вăхăтрах писателĕсем, вĕсене пĕрлештерсе тытса пыракан канашĕнче тăракансем, хăйне евĕр вăрттăн-уççăн шухăшлав, кĕвĕçӳ, тытăçу хирĕнче тапаланаççĕ, мăшăлтатаççĕ. Чылайăшĕ çав лачакана хăрах урипе ярса пуснă, сылтăммине çĕклесе тăраççĕ-ха, пĕрмай сăнаççĕ камăн сăмси, çуначĕ, хӳри лапăртанасса.

Парти обкомне ертсе пыракан Илья Павлович Прокопьев çак съезд умĕнхи хĕрӳ çил-тăвăл вăхăтĕнче писатель-коммунистсене пухса шĕкĕлченĕ. Лаврентий Таллеров, «Тăван Атăл» тĕп редакторĕн заместителĕ, бюро членĕсем умĕнче Анатолий Емельянова питĕ хытă мухтарĕ, терĕç. Илья Павлович, хăлхине йĕрĕнтерсе çитернĕ хыççăн, çапла каласа чарчĕ тет йăпăлтие: «Эпир кунта Емельянов юлташа мухтама пухман сире, литература аталанăвĕ пирки куçа-куçăн калаçма чĕннĕ».

Писательсен сьездĕнче Емельянова хытах ятлакан пулмарĕ. Кайран, суйлавра, çĕр писательрен вăтăра яхăн çын ăна хирĕç сасăланă. Пурпĕрех хуçа пулса юлнă. Л.В. Таллеров юлташа «Тăван Атăл» капитанĕ турĕ.

Максимова, обком хĕтĕртнипе, Союз правленийĕн членне кĕрттернĕ. Емельянов хирĕç пулнă-имĕш. Вăл «çунса кайсан» съездра, Максимова суйламалла пулнă тет-и председателе... Ку вара пурнăçланмарĕ. Ачи пултармаллаччĕ-ха Союза ертсе пыма.

Таллеров хăй вырăнне Петĕр Львова лартрĕ. Ун вырăнне ентешне Денис Гордеева проза пайне ертсе пыма чĕнсе килчĕ.

Хветĕр Агивер Мускавран, Литература институчĕ çумĕнчи икĕ çуллăх курсран, драматурга вĕренсе килчĕ. Ăна Союз правленийĕнче те (литконсультант вырăнĕ пурччĕ), «Тăван Атăлта» та ĕç памаççĕ. Хăй кулянать.

Петĕр Львов ĕçсе супнă та, урăлтаркăча лекнĕ. Парти пухăвĕнче ăна ахаль выговор панă. Кайран, ку начартарах тесе, партирен кăларнă, ĕçрен хăтарнă. Ачине шалккă. Питĕ типтерлĕ, пултаруллă ĕçлеме юратать, чăннипех пултаракан-култаракан çын. Хам та хытă кулянтăм уншăн.

Ĕç кĕнекинчен.

Утмăл пĕрремĕш çул ĕнтĕ Капкăн çĕнĕ пурнăç йĕркине çирĕплетессишĕн тĕрлĕ çитменлĕхсемпе, йăх-яхпа вирлĕн кĕрешет, пирĕн умри чи çутă тĕллев хăвăртрах пурнăçлантăр тесе пĕтĕм халăхпа пĕрле малти ретре утать. Çавна май кĕрешĕвĕн мелĕсем те унăн улшăнсах пыраççĕ.

«Съезд умĕнхи тĕрĕслев», «Перекет хуçасăрлăха вĕтет», «Апатçимĕç программи: шӳтлеместĕп-тĕрĕслетĕп», «Дисциплина сĕреки» ярăмсемпе пичетленекен çивĕч фельетонсенче бюрократсене, ĕçе юхăнтаракансене, тирпейсĕрсене, услапсене, харампырсене яра-яра илет. Республикăри аслă стройкăсенче пулса, унти йĕркесĕрлĕхсене тăрă шыв çине кăларать. «Çутти пурнăçа çутатмасть» ярăмпа тухакан материалсем те юлашки вăхăтра уçăмлăрах та витĕмлĕрех тĕспе çуталма пуçларĕç. Пурнăça урлăлла пыракансен умне вулакан хăй капкăн лартать. Лапшу Çтаппанĕ мĕн-мĕн çинчен каласа памасть пулĕ тата...

Йĕплĕ, шӳтлĕ сăмахпа кăна мар, вичкĕн те кулăшла ӳкерчĕкпе те пуян, хăватлă Капкăн. Çак хĕç-пăшала вăл çуралсанах алла çирĕп тытнă та унпа ĕмĕр тăршшĕпех пĕлсе, хĕрӳллĕн ăшалать тивĕçлисене. Кам-кам лекнине вулакан хăех аван курать: журналра çеç мар, выставкăсенче те. Карикатуристсен пултарулăхне Шупашкарта кăтартнă хыççăн Капкăн каллех ялсем тăрăх тухса кайрĕ. Çак çу вĕçĕнче унпа Вăрнар районĕнчи «Самолет» колхоз ĕçченĕсем темиçе эрне хушши хаваспах паллашрĕç.

Юлашкинчен вулакансемпе куракансем Вăрманкасра капкăнçăсемпе тĕл пулчĕç. Журналăн тĕп редакторĕн заместителĕ В.Кузьмин, çырусен тата художество пайĕсен заведующийĕсем Ф.Комаровпа А.Быков «Капкăн» журналăн ĕçĕ-хĕлĕпе, малашлăхĕпе паллаштарчĕç. Анатолий Александровича уçă сывлăша туртса кăлартăмăр-кăлартăмăрах. Ăна ку хăйне те кăмăла кайнă, халăх хушшинче сăнар ытларах тума пуçлани сисĕнчĕ. Ивановпа Галкинне Шупашкар Улăпĕ-тракторĕ те çивĕч кĕреçипе редакцин шăршлă пӳлĕмĕнчен тĕртсе кăлараяс çук. Пӳлĕм алăкĕсенчен вĕсем хăйсене тĕртсе кăларасран темиçе çăраççипех питĕрĕнсе ларнă.

Кĕр сăри шăрши Капкăна Йĕпреçьенне туртрĕ. Хурамал ялне çитсен, унăн хаваслă кăмăлĕ хăрăк йăмра тураттипекех патлатса хуçăлчĕ. Ара, Елеп çырми урлă ниепле те машинăпа каçма çук. Йĕпреçри ДРСУ тимĕр-бетонран кĕпер хывма пуçланă та, строй-материал çук тесе, ĕçне вуçех пăрахнă.

Çитменнине Капкăн, хурамалсене кăтартма тесе, карикатурăсен ӳкерчĕкĕсене тиесе килнĕ. Юрать-ха Лапшу Çтаппанĕ пулăшрĕ хăнана. Ялтан инçех мар самолет анса лармалли вырăн тăваççĕ, çавăнтан шăхăрса пĕлĕте çĕкленчĕ те вăл... вĕсем кĕçех ялти культура çурчĕ умне анса та ларчĕç.

Выставка аванах иртрĕ. Ял халăхĕ кăна мар, районтан, республикăран килнĕ хăнасем те киленсе пăхрĕç капкăнçăсен кулăшла ĕçĕсене. Ун хыççăн вулакансемпе тĕлпулу иртрĕ.

Ял халăхĕ сатира журналĕн йывăр та пархатарлă ĕçне пысăка хурса хакларĕ, критика витĕмлĕхне татах та ÿстерме хушрĕ. Çавна май Елеп çырми урлă хывакан кĕпере вăрах тунăшăн айăплисене хытăрах хĕстерме ыйтрĕ. Эпир ăна пурнăçларăмăр. Кĕпере васкавлă туса пĕтернĕ, терĕç йĕпреçсем.

«Капкăн» лаççинче ĕçлекенсене çанă тавăрса вĕркĕчне хытăрах вĕртерме, хĕртнĕ тимĕрне сунтал çинче мăлатукпа вирлĕрех шаккама ыйтакан çырусем унтан та, кунтан та вĕçĕмсĕрех килеççĕ.

Çав сĕнÿсене, канашсене эпир редколлеги ларăвĕнче сÿтсе яврăмăр, вĕсене шута илсе сатирăпа кулăша татах та вăйлатма шутларăмăр. Унсăрăн юрамасть. Ĕç коллективĕсем, уйрăм çынсем партин çирĕм çиччĕмĕш съездне тивĕçлипе кĕтсе илме, 1986 çул тата вун иккĕмĕш пилĕкçуллăх заданийĕсене срокчен пурнăçлассишĕн хĕрÿ кĕрешĕве тухнă вăхăтра Капкăн та хăйĕн шăлĕсене çивĕчлетет, парти йышăнăвĕсене пурнăçлама чăрмантаракансене вирлĕрех хĕстерет. Хуçасăрлăха пĕтерессишĕн, дисциплинăпа йĕркене çирĕплетессишĕн, урă пурнăç йĕрки туса хурассишĕн вăя шеллемест. Çавна май журналта çĕнĕ ярăмсем уçăлчĕç. Ĕçре ячĕшĕн курăнса, чеен кулса пурăнакан, эрехсăрапа иртĕхекен ăçтиçуксен кăкăрĕсем çине халăх умĕнче çакса ямалли хут-значок туса хатĕрлерĕ Капкăн. Вăл «Симĕс çĕлен тусĕ» ятлă. Ăна ĕçре, çемьере, обществăлла вырăнта тунă киревсĕрлĕхсемшĕн параççĕ: «Капкăнра» пичетлеççĕ.

Кулăш яланах ĕçре пулăш теççĕ те, çавăнпа Капкăн та унпа туллин усă курма тăрăшать. Ахальтен мар журналта «Кулăш пасарĕ» уçрĕ. Чăн-чăн капкăнçă Виталий Енĕш сĕнĕвĕпе Владислав Игнатьев пасар тавра (пĕр страница) кулăш ÿкерчĕкĕсенчен карта тытса илемлетрĕ. Унти тавар-çимĕçе туянса вар хытиччен кулаççĕ вулакансем.

Халăхпа тытакан çыхăнăва малалла çирĕплетсе пыратпăр.

1986 çул.
Ĕç кĕнекинчен.
Кăрлач, 13.

Тепĕр икĕ эрнерен партин XXVII съезчĕ уçăлать. Çав тĕле ятарлă номер хатĕрлетпĕр. Съезд делегатне туллин калаçтарас

терĕмĕр. Ирпе Максимовпа Йĕпреç пирки калаçса татăлтăмăр. Унта машинăпа тухса кайрăм. Райкомăн пĕрремĕш секретарĕ Никонор Андреевич Сергеев мана кĕтнĕ. Икĕ сехет пек калаçса лартăм съезд делегачĕпе. Таврăнсан, ун ячĕпе хитре хайлав шăрçаларăм. Хама та кăмăла кайрĕ. Ыран тӳрех - набора.

Максимов обкомран таврăнчĕ. Ĕçрен хăтарма ыйтса заявлени панă. Идеологи секретарĕ Леонид Яковлевич Тянгов ăна йышăннă.

Капкăнçăсем - Вăрнарта. Владимир Прокопьевич Кузьмин, çăмăл автомашина ямшăкĕ Николай Галактионович Васильев, Анатолий Александрович Быков, Федор Кириллович Комаров.
Виссарион Кожанов сăн ӳкерчĕкĕ.

Кăрлач, 20.

Тĕп редактор кăçалхишĕн отпуск илчĕ.

Профком председателĕ Комаров домино илсе панă та, халĕ пирĕннисем вилеççĕ «качакалла» çапса. Ĕç вăхăтĕнчех вĕт! Чăтма çук. Каланине итленĕ пекки тăваççĕ. Николай Николаевич вĕсене тар кăларса ĕçлемесĕрех тулăх пурăнма хăнăхтарчĕ те, шутсăр сĕмсĕрленсе усалланчĕç. Çулталăк вĕçĕнче, гонорар перекетленĕ укçаран, кам мĕнле тăрăшнине пăхмасăр - преми. Пĕчĕк ачасем вăрттăн ĕçленĕ пекех хăтланаççĕ укça пайланă чухне.

Кăрлач, 27.

Чăваш журналисчěсен Союзěн Çемен Элкер ячěллě премине илме капкăнçăсен те тахçанах вăхăт. Ун пирки калаçу пулманччě-ха. Николай Николаевич мана тăратас шухăшпа çӳретчě, анчах ыйтăва темшěн хăй канма кайиччен татса памарě, Николай Иванчсемпе хăвăрах пăхса тухăр, тесе хăварчě.

Унта тăратмаллăх ěçěсем манăн пурччě-ха. Иван Аверьянов художникпа эпир аслă стройкăсенче, районсемпе хуласенче пулса сахал мар фельетон-калав, фельетон-очерк каплантартăмăр журналта. Шел, Иван Петрович вăхăтсăр çěре кěчě. Питě витěмлěччě ӳкерчěк-кулăшěсем. Мěн чухлě пулăшу патăмăр халăха, республикăна. Шупашкарта кăна мар, Мускавра та тěп министерствăсенче сӳтсе яватчěç вěсене - эпир ударлă стройкăсенче хěмлентернě материалсене.

Кам шутланă-ха Ивановсем кавар тăвасса. Пěрле ěçлекенсем пухăнса калаçу пуçартăмăр та... Александр Галкин тăчě те сěрме купăсăн сěрмен хěлěхě сассипе хăйăлтатса илчě: «Атьăр конкурс ирттерер. Унта кам çěнтерет, çавна тăратăпăр преми илме». Комаров та, Палинов та, Кондратьев та, Иванов та кăкăрěсем çине пуçа чалăштарса пăхса илчěç. Элкер сăнне ӳкернě хитре знака хăйсен кăкăрěсем çинче мăн ěмěтлěн курчěç пулас. Эпě вара алă султăм та, ыйтăва кун йěркинчен кăларттартăм.

Кăрлач, 28.

Районти, хулари, облаçри парторганизацисен пěтěмлетěвне тěпе хурса коммунистсен пухăвне ирттертěмěр. Николай Николаевич пур аслă пухăвěнче те пулнăччě. Хăй кайиччен çав пухусенче мěн павраи çинчен ăна пěлтерттересшěнччě, анчах вăл, вăхăт çук тесе, докладчик пулма килěшмерě, докладне Кузьмин тăвать, тесе хăварчě.

Ěç хыççăн икě кун хатěрлентěм, хамăр ěçе пур енчен те тěплěн тишкертěм. Япăхрах ěçлетпěр-ха. Вак-тěвек нумай. Журналăн тěп шăнăрě курăнсах каймасть. Материалсен пахалăхě, çивěчлěхě начар. Уншăн пурте хыпсах çунмаççě.

Доклад уйрăмах Галкина, Николай Яковлева кăмăла кайнă. Ěçлě калаçăвах пулса тухрě. «Редколлеги ěçне çěнетмелле» тесе йышăнăва пěр пункт кěрттертěм. «Каятăп, йăлăхрăм, ěçлес килмест» тет Максимов. Çичě çул хушшинче тěп редактор капкăнне хулпуççи çинче çěклесе йăлăхрě те пуль. Ырă ěçех мар-çке, пěрмай çынсемпе вăрçса-çапăçасси çеç. Ырă ят илтейместěн: çӳлтен те, аялтан та.

Кун кĕнекинчен.

Нарăс, 3.

Ĕçре кăмăл пăсăлчĕ. Коллективра пирĕн темле тăвăр, йывăр сывлăш. Сĕрĕм явăнать. Чĕлĕм тĕтĕмĕ мар. Этем усаллăхĕн наркăмăшлă сывлăшĕ. Пăтратаканни, хĕвеле хуплаканни пур. Тĕлĕкре вăл шăл йĕрсе тухса тăчĕ: Николай Иванов ман ума шăлĕсемпе çавăрнă тимĕр сӳре пăрахрĕ, хăй анчăк çури çине утланса обкомалла тăпăлтаттарчĕ.

Эх, айван, ялан тем çитмест ăна, мĕскĕне. Ансăр пуçĕ çине ытла мăн çĕлĕк лартасшăн. Эпĕ тĕп редактор вырăнне юлсан, ниçта кайса кĕреймест, вăрттăн мĕн те пулин пĕр-пĕр пăтăрмах шутласа кăларать, ушкăн пухать, хăйне майлă хӳтлĕх питлĕхĕ шырать. Канаш районĕнче ĕçкĕпе ашкăннине хирĕç кĕрешĕве вăйсăрлатни çинчен ятарласа кайса çырнă фельетона, хам района тепĕр хайлав майлаштарма кайсан, номĕртен пăрса хăварнă. Райкомăн пĕрремĕш секретарьне Соловьева юрас тенĕ.

Халĕ Иванов доминолла выляма пикенчĕ. Эпĕ ачасене тустарасса кĕтет. «Кузьмин мĕнлине куратăр-и? Сире вăл малашне, тĕп редактор пулас пулсан, чĕррĕн кăшлать, ман çумра вара эсир чăх чĕпписем пек çунат айĕнче ăшăнса пурăнăр», - тесе ĕмĕтленет терĕç мана вăрттăн çав ачасемех.

Нарăс, 10.

Максимов Йĕпреçрен таврăнчĕ. Элкер премийĕ пирки калаçрĕ, атьăр эртелпе тепре пĕрле пăхса тухар, терĕ. «Крокодил» шӳчĕсене чăвашла куçарса «Капкăнра» пичетленĕшĕн чапа тухнă Николай Иванов «классика» парăр», - терĕм те, калаçăва вĕçлерĕм.

Журналта кăçал та «Кулăш пасарĕ» уçрăмăр.

Анатолий Емельянова ĕçрен хăтарма заявлени çыртарнă, терĕç. Акă, Союз правленийĕн ларăвĕ пулнă. «Професси ĕçне куçнă май, А.В.Емельянова Чăваш АССР писательсен Союзĕн правленийĕн председателĕн ĕçĕсенчен хăтарнă. Писательсен Союзĕн правленийĕн председателĕ пулма П.В.Афанасьева суйланă», - вуларăмăр хаçатра.

Нарăс, 21.

Чăваш наука академийĕнче (НИИ) писательсен çулталăк пухăвĕ кĕрлерĕ. Председатель заместителĕ Василий Игнатьев самай хăтлă доклад турĕ. Агивер те пурччĕ. Максимовпа пĕрле эпир ăна «Капкăн» тĕп редакторĕн заместителĕ ячĕпе саламларăмăр. Вăл пире ĕненчĕ. Таллеров мана тахçанах хăй патне чĕнетчĕ.

Унтан таврӑнсан эпӗ тӗп редактора заявлени патӑм. Максимов приказ ҫырчӗ. Ҫапла эпӗ улттӑмӗш хутри 627-мӗш пӳлӗмре 5 ҫул та 8 уйӑх та 5 кун ӗҫлерӗм. Ҫитет. Сахал мар тӗрмешрӗм. Фельетон ҫырса та, «Капкӑн» ачисемпе турткалашса та, кӗвӗҫӳ хумӗпе ҫапӑҫса та йӑлӑхрӑм. Ҫулӑм манӑн «Тӑван Атӑлалла» - илемлӗ литература гаванне.

* * *

Н.Н. Максимов

Николай Николаевичпа эпир тахҫанах пӗр-пӗрне пӗлсе ӑнланнӑ, пӗрле ӗҫлеме хӑнӑхнӑ. Ҫавӑнпа пире «Капкӑн» лавне туртса пыма йывӑрах марччӗ. Куҫран та каланӑ, каламаннине ӑшра та пытарса хӑварнӑ, пӗр-пӗрне пурпӗрех тарӑхса ура лартман, пулӑшмалла чухне - пулӑшнӑ, вӑрҫмалли, тӳрлетмелли пулсан - хирӗҫсе кайман. Пӗр ҫулран пӑрӑнман. Пӗрне-пӗри вӗрентме, усӑллӑ канаш пама вӑтанман. Йӑнӑшсан - каҫарма пултарнӑ. Тӑшманланман.

Николай Николаевич Максимов ҫинчен ҫырма ҫӑмӑл та, йывӑр та маншӑн. Ҫӑмӑллӑхӗ - пӗрле хаҫат-журналта ӗҫлесе, пӗр-пӗрне кӑмӑлласа ҫемьесен хутшӑнӑвӗнче нумай ҫул пурӑнса ирттернӗ вӑхӑт. Эпир ун чухне пӗрле темӗн тӗрлӗ ыйтусене (проблемӑсене) те уҫӑмлӑн, пӗрне-пӗри ӑнланса пынӑ. Хирӗҫтӑрӑва (шухӑш енчен) шала ямасӑр татса пама тӑрӑшни пирӗншӗн малашлӑх утӑмӗнче вӑй хума ҫеҫ пулӑшнӑ. Йывӑрлӑхӗ - тӑхӑмӗн юххийӗнче. Николай Николаевич ӑслӑ калаҫма ҫеҫ мар ӑста, ҫав ӑслӑлӑх ӑна хӑйне те, ыттисене те тӑнлӑрах шухӑшлаттарма хал парать тетӗп. Ҫав тӗвӗре пирӗн туслӑх.

Мана хӑй патне илсе пырса вӑл маншӑн ҫӗнӗ ҫул-йӗр уҫса пачӗ. Эпӗ чӑвашӑн чӑн-чӑн капкӑнҫисемпе пӗрле ӗҫлесе, пурӑнса куртӑм. Аркадий Эсхель, Александр Кӑлкан, Виталий Енӗш, Александр Галкин, Николай Никитин, Степан Абаш, Николай Яковлев, вырӑс сатирикӗ Анатолий Финько маншӑн «Капкӑн» вӗрентекенӗсем вырӑнӗнче пулнӑ. Николай Ивановӑн та, чунчӗри кӗҫӗ ернӗ пек хыҫкаланать пулин те, хӑйне евӗр таланчӗ пур. Журналта нумай ҫул ӗҫлесе пысӑк кутамкка хатӗрленӗс-

керĕн пире, тин кăна вĕсен лаçç-ине сăмсана пырса чикекенсене пулăшмалли, çунса-чыхăнса каяс-ран сыхланмалли ырă мелĕсем пу-рахчĕ. Кулăшла калав вĕçне калта хӳрине татнă пек кĕскетме маçтăр ача вăл - Иванов. Кăмăл-туйăмĕ хăйĕнчех юлтăр ĕнтĕ. Ăна усал тăвас тесе мар, хамăрăн ĕç кухнине тар-ăнраххăн ăнланмалла пултăр тесе çеç хăш-пĕр вăрттăнлăхсене аса илме тиврĕ.

Тĕрлĕрен кăмăл-туйăмлă çыра-вçăсем пулин те - чунĕ-ăнтăлăвĕ пурин те капкăнлахчĕ. «Капкăн» çемйи мана та самаях юсарĕ, тăна кĕртрĕ.

2002 çулхи пуш уйăхĕн 5-мĕшĕ.

«ТĂВАН АТĂЛ» ТА ЛĂПКĂ ЮХМАСТЬ

ТĂВАН АТĂЛ

«Тăван Атăл» пăрахучĕн капитан старпомĕ пулмашкăн хăрама та пĕлмерĕм. Хамăн пулас пуçлăхăма тата редакцире ĕçлекенсене хăнăхнăччĕ те... Паллă журналистпа, вăйлă прозаикпа çуммаçуммăн ларса литература пăрахутне палăртнă тĕрĕс курспа (çулпа-йĕрпе) тытса пырасси манран та нумай килнине, тĕп редакторăм хăй çумне мана кăна илме çирĕп йышăну тунине маларахах ăнланнă эпĕ. Çавăнпа пысăк ĕмĕтпе, хавалпа килĕшрĕм тĕп редактор сĕнĕвĕпе. Лаврентий Васильевич Таллеров çапла йышăну туса хăшне-пĕрне шахвăртса хăварнине те туйрăм. Ман вырăна сăмсине чикес тесе нăшлаттарса çӳрекен пуçтах çыравçăсем пурччĕ çав.

Акă эпĕ 1986 çулхи нарăсăн 24-мĕшĕнче, çĕнĕ ĕç эрнине, Пичет çуртĕнче, унчченхи улттăмĕш хутрах, кăнтăр еннерех çеç, 601-мĕш пӳлĕмре пуçларăм. Унта мана журналăн ответлă (яваплă) секретарĕ Николай Григорьевич Григорьев уçса кĕртсе ячĕ. Петĕр Львова «симĕс çĕлен» сăхнă хыççăн, пӳлĕмре наркăмăшлă шăршă юлнă, ăна тасатма чылай вăхăт кирлĕ пулчĕ.

Уйăхра пĕрре тухса тăракан илемлĕ литература тата обществăпа политика журналĕн редакцийĕнче çаксем: Лаврентий Таллеров - тĕп редактор, Владимир Кузьмин - тĕп редактор заместителĕ, Николай Григорьев - ответлă секретарь, Денис Гордеев - проза пайĕн заведующийĕ, Любовь Мартьянова - поэзи пайĕн заведующийĕ, Аркадий Малов - критика, библиографи, очерк, публицистика пайĕн заведующийĕ, Герман Желтухин - литсотрудник, Малова пулăшаканĕ, Елизавета Осипова - корректор, Марина Сергеева - машинистка. Бухгалтери çук, пур хаçат-журналăн та пĕрле - КПСС обкомĕн издательствинче, иккĕмĕш хутра.

Редакци коллегийĕнче - Л.В.Таллеров, В.О.Алагер, А.С. Артемьев, А.Г.Васильев, Н.Г.Григорьев, Н.С.Дедушкин, А.В.-Емельянов, Г.В.Краснов, П.К.Львов, А.А.Соколова, В.П.Тимаков.

Журнал 50 пин экземплярпа тухать. Калăпăшĕ 10,6 пичет листи. Хакĕ 50 пус.

Писательсен хăйсен саккунламан кун йĕрки. Мускав çыравçисем хыççăн, Союз членĕнче тăракансем, ЧАССР Союз правленийĕнче те, кĕнеке издательствинче те, журнал редакцийĕсенче те вунпĕртен ĕçе пуçăнаççĕ. Таллеров та çав вăхăтра килсе пурне те хăй патне пухрĕ, ман пирки пĕлтерсе салам сăмахĕ каларĕ, мана алă тытрĕ, вара кулленхи ĕçсене палăртрĕ.

Кăнтăрла иртсен виççĕре редколлеги ларăвĕ пуçланчĕ. Мана тĕп редактор хăй çумне, сылтăм енчи çемçе пукан çине ларма сĕнчĕ. Унăн сылтăм алли пулатăп ĕнтĕ малашне. Улттăмĕш номер планларăмăр. Дедушкин мана редколлеги членне çирĕплетмешкĕн правленин çитес ларăвне ыйту хатĕрлеме сĕнчĕ.

Ман вырăна «Капкăнра» Федор Георгиевич Коновалов-Агивера лартрĕç. Ах, епле кулянчĕ пуль Николай Иванов служба картлашкипе хăй хăпарайманшăн.

Телефонпа Петĕр Львов саламларĕ. Кайран «Ялавран» Аристарх Дмитриев килчĕ. Красновсем савăнса саламларĕç. «Лайăх çын, хамăр çын журнала килнĕшĕн хĕпĕртерĕмĕр», - терĕ. Журналистсен Союзĕнчен Антип Николаев, «Коммунизм ялавĕнчен» Иван Матросов пырса кăмăллăн алă тытрĕç. Ытти юлташсем те алă чăмăртаççĕ. Хăшĕсем тĕлĕнеççĕ, теприсем ăмсанаççĕ пуль...

«Ялав» фотокорне Виталий Исаева 60 çул тултарнă ятпа саламлама ячĕç. Николай Григорьевичпа пултăмăр.

Кунта ĕç йĕрки çапла. Пайсенче хатĕрленĕ материалсене пурне те тĕп редактор çумĕн вуласа редакцилемелле те пуçлăха памалла. Вăл пăхса тухса алă пуссан тин яваплă секретарь вĕсене, çирĕплетнĕ план тăрăх, макетласа малалла, типографине набора ярать. Çавăнпа тӳрех мăй таран редакци лачакине кĕрсе ӳкрĕм. Çапла пуçларăм «Тăван Атăлта» ишме.

Ĕçлеме пуçласан виççĕмĕш куннех писательсен Союзĕнчи коммунистсен пухăвĕнче пултăм. Партбюро секретарĕ Л.В.Таллеров. Çарпа патриотизм темипе писательсем мĕнле ĕçлени çинчен Антип Николаев каласа пачĕ. Николай Дедушкин Союзра çарпа патриотизм секцине пĕтерсе хунăшăн тата пĕлтĕр Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе писатель-фронтовиксене чысламаншăн, правление ертсе пынă Анатолий Емельянова хытă ятларĕ. Уншăн ăна салтак сучĕпе айăпламалла, терĕ. Авă епле çунтараççĕ Союз пуçĕнче тăнă командирсем пĕр-пĕрне?

КПСС XXVII съезчĕ уçăлнă ятпа митинг пекки турĕç.

Кайран Союз пуçлăхĕ Порфирий Афанасьев мана хăлхаран пĕр хыпар пĕлтерчĕ. Хветĕр Агивер мана «Капкăнран» «Тăван

Атăла» куçарассине хирĕç пулнă. Вăл унта ĕçлеме хатĕрленсе çитеймен, журнала Кузьмин шайне çити антарса лартатăр ĕнтĕ, тенĕ.

Агивер вăл яланах хăйне мăнна хунă, чи малтан хăйшĕн çеç тăрăшнă, çынсемшĕн тăрăшатăп тесе, халăх умĕнче павранă. Максимовсене начар, пултараймаççĕ, тетчĕ. Халĕ лешсем унран иртсе кайрĕç. Хăйĕн эпикăллă пĕр сулăмлă произведени çук. Сăмах вĕçтерекен.

Пуш уйăхĕн вуннăмĕшĕнче мана Союз правленийĕ тĕп редакторăн заместительне тата редколлеги членне çирĕплетрĕ. Журналăн виççĕмĕш номĕрне редколлеги йышне ман хушамата та кĕртсе хучĕç.

Кун кĕнекинчен.

Пуш, 13.

Лаврентий Васильевич ăш чирĕпе тахçантанпах аптăрать. Акă, халĕ те вăл республикăри иккĕмĕш пульницана - партстационара сипленме выртрĕ.

Ака, 18.

Николай Максимов «Капкăнран» тин кайрĕ. Писательсен Союзĕн правлени председателĕн Афанасьевăн заместительне куçрĕ. Ун вырăнне «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн ответлă секретарĕ Николаев виççĕмĕш хутран хăпарчĕ. Валерий Николаевич ĕнтĕ хăйĕн чăкрашлăхĕпе, тӳрккеслĕхĕпе ĕçри юлташĕсене кăна мар, редакторне Семенова та чăтма çук йăлăхтарса çитернĕ, тетчĕç. Демьян Филипповичшăн питĕ ăнăçлă сăлтав килсе тухнă иккен çурăк чана хăй çумĕнчен вĕçертсе çăмăллăн улттăмĕш хута çакма. Обкомра ун пирки мухтав сăмахĕ юхтарма хавасах пулнă пулас. Николаевăн хăйĕн те аллине шутсăр «Капкăн» çулса илес кăмăлĕ чуста пек хăпарса кайнăччĕ. Ентешĕ, Республика Министрсен Канашне ертсе пыракан Леонид Прокопьевич Прокопьев та кутран тĕртнĕ терĕç çак пуçтах ачана чул пусма картлашкипе çӳлелле улăхмашкăн. Кузьминăн унашкал упа лапписем çуккă та, «Капкăнпа» сывпуллашма тиврĕ. Эпĕ те, Максимов та кайнă хыççăн «Капкăнра» мĕнле кĕрешӳ, тӳпкелешӳ пуçланасси маншăн телевизор курса ларнă пекех куç умне тухса тăратчĕ. Пĕр-пĕрне курайман, чăтма пултарайман виçĕ тискер кайăка пĕр читлĕхе хупрĕç: Кашкăра, Упана тата Тилле.

Эпĕ вара, çав хăрушă тасамарлăх картинчен аяккарах уйрăлнăшăн хĕпĕртесех, «Тăван Атăл» кĕсменĕсене хытăрах авăсма пуçларăм.

Партин XXVII сьезчĕн йышăнăвĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе тумалли ĕçсен планне вĕçлерĕм. Мускава та вырăсла ярса памалла ăна. Çу уйăхĕн 21-мĕшĕнче Канаша каймалла пулчĕ. Канаш районне шефла пулăшу пама шутларăмăр. Палăрту хатĕрлерĕм. Пĕрремĕш секретарьпе Валерьян Мефодьевич Соловьевпа тата иккĕмĕш секретарĕпе Владимир Дмитриевич Мясниковпа тĕл пулса калаçса килĕшрĕм. Тунтикун «Туслăх» комплексра пĕрремĕш тĕлпулу пулмалла. Ăна эпĕ Йĕпреçре ĕçленĕ чухнех республикăра ыттисенчен маларах хута янăччĕ. Районти колхозсем пĕрлешсе тунă мăн фермăра çулталăкне çирĕм пине яхăн сысна самăртса сутаççĕ, çавăн чухлех çура илеççĕ. Патшалăха аш-какай сутмалли район планĕн çуррине «Туслăх» тултарать.

Тĕп редакторăн Лаврентий Васильевич Таллеровăн тата унăн çумĕн (заместителĕн) Владимир Прокопьевич Кузьминăн шухăшĕсем пĕр: «Тăван Атăла» халăх юратăвĕн юххипе юхтармашкăн вăя, ăсхала шеллемелле мар».

Шупашкарти промышленность тракторĕсен заводĕнче «Тăван Атăлăн» литература постне йĕркелерĕмĕр. Мана ертсе пыма хушрĕç.

Ака, 28.

«Туслăх» комплекса (Шăхасанпа Нурăс çулĕн сулахай енче) Виталий Енĕшпе Аркадий Лукина илсе кайрăм. Тĕлпулу аван иртрĕ.

Кун кĕнекинчен.

Çу, 9.

«Шупашкар» универсамра иккĕ черет тăрса талонпа 800 грамм ĕне çăвĕ туянтăм.

Ĕç кĕнекинчен.

Çу, 12.

Каллех - «Туслăхра». Сысна самăртакансем çинчен очерк хайларăм. Хамăр журнал валли.

Çу, 19.

Таллеров эрне бюллетеньпе пурăнать. Вăл хушăра Юхма Мишшин менелникĕ пулчĕ. Эпĕ салам адресĕ патăм. Манпа пĕрле пыма хамăр енчен никам та кăмăл тумарĕ.

Утă, 18.

Ялтăра Чехов ячĕллĕ пултарулăх çуртĕнче ĕçлесе каннă хыççăн Шупашкарта каллех çимелли шыратпăр. Пĕр талонпа 800 грамм кăлпасси туянтăмăр. Хура тинĕс хĕрне каясси ăнсăртран пулса тухрĕ. Василий Антипов-Энтип Ваççи Литфондран икĕ путевка (арăмĕ валли те) илнĕ пулнă. Чернобыльти атом электростанцийĕнче авари пулнă хыççăн, радиаци хăрушлăхĕ юханшывпа тинĕсе те юхса анать тесе сехĕрленсе ўкеççĕ те вĕсем, путевкăсене каялла параççĕ. Вĕсене пире сĕнчĕç те, эпир килĕшрĕмĕр. Арăмпа иксĕмĕр хамăрăн сывлăх шăпи малашне мĕнле пулса тухасси пирки тĕплĕнрех шухăшласа пăхма та ăс çитереймерĕмĕр-ши хĕпĕртенипе?.. Ун пек çĕре пуçласа лекнĕскерсем эпир пурин çинчен мансах çамрăклăх туйăмĕпе вăхăта ирттертĕмĕр. Унта эпĕ çĕршыври писательсене курса, хăшинпĕринпе паллашрăм. Пĕрешкел кăмăл Саранскран пынă Валентина Ивановнапа Михаил Герасимович Имярековсемпе тупрăмăр. Пĕри поэт, тепри прозаик. Иккĕшĕ те Мордва университетĕнче ĕçлеççĕ.

Имярековсем чăваш ачисене лайăх пĕлеççĕ. Михаил Герасимович, ВААПăн ученăй степенĕн ятне парассипе ĕçлекен зонăри канашĕнче ĕçленĕ май, А.И.Мефодьев, В.П.Никитин-Станьял тарăн пĕлўллĕ пулни, комисси вĕсене филологи наукисен

КУЗЬМИН В.П.
1986
тăван
Атăл
тăван
Атăл
Главный редактор Л. В. ТАЯЛЕРОВ
Редколлегия: В. О. АЛАГЕР, А. С. АРТЕМЬЕВ, П. В. АФАНАСЬЕВ, Н. Г. ГРИГОРЬЕВ (отв. секретарь), Н. С. ДЕДУШКИН, А. Е. ЕМЕЛЬЯНОВ, Г. В. КРАСНОВ, В. П. КУЗЬМИН (зам. гл. редактора), П. Н. ЛЬВОВ, А. А.
С. Т. ТЕРЕНТЬЕВ, В. П. ТИМАКОВ.
Заказ № 7491. Цена 50 коп. Индекс 73392.

кандидачĕ ятне пама пысăк хавасла йышăнни çинчен каласа пачĕ, вĕсене кӳршĕллĕ хĕрӳ салам каларĕ.

Пирĕн пултарулăх çуртĕнчен инçех мар, тăвайккире, А.П. Чеховăн çурт-музейĕ пур. Ăна Крым облаçĕнчи Ялтăра 1921 çулта уçнă. Унччен... Антон Павлович 1860 çулта Таганрог хулинче çуралнă, унтах гимназирен вĕренсе тухнă. Суту-илӳпе ĕçлекен ашшĕ Мускава курăнма куçсан, ачисем унăн пурте пысăк пĕлӳ илнĕ. Антон университетран уес тухтăрне вĕренсе тухнă та çынсене сиплеме пуçланă.

70-мĕш çулсен вĕçĕнче вăл çамрăклах вырăс литераторĕсен шутне кĕрет. Нумай çырать, этем чунне тарăннăн уçса паракан хайлавĕсене журналсенче пичетлет. Тĕнче хĕрне çитсе «Сахалин утравĕ» ятлă очерксемпе публицистика статйисен кĕнекине кăларать. Унта вăл нушапа тата чир-чĕрпе пĕтме патне çитнĕ вырăнти халăхсене сиплет, Раççей империйĕн хĕвел анăç çыранне Инди океанĕ урлă пăрахутпа пырса çитет.

Вăтăр иккĕри тухтăр-çыравçă Серпухов уесĕнчи Мелиховăра вăйлă çурт-йĕр туянса пурăнать, сиплев ĕçне малалла тăсать, çывăхри ялсенче шкулсем уçать.

Ăш-чик чирĕ хытах аптăратнине пула Антон Чехов, литературăна Антоша Чехонте хушма хушаматпа çирĕппĕн кĕнĕскер, пултарулăх ĕçĕпе лăпкăнрах пурăнас, имлĕ сывлăшпа-шывпа сипленес шутпа 1898 çулта Хура тинĕс хĕрне çитет, хальхи музей çуртĕнче пурăнма пуçлать. Ĕнтĕ вăл Раççейри тата ытти çĕршывсенчи палăрнă писатель. Ун патĕнче М.Горький, В.Короленко, И.Бунин, А.Куприн, Ф.Шаляпин, С.Рахманинов, И.Левитан, Мускав. Санкт-Петербург театрĕсен режиссерĕсемпе актерĕсем час-часах пулаççĕ. Акă, чăваш çыравçи Владимир Кузьмин та хăй ытларах юратакан писателĕпе-сатирикĕпе тĕл пуласшăн çунса, симĕс йывăççем хушшипе çĕлен пек авкаланса выртакан чул сарнă çул тăрăх тăвалла хăпарчĕ. Ĕмĕрлĕхе чула хывăннă, анчах вилĕмсĕр Антоша Чехонте чĕррĕн кĕтсе илчĕ мана. Ăшра эпĕ унпа калаçнă май, ăнлантăм: мухтавлă писатель хăй патне килекеншĕн питĕ хавас, анчах халĕ унăн кил алăкĕ шал енчен питĕрĕнчĕк. Мана вăл хыçалти алăкран кĕме пултаратăр, коллега, тенĕнех туйăнчĕ. Çапла хыçалти алăк маншăн кăмăллăнах уçăлчĕ.

Мана вăтам пӳллĕ, тулли кĕлеткеллĕ, ăшă куçлă чиперкке хĕрарăм, уçă сассипе малалла иртме сĕнчĕ, юсав ĕçĕсем пуçланас умĕн музей вăхăтлăха канма хатĕрленни пирки пĕлтерсе,

Владимир Кузьминпа Михаил Имяреков.

Михаил Имяреков, Валентина Имярекова, Римма Кузьмина.

каçару ыйтрĕ. Эпĕ мĕн сăлтавпа тата ăçтан килнине пĕлсен, вăл хыпăнса ӳкрĕ: «Чăвашсем апла. Атăл енчен. Пĕлетĕп, пĕлетĕп сирĕн çинчен. Ман упăшка Вăрнар станцийĕнчен. Шăллĕсем вокзалтан инçе мар пурăнаççĕ. Кинпе иккĕшĕ те хими заводĕнче ĕçлеççĕ. Упăшка шăллĕ те сăвă çырма юрататъ. Поэт...»

Музей хуçяйкки калаçнă хушăрах эпĕ хам çывăх пĕлекен Петр Михайловăн, Вăрнар поэчĕн, анчахрах вырăсла тухнă пĕчĕк кĕнекине парнелле тыттартăм: «Упăшкун тăванĕ сире валли ятарласа парса ячĕ, шалта сирĕн ятпа çырни те пур».

Кĕнекипе паллашнă май, хĕрарăм савăнăçне пытараймасăр калаçрĕ: «Пĕлтĕр те эпир, Мускавран таврăннă чухне, Вăрнарта кантăмăр. Вăрманта килентĕмĕр. Шупашкарта пултăмăр. Пирĕн, музей çыннисен, хамăрăн уйрăм туртăм. Краеведени, сирĕн поэтсен Ивановпа Сеспель, мухтавлă Чапаев музейĕсенче курмалли, тĕлĕнмелли тупăнчĕ. Чаплă театрта Чеховăн «Чие садне» епле вăйлă лартрĕç чăваш артисчĕсем! Эпĕ вăл спектаккăле камсем кăна кăтартнине курман-ши? Чаплă! Пултаруллă, тарават халăх çыннисем эсир...»

Мухтав сăмахĕсене итленĕ хушăрах эпĕ Чехов пурнăçĕпе паллашса пытăм. Акă, çак илемлĕ, çирĕп сĕтел хушшинче Антон Павлович хăйĕн произведенийĕсене шăрçаланă. Сĕтел-пуканĕ, япалисем, тумтирĕ, кĕнекисем, алçыру копийĕсем, Левитан художникăн картинисемпе этючĕсем, Л.Толстой, П.Чайковский, В.Комиссаржевский, ытти паллă çынсем алă пусса панă сăн ӳкерчĕксем тата ытти те типтерлĕн упранаççĕ. Йăмăкĕ, Ма-

рия Павловна, хăй çине тăнипе уçнă музейра пиччĕшĕн ĕç, хăна йышăнмалли, çывăрмалли пӳлĕмĕсене малтанхи пекех сыхласа хăварнă, музейăн улшăнми директорĕ пулнă.

Антон Павлович кунта пурăнма куçсанах Мускаври Пĕчĕк театр актрисипе Ольга Леонардовна Книпперпа мăшăрланнă. Чехов çутçанталăка хытă юратнă, çурт тавра сад пахчи çавăрнă. Йывăççсен ăшĕнчи кил-çуртра литература, искусство илемĕ вăйланса таврана саланнă. Анчах хуçин сывлăхĕ начарланса пынă. Вăл вара 1904 çулта, сывалас ĕмĕтпе, Германие каять те Баденвейлер курортĕнчех вилет. Ăна Мускаври Новодевичье масарне пытарнă.

Экскурси пирĕн малалла тăсăлчĕ. Усадьбăпа юнашарах 1964 çулта çĕнĕ çурт лартнă. Унта музейăн литература экспозицийĕ вырнаçнă.

Пирĕн кану вăхăчĕ вĕçленнĕ тĕлелле музей çынсене йышăнма пуçларĕ. Эпир те хамăрăн пĕчĕк ушкăнпа, Кузьминсемпе Имярековсем, Антоша Чехонтен юлашки килĕнче «хăнара» пултăмăр. Ун хыççăн Чеховăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен чылайччен хĕрӳ калаçу пурне те канăç памарĕ.

Раççей йывăрлăхра кисреннĕ саманара литература алăкĕнчен хăюллăн илемлĕх тĕнчине кĕнĕ Антон Павлович Чеховăн

Хыçри алăкран - ирччен калаçма.

Иксĕмĕрĕн те пĕр шухăш:
- Сăнăллă сатира, вар хытармалли кулă.

пултарулăхĕнче вырăс халăхĕн пурнăçĕ анлăн, яр-уççăн курă-нать. Çӳллĕ шайри ăсталăхпа çырнă произведенийĕсенче геройсен чунне, шухăш-туйăмне обществăлла хутшăнусен çыххинче аталануллăн сăнарласа ĕненмелле уçса парать. «Этем, хăй чăннипех мĕнлине уççăн кăтартса парсан тин, ăнланса лайăхланать», - тенĕ сăнар маçтăрĕ. Писатель çыннăн чунне çĕнĕрен чĕртмелли вут-кăвар тупма пултарнă. Сатирăпа кулăш жанрĕнче Антоша Чехонтен М.Е. Салтыков-Щедрин, Н.В. Гоголь тĕлĕнтермĕшĕсен йĕрри палăрать. Маншăн ку тема вăтам шкулта, пединститутра вĕреннĕ чухнех чун-чĕрене канăçсăррăн кăтăклантарнă та, халĕ пушшех çывăрма памасть. Чехов пек кĕскен те, сăнарлăн та, пурнăç çыхăнăвĕпе килĕшӳллĕн, халăха усăллă, вилĕмсĕр хайлавсем çырас килет. Унăн пултарулăхĕпе паллашса вĕренни, Мускаври тата Ялтăри музейĕсенче пулни, хамăн çыравра мĕн чухлĕ те пулин уссине паратех тесе тĕв турăм.

Чăннипех революцилле утăмсем тунă Чехов литературăра - сăнар илемĕн тĕнчинче. Ахальтен мар ăна Лев Толстой «Прозăри Пушкин» тесе хакланă.

Унтанпа чылай вăхăт иртсен, республикăри вырăс драма театрĕнче А.П.Чеховăн 150 çулхи менелникне паллă тунă çĕре лекнĕччĕ. Раштав пуçламăшĕнче ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Ашот Восканян режиссер лартнă «Чайка» премьери пулчĕ. Унччен маларахах кăна Марина Круглова инсценировкипе лартнă «Юрату çинчен» спектакле курса Ольга Книпперпа Антон Чеховăн пысăк юратăвĕпе хутшăнăвĕсене сцена çинче актерсем тĕлĕнмелле сăнласа панине хамăрăн пысăк юратупа танлаштарса лартăмăр театрта Римма Ильиничнапа. Чеховсен асамлă сывлăшĕпе сывларăмăр, хăпартлантăмăр.

Ку ĕнтĕ - пурнăçăн пĕр сцени. Малалла каллех - кăнтăрти Ялта хыççăнхи хĕрӳ вăхăт.

Çурла, 26.

Подпискăпа илсе тăма пурте антăхсах классиксене çырăнаççĕ - литературăна юратаканни-юратманни те. «Союзпичет» хуçи Юрий Александров патша пек пулса кайрĕ, мĕнпур хуçа ăна пуççапать. Эпĕ те çитес çулшăн Лев Толстоя, Александр Фадеева, Александр Серафимовича, Александр Макаренкона çырăнтăм. Валерий Николаева такăш классикĕ лекмен те, Александров çинчен вăл наччасах «Капкăнра» фельетон пекки кăларчĕ. Хăв алă пусса кăларакан патшалăх изданийĕпе хăвшăн усă кур-

ни вăл ман шутпа чухăнлăхăн каяшĕ вырăнĕнчи пек. Журналист этикине нихçан та шăрчăклăхпа улăштарма юрамасть.

Авăн, 1.

Лаврентий Васильевич черетлĕ отпуска тухрĕ. Любовь Мартьянова ача çуратма декрета кайнă пулнă та, ун вырăнне Петĕр Ялгире ĕçлеттернĕ, халĕ ăна кăларса Аркадий Лукина илтĕмĕр. Петр Алексеевичĕ ытла нумай чупса çӳрет, тĕп ĕç çинчен манать, çитменнине тата хывăха тутă тĕшĕпе улăштараймăн.

Журнал нумайрах çырăнтарнăшăн пама ял почтальонĕсем валли 18 тутăр туянтăмăр. Редакцире ĕçлекенсене пушăпа тенĕ пек районсене хăвалатăп. Çĕмĕрлере, Элĕкре, Вăрнарта пултăм. Паян Йĕпреçе кайса килтĕм.

Юрий Григорьев-Айдаша Асклиада Соколова вырăнне (издательство «шăпчăкĕ» пирĕн патра ячĕшĕн кăна шутланнă) редколлегине кĕртрĕмĕр. Айдаш халĕ издательство посолĕ.

Кун кĕнекинчен.

Авăн, 13.

Эгер бульварĕнчи лавкка умĕнче 4 кăвакал (килограмĕ 1,30 тенкĕ) туянтăмăр - 8,06 тенкĕлĕх.

Ĕç кĕнекинчен.

Авăн, 15.

Писательсен Союзĕ валли справка çырса патăм. Журналта тата редакцире ĕçкĕçсемпе кĕрешессине вăйлатасси çинчен. Хамăрăн та вăл лачакара пит-куçне варалакансем пур-ха.

Авăн, 25.

Ирпе Иван Данилович Кузнецов профессор, писатель хăйĕн «Тăван Атăлта» тухмалли историлле очеркĕн вуланă материалне пырса пачĕ. Пӳлĕмре çамрăк каччă пек утать, ларасшăн мар. Хĕрӳлĕхĕ пур-ха старикĕн. 81 çула кайнă ĕнтĕ вăл. Чапаев 100 çул тултарнă тĕле интереслĕ материал парасшăн. Килĕшрĕмĕр.

Ман ĕнсе çине тĕп редактор ĕçĕ кăна мар, яваплă секретарь ĕçĕсем те тиенчĕç. Таллеров темшĕн шанмасть те Николай Григорьевича, уншăн хăшне-пĕрне мана тутарать. Халĕ редактор çитес тунтикунтан канăва тухать. Акă мĕн çырса хăварнă ман валли:

«Владимир Прокопьевич!

Отпуска кайрăм. Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен эсĕ главнокомандующи пулса тăни çинчен приказ çыртăм.

Журнал сарас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене хамăр юлташсем ан лăнчăлаччăр ĕнтĕ: йĕрлесе, йĕркелесех тăрас.

Ноябрь макетне тумалли вăхăт çитсен, мана пĕлтерĕр. Пĕрле палăртăпăр мĕн-мĕн ямаллине. Макетне те курасчĕ туса пĕтерсен.

Эпĕ сана приказ кĕнеки, сейф уççи хăвăратăп...»

Партин Аслă Канашĕнчен Хăвăртлату текен хăрушă хăват сиксе тухрĕ, халăха хир пăрçи пек сиктерсе ӳкерчĕ. Хавхалану чĕнĕвĕсем, пĕр-пĕрне кӳпкесси çĕнелсе кайрĕç. Пирĕн писательсем те, СССР писателĕсен VIII съезчĕ умĕн, хăйсене кăтартмалăх, мухтанмалăх парне хатĕрлеме пуçларĕç. Правлени Вăрмар районĕнчи чаплă, хисеплĕ çын, Социализмла Ĕç Геройĕ, Мичурин ячĕпе хисепленекен колхоза ертсе пыракан Сергей Лукич Лукин патĕнче пухăнчĕ. Çыравçăсен тата çĕр ĕçченĕсен правленийĕсем пĕр сĕтел хушшине ларса туслăн калаçрĕç «Хăвăртлату тапхăрĕ. Ĕç çынни пурнăçра тата литературăра» темăпа çĕртмен 18-мĕшĕнче.

Хăвăртлатупа Çĕнетӳ юнашар утаççĕ. Çыннисем пурте пуринчен хастар, пурте çурхи хĕвел пекех çиçеççĕ кăна. Çыравçисем çухăраççĕ, пур çĕрте те вут чĕртеççĕ, хаçачĕсем вĕлкĕшеççĕ, журналĕсем те шыв хушнипе шӳсе пыраççĕ. Пурте икĕ хăватлă вăй çĕкленĕвĕпе çĕнтерĕвĕн хайлавне сăрлаççĕ, сăрмаклаççĕ. Ман пуçа та «Нăрă министрĕ» кăшлама пуçларĕ. Вăт мĕнле вăл хĕрӳ тапхăр вăйĕ! Колорадо нăрри яла тапăннă вăхăтра ялхуçалăх министрĕн Анатолий Леонтьевăн пуçне бюрократи нăрри ерни çинчен сăнарлă кулăш сарасшăн халăх хушшине. Çавна май «Кун кĕнекине» çырса хуни те хуралман: «Общество икĕ пая пайланчĕ: пĕр енче - хура халăх, тепĕр енче - пуçлăхсем. Эсир халăхран уйрăлса, халăха суйса-улталаса, хăвăра çăтмаха кĕртсе ярса, çав çурăка сарса-сарса пыратăр...»

Желтухин Шурă çуртран Семен Матвеевич Ислюков статйине илсе килчĕ. Хам та лăшах сывласа ятăм. Журнал номерĕ Чăваш республикишĕн вуншар çул тăрăшса вăй хунă курăмлă çыннăн шухăш-кăмăлĕпе тухать.

Мускавсем пирĕн пата кĕпĕрленсе тулаççĕ, эпир халăх хушшинче сăмах çапса, юрласа çӳретпĕр, илемлĕ литература шăршине саратпăр, чăваш тумĕпе саркаланатпăр. Шупашкарти промышленность тракторĕсен, агрегат завочĕсенче, пир-авăр комбинатĕнче Лаврентий Таллеров, Петĕр Львов, Денис Гордеев, Вениамин Тимаков, Петĕр Ялгир тата эпĕ тухса калаçрăмăр. Çав

хушӑрах журнала та ҫырӑнтаратпӑр. Очеркпа публицистика пайӗ ҫеҫ пирӗн пулас наука кандидачӗсен-тусӗсен вучахне пӳлӗмре ялкӑштарать. Урамра, уйра пушмак тусанланать-ҫке. Университетра ӗҫлекен Лев Кураков хӑйӗн тишкерӳ ӗҫӗсене майӗпен пичетлесе пырать. Вӑл Георгий Красновпа тахҫантанпах туслӑ, лешӗ тӗп редакторта чухне час-часах ун патне пырса ҫӳретчӗ.

Ҫурла, 29.

Издательствӑра ӗҫлекен Юрий Айдаш «Атнер» романне илсе пычӗ. Кӑнтӑрла иртсен эпӗ Лаврентий Васильевич патне кайнӑччӗ. Таллеров килӗнчех, ҫак уйӑхра тӑватӑ пӳлӗмлӗ хваттертен виҫҫӗллине, ачисене уйӑрса, куҫнӑччӗ. Декабрь номӗрне пӑхса тухрӑмӑр.

Аркадий Лукин «Атнерпе» кӑмӑлсӑр. «Эс, Юра, Хусанкайран вӗреннӗ пулас-ха та сӑвӑлла роман ҫырма, анчах пурпӗрех Пушкина ҫитейместӗн», - тет поэтла пуҫне ухса. Лешӗ, хирӗҫ тавӑрас вырӑнне, унран пирус ыйтать.

Романӑн 5,5 пин йӗркинчен 3 пинне пичетлес терӗмӗр. Сӑвӑшӑн йӗркине 1 тенкӗ тӳлеме килӗшрӗмӗр. Ытти авторсене, ҫамрӑксене, хӗссех. Декабрьте пин тенкӗ тӳлеме приказ ҫыртӑм. Лукин «Атнере» чӑпӑл тӑвасси пирки сӑмах хускатрӗ. Айдаш пиншак кӗсйисене тавӑрса кӑтартрӗ. Хамӑрах пулӑшрӑмӑр вара романа ҫума. Питӗ хаклӑ ҫынсем-ҫке вӗсем - издательство хурчӗсем-ҫӗленӗсем.

Георгий Ефимов «Икӗ ветеран» ятлӑ повесть ҫырнӑ. Ӑна Денис Гордеев редакциленӗ. Классикӗ путлӗ ҫырса пӗтереймен, редакторӗ юсаса автор кӑмӑлне пӑсас темен пулас. Денис Викторовича каялла парса та пӑхрӑм, вӑл пурпӗрех кирлӗ пек редакцилемерӗ. Ятне «Ветерансем» тесе улӑштарттартӑм. «Икӗ» сӑмах пӗрремӗш страницӑрах вуниккӗ таран пурччӗ те... вӗҫне ҫитичченех ҫав «иккӗ», куҫа кӗнӗ пек, вулама чӑрмантарса пырать. Ҫаплипех, пиҫсе ҫитмесӗрех, типографине набора анса кайрӗ, вулакан халӑх патне васкарӗ.

Хветӗр Агивере «Капкӑн» редакторӗ Валерий Николаев хӗстерсе лартнӑ. Ӑна заместительтен аслӑ редактора куҫарасшӑн. Агивер пире, «...ҫав-ҫав хӑй вырӑнӗнче мар» тесе лӗпӗртетсе ҫӳрерӗ те, хӑй тата халӗ «хӑй вырӑнӗнчех-ши?» Ҫынна вӗрентсех вилет тиркевҫӗ. «Капкӑнра» унта чӑваш писателӗсен пӗрпӗр журнал редакцийӗнче пуплешсе ларни мар ҫав. Хӑвӑн та республика тӑрӑх лиска йытӑ пек чупмалла, кашни кун ҫырмалла.

Юрий Артемьев чăваш критики шăлсăр тесе пысăк статья çырнă, унта литература журналĕсенчи критика пайĕсене те ятланă, Ипполит Иванов критика хытă тустарнă. Статйине Аркадий Малов пичете ярасшăн мар пулас та, хăйĕнчен аслăраххисене, редколлеги членĕсене, вулаттарать. Эпĕ «пичетлемелле» тесе çырса патăм. Обкомран культура пайĕн пуçлăхĕ Ольга Денисова «Хăвăртрах пичетлемелле» тесе шăнкăравларĕ. «Сирĕн шухăш мĕнле?» - тесе ыйтрĕ вăл манран. «Автор тĕрĕсех çырнă, пирĕн критика чăннипех те уйрăм писательсене капашсăр мухтаса çӳле тивĕçсĕр çĕклес шайра çеç, кун кăтартмаллах Юрий Михайловичăн тĕплĕ ĕçне, манăн ку енĕпе позици çирĕп», - терĕм. Ип.Иванова Николай Дедушкин хӳтĕлет, вăл Юр.Артемьева хирĕç. Ăсталăх шайĕпе ăçтан ĕнтĕ вĕсем Артемьевпа танлашма пултарччĕр-ха! Çывăха та пыраймаççĕ. Эпĕ пĕлетĕп, Таллеров статьяна пурпĕрех çитес номере ларттарать. Чăнах çапла пулса тухрĕ те.

Юпа, 16.

Акă хайхи «Ветерансем» хайлавăн пăрлă çумăрĕ ман пуç çине шапăртатрĕ.

Писательсен парторганизацийĕн пухăвĕ пулчĕ. Унта Министрсен Совечĕн председателĕ Л.П.Прокопьев, обкомран О.Г. Денисова пычĕç. Л.В.Таллеров çулталăк хушшинче хăйсем мĕн туни çинчен каласа пачĕ. Пухăва ертсе пыракан Георгий Андреевич Ефимов ассах кайрĕ, малтан докладчика парторганизаци ĕçне тĕплĕн тишкерменшĕн, айăпа кĕнĕ коммунистсене ятран асăнманшăн критиклерĕ. Порфирий Афанасьева «Сан ятупа» кĕнекишĕн, Светлана Асамата поэзи секцийĕнче пăхса тухмасăрах (секцине вăл хăй ертсе пырать-çке) сăвă кĕнеки кăларнăшăн тустарса илчĕ. «Кам вăл Владимир Кузьмин? Кам лартнă ăна «Тăван Атăл» журнал редакторĕн заместительне?» - тесе çиллессĕн хăйăлтатать.

Эпĕ «Икĕ ветерана» тустарнăшăн, повĕçе Гордеева каялла тавăрса панăшăн кӳреннĕ. Саккăрмĕш хутра «Ялавра» ĕçлекен автора ун пирки редакцирен такам хĕрарăмла шăрса кăтартнă. Ефимов урнă йытă пек уласа янă. Мĕнле-ха капла пулса тухать, ара Кузьмин писательсен Союзĕн членĕ те мар, çапах классиксен хайлавĕсене тĕкĕнме хăять, тесе кăварланнă. «Иккĕ» сăмах, повеçпе, авторĕпе тата элеклекенĕпе пĕрлешсе, икĕпитлĕх питлĕхне çапма пуçларĕ. Тĕлĕнмелле, Союз членĕнче тăраканăн кăна илемлĕ произведение хаклама право пур иккен. Вĕсем, хăйсене

çeç чăваш литературине тăвакансем тесе улăп тăпри çине мекеç-ленсе хăпарса ларнăскерсем, ӳссе пыракан çамрăк çыравçăсем хăйсенчен иртсе кайнине курса та юлайман-мĕн. Çавăнпа вĕсен урине явакласшăн кĕвĕçеççĕ, вăй çитнĕ таран вĕсене ура хураççĕ, пусараççĕ. Хăйсенчен чаплă çырма пултаракан Чăвашра урăх ни-кам та çук иккен. Пурин те вĕсене пăхăнмалла, вĕсене пуççап-малла. Çав сывлăш хумне явăнтарчĕ Ефимов пухура.

Таллеров ман пирки вĕçнерех çапла каларĕ: «Эпир Влади-мир Прокопьевича пултаракан опытлă журналист тесе ĕçе илнĕ, Союз правленийĕ ăна çав должноçра çирĕплетнĕ. Вăл пирĕн жур-налти ĕçе аван туса пырать, унăн ĕçĕ, кăмăл-туйăмĕ, прин-циплăхĕ пире çырлахтарать. Хăюллă коммунист. Никам, нимле авторитет умĕнче те чĕтресе тăмасть. Пурне те куçран калать, асăрхаттарать. Япăх хайлавсене тĕрĕсех, пĕлсех, алара тытса хăвар-ма пултарать. Акă кам вăл - Владимир Кузьмин. Вăл ман - тăван-пĕтен мар. Тахçанах пĕлекен ĕçри юлташ. Пулăшакан ĕçтеш. Пустуй тапăнать ăна Ефимов юлташ».

ХУШСА КАЛАНИ: 1995 çулта манăн «Тăван Атăлта» «Ты-мар» роман пичетленчĕ. Вăл вăхăтра редакцие пулăшма Хветĕр Агивер редактор Георгий Ефимова чĕнсе пынăччĕ. Вăл 600-мĕш пӳлĕмре, эпĕ 601-мĕшĕнче «Атăл» хумне вăйлатассишĕн тĕрмешетпĕр. Вăл пĕр енче, эпĕ тепĕр енче тимĕр-бетон стена-на çурăмпа ăшăтса ларатпăр. «Тымар» гонорарне илнĕччĕ. Ĕç вĕçленес умĕн ун патне кĕтĕм. Вăл, темле ал çырупа лараканс-кер, пуçне хуллен çĕклерĕ те, ман çине ăшшăн та ыйтуллăн пăхрĕ: «Пуç тăнĕ пĕтмен-ха, арманĕ кăштах сăмах çӳппи авăр-тать, ăнлантăм эс мĕн каласса. Çитет пуль иксĕмĕре çурăмпа чуна сивĕтсе. Çын хыççăн кайса пĕри шыва сикнĕ тет те, такам течĕ хыççăн эпĕ те хĕрсе кайнăччĕ çав, сакăр вун улттăмĕш çулхи юпа уйăхĕнчеччĕ пек астăватăп-ха, сан пирки пухура усал каларăм. Каçар, шăллăм. Ку таранччен пуçран тухма пĕлмерĕ вăл çав самант». «Паян урăхла самант çитрĕ, Георгий Андреевич, - терĕм ун çумне лăпкăн ларса. - Ун чухне мана эсир мар, сире элеклесе параканни пĕтересшĕн пулнă мана. Вăл пĕлмен иккен эпĕ ăçта çуралса ӳснине. Эпĕ - Чапаев ячĕпе тăракан колхозран. Манăн та çав паттăрăнни пекех хĕç пур. Атьăр-ха Чапаев палăкĕ еннелле уттарар».

Мĕнех, Василий Иванович та чухăн мар, унăн çĕрĕнче, çул урлă çеç, çынсем ялан «Хăнара». Кунĕпе ĕçлесе пирĕн те хырăм выçнă. Ăш та хыпать.

Сăмах-юмах туса вара эпир çурранах Атăл хĕрне çитнине те сисмен.

Çапла çав вăл, çынна ырă туни хушăран çухалма та пултарать, çынна ырă мар туни - пуçран тухмасть. Каçару тени кăна ăна çиелтен витме пултарать. Чун кантармăшĕ пек.

Юпа, 23.

Мускавра РСФСР писателĕсен Союзĕн правленийĕ «Литература туслăхĕ - халăхсен туслăхĕ» девизпа калаçу йĕркеленĕ. Унта Чăваш АССР писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ Порфирий Афанасьев, Анатолий Емельянов, «Ялавпа» «Тăван Атăл» редакторĕсем Юрий Сементерпе Лаврентий Таллеров хутшăнаççĕ.

Редколлеги ларăвĕ ирттертĕм.

Юпа, 27.

Лаврентий Васильевич, Мускавран таврăннă хыççăн, ĕçе тухрĕ. Икĕ уйăх енне ман тытса пымалла пулчĕ «Тăван «Атăл» карапĕн штурвалне. Материалсене набора ярассипе пичетлес ĕç те ман çинчех. Явапла секретаре тĕп редактор-капитан, хăйне ура хунăшăн, хурлать. Çакăншăн нуша куратăп. Юрать чăтма хăнăхнă та...

Хăй патне пухса Таллеров Мускаври çинчен кĕскен каласа пачĕ. Писательсен Союзĕн секретарĕ Дементьев унта çапла асăнчĕ, тет: «В Чувашской писательской организации людей много, но ярких имен не видно».

Кăна илтсен, чăрсăр автан пек пĕр çыравçă хĕрӳленсех кайрĕ. «Яков Ухсай элеклесе тăнă пирĕн çинчен, Юхма Мишши япăх каласа çӳрет, Анатолий Емельянов «организацию довел до ста человек, а хорошо писать не научил еще», - тесе хурлаççĕ. Пирĕн тĕп ĕç вăл тата - килте, кунти мар», - терĕ хастарланса.

Юпа, 30.

Писательсен Союзĕн правленийĕ валли «Хальхи пурнăç сăнарĕ - «Тăван Атăлта» ятпа справка хатĕрлесе патăм. Унта Анатолий Емельянов, Иван Лисаев, Георгий Краснов произведенийĕсене кĕртрĕм. Урăх ун çинчен çырни никамăн та паллăраххи çукрах.

Денис Гордеев ырантан пульницана пуç чирĕнчен сипленме выртать. «Темскер тĕлĕкре пĕрмай хамăр Каçал сăвăçĕпе Василий Дмитриевпа пĕрле коммунистсен генсекне Михаил Горбачева куракан пултăм. Пĕринче унпа Кĕтне хĕрринче пулă

тытрăмăр, пирĕн учителе Лаврентий Таллерова салам каларĕ. Вaççа хĕпĕртенипе патшана мухтаса сăвă шăрантарчĕ, унтан килне илсе кайса сăмакункка ĕçтерчĕ, шарккупа уйран çитерчĕ», - текелесе кулкаласа çӳрет.

Питĕ вăхăтпа, тăнлă шӳтлеме пултаратăн иккен эсĕ, Денис юлташăм, тесе эпĕ те хушса хутăм: «Ача чухнех эпĕ ялта пĕчĕк камантир пулнă та, тĕлĕкре пĕррехинче Леонид Брежнева хирĕç те çапăçăва илсе тухрăм хамăн «Тимур гвардине».

Гордеев вырăнне вăхăтлăха ĕçлеме Петĕр Львов пычĕ.

Чӳк, 3.

Канаш районне кайса килтĕм. Унта пирĕн РАПО (районное агропромышленное обьединение) совечĕпе «Тăван Атăл» редколлегийĕн пĕрлехи ларăвне ирттермелле пулать. Соловьев пĕрремĕш секретарьпе пĕрле раштавăн пĕрремĕшĕнче пухăнма килĕшрĕмĕр.

Чӳк, 18.

«Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕнче çуллен литературăпа искусство эрни ирттерме палăртнă. КПСС обкомĕнче ун пирки шавлăн канашларĕç.

Трактор завочĕн экономика службинче литература касĕ пулчĕ. Эпĕ чăваш литературинчи, чăваш писателĕсен ĕçĕнчи партин XXVII сьезчĕ тата СССР писателĕсен VIII сьезчĕ хыççăнхи улшăнусем, вĕсен малашлăх ĕçĕ çинчен каласа патăм. Виталий Шемекеев поэт сăвăсем вуларĕ. Чăвашла пĕлменнисем валли эпĕ хамăн кулăшла калавсене вырăсла шăрантартăм.

Чӳк, 24.

Пуçĕ уçăлса пынă май Денис Гордеевăн шухăшлавĕ çĕнелсе чечекленсе кайнă пулас. Палатăри сывалакансемпе мухтанса илме те манман. «Тĕлĕкре эпир, Ваççа тусăмпа, Кĕтне çыранĕнче пек. Пирĕн умра Горбачев майри Рая тăра парать саркаланса. Хĕрарăма чĕлхипе тăнран яма маçтăр Дмитриев манăн куç умĕнчех чаплă майрана та ирĕлтерсех ячĕ... Эпĕ аран куçа уçрăм. Туршăн та суймастăп», - тенĕ вăл алăкран тухтăр итлесе тăнине сисмесĕрех. Урăх ăна пульницара тытман.

Чӳк, 25.

Ирпе редакцие пынă Денис Викторович ĕçе çак юптарупа пуçларĕ. Халĕ Аркадий Малов отпускра та, Петĕр Львова, Денис Викторович вырăнне ĕçленĕ хыççăн, критика пайне лартрăмăр.

Раштав, 5.

Пирĕн çур ставкăпа (60 тенкĕ) техредактор должноçĕ пур. Эпĕ «Коммунизм ялавĕн» кăларăм редакторне Никандр Якимова чĕнтĕм. Вăл пулăшма ухутах килĕшрĕ. Таллеров, унччен вĕсем пĕрле Комсомольски районĕнче «Октябрь ялавĕ» кăларнăскер, хирĕçлемерĕ. Унпа çитес çулхи иккĕмĕш номерĕн макетне тăватпăр.

Юхма Мишши повесть пичетлеттересшĕн çӳрет. Редколлеги килĕшрĕ. Эпĕ те вуланăччĕ ăна. Юрăхлăскерех, вулакансене килĕшмеллех.

Раштав, 21.

Редколлеги ларăвне Юрий Айдаш издательство парнипе пычĕ, манăн «Виçĕ юман» кĕнекене 10 экземпляр «мекĕрленсе» йăтса килчĕ. Ăна 1978 çулта çырнăччĕ, миçе хутчен çĕнетрĕм, юсарăм. Тинех кун çути курчĕ. Порфирий Афанасьев кумашшĕ пулăшнипе. Лару хыççăн Юрий Григорьевича Эгер бульварĕнчи «Эгер» ресторана хăнана чĕнтĕм. Кĕнеке тухнă ятпа килте уяв.

Раштав, 28, шăматкун.

Марисен илемлĕ литература, обществăллă-политикăллă журналĕ «Ончыко» («Малалла») 60 çул тултарчĕ. Порфирий Афанасьев пире, Виталий Енĕшпе иксĕмĕре, Атăл урлă каçма хушрĕ. Эпир аэродромран «кукурузникпе» вĕçсе кайрăмăр. Редакцире аван йышăнчĕç, «Юбилейное» хăна çуртне вырнаçтарчĕç. Виталий Григорьевичпа пĕр пӳлĕмре, кашнине уйрăм номер панă пулин те, уйрăлас килмерĕ.

Пичет çуртĕнче кун ирттертĕмĕр. «Пачемыш» сатира журналĕн редакторĕ Краснов йышăнчĕ.

Вырăс драма театрĕнче журнал каçĕ пулчĕ. Ун хыççăн хăна çуртĕнчи ресторана апат çиме аран ĕлкĕртĕмĕр. Малтан пире журнал редакторĕ Александр Юзыкайн «Театртан килетĕр те, пӳлĕмсенче ĕçмелли-çимелли пулать», тесе хавхалантарнăччĕ. Çавна ĕненсе холодильнике те, сĕтел-тумбочка ещĕкĕсене те уça-уça пăхрăмăр. Пуш-пушах. Кăмăл хуçăлчĕ вара.

Раштав, 29.

Писательсен Союзĕн правлени председателĕ Миклай Казаков драматург йышăнчĕ, ун хыççăн Ким Васин писатель-краевед хула тăрăх каласа пычĕ. Краеведени музейĕнче, ӳнер выставкисен залĕнче пултăмăр. Юзыкайнăн шăллĕ, çамрăксен хаçачĕн редакторĕ Алексей, пĕр урамра магазина илсе кĕчĕ, икшер курупка канфет тата Шупашкарта кăларнă «Птичье мо-

локо» канфет курупки 7 тенкĕлĕх туянма вăрттăн май туса пачĕ. Хамăр патра «чăх сĕтне» пирнешкеллисем куçпа та курайман маççĕ.

Редакцие кайрăмăр. Унта хăна, çул тăкакĕн укçине пачĕç, мари халăх пултарулăхĕ çинчен калакан чаплă кĕнеке парнелерĕç. «Рябиновая наливка» хĕрлĕ эрех тутантăмăр. Кайран Александр Михайлович Юзыкайн килĕнче банкет пачĕ. Çӳлтен хĕстернине пула ресторан-столовăйĕнче эртел ĕçки тума хăраççĕ. Ĕçке хирĕç çĕршывĕпех хаяр кĕрешӳ пырать-çке. Юрларăмăр, шавларăмăр. Пит аван пулчĕ.

Раштав, 30.

Паян самолетпа вĕçмеллеччĕ. Аэропорта кайрăмăр. Пушкăртсене, удмуртсене, тутарсене çунатлă кайăк çине лартса ятăмăр. Шупашкарта çил-тăман иккен. Аэропорт йышăнмасть. Юлашки укçасене пухса вара Енĕшпе такси тытрăмăр та, каялла Йошкар-Олана тухса, Шупашкар ГЭСĕн плотини патне аран-аран çитрĕмĕр. Çурран каçрăмăр. Автомобиль çулĕ уçайман-ха. Атăл леш енче 14-мĕш автобуспа Çĕнĕ Шупашкар автовокзалне, унтан Шупашкара таксипе çитрĕмĕр. Хамăр çурт умĕнче 13.30 сехетре вĕçлерĕмĕр вара çулçӳреве. Римма шкула елкăна кайма тухнă. Шăнса кайнăскерсем, ывăннăскерсем эпир, савăннипе, хваттерте литра яхăн эрех ятăмăр, бальзам хутăштарса, Енĕше таксипе лартса ятăм.

Çĕнĕ çула килтех кĕтсе илетпĕр.

1987 çул.

Ĕç кĕнекинчен.

Кăрлач.

Журнал хуплашкине улăштартăмăр. Элли Юрьевăн редакци ыйтнипе малтан хатĕрлесе хунă эскизне шыраса тупрăм та, вара унпа усă куртăмăр. Çавăнпа пĕрремĕш номер кăшт каярах юлса тухрĕ.

Ĕçре çакăн пек. Лаврентий Васильч час-часах чирлет. Унсăр пуçне тата унăн партбюропа ĕç нумай. Çавна май манăн ытларах çине тăма тивет. Хăйне ăна юрама пит кансĕр. Хăй мĕн шутланинех тăвасшăн, çынна ытлашши шансах пĕтермест. Кашни вактĕвеке кăтартмалла. Хăйĕнчен иртсе кайнине те юратсах каймасть. Консервативлăрах шухăшлать.

Петĕр Хусанкай юбилейне палăртма хăнасем килеççĕ. 21-мĕшĕнче Йошкар-Оларан «Ончыко» редакторĕ Юзыкайн çитрĕ.

Аэропортра ăна Енĕшпе кĕтсе илтĕмĕр. Александр Михайлович «Россия» хăна çуртĕнче пурăнма пуçларĕ.

Каçпа Римма Ильиничнаран пĕр литр шуррине кивçенле илсе (лавккара тупма çук, талонпа кăна сутаççĕ) Виталий Григорьевичпа ун патне кайрăмăр. Николай Максимовпа Порфирий Афанасьев та пычĕç. Союз енчен хăнана хăналама шутламаççĕ те. Пуçлăхсем-çке. Аван калаçса лартăмăр. Çĕрлечченех.

Тепĕр кунне Хусанкай каçне Риммăна та чĕнтĕм. Халăх йышлă пухăннăччĕ хăй ячлĕ культура керменне.

Эрнекун писательсен Союзĕнче хăнасене йышăнчĕç. Тутарсемпе пушкăртсене Свияжска çитиччен «Икаруспа» ăсатрĕç. Юзыкайна та пĕрле лартса ятăмăр.

30-мĕш числара Георгий Краснов ман пата шăнкăравларĕ. Хăнана чĕнет. Редакцирен мана кăна. Эп каларăм: «Лаврентий Васильча пĕлтермесен аван мар». Вăл вара ăна та чĕнчĕ. Эпĕ салам адресĕ малтанах хатĕрленĕччĕ, çынсене алă пустарса тухрăм. Таллеров «Ленин пурнăçĕ» (12 тенкĕ те 40 пус) фотоальбом парас, терĕ. Кайран хăй, «Ман поликлиникăна каймалла-ха», - тесе тухса шăвăнчĕ. Эпĕ пĕчченех юлтăм.

Союзран Порфирий Афанасьевпа Николай Максимов, «Ялавран» Юрий Сементер, «Капкăнран» Хветĕр Агивер, пропаганда бюровĕнчен Виссарион Синичкин пычĕç. Амăшĕ Ольга Прокопьевна пур. Юрласа пачĕ. Хĕр пек юрлать. 76 çулта. Хăй эпир пынăшăн хĕпĕртерĕ. «Ывăлăн чи çывăх юлташĕсем килнĕшĕн савăнтăм», - терĕ юлашкинчен.

Нарăс, 12.

Николай Максимов паян писательсен Союзне йышăнмалли комисси ларăвне ирттернĕ. Вăл - комисси председателĕ. Унта Энтип Ваççи, Николай Иванов (Яки), Юрий Айдаш, Петĕр Эйзин, Хветĕр Уяр, Василий Петров, Ваçлей Игнатьев, Аристарх Дмитриев кĕреççĕ. Мана хирĕç çурри ытла сасăлана тет. Камсем-камсем ура хунине чухлатăп. Партпухура эсĕ ентешна Анатолий Емельянова хӳтĕлесе ун майлă сасăланăшăн хăшĕпĕри сана пĕтересшĕн, тесе асăрхаттарнăччĕ-ха мана. Пухурах туйрăм.

Пухăвĕ иртнĕ çулхи раштавра пулнăччĕ. Емельянова, хăй Союз пуçлăхĕнче ĕçленĕ чухне, çулталăк каярах, хытă тылласа илнĕччĕ. «За попустительство в руководстве бюро пропаганды литературы, грубые нарушения в распределении квартир и амо-

ральное поведение, обьявить выговор с занесением в учетную карточку» текен хура хута кăкăр çинчен сирсе пăрахма вăхăт çитнĕччĕ Анатолий Викторовичăн. Коммунистсен пухăвĕнче тата партин Ленин райкомĕнче çăвăнса тасалмаллаччĕ унăн.

Пропаганда бюроне Геннадий Мальцев ертсе пынă. Бюро бухгалтерĕ - Айдаш арăмĕ Таня. Литература пропагандăлама Мускавран укçа нумай уйăрнă. Мальцевсем артистсемпе асмаллипех аснă. Бухгалтерĕ те çухалсах кайман. Аскăнчăксене тăрă шыв çине кăларма пуçласан, милици уголовнăй ĕç пуçарнăччĕ. Çав ĕçе КПСС обкомĕпе Емельянов хăех пăчлантарма вăй хунă. Лешсене тимĕр решетке хыçне ăсатасран хăтарса хăварнă. Союз правленийĕ таса юлнă.

«СССР писателĕсен Союзĕ питĕ пуянччĕ. Хăш-пĕр союзлă республикăсем хваттер парсан та илместчĕç, мĕншĕн тесен вĕсем пур писателе те хăтлă хваттерпе тивĕçтернĕ. Хваттер тумалли укçине пурин валли те уйăрнă. Эпĕ вара, - каласа паратчĕ Емельянов, - çав укçана Раççей писателĕсен Союзĕ çине куçарттарса, хамăр чăваш енчĕкне тултарттараттăм». Çапла майпа вăл Шупашкарта 46 хваттер тутарать. Хветĕр Уяр пек чее йышшисем, мăнукĕсене те хваттерлĕ туса хăварнă. Союз членĕнче тăман çамрăк çыравçăсене те пĕрер пӳлĕмлĕ хваттер панă. Писателĕсем хăйсемех çăхав çырнă. Тĕрĕсленĕ хыççăн вара Анатолий Викторович 20 çынна кăна хваттерлĕ тунă пек пулса тухнă. Ыттисем, «çухалнисем», кирлĕ çынсенех лекнĕ çав.

Çемьере чуп-чуп уйăхĕ кăна мар, кӳп-кӳп кунĕсем те пулма пултараççĕ. Емельянов та хăйне арçынла тытас тенĕ-ши, мăртмарт, хăрт-харт самантсенче арăмне юсаса илнĕ, тапочкипе петĕм те, тесе кулкаларĕ пухура. Лешĕ, килĕнчен тухса тарать те, Мăньял Хапăсран Вăрнара çула май аран-аран грузовикпе çитет. «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕн хуçи Ф.Пчелов йынăшса сулланса тăракан халсăр хĕрарăма вокзал патĕнче палласа илсе, район пульницине «Волгăпа» леçет. Сывалнă хыççăн çемье çиппи каллех малалла пĕтĕрĕнсе хытать. Шупашкар шавкăнĕсем вĕрсе яричен...

Çаксене пĕрлештерсе, ытти вак-тĕвеке купаласа, Анатолий Викторовича хытах тӳнлеттерчĕç кăкăртан.

Аçа-çиçĕмле тăвăл кĕрлерĕ писательсен Союзĕн хĕрлĕ кĕтесĕнче. Унашкал хура ăшчиклĕ çынсем пĕрле пухăнса пĕр çынна кашкăрла кăшланине эпĕ хаçатсенче ĕçленĕ чух та, «Капкăнра» та, ытти çĕрте те курманччĕ-ха.

Василий Эктел сурчӑк сирпӗтсех хаяррӑн хирӗҫ тӑрать: «Емельянов халлӗхе выговортан тасалма хатӗр мар! Вӑл издательство директорӗ пуласшӑн, хӑйне хирӗҫ тӑракансене тавӑрма хатӗрленет. Унӑн йӑнӑшӗсем нумай...»

Хветӗр Уяр: «Выговорне илме тӑхтас. Сурӑх ҫӑмӗ ҫинчи шакӑрча пек шакӑртатса ҫӳретӗр тепӗртак...»

Денис Гордеев: «Эп шутласа тухнӑ тӑрӑх, Анатолий Викторович пӗтӗмпе те 80 пичет листи чухлӗ кӑна произведени ҫырнӑ. Николай Максимовӑн - 120 листа пулать. Кӗнеки мӗн чухлӗ Емельяновӑн! Шупашкарта та, Мускавра та кашни ҫул тухать. Ку морале хирӗҫле мел. Маваскас выговорне снимать тума?»

Юхма Мишши: «Емельянов манне виҫӗ ҫулталӑка ҫунтарчӗ. Хӑй председатель чухне, мана хирӗҫле комисси туса, ҫапса хуҫасшӑн пулчӗ».

Энтип Ваҫҫи: «Емельянов мана, пародилле ответленӗшӗн, выговор партарчӗ, партирен кӑларттарасшӑнччӗ...»

Емельянов майлӑрах калаҫакансене ҫӑвар уҫма памаҫҫӗ. Тусӗ, Георгий Ефимов тилӗ те аптраса ӳкрӗ, ӑна та ҫулса илчӗҫ. Анатолий Викторович икӗ хут ӑнлантарчӗ: «Эпӗ Чӑвашгиз директорӗ пулма ҫунмастӑп». Юлашкинчен мӑнкӑмӑллӑн ҫапла каларӗ: «Вӑхӑт пурпӗрех маншӑн ӗҫлет».

Икӗ хутчен сасӑларӑмӑр. Малтан - партбюро йышӑнӑвне ҫирӗплетессишӗн, унтан - хирӗҫтӑракансен сӗнӗвӗпе. Бюро йышӑнӑвӗшӗн, выговор тасатассишӗн, 15 сасӑ пулчӗ, хура чунлисем 12 сасӑ пухрӗҫ. Виталий Енӗш, эпӗ бюро майлӑ сасӑласан, хулран тытса пӑшӑлтатрӗ: «Эсӗ пӗлместӗн-ха Емельянова, пӗрле ӗҫлесе курман».

Виталий Григорьевич, пӗрле ӗҫлесе, нушине тӳссе, кӑмӑлтуйӑмне туйса манран аванрах ӑнланнӑ пуль. Ӗнтӗ хӑй вӑхӑтӗнче Емельяновран шарне те курнӑччӗ те, ҫапах та манӑн ҫав хура ушкӑна кӗрес килмерӗ, тасарах шухӑшлакансенех пулӑшас килчӗ.

Емельянов выговортан хӑтӑлчӗ, пуху унӑн характеристикине тасатса ҫирӗплетрӗ. Вӑл райком еннелле вараланчӑкран тасалнӑ кӑкӑрпа утрӗ. Кузьминӑн вара... Акӑ халӗ мана пуҫран пачӗҫ. «Ку тек пирӗн ҫын мар», - пухурах илтӗннӗччӗ ман ҫурӑм хыҫӗнче ҫывӑх ҫын сассиех.

Нарӑс, 16.

Обкома чӗнчӗҫ. Пичет секторӗ мана, пуҫлӑхӗ Николай Григорьев, опытлӑ журналист тесе, Элӗке икӗ эрнелӗх пулӑшма ярасшӑн. Райкомӑн иккӗмӗш секретарӗнче ӗҫленӗ Леонид Мак-

симович Владимирова манӑн хаҫат тума вӗрентмелле ӗнтӗ. Идеолог чухне вӑл хӑй редакцине камантласа, тӑн парса пурӑннӑ-ха та... Халӗ, хӑйне редактора куҫарсан, алли-ури ҫыхланса ларнӑ. Ҫынни ӑслӑскер, пултаруллӑ педагог-организатор. Чулхулара партшкулта пӗр вӑхӑталла вӗренеттӗмӗр. Хӑйне майлӑ мар ӗҫре темшӗн нушалантараҫҫӗ урӑх ҫӗрте ытларах усӑ памалли специалиста-педагога.

Хамӑн хуҫапа ҫӳлтисем калаҫнӑ та, хирӗҫлев пулмарӗ. Тӑван Элӗке вӗҫтертӗмӗр Мистер Кольӑпа - «Волгӑпа».

Райкомӑн пӗрремӗш секретарӗ Семенов, комсомол чухнехи юлташ, райӗҫтӑвком председателӗ Иванов мана ентешлех йышӑнчӗҫ. «Халӗ ӗнтӗ сире кунтан урӑх ямастпӑр», - тет шӳтлекелесе Юрий Ильич. «Эпӗ паянах ҫӗнӗ ҫуртра ӑна хваттер пама хатӗр, Элӗк кӗрӳшне», - ҫирӗплетет Семенов сӑмахне Геннадий Петрович. «Редакцире тата типографире ӗҫлекенсене хваттерлӗ туса ҫитерсен, килӗшетӗп сирӗн сӗнӳпе», - хуравлатӑп эпӗ те кулкаларах. «Эсир те пӗлетӗр-ҫке ун ҫинчен, - пичӗ-куҫӗ ӑмӑрланчӗ Семеновӑн. - Хваттер ҫуккишӗнех ҫамрӑксем редакцире тытӑнса тӑрасшӑн мар. Астӑватӑр пуль, эпир - райкомра, эсир - редакцире ҫулӗ-ҫулӗпе ҫывӑрса пурӑннӑ. Хальхи ҫамрӑксем ун пек мар, тӳрех нумай ыйтаҫҫӗ». «Май килнӗ таран пулӑшатпӑр-ха редакци ҫыннисене», - хушса хучӗ Иванов.

Редакци хӑй майлӑ, хӑй шайӗпе элӗклех ӗҫлет, ҫамрӑк ҫыравҫӑсен хаваслӑхӗ, шухӑш-ӗмӗчӗ ҫунатлӑ. Практика тени ӗнтӗ вӑл пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн ӑс кунтӑкне пухӑнать, алла вӑйлатать. Редакторӗ хӑй ӑҫта пуҫа чикнине ӑнланать, вӗрентӳ енӗпех ӗмӗрне малалла ӑнӑҫлӑ тӑсма шутлать.

Обком валли справка хатӗрлерӗм. Элӗксем 1985-1987 ҫулсенче «Ленин ҫулӗпе» мӗнле хӑвӑртлӑхпа утни ҫинчен. Пичет секторӗнчи бюрократсем ӑна вуламасӑрах ҫӗлесе хучӗҫ пуль. Вӗсен яланах «вӑхӑт ҫук».

Унччен кӑшт маларах кӑна-ха обком мана «Советская Чувашия» хаҫата тӗрӗслеттерчӗ. Ӗҫпе производство дисциплинине пӑсакансене, обществӑлла пурнӑҫӑн хирӗҫле пулӑмӗсене, социализмла саккунлӑха пӑсакансене, йӗрке-тирпее хисеплеменсене, ӗҫкӗпе ашкӑнакансене сивлесе редакци мӗн тӑвать? Йӑлтах шӗкӗлчесе, тӗплӗ тишкерӳ туса патӑм.

Ытти енӗпе те сахал мар усӑ кӳнӗ вӗсене. Анчах хальхинче те, малтанхи пекех, вӗсен енчен ырласси те, хурласси те пулмарӗ.

* * *

Николай Григорьев нервисене пульницара юсать. Кашни ҫул пӗрре кайса выртать-мӗн. Сывлӑхӗшӗн тӑрӑшать. Ун вырӑнне Петӗр Львова илтӗмӗр.

Таллеров писательсен Союзӗнчен творчество отпускӗ илсе, роман ҫырма Кисловодска самолетпа вӗҫрӗ.

Денис Гордеев черетлӗ отпуска тухрӗ, «Чувашия» санаторире сипленсе канать.

«Капкӑнра» кулӑш кӑлтӑрмачӗ ҫавӑракан Валерий Николаев, ҫӗнӗ ҫултан Виталий Енӗше редколлегирен кӑларса, унта «Коммунизм ялавӗнчи» Сергей Полкачева кӗртнӗ. Виталий Григорьевич тӗп редактора журнал тума вӗрентнӗ иккен, писательсен пухӑвӗнче «Николаев «Капкӑнра» хӑйӗн пиҫсе ҫитмен калавӗсене пичетлет» тесе критикленӗ. Каллех тавӑру.

Пуш уйӑхӗн вӗҫӗнче Лаврентий Васильч ӗҫе тухрӗ. Журнала 18 пичет листи таран хулӑнлатас пирки тата штата виҫӗ ҫын хушма ыйтса обком валли ҫыру хатӗрлерӗмӗр. Ун умӗн манӑн издательствӑра план, экономика, производство пайӗсенче шутлав ӗҫӗпе нумай ларма тиврӗ.

Ҫиччӗмӗш номер материалӗсене набора ятӑмӑр. Герман Желтухин, сӳрӗклӗхе пула, тӑрса юлчӗ. Канаш районне кайса хатӗрленӗ очеркне те туса ҫитерейменрӗ.

Санаторирен таврӑннӑ Гордеев писательсен союзӗнчен уйӑхлӑх творчество отпускӗ илчӗ. Мӗнле лайӑх вӗсен - кану ҫине кану... Ҫавӑнпа вӗсемшӗн редакцире укҫа ӗҫлесе илмелли ӗҫ вӑл - ячӗшӗн кӑна.

Август-сентябрь планне манӑн «Юрату кӑварӗ» повӗҫе кӗртрӗмӗр. Тӗп редактор унтан обком-райком секретарӗсен сӑнарӗсене кӑларттарасшӑн. Вӗсемсӗр произведени шӑнӑрӗ татӑлать. Килӗшмерӗм. Ах, сыхланаҫҫӗ-ҫке унашкаллисенчен. «Тӑрук кайран ҫӳлтисем ҫапса хуҫӗҫ те...» - шухӑшлаҫҫӗ пуль.

Денис Гордеев писательсен Союзне Борис Чиндыков вырӑнне литконсультанта каясшӑн, ӗҫре ытлах тӑрӑшма пӑрахрӗ.

Аркадий Лукин ӑш чирӗпе хытах аптӑрать, начарланса, хӑрӑк шалча пек пулса кайрӗ. «Ку ҫуркуннене чӑтса ирттерсе ярсанччӗ...» - тет хӑй, йывӑррӑн ӳсӗркелесе.

Таллеров ака уйӑхӗн 6-12-мӗшӗсенче Мускавра пулчӗ. Унтан таврӑнсан, паян Лукинпа писательсен Союзӗнче кун турӗҫ. Правлени ларӑвӗ.

Перестройка вăхăтěнче писательсем ытла нумай канашлама пуçларěç. Бюрократи машини пулса кайрě правлени. Партпухусем 6-8 сехете тăсăлаççě. Республика шайěнчи анлă канашлусенчен те вăйлăрах. Яланхи ораторсем, обкомăн пěрремěш секретарěнчен пуçласа Совмин председателě таранах, пурне те мěнле ěçлемеллине вěрентеççě. Писательтен ăсли, тавçăрулли Чăвашра никам та çук, тейěн. Пěр-пěрне çаппаçарамаслантарса, вěсен ăшне кěрсе, кутана тавăрса пăхаççě, пуç мимине арпа пăтратнă пек пăтратаççě. Тем шыраççě. Ресторансенчен тайкаланса тухакан писательсене ятарласа сыхлаççě, милицие систерсе, урăлтаркăча тыттарса яраççě. Кайран партпухура кисěппе тӳнě пек тěвеççě. Ахаль те аптраса ӳкнě çынна çийěнчен чукмарпа пуçран тӳнлеттереççě. Кайса ӳксен, шапа пек ахăрса таврана янратаççě. Çавнашкал усаллăх сěрěмě явăнать писательсен ушкăнěнче-канашěнче.

Лаврентий Васильч çапла ěçре вăрах пулмасăр пурăнать-пурăнать те, кайран, пуçра шăрка тупнă пек вак-тěвек тупса, хěремесленсех чаваланать.

Çу, 4.

Лукин бюллетеньпе. Чирлесех кайрě. Килěнче çапах Порфирий Афанасьевăн «Сан ятупа» поэмине редакцилет. Ăна авăн уйăхěнче журналта лартма пуçласшăн.

Лаврентий Васильча бюллетень панă.

Гордеев ěçе тухрě те, тӳрех Порфирий Васильч патне Союза ěçлеме куçрě. Ун вырăнне Петěр Львов вăхăтлăха ларса юлчě.

Иван Данилович Кузнецов профессор пычě. Ун сассине илтсе ман пата Малов каçрě. Ученăй пирěн валли ěлěк чăваш паттăрěсем ирěклěхшěн мěнле кěрешни çинчен çырнине парасшăн. Аркадий Васильч калать: «Пирěн чăвашла çырнă чăваш историйě те çук, уншăн эсир, историксем, айăплă». Иван Данилович критикăна йышăнать, уншăн хăй те кашнинчех Василий Филиппович Каховские ятлать. Хальхинче Уяра та çěмěрчě: «Федор Ермилович, манăн вуншар çул пухнă материалсене, архива панисене, унтан илсе, «Таната» романěнче хăй архивра шыраса тупнă материалсем тесе усă курчě, 1842 çулхи Шурча вăрçи патне халě те çитеймест, хăй «танатана» путнă, - тет кăмăлсăррăн, унтан хушса хурать: «Тепěр пилěк çул пурăнăп-и, унччен, виличчен, ман чăваш халăхě валли усăллине татах çырса хăварасчě-ха, кěнеке валли пухни нумай».

Кузнецов пӳлӗмрен тухса кайнӑ хыççӑн, юлташсем пӗрре кӑна мар калани аса килчӗ: «Чӑваш ученӑйӗн пиçнӗ хатӗр апачӗпе тӑраннӑ чӑваш писателӗ хӑйӗннех тӑвать, хӑйӗн путсӗрлӗхне хӑйпе пӗрлех леш тӗнчене илсе каять, пӑрлӑ кӑмӑлне унӑнне халлӗхе никам та ирӗлтереймен-ха, Уяр кӗрсенех ӑшӑ ӗç пӳлӗмӗ туххӑмрах сивӗнсе каять». Классиксен хирӗçтӑрӑвӗ асӑмра, иккӗшӗн мухтавлӑ ячӗ те халӑхра ӗмӗрлӗхех юлчӗ.

Çу, 11.

Таллеров ӗçлеме пуçларӗ. Желтухин Чулхулана партшкул çумӗнчи курса вӗренме кайрӗ. Вӑл коммунист мар. Ӗç вырӑнӗпе çеç унта кайма тивӗçрӗ. Виçӗ эрне пурӑнать ӗнтӗ хуравлӑ çынсемпе.

Çу, 16.

Петӗр Львов хӑйӗн пӳлӗмне куçасшӑн пулчӗ те, вара 609-мӗш пӳлӗме, пысӑкраххине, унччен Краснов, ун хыççӑн Гордеев ларнӑ пӳлӗме, куçрӑм.

Максимов писатель-профессионала тухрӗ. Союз правленийӗн председатель çумӗ пулма «Капкӑнри» Хветӗр Агивере çирӗплетнӗ.

Çу, 20.

Лукин Кувшинкӑра канать, ун хыççӑн санаторие каять. Ун вырӑнне Петӗр Ялгире илтӗмӗр. Львова Союз пуçлӑхӗсем ӗçрен кӑларттарасшӑн. Таллеров отпуска тухма приказ çырчӗ. Мана Львов пирки приказ çыртарчӗ. Халӗ ӗнтӗ редакцире Арӑслан çук. Питӗ хавхаланса ӗçлес кӑмӑлпа пурӑнатчӗ вӑл.

Ӗнер Çӗрпӳре пурӑнакан вырӑс писательне Павел Егорова вӗлернӗ. Ӗçӗ çапларах пулса иртнӗ. Егоров издательствӑра гонорар илнӗ. Кӗнеке çума Юрий Айдаша, илемлӗ литературӑпа ачапӑча литературин редакцийӗсен пай заведующине, чӗннӗ. Çумçаккисем Николай Иванов-Яки, Петӗр Львов, Николай Стуриков тупӑннӑ. Ушкӑн ӗçки М.Горький проспектӗнчи 15-мӗш çуртра, С.Алатовпа Н.Николаев художниксен мастерскойӗнче кӗрленӗ. Унта вӗсен тусӗсем те пулнӑ. Урмӑшнӑскерсем, пӳлӗмрен-пӳлӗме çӳренӗ, Айдаш пукан çинче ларнипех хӑрлаттарнӑ... Пӗр пӳлӗмре вара Егоров виллине тупаççӗ...

Ох, ахӑрсамана пуçланчӗ. Шӑпах тата КПСС Тӗп Комитечӗн «Ӗçкӗпе иртӗхнине тата алкоголизма пӗтермелли мерӑсем çинчен» çӗнӗ йышӑнӑвӗ тухрӗ. Пурне те явакласа илчӗç унпа. Правлени председательне Афанасьева, партбюро секретарьне Таллерова хаяр выговор хыптарчӗç. Айдаша, ӗçрен хӑтарса, парти-

Пролетарии всех стран, соединяйтесь!

ВЛКСМ

ПОЧЕТНАЯ ГРАМОТА

Чувашский обком ВЛКСМ

н а г р а д и л

КУЗЬМИНА

ВЛАДИМИРА ПРОКОПЬЕВИЧА –

члена Союза журналистов СССР, заместителя главного редактора журнала "Таван Атал"

– за активную работу по освещению хода строительства, становления коллектива производственного объединения "Чебоксарский завод промышленных тракторов".

Секретарь обкома ВЛКСМ

[illegible] февраля 1986 г.

рен кăларчĕç. Стурикова, закуска выранне, хаяр выговор тыттарчĕç. Иванова литконсультантран тата профсоюз членĕнчен (партире мар) кăларчĕç. Çав юхăма ыттисем те лекрĕç. Львова, Айдаша, Тимакова «Тăван Атăл» редколлегийĕнчен сирпĕтрĕç. Вĕсен выранне правлени В.О.Максимов-Ахуна, Д.В.Гордеева тата А.П.Хузангая çирĕплетнĕ. Çĕнетнĕ состава саккăрмĕш номĕре вырнаçтартăмăр.

Çу, 27.

Комсомол обкомне чĕнчĕç. Трактор завочĕ тăвакансемпе трактор заводĕнче ĕçлекенсем çинчен вăйлă çыракансене пухнă. Юхма Мишши те пур. Мана ВЛКСМ обкомĕн Хисеп грамотине пачĕç.

Çĕртме, 22.

Редколлеги ларăвĕ ирттертĕм. Авăн, чӳк уйăхĕсен планне çирĕплетрĕмĕр.

- Вăт ку чăн-чăн перестройка. Икĕ уйăхшăн çирĕм минутра вĕçлерĕмĕр, - терĕ Дедушкин. - Лараттăмăрччĕ-ха сехечĕ-сехечĕпе пустуй павраса. Çĕнĕллех ĕçлемелле иккен.

Ларусем пирĕн вăраха каяççĕ, ĕç вăхăтĕнче татса памалли вак-тĕвеке шултралатса яраççĕ те, çӳп выранне тăракан произведение ылтăн выранне хурса, халăх умне йăлкăштарса кăларма хăтланаççĕ те, ваттисем: Дедушкин, Алагер, Таллеров тавлашса каяççĕ те... Хăлха начар илтни пĕтерет тата вĕсене. «Мĕн терĕн эс, Лаврентий Васильч?» - сулахай хăлхи çумне ывăç тупанне тытса хĕрарăмла сасăпа ыйтать Василий Осипович. «Мĕн тен?!» - упа пек мĕкĕрсе ярать Николай Степанович тĕп редактора камантир куçĕпе шăтарса. «Мĕн тетĕр эсир?» - сăмаххисене юрланă пек тăсать Лаврентий Васильевич. Протокол çыракан Николай Григорьев, тĕлĕрсе кайнипе, пуçне лăнклăнк тутарса ларать. Анатолий Викторович ялан хăвалать: «Вĕçлер». «Мĕн тен?», «Мĕн каларăн?», «Мĕн çинчен?» тесе камит лартакансенчен Герман Желтухин вилет кулса.

Дедушкина манăн ĕç меслечĕ кăмăла кайнă та, полковник-педагог-директор-Союз пуçлăхĕ пулнă çын мана пурин умĕнче те мухтани ячĕшĕн çеç калани маррине туйса, ăшра хавхалантăм.

Утă, 5.

Иртнĕ çулта редакцире ырăлăх çуралнăччĕ. «ТăванАтăл» парнине илессишĕн çăмăл атлетсен ăмăртăвне ВЛКСМ хула комитечĕпе тата Шупашкар спорткомитечĕпе пĕрле ирттернĕччĕ. Денис Гордеев питĕ хавхаланатчĕ уншăн. Пуçаруçи-çке.

Кăçал эпир Желтухинпа пултăмăр ку ĕçре. Унччен редакци парнесем туянчĕ. Çанталăкĕ чупма майлах пулчĕ, шăрăх аптăратмарĕ. 60 çын ытла хутшăнчĕ. Маршручĕ çапла: Ленин площачĕ - Мускав проспекчĕ - Октябрь çулĕ - Гагарин урамĕ - Калинин урамĕ - Ленин площачĕ. Мускав - Октябрь - Сăкăт - Гагарин - Калинин кĕперĕсем урлă каçмалла. 13 çухрăм тăршшĕ. Вырăсла - «Ажурные мосты», чăвашла - «Чĕнтĕрлĕ кĕпер» чупу. Капăр кĕперсем урлă выртакан çулпа спортсменсемпе пĕрле чăваш халăх писателĕ Николай Терентьев, чăваш художникĕ-карикатурисчĕ Николай Яковлев хаваспах чупаççĕ, çамрăксенчен юлмаççĕ.

Утă, 15.

Таллеров «ĕçе тухрĕ». Ячĕшĕн çеç-ха. Пурпĕр çав «Егоровсен-Айдашсен ĕçĕпе» çунать. Мускавсем шавлама пăрахмаççĕ те... Центрти хаçатсенче материал тухманни юлмарĕ пулас ку пăтăрмах çинчен. Лаврентий Васильевич пĕрмай хурав çырать, райкома, хулакома, обкома чупать. Ăçта унта ĕç çинчен шухăшлама вăхăчĕ писательсен «генсекĕн».

Гордеев вырăнне проза пайĕн редакторĕ пулма «Хатĕр пулти» Василий Кошкина е Малова куçарма, Аркадий Васильч вырăнне Желтухина лартма, Герман Николаевич вырăнне литсотруднике пĕр-пĕр çамрăк хастара илме сĕнтĕм.

«Капкăнсем» те улшăну тунă. Агивертен тасалнă вырăна Николаев Валентин Палинова çĕклесе лартнă.

Çурла, 3.

Аркадий Малов отпуска кайрĕ.

Лаврентий Васильевич иккĕмĕш пульницăн неврологи уйрăмне кайса выртрĕ.

Петĕр Ялгире икĕ уйăх ĕçлеттернĕччĕ, кăштах «кантарнă» хыççăн паян каллех çĕнĕрен ĕçе илтĕм.

Георгий Красновпа Александр Артемьев пирки шурă çуртрисем (обкомрисем) питĕ хытă, хаяр калаçаççĕ. «Симĕс çĕлен» чирĕнчен сывалса çитейменшĕн вĕсене редакци коллегийĕнчен кăларттарасшăн. Эпĕ те, хăрамасăрах, хирĕçлетĕп-ха.

Çурла, 11.

Союзăн правлени ларăвне чĕнчĕç. Унта кĕнеке сутакансем те пынă. Çитес çулта кĕнеке кăлармалли план пирки калаçу пуçарнă.

Парти обкомĕ хушнă тата писательсен Союзĕн правленийĕ çумĕнчи ĕçке хирĕç кĕрешекен комисси (председателĕ Вениа-

мин Погильдяков) ыйтнă тăрăх, КПСС Тĕп Комитечĕн 1985 çулхи йышăнăвĕ хыççăн, кам уралтаркăча лекнĕ, çавăн произведенине пĕр çулталăк хушши пичетлеме тăхтас, тесе йышăнса хăварчĕç правленире.

«Çавăнпа,- евитлерĕ кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ Василий Герасимович Игнатьев, - Георгий Красновăн «Пуççăр

1987 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнче «Тăван Атăл» парнине илессишĕн пынă 13 çухрăмлă чупура 59 минутра финиша çитнĕ ятпа Чăваш халăх писательне Николай Терентьевич Терентьева Владимир Кузьмин саламлать.

Семен Игнатьев ӳкернĕ.

юланутсен эскадронĕ» романне (22 пичет листи), Владимир Долговăн, Николай Ивановăн (Якин) кĕнекисене çитес çул планĕнчен кăлартăмăр».

Пире те, журналсене, çаплах тума хистерĕç. Пирĕн те ирĕксĕрех Георгий Красновăн «Июль вĕçĕнчи виçĕ кун» романне тата Петĕр Львовăн «Ютран чĕре» повеçне çитес çулта пичетлемешкĕн тăхтама тивет. Ку ыйтупа вара вĕсене, ырă тусăмсене, ниепле те çăлма май килмест.

Çурла, 13.

Тепĕр 6 кунтан 50 тултаратăп. Питĕ тĕлĕнмелле пулса тухать. Редакцире этем шăпи пирки шухăшлакан çук. Çавăнпа, ку паллă кун маншăн шăп-шăпăрт, никам сисмелле мар иртсе каясса сиссе-туйса, кăштах хăюлланас, Çĕр çинче Владимир Кузьмин та пурри çинчен хăшĕсене аса илтерес килчĕ. Темле, ытла хисеплемесĕр хăварнă пек пулĕ, терĕм. Ахаль те «Капкăнра» главнăй (тĕп) редакторшăн мĕн чухлĕ ĕçлерĕм, унта йĕрке тыт-

са пырассишĕн ҫынсене тарăхтарса пĕтертĕм, кунта та ман валли ҫавнашкаллиех тупăнчĕ. Главнăй редактор журнал ĕҫĕпе сахал ĕҫлет, питĕ сахал тесен те юрать. Вăл е чирлет, е партбюро, правлени ĕҫĕпе хăшкăлать. Манăн икĕ-виҫĕ ҫыншăн та лавне туртмалла.

Виталий Енĕшпе тата Хветĕр Агиверпе калаҫнă чухне кĕҫех ман юбилей пуласси ҫинчен сăмах хускатрăм. Вĕсем вара, Енĕшĕ - Таллерова, Агиверĕ - Афанасьева ун пирки аса илтернĕ. Лешсем пĕрле канашланă та, мана КПСС обкомĕпе Чăваш АССР министрсен Совечĕн Хисеп грамотине илме тăратма шутланă. Манăн ун пек грамота «Капкăнра» пани те пур-ха. Урăхларах награда пулмалла та ĕнтĕ.

Августăн 3-мĕшĕнче Таллеров пульницана кайса выртрĕ. Ĕҫе малалла тăсма вăл партбюро секретарĕн заместительне Юрий Семенова хушса хăварнă. Лешĕ, «партийно-производственная характеристика» текеннине хатĕрлеме пуҫланă та, хирĕҫлеве лекнĕ. Иван Лисаев, Энтип Ваҫҫи килĕшмеҫҫĕ, тет. Партбюро кворум пухайман.

Мана тарăхтарсах ячĕҫ. «Ялав» тĕп редакторĕн Семенов-Сементерĕн ĕҫ пӳлĕмĕнче вара чунсăрлăх, бюрократла хăтлану пирки хытах каларăм. Правлени ларăвĕ пулнă кун партбюро пухăннă, ултă ҫынран - тăваттăн. Пурте пĕр саслă пулнă. Паян хутсене майлаштарса Ленин райкомне кайса партартăм. Ялгире чуптаратăп. Хамăннах ĕҫлеме тивет. Хамшăн ыра та мар, ҫапах... Таллеров сипленет, ответлă секретарĕ Григорьев ҫур уйăх ĕҫрĕ, ĕҫлеймерĕ (тивмерĕм ачана, хĕрхентĕм, ҫунтармарăм), Маловпа Желтухин отпускра, Лукин чирлекелет.

Кун кĕнекинчен.

Ҫурла, 19.

Ҫур ĕмĕр - хыҫра. Юратнă, шанчăклă мăшăрăм Римма Ильинична саламĕпе хавхаланса ĕҫе кайрăм. Виссарион Кожанов фотокорреспондент Вăрнартан редацин Хисеп грамотине тата ĕҫтешсен хут ҫине ҫырнă салам сăмахне илсе килчĕ. КПСС Вăрнар райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Василий Игнатьевич Романов тусăм киле телеграмма янă. Обкомпа Совмин грамоти пирки ҫӳлти картлашкасемпе кирлĕ ҫĕре ҫитерессишĕн никам та ҫине тăмарĕ, тарăхнипе хам та алă султăм.

Мистер Кольăна шухă ăйăр улăштарса пачĕҫ, «07-67 Чук» номерлĕ «Волга». Партин аслă комитечĕсем автомашинăсене чупу

вăхăчĕпе çĕнетсех тăраççĕ. Кивелме пуçланисене вара пирĕн йышшисене параççĕ. Обком автобазинче халĕ литература журналĕсен те «çĕнĕ Волга». Пире те эрнере пĕр кун усă куртараççĕ. Çав урхамахпа районсене тухса çӳретпĕр. Виçĕмкун Çĕмĕрлере, Вăрнарта пултăм.

Çурла, 20.

Кăнтăрлахи апат хыççăн редколлеги ларăвĕ ирттертĕм. 12 çынран 10-шĕ пулчĕç: А.В.Емельянов, Н.С.Дедушкин, В.О. Максимов-Ахун, А.П.Хусанкай, А.С.Артемьев, П.В.Афанасьев, В.О.Алагер, Н.Г.Григорьев, Г.Т.Терентьев тата В.П.Кузьмин - ертсе пыраканĕ. Тĕп редактор çук чухне те редколлеги членĕсем ларусене тăрăшсах хутшăнаççĕ.

Вĕçĕнче мана савăнăçлăн саламларĕç. Николай Григорьев ман çинчен кĕскен каларĕ, 50 çул тултарнă май «Тăван Атăл» журнал редакцийĕнчи тус-юлташсенчен Аркадий Лукин çырнă салам сăввине вуласа пачĕ:

«Юлташăмăр, тултартăн аллă:
Çыран, журнал та кăларан.
Çыравçă ĕçĕ - йывăр, паллă,
Маттур-çке эсĕ вăй-халран.

Хĕрӳ ĕçре - этемĕн чысĕ,
Сунатпăр иксĕлми вăй-хал.
Çĕн хайлавсен хисепĕ-йышĕ
Хунатăр çулсерен кал-кал.

Йышра çуралнă ырă туртăм
Çунатлантартăр кăмăлна.
Телей сунатпăр! Чаплă утăм!
Шевле çутаттăр пурнăçна!»



Унтан вăл писательсен Союзĕн правлени председательне Афанасьева сăмах пачĕ. Порфирий Васильевич манăн пултарулăха мухтаса правлени, партбюро тата профком ячĕпе салам адресĕ пачĕ, унта çапла каланă: *«Хисеплĕ Владимир Прокопьевич! Чăваш АССР писательсен Союзĕн правленийĕ, парти бюровĕ тата профсоюз комитечĕ Сире, «Тăван Атăл» журналăн тĕп редакторĕн заместительне тата çамрăк çыравçа, ылтăн юбилей ячĕпе хĕрӳллĕн саламлаççĕ, ĕçре тата пултарулăхра пысăк çитĕнӳсем тума çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хăват сунаççĕ. Пурнăçăрăн иккĕмĕш аллă çулĕ те яланах телейлĕ, ăнăçлă пултăр! Сире сума суса, Афанасьев, Семенов, Енĕш».*

Петĕр Ялгир мана 1958 çулта хăй патне райхаçата ĕçлеме илни, эпир пĕрле Вăрнарта мĕнле кĕрлеттерни çинчен хавхаланса каларĕ, ĕнерхи грамотăна пĕрремĕш редактор ячĕпе пачĕ, ман ятпа редакцие, киле янă телеграммăсене вуларĕ, Вăрнарти коллегăсем янă салампа паллаштарчĕ:

«Аллă!
Пурнăç çулĕ анлă.
Яланах çапла пул танлă.
Пул хăватлă,
Пул вăй-халлă.
Пĕрмаях пул
Ятлă-сумлă.
Сывă пул,
Телейлĕ пул,
Хаçатпа та туслă юл!

Михаил Васильев, Анатолий Степанов-Тускил, Григорий Михайлов-Илепер, Павел Кошкин, Татьяна Васильева тата ыт.те».

«Ялавран» Иван Лисаев ыра сăмах илсе килнĕ.

«Капкăнăн» 16-мĕш номерĕнче Валерий Николаев «Суккăр пыршă» шӳте пичетленĕ, унпа юнашар Георгий Яковлев художник шаржне тата сăвăллă салам вырнаçтарнă:

«Эс утă çултăн, вутă çуртăн,
Тăван хирте ыраш та выртăн.
Йĕпреçпеле Вăрнар енче,
Çӳрерĕн халăх ĕçĕнче,
Паян хавас кăмăлпалан
Калав та повесть калăплан.»

Сĕтел манăн яланхи пекех тап-таса. Юратмастăп хут купи айне пулма. Паян та çап-çутă. Çуттине-хĕрлине те лартман. Пух-

Владимир

КУЗЬМИНА

Эс утă çултан, вутă çултăм,
Тăван кирте ыраш та вырттăм.
Йĕпреçпалле Вăрнар енче.
Çурерĕн хапăх ĕçĕнче,
Паян хавас кăмăлпалан
Калав та повесть калăплан.

СУККĂР ПЫРШИ

Шӳт

Пĕррехинче Василий Васильевич сасартăк аптăраса ӳкрĕ: кăвапинчен аяларахран темĕн чак! чиксе ярттрĕ. Сехĕрленнипе çурăмĕ тăрăх сивĕ тар шăпăрах юхса анчĕ.

— Петре пуç, касаççĕ ĕнтĕ...

Ирне ирех вăл поликлиникăна туххса лăпăстатрĕ. Хырăмне хыпашласа, шалса, шаккаса, пуçса тĕрĕсленĕ хыççăн хирург аллисене саркаласа каларĕ те:

— Аппендикс тавраш çук. Нимен шухăшламасăрах кĕрлеттерсе çӳреме пултаратăр,— терĕ.

— Кансĕр-çке, тем чикет унта,— йынăшрĕ Василий Васильевич.

— Пустуй ипала çеç вăл,—лăплантарчĕ ăна хирург.— Тăвар ытлашши ĕнтĕ. Çавă канăçсарлантарать. Ку вăрă пирен енпе мар. Урологсем канашлăр.

Хирургĕпе урологĕ иккĕшĕ те пĕр пулĕмрен кун сиктерсе кышăмаççĕ-мĕн. Тепĕр куннех Василий Васильевич поликлиникăна пысăк шанчăкпа хыпăнса çитрĕ.

— Пăт çак ырăнта темĕн пур манăн, чиксе яртать те пĕркеленмимастăп та, — тухтăр куçĕнчен ыйтуллăн пăхрĕ вăл. — Хирург унта тăвар тулса ларнă, тет те...

— Пустуй ипала,—аллине лас! сулчĕ уролог. — Нимле тăвар та çук унта. Суккăр пырши тулса çитнĕ пулас та, çавă аса илтерет ĕнтĕ хăй пурри çинчен. Анчах, пирен енпе мар вăра ку ĕç.

Уйăх иртрĕ-и, иртмерĕ-и, пĕр хушă лăпланнă чир каллех сикке тухрĕ. Василий Васильевич тусĕймерĕ, каллех поликлиникăна чупрĕ.

— Çук, çук, пирĕн енпе мар ку. Урологăн тепĕр тĕрĕслемелле.— канаш пачĕ хирург.— Хăйăр пухăнма пултарнă сан унта.

Уролог та хăй шухăшĕнчен чакмарĕ:

— Вăраха тăсалнă аппендикс шыççинех пулмалла ку,— терĕ вĕсене катăрттаттарса.

Сыхлăх хуралçисемпе пуплевĕ пăхăтра, темшĕн-çке, ыратни кашнинчех лăпланнă пек туйăнать Василий Васильевича. Акă, халь те çакăн пекех пулчĕ: чипер ыратнă çĕртенех ыратма пăрахрĕ. Анчах килне çитре çеç, чирĕ каллех тăçтан муртан сиксе тухрĕ. Шалт хăшкалса çитрĕ этем. Çапах тӳсрĕ-ха вăл, иртсе кайса, лăпланасса кĕтре. Çук, иртмерĕ мур чире. Ниç-тăватă кунран каҫар аяккине сасартăк темĕн хытăх йăшна пуçларĕ, хырăм тепне анса çитсе, сылтăмалла ытканчĕ... Василий Васильевич сехри хăпнипе тӳрех телефон трубкине ярса тытрĕ, 03 номерне шăнкăравларĕ:

— Алю!— терĕ тарлă çамкине шăлкаласа. — «Васкавлă пулăшу»-и ку? Вилетĕп! Килĕр хăвăртрах.

Пелтернĕ адреспа çитнĕ фельдшер ăна çийĕнчех пульницăна лартса кайрĕ.

Дежурнăй врач ырăкне шашах паллана хирург пулчĕ.

— О-о, Василь Васильч! — хăйĕн тусне кĕтсе манĕ пек хавасланса кĕтсе илчĕ вăл чирлĕ çынна.— Пăхмасăрах пăллă сан чирӳ: суккăр пырши мар, тем тесен те, пĕр-пĕр шĕвĕр чул аккасать сан унта!..

Вăре чăтма çук хытă пăрса илнипе хуçланса ӳкнĕ Василий Васильевич пăлавма тытăнчĕ:

— Тур пулăрах маншăн,— терĕ вăл макăрса ярас пек хурлăн,— суккăр пырши-и унта е тăвар-хăйăр-чул куçи-и, — маншăн халь пурпĕрех: хăвăрах касăр та тасатăр, вилĕпрен çăлăр! Ой-ой-ой, ай-ай!

— Çук, пултараймастпăр касма, — тавăрчĕ ăна хирург нимпулман пек лăпкăн. — Пирен чир мар ку. Ыран килĕр. Ыран уролог пыщăнать...

Василий Васильевич тарăхнипе кăвакарсах кайрĕ.

— Эх, сăкчассем, хăвăр жир суккăр пыршăран та суккăртарах атемсем!.. — терĕ те, çӳлтен темле вăй пуснă пек, çĕрелле пăрахăн тĕпĕрĕласе анчĕ.

Владимир КУЗЬМИН.

ăннисем валли урăх çĕрте те ĕçмелли-çимеллипе авăнакан уяв сĕтелĕ пулмарĕ. Хама çапла кăна чысланăшăн чун-чĕререн кӳрентĕм. Хăйсем тем тĕрлĕ хисеплĕ ятсем, кăкăр тулли знаксем илсе тултарнă та... Менелник сĕтелĕ хушшине шăматкун киле чĕнтĕм. Ячĕшĕн тенĕ пек.

Юрать ман пĕртен-пĕр шанчăклă Союз пур - СССР журналисчĕсен Канашĕ. Менелник ячĕпе хама Хисеп грамотипе награĕлани çинчен «Журналистра» информаци вуларăм. Председателĕ - «Правда» хаçатăн редакторĕ В.Г.Афанасьев алă пуснă хаклă хут манăн журналистикăри 28 çулхи ĕçе ырă енчен çирĕплетсе парать.

18 сехетре, ĕç вĕçленсен, Николай Григорьевпа Аркадий Лукина икĕ енчен çавăтса, Шумилов урамĕнчи 37-мĕш çурта илсе килтĕм. Улттăмĕш хутри 132-мĕш хваттерте вĕри тутлă яшкапа, кукăльпе, панулмипе тĕп хуçаюшка Римма Ильинична хаваспа кĕтсе илчĕ. «Ыттисем тата ăçта?» - тесе ыйтрĕ те вăл, Аркадий Васильч ентешне шӳтлĕн хуравларĕ: «Çăва патĕнче». Манăн темшĕн паян çак ачасемпе кăна савăнса ĕçес килчĕ. Мăшăрăм кăмăллăн хăналарĕ. Лукин хăйĕн салам сăввине пăхмасăр каларĕ. Этем йĕркиллех пуçларăмăр çуралнă куна паллă тума.

Çурла, 21.

Профсоюз путевкине туянса, Григорьевпа Лукина «Кувшинский» кану çуртне çурмалла пайласа канма-ĕçлеме яратăп. Унччен, тунтикунран, Лукинпа Ялгире журнал çырăнтарма районсене эрнелĕх ăсататăп.

«Капкăн» редакторĕ Николаев мана çуралнă кун ячĕпе саламлама пычĕ те, чылай калаçса лартăмăр. «Ху малтан çирĕп алăра тытнă ачусем халĕ хăвна тавăраççĕ, «Капкăн библиотекинче» тухмалли кĕнекӳне хирĕçлесе сасăлаççĕ, çав ĕçе йăлтах икĕпитлĕ Николай Иванов йĕркелесе пырать», - терĕ.

Çурла, 22, шăматкун.

Менелник сĕтелĕ килте хатĕр. Сĕтел пуçĕнче пĕр купа телеграмма, тус-юлташсем манмаççĕ: Йĕпреçри «Çĕнтерӳшĕн» хаçат ачисем, ЧАССР журналистсен Союзĕн правленийĕ, Краснодонти Иван Захаров шахтер, Саранскри Михаил Имяреков писатель, ученăй, Грузири Потирен Радик Ковский подполковник, республика прокурорĕн заместителĕ Амвросий Овчинников, Минскри Владимир Яковлев музыкант, Вăрнарти «Сельхозтехника» управляющийĕ Федор Пчелов, Вăрнар районĕнчи «Янгорчино» колхоз председателĕ Георгий Андреев...

Тырă выраççипе тата патшалăха сутассипе республикăра чрезвычайлă вăхăт. КПСС обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Илья Павлович Прокопьев ял райкомĕсене ертсе пыракансене аякка тухма чарнă. Çавăнпа Романов Шупашкара хăнана килеймерĕ, пропагандăпа агитаци пайĕн заведующине Степанова райкомпа райĕçтăвкомĕн салам адресне алăран пама ятарласа янă. Вăрманкас ачи ăна хăнасем умĕнче вуласа пачĕ:

«Уважаемый Владимир Прокопьевич!

В торжественный день Вашего юбилея — 50-летия со дня рождения примите самые искренние приветствия и сердечные поздравления от Вурнарского райкома КПСС и исполкома районного Совета народных депутатов.

Свою активную литературную деятельность Вы начали в 1958 году литературным сотрудником районной газеты, затем работали заведующим отделом партийной жизни. Благодаря своему добросовестному труду, искренности и сердечности Вы заслужили авторитет и уважение среди сотрудников газеты и трудящихся района.

С 1965 года Вы работали в редакции Ибресинской районной газеты, в настоящее время работаете заместителем главного редактора журнала «Тăван Атăл». Находясь на этом ответственном посту Вы свои знания, силу и жизненный опыт направляете на мобилизацию трудящихся республики на выполнение решений XXVII сьезда партии, последующих пленумов ЦК КПСС. Для Вас характерны обьективный подход к оценке достигнутого и забота о разрешении насущных проблем, твердая позиция деятеля литературы социалистического реализма. В Ваших произведениях ясно просматривается чуткое, доброжелательное отношение к людям, забота о сохранении богатства родной природы, они органически переплетаются с жизнью тружеников леса.

Вурнарский райком КПСС и исполком районного Совета народных депутатов высоко ценят Ваш вклад в деле дальнейшего ускорения социально-экономического развития и перестройки народного хозяйства, Ваше трудолюбие и личную скромность.

Желаем Вам большого личного счастья, долгих лет жизни, новых успехов на благо советского народа».

Пирĕн район ман ĕçе çапла хак пани кăмăла çĕклентерчĕ.

Çурла, 26.

Чăвашрадио «Тăван Атăла» хăнана чĕнет. Передача валли

материалсем тата çынсем тупса хатĕрлерĕм. Петр Андреев çырса илчĕ. 23 минутлăх. Вырсарникун параççĕ.

Унччен ытти журнал редакторĕсемпе пĕрле телевиденире тухса калаçрăм - журнал ытларах сарасси пиркиех.

Магазинсенче кăлпасси аран шыраса тупрăм, «останкинская» текеннине виçĕ талонпа туянтăм.

Каллех классиксен библиотекишĕн çапăçаççĕ. Мана та Салтыков-Щедрин, Бунин, Горбатов, Гюго пуххисем çакланчĕç.

Çурла, 31.

Желтухин иртнĕ эрнере ĕçе тухрĕ. Паян тĕп редактор та хăйĕн пӳлĕмне уçса кĕчĕ. Ыран Малов коридорта курăнмалла. Григорьев «Кувшинкăран» каçрĕ, ун вырăнне Лукин вĕçтерчĕ. Ăна Агиверĕн пьесине редакцилеме хушрăм.

Таллеров приказпа Аркадий Васильча проза редакторĕ, Герман Николайча публицистикăпа очерк тата литература критики редакторĕ пулма куçарчĕ. Ман сĕнӳ тинех пурнăçа кĕчĕ.

«Тăван Атăлта» пичетленнĕ «Юрату кăварĕ» повеçшĕн 878 тенкĕ гонорар илтĕм (1310 лартнă - ытти тытăннă).

Юпа, 15.

Авăн уйăхĕн 16-мĕшĕпе юпан 10-мĕшĕ хушшинче Пицундăри (Грузи-Абхази) пултарулăх çуртĕнче арăмпа кантăмăр. Литература фончĕн Чăвашри директорĕ Виталий Енĕш çунакан путевка панăччĕ. Чылай писателе куртăм. Тутарсемпе пушкăртсем пĕр-пĕринпе питĕ туслă, эртеллешсе пурăнаççĕ, çӳреççĕ. Пирĕн писательсем вара пĕрне-пĕри чĕрĕлле çисе яманни çеç. Ытла чухăнла выçлăх чирĕ хавшатать вĕсен хаяр чĕрисене.

Пĕр кун маларах ĕçе тухрăм. Эп çук чухне Юрий Айдаша литсотрудника илнĕ. Лукин отпуска тухнă. Ун вырăнне каллех Ялгир ĕçлет. Таллеров Петр Алексеевичăн ĕç меслечĕпе кăмăллах мар. Ăçта та пулин журнал сарас ыйтупа ярсан, вăл «Ялава» ытларах пропагандăлать тенине илтнĕччĕ. Чăнах иккен. Икĕ хаспатин тарçи.

Чăвашгиз директорне Краснова (Георгий Краснова мар) пенсие ăсатнă. Ун вырăнне обкомăн культура пайĕнче инструкторта ĕçлекен Иван Дмитриевич Тимофеев-Вутлана куçарнă.

Лаврентий Васильевич калать: «Чирлетĕп. Ывăнтăм ĕçлесе. Çавăнпа парти обкомĕн идеологи секретарьне Леонид Яковлевич Тянгова редактортан тата партбюро секретарĕн ĕçĕсенчен хăтарма заявлени кайса патăм».

Юпа, 29.

Партбюро секретарьне Юрий Семенова суйларӑмӑр. Порфирий Афанасьева та бюрона кӗртрӗмӗр.

Пирӗн журналсен («Тӑван Атӑл», «Ялав») пӗрлешӳллӗ профком председателӗ пулма Герман Желтухина суйларӗҫ.

Чӳк, 12.

Вунӑ кун чирленӗ хыҫҫӑн, тӗп редактор ӗҫе тухрӗ.

Чӳк, 25.

Горький облаҫӗпе Чӑваш АССР литературипе искусство кунӗсем пуҫланчӗҫ. Уяв тӗлне эпир «Тӑван Атӑлӑн» ятарлӑ номӗрне (11) кӑлартӑмӑр. Уншӑн ытларах хам тӑрӑшрӑм. Килти архив материалӗсене те хӗрхенмерӗм - Горькире вӗреннӗ чухне пухнисене. Кайран никам та ырӑпа асӑнас ҫук-ха та... Куркаланӑ унашкаллине.

Туслӑх уявӗ уҫӑлнӑ кун Чӑваш патшалӑх музыка театрӗнче вӑйлӑ концерт пулчӗ. «Чӑваш обществин мӗнпур чечекӗ пухӑннӑ, пӗтӗм хуҫа-пуҫлӑх - пединститут ачисем, пӗрле вӗреннӗскерсем», - тет мӑшӑрӑм.

Раштав, 18.

Ӗнер республика 2-мӗш пульницинче (партстационарта) Таллеровпа тӗл пулса калаҫрӑм. Ҫитес ҫулӑн 3-мӗш номӗрне кӑтартрӑм, макетне ӗнтӗ. Мана вӑл ҫыру пачӗ. Ҫыруне паян П.В.Афанасьева алӑран кайса тыттартӑм. Председатель вуласа пӑхрӗ те, ыйтать: «Сана вӑл кунта ҫырни пирки каларӗ-и?» «Ҫук, каламан, анчах эпӗ вӑл мӗн ҫинчен ҫырнине вуламасӑрах чухлатӑп, мӗншӗн тесен, питӗ нумай ҫырнӑ». Апла пулсан, сан шутупа, кама главнӑй редактор тумалла?» «Ҫамрӑксенчен илсен, Николай Максимова ҫитекенни ҫук, биографийӗ те нимле тасамарлӑхпа вараланман унӑн; ватӑраххисенчен илсен, Анатолий Емельянов пултармалла». Порфирий Васильевич: «Анатолий Викторовича хирӗҫ каллех кӑшкӑрма пултараҫҫӗ, ҫитменнине ватӑлса пырать тата эсӗ Максимовпа хӑйпе калаҫнӑ-и? Анчахрах профессионала кайрӗ те, килӗшет-и вӑл?» «Эпӗ унӑн шухӑшне витӗр курса туятӑп: килӗшет. Малашлӑха пӑхса ӗҫлемелли редактор. Пултарулӑх ӗҫӗнче унта правленинчинчен ҫӑмӑлрах». «Мӗнле пулать-ха, калаҫса пӑхӑпӑр ҫӳлте. Тата тепӗр ыйту: обкомран Юхма Мишшине сирӗн редколлеги составне кӗртме ыйтаҫҫӗ. Хӑй ҫапла тума ыйтнӑ ӗнтӗ. Эс редакци ячӗпе хут ҫырса кил. Паян правлени ларӑвӗ, унта ҫирӗплететпӗр». «Лаврентий Васильчпа калаҫса татӑлмалла мар-и?» «Унпа калаҫнӑ, вӑл пӗлет ун пирки».

Хушнине çапла турăм та, 14 сехет тĕлне пытăм. Правлени членĕсем пухăнчĕç: П.В. Афанасьев, А.В. Емельянов, В.Г. Игнатьев, Ип.И. Иванов, В.А. Ильина-Захарова, З.В. Романова, Ю.С. Семенов тата, укол хыççăн, А.В. Лукин çитрĕ.

Юхмана редколлегине кĕртмерĕç. Емельянов манран «Эсир ку ыйтăва иртнĕ редколлегире пăхса тухнă-и?» - тесе ыйтрĕ. Эпĕ каларăм: «Эсир, Анатолий Викторович, хăвăр та пулнă иртнĕ ларура, мĕн вăлтатăр, редколлегире пăхса тухмалли ыйту та мар вăл, правлени компетенцийĕпе татса памалли ыйту». «Официаллă хутне кам алă пуснă тата кун пирки тĕп редактор пĕлет-и?» - ыйтрĕ Игнатьев. «Кузьмин алă пуснă, Таллеров пĕлет», - ăнлантарчĕ Афанасьев. Лукинпа Гордеев тата Емельянов редколлегине А.В.Малова кĕртесшĕн пулчĕç. Юлашкинчен Порфирий Васильевич «Ыйтăва татса пама Таллеров пульницаран тухиччен тăхтас», - терĕ. Пурте килĕшрĕç. Юхма ыйтăвĕ çунса кайни паллă пулчĕ.

1988 çул.

Ĕç кĕнекинчен.

Кăрлач, 4.

Лаврентий Васильевич ĕçе тухрĕ. Иртнĕ çул уншăн ĕç çулĕ пулмарĕ, 5 уйăхсемех чирлесе-канса ирттерчĕ. Унсăрăнах журналне вăйлатса пыма май килтеретпĕр. Хăй çук чухне журналне тапăнасшăн та, пире пусахласшăн та. Тĕп редакторшăн мана алă пустармаççĕ, тĕп редактор укçинчен мана хушса тӳлемеççĕ...

Аркадий Лукин та пĕр уйăх чирлерĕ. Ун хăть, поэзи пайĕн, ытла нушах мар, çапах та корректура вулакан кирлĕ, ыттисене йывăра килет.

Кăрлач, 6.

Писательсен Союзĕн правленийĕнче çамрăк çыравçăсен канашлăвĕ пулчĕ. Таллеров мана та унта ячĕ. «Ялавран» Сементер хăй пынă.

Республикăри пултарулăх çамрăкĕсен координаци центрĕ (Атнер Хусанкай ертсе пырать) журналсен штатра тăман редколлегийĕсене туса хунă. Çамрăксен тепĕр ушкăнĕ, уншăн кĕвĕçсе, çăхавлă çыру çырнă. Çамрăклах пĕр-пĕрне кăшлама хăнăхаççĕ вĕт! Порфирий Афанасьев çавна вуласа пачĕ те, тытăçса ӳкрĕç хайхисем. Икĕ ушкăн - икĕ çил-тăвăл. Тĕлĕнтерет, литературăна тин çеç тухма пуçланă-ха хăйсем, анчах, ушкăнланса кайса, влаç, ирĕклĕх çĕнсе илессишĕн харкашу пуçарнă. Пĕри теприн-

чен усалтарах, шăртлăрах. Кирилл Кириллов критикпа Юлия Силэм прозаик сăмахĕсем кăна килĕшрĕç. Вĕсен пуçĕнче ăслă, тутă тĕшĕ пур. Ыттисен чылайăшĕн хывăх вĕçет. Амбици тени пысăк. Арсений Тарасов, издательствăна ĕçлеме тинтерех çеç-ха кĕнĕ «максималист», тăчĕ те хăйĕн калавĕсене чи чаплисем тесе мухтарĕ те хучĕ, вĕсене журналсем пичетлемеççĕ, тесе пире ятлама пуçларĕ. Хăй калавĕсене редакцие тăратман та.

Виçĕ сехет хушши тапăçнă хыççăн тепĕр çур сехет редколлегине суйларĕç. Вуннăмĕш номĕре халĕ, эпир пулăшнипе, вĕсем хăйсен вăйĕпе кăлараççĕ.

Кăрлач, 20.

Василий Осипович Алагере пытартăмăр. Правлени мана пытару комиссине ертсе пымалла тунăччĕ. Эпĕ митинг ирттерме, сăмах калама хатĕрленнĕччĕ. Хăйсен килĕнче чухне йышăнăва улăштарчĕç. Сывпуллашма обком секретарĕ Л.Я. Тянгов, культура пайĕн заведующийĕ О.Г.Денисова, унăн инструкторĕ С.А. Александров пынăччĕ. Денисова хурлăхлă митинга ертсе пыма правлени председательне П.В.Афанасьева хăйнех хушрĕ. «Эпĕ пĕрре ирĕклĕрех пуласшăнччĕ те», - терĕ те, килĕшрĕ вăл. Мĕн тăвăн, хуçасенчен иртейместĕн.

Пирĕн редколлеги членĕ, «Тăван Атăл» альманахăн редакторĕ пулнă, утмăл çул ытла тăван чăваш литературине малалла аталантарса чечеклентерессишĕн ырми-канми вăй хунă писатель-коммунист 83 çула кайсан пиртен уйрăлчĕ. Вăл журнал ĕçне çине тăрса хутшăнатчĕ, нумай произведени вулатчĕ, авторĕсемпе калаçатчĕ, вĕсене пулăшатчĕ, çамрăк çыравçăсене хисеплетчĕ.

Лаврентий Таллеров ăна юлашки çула ăсатма килне те пулин темшĕн пымарĕ. Чеерех писательсем масар çине каймарĕç, кайран ытти юххасемпе Б.Хмельницкий урамĕнчи «Золотые дары» столовăй-кафене вăхăтра шавлăн персе çитрĕç. Пытару вăхăтĕнче Аркадий Малов, чăваш халăх артисчĕ Николай Степанов, Юрий Семенов, Порфирий Афанасьев, Валентин Бурнаевский, Новосибирскран килнĕ тăванĕ, ученăй, сăмах каларĕç. Парти обкомĕн инструкторĕ Станислав Александров пирĕнпе танах кĕреçепе, лумпа ĕçлерĕ.

Алагере пытарнă çĕрте те Михаил Юхман паян «Литгазетăра» пичетленнĕ «Брошенное поле» шавлă статйи пирки калаçу пычĕ. «Унта автор Чăваш АССР писательсен Союзне, хăй те унта тăрать пулин те, тĕнче умĕнче намăс кăтартнă, мĕнпур тарăхăвне çав Союза ертсе пынă, халĕ ертсе пыракансем çине

купаланă», - тесе мăкăртатаççĕ пуçлăхсем. Тĕрĕссипе, чăваш писателĕсем хушшинче юлашки çулсенче пыракан вăрçă, ашкăнчăклăх, обкомпа Мускав урлă çĕкленĕ пултарулăх, аскăнчăклăх, ушкăнлăх пуçарулăхпа çырав ĕçне, çыравçăсен пурнăçне мĕнле танмарлăх, йывăрлăх, нишлĕх танатине путарни çинчен Михаил Николаевич уççăнах çырса кăтартнă. Пурте тĕрĕс унта. Вырăнти влаççем пуçран шăлса çеç пурăнаççĕ литература «генералĕсене», вĕсемпе пĕр юрă юрлаççĕ - лăплантару, çураçу юрри. Хăйсен ятне Союз шайĕнче вараланăшăн, паллах, вĕсем Юхмана халех Атăлра юхтарма хатĕр, анчах... хăраççĕ унран. Семен Элкер, Петĕр Хусанкай, Ухсай Яккăвĕ хыççăн «чи аслисене» те çамкаран тӳнккеме пултаракан авторитетлă писатель тинех çуралчĕ. Тупăнчĕ. Унăн тукмакки Партин аслă нухайккинчен те вăйлăрах. Ахальтен мар ĕнтĕ, виле патĕнче те Денисова, Тянгова аяккарах чĕнсе, калать: «Хаçата хуравличчен, Союзра калаçар-ха». Кăрлачăн 22-мĕшĕнче статьяна писательсен пухăвĕнче сӳтсе явма килĕшрĕç. Юхман сасси тата вăйланать.

Нарăс, 9.

Вăрнар районĕнчи Хурăнсур Çармăс библиотекин заведующийĕ Иван Константинович Иванов ман пата ĕç пӳлĕмне кĕчĕ. Пирĕн ялта унăн литературăна юратакансен «Ентеш» клубĕ ĕçлет. Çав клуб манăн «Тăван Атăлта» пичетленнĕ «Юрату кăварĕ» повĕçе сӳтсе явассине йĕркеленĕ. Ăна нумай çын уйрăммăн та, фермăсенче те, трактор паркĕнче те, ушкăнпа ытти вырăнсенче те вуланă. Иванов уйрăм сыпăкĕсене радиопа та панă, вăтам шкулта ун тăрăх аслă классенче вĕренекенсем сочинени те çырнă.

Культура çуртне халăх лăк тулнăччĕ. Паянхи ял пурнăçне, ял çыннин кун-çулне, юратăвне вулакан писатель сăнарлăхĕпе илемлĕн курма пултарнă, темелле. Вунтăватă çын тухса калаçрĕ: ваттинчен пуçласа шкул ачи таранах.

Пурнăçра кирлĕ, тĕрĕс пурăнма вĕрентекен усăллă произведени тесе хак пачĕ Çĕрпел ял Советне кĕрекен виçĕ ял халăхĕ «Юрату кăварне».

Ачаранпах хаçат-журналпа туслă Иванов çакăн çинчен тата «Ентеш» клуб тăвакан ытти усăллă ĕç пирки тĕплĕн çырса «Коммунизм ялавне» илсе пынă. Литература материалĕсемпе ĕçлекен Иван Яковлев пӳлĕмĕнче каласса ларнă хушăра унта Семенов редактор пырса кĕнĕ. Сăмах май Иван Константинович, унран пулăшу кĕтсе-ши, хăйĕн çулçӳрев сăлтавне пĕлтернĕ. Демьян Филиппович ялкор хучĕсене алла илсе пăхкаларĕ тет те, «А-а,

Кузьмин çинчен-и? Классиксем пирки те пичетлеме вырăн çитмест», - тесе хут карçинкки еннелле тĕллесе кăтартрĕ, тет. «Эсир хăвăр вуланă-и вăл повĕçе?» - ыйтнă Иванов. «Манăн хаçат материалĕсене вулама та вăхăт çитмест, обком бюровне васкатăп», - тесе тухса лаплаттарчĕ, тет. «Пуçлăх хыççăн хумханса юлнă сивĕ сывлăш кăкăра пӳлсе лартрĕ. Унпа хăвăр калаçса пăхмастăр-ши» - тет кӳреннĕ Иван Константинович.

Семенов ăна пурпĕрех кун кăтартмассине пĕлсе, эпĕ тусăма хăйĕн хайлавне райхаçатра усă курма сĕнтĕм, Михаил Васильев редактор патне Вăрнара шăнкăравларăм. «Çĕнтерӳ çулĕнче» Ивановăн статйи 9 пин экземплярпа района саланчĕ.

Нарăс, 15.

Лаврентий Васильевич каллех чирленĕ. Мана виçмине Союз правленийĕнче журнал отчетне тума хушрĕç. Хатĕрлентĕм.

Нарăс, 17.

Кăнтăрла иртни иккĕре лару пуçланчĕ. 23 минут калаçрăм. Акă мĕн çинчен:

«ТĂВАН АТĂЛ» ЖУРНАЛ РЕДАКЦИЙĔН ЧĂВАШ АССР ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔН ПРАВЛЕНИНЕ 1988 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 17-МĔШĔНЧЕ ТУСА ПАНĂ ОТЧЕЧĔ

Пурнăçпа тачă çыхăнса социализмла чăнлăха тĕрĕс те илемлĕ сăнласа парас, çĕннине, лайăххине çулăмлăн та хаваслăн уçса кăтартас, халăха малалла утма чăрмантараканнине çивĕччĕн питлес тĕллевпе туса пырать «Тăван Атăл» хăйĕн кулленхи ĕçне.

Партии XXVI сьезчĕ йышăннисене ăнăçлă пурнăçлас енĕпе туса хатĕрленĕ редакцин малашлăх планĕ тăрăх журналта писательсемпе журналистсен, партипе совет органĕсенче, наукăра ĕçлекенсен, производство новаторĕсен очеркĕсемпе публицистикăллă, анализлă статйисем тăтăшах пичетленсе пычĕç. Вĕсен шутĕнче: КПСС Чăваш обкомĕн пĕрремĕш секретарĕн И.П. Прокопьевăн «Çĕнĕ çитĕнусем патне», КПСС Йĕпреç райкомĕн пĕрремĕш секретарĕн Н.А.Сергеевăн «Тĕллевсем патне - çĕнĕлле», экономика наукисен кандидачĕн Л.В.Кураковăн «Бригадăра - тĕп вăй», «Техника прогресĕ тата ĕççынни», Чăваш АССР çутĕç министрĕн А.Никитинăн «Шкул ĕçне - пурнăç ыйтнă шая» статйисем.

Виçĕмçул редакци Канаш районĕнчи ĕççыннисемпе тата «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство

пĕрлешĕвĕнче ĕçлекенсемпе творчествăлла туслăх килĕшĕвĕ пуç-арса ячĕ. Ун хыççăн эпир вĕсем патĕнче эртелпе те, пĕччен-иккĕн те час-часах пулма пуçларăмăр. Вĕсен ĕçне-хĕлне, нуши-асапне тарăнрах, анлăрах пĕлни çĕнĕ произведенисем çырма пулăшать. Çавна май трактор завочĕ тăвакансемпе ял ĕçченĕсен хĕрӳ пурнăçĕпе пуласлăхĕ, татса паман проблемăсем çинчен литература посчĕсем пĕлтерсе тăнине пичетлесех пыратпăр. Анчах та ку енĕпе редакцин оперативлăх, системăлăх çитсех каймасть-ха. Шефла пулăшу ĕçне малашне татах вăйлатмалла.

Республикăри ĕççыннисем партии XXVII сьезчĕн йышăнăвĕсе-не тĕпе хурса пилĕкçуллăха тултарассишĕн епле кĕрешнине, умри чăрмавсене мĕнле сирсе пынине журнал авторĕсем уçăмлăн, кри-тикăлла туйăмпа çыраççĕ.

Иртнĕ çулта КПСС обкомĕн секретарĕ А.М.Леонтьев «Çĕре упрар» статья пичетлерĕ, Чăваш АССР Государство агропромыш-ленность комитечĕн председателĕн заместителĕ В.Ф.Григорьев «Тенкĕ пусран пухăнать» ятпа журналта интервью пачĕ. Шу-пашкар районĕнчи хуçалăхсенче механизаторсемпе выльăх-чĕрлĕх пăхакансен ĕçпе йăла тата кану условийĕсене пурнăç ыйтнă шайра йĕркелесе пулăрмалла çитĕнусем туни, ял культури ӳсни çинчен пĕлтĕрхи иккĕмĕш номĕрте Владимир Кузьминăн «Кăмăла кура кăмăл» очеркĕ тухрĕ.

Аслă Октябрь юбилейĕн çулĕнче «Тăван Атăл» совет стройĕн мĕнпур ырă майĕсемпе усă курса, КПССăн ленинла наци полити-кине çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе, аслă вырăс халăхĕпе тăванла ытти халăхсем пулăшса пынипе Чăваш çĕршывĕ Совет влаçĕн çулĕсен-че хăватлă аталаннă культурăллă социализмла республика пулса тăни, унăн паянхи çитĕнĕвĕсемпе малашлăхĕ, паттăр çыннисем çинчен материалсем тăтăшах пичетлесе пычĕ. Вăл шутра: КПСС обкомĕн пĕрремĕш секретарĕн И.П.Прокопьевăн, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕн А.П.Петровăн статйисем, истори наукисен кандидачĕсен А.Изоркинпа Н.Его-ровăн очеркĕсем тата ыт. те. Октябрь çĕнтерĕвĕсене хӳтĕлесе хăварассишĕн, çĕнĕ пурнăç тума чăрмантаракан вăрă-хураха çĕнтерсе тĕп тăвассишĕн чăвашăн хастар çыннисем мĕнле кĕреш-нине журналта пичетленĕ А.Савельевпа В.Игнатьевăн «Кăвак хуппи уçăлсан» тата Н.Максимовăн «Синкер» романĕсенче яр-уççăн куратпăр. Аслă Октябрь тивлечĕпе çитĕннĕ чăваш халăх ывăлĕ хăйĕн паттăрлăхĕпе тĕнчене тĕлĕнтернĕ Андриян Нико-лаев космонавт пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен К.Петров «Сенкер

çăлтăр» роман çырнăччĕ. Вăл пĕлтĕр «Тăван Атăлта» пичетленчĕ. Вулакансем ку произведенисене ăшшăн кĕтсе илчĕç.

Журнал редколлегийĕ, редакцире ĕçлекенсем çине тăрса тăрăшнине пула, «Тăван Атăл» пурнăç уттипе утма тăрăшать. Çĕнетÿ, хăвăртлату, пахалăх ыйтăвĕсене кашни номертех çутатать. Çĕнĕлĕх, улшăну тапхăрĕ хăйĕн геройĕсене çуратать. Вулакансем вĕсемпе А.Емельяновăн «Чир» тата «Вучах», В.Овчаровăн «Ăнăçу çулĕ», Г.Желтухинăн «Вĕçленмен калаçу», И.Лисаевăн «Паян мар, ыранах» очеркĕсенче, В.Григорьев-Енĕшĕн «Вичкĕн куçпа» сатирăлла хайлавĕнче, В.Алендейĕн «Ылмат», В.Кузьминăн «Юрату кăварĕ» повеçĕсенче, П.Афанасьевăн «Хĕвел хапхи» поэминче тата ытти çыравçăсен пĕлтĕр «Тăван Атăлта» пичетленнĕ хăш-пĕр произведенийĕсенче паллашма пултарчĕç.

Ăста тишкерÿçĕ, çивĕч чĕлхеллĕ çыравçă, шухăшлавçă хăйĕн витĕмлĕ хайлавĕпе вулакан чĕри патне тĕл çитсе унăн ăшĕнче вут-çулăм чĕртме мĕнле пултарнине эпир Анатолий Емельяновăн «Вучах» очеркне пичетлесе питĕ яр-уççăн курса ĕнентĕмĕр. Ялхулара пулнă май ялан çынсем çав произведенипе унăн авторне асăнаççĕ, очеркпа писателĕн уйрăлми пĕрлĕхне, хăватне палăртма тăрăшаççĕ. Редакцие килнĕ çырусенче те çавнашкал шухăшах. Ĕ нер кăна ку очерк пирки Элĕкрен хулана çыру килчĕ. Унăн авторĕ вулакансен шухăшне пĕтĕмлетсе çапла ыйтать:

«Тăван Атăл» журналăн çитес çывăх номерĕсенчен пĕринче Анатолий Емельяновăн çĕнĕлле шухăшласа, çĕнĕлле ĕçленĕ вăхăтра хăй курса мĕн илтни, çынсен психологийĕ еплерех улшăнса пыни çинчен çырнă тепĕр очеркне вуласшăн.»

Вулакан журналтан мĕн ыйтни паллă ĕнтĕ: ăна пурнăç кĕрешĕвĕнчи çĕнтеруллĕ пулăм-туйăм, хумхантаракан хĕрÿ, илемлĕ чĕлхепе çырнă вăйлă произведени кирлĕ. Шел те, анчах «Вучах» пек вулакана чĕртсе хĕмлентерекен идеологи ахахĕсем сахалтарах паратпăрха. Мĕншĕн тесен эпир хамăр çав çулăмпа çунаймастпăр. Пирĕн, тен, хамăрăн вучахсем кĕллене пуçланă. Перестройка тавра кĕвĕçуллĕ, наркăмăшлă такмаксем каласа ташланипе çуралмасть пуль çав вăйлă япала. Васкама кирлĕ мар, перестройка пирки тĕплĕн шухăшласа, асăрханса çырас пулать, тесе хăйсене хăйсем лăпкăлăх шлепкипе хупласа хунисем те пурнăç хÿрине тăрса юлаççĕ.

Çĕнĕлĕх сывлăшĕпе вулакана уçăлтаракан тин кăна тухнă произведенисене ятарласа çапса хуçас тĕллевпе хăтланакансен те хăйсен Емельянов «Вучахĕн» ăшшине тăмалла пуль, çав хĕрÿлĕхпе хăйсен пултарулăх вăйне вулакан патне çитермелле пуль.

Редакци сиртен, ятлă-сумлă писательсенчен, çамрăксенчен хальхи саманана тивĕçлĕ, халăх чăннипех ыйтакан, социализм чăнлăхĕн ыйтăвĕсене шайлашуллă вăйлă та илемлĕ произведенисем, публицистикăллă çивĕч статьясем кĕтет.

Вулакан пиртен чăн-чăн коммунист, кĕрешӳçĕ-паттăр çын сăнарĕсене кĕтет. Патриотизм, интернациллĕ воспитани ыйтăвĕсемпе çырнă япаласем ыйтать. Анчах та эпир иртнĕ çулта ку тĕлĕшпе илемлĕ произведенисем сахалтарах пичетлерĕмĕр. Юхма Мишшин «Пурнăç кашнинех хăйне май тикĕслет», Владимир Кузьминăн «Юрату кăварĕ», Валентина Ильинан «Йӳнеçӳллĕ çын» повеçĕсемсĕр, Георгий Красновăн «Пуççăр юланутсен эскадронĕ» романĕсĕр пуçне урăх мухтанмалли çукрах пулчĕ пĕлтĕр.

Совет çыннин пурнăç сăнарне нумай енлĕн кăтартакан, çынсем хушшинчи ырă мар енсене, йĕркене пăсакансене питлекен произведенисем пирĕн журналта юлашки вăхăтра чылай курăнкаларĕç темелле. Обществăна юрăхсăр пулăмсене хирĕç мĕнле кĕрешсе çынсене ырă туни çинчен заводсемпе фабрикăсенчен, колхозсемпе совхозсенчен килнĕ çырусене пичетлеме тăрăшатпăр. Интереслĕ, шухăшлаттаракан очерксемпе статьясем тухрĕç. Василий Петровăн «Пушар», «Каскăн» повеçĕсем, Анатолий Тимофеевăн «Хĕвелçаврăнăш», Геннадий Пласкинăн «Хĕр хевти», Денис Гордеевăн «Чĕкеç йăвине ан салатăр» повеçĕсем, Алексей Зайцевăн «Чĕчĕ Ваççи» камичĕ, КПСС XXVII сьезчĕн делегачĕн, Çĕмĕрлери автофургон комбинатĕнчи В.Столбова мастерăн «Çĕнĕлле пурăнатпăр, ĕçлетпĕр» статйи вулакансене уйрăмах килĕшнине эпир халăх хушшинчи тĕлпулусенче сахал мар илтме пултартăмăр.

Пĕлтĕр «Тăван Атăл» журнал страницисенче поэзи пысăк вырăн йышăнчĕ. Чи малтанах ку журналта виçĕ пысăк произведени: Юрий Айдашăн «Атнер» сăвăлла романĕ, Николай Теветкелĕн «Феникс кайăк», Порфирий Афанасьевăн «Хĕвел хапхи» поэмисем пичетленчĕç. Вĕсем хушшине Юрий Сементерĕн «Катюша» поэми те хĕсĕнчĕ. Ку сăвăлла произведенисене вулакансем те, критиксем те хак парса пăхниех пулмарĕ-ха, хăш-пĕр ларусенче сăмах хускатнисĕр пуçне. Эпир вара журнал çавăн пек пысăк хайлавсем пичетлесе кăларни пирĕн паянхи поэзи пĕр вырăнта тăманни, малалла талпăнни çинчен калать пулĕ, тетпĕр.

Чăн та, «Тăван Атăл» валли «Атнер» романа çуррине яхăн кĕскетмелле пулчĕ. Çавăнпа пирĕн вăхăтри геройсен Атнерăн, Илемпин, Выльскин сăнарĕсем вулакан куçĕ умне анлăнах тухса тăма пултарайманççĕ. Анчах роман авторĕ халăхăн анлă пурнăçне çутатса

пама тĕллев лартни куç кĕретех курăнать. Кунта интеллигенци, рабочи, хресчен ĕçне-хĕлне, пурнăçне куратпăр эпир.

«Феникс кайăк» поэма та паянхи пурнăçпа çыхăннă. Унăн геройĕсем - вăрçă вăхăтĕнчи, вăрçă хыççăнхи ял çамрăкĕсем. Ку поэмăна нумай кĕскетмен, çавăнпа та вулакансем хăйсемех сăмах мĕн çинчен пынине туйса илме пултарĕç.

«Хĕвел хапхи» поэмăри ĕçсем пĕтĕмпех паянхи пурнăçпа çыхăннă. Ку хайлав - авторăн пултарулăх пуянлăхĕ.

Пĕр çулта çакăн пек сăвăлла виçĕ пысăк произведени пичетлесе кăларма, паллах, журнала йывăр. Малалла кун пирки тĕплĕнрех шухăшласа пăхмалла. Пирĕн ытти поэтсем çинчен те манма юрамасть.

Çăмăл килмерĕ пулин те, пĕлтĕр журнал страницисенче ытти поэтсем те сахал мар вырăн йышăнчĕç. Ку шута В.Кервенĕн «Курса тăранайми сăнсем», Г.Илеперĕн «Мирлĕ пурнăç сана, çĕр-анне», Г.Айхин «Çĕнĕ сăвăсем», К.Воробьевăн «Çăкăр», В.Алендейĕн «Çĕнтерӳ çулĕпе», Г.Орловăн «Манăçми», С.Асаматăн «Çăлкуç тасалăхĕ», А.Кăлканăн «Çĕнĕ сăвăсем», М.Сениэлĕн «Лирика», Г.Кузнецовăн «Çĕршыв-аннемĕршĕн», П.Ялгирăн «Сулма алă утăмпа», А.Тимбайăн «Вырăнта тăмасть-çке пурнăç», Юхма Мишшин «Сан яту - ман юрату», Энтип Ваççин «Кĕске сăвăсем», В.Давыдов-Анатрин «Сыхлар, упрар çĕр-аннене», Г.Ефимовăн «Çĕнĕ ярăм - пĕр çаврăм», А.Смолинăн «Çаврăм», А.Лукинăн «Таса куçăмпа» ярăмĕсем пичетленчĕç.

Кусемсĕр пуçне В.Харитонов, Н.Кушманов, Ю.Петров, Туркай Валери, Г.Ирхи, Г.Юмарт, В.Ятрина, Л.Федорова, С.Баранова тата ытти авторсен сăввисем кун çути курнă.

Литература критикине вăйлатни те журналта иртнĕ çулта палăрмаллах сисĕнчĕ пуль, тетĕп. Леонид Волковăн «Поэзи витĕмлĕрех пултăрччĕ», Юрий Артемьевăн «Кайри мала, хуркайăксем» тата «Пурнăç утти ыйтать», Ипполит Ивановăн «Паянхи герой мĕнле курăнать-ха?», Кирилл Кирилловăн «Драма чăнлăхĕ» статйисем паянхи кун ыйтăвĕсене тӳррĕн те уççăн татса паракан чĕрĕ хайлавсем пулчĕç. «Куçару - пысăк ăсталăх» темăпа çавра сĕтел хушшинче çивĕч калаçу пулса иртрĕ. Вĕсем писательсене те, критиксене те, вулакансене те, паллах, шухăшлаттармасăр, хумхантармасăр тăма пултараймарĕç.

Çапах та литературоведени ыйтăвĕсемпе пурнăçри, паянхи чи кирлĕ те çивĕч проблемăсене илемлĕ литературăра мĕнле çутатни, коммунист, кĕрешӳçĕ сăнарне чăваш литературинче епле

уҫса пани, чӑваш романӗн юлашки ҫулсенчи аталанӑвӗ тата уйрӑм писательсен творчестви ҫинчен (юбилей кунӗсӗр пуҫне) тӗплӗн тишкерсе ҫырнӑ критикӑллӑ статьясем пичетлеймерӗмӗр журналта. Критиксем пирӗн ытларах тахҫанхине, йӑлӑхтарса ҫитернине сӑмах пӗрнине ҫине-ҫине ярса авӑртаҫҫӗ. Ҫӗнни патне темшӗн-ҫке пурин те алӑ ҫитмест. Критикӑллӑ статьясенче кирлӗ-кирлӗ мар ҫӗртенех пӗр-пӗрне тукмак парса илкелени те вӗсене тӗп шухӑшран аяккалла пӑрса ярать. Ҫавӑнпа тепӗр чухне, хӑшӗсене унашкал вырӑнсенчен хӑтӑлма сӗнсен редакцире, кӑмӑлсӑрлӑх ҫуралать вӗсен. Унашкал ан пултӑрччӗ малашне.

Журналӑн портфелӗ пуян. Ҫав пуянлӑха эпир иртнӗ ҫулсенче асӑрханса, тимлӗн вулакансем умне кӑларма тӑрӑшрӑмӑр. Хамӑрӑн ҫав пуянлӑх хуҫисене хавхалантарас тесе те шутларӑмӑр.

Редколлеги журналта пичетленнӗ чи лайӑх проза, поэзи, очеркпа публицистика тата литература критикин произведенийӗсемшӗн малашне кашни ҫул тӑватӑ преми (75-шер тенкӗ) тата вӗсен авторӗсене журнал премийӗн лауреачӗн дипломӗсем пама йышӑнчӗ. 1987 ҫулшӑн журнал лауреачӗсем «Чӗкеҫ йӑвине ан салатӑр» повесть (7 №) - авторӗ Денис Гордеев, «Хӗвел хапхи» поэмӑна (9-11 №№) ҫырнӑ Порфирий Афанасьев, «Чир» тата «Вучах» публицистикӑллӑ очерксемпе паларнӑ Анатолий Емельянов пулчӗҫ.

Юлашки вӑхӑтра пирӗн ҫӗршывра, ҫав хушӑра хамӑр республикӑра та революцилле курӑмлӑ улшӑнусем пулса иртеҫҫӗ. Ҫав паллӑ событисенчен эпир те аякра тӑрса юлма шутламастпӑр. Хамӑрӑн ӑшри шухӑш-туйӑма ырри енне ытларах сулӑнтарса ӗҫре ҫӗнӗлӗхсем тума тӑрӑшатпӑр. Коммунистсен партийӗ идеологи фронтӗнче тӑракансенчен ыйтнисене тӗпе хурса, КПСС Чӑваш обкомӗ писательсен Союзӗн ӗҫне малалла лайӑхлатас енӗпе йышӑннине шута илсе, журнал кӑларас ӗҫе тӗпрен лайӑхлатма шутларӑмӑр. Чи малтанах кашнин ответлӑхӗ ӳсме кирлӗ. Пайсен, секретариатӑн, тӗп редакторпа унӑн заместителӗн журналта пичетленекен материалсен идейӑлла шайне ӳстерессишӗн, чӗлхе илемлӗхне вӑйлатассишӗн, журналпа вулакансем хушшинчи ҫыхӑнӑва татах та анлӑрах ҫирӗплетессишӗн ҫине тӑрсах тӑрӑшмалла пулть. Ҫавна май эпир авторсемпе ӗҫлессине пысӑка хуратпӑр. Кашни пай хӑйӗн активӗпе кӑҫал тата ҫитес ҫулта пичетлемелли тӗп произведенисене палӑртса хучӗ. Вӗсене редакци ҫыннисемпе сӳтсе явнӑ хыҫҫӑн малашлӑх план туса хатӗрлерӗмӗр. Унччен пирӗн пӗр-пӗр писатель пуҫра ҫуралнӑ шухӑшне рекламӑна кӗрттерес йӑла хуҫаланатчӗ. Кӑҫалтан эпир ун-

ран хăпма шутларăмăр. Халĕ вулакансене сывлăш планĕпе мар, хамăр вуласа пăхнă алçырусен планĕпе кăна паллаштарса хавхалантарасшăн. Хальхи пурнăç çĕнĕлĕхĕпе, перестройкăпа тачă çыхăннă произведенисенчен Николай Максимовăн «Пурнăçри вырăн» романне вулакансем патне çитересшĕн. Произведени халăх умĕнче тăракан чылай кăткăс та çивĕч ыйтусене уççăнрах курма пулăшать. Трактор завочĕ тăвакансем наукăпа техника çитĕнĕвĕсене, перестройка ыйтăвĕсене пурнăç конвейерĕ çине çирĕп кĕртсе çĕршывшăн, халăхшăн питĕ усăллă пысăк ĕç туни çинчен калакан роман та черет кĕтсе выртать. Хальхи вăхăтра ял çыннин психологийĕ, унăн культура шайĕ илемленсе ӳстĕр тесе парти уйрăмах хытă тăрăшать. Çав анлă та кăткăс ĕçе пирĕн республикăри искусство ĕçченĕсемпе ял çыннисем пĕрлешсе туса пыни, илемлĕх çимĕçне мĕнле тăрăшса ӳстерни çинчен калакан повесть та вулакансем патне çитĕ. Паянхи пурнăç таппипе малалла çĕнтерсе утакан геройсемпе Анатолий Емельянов, Василий Алендей, Вениамин Тимаков, Виталий Енĕш, Василии Петров произведенийĕсенче паллашĕç вулакансем.

Çав вăхăтрах истори темине те аяккалла пăрса хăвармăпăр. Михаил Юхман чăваш халăх культуришĕн пĕтĕм вăй-халне, пĕлĕвне, сывлăхне хĕрхенмен паттăрсен пархатарлă пурнăçне илемлĕн сăнласа панă «Термен» романĕ тата Хветĕр Уярăн Шурча вăрçи умĕнхи çивĕч событисем çинчен калакан «Таркăн» роман сыпăкĕсем те журнал сулăмлăхне ӳстерме пулăшасса шанас килет.

Кăçал эпир малтанхи номерсенчех çамрăксене тивĕçлĕ вырăн парас терĕмĕр. Юлия Силэм, Василий Эктел, Иван Егоров повеçĕсем, Арсений Тарасов, Борис Чиндыков калавĕсем пичетре ĕнтĕ. Шупашкарта пурăнакансене кăна мар, районсенчи авторсене те «Çамрăк хунав» рубрика айĕнче яланах вырăн тупăнса пырĕ.

Çавна май çакна калас килет. Халĕ эпир журналсен 10-мĕш номерĕсене çамрăксен редколлегийĕсене кăларттарас тетпĕр. Ку, паллах, ырă ĕç. Çапах та çамрăксен çак обществăлла чăмăртанăвĕ çавăнпах ĕçне ан вĕçлетĕрччĕ, çамрăк авторсен хайлавĕсене пичете хатĕрлеме редакцисене ялан пулăшса тăтăрччĕ.

Журнал страницисенче кăçал Михаил Сениэлĕн «Пуç тайни» поэми, Георгий Орловăн «Тантăш» сонетсен кăшăлĕ тата Александр Галкин, Геннадий Айхи, Раиса Сарби, Юрий Семенов, Петр Яковлев, Георгий Ефимов, Василий Кошкин, Николай Исмуков, Геннадий Юмарт, Валерий Тургай, Анатолии Смолин тата ытти çамрăк поэтсен сăввисем пичетленĕç.

Çĕнĕлле улшăну тапхăрĕнче публицистикăллă материалсен витĕмлĕхне вăйлатса пырасси çинчен ялан шутлатпăр. Çавăнпа ĕнтĕ партин XIX партконференцийĕ тĕлне КПСС обкомĕн секретарьне Л.Я.Тянгова «Çĕнетÿ - çĕнтерÿ» ятпа статья çыртарма палăртрăмăр. Агропром проблемисем, Атăлпа кÿлĕсен куççулĕ, ялти çулсем-йĕрсем, ял çыннисен сывлăхне сыхлассипе çыхăннă, халăха вĕрентес ĕçе çĕнĕлле йĕркелессипе КПСС Тĕп Комитечĕн февральти Пленумĕн йышăнăвĕсенчен тухса тăракан задачăсем çинчен очерксемпе статьясем пама хатĕрленетпĕр. Ĕç коллективĕсен, ĕççыннисен экономика хутшăнăвĕсен проблемисем çинчен анализла материалсем пулĕç. Журналта кăçал «Перестройка почти» уçрăмăр.

Литература критики кăçал уйрăмах çивĕч пирĕн. Номертен номере интереслĕ, тарăн шухăшлă, анлă калăплă материалсем пичетленмелле. «Хальхи литература тата çĕнетÿ» темăпа правленин критика секцийĕпе тĕпчев институчĕ урттернĕ дискусси калаçăвне журнал страницисене типтерлĕ кăлартăмăр. Кĕçех вăл вулакансем патне çитмелле.

Виталий Родионов литературоведăн «Вăхăт тивĕçĕ» статйине пичетлесе сÿтсе явассине йĕркелерĕмĕр.

«Ĕç сĕтелĕ хушшинче» рубрикăпа интервьюсем пичетлетпĕр. Чăваш АССР халăх писателĕсем Николай Терентьев, Василий Алендей, çавăн пекех Василий Петров, Николай Максимов тата Виталий Енĕш хăйсен çĕнĕлле ĕçĕ-хĕлĕ, чăваш литературин шăпималашлăхĕ çинчен вулакансемпе уççăн калаçĕç.

Çĕнетÿ писательсен пурнăçĕнче мĕнле улшăнусем кÿни çинчен калакан материалсене те çитес вăхăтрах пичете хатĕрлесе çитеретпĕр.

Ĕçĕ нумай. «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕнче тата Канаш хулипе районĕнче пулса тĕлпулусем урттермелле, çавăн пекех республикăн ытти вырăнĕсенче те халăхпа калаçмалла, журналта пичетленнĕ произведенисем тăрăх вулакансен конференцийĕсем урттермелле. Вулакансемпе редакци хушшинчи çыхăнăва малашне татах та çирĕплетме тăрăшăпăр.

Пĕлтĕртен пуçласа эпир редколлеги ларăвĕсенче редакцие килнĕ алçырусене сÿтсе явассине йĕркелесе ятăмăр. Виссарион Синичкинăн «Кун йĕрки» повĕçне питĕ ĕçлĕн сÿтсе яврăмăр. Малашнехи вăхăтра Розин Ярандайкинăн «Йĕрсем çухалмаççĕ», Георгий Ангерăн «Вĕрен тем пек явăнсан та», Вениамин Тима-

ковӑн «Вӗрене ҫулҫӑ кӑларсан» повеҫӗсене сӳтсе явма палӑртрӑмӑр.

Пай редакторӗсен отчетне итлесси те йӑлана кӗрет.

Хамӑр ӗҫе эпир малашлӑх тата уйӑх планӗсемпе туса пыратпӑр. Вӗсене редколлегире сӳтсе явса ҫирӗплететпӗр. Произведенисене редколлеги членӗсем тӗплӗн вуласа пай сотрудникӗсемпе пӗрле анлӑн сӳтсе явмасӑр пичете ямастпӑр.

Редколлеги членӗсем пирӗн пурте активлӑ. Вӗсен нумай алҫырӑвӗ вулама тивет. Ҫапах та нихӑшӗ те обществӑлла ӗҫрен пӑрӑнма хӑтланмасть. Редакцие вӗсем, опытлӑ та ятлӑ писательсем, яланах тивӗҫлӗ ӗҫлӗ пулӑшу параҫҫӗ. Ушкӑнпа икерчӗ ҫиме те лайӑх тенӗ пек, творчествӑлла ҫирӗп ушкӑнпа журнал кӑларма та лайӑх. Редакци коллективӗ пирӗн туслӑ, ҫирӗп. Унта малашне те ют ҫурӑк палли ан пултӑрччӗ.

Хатӗрлесе каласа параканӗ журналӑн главнӑй редактор заместителӗ В.Кузьмин».

Хут сӑрмакланӑ майлах чӗлхе тӑррине те якатма ухута писательсем сахал мар Союзра. Вӗсемшӗн сӑлтавӗ пултӑр кӑна. Акӑ, манӑн вӑрӑмарах кайнӑ Сӑмахӑма итлесе пӗтернӗ хыҫҫӑнах, малтантарах блокночӗсем ҫине ҫырнисене е пуҫӗсене хывса хӑварнисене черетленсех хӗмлентерме пуҫларӗҫ:

А.В.Малов: «Редакцие илсе пынӑ романсем ытла пысӑк, ытама кӗмеҫҫӗ. Критиксем пӗр-пӗрне шӗкӗрен те хытӑрах кӑшлаҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра писатель стилӗ начарланчӗ. Публицистикӑна писательсен ытларах хутшӑнмалла, пӗр Анатолий Емельянов ҫине ҫеҫ шанса лӑпланмалла мар. Союз правленийӗн те писательсене хваттерӗсемпе ӗҫ пӳлӗмӗсенчен халӑх хушшине хӳтерсе кӑлармалла».

А.В.Емельянов: «Тӑван Атӑлӑн» форматне улӑштарас пирки малалла та шухӑшламалла та калаҫмалла. Гонорар ӳстересси ҫинчен те - ҫавнашкалах. Очерка, паллах, ӑна ҫырма пулать, анчах унщӑн никамах та каҫса кайса ырламасть. Очерк, публицистика статйи ҫырма пултарайман писатель, ман шутпа, хӑйӗн произведенийӗсене пӳрнерен ӗмкӗч пек ӗмсе ларакан ҫӑравҫӑ кӑна тесе шутлатӑп эпӗ. Чӑн-чӑн вӑйлӑ произведени чылай чухне очеркран - чӗр ҫынран, чӗрӗ пурнӑҫран - шӑтса аталанса тухать. Ҫавна манар мар, юлташсем. Ҫакна та палӑртасшӑн: литературӑра васкама кирлӗ мар.»

Ф.Г.Агивер: «Чылай писательсем хамăрăн литература журналĕсене çырăнмаççĕ те, вуламаççĕ те, мĕншĕн тесен пĕлсех тăратпăр кам мĕнле çырнине тата çыртнине. «Тăван Атăл» халлĕхе сӳрĕкрех пек туйăнать. Номерĕсенче публицистика сайра. Литература каçалăкне çирĕпрех планламалла. Литература критикин рольне çĕнĕлле вăйлатмалла. «Писатель архивĕнчен» рубрикăпа материалсем пичетлемелле. Чăваш халăхĕн историйĕ, чĕлхе ыйтăвĕсем пирки материалсем сайра-хутра çеç курăнкалаççĕ.»

М.А.Ставский: «Писательсем пурте очерк çырма пултараймаççĕ. Ку тĕлĕшпе пурин те талант çитмест, çавăнпа вĕсем хăйсен калав-повесть-роман ĕçĕпе тăрмашса лараççĕ».

Н.Н.Максимов: «Шутласан, «Тăван Атăл» - пирĕн чăваш литературин шайĕ. Анчах та, унта тухакан «илем апачĕ» халлĕхе вулакана тăрантараймасть. Суя ăнланăва тĕпе хурса ĕçлетпĕр пулас. Япăххи те, лайăххи те пĕрешкел, социаллă пĕртанлăх пултăр тесе тăрăшатпăр. Никама та кӳрентермесĕр пурне те пичетлеме тăрăшни -редакци чирĕ. Чире - сиплев кирлĕ. Лайăх произведение касса-вакласа мар, пуçĕпех пичетлемелле. Пахалăха ӳстермелле. Творчество конференцийĕ ирттермелле. Васкаса çырни те, ӳркенсе ĕçлени те - япăх. Пирĕн хамăрăн кун пирки тарăнрах шухăшламалла».

В.Г.Енĕш: «Ку таранччен те эпир чăваш халăхĕ ăçтан тухнине, мĕнле çулпа аталанса пынине уçăмлăн кăтартакан илемлĕ произведенисем «Тăван Атăлта» курмастпăр-ха. Сбоевсен, Ашмаринсен, Никольскисен произведенийĕсене çителĕклĕ вырăн парсах халăх хушшине кăлармалла «Тăван Атăлăн».

В.И.Антипов - Энтип Ваççи: «Эп хам поэт пулнă май тӳрех поэзи пирки пуçлам-ха. Журнал поэмăсене вырăн пани питĕ лайăх, анчах редакци авторсемпе, уйрăмах çамрăксемпе ĕçлессине малти вырăна хумасть. Номерсенче плакатлă сăвăсем нумай. Декларацилле сăвăсем пичетлеме пăрахмалла. «Феникс кайăкпа» тĕплĕнрех, тарăннăн ĕçлемелле пулнă. Николай Теветкеле мĕн çырнине пурне те пичетлесе пăсма пуçларĕç. Авторсен кĕнекере тухнă чи лайăх сăввисене кăна пичетлемелле журналта. Поэзи енĕпе халлĕхе «Тăван Атăл» «Ялав» журналран пултарулăх енĕпе аяларах шайра тăрать-ха. Юлашки страницăсене тирпейлĕрех тумалла. Художниксен культури, шрифт культури пирки лайăхрах шутламалла. Манăн юбилей статйине тикĕт хушса пичетлерĕç. Ман çине «Тăван Атăл» темшĕн кăмăллах пăхмасть. Журнал çĕнетӳ тапхăрĕ умĕнче кăна-ха».

П.В.Афанасьев журналта ҫӗнетӳ тапхӑрӗпе килӗшӳллӗ япаласем сахалтарах, хамӑрӑн ӗҫ вырӑнне те, вулакансене те хисеплеместпӗр, хӑнӑхнӑ йӑларан тухаймастпӑр» текелесе, журналӑн ҫӗнетӳ чуппине татах та хӑвӑртлатмалли ҫинчен аса илтерчӗ.

Вӗҫӗнче хама ирӗк панӑ правӑпа усӑ курса эпӗ тухса калаҫнӑ юлташсен асӑрхаттарӑвӗсем тата сӗнӗвӗсем пирки никам ҫине ҫилленмесӗр, никама кӳрентермесӗр пурне те ӑнланулла хуравларӑм, Мускаври Литинститутран вӗренсе таврӑннӑранпах урлӑлла пӑхса хирӗлекен Энтип Ваҫҫине (ӑна Союз правленийӗ ӗҫ тупса памасӑр нушалантарчӗ) кӑмӑллӑн кӑна асӑрханулларах ӑнланма систертӗм: «Эпӗ кунта, Союз правленийӗн ларӑвӗнче, хамӑн ӗҫ ҫинчен мар, «Тӑван Атӑлӑн» ӗҫӗ ҫинчен отчет турӑм. Тӗрӗссипе, чӑваш писателӗсен ӳсӗмӗ, паянхи утӑмӗ, пуласлӑхӗ ҫинчен хӗрӳ калаҫу пуҫарса ятӑм. Ҫавна ӑнланакансем питӗ ӑслӑн ҫаптарчӗҫ, кӗвӗҫсе юнтараканнисем... Ӑнланӑр, вӑйлӑ ӗҫлекене, ӗҫрисенчен ҫирӗп ыйтакана ниҫта та нихҫан та юратман. Пирӗн патра та ҫавах. Кут хыҫӗнче вут хурсах тӑраҫҫӗ те...

«Тӑванатӑлсем» эпир, лару хыҫҫӑн шутланӑ май, Союз правленийӗнче пире ытлашши хурласа, вӑрҫсах пӗтермерӗҫ, тата тӑрӑшарах ӗҫлеме ҫеҫ ырӑ канашсем сӗнчӗҫ, тесе хавхалантӑмӑр.

Нарӑс, 25.

Таллеров отпускран тухрӗ, манӑн «Ҫӗр пики» повӗҫе вулать.

Компартин вӑйӗ, витӗмлӗхӗ чакса пырать. Вунҫиччӗмӗш ҫулхи ҫӗнӗрен чӗрӗлчӗ. Ҫӗршыв сысна ҫури пек ҫухӑрать: «Пӗтӗм влаҫа - Советсен аллине!» Эпӗ те перона хӑйрарӑм - Советсен ҫуртӗнче.

Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн президиумне ертсе пыракан Петров республика хаҫачӗсемпе журналӗсенче, телевиденипе радиора ӗҫлекен журналистсене хӑй патне чӗннӗ. Виҫӗ сехет ҫурӑ пычӗ шавлӑ калаҫу, тӑхтавсӑр. Эпӗ те тухса калаҫрӑм.

«Йӗпреҫсем ҫинчен ҫыратӑп, райсовет ӗҫтӑвкомӗн председателӗн Пантелеймон Михайлович Ермошкинӑн сӑнарне уҫса кӑтартасшӑн. Совет ӗҫченӗсен пӗр уҫӑмлӑ сӑнарӗ те ҫуккӑ-ха чӑваш литературинче. «Ҫунат» ятлӑ очерк тата «Тилхепе» повесть ҫырӑнма та пуҫларӗҫ пуҫра», - терӗм. Александр Петрович ман сӗнӗве ырларӗ.

Пуш, 24.

Йӗпреҫре «Тӑван Атӑл» вулаканӗсен конференцине йӗркелерӗм. Анне вилес пек чирлӗ выртнӑ пирки малтан Шупашкар-

тан яла каймалла пулчĕ. Унтан тӳрех Йĕпреçе каçрăм, пĕрле вăрнарсен «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакторне Михаил Алексеевич Васильев сăвăçа, публициста çаклатса пытăм. Шупашкартан Лаврентий Таллеров, Аркадий Лукин, Виталий Енĕш кулăшçă тăвата урапаллă «урхамахпа» ĕрĕхсе çитрĕç.

Пуш, 28.

Очерк çырма Йĕпреçе кайрăм. Геройсем куç умĕнчен каймаççĕ: райĕçтăвком председателĕ Ермошкин, Пысăк Упакасси

ÇĔНТЕРӲШĔН

1988

Мартăн 26-мĕшĕ, шăматкун

№ 37 (8361)

Хакĕ 3 пус.

Тĕлпулу ирттерĕ

[illegible]

ял Совечĕн председателĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ Антон Григорьевич Шордеев, райсовет тата ялсовет депутачĕ, «Красный партизан» колхоз председателĕ Гурий Андреевич Андреев, КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Никонор Андреевич Сергеев...

Пантелеймон Михайлович чирлĕ. Председатель заместителĕн Геннадий Романович Яковлев пÿлĕмĕнче юриех хĕрÿ калаçу пуçарса, çынсене тавлаштарса ятăм. Гурий Андреевич, рапон тĕп экономисчĕ Василий Кузьмич Кузьмин тата ыттисем те хĕремесленсех, пĕр-пĕрне пÿлсех тăнлантараççĕ Çĕнетÿ проблемисене.

Ермошкин чĕрĕлсен, тепре килетĕп, тавлашăва тата вăйлăрах хĕмлентерсе яратăп. Манăн пурнăç чăнлăхне, этемĕн шухăшлав тĕшшине тутанмалла. Унсăрăн очерк та, повесть те пулмасть.

Пуш, 30.

Ĕç вĕçленнĕ тĕлелле анне вилни çинчен пĕлтĕм. Вăрнартан киле телефонпа хыпарланă. Машина «хуçи» патне кайрăм. Халĕ пирĕн «Капкăн» тĕп редакторне Николаева пуççапмалла-çке. Эрне вĕçнелле ăна, пире çитес эрнере машина кирлĕ тесе, хут çырса памалла. «Анне вилсе кайрĕ», - тетĕп куççуле шăлса. «Ну и штуш? Миçене çитрĕ?» - терĕ вăл куçне мăкăлль тутарса. «Нумаях пурăнаймарĕ те, сакăрвунсаккăра çиткелерĕ». «Тăпри çăмăл пултăр апла. Ваттисен хăй вăхăчĕпе каймаллах». «Яла кайма ыран машина кирлĕ». «А ма заявка памарăн маларах?» «Анне куçĕ хăш самантра ĕмĕрлĕхех хупăнасса пĕлеймерĕм-çке...» «Ялан çапла эсир. Мĕн те пулин шыраса тупатăрах, шутласа кăларатăрах. Иртнинче Аркадий Лукинăн амăшĕ вилсе выртнă, терĕр. Машина ыйтатăр Элĕк районне кайма, а манăн тăванăн туйне çитмеллеччĕ. Паян тата... Ман ыран хула тăрăх çÿремелле, обкома чĕнеççĕ. Касна машинине ăна кантур ĕçĕ валли уйăраççĕ. Автобус пур. Счастливово...»

Юрать пире валли Венгри Халăх Республики «Икарус» ярса панă та... Никамран та ятарласа ыйтма кирлĕ мар. Билет туянтăмăр та ирпе... Вăрнар автовокзалĕнче Миша Васильевăн райком «ямшăкĕ» Костя пире кĕтсе тăрать.

Çу, 4.

Журналсен пуçлăхĕсене Мускава, КПСС Тĕп Комитечĕн Обществăлла наукăсен академи çумĕнчи курса вĕренме чĕннĕ. Таллеров каллех журнал тилхепине-штурвалне пĕр уйăхлăх тыттарса хăварчĕ. Редактор ун пек чухне сып-сывах.

Аннешĕн профсоюз кассинчен 20, Журналистсен союзĕнчен 30 тенкĕ пачĕç.

Çу, 12.

Ача çуратма панă отпуска вĕçленĕ хыççăн, Любовь Васильевна Мартьянова ĕçе пуçăнчĕ. Аркадий Лукинăн ĕç вырăнĕ пĕтрĕ. Хăйне ĕçкĕ-çикĕпе астарса ямарĕ, çирĕп тытрĕ вăл. Тав турăмăр.

Çу, 15.

Аркадий Малов пенсие кайрĕ. Ăна обкомпа Совмин грамотине пачĕç. Республикăн культура ĕçченĕ ята памаллаччĕ те ĕнтĕ... Темшĕн чаплисемпе ахаллисем çине суйлаççĕ çынсене. Пархатар ытла та хаклă-çке пирнешкелсемшĕн. Эпир редакцирен 60 тенкĕ укçа, «Смольный в изоискусстве» кĕнеке, хамăртан виçшер тенкĕ пухса кĕпе парнелерĕмĕр.

Кайран вăл хăйсен дачине чĕнчĕ. Пахчи Вăрнар çулĕ çинчи улттăмĕш километрта. Петĕр Львов, Валентина Эльби, Юрий Айдаш, Николай Григорьев, Николай Дедушкин, эпĕ, «Ялавран» Юлия Силэм пултăмăр. Арăслан ăрлатма тытăнсан, тухса шăвăнтăмăр. Çапла вăл Львов.

Малов вырăнне Юрий Айдаша проза редакторне куçартăмăр. Литсотрудника Борис Чиндыкова илтĕмĕр. Хастар, çивчĕ чунлă, талантлă ача, хăйне евĕр кăмăллă Етĕрне чăвашĕ.

Çу, 24.

Тĕп редакторпа ответлă секретарь отпуска кайрĕç.

Николай Максимов, Юхма Мишши, Анатолий Емельянов хăйсен пысăк произведенийĕсене пĕр вăхăтра пичете ятарасшăн. Журналăн - хăйĕн виçи. Ытлашшине йышăнмасть. Пурте кӳренесшĕн. Такăшне ыра пулса, такăшĕнпе тăшманла юлмалла...

Авăн, 15.

Кĕнеке кăларакансем - пĕр çынсемех: Союз правленийĕн членĕсем, тĕп редакторсем, Союзăн пултарулăх секцийĕсене ертсе пыракансем, издательство шĕккисем, кармаçăварсемпе йăпăлтисем... Ниепле те плана кĕме май çук. Темле сăлтав, ирĕксĕрлесе çитменлĕх тупса пирĕн хайлавсене çулсерен пăра-пăра хăвараççĕ. Чăваш кĕнеке издательствинчи консервативлă шухăш-туйăмпа «эпир çĕнĕлĕхшĕн» тесе пирнешкеллисене чике тăршшĕ лартма хăтланакансен икĕпитлĕ ĕçĕ кӳрентерет.

«Шурăмпуç çăлтăрĕ» романа издательствăна виçĕмçулах тăратнă. Ăна ун чухне редакцисен заведующийĕнче ĕçлекен Юрий Айдаш вуласа тухрĕ, произведенири çитменлĕхсене кăтар-

тса тӳрлетме хушрӗ. Чылай вӑхӑт ӗçленӗ хыççӑн, юсанӑскерне, кайса патӑм. Ун хыççӑн издательство ӑна писательсен Союзне çитернӗ. Проза секцийӗнче, пуш уйӑхӗнче, ятарласа сӳтсе яврӗç, кӗнекен кӑларма сӗнчӗç. Романа вуланисем асӑрхаттарса каланӑ сӗнӳсене шута илсе тепӗр хут тӳрлетрӗм те, издательствӑна патӑм. Çав вӑхӑтра «Егоровсен вилӗм историйӗ» пуçланчӗ. Айдаша ӗçрен кӑларчӗç. Çынсем улшӑнчӗç. Писательсен Союзӗн правленийӗнче, издательство темпланне сӳтсе явнӑ чухне, ман романа 1989 çул планне кӗртме йышӑнса хӑварчӗç. Кайран вара Василий Герасимович Игнатьев, тӗп редактор, тепӗр хут плана улӑштарнӑ, проза секцийӗн сӗнӗвне те, правлени йышӑннине те ниме хумасӑр, хӑйсен кӗнекисене кӗртес мехелпе, «Шурӑмпуç çӑлтӑрне» тӳлевлӗ редактора ятарласа «тата питӗ тимлӗ» вулаттарса, планран пӑрса хӑварнӑ. Отпускран таврӑннӑ хыççӑн пӗлтӗм те çак путсӗрле хӑтлану пирки... Маншӑн вӑл çав ултав пуçран мӑлатукпа çапнӑ пекех пулса тухрӗ. Акӑ мӗнле хаклаççӗ коллегиальнӑ йышӑннисене издательствӑра!

Çынсем пек вӑрçса-ятлаçса, хӑратса-юнаса çӳрес йӑла çук та манӑн, эпӗ, çитес çул планне кӗртсе паратпӑр, тесе чуна йӑпатнипе кӑмӑла çырлахтарса янӑ пекки турӑм ӗнтӗ. Издательствӑна «Тӑван Атӑлӑн» иртнӗ çулхи 8-9-мӗш номерӗсенче пичетленнӗ «Юрату кӑварӗ» повӗçе кайса патӑм. Ку повӗçе халӑх мӗнле юратса, хумханса вуланине эпӗ ялсенче пулнӑ чухне хам та аванах пӗлтӗм. Республикӑри библиотека ун тӑрӑх районсенче вулакансен конференцийӗсем ирттерме сӗннӗ. Унччен вулакансен конференцийӗ Вӑрнар районӗнчи Çӗрпелти культура çуртӗнче питӗ вӑйлӑ иртрӗ.

Эпӗ пӗртте хама пропагандӑлас тесе мар, çынсем тунӑ лайӑх ӗç ыттисене те усӑллӑ ӗç тума пулӑштӑр тесе çеç асӑнтӑм кӑна.

Игнатьевсем каллех «сӑлтав тупса» ман кӗнекене пӑрса хӑварчӗç. Вӗсене халӗ укçа ытларах кирлӗ. Коньюнктура ыйтӑвне чи мала хурса идеологи ыйтӑвне хыçала хӑварни парти ӗçӗнче хур кӳме çеç пултарать.

Халӑха вара, ман шутпа (эпӗ ӑна çӗр хут, пин хут çирӗплетсе калама пултаратӑп!) коммунист, кӗрешӳçӗ, çӗнтерӳçӗ-паттӑр сӑнарӗ, хальхи самана çыннин типлӑ сӑнарӗ сывлӑш пекех, шыв пекех кирлӗ. Ман хайлавсенчи геройсен халӑха паян пулӑшмалла, çӗнӗлле ӗçлесе çӗнетӳ, çӗнтерӳ тума вӑй-хал, хавхалану парса тӑмалла.

Чӳк, 27.

Мускавра чăваш литературин кунĕсем эрнене пычĕç. Унашкал мероприятисене тĕп редакторсене çеç хутшăнтараççĕ. «Туй генералĕсен» редакцире тарласа хура ĕç тăвакансем-тарçăсем пур-çке.

РСФСР писателĕсен Союзĕн правленийĕн наци литературисен советĕнче Чăваш АССР писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ Порфирий Афанасьев кĕске отчет туса панă. Ун хыççăн «Тăван Атăлпа» «Ялав» журналсен тĕп редакторĕсем Лаврентий Таллеровпа Юрий Семенов калаçнă. Вĕсем идейăпа илемлĕх шайне вăйлатмашкăн журналсен калăпăшне, редакцисен штатне ӳстермеллине палăртнă. Çамрăк критик тата литературовед, «Тăван Атăл» редколлеги членĕ Атнер Хузангай чăваш журналĕсен тиражĕ халлĕхе хĕрарăм чĕлхи пек тăсăлакан романсем пичетленипе кăна тытăнса тăрать, публицистика валли вара çӳп шăтăкĕ çеç юлать; публицистика ярăмĕсем чухăн, журналсем хальхи хĕрӳ тапхăр ыйтăвĕсене начар çутатаççĕ, тарăн, анлă шухăшлă хайлав курăнмасть; чăваш чĕлхи аталанăвĕн ыйтăвĕсене маннă; илемлĕх енчен журналсем тĕксĕммĕн курăнаççĕ, хăйсем патне туртмаççĕ, тенĕ.

Калаçу нумая тăсăлнă. Мускавсем те пулăшма пулнă.

«Тăван Атăлран» хулăн журнал тумалли пирĕн проект хучĕсем, пĕлнĕ тăрăх, парти обкомĕн идеологи секретарĕн Леонид Тянговăн пӳлĕмĕнчех саралса выртаççĕ иккен, ун пирки вăл Мускавра ыйту та хускатман. Тутарсемпе пушкăртсем тата темиçе çĕнĕ журнал, çав шутра çамрăксен литература журналне те кăларма тытăннă вăхăтра пирĕн «мухтавлă идеолог-патриотсем» партин Тĕп Комитетĕнче чăваш журналĕсен малашлăхĕ пирки çăвар уçма вăтанса-хăраса тăнă. Авă епле иккен вăл хăш-пĕр чăвашăн-пуçлăхăн мĕскĕнлĕхĕ, чĕркуççи чĕтренине пула, пĕтĕм халăха хур тăвать. Хăй вара çав пӳлĕмрех сухал ӳстерсе ĕмĕрлĕх тымарланма хастарланать.

Тĕп хулара юмах çапса килни никама та усă памасса эпĕ тӳрех ăнланнă. Унашкал пушă калаçу чăваш гастролерĕсен Мускавра, Союз правленийĕнче, кашни çулах пулать-çке. Сăмахĕ Атăлпа юхса каять.

Раштав, 15.

«Капкăнра» - революци. Тĕп редактора, «патшана», «Волга» диспетчерне Николаева ĕнер коллектив пухăвĕ ĕçре урăх шанма çук тесе йышăннă. Тăххăртан пуçласа вунвиçĕ сехетчен пынă

пухăвĕ. Николай Ивановичпа Валерий Николаевич хушшинчи хирĕçӳ алăкне КПСС обкомĕн пичет секторĕн заведующийĕ Николай Алексеевич Григорьев редакци эртелĕпе шартлаттарсах хупса лартнă. Çĕнĕ редактора хăйсем суйлама йышăннă. «Революционерсем» çиччĕмĕш пĕлĕт çинчех.

Александр Аслут патне «Коммунизм ялавне» антăм та, вăл тӳрех Николаев пирки сăмахлама пуçларĕ: «Ĕнер, пуху хыççăн, намăса чăтаймасăр, вилес пуль тесе, эрех ĕçсе лартрăм, анчах мухмăра çеç кайрăм, мана ĕçе каялла илме пулăш-ха», - тесе йăлăнать вăл. Эпĕ ăна лăплантартăм: «Валерий Николаевич, эсĕ кунта нумай çул ĕçлерĕн, анчах нумай çынна хурапа вараларăн, тĕп редактора куççан, мĕншĕн вĕсем çинчен «Капкăнра» кулăшсем çырса аппаланмалла пулчĕ. Темле, йышăнмасть пуль сана урăх пирĕн коллектив».

Çапла çав вăл усаллăх çынна хăйнех пушăпа - пăрлă, вутлă пушăпа питрен те, кутран та çатлаттарать вăхăт çитсен.

Николаев ыйтăвне ĕнтĕ обком татса парĕ.

Раштав.

Кĕнеке издательствин директорĕ Иван Дмитриевич Тимофеев-Вутлан пирĕн Николай Григорьев темле лӳскенчĕкренех ылтăн пек сӳс шăртласа, майласа пама пултарать тенине такăш хăлхипе илтнĕ те, редактура- майлаштарура маçтăрне хăй патне туртса кайрĕ, илемлĕх редакцийĕсен пайне шанса пачĕ. Унашкал Мранькка сухаçи хăйне те ала айĕнче пулни пăсмать, тесе шутланă ĕнтĕ.

«Тăван Атăл» пăрахучĕн штаб начальникĕн кĕсменне Герман Желтухин телей кайăкĕн çунатне ярса илнĕ пек çавăрса тытрĕ.

Григорьевне Андрей Алексеевич Алексеевпа улăштарчĕç. Ăна издательствăран тахçанах пăрасшăн пулнă иккен. Мăранскертен, пиçсе çитмен журналистран, критикран, пулса пĕтмен наука кандидатĕнчен Агиверсем «Шултра ученăй» тесе куçранах кулатчĕç. Халĕ ĕнтĕ прозăпа Юрий Айдаш, поэзипе Любовь Мартьянова, критикăпа Борис Чиндыков, публицистикăпа Андрей Алексеев ĕçлеççĕ.

1989 çул.

Ĕç кĕнекинчен.

Лаврентий Василеьвич кăçал журналăн хуплашкине икĕ енĕпе те «Роман-газета» майлăрах кăларас тесе йышăнтарчĕ редколле-

гире. Пĕрремĕш номерĕн хуплашкине хăйĕн «Лаша каçанĕ» повеçĕнчен Иван Алексеев художник турĕ. Геройне Таллеров пекех ӳкернĕ. Уншăн 80 тенкĕ тӳлерĕç. Кашни номерĕн тĕп произведенийĕ хуплашкаран пуçланать.

Кăрлач, 20.

Эрнекун Пичет çурчĕн Мăн залĕнче савăнăçлă пуху пулчĕ. Телевидени те ӳкерчĕ. Халăх чылай. Обкомăн идеологи секретарĕ Демьян Филиппович Семенов Таллерова «Чăваш халăх писателĕн» грамотипе знакне пачĕ. Указĕ иртнĕ çулхи раштавра тухнăччĕ.

Юрий Артемьев доклад турĕ.

Хветĕр Агивер пухăва ертсе пычĕ. Сӳрĕкрех, яланхиллех.

Комсомольскинчен КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Мужиков, «Октябрь ялавĕ» хаçат редакторĕнче ĕçленĕ Геннадий Уткин тата хальхи редакторĕ Владимир Григорьев, хăйсен «Гигант» колхозĕнчи партком секретарĕ, Нĕркеçри кӳрши, пынă.

Лаврентий Васильевич президиумра арăмĕпе, Роза Александровнапа, юнашар ларчĕ. Хамăр енчен эпĕ саламларăм, салам адресĕ тата 50 тенкĕлĕх «Слава» сехет (редакци шучĕпе) патăм.

Геннадий Мальцев шӳтлесе илчĕ: «Ман плащ Комсомольски хаçат редакцийĕнче Таллеров плащĕпе юнашар 3 çул çакăнса тăнă. Çав историлле вăхăтшăн савăнатăп...»

Георгий Краснов Чăвашрадиоран пымарĕ.

Кайран «Московский» ресторана кайрăмăр. Халĕ хупахсенче эрех-сăра ĕçме чармаççĕ. Вĕсене лавккасенче те ирĕклĕ сутаççĕ. Пĕлтĕр-виçĕмçулсем çĕршыв экономики чĕтренсе анса ларнă хыççăн, укçа кирлĕ.

Çын нумаях чĕнмен вăл. «Ытла шавлакансене юратмастăп», - тенĕччĕ унчченех. Чӳрече çумĕнче Хветĕр Уяр, Энтип Ваççи, Николай Кушманов, Александр Мефодьев, Юрий Артемьев, Василий Давыдов-Анатри арăмĕпе; пирĕн енче - Роза Александровна, хăй, эпĕ, Николай Максимов, Герман Желтухин ларнă. Энтип тамата пулса ертсе пычĕ. Эрех ĕçтерекенĕ, сумкăран графинсене тултарса параканĕ - кĕрӳшĕ Геннадий Максимов (телевиденире ĕçлет). Аванах калаçрăмăр, кана-канах. Ĕçки-çики мăй таран пулчĕ. Кăмăллă хăналарĕç. Хăй те ӳсĕрличченех ĕçрĕ.

Юрий Артемьев ăна редакторта татах ĕçлеттересшĕн. Уяр та çавăншăн. Анатри те. Максимов калать: «Эпĕ шăпах Лаврентий Васильевич пек ĕçлесе пынă - вăл библиотекарь, эпĕ клуб заведующийĕ, вăл райхаçатра, эпĕ те, вăл писатель пулчĕ, эпĕ

те, вăл «Тăван Атăл» редакторĕ пулчĕ, эпĕ те «Капкăн» редакторĕ... Артемьев кула-кула хушса хучĕ: «Халĕ «Тăван Атăл» редакторĕ пулатăп те».

Тĕрĕссипе, эпир Максимовах кĕтетпĕр.

Таллеров калать: «Ывăнтăм, чирлетĕп, канас килет. Халĕ хĕрĕх-аллă çулсенчи талантлă писательсем нумай».

Нарăс, 2.

Хăйне тустарнă хыççăнах «Капкăн» хуçине Николаева «ăс» пырса кĕнĕ пулнă, вара вăл «срочнă» пульницана кайса выртнă. Ара, кутран тапасса сиссе чылай пуçлăх çапла хăтланать-çке, ĕçре кăшт та пулин ытларах тытăнса юлать. Партстационартан чĕрине лăплантарса тухнă та, Палиновне пăрса, Николай Иванчне хăйĕн заместительне, ун выранне çырусен пайĕнчен Комарова ответлă секретаре куçарнă. Çапла йăпăлтатса ирттерсе ярасшăн пулас трагедине. Ачисем пурпĕрех лăпланасшăн мар курăнать-ха.

Коридора пĕлтерӳ пырса çапрĕç:

«Тăван Атăл» журналăн тĕп редакторне суйланма кăмăл тăвакансене тата унта кандидатура сĕнекенсене 1989 çулхи февралĕн 25-мĕшĕччен кирлĕ документсем хатĕрлесе пама сĕнетпĕр.

Тĕп редактор кандидатурин çырлахтарăвĕсем:

1. СССР писательсен Союзĕн членĕ пулмалла.

2. Чăваш хаçат-журналĕнче е кĕнеке издательствинче 3 çултан кая мар ĕçлени кирлĕ.

3. Кашниййĕнех хăйĕн программипе çырса паллаштармалла.

Документсене Чăваш писательсен Союзĕн правленийĕн яваплă секретарĕ Н.К.Кушманов йышăнать.

Нарăс, 28.

Пичет çуртĕнче писательсен пухăвĕ пулчĕ.

Правлени председателĕн заместителĕ Ф.Г.Коновалов-Агивер чăваш литературин паянхи кун-çулĕ, писательсен юлашки вăхăтри ĕçĕ-хĕлĕ çинчен доклад турĕ, хăй каланă тăрăх, сăмах пуçарчĕ. Секци пуçлăхĕсем вуншар минут калаçрĕç.

«Тăван Атăл» ыйтăвне сьездра мар, çак пухурах татса пама йышăннă иккен. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче суйлав пулчĕ. Комисси председателĕ И.И.Лисаев-Тилĕ Йăванĕ (комиссие тата çаксем кĕреççĕ: Николай Терентьев, Василий Петров, Василий Кошкин, Энтип Ваççи, Николай Исмуков, Николай Кушманов - виçĕ Ваççапа виç Микулай) çапла пĕлтерчĕ: «Ĕнер эпир кандидатсем пирки канашларăмăр. Аристарх Дмитриев, эпĕ,

В.Петров, Д.Гордеев хамăр кандидатурăсене каялла илес терĕмĕр, çак пухăва, программисене итлесе, Хветĕр Агиверпе Николай Максимова сĕнме килĕшрĕмĕр».

Çак шав умĕнхи кунсенчен пĕринче ман пата Вася Петров кĕнĕччĕ. Вăл ыйтрĕ: «Эсир хăвăр эртелтен кама та пулин тĕп редактор пулма кандидата тăратмастăр-и?» Эпĕ хуравларăм: «Лаврентий Васильевич хăйĕн заявленийĕ çине «редакци коллективĕ Н.Н.Максимова тĕп редактора сĕнет» тесе çырнăччĕ, унпа пире паллаштарнăччĕ». Петров: «Агивер редактор пулсан, сана та, ыттисене те питĕ йывăр лекет. Эпĕ унпа нумай ĕçленĕ, питĕ лайăх пĕлетĕп ăна. Вăл ĕçленĕ çĕрте яланах вăрттăн каварлашу, сӳпĕлтетӳ, çынçиенлĕх. Начар çын. Элекçĕсене итлекен пуçлăх пулать».

Агивер тĕп редактор пуласса кĕтсе хăшĕсем пирĕн редакцире çăварне икĕ хăлхи таранах карса пăрахнă.

Хветĕр Агивер яланхиллех сапăнчăк шухăшлă тухса калаçрĕ. Ăна хальхи «Тăван Атăлăн» хуплашкийĕ те, содержанийĕ те килĕшмест иккен. Йăлтах революцилле улшăну тăвасшăн. Чăвашлăх çитмест, тет.

Николай Максимов питĕ çирĕп, тарăн шухăшлă, идейăллă, принциплă, ĕçлĕ программăпа тухрĕ. Вăл пичете чи вăйлă япаласем кăна яма сĕнет.

Иккĕшĕн те наци ыйтăвĕсем вăйлăн palăраççĕ.

Суйлав хыççăн çакă паллă пулчĕ: вăрттăн сасăласа Агивер 44 сасă, Максимов 21 сасă пухнă. Федор Георгиевич малтанах вăйлă агитаци тунă, терĕç. Унăн йăли çапла. Кăмăллаканĕсемпе юратаканĕсем ытларах пулчĕç ĕнтĕ.

Суйлавĕ вĕçленсен, çĕнĕ тĕп редактор редакцире улшăнусем тума ирĕк ыйтрĕ. Писателĕсем, кулкаласа, «хăвăн ирĕкӳ ĕнтĕ вăл ĕçре мĕн тăвасси» текелесе ирттерсе ячĕç. Никамран «ăслă» пĕр карма çăвар хĕремесленсе хăрăлтатрĕ: «Ара, ирĕк парăр ĕнтĕ! Шăлтăр çĕнĕ редактор çĕнĕ шăпăрпа лайăхрах!»

Мăнкăмăлларан та мăнкăмăллă çын килет редакцие. Усал, вăрттăн шухăшлă, кĕвĕç этем.

Пуш, 13.

Таллеров черетлĕ отпуска кайрĕ. Мускав çывăхĕнчи «Малеевка» пултарулăх çуртĕнче пултарулăхне туптать. Унтан килсен вăл пирĕн патран яланлăхах каять.

Агивер халех кутăнлашса, куç айĕн шăппăн пăхса çӳрет. Темле улшăнусем тăвасшăн-ха, хăшĕсемпе вăрттăн калаçать.

Московски район урӑлтаркӑчӗнчен хӑрушӑ хут килнӗ. Юрий Айдаш, ресторанта савӑшнӑ хыҫҫӑн, унта каллех канма лекнӗ-мӗн. Ун ҫинчен Желтухинпа профком председателӗ Анатолий Смолин кӑна пӗлетпӗр. «Хытӑ асӑрхаттарнӑ» тесе хурав пама килӗшрӗм.

Пуш, 27.

Ҫиччӗмӗш номӗре (300 стр.) редколлегире ҫирӗплетмесӗрех набора ятӑм. Вуласах ывӑнтарать. Чӗрӗ икӗ редактор пур чухне вӗсемшӗн те мекӗрленес пулать. Вӗсем пурте хисеплӗ, ырӑ редакторсем, мӗнпур чап-мухтавӗ вӗсене лекет, пире ҫеҫ... Пирӗн, Александр Артемьев каларӑшле, лашасен, акапуҫне те, сухапуҫне те, сӳрине те - пурне те туртмалла. Ҫӗнӗрен килекен редактор та нимле ырлӑх парас ҫук. Редакцире унта ӗҫлекен пуҫлӑх кирлӗ, хисеплӗ пуҫ ҫеҫ мар.

Ака, 11.

Айдаша пултарулӑх отпускне ятӑм.

Таллеров ӗҫе тухрӗ.

Пуш, 26.

Тӗп редактора ӗҫрен тивӗҫлӗ канӑва ӑсатрӑмӑр. Лаврентий Васильевич тӑнлӑ, анлӑ тавракурӑмлӑ журналист, литератор, йӗркелӳҫӗ. Хӑр-хар кӑшкӑрман, асӑрхануллӑ, мал ӗмӗтлӗ, ҫынна ӑнланма, йӑнӑшсан, пӗлсе асӑрхаттарма, вӑхӑтра пулӑшма пултаракан, чӑн-чӑн чӑвашла, сӑнарлӑ шухӑшлакан, ҫивчӗ, витӗмлӗ чӗрӗ чӗлхеллӗ, кирлӗ чухне хӗрсе тавлашма та, чӑнлӑха хӳтӗлеме те, ҫиеле тухма та пултаракан ҫын. Парти, совет саманин тыллинчен аманмасӑр тухнӑскер, вӑл ӑна-кӑна асӑрхама, унракунра усӑллине ярса илме, унпа пурнӑҫра усӑ курма пултарать. Унпа ӗҫлеме ҫӑмӑл, кӑмӑллӑ.

Писательсен дачинче, Протопопиха ятлӑ вырӑс ялӗ ҫумӗнче, пирӗн ҫӗр лаптӑкӗсем урам урлӑ ҫеҫ. Вӗсем, Вадим ывӑлӗпе, Геннадий Максимов кӗрӳшӗпе, пӳрт лартаҫҫӗ. Ытларах кӗрӳшӗ, комсомолтан хӑвӑрт ӳссе ҫитӗннӗ ҫамрӑк журналист хастарлӑхӗ, ӑнӑҫлӑхӗ кӑмӑла каять. Эпир те, ҫынсемпе ӑмӑртсах, чул ҫурт купаласа лартрӑмӑр. Ҫыравҫӑсен «хули» ӳсет. Лаврентий Васильч пукане пек мӑнукне (Максимов ачине) ҫавӑтса пырать. Пӗрле калаҫатпӑр.

Ака, 27.

Ӗҫе ҫӗнӗ тӗп редактор тухрӗ: Федор Георгиевич Коновалов-Агивер. Таллеровпа пӗр ялтанах вӑл - Комсомольски районӗнчи Нӗркеҫрен. Хайсен килӗнчен инҫех мар ҫӑлкуҫлӑ, пӗвеллӗ Акивер ҫырми пур. Хушма ятне ҫавӑнтан илнӗ вӑл.

Редакцие пырсанах, Агивер куç айĕн чеен пăхса каларĕ: «Эсир урăххине кĕтнĕ иккен-ха. Урăх редактора. Урăх хуçана, Максимова. Юрать».

Ака, 30.

Виççĕмĕш кунне тĕп редактор сиввĕн каларĕ: «Кам мĕнле ĕçленине пăхатăп. Пĕрерĕн-пĕрерĕн хам пата чĕнсе илсе, калаçма тытăнатăп».

Çу, 15.

Борис Чиндыков заявлени парса ĕçрен тухрĕ. Çĕнĕ хуçа малтанах çирĕп ыйтма пуçларĕ те, хăй каланă тăрăх, «редакторпа манăн рецидивсем пулма пултараççĕ, самодурпа ĕçлесе нуша куриччен, ирĕклĕ çырса пурăнас», - терĕ.

Ачи малалла ăнăçлă утса каймаллискер. Ĕç çине те, литература çине те питĕ тиркевлĕ куçпа пăхать, хăйĕн шухăш-туйăмне хаклама пĕлет, çын хыççăн кайса ухмахланмасть, хăй çĕнĕ çул уçма хăтланать, тапаçланать. Тавракурăмĕ анлă, пĕлĕвĕ тарăн, шухăш-ĕмĕчĕ çунатлă.

Кашни тапхăр хăйĕн ăслайĕсене çиеле кăларать. Халăхра Çĕнетӳ тапхăрĕ те кăсăклă хайлавсем çуратрĕ. Рыбаковăн «Дети Арбата» романне каçса кайса вулатпăр. Чиндыков хăйĕн ентешĕ, обком секретарĕ Демьян Семенов кун кăтартма шантарнипе-ши, ăна чăвашла куçарма пуçларĕ. Пӳлĕме питĕрĕнсе ларать те вăл сехечĕ-сехечĕпе машинкине шаклаттарать. Эпĕ Бориса хăйшĕн кăнтăрлах ĕçлеме чармарăм. Уншăн ыттисем тута тăсса çӳретчĕç. Таллеров кайман пулсан, «Арбат ачисене» эпир хамăр журналта чăвашла калаçтараттăмăрччĕ ĕнтĕ. Ăна пурнăçлама пирĕн вăй çитетчĕ. Акă халĕ... чăваш литературинчи Чиндыков çĕнĕ çăлтăр, «Тăван Атăл» çийĕн йăлтăртатса, урăх еннелле çул тытрĕ.

Утă, 6.

Агивер виççĕмĕш уйăхра тин пуçласа редколлеги ларăвĕ ирттерчĕ. Çĕнĕ малашлăх палăртрĕ. Унчченхи пирĕн ĕçе сивлерĕ. Романсене 300 страницăран (машинкăпа) ытла пичетлеместпĕр, тесе йышăнтарчĕ.

Максимова вăл халĕ те кураймасть пулас. Унăн «Пурнăçри вырăн» романне: «Эпĕ хам кунта маларах пулнă пулсан, пичетлеместĕмччĕ, чĕлхи чухăн, вулама туртмасть», - тесе хакларĕ.

Пирĕн пата Элĕк ачи, Чăваш телерадиора Федор Георгиевичпа пĕрле ĕçленĕ Александр Волков телевидениренн, тĕп редактортан, публицистика пайне ертсе пыма куçрĕ.

Саккăрмĕш хута та «Суйлав комиссийĕ» тесе алă пуснă пĕлтерÿ килсе çакнă. «Ялав» журнал редакторĕн Юрий Семеновăн пуканĕ айне те вăраххăн ĕçлесе çурăлакан мина çыпăçтарса хунă иккен. Вăл суйлавра çурăлса сирпĕнессе кĕтеççĕ хăйсен редакцийĕнче ĕçлекенĕсемех. Тĕп редактора писательсен съезчĕччен суйлас мар тесе йышăннă та Союз правленийĕнче, вара Сементер пуканĕ чĕриклетсе сикме пăрахнă. Хăйĕн те чĕри лăпланнă. Вăхăтлăха.

Çурла, 17.

Кăçал подпискăпа начар ĕçлерĕмĕр. Эпĕ отпускра пултăм. Çынни пирĕн коридор тулли. Юмах çапаççĕ. Ĕçе тухнă тĕп редактортан ыйтрăм: «Районсене кайса çÿремелле пуль?» «Мĕн парать вăл районсем тăрăх сулланса çÿрени», - терĕ Агивер.

Вăл темшĕн ытларах Желтухина хисеплет. Лешĕ такама та юрамалла. Тĕп редактор Волкова та çĕклет. Партбюро членне те пирĕн енчен ăна суйлаттарчĕ. Те ман вырăна лартас шутпа сĕтĕрсе килчĕ ăна телевиденирен... Лере чăтма çук йывăр пулнă та, кунта тарса килчĕ.

Федор Георгиевич телевиденире тухса калаçнă. Малашне пысăк романсем пичетлеместпĕр, тенĕ. «Тĕрĕс мар ку, ăнланмастăп сирĕн редактора», - тет Максимов. Эпĕ те Николай Николаевич майлах шутлатăп: «Тăван Атăл» вăйлă мăн роман вăйĕсĕр ăçтан хăвăрт иштĕр? Вулакан унран ĕмĕрĕпе роман турттарса килессе кĕтнĕ.»

Чÿк, 10.

Агивер, Мускава Раççей писателĕсен Союзĕн правлени пленумне кайса килнĕ хыççăн, пире пухса каларĕ: «Çĕнĕ çул хыççăн отпускпа усă куратăр та... журнал çумĕнче культура хаçачĕ кăларма пуçлатăп, çавна май редакцире перестановка тăватăп, кашнине пÿлĕме чĕнсе илсе, персональнă калаçатăп. Шухăшласа пăхăр».

Раштав, 4.

Тĕп редактор мана хăй патне чĕнсе каларĕ: «Эсĕ телевиденине тĕп редактора каять, теççĕ. Халĕ те татса паман-им ыйтăвна?» «Крысинпа калаçу пулнăччĕ те... Шарламаççĕ-ха», - терĕм. «Эсĕ редакци ĕçне тума пĕлместĕн, искусство хаçачĕ кăларма пултараймастăн. Шухăшлас пулать, татса памалла хăвăртрах ку ыйтăва. Малашне пĕрле ĕçлейместпĕр», - терĕ сиввĕн, вăкăрла тинкерсе.

Ăнлантăм, элекçĕсене питĕ тăнласа итлет. Унччен хамăр хушăри суслă çыхăнусене те йăлтах маннă. Такам путсĕрĕн шухăшĕпе пурăнма пуçланă. Епле улшăнма пултарать çын.

Раштав, 29.

Кăçалхи юлашки эрнекун. Çĕнĕ çул тума мана Йошкар-Оларан юлташла парне ярса панă. Писательсен Союзĕнчен Михаил Ставский литконсультант «Ончыко» журналăн 6-мĕш номĕрне килсе пачĕ, икçĕр грамм шурри ĕçлесе илчĕ. Журналне вĕсем икĕ уйăхра пĕрре кăлараççĕ. Кăлараканĕ - кĕнеке издательстви. Александр Юзыкайн манăн «Велосипед» («Запоздалый подарок») калава марилле пичетленĕ. Калавшăн 85 тенкĕ ярса панă. Агивер пăснă кăмăл кăштах уçăлчĕ.

Питĕ интереслĕ çын вăл пирĕн тĕп редактор. Паян та вунпĕре ĕçе пычĕ те, пӳлĕм алăкĕсене уçа-уçа пăхрĕ, сывлăх суннă пекки турĕ те... всю. Тĕрме çыннисене тĕрĕсленĕ пекех пулчĕ.

Çĕнĕ çул тума çак кăмăлпа салантăмăр.

1990 çул.

Кун кĕнекинчен.

Кăрлач, 2.

Ĕçе пусăрăнчăк кăмăлпа пытăм. Агивер çук чухне эпир питĕ савăнăçлă, туслă, хаваслă ĕçлеттĕмĕр, пурăнаттăмăр. Вăл пирĕн картишне каппайланса кĕрсенех сив сывлăш капланчĕ, çынсен пит-куçĕнчи кулă палли таçта кайса кĕчĕ. Мачча та сан çине пуснă пек. Редакцие тӳрех шăнтса лартрĕ. Этемĕн хăватне пусарма, ăшри чи ыррине çухатма пултарать иккен вăл.

Ĕç кĕнекинчен.

Кăрлач, 5

Тĕп редактор, тĕпленичченех, отпуска кайрĕ. Ун умĕн вăл мана телефонпа пӳлĕмне чĕнсе илчĕ те, каларĕ: «Çак икĕ-виçĕ кун хушшинче татса пар урăх ĕçе куçас пирки. Мана писательсен пухăвĕ ĕçре куçарусем тума ирĕк панă. Малашлăху пирки шухăшла. Эпĕ сан пирки Союз правленине те ыйту лартма пултаратăп. Ун чухне заявлени парса тухса каймалла пулать. Хам вырăна сана мар, Желтухина хăварма приказ çыртăм».

Эпĕ нимех те шарламарăм, «юрĕ ыр кăмăлушăн» тесе тухса кайрăм. Çапла «ырă тăвать, пулăшать» тахçанхи юлташ. Хăйне май килнĕ таран пулăшма тăрăшнă. Мускавран, Литкурсран «драматург пулса килсен», союзрисем Агиверпе никам та калаçмастчĕç, нимле ĕç те памарĕç ăна. Максимовпа иксĕмĕр «Капкă-

на» лайăх должноçа вырнаçтарса хăвартăмăр. Унта та путлĕн ĕçлеймерĕ.

Тĕп редактор «Чувашия» санаторире пилĕкне юсать. Раççейре, Чăвашра, Шупашкарта суйлав пулмалла. Агивер те депутат пуласшăн. Çавăнпа суйлав ĕçĕпе Атăл урлă каçать, редакцире ман пата кĕмест.

Тĕрĕсех калаççĕ пуль çав Таллеровсемпе Агиверсем хушшинче çемье хирĕçтăрăвĕ пур, тесе. Лаврентий Васильевич ăна каçармасть пулас, хăй патне те ĕçе илмерĕ, мана илчĕ. Çавăнпа халĕ мана тавăрать. Максимовпа тахçан хирĕçнине те манаймасть. Николай Николайчăн «Пурнăçри вырăн» романĕ шăпах çав вăхăтра пичетленчĕ, унăн вĕçне кĕскетсе пăсрĕ, авторне журналтан пистерчĕ. Çав хирĕçтăруваррине, шалкăм çумăр айне, лекмелле пулчĕ манăн.

Агиверсем «çинĕ» хушăрах эпĕ «Пахус паккусĕ» пьеса çыртăм. Ĕçре Юшков повĕçне редакцилерĕм. Тен, телевиденине те, ниçта та каймастăп, килĕшӳпе ĕçлеме ирĕк парсан, пултарулăх ĕçне куçатăп. Çырмалли нумай. Пурăнмалли - сахал. Лăпкăнрах, усăллăрах пурăнса юлмалла мар-ши юлашки çулсенче? Кама влаç кирлĕ - çапăçтăр. Вăл влаç вĕсене пурпĕрех халăх умĕнче хак памасть. Çыравçăн халăх умĕнчи хакĕ - пултарулăх çăкăрне мĕнле пĕçернинче.

* * *

Пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнче РСФСР Верховнăй Советне суйларăмăр. Депутат пуласшăн Хветĕр Агиверпе Юхма Мишши тапаçланчĕç. Унччен пек КПСС обкомĕ палăртса суйлаттарса хуни мар çав халь. Демократи тени кăштах сăмсаланасшăн. Акă, наци-территори 143-мĕш Шупашкар округĕнче Федор Георгиевич Коновалов юлташ 20447 сасă пухнă. Ăна хирĕç 132863 суйлавçă сасăланă. 890-мĕш Улатăр территори суйлав округĕнче Михаил Николаевич Юхмашăн 15099 суйлавçă майлă, 964320-шĕ хирĕç сасăланă. Раççейĕн аслă депутачĕ пĕри те пулайман.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн суйлавĕ те пĕр харăсах пулчĕ. Унта та тăратса пăхнă хăйĕн кандидатурине Агивер. Уруково 52-мĕш округĕнче суйлава хутшăннă 2382 çынран 148-шĕ кăна Коноваловшăн сасăланă. Çĕнĕ Лапсар 19-мĕш суйлав округĕнчен депутата тухма ĕмĕтленнĕ Чăваш АССР писательсен Союзĕн пуçлăхĕ Порфирий Афанасьев та 231 сасă çеç пухнă, 2234 суйлавçă ăна йышăнман.

Пирĕн Чăваш писателĕсем çапла, çĕршыври ытти писательсен хăватлă ÿсĕмĕн куçуменче, хур курчĕç. Юратмасть иккен халăх шапăлтисене. Пĕр-пĕрин çинчен кĕвĕçÿ, ÿпкелешÿ, тарăху, курайманлăх статйисем пичетлесех хăйсенчен пистерсе пыраççĕ те... Кам юраттăр, кам йышăнтăр-ха ĕнтĕ çавнашкал чурăссене хăйĕн тарçи пулмашкăн. Халăх умне тухса намăс курни кăна. Пÿлĕмре кута хĕстерсе çеç лармалла.

«Капкăнра» Федор Комарова ĕçрен кăларнă. Фельетонра йăнăш янă тесе сăлтав тупнă Николаевĕ.

Агивер мана журнала 18 пичет листи таран ÿстерес пирки расчетсем тума хушрĕ. Ĕçе тытăнтăм. Таллеров чухнех пĕрре аппаланнăччĕ. Тянгов çунтарман пулсан... Халĕ плановиксемпе-экономистсемпе пĕрле тепре ĕçлесе, ку хушăва та пурнăçларăм. Журнала 80 пуспа 40 пин кăларса тăрсан, çулталăкра 65 пин таса тупăш илме пулать. Обком секретарĕ патне хучĕсене ятăмăр. Анчах журналăн тиражĕ, Агивер килнĕренпе, 55 пинрен 38 пине анса ларчĕ. Акă вăл ман сĕнĕве йышăнманни, чÿречерен пурнăç чуппине пăхса ларнин çимĕçĕ. Мăнкăмăллăх, эпкамлăх çимĕçĕ. Пире те итлемелле-мĕн кирлĕ чухне! Районсене тухса çÿремесĕр, халăхпа çывăх пулмасăр тираж та ÿстерейместĕн, халăх тарçине те кĕрейместĕн. Йышăнмасть халăх сана.

Ака, 5, кĕçнерникун.

Ирпе Афанасьев урамне кайрăм. Антип Николаевич Николаева юлашки çула ăсатма писательсем, журналистсем, фронтовиксем йышлăн пухăннă. 10 сехетре хăйсен çурчĕ умне илсе тухрĕç. Хурлăхлă митинга П.В. Афанасьев сăмах каласа уçрĕ. Николай Дедушкин, Мире хÿтĕлекенсен комитечĕн председателĕ Михаил Иванов, Исаак Кириллов, Павел Крысин журналистсем сăмах каларĕç. Салтаксен оркестрĕ пынă.

Пичет çурчĕ умĕнче Николаев капитанпа хаçат-журналта, типографире ĕçлекенсем тата ыттисем те хурлăхлăн сывпуллашрĕç, издательствăра строительство енĕпе ĕçлекен Иван Павлов подполковник, «Пионер сасси» хаçат редакторĕ Мария Мареева калаçрĕç.

Нурăс масарне çитрĕмĕр, Шупашкартан чылайăн. Çуралнă ялне, Кăмпала илсе каймарĕç, кунта, Нурăс чиркÿ прихучĕн масарне пытарма йышăннă. Чăваш писателĕсен ячĕпе калаçма мана правлени председателĕ ирĕк парса янăччĕ. «Правда» колхоз председателĕ Иван Павлов чи малтан мана сăмах пачĕ. Çак сăмахсем тухрĕç манăн чĕре çумĕнчен юратнă ентешĕм çинчен:

«Паян эпир чăвашсен пултаруллă çыравçипе - Антип Николаевпа сывпуллашатпăр. Хăйĕн чунуççиллĕ илемлĕ сăмахне вăл Инçет Хĕвелтухăçĕнчи Бурей çыранĕнче «Ĕç юррипе» пуçланă, шахтер лампин çутинче юлташĕсене «Малалла» чĕннĕ. Ăшри лиризм унăн пурнăç лиризмĕ пулса тăнă. Çарта та, запаса тухсан та Антип Николаевич журналист-писатель сăмахне халăх хушшине ăнланмалла пуян чĕлхепе çитерме тăрăшнă. Унăн калавĕсемпе повеçĕсене, очерксен кĕнекисене ватти-вĕтти чăвашла та, вырăсла та хавхаланса, хумханса, куççуль витĕр вулать. Чăваш çыннин хастарлăхне, чăваш халăхĕн паттăрлăхне унăн вилĕмсĕр произведенийĕсем малашне те яр-уççăн кăтартса тăрĕç. Кĕнекисем Тăван çĕршыва юратма, туслăха çирĕплетме, тĕрĕслĕхшĕн кĕрешме вĕрентеççĕ. Уйрăмах «Салтак чĕрин астăвăмĕ» - хăйĕн чĕрин астăвăмĕ те пулса юлĕ пирĕншĕн.

Нумай çул хушши ЧАССР журналисчĕсен Союзĕн ответлă секретарĕнче ĕçленĕ вăхăтра унăн ăшă сăмахĕ, кирлĕ сĕнĕвĕ-канашĕ пириншĕн те усăллăччĕ. Çамрăксене нумай пулăшатчĕ, ваттисене хисепе хуратчĕ. Хаçат-журнал çыннисемпе писательсем хушшинче вăл питĕ хисеплĕччĕ...»

Хĕвелĕ çунтарать. Çавăнпа манăн çапла хушса калама тиврĕ:

«Паян Хĕвелĕ те Çĕр çине хăйĕн шевлисене, Шевле писателе пытарнă чух, ăшăнрах та хĕрӳрех сапалать. Çав шевле, Антип Николаевичăн ăшă кăмăлĕпе пĕрле, пирĕн пит-куçа чӳхет, пирĕн чĕресенче ĕмĕрлĕх ăшă туйăм хăварать. Вăл - пирĕн хушăрах, пирĕнпех. Йывăр тăпру çăмăл пултăр, хисеплĕ юлташăмăр-пулăшаканăмăр».

«Коммунизм ялавĕн» ответлă секретарĕ В.Степанов, «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакторĕ М.Васильев, Антип Николаевичăн тăванĕ, Хăмăш ачи, КГБ сотрудникĕ В.Кошкин çыравçă, П.Краснов журналист, К.Петров писатель сăмах каларĕç.

Ака, 10.

Çыравçăсен кулăшла мыскари пулса иртрĕ. Журналистсен Союзĕн правлени председателĕ тахçантанпах республика хаçат редакторĕ е радиотелекомитет председателĕ пулса пынă-çке. Хальхинче ав, XII-мĕш сьездра, çав йăлана пĕтерме шутларĕç, уншăн çине тăрсах хăтланчĕç. Союза ертсе пыма пултаруллă журналиста А.М.Кряжинова та кандидата тăратрĕç.

Анчах та «ваттисем» влаçа парасшăн мар-ха. Пурте вĕсем И.П.Кириллова председатель тăвасшăн. Çӳлтисем калаçса çирĕ-

плетнĕ те ĕнтĕ... Исаак Пантелеймоновичăн те ĕмĕчĕ пысăк пулас. Ахаль те «Советская Чувашия» редакторĕ, обком бюровĕн членĕн кандидачĕ ĕнтĕ вăл, тата кунта... Аптрамалла: «Ваттисемпе» «çамрăккисен» çависем пĕр-пĕрин çине çитсе çапăнчĕç, çавăнпа янравлă сасă тухрĕ.

Павел Крысин пĕр вунă хутчен: «Эп - юрист, эсир тĕрĕс мар хăтланатăр, мана итлĕр!» - тесе тухса калаçакансене пӳлчĕ, хăйсен кандидатурине хӳтĕлерĕ.

Михаил Иванов рабочи представителĕсенчен пĕрне: «Ты - хулиган! Тебе здесь делать нечего!» - тесе кăшкăрса ăсатрĕ лешне халăха суйлаттарсах залран кăларса янă чухне.

Арăмĕ, Валентина Андреевна, ТАСС корреспонденчĕ, хăйне рабочисен митингĕнче сăмах паманшăн, çав çынна хирĕçлесе калаçрĕ.

Телерадио майри-патши Венера Большова президиумра съезда хĕремесленсе, сурчăк сирпĕтсе, кăшкăрса ертсе пычĕ, делегатсене пурпĕрех çĕнтереймерĕ. Председатель суйланмарĕ.

Ман шутпа, Кряжинов çак тавлашура çĕнтерчĕ: тӳрĕлĕхпе, чăтăмлăхĕпе, пуласлăхĕпе. Хăйсем кам-камне пит лайăх кăтартса пачĕç «ваттисем».

Калаçăва çитес вăхăта куçарчĕç.

Ака, 20.

Ĕç укçи ӳстерчĕç. Халь ĕнтĕ уйăхра 360 тенкĕ илетĕп. Ялти бригадир шайĕнче. Мăшкăл. Çав вăхăтрах укçи йӳнелсе пырать, япала, апат-çимĕç хакĕ ӳсет.

Кашни кун повесть, калав редакцилетĕп.

Çу, 15.

Журналистсен тавлашуллă калаçăвĕ черетсĕр XIII съездĕнче вĕçленчĕ. «Ваттисемпе» парти обкомĕ хальхинче питĕ тĕплĕ хатĕрленнĕ. Çапах та съезд председатель суйлаймарĕ, пĕр кандидачĕ те çителĕклĕ сасă пухаймарĕ, вара çĕнĕрен суйланă пленумра татса пама хушрĕç çак хуравлă ыйтăва. Пленум ЧАССР журналисчĕсен Союзне ертсе пыма «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакторне Аркадий Петрович Казанова шанчĕ. Каллех малтанхи юхăмах малалла юхрĕ.

Çĕртме, 4.

Тĕп редактор халĕ манпа хушăран калаçкалать, пурпĕрех унран сивĕ хум çапать. Редколлеги пухмасть, хăйĕн пусĕпе кăна ĕçлет.

Çурла, 5.

Вениамин Погильдяковăн «Вупăр» повĕçне редакцилесе пĕтертĕм. Начар мар. Куçарасса такам куçарнă, пĕлеймерĕм, анчах чĕлхи яка. Вуланать.

Чӳк, 1.

Редакцие Юхма Мишши пычĕ. Эпир тĕп редакторпа Желтухин пӳлĕмĕнче лараттăмăр. «Çĕнĕ çултан чăвашсен «Вучах» ятлă хаçатне кăларма тытăнатпăр. Малтанах редактор пулма Иван Яковлевич Тенюшев пенсионера çирĕплетнĕччĕ, вăл икĕ-виçĕ номер кăларнă хыççăн издательствăрах юлать, çавăнпа халĕ вăхăтлăха редактор заместителĕ кирлĕ, каярахпа унăн редактор пулмалла», - терĕ. «Михаил Николаевич, ак лараççĕ вĕсем», - тесе тĕллесе кăтартрĕ Агивер пирĕн çине. «Яратăн-и вара?» «Хăйсенчен килет».

Ун хыççăн хаçат мĕнле пулмалли çинчен чылай калаçрăмăр, пурин те нумай ырă сĕнӳ пулчĕ. Манăн та килĕшес шухăш çирĕпленчĕ, мĕншĕн тесен мана Агивер пурпĕрех чунпа кăмăлласа тытса тăмасть. Ăсĕнче унăн урăх заместитель. Желтухин хăйĕн тусне Айдаша тĕртет пулас ман пӳлĕме.

Ыран пухăнса калаçмашкăн хăй патне, çиччĕмĕш хута, хăпарма чĕнчĕ Юхма.

Чӳк, 2.

Унччен Антип Николаев ларакан пысăках мар пӳлĕме чыхăнса тулнă Чăвашсен обществăпа культура центрне ертсе пыракансемпе унта ĕçлекенсем. Михаил Николаевич манпа ятарлă калаçрĕ. «Иксĕмĕр килĕштерсе ĕçлĕпĕр, эс хаçат ĕçне питĕ лайăх пĕлетĕн, писательсене шансах каймастăп, пырас, çыпăçас текенсем пур. Хăвна валли ответлă секретарь шыра», - терĕ юлашкинчен. Столовăя апат анса çирĕмĕр, ĕç ăнăçлăхĕшĕн вĕри чей ĕçрĕмĕр.

Хавхалану ӳсрĕ.

Чӳк, 20.

Юхмапа Тенюшев манпа «Вучаха» куçас пирки тĕплĕн калаçса таталчĕç. Çитес эрнере пыма шантартăм.

Агивер те Чăваш культурине, чăвашлăха малалла аталантарассишĕн тăрăшакансенчен, çав юхăма пуçарса яраканнисенчен пĕри пулнă. Ку енĕпе унăн тивĕçĕ халăхра пурах. Вĕсем, çулăмне чĕртсе яраканнисем, çав çулăма йĕркелесе тата вăйлăрах ялкăштарма килĕшменнисем е юлхавланнисем, хăйсен аллинчи вучаха урăххин аллине панă. Михаил Николаевич Юхма пулса тăнă

«Чӗнтӗрлӗ кӗпер» ӑмӑртӑвӗнче, Ленин палӑкӗ умӗнче (сулахайран): спорт ветеранӗ Ю.Иванов, Юрий Айдаш, Любовь Мартьянова, Федор Агивер, Александр Волков, Герман Желтухин... Спорт ӑмӑртӑвне ертсе пыракан Владимир Кузьмин спортсменсене старт пуҫланни ҫинчен камантӑ парать.

1990 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 2-мӗшӗ.

ҫав вучах хуҫийӗ. Ҫӗршыв ҫийӗн ҫӗнӗ калча шӑрши сарӑлнӑ вӑхӑтра Михаил Николаевич та пулас ҫимӗҫ тымарне хашкасах шӑварма пуҫланӑччӗ-ҫке. Ҫавӑнпа ӑна пурте шаннӑ. Ӑна пысӑк правасем панӑ. Ҫав шанчӑкпа вӑл халӗ хӑйне кирлӗ, хӑйне ҫӗклемелӗх пур майсемпе те усӑ курма пуҫланӑ. Ӑнтарса пырать.

Тен, ӑнсӑртран персе ячӗ пуль Федор Георгиевич: «Эпир унран ытларах кӗтнӗччӗ. Хӑй тӗллӗн нумай ӗҫлеме пуҫларӗ Юхма. Ӑна хӑйне те улӑштармалла...» - тесе ҫавӑрттарса хучӗ.

Ҫӳк уйӑхӗн номерӗнче «Тӑван Атӑлӑн» редколлеги членӗсем ҫаксемччӗ: главный редактор Хведер Агивер, Юрий Айдаш, Александр Артемьев, Порфирий Афанасьев, Валем Ахун, Денис Гордеев, Николай Григорьев, Николай Дедушкин, Анатолий Емельянов, Герман Желтухин (отв.секретарь), Владимир Кузьмин (зам. главного редактора), Геннадий Терентьев, Атнер Хузангай. 10,6 пичет листипе тухать. 18 листаллӑ «хулӑн журналшӑн» тӗп редакторӗ хӑй те, КПСС обкомӗ те кӗрешӳ ҫӗклемерӗҫ, такам туса парасса кӗтсе, ӗҫе пӑчлантарчӗҫ. Тиражӗ 38 пинрен хӑпармарӗ. Хакӗ 50 пуспах юлчӗ.

Чӳк, 26.

Юхма мана Иван Якăльч патне Чăвашгиза кайма хушрĕ. Переводпа «Вучаха» куçармалли хута йĕркелесе пачĕ.

Кăнтăрла иртсен Агивер приказ çырчĕ. «Ĕç кĕнекине» - пурнăç кĕнекине - илтĕм. «Халăха пухас-и?» - тет. «Кирлĕ мар», - терĕм. «Юрĕ, ан кӳренсе кай, тен, пĕрле ĕçлесси татах та пулĕ», - терĕ.

1986 çулхи нарăсăн 24-мĕшĕнчен пуçласа паянччен «Тăван Атăлта» ишрĕм - иккĕмĕш капитанпа. Старпом тивĕçĕсене пурнăçласа. Тем пек тăрăшрăм пулин те (кăмăл сипетне пăхмасăр, журнал 60 çул тултарас умĕн плакат-реклама та пичетлеттерсе парса хăвартăм), никам та ăшă сăмах калакан пулмарĕ. Мĕнле чунсăр, йӳçĕх çынсем!

Иксĕмĕр хушăри тавлашура Желтухин, сарамак чирĕ ернĕ çын пек кĕлеткине чĕтретсе, çакна çеç калама хăйрĕ: «А мĕн тунă эс, фактически, «Тăван Атăлта?»

2002 çулхи çу уйăхĕн 22-мĕшĕ.

ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН «ВУЧАХĔ» УМĔНЧЕ

Хаҫат ятне, ҫӳлтине, Николай Лукич Яковлев художника ҫыртарнӑ. Ӳкерчӗкне тӑваканӗ тата хаҫат ятне, аялтине ҫыраканӗ - Чӑваш халӑх художникӗ Владимир Иванович Агеев.

Сакӑрвуннӑмӗш ҫулсен вӗҫнелле Чӑваш тепре ҫӗнӗрен куҫне уҫрӗ. Уҫрӗ те, тарӑн ыйхӑран вӑраннӑ-вӑранман, тавралла ункун пӑхкаласа илчӗ. Ӑҫта килчӗ - унта тӑван, хурӑнташ. Анчах... пӗри ҫурӑмпа ҫаврӑнса тӑнӑ, тепри хӑяккӑн пӑхать, виҫҫӗмӗшӗ кутӑн утать. Пӗрисем ҫуралнӑ ачине ЗАГСра чиперех вырӑс тесе ҫыртараҫҫӗ. Теприсем - вырӑс, тутар, казах, хахул, шур вырӑс, латыш халӑхӗсен вӑйӑ картинче сикеҫҫӗ. Хӑшӗсем ҫӗршыв картти ҫинче Шупашкар хулине куҫлӑх тӑхӑнса шыраҫҫӗ...

Пӑхать те тӗлӗнет Чӑваш: ҫурҫӗрелле те, кӑнтӑралла та, тухӑҫалла та, анӑҫалла та. Куҫпа виҫсе илме ҫук анлӑ иккен Чӑваш ҫӗршывӗ. Варринче вара... ҫуркунне уя тухакан сурӑх кӗтӗвӗ пек халӑх мэ-элетет, пӗр хӑватлӑ чӗлхепе мэлеттерекен аслӑ кӗтӳҫӗн шӑршӑнтарнӑ пушши шартлаттарнинчен сехӗрленсе, кӑшлать те кӑшлать хӑрма пуҫланӑ ҫереме.

«Эй, пуш уйӑхӗ вӑраннӑ, Чӑваш хӗвелӗ тухнӑ!» - тесе кӑшкӑрать куҫне уҫнӑ Чӑваш. Анчах мӗскӗн кӗтӳ вӑл мӗн сухӑрашнине ӑнланмасть, пуҫне ҫӗклеме хӑрать.

Тавҫӑруллӑ Чӑваш ҫырмана чупса анать те, тӑван ҫӗрӗнчен тапса тӑракан имлӗ ҫӑлкуҫ шывӗпе питне ҫӑвать, уҫӑлнӑ кӗлеткине улӑпла хускаткаласа ҫунатланать, чи ҫӳллӗ пӗлӗте ҫити улӑхса чан ҫапса ярать: «Эй, вӑран чӑваш халӑхӗ! Каҫӑрт пуҫна! Калаҫ чӑвашла! Юрла чӑвашла! Ташла чӑвашла! Юрат чӑвашла! Ҫавӑрттар пуҫна чӑвашла! Кӗреш чӑвашла! Ҫӗнтер!!! Мӑн Канаша - Чӑвашла канашлама!!!»

Атӑл ҫыранӗнчи Мӑн тӳпере чан ҫапакан халтӑр чӑваш Юхма Мишши - Паттӑр ен ҫӗр паттӑрӗ иккен! Чӑвашсен тинтерех ҫуралнӑ обществӑпа культура центрӗн хӑватлӑ керменӗ варринче Михаил Николаевич «Вучах» чӗртме хатӗрленет. Ӑна Алманчӑ чӑвашӗ Иван Яковлевич Тенюшев пулӑшать.

Юхмасем хӑйсене пулӑшма Ҫӗрпӳ каччине, чылай редакцире ӑсталӑхӗпе палӑрнӑ талантлӑ хаҫатҫӑна Александр Мокина маларахах ӗҫе илнӗ. Вӑл Пушкӑртра та, чӑвашсем йышлӑ пурӑнакан ытти ҫӗрте те пулма ӗлкӗрнӗ. Тенюшевӑн сылтӑм алли вырӑнӗнче самаях тарланӑ. Халӗ ӗнтӗ - эпӗ редакторӑн сылтӑм алли пекки, чӑвашла каласан - унӑн ҫумӗ. Мана ЧОКЦӑн 9-мӗш номерлӗ член билетне пачӗҫ, взнос тӳлеттерчӗҫ.

Малтанхи кунах республикăри «Союзпичет» агентствинче пулнăччĕ. «Вучаха» çитес çулшăн хамăр республикăра 2086 экземпляр çырăнтарнă. Кунта эпĕ куçичченех Вăрнар районĕнчи хамăрăн «Янгорчино» колхозра 100 экземпляр çырăнтарнăччĕ. Камчаткăран пуçласа Балти тинĕсĕ таранах сарăлма пуçланă «Вучах».

Çырăнтару ĕçне пуçласа янă. Çине тăрсах. Çапах та малалла ĕçлемелли татах та нумай. Васкавлăн реклама хатĕрлерĕм. Малтанхи, пĕчĕк листа çине çапни, тивĕçтермерĕ. «Тăванатăлсене» туса парса хăварнă пеккине, мăннине, Вăрнар типографийĕнче çаптартăм. Директорĕ, çывăх тусăм Вениамин Сорокин, заказа питĕ хăвăрт пурнăçласа пачĕ.

Унта чи малтанах «Мĕн вăл ЧОКЦ» тесе ăнлантартăм:

«Мĕн-ха вăл ЧОКЦ?

Чăвашсен обществăпа культура центрне (ЧОКЦ) мĕнпур чăвашсен 1989 çулти декабрьте Шупашкарта пулса иртнĕ сьездĕнче туса хунă.

Вăл хăйĕн ĕçне КПСС рескомĕн, Чăваш АССР Аслă Совечĕпе Министрсен Совечĕн наци культурине 1990-1995 çулсенче аталантармалли ĕçсен планĕпе килĕшӳллĕн йĕркелесе пырать.

Чăваш АССР суверенитечĕ çинчен йышăннă Закона пурнăçласа, ЧОКЦ хамăр республикăри тата ун тулашĕнчи чăвашсен культурине çĕнетсе аталантарас, чăвашсем йышлă пурăнакан регионсемпе çыхăну йĕркелес, шкулсемпе училищĕсем, клубсем уçас, хаçат-журнал кăларас тĕлĕшпе нумай ĕç хурать. Тĕслĕхрен, акă, Мускавпа Таллиннра чăвашсен вырсарникунхи шкулĕсем ĕçлеме пуçланă. ЧОКЦăн халĕ 6 филиалпа уйрăмĕ. Вăл пулăшнипе çĕршыври 18 хулапа облаçра культурăпа çутĕç обществисем уçнă. Малашне Казахстанра, Украинăра, Узбекистанра, Киргизире, Ленинградра тата ытти çĕрте çавăн пек обществăсем йĕркелесе ярассишĕн çине тăраççĕ ЧОКЦ активисчĕсем.

Чăвашсен обществăпа культура центрĕн ретĕнче халлĕхе çур миллион çын.

ЧОКЦ Шупашкарта «Вучах» хаçат тата «Пике» журнал кăларать. Обществăпа культура центрĕн çамрăксен «Термен» театрĕ тата «Пӳрнеске» пуканесен театрĕ, «Тарават» юрăпа ташă ансамблĕ, «Чăвашьен - ман тăван çĕршыв» творчество ушкăнĕ, «Сăнав» социологи службиы, «Кил-йыш» çемье клубĕ пур. Çавăн пекех И.Я.Яковлев ячĕпе хисепленекен дискусси, çамрăк талантсен «Тĕпел» тата партипе ĕç ветеранĕсен клубĕсем ĕçлеççĕ. «Йых-

рав» программи тăрăх Пушкăртстанра, Тутарстанра, Ульяновскпа Куйбышев облаçĕсенче пурăнакан чăвашсен пултарулăх коллективĕсем Чăваш çĕршывне концертсемпе килмелле. Хурт-хăмăр ĕрчетессине халăхра анлăрах сарас тĕлĕшпе ЧОКЦăн производствăпа эксперименталлă участокĕ «Симпыл» вăрманлă районсенче хăйĕн утарĕсене йышлăлатĕ. Тăмран чашăк-тирĕк, йывăçран хуçалăхра кирлĕ япаласем ăсталассине, чăваш тумтирĕ çĕлессине, кĕнекесем, брошюрăсем, справочниксем кăларассине вăй çитнĕ таран йĕркелеме палăртнă.

ЧОКЦа Мускаври министерствăсем, Чăваш республикинчи партипе Совет аслă органĕсем, предприятисемпе организацисем, колхозсемпе совхозсем, уйрăм çынсем пулăшу параççĕ.

Асăннă чăмăртанăвăн суйланă правленийĕпе президиумĕ пур. Аслă органĕ - сьезд. Вăл виçĕ çулта пĕрре пухăнать».

Рекламăн «Вучах» хаçата çырăнса илĕр!» чĕнӳ айĕнче çĕршыври мĕнпур чăвашсен хаçачĕ çинчен ăнлантарни пур.

Самаях анлă та кăткăс ĕç кĕтет пире.

Михаил Николаевич аслă кантурсене эртелпе çӳреме ăнкартнă. Ушкăнпа хăватлăрах, курăмлăрах, калаçу шухăшĕ те анлăрах, кĕретлĕрех. Мĕн çинчен калаçнине, пуçлăх мĕн шантарнине ĕнентерекен те пур.

Ĕмĕчĕ Юхман чăн-чăн чăваш ĕмĕчĕн тинĕсĕнчен те анлăрах, вăраннă вулкан пекех кĕрлет пуçĕ.

Ĕçлеме пынă кунах-ха, кăнтăрла иртсен вăл мана хула Советне илсе кайрĕ. Ĕçтăвком председателĕн ĕçĕсене Куславкка чăвашĕ Лев Смирнов педагог туса пырать. Михаил Николаевич ЧОКЦ валли Ленин лапамĕнчи чăваш кĕнеке лавккине 15 пинпе туянасшăн. Писательсен Союзне Володарски урамĕнчи пушаннă мăшăрлану керменне, ĕлĕкхи Ехрем хуçа çуртне куçма ирĕк панă та, Ленин проспектĕнчи 4-мĕш çуртра правлени аппарачĕн ирĕкленнĕ пӳлĕмĕсене те илсе юласшăн. Çак ыйтусемпе калаçрăмăр. Шанăçĕ тӳрех тĕтреллĕ пек туйăнчĕ. Ку чее чăваш чĕппи ЧОКЦшăн çунакан кантур пуçлăхĕ мар пулас.

КПСС обкомĕ выранне реском туса хунăччĕ те, хулан чи аслă кантурĕнчен республикăн тата чи-чи аслăраххине каçрăмăр. Мускав райкомĕн çуртĕнче Юхма 8 пӳлĕм çавăрса илме картса хунă. Партин хулакомĕпе реском ирĕк парасси çеç юлать.

«Коммунизм ялавне» йăтса ыванна Семенов рескомра идеологи тăрантасĕн ларкăчне сарăлса кĕрсе ларнă. Çавăн умĕнче

мĕскĕнлентĕмĕр. Демьян Филиппович çăра çӳçне шăла-шăла, пуçне ухса-пăркаласа пирĕнпе килĕшес пекки турĕ. Ыйтăва татса парассăнах туйăнчĕ.

Хаçат сарас ыйтупа тепĕр куннех Йĕпреçре пултăм. Хам лайăх пĕлекен колхоз хуçисем пулăшма шантараççĕ. Тусăма, районти почта уйрăмне ертсе пыракан Николай Григорьева, çырăнтару конкурсĕн условийĕсем килĕшрĕç. Ку ыйтăва манăн ЧОКЦ правленийĕнче çине тăрса татса памалла пулчĕ. Укçапа çыхăннă-çке. Акă вăл рекламăра та пур:

«Вучах» хаçата 1991 çулхи февральтен тата мартран илсе тăма çулталăк вĕçлениччен çырăнтаракансене хавхалантармалли çакăн пек премисем тунă: 100 экземпляртан кая мар - 50 тенкĕ, 75-шĕн - 40 тенкĕ, 50-шăн - 30 тенкĕ, 30-шăн - 25 тенкĕ, 20 е 15-шĕн - парне. Хаçата халăх хушшинче нумай саракансене «Вучахăн» «Хисеп Кĕрекине» лартса сăнӳкерчĕк пичетлеме, вĕсен пурнăçĕ çинчен ăшшăн каласа пама палăртнă».

Ку енĕпе чи вăйлă ĕçлекен çыхăну уйрăмне ятарлă преми памалли çинчен сĕнчĕ опытлă Николай Григорьевич. Ăна шута илетпĕрех, терĕм.

Михаил Николаевич уйăх вĕçĕнче отпуска кайрĕ, хăй вырăнне шанчăклă çумне Тенюшева хăварчĕ. «Вучах» нуши ман ĕнсе çине йывăррăнах хăпарса выртрĕ.

Раиса Васильевна Бородкина-Сарпи «Пикине», хĕрарăмсен журналне, Чăваш çĕршывне уçă саслăн çавăтса тухмашкăн айланать. Ăна Елчĕк енчи Лаш Таяпа йĕкĕчĕ Василий Петрович Сидоров-Эктел çыравçă пулăшать.

Хветĕр Агивере писательсен Союзне йышăнмалли комиссине ертсе пыма хушнă. Вăл мана каллех çуркуннеччен кĕттересшĕн. Çапах та, хамăн пӳлĕмре «Вучахшăн» вăхăтлăха ĕçлеме ирĕк пачĕ. Атту ЧОКЦ çиччĕмĕш хутри тăвăр пӳлĕме çурса пăрахать. Çынни унта хурал пӳртĕнчи пекех йăшăлтатать-çке.

Тумалли ĕçĕ темĕн чухлех. «Пике» редакторĕн çумĕпе Эктелпе хаçат-журнал пичетлемелли хут шыратпăр. Ĕлĕкхи Чăвашснаб вырăнне кооперативлă коммерци центрĕ туса хунă. Ăна темле Геннадий Павлович Баранников ярса илнĕ. Машинăсем тăвакан завода хирĕçле çуртра иксĕмĕре хуçа кăмăллăнах йышăнчĕ, аванах пуплешкелерĕ, эрне вĕçĕнче «Пикепе» «Вучах» валли хут тупса пама пулчĕ, паллах, тӳлевсĕр мар.

Тепӗр икӗ кунран реском издательстви «Пикене» пичетлеме йышӑнчӗ. Пирӗн «Вучах» пирки директорӗ Валериан Петрович Павлов ниепле те килӗшмест. Типографире наборлама вырӑн ҫук, ҫапма та ӗлкӗрейместпӗр, тет. Апла хӑтланнипе вӑл чӑваш халӑхӗн каҫарайми тӑшманӗ пулса юлать. Халӑх культурине аталанма чӑрмантаракан хӑрушӑ элемент вырӑнӗнчех.

Раштавӑн 5-мӗшӗнче КПСС Чӑваш рескомӗн идеологи секретарӗ Семенов патӗнче пултӑм. Демьян Филиппович мана реском издательствин тата Госкомиздатӑн директорӗсене чӗнсе, «Вучаха» ӑҫта пичетлемелли ҫинчен татса паратпӑр, терӗ.

Пӗрремӗш типографи директорӗпе Михаил Михайловичпа ӗнер хӑйӗн ӗҫ пӳлӗмӗнче калаҫрӑмӑр. Реском издательствин производстви вӑйлӑ, пирӗн кӗнеке кӑлармалла, хаҫат ҫапма кансӗр, тем тумалла ӗнтӗ, халӗ ҫӳлте ларакансем халӑх валли тавар туянмалли талон пичетлеттерсе тӑнран яраҫҫӗ, терӗ. Чӑнах та, талонсӑр нимӗн те сутмаҫҫӗ. Пурне те кашни ҫын пуҫне шутлӑ валеҫсе тухнӑ.

Декабрӗн 6-мӗшӗнче издательство директорӗ патне кайрӑм. Павлов мана сиввӗн йышӑнчӗ. Ӗнер Семенов унпа телефонпа калаҫнӑ-мӗн. «Ҫук, май килмест, ман халь Аслӑ Советӑн «Чӑвашьен» хаҫатне тата Шупашкар хула Совечӗн «Чебоксарские новости» ҫӗнӗ хаҫатне пичетлеме хатӗрленмелле», - тет. «Советсен хаҫачӗсене мӗншӗн пӗрремӗш типографире пичетлемелле мар-ха, мӗншӗн пире ҫеҫ аяккалла пӑрса ямалла, эпир вӗт мӗнпур чӑвашсен хаҫатне кӑларма хатӗрленетпӗр. Вӑл - рескомпа Аслӑ Совет йышӑнӑвӗпе килӗшӳллӗн пыракан политикӑллӑ ӗҫ. Пӗтӗм чӑваш умӗнче тӑшман пулса юласран хӑрамастӑр-и», - тетӗп. «Мана пурте хӑратма пӑхаҫҫӗ халӗ, сирӗн 5 пинлӗ хаҫату тупӑш памасть пире. Кӳкеҫре, Ҫӗрпӳре, Вӑрнарта пичетлӗр. Ман халь вӑхӑт ҫук, канашлу...» - терӗ те Валериан Петрович куҫлӑхне ҫамки ҫине хӑпартса, ӗҫ пӗтрӗ.

Эпӗ вара хыҫҫӑнах рескома вӗҫтертӗм. Семеновӑн йышӑну пӳлӗмӗнче пичетпе ӗҫлекен Николай Алексеевич Григорьев ларать. Вӑл та мана чунтанах «Вучаха» таҫта урӑх ҫӗрте пичетлеттересшӗн тӑнлантарма, реском типографине хӳтӗлеме пуҫларӗ. Павловран хӑйӗнчен те ирттерет. Пӗртте пирӗн майлӑ мар. Семенов патӗнче те ҫав юррах юрларӗ. Кӗҫех унта издательство директорӗ Павлов пычӗ. Ун куҫӗ умӗнче Демьян Филиппович мана ҫапла лӑплантарасшӑн пулчӗ: «Эпӗ ӗнер Васильковпа калаҫнӑ, вӑл сирӗн хаҫата пичетлеме килӗшет. Кӳкеҫ типографийӗпе калаҫса татӑлӑр.

Урăх сире тытма пултараймастăп, манăн вашнăй ĕçсем пур», - тесе суйкаласа кăларса ячĕ. Ăнлантăм: Семенов, Григорьев, Павлов пĕр шухăшланнă, каварлашнă. Пире футбол мечĕкĕ пек тапса çеç вăркăнтараççĕ.

Тенюшев чирлекелет. Вăл рескомăн пĕрремĕш секретарĕпе Шурчановпа хаçат шăпи пирки телефонпа калаçнă. Валентин Сергеевич «Пикепе» «Вучахне» те пĕр çĕртех çаптарасшăн, ку ыйтупа Семенов патĕнче тепĕр хут калаçма сăмах панă.

Реском ЧОКЦ валли Мускав райкомĕн çуртĕнче пӳлĕмсем уйăрнă, анчах тĕплентерсе алă пусман-ха. Финпай пуçлăхĕн çумĕ Алексеев паян Шурчанова алă пустарма пулчĕ. Ун пирки тунтикун шăнкăравласа пĕлмелле.

Декабрĕн вунпĕрмĕшĕнче Василий Эктелпе рескомра пултăмăр. Пире ыран Мускав райкомĕн çуртне пыма хушрĕç.

Декабрĕн вуниккĕмĕшĕнче рескомăн финанс пайĕн сотрудникĕ Геннадий Алексеевич Прокопьев сĕтел-пукан «сутрĕ», валеçсе пачĕ ĕнтĕ. Сидоровпа йышăнтăмăр. Пӳлĕмсене кăтартрĕ. Шала кĕрсен сылтăм енче - иккĕмĕш хутра. Унта пĕтĕмĕшле алăкпа кĕмелле. Коридор тăрăх кайсан, сулахаялла пăрăнсан, Юхман йышăну пӳлĕмĕллĕ ĕç вырăнĕ пулать, ăна хирĕç сылтăмра «Пике» редакцийĕпе бухгалтери валли икĕ пӳлĕм. Коридор вĕçĕнче - алăк. Ăна уçса кĕрсен - вăтам пӳлĕм, сылтăм енчи алăк хыçĕнче - анлăрах пӳлĕм, ун витĕр тухса тата тепĕр алăкран виççĕмĕш пӳлĕме кĕретĕн. Çак виçĕ пӳлĕмре «Вучах» редакцийĕ вырнаçмалла. Мана чи шалтине лартаççĕ. Ман пата çитес пулсан, тăватă алăк уçса кĕмелле пулать. Ĕ мĕрте курманни, ниçта пулманни пуль ку. Парти ĕçне-хĕлне, документĕсене йĕркелесе тытса пыракан сектор пулнă иккен. Унта пули-пулми çынна кĕртмен. Хаклă хутсене темиçе çăрапа питĕрсе усранă. Пире валли нумай клеткăллă шкафсем сыхланса юлнă. Редакцие усă курма меллĕ. Сĕтел-пуканĕ туллиех. Тĕп алăк пуçĕнче, лекцисем ирттермелли зал çумĕнче, тата тепĕр пӳлĕм пирĕн ЧОКЦ енне куçрĕ. Аялти хутра политвĕренӳ залне тата библиотека пулнă анлă вăрăм пӳлĕме пачĕç. Массăллă мероприятисем ирттерме кунта питех те меллĕ.

Декабрĕн 13-мĕшĕнче Тенюшев Василий Эктелпе иксĕмĕре тата Елена Ильинична Разина референт-инструктора пӳлĕмсене майлама ячĕ. Эпир Саша Мокинпа, «Вучах» хучĕсене папкăсене хурса, Пичет çуртĕнчен тухрăмăр. Василий Эктел хăйĕн «пикисемпе» (Галина Сорокина, Любовь Федорова, Людмила Сач-

кова тата Юхма кинĕ Людмила) журнал япалисене илсе кайрĕç, хăйсен пӳлĕмĕсене çуса тасатрĕç, тирпейлерĕç, пире пулăшмарĕç, - ыйтсан та. Мокин вара «Вучахăн» виçĕ пӳлĕмне те салтакла хăй çурĕ.

Хамăн хуçасене ответлă секретарь хăвăртрах илмелле, терĕм. Клим Сергеев ни пырас, ни пырас мар тенĕ пек хăтланса, пымарĕ. «Пионер сасси» хаçатран Петĕр Кузьмина чĕнтĕмĕр.

«Тăван Атăла» пытăм та, Герман Желтухин каларĕ: «Пирĕн журнала регистрацилерĕç, кăларакансем реском издательствипе писательсен Союзĕ пулаççĕ. Сирĕн «Вучах» пирки те асăнчĕç. Издательство директорĕ Павлов «Типографире ман ĕç вырăнĕ 145 процент таран тулнă, йышăнмастăп вĕсене», - тесе ала сулчĕ.»

Желтухин лăпланнă ăшчике тепĕр хут çулăм чĕртрĕ. Каçпала вара Юхма арăмĕпе телефонпа калаçрăм, аякра канакан Михаил Николаевича «Вучаха» никам та пичетлеме килĕшесшĕн марри çинчен мĕнле те пулин пĕлтерме ыйтрăм.

Айăпĕ, паллах, йăлтах Демьян Филипповичра. Юхма Семеновсем çинчен Мускав хаçатĕнче çырман пулсанах... Таврăççĕ халĕ ăна «таса чунлă» коммунист-пуçлăхсем. Çапла иккен вăл партократи, уççăнлăх саманинче те хĕсет, вăрттăн çыртать. Мĕнпур чăвашсен хаçатне чăвашсемех пичетлеме хирĕç. Ку питĕ тĕлĕнтерет, шухăшлаттарать.

Декабрĕн 19-мĕшĕнче «Тăван Атăлăн» 609-мĕш пӳлĕмне редактора парса хăвартăм. Арендăшăн Желтухинпа иккĕшне пĕр литр «Зубровка» ĕçтерсе ятăм. «Ан кӳрен ĕнтĕ, Володя, пурнăçра тем те пулать», - тесе лăплантарасшăн мана Агивер. Ăшĕнче хăйсем эпĕ кунтан тасалнăшăн тем пекех савăннă-ха.

1990 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче КПСС Мускав райкомĕ ĕçленĕ вырăна - Мускав проспектĕнчи 33 «А» çурта - ĕçлеме куçрăм. Малтанхи куна унтах ирттертĕм.

Кăнтăрла иртсен иккĕре Тенюшев пычĕ. Ăна хамăн пӳлĕме кĕртсе хамăн сĕтел хушшине лартрăм. Пĕрремĕш планерка ирттерчĕ. Эпир штатрисем иккĕнех, Мокинпа пĕрле. Василий Кошкин поэт та итлесе ларчĕ. Вăл тунтикунран литература пайне ертсе пыма тытăнать. Ĕçе кĕрес текенсем Николай Яковлев художник, Хветĕр Комаров журналист тата Элĕк ачи Кондратьев пулчĕç. Эпĕ туйнă тăрăх, Иван Яковлевич вĕсене пĕрне те ĕçе илмест, вĕсемпе вăл кадр ваййи çеç вылять. Лешсем чее редактор шухăшне ăнлансах çитереймеççĕ, пурпĕрех шанчăклăн талпăнаççĕ.

Декабрĕн 21-мĕшĕнче Саша Мокинпа пĕрремĕш номер материалĕсене хатĕрлеме пуçларăмăр. Пирĕн халĕ машинистка та пур: çап-çамрăк Ира Горшкова. Ман ват кашкăр Мокин ун енне ачаш кушак çури çине пăхнă пек пăхать.

Кăнтăрла иртсен Виталий Никитин-Станьял пычĕ. Халĕ вăл университетра вĕрентет. Хаçат пирки интересленчĕ. Çав вăхăтра Н.Л.Яковлев çитрĕ те, иккĕшне те «Вучах» заголовокне патăмăр, Николай Лукич тунине. Ун пирки Виталий Петрович сĕнӳсем парса ларчĕ. Хаçат ячĕ те килĕшмест ăна, И.Я.Яковлев сăнĕ те ватă уншăн, йӳтенĕ вăхăтри сăн ку, тет. Хаçат девизĕ те вăйсăртарах, тет. Художникĕ пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе, мăк-мак тукаласа пукана чĕриклеттерет. Станьял «Вучах» редколлегине кĕресшĕн, «Ялав» редколлегийĕнчен тухрăм, тет. ЧОКЦ правленийĕ ячĕпе заявлени çырса хăварчĕ.

Тенюшев сĕннĕ тăрăх, Агеева шăнкăравларăм. Владимир Иванович тунтикун редакцие пырать, ăна ĕçе илес пирки редактор приказ çырать.

Декабрĕн 24-мĕшĕнче писательсен Союзĕнчен Василий Кошкин-Кервен литпай пуçлăхĕнче ĕçлеме пычĕ. Ачи аванскер. Лăпкă. Чеелĕхĕпе вара нимле тутар-еврейран те ӳксех юлмасть пек.

Хуша-хуша, сĕне-сĕне çынсене материалсем тутаратăп. Ăслăлăх институтĕнчен Николай Иванович Егорова «Кĕреке» пухма ыйтрăм. Килĕшрĕ. Чăвашсен чапа тухнă лекторĕ, Вăрнар ачи Семен Григорьевич Григорьев «Чăн чĕрĕлтĕр» статйине

илсе килчĕ. Ĕçе кĕресшĕн. Шантартăм. Енĕш Виталийĕ мана «Кулăш хуранĕ» çакса яма пулăшрĕ. Николай Исмукова, Кошкин урлă, чăваш литературин паянхи проблемисем çинчен статья çыртарасшăн. Владимир Агеевпа сăнарлăх искусствинче чăвашлăх çитменни пирки виçĕмкунах пит хĕрсе калаçнăччĕ. Пĕр ярăм тăвас терĕмĕр. Паян пуçламăш статйине илсе килчĕ. Художниксем хăйсем çырни питĕ аван. Ăна сăнӳкерчĕксене якатма, заставкăсем, рубрикăсем хатĕрлеме хушрăм. Вăл хаçата илемлетме чунĕпе хатĕр.

Василий Самойловпа ответлă секретаре илес пирки телефонпа калаçрăм. Килĕшес пек мăнкăлтатрĕ.

Декабрĕн 25-мĕшĕнче Тенюшевпа хатĕр материалсене пăхса тухрăмăр, пĕрремĕш номĕре палăртрăмăр.

Василий Эктел хăйĕн çамрăк поэчĕсене пухрĕ, аялти хутри залра тавлашу ирттерчĕ. Унта Иван Яковлевича та калаçтарчĕ.

Декабрĕн 29-мĕшĕнче çулталăкри юлашки ĕç кунĕ пулчĕ. Ирхине Пичет çуртĕнче пултăм. Павлов сиввĕн калаçать, пирĕн хаçата пичетлеме шутламасть те.

Хамăр залра, «театртра», Çĕнĕ çул уявĕ пекки турăмăр, виçшер тенкĕ укçа пухрăмăр. Хĕрарăмсем елка лартнă, сăмаварпа чей вĕретнĕ, тортсем, панулми туяннă. Юхма саламларĕ, Сарпи хушса каларĕ. Галина Сорокинана çуралнă кун ячĕпе саламларăмăр. ЧОКЦ ăна 30 тенкĕ преми пачĕ.

Ирпе КПСС хулаком секретарĕ Грета Лазаревна Валицкая реском çыннисемпе пынăччĕ. Темле путсĕрсем пирĕн тĕп алăка тăпăлтарса кăларса ЧОКЦ япалисене илсе кайнăччĕ. Çавăн пирки хулакомра ĕнерех калаçу пулнăччĕ. Унта Юхмапа Сарпи хутшăннă. Лере вĕсене пулăшма пулнă. Паян, хăйсен куçĕпе курса ĕненнĕ хыççăн, пулăшма шантарчĕç.

1991 çул.
Ĕç кĕнекинчен.
Январĕн 2-мĕшĕ.

Çĕнĕ çул пирĕншĕн ăнăçсăр пуçланчĕ. Ирех Тенюшев шăнкăравларĕ, Кĕркури Луча культура пайне илетпĕр, терĕ. Килĕшрĕм. Пултаруллă, опытлă журналист, писатель, çитменнине тата - ентеш. 10 сехет тĕлне пурне те рескома илсе пыма хушрĕ. Луча, Мокина илсе çитертĕм. Тенюшевпа пĕрле Семенов патне кĕтĕмĕр. Демьян Филиппович пире çапла шантарчĕ: «Издательство директорĕпе Павловпа калаçса татăлатăп та, ун

çинчен сире пĕлтеретĕп». Çапла пире хăвăрт ăсатса кăларса ячĕ.

14 сехетре каллех рескома килтĕмĕр: Юхма, Разина, эпĕ, «Пикерен» - Любовь Федорова. Управделамисем патĕнче (Алексеев, Прокопьев) пӳлĕмсем, япаласем пирки тавлашса лартăмăр. Ытти ирĕклĕ пӳлĕмсене парсан, иккĕмĕш хут йăлтах ЧОКЦа куçмаллаччĕ. Театрсен обществин республикăри уйрăмĕ кантурлă пулас тенĕ пуль çав... Пире памалли пӳлĕмсене вĕсем валли уйăрнă. Тавлашу, хирĕлӳ пуçланчĕ.

Республикăри партконтроль комиссийĕн председателĕ Петров патĕнче пултăмăр. Александр Петрович пире питĕ ăшшăн йышăнчĕ. Тахçанхисене аса илсе шăкăлтатса калаçса лартăмăр. Вăл çапла каларĕ: «Сире валли пӳлĕмсем парас ыйтăва икĕ хутчен хускатрăм. Унччен никам та парасшăн пулман. Шурчанова та, Валицкаяна та халăх сире урăхла ăнланма пултарать, тесе аса илтертĕм. Реском бюровĕнче пире пӳлĕмсем парас мар тесе рескомăн иккĕмĕш секретарĕ Г.П.Леонтьев хирĕç пулчĕ. Пĕчченех. Эпĕ те çинех тăтăм». Пуçра шухăш вĕлтлетсе илчĕ: «Партин аслă тӳпине шăвăнса хăпарнă вырăс çынни кам вара вăл çакăн хыççăн? Чăваш халăхĕн тăшманĕ!»

Петров хулаком секретарĕпе Валицкаяпа телефонпа çыхăнчĕ, реском секретарьне Шурчанова та шăнкăравларĕ.

Юхма Александр Петровича пĕр истори каласа пачĕ. Пĕлтĕр вăл ЧОКЦ активисчĕсемпе Куйбышев облаçне кайнă. Чăвашсем йышлă пурăнакан пĕр районта ачасене нихăш шкулта та чăвашла вĕрентмеççĕ, чăвашла хаçат та, нимĕн те çук, тет. Парти райкомĕн секретарĕпе калаçнă чухне лешĕ çапла лаплаттарса хучĕ тет: «Эсир, писательсем, укçа нумай çапатăр, парăр хăвăр гонорартан пĕр 50 пинне, Чăваш республики укçа куçарса патăр, вара чăвашсене чăвашла вĕрентĕпĕр». Юхма ăна çапла тавăрса калать: «Эсир паçăр кăна пирĕн район экономики чăвашсен вăйĕ çинче анчах тытăнса тăрать терĕр-çке, çапах та вĕсем тăвакан наци тупăшĕ ни ман кĕсьене, ни Чăваш çĕршывне пырса кĕмест, хăвăр района аталантармах каять, çавăнпа та камăн кама пулăшас пирки тĕплĕнрех шухăшламалла».

Унтан таврăнсан, Михаил Николаевич пысăк статья çырса хаçатра пичетлерĕ. Мускавра, унтан Пĕтĕм Союзри радиопа та тухса калаçрĕ, Самар ен бюрократчĕсене питĕ хытă çунтарчĕ. Облаçа ертсе пыракансене çакă килĕшмен. Вĕсем вара такамсене КПСС Тĕп Комитетне çăхав çыртарнă та... Хура хут ятарлă почтăпа Шупашкара çитнĕ. Идеологи секретарĕ Семенов ăна Хветĕр

Уяр писателе вулаттарса ĕслетсе янă. Федор Ермилович, Самар чăвашĕсен патриочĕ, ентешĕсене хӳтĕлес тесе вилес пек курайми хаяр тăшманне çапса хуçас ĕмĕтпе писательсен Союзĕнче Юхмана хирĕçле усал-тĕсел япаласем шыраса çӳреме пуçланă.

Пирĕн çул вĕçленмен-ха. Шурчанов патне ушкăнпах çитрĕмĕр. Валентин Сергеевич Семенова чĕнтерчĕ. «Вучах» хаçат пирки тавлашсах кайрăмăр. Эпĕ Демьян Филипповича хăй патне уйăх усăсăр чуптарнăшăн вăрçрăм. Вăл пĕрмаях суять. Хаçата малтан эпир 5 пинпе кăларасшăнччĕ, халĕ 10 пинпе те пичетлеме хатĕр. Семенов ялан Павловăн хăват çитмест (арçын хăвачĕ мар ĕнтĕ, вăл унăн темле йăкăл-якăл валли те çитет пуль-ха), тет. Шурчановĕ те шăртне хир сысни пекех тăрататъ. Семенов пире çапла ăнлантарчĕ: «Пĕрремĕш типографире фотонабор тăватăр, реском типографийĕнче пичетлетĕр. Эпĕ вĕсемпе калаçса татăлнă, иккĕшĕ технологи йĕркине туса çитереççĕ те çак эрнере, вара ĕç малалла каять.» Пире çаплалла лăплантарса ăсатса ячĕç.

Юхма пирĕнтен те юлчĕ. Кайран вăл мана Семенов реском секретарĕнче ĕçлеме пултарайманни çинчен пĕрремĕш секретарьпе ĕнентерӳллĕ калаçрăм, терĕ.

Рескомран тухсан, хулакома кĕтĕмĕр, иккĕмĕш секретарьпе Р.Морозовпа калаçрăмăр. Вăл пире япаласем тупса парассипе пулăшма пулчĕ.

Юлашкинчен хула Совет ĕçтăвкомĕнче пултăмăр. Ĕçтăвком председательне В.Алексеева суйланăччĕ те, Л.Е.Смирнов унăн заместителĕнче (çумĕнче) юлнă. Лев Евгеньевич патĕнче эпир Юхмапа иксĕмĕр пĕрремĕш хут мар ĕнтĕ, йăлăхтарса та çитертĕмĕр пуль. Вăл пире яланхилле культурăллă йышăнчĕ, эпир ыйтнисене тума пулчĕ. Пире пӳлĕмсем ытларах кирлĕ. Писательсен Союзĕн аппарачĕ урăх çĕре куçсан, эпир вĕсен вырăнне йышăнасшăнччĕ-çке. Уçăлсах кайрĕ çын, вăл пире тата тепĕр хăтлă зал тупса пама пулчĕ. Ун патĕнчен çунатланса тухрăмăр.

Çĕнĕ çула уявланă хыççăнхи йывăр кунра бюрократи тыллинче лăчăртатрăмăр.

Январĕн 3-мĕшĕ.

Ирех издательствăна вĕçтертĕм. Саккăр тĕлне Павлов пычĕ, анчах усси пулмарĕ. Пирĕн хаçата пичетлеме килĕшмест. «Ĕнер эпир ĕçлемен, манпа рескомран никам та калаçман», - терĕ. Епле намăссăрла улталанă иккен пире ĕнер реском ертӳçисем. Коммунистсемех-ши вара вĕсем? Хам эпĕ суйнине нихçан та чăтма пултарайман та... Тăвăлнă чуна аран-аран пусартăм.

Юхмапа тăххăр тĕлне хула Совет ĕçтăвкомĕнче Смирнов патĕнче тĕл пултăмăр. Вăл пире зал кăтартма илсе кайрĕ. Ялхуçалăх министерствин унччехи хĕрлĕ кĕтесĕ. Халĕ - автобазăн. 300 вырăн. Пире театр тума парас пек калаçрĕç. Унтан Аслă Совет Президиумĕн председателĕ А.П.Леонтьев патне вĕçтертĕмĕр. Вăл йышăнчĕ, театр пирки калаçса татăлтăмăр.

Январĕн 4-мĕшĕ.

Ирех тăрса КПСС Чăваш рескомĕн пĕрремĕш секретарĕ ячĕпе çыру çыртăм, машинкăпа пичетлесе Юхмана издательство çуртĕнче кăтартрăм. Вуласа тухрĕ, нимĕн те улăштармарĕ, вара рескома çитерсе патăмăр. Акă вăл:

«КПСС Чăваш рескомĕн пĕрремĕш секретарьне
В.С.Шурчанов юлташа.
Хисеплĕ Валентин Сергеевич!

Ку пысăк ыйтупа эпир Сире çĕнĕрен канăçсăрлантаратпăр ĕнтĕ. Мĕншĕн тесессĕн, урăхла хăтланма пирĕн май та çук.

Хăвăрах астăватăр, кăçалхи кăрлачăн иккĕмĕшĕнче Эсир пире хăвăр патра ăшшăн йышăнтăр. Çĕнĕ çул ячĕпе вĕри чей ĕçсе чунтан калаçнă вăхăтра вĕриленсе те кайрăмăр. Рескомăн идеологи секретарĕ Д.Ф.Семенов юлташ пире Сирĕн умăрта питĕ лайăх ăнлантарса пачĕ, «Вучах» хаçат кăларассипе эпĕ 1-мĕш типографи директорĕпе Михаил Михайловичпа реском издательствин директорĕ Валериан Петрович иккĕшĕ пĕтĕмĕшле технологи йĕркине туса хатĕрлеççĕ, фотонабор унта туса реском типографийĕнче пичетлемелле пулать, тесе питĕ ĕнентерчĕ. Эпир Сирĕн пӳлĕмрен çунатланса тухса кайрăмăр. Тепĕр кунне, ирпе, В.П.Павлов юлташ патне савăнса çитрĕмĕр, анчах вăл пире хурлантарса пăрахрĕ. Кăрлачăн иккĕмĕшĕнче вĕсем ĕçлемен, çавăнпа унпалан никам та калаçман иккен. «Вучах» хаçата пичетлеме вăл шутламасть те.

Павлов хирĕçленисĕр пуçне пире реском секретарĕ Д.Ф.Семенов Сире те, пире те чике тăршшĕ лартни шалт тĕлĕнтерчĕ. Мĕнле-ха вăл, коммунист, рескомăн бюро членĕ, идеологи пуçлăхĕ, пире те, Сире те çапла куç умĕнчех ултавлама пултарать? Çакă пире акă мĕнле шухăш патне илсе çитерет. Демьян Филиппович Сирĕн умăрта та суеçĕ рольне çеç вылять пулсан, республикăри парторганизаци тата пĕтĕм чăваш халăхĕ умĕнче мĕнле роль вылять-ши? Ун сăмахне хăçан тата камăн ĕненме пулать-ши?

Ĕненме, чăнах та, май çук. «Вучах» хаçата малтан реском типографийĕнче пичетлеме шантарнă пулнă, анчах та иртнĕ çулхи раштав уйăхĕн тăваттăмĕш кунĕнче издательство директорĕ

В.П.Павлов пире хăйĕн сăмахне пурнăçлама килĕшменни çинчен çирĕплетсе каланă хыççăн, тепĕр куннех рескома çитрĕмĕр. Д.Ф.Семенов пире рескомпа Госкомиздат пуçлăхĕсене чĕнсе «Вучах» ăçта пичетлемелли ыйтăва татса паратпăр, терĕ.

Раштавăн улттăмĕшĕнче реском издательствин директорĕ ирех пире сиввĕн йышăнчĕ. Семенов унпа телефонпа калаçса илнĕмĕн. «Çук, май килмест, манăн халь Аслă Советăн «Чăвашьен» хаçатне тата Шупашкар хула Совечĕн хăйĕн хаçатне пичетлеме хатĕрленмелле», - терĕ. «Министрсен Совечĕн хăйĕн вăйлă типографи пур, çав хаçатсенчен пĕрне те пулин мĕншĕн унта çапмалла мар, мĕншĕн пире çеç аяккалла пăрса хăвармалла, эпир вĕт мĕнпур чăвашсен хаçатне кăларма пуçлатпăр, вăл рескомпа Аслă Совет йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн пулса пыракан ĕç, капла хăтланнипе эсир чăваш халăхĕ умĕнче тăшман пулса юласран хăрамастăр-и», - терĕмĕр те, Валериан Петрович çапла хуравларĕ: «Мана халĕ пурте хăратма пăхаççĕ, мана сирĕн хаçат тупăш памасть, пире хула Совечĕн ĕçтăвкомĕ хваттер парать. Кӳкеçре, Çĕрпӳре пичетлĕр».

Çав кунах Семенов патĕнче пултăмăр. Унта ытти редакторсемпе Павлов та пынăччĕ, вăл хăйĕн кивĕ юрринех юрларĕ. Семенов юлташ вара, «Эпĕ ĕнер Васильковпа калаçнă, вăл сирĕн хаçата пичетлеме килĕшет. Кӳкеç типографийĕпе калаçса татăлăр, урăх сире пӳлĕмре тытма пултараймастăп, пирĕн кунта ĕçлĕ калаçу», - тесе лăплантарса кăларса ячĕ.

Çакăн хыççăн «Вучах» хаçатăн тĕп редакторĕ И.Я.Тенюшев юлташ Сирĕнпе телефонпа калаçнă. Эсир «Вучах» хаçатпа «Пике» журнала пĕр çĕртех пичетлеттерме килĕшес пирки Семеновпа тепĕр хут калаçма сăмах панăччĕ. Ун хыççăн та çанталăк улшăнмарĕ. Раштавăн 14-мĕшĕнче Павлов каллех пире хирĕçленĕ.

Пирĕнсĕр пуçне Тенюшев та темиçе хутчен калаçнă Семенов юлташпа, эпир унпа пĕрле темиçе хутчен пулнă идеологи секретарĕ патĕнче. Çĕнĕ çул уявĕ хыççăн та, Сирĕнпе тĕл пуличченхи ир, унăн пӳлĕмĕнче редакци эртелĕпех пултăмăр. Пире вăл каллех «Павловпа калаçатăп та, сире каçалапа пĕлтеретĕп»,- тесе шантарчĕ. Авă вара çавăн хыççăн эпир Сирĕн пата çитрĕмĕр.

Пире улталаса, мечĕк тапнă пек пĕр пӳлĕмрен тепĕр пӳлĕме хăвалани ытла та киревсĕр хăтлану пек туйăнать. Шутлăр-ха хăвăрах, эпир те вĕт хамăршăн мар, чăваш халăхĕшĕн çывăрма пĕлмесĕр тăрăшатпăр. Вĕт чăвашсен обществăпа культура центрне мĕнпур чăвашсен 1989 çулта Шупашкарта пулса иртнĕ съездĕнче туса хунă. Вăл хăйĕн ĕçне КПСС Чăваш рескомĕн, Чăваш

ССР Аслă Совечĕпе Министрсен Совечĕн наци культурине 1990-1995 çулсенче аталантармалли мероприятисен планĕпе килĕшӳллĕн йĕркелесе пырать. Чăваш ССРĕн суверенитечĕ çинчен йышăннă Закон тăрăх, ЧОКЦ хамăр патри тĕп чăвашсен культурине çĕнетсе вăйлатас, чăвашсем йышлă пурăнакан регионсемпе çыхăну йĕркелесе ярас, шкулсемпе училищĕсем, клубсем уçас, хаçат-журнал кăларас тĕлĕшпе нумай ĕçлет.

«Нумай та пĕтет, сахал та çитет, пĕрле пурăннине мĕн çитет!» - çак девизпа тухма тытăнмалла мĕнпур чăвашсен хаçачĕ. «Вучаха» кăларма çĕршыври мĕнпур чăвашсен сьезчĕ йышăннă. Ăна валли Раççей Аслă Совечĕн Пичет министерстви çителĕклĕ таран хут уйăрса панă. Уншăн ЧОКЦ председателĕ М.Н.Юхма Мускавра нумай тăрăшнă, çине тăрсах ĕçне тунă.

Хăвăрах пĕлетĕр, чухлатăр, чăваш культури юлашки вăхăтра хавшарĕ. «Вучах», ЧОКЦ органĕ, шăпах ĕнтĕ чăваш культурине çĕнĕрен çĕклесе яракан чăн-чăн вучах пулĕ. Вучах мĕн авалтанпах çемье пурнăçĕн хăвачĕ шутланнă, пирĕн «Вучах» та чăваш халăхĕн пурнăç хĕрĕвĕ, пурнăç ăшши, пурнăç çĕкленĕвĕ. «Вучах» - чăваш чанĕ, чăваш сасси, чăваш трибуни пулĕ.

Чăваш çыннин ирĕклĕ сăмахĕ пурнăçра хăйĕн вырăнне туптăр тесех ĕнтĕ пурте чăвашах пулар-ха. Палăртнă мăн ĕçе тума чăрмантаракан Павловсене, хитре сăмах юптарса улталама хăнăхнă Семеновсене ăнлантарса тӳрĕ çул çине кăларар-ха, тархасшăн.

Пăлханнă хушăра Эсир, аптранă енне, çапла та каласа хутăр: «Атьăр апла республика хаçачĕсене кăларар та реском типографийĕнчен, вĕсене Кӳкеçре пичетлеме тытăнар». Унти йывăрлăха Эсир туйма пултарнине эпир ăнланатпăр. Çавăнпа та Сире çапла сĕнес килет. Унтан «Советская Чувашия», «Коммунизм ялавĕ» хаçатсене мар, Советсен пĕр-пĕр хаçатне кăларса 1-мĕш типографире пичетлемелле. Министрсен Совечĕн хăйĕн полиграфи базине çирĕплетес тесе тахçанах вăй хумалла пулнă. Мĕншĕн вĕсем КПСС рескомĕн хатĕр, вăйлă типографине сĕкĕнеççĕ? Эпир, çапах та, пушă вырăнта ĕçе пуçăнатпăр. Кама чи малтан пулăшу кирли çинчен Эсир аванах чухлатăр.

«Вучах» хаçата Шупашкартах йĕркеллĕ пичетлеме пулăшсамăр пире, Валентин Сергеевич, хамăр халăхăн чăн-чăн патриочĕ пулнине ĕçпе тивĕçлипе кăтартса парсамăр.

Коммунистла салампа,

Чăвашсен обществăпа культура центрĕн председателĕ

М.Н.Юхма. «Вучах» хаçатăн тĕп редакторĕн заместителĕ В.П.Кузьмин.

1991 çулхи кăрлач. 3-мĕш кунĕ».

Январĕн 8-мĕшĕ.

Редакци ушкăнĕпе вунпĕр тĕлне рескома çитрĕмĕр: эпĕ, Луч, Кервен. Издательствăра ĕçлекен Тенюшев кăштăртатса çитрĕ. Советсен çурчĕн виççĕмĕш хутĕнче шăпах пичетпе ĕçлекен Григорьев тĕл пулчĕ. «Пĕрремĕш çук, Семенов Мускавра, сирĕн хаçата пурпĕрех Кӳкеçре пичетлемелле пулать», - пĕлтерчĕ мăнкăмăллăн Николай Алексеевич. Эпĕ каларăм: «Атьăр кунта гавлашса çынсене култарар мар, хăвăр пата хăпарар».

Кĕçех эпир пичет секторĕн тăваттăмĕш хутри анлă пӳлĕмне «пуçлăх» тавра пуçтарăнса лартăмăр. Пирĕн калаçăва Павел Афиногенович Крысин журналист итлесе ларать. Вăл пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» ответлă секретарĕ, унта хаçат-журнал тишкерме пынă. Григорьев пире «Иртнĕ шăматкун Шурчанов патĕнче издательствăсен пуçлăхĕсемпе редакторсен, идеологсен канашлăвĕ пулнă, çавăнта «Вучаха» Кӳкеçре пичетлеме йышăннă», - терĕ. Тенюшев ыйтрĕ: «Мĕншĕн унта пире чĕнмен?» Григорьев питĕ татса, шăл витĕр сăрхăнтарчĕ: «Канашлура урăх, хуравлăрах ыйтусем те сӳтсе явнă, сирĕн пирки аса илсе çеç калаçнă», - терĕ.

Эпĕ Григорьева иртнинче Шурчанов патĕнче мĕнле хĕрӳ калаçу пулса иртни тата çавăн чухне Семенов пире те, пĕрремĕш секретаре те икĕ директорпа технологи йĕрки пирки калаçса татăлни çинчен, «Вучаха» пĕрремĕш типографире фото майĕпе наборласа реском типографийĕнче пичетлеме йышăнни çинчен питĕ тĕплĕн ăнлантартăм. Хирĕççех кая пуçларăмăр. Унăн малтанхи хирĕçлӳ юрри каллех сиксе тухрĕ. Вăл вара Василькова телефонпа шыраса тупрĕ. Борис Петрович патĕнче шăпах Павлов та пулнă. Григорьев пирĕн пирки иккĕшне калаçса татăлма хытах хушрĕ. «Кунта каллех Юхма делегацийĕ килнĕ», - тет. Тенюшев пире ĕçе ячĕ, хăй унтах юлчĕ.

Васильков патне Михаил Николаевич тепре кайса килчĕ. Кăнтăрла иртсен Тенюшев пире хаçата Шупашкарта пичетлеме килĕшни çинчен пĕлтерчĕ. Хăвăрт ответлă секретарь шырама пуçларăмăр. Вася Самойлов «çухалнă», хула тăрăх хăйĕн ĕмĕрхи чирне чĕртсе çӳрет. Клим Сергеева телевиденире шыраса тупрăм. Вăл, лери ĕçе вĕçлесе, 17 сехетчен маларах çитрĕ. Макет тума тытăнтăмăр, 7 страница турăмăр - 19 сехет те 30 минутчен.

Январĕн 9-мĕшĕ.

Ирех Тенюшев шăнкăравлать. Вăл пĕрремĕш номер валли хатĕрленĕ манăн «Тепре куриччен!» памфлета кам çырнине пĕлмен. Унтан Шурчанов, Леонтьев, Семенов çинчен пичетленине кăларттарасшăн. Эсир хуçа, юрĕ, терĕм. Шутларăм-ха, кун пирки Юхмапа канашлатех ĕнтĕ, терĕм. Чăнах та, калаçнă. Лешĕ материала эпĕ çырни çинчен пĕлтернĕ. Питĕ вăйлă çырнă тесе мухтарĕ, тет. Чăнах та, «5» паллă лартса панă. Ку таранччен халĕ вăл икĕ автора «5» паллăпа хакларĕ. Наука кандидатне Николай Егорова «Сурхуришĕн» тата мана. «Сурхурине» ирттерекенĕ кам? Кузьмин. Ыттисене, Юхмана та «4», «3» лартса парать. Йĕпреçре хăйпе пĕрле ĕçленĕ Семен Григорьев та «виççĕрен» ытла илеймерĕ çирĕп редактортан.

Климпа, Ворошилов утпа ярăннă пекех, кăшт малалла кайрăмăр, каçпа саккăрччен макет тăвассине вĕçлерĕмĕр. Материалсене йăтса киле илсе килтĕм, вĕсене тепĕр хут пăхса тухрăм. Арăм мăкăртатать: «Такамшăн, темиçе çыншăн кутĕрленсех ĕмĕрне ирттеретĕн ĕнтĕ, çынсем пĕрмай çыра-çыра пичетлеççĕ, çемйисене усă кăтартаççĕ...» Эпĕ савăнăçа ниçта хураймасăр кулса ларатăп. Ирпе материалсене пĕрремĕш типографине леçрĕм. Ĕнер те ирех унта пулнăччĕ. Кăнтăрлапа реском издательствин производство пайĕн пуçлăхĕ Галина Борисовна Владимирова пире телефонпа шыраса тупрĕ. Хаçат пичетлес пирки хăш-пĕр ыйтусене татса патăмăр.

Реском пирĕн пӳлĕмсене юсаттарма пуçланă. Пире тата тепĕр пӳлĕм пачĕç, унта ЧОКЦ аппаратĕнче ĕçлекенсем тата бухгалтер лараççĕ. Кунĕпех çын. Пушкăртстанран, Тутарстанран, ытти облаçсенчен килнĕ чăвашсем хăйсен нуши-терчĕпе пулчĕç. Вĕсемпе калаçса материал тăватпăр, хуравлă çынсемпе тĕл пултарса вĕсене пулăшатпăр. Кашни кунах çапла.

Эх, епле хĕпĕртерĕм: «Тăван Атăлта» Агивер куçĕнчен пăхса тăвăрланни мар, чуна кăмăллă ĕç. Эпĕ яланах хама шаннине, ĕненнине юрататăп. Кунта эпĕ шăпах çавна туятăп. Çавăнпа ĕçлес килет, хаçата вăйлă тăвас килет. Юхма пĕр февральсенче хаçата хăв алă пусма тытăнатăн, терĕ. Тĕрĕссипе, хаçатне хам алăпа тенĕ пекех пуçарса ятăм. Паллах, пĕччен мар.

Январĕн 10-мĕшĕ.

Пĕрремĕш номерĕн материалĕсене хул хушшине хĕстерсе 1-мĕш типографине çитрĕм. Производство пайĕнче мана директорпа заведующийĕ кĕтсе илчĕç. «Эпĕ çĕрле Тенюшева тĕлĕкре

курса выртатăп, ун вырăнне Владимир Прокопьевич çитрĕ», - терĕ Надежда Тимофеевна Михайлова, Йĕпреçьен хĕрĕ. Михаил Михайлович Александров каларĕ: «Эпир халĕ сирĕнпе килĕшӳ тумасăрах ĕçлетпĕр. Ĕçленĕшĕн çынсене тӳлĕр». Кашни номершĕн пĕтĕмпе 200 тенкĕ пама килĕшрĕм. Типографире шанчăклă пĕр çын тытма тăрăшăр, тесе асăрхаттарчĕç.

Выпускающий редактор - хайхи шанчăклă çын - шырама пуçларăм. Тахçан «Молодой коммунистра» выпускающий пулнă Варсонофий Михайлович Михайлова аса илтĕм, ăна Петĕр Львов писатель урлă васкавлă шыраттартăм, Тенюшев патне издательствăна пытăр, терĕм. Реском типографийĕнче производство пайĕн заведующийĕ Галина Борисовна мĕн чухлĕ хут кирли çинчен шутласа кăтартрĕ, Пичет графикне пире те кĕртме хатĕрленеççĕ. «В мире приключений» хаçатпа (Кряжиновăн) эсир кăна юлнă», - терĕ. Вăт мĕнле! Пире Павлов аран-аран чи юлашкинчен кĕрттерчĕ.

Эпĕ редакцие таврăннă çĕре Иван Яковлевич шăнкăравларĕ: «Варсонофий Михалча реклама пачкине йăттарса яратăп». Чăнах та Михайлов мекĕрленсе йăтса çитрĕ. Самай ватăлнă вăл, çапах та унчченхи пекех йĕрĕ.

Типографине пĕрле кайрăмăр. Унта Клим Сергеева тĕл пулса виççĕн фотонабор цехне кĕтĕмĕр. Хĕрсем шурă халатпа ĕçлеççĕ. Линотип цехĕнчи пек мар таса, сывлăш уçăрах. Пирĕнне вовсю наборлаççĕ.

Январĕн 11-мĕшĕ.

Иккĕмĕш номер тăватпăр. Климпа тата Варсонофипе каçхине саккăрччен лартăмăр. Макет хучĕсене «Тантăшран» илнĕччĕ.

Кĕркури Луч ĕнер амăшĕн хĕрĕх кунне асăнма тесе ыйтса Вăрман Кипеке кайрĕ.

Эпир реском секретарĕ Шурчанов патне янă çырăва пичет секторĕ хупасшăн, çавăн пирки Григорьев шăнкăравланă. Эпĕ каларăм: «Пире ответ паччĕр, вара икĕ çырăвне те хаçатра пичетлĕпĕр».

Январĕн 12-мĕшĕ.

Шăматкун кăнтăрлаччен иккĕмĕш номер макечĕсене туса пĕтертĕмĕр, кăшт вак-тĕвек кăна юлчĕ. Эпир Климпа тата Варсонофипе мĕнле ĕçленине пăхса ларма шалти пӳлĕмрен Саша Мокин та тухнă. Ĕнер те пирĕнпе пĕрлех пулчĕ. Килĕнче арăмне, Нина Артемьева сăвăçа, «Эпир çапла юлса ĕçлетпĕр», - тесе тыттарать пуль ĕнтĕ.

Ку çуртра КПСС Чăваш обкомĕ (рескомĕ) ĕçленĕ

Тўп-тўрĕ пăхса та, йăх-ях кулса та, ихĕрсе те епле чике тăришĕ лартса пычĕç вĕсем пире?..

Н.А.Григорьев

В.П.Павлов

Январĕн 14-мĕшĕ.

Ирпе хăй пÿлĕмĕнчен Юхма каçрĕ, материалсене пăхма пуçларĕ, пăхнă май унăн кăмăлĕ улшăнса пынине туйрăм. Хăй патне чĕнчĕ. Унта пурне те тепĕр хут пăхса тухрĕ. «ЧОКЦа чăрмантарса пынă çынсен ячĕ-хушамачĕ тавращĕ те ан пултăр пирĕн хаçатра, мĕнле вĕсем, писательсем, Уярсемпе Дедушкинсем тата ытти те, пире хирĕç çапăçаççĕ, сана хăвна та, авă, хăçантанпа Союз членне илмеççĕ», - терĕ. Дедушкин юбилейĕ пирки Константин Петров çырнă «Тăхăрьялта» статьяна аяккалла пăртарчĕ. Виталий Станьял статйине те пичетлеме тăхтас, терĕ. Раççей Федерацийĕн Юстици министрĕ Николай Федоров пур сăнÿкерчĕке кăларттарчĕ. Василий Кервенĕн писательсен съезчĕ çинчен хатĕрленĕ информацие кĕскеттерччĕ. Унта Хветĕр Уяра халăх писателĕ ят пани çинчен каланăччĕ. Ăнлантăм вара малашне мĕнле ĕçлемеллине. «Эсĕ манăн шанчăклă çын», - терĕ вăл.

Тенюшев планерка ирттерчĕ. Мĕнле кивĕлле ĕçлет вăл. Икĕ хаспатин тарçи вырăнĕнче халĕ эпĕ.

Январĕн 17-мĕшĕ.

Хаçат полосисем çыпăçтарма хатĕр. Макет хучĕ хаçат полосипе пĕр танах пысăк. Варсонофий Михалч кăвак тĕспе çапнă гранкăсене, статьясен ячĕсене, сăнÿкерчĕк, ÿкерчĕк оттискĕсене илсе килчĕ. Иксĕмĕр кăнтăрла иртни виççĕре пуçларăмăр та вĕсене макет çине çыпăçтарма, сакăр сехет çурăра тин вĕçлерĕмĕр. Пиллĕк иртсен пулас секретарь Клим Сергеев пырса пулăшрĕ-ха.

Хаçата 5500 экземпляр районсене хамăр вăйпа салатасшăн. Хула почтамчĕ урлă яратпăр. Экспедицие ĕç хучĕ хатĕрлерĕм, вĕсемпе килĕшÿ турăмăр. Райцентрсемпе камăн сутмалли пирки ыйту татса паратпăр. Хулара та сутмалла. Кун çавсемпех иртсе каять. Çав хушăрах материалсем вулатăп, планлатăп, макет тăватпăр. Ĕç мăй таран! Çавах хавас!

Юхма калать: «Ку хаçата кăларнăшăн мĕнле тав туса пĕтерĕпĕр ĕнтĕ сире, вырсарникун хаçат уявĕ тăвăпăр, концертпах», - тет.

Январĕн 18-мĕшĕ.

Варсонофий ирех, çиччĕрех, типографине çитнĕ. Эпĕ те унта килтен тÿрех кĕтĕм. Хаçат версткине тума аран-аран калаçса татăлтăмăр. Пĕр сменăра 16 полоса хатĕрлессинчен сехĕрленсе ÿкрĕç. Питĕ кăткăс ĕç.

Реском издательствинче, производство пайӗнче пултăм. Унăн пуçлăхӗ Владимирова пире вырсарникун пичетлеме ирӗк пачӗ, каçхине пиллӗкччен полосасем килсе пама хушрӗ.

Вăрнар ен журналисчӗ Клим Сергеевич Сергеев ӗçре - «Вучахра».

Эпӗ тепӗр хут пӗрремӗш типографире пулса Надежда Михайловнăна ун çинчен пӗлтертӗм те, хӗпӗртесех редакцие кайрăм, унта кăнтăрла иртиччен ӗçлерӗм. Мокин Сашăн паян пӗрремӗш дежурнăй пулмаллаччӗ. Вăл тачтан, темле майор патӗнчен шăнкăравларӗ. Эпӗ ăна тӳрех типографине кайма каларăм. Университет кафинчен апат çисе килсен, арăмӗ: «Саша ӳсӗр, «ман дежурствăна каймалла» тесе кӳршӗре эрех ӗçсе ларать», - тесе шăнкăравларӗ. Ку хыпар манăн мӗнпур савăнăçа тарăху тăвăлӗ ăшне путарчӗ. Тӳрех типографине вӗçтертӗм. Варсонофий ӗçлет. Люда Чермакова корректор килчӗ. Телевиденине Клим Сергеев патне шăнкăравларăм, килме ыйтрăм. Директорăн йышăну пӳлӗмӗнче 4 полоса, унтан тата 2 полоса вуланă хыççăн каллех реском типографине чупрăм, вӗсем пленкăсене тăххăрччен йышăнма пулчӗç, хаçата пичетлеме наряд çырса пачӗç. Почта экспедицине хаçат мӗн чухлӗ салатмалли хута çитерсе патăм. Эпӗ таврăннă çӗре Клим полоса вулать.

Çапла каçхине 8 сехет те 40 минутчен аран-аран туса пӗтерсе, Клим, Варсонофий тата эпӗ фотопленкăсене реском типографийӗн набор цехӗн мастерне çитерсе патăмăр. Унччен тепӗр кăлтăк сиксе тухрӗ. Икӗ производство пайӗ технологине лайăх йӗркелейменнине пула сăнӳкерчӗксене тепӗр хут реском типографине кайса партарчӗç мана. Чупса хăшкăлтăм. Вăл вăхăтра дежурнăй ӗçсе çӳрет!

Верстка тăвакансем те ураран ÿкекен пулчĕç, хамăр та ывăнса çитрĕмĕр. Çав сăнÿкерчĕксем, клишесен сеткисем икĕ тĕрлĕ пирки ĕнтĕ халĕ, тепĕр хут ÿкерсе çыпăçтарнине пула, хаçат тунтикун мар, ытларикун çеç тухать.

Пĕрремĕш номер вĕçленчĕ!

Январĕн 19-мĕшĕ.

ЧОКЦ активисчĕсем шупашкарсенчен те ирттереççĕ иккен. Акă, Вăрнарти филиал «Çĕнтерÿ çулĕ» хаçат çумĕнче «Кăвак хуппи» ятлă хаçатне паян кăларса янă. 9 пин экземплярпа. Филиал правленийĕн председателĕ Анатолий Иванов райхаçат редакторĕпе Михаил Васильевпа пĕрле ăна йĕркеллĕ кăларса тăма палăртнă. «Вучах» хаçата та вĕсем 2-3 пин экземпляр сарма пулаççĕ. Маттур журналистсем!

Хамăр республикăри районсенче те, тулай чăвашĕсем патĕнче те «Вучах» хаçатăн подборкисене пичетлеттерме тăрăшрăм. Ку ĕçе йăлтах хам çине илтĕм.

Январĕн 21-мĕшĕ.

Ирпе ултă иртсенех Мокин шăнкăравларĕ. Урăлса, уçăлса çитнĕ пек. Редакцинчен, тет. Манпа калаçса чунне лăплантарасшăн пулчĕ пулас. Хам тарăхнине палăртмарăм.

11 сехетре икĕ редакцин планерки пулчĕ. И.Я.Яковлев, Юхман пичет енĕпе ĕçлекен заместителĕ, ертсе пычĕ. Малтан манран ыйтса пĕлчĕ. Хăйне хăйĕн каламаллине манран тĕпчет. Эпĕ тĕп редактор пек. «Вучах» ĕçĕ-хĕлĕ, унăн йывăрлăхĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса патăм, хаçатăн пĕрремĕш номерĕ мĕнле çурални пирки каларăм. Ответлă секретарь питĕ кирлине те асăнтăм. Клим Сергеева илме килĕшрĕç. Телевидени хуçи патне хут çырма хушрĕç. Ман ăна, енчен те хама тĕп редактора лартас пулсан, çав вăхăтрах заместитель те, ответлă секретарь те пĕр харăсах тăвас килет. Ун пирки Юхмана малтанах каланăччĕ. Вăл хирĕç мар.

Сарпи те отчет турĕ. Вĕсен хут çук. Баранников пустуй шантарнă çеç. «Пике» халлĕхе пичетленеймест.

Иван Яковлевич редакци çыннисене республика тулашне ярасшăн пулчĕ. Эпĕ хамăр патрах тепĕр 5-6 пин экземпляр сарма пулать, терĕм. Манпа килĕшрĕç. Кашни сотруднике районсем валеçсе патăм. Хам та Йĕпреç, Вăрнар районĕсене илтĕм. Хаçат вуласа кăларма дежурства йĕркелерĕмĕр.

«Çитес планеркăна Владимир Прокопьевич ирттерет, эпĕ итлесе ларатăп», - терĕ Тенюшев.

3-мӗшпе 4-мӗш номӗрсене тăватпăр. Фотонаборпа ӗçлеме вӗренсе пыратпăр. Пиллӗк иртсен реском типографине кайрăм. Унта Клим Сергеев кӗтет. Пирӗн полосасене çапма хатӗрлесе çитернӗ. Тӗсӗсене лартса патăмăр. Темиçе тӗспе пичетлетпӗр-çке.

Çиччӗ иртсен телевиденипе «Вучах» тухма пуçлани, унăн нушисем çинчен Юхмапа Тенюшев тухса калаçрӗç. Георгий Порфирьев-Ирхи ертсе пычӗ. Иван Яковлевич ачалла калаçрӗ. Каярахпа, вуннă тӗлнелле, Михаил Николаевич патне шăнкăравларăм, сирӗн валли издательствăри милици постне 10 экземпляр хаçат парса хăваратпăр, терӗм. Вăл ыран ирех самолетпа Мускава вӗçет. Передача мӗнле пулнипе интересленчӗ. Начартарах пулчӗ, çапах та аптрамасть, терӗм. Унччен Виталий Енӗш шăнкăравларӗ. Вăл та, Денис Гордеев та ответлă секретарьте ӗçлесшӗн. Эпӗ Виталий Григорьевича унта ӗçлеме йывăр, мӗншӗн тесен эрнипех хаçатран уйрăлаймастăн, сана республика тулашӗнчи чăвашсемпе ӗçлеме илесшӗн, Юхма таврăнсан калаçăпăр, терӗм.

Январӗн 22-мӗшӗ.

«Вучах» тинех паян, ӗнерхи числапа, халăх хушшине саланчӗ. Пӗрремӗш страницăна Владимир Агеев ӳкерчӗкне вырнаçтартăмăр. Ăна вăл хаçат валли ятарласа тунă. Чăвашсем Çӗр чăмăрӗ çинче савăк кăмăллăн, наци тумӗпе тăраççӗ. Çур полоса ытла йышăнать. «Чăваш халăхӗ: ӗнер, паян, ыран...» ятпа ЧОКЦ

«Кăвак хуппи». Çапла ят патăмăр Чăвашсен обществăпа культура центрӗн Вăрнарти филиалӗн правленийӗпе «Çӗнтерӳ çулӗ» хаçат редакцийӗ хатӗрлекен ятарлă страницăсене. Унта ытларах чăвашлăхпа, наци культурипе, йăли-йӗркипе, аслă асаттесен авалхи пурнăçӗпе çыхăннă тӗрленчӗксемпе очерксем пулӗç. Хамăр тăрăхра çуралса ӳснӗ поэтсемпе прозаиксен сăвви-калавӗсене пичетлесе тăрăпăр. Кунтах тӗн йăли-йӗркине тытакансене сăмах парăпăр, воспитани ыйтăвӗсене хускатăпăр.

Çӗнӗ çулта çӗнӗ ӳсӗмсем тума май килтӗр. Вулакансене çирӗп сывлăх, телей сунатпăр.

М.Васильев, А.Иванов-Хум.

пуҫлăхĕ М.Н.Юхма ҫырнă анлă статья паллă выранта. Вулакансене «Кĕреке» тыткăнлать. Умсăмахне ҫапла пуҫларăм:

«Эпир, аваллăх сукмакĕпе-ҫулĕсемпе паянхи куна утса тухнă чăваш ăсчахĕсем, Сариванпа Сарпике, анлă Атăл ҫинчи ватă Шупашкарта мĕнпур чăвашăн илем тĕпелне туслăх кĕреки чĕртрĕмĕр.

Чăваш кил-йышĕн вучахĕ хĕрӳ хĕм сапса ҫунать. Унăн ăшши тĕнчене сарăлнăччĕ ĕнтĕ. Эй, сумлă ентешĕмĕрсем-тăванăмăрсем, ырă кăмăлтан, чунтан-вартан хисеплесе кĕтетпĕр сире?! Килĕрех, тăван халăх, кĕрекене, аслă Турă умне, шап-шурă сĕтел хушшине кĕрсе ларăр. Ваттисен йăлипе виҫĕ курка кăпăклă сăра ĕҫсе, кĕреке юррине виҫĕ ҫавра пĕрле юрлăпăр. Несĕлсене аса илĕпĕр, вĕсен ятне малалла чыслăн тытма сăмах парăпăр, вĕсем пуҫарнă йăла-йĕркене ҫĕнетсе аталантарасси, тăван-пĕтенпе туслăн пурăнасси, ҫемье тĕрекне вăйлатасси, ĕҫе лайăхлатасси, умри тивĕҫе чыслăн пурнăҫласси ҫинчен, пурнăҫри мĕнпур ырри-усалли пирки хамăрăн тутлă та сĕтеклĕ чĕлхепе пĕр-пĕрин куҫĕнчен пăхса чуна уҫса калаҫăпăр.

Кĕрекеҫĕ вырăнне паян эпир Чăвашăн ăслăлăх керменĕнчи чĕлхе маҫтăрне Николай Иванович Егорова - Микулай М.И. Кулай

Пĕрремĕш номер тухнă кун, 1991 ҫулхи кăрлачăн 21-мĕшĕ, тунтикун, редакцире (сулахайран сылтăмалла): хаҫатăн тĕп редактор заместителĕ Владимир Прокопьевич Кузьмин, ответлă секретарĕ Варсонофий Михайлович Михайлов, материалсене машинкăпа ҫапаканĕ Ирина Николаевна Горшкова, ҫырусен пайĕн редакторĕ Александр Иванович Мокин тата литература пайĕн редакторĕ Василий Гаврилович Кошкин.

тĕпчевçе шанса парăпăр. Вăл халĕ, сумлă вырăна ларса, сире пурне те хăналĕ, пурне те хаваслантарса савăнтарĕ. «Ан ман, тăван» юрра эртелпе уçăмлăн янраттарнă хыççăн кĕрекеçĕ хăйĕн хуравлă ĕçне малалла тăвать, мĕнпур чăваша аслă уява - Сурхурие чĕнет.

«Микулай М.И.Кулай» псевдонима тупса панăшăн Николай Иванович те савăнчĕ, те салхулланчĕ, çапах ун пирки шăпăрт та шарламарĕ.

«Кулăш хуранĕ» кулăш апачĕпе тăрантарать. «Тепре куриччен!» памфлетăма ырламан вулакан юлмарĕ пуль. Авторне çеç Юхмапа Тенюшев кăна пĕлеççĕ. Эпĕ ăна чăвашсен Аслă сатирикĕ Иван Мучи ячĕпе тĕрленĕ-çке.

ЧОКЦ пуçлăхĕсем телевиденипе тухса калаçнă, хаçатăн пĕрремĕш номер оттискĕсене кăтартнă хыççăн таçтан та шăнкăравлаççĕ, киосксенче мĕншĕн сутмаççĕ, теççĕ. Хаклă мар, экземплярĕ 25 пус. Мĕншĕн сутманни паллă пулчĕ. Эпир «Союзпичет» агентствипе килĕшӳ туман иккен. Районсене 10 пинрен 5500 экземплярне экспедици урлă ятăмăр. Филипповпа Мокина кашни районти çыхăну узелĕн начальникĕпе телефонпа хам куç умĕнче калаçтартăм. Хаçат сутма хăшĕсем килĕшесшĕн мар, етĕрнесем 200 экземпляр почта машинипе каяллах ярса панă, йышăнман.

Иккĕмĕш номерĕн 4 полосине макет турăмăр. Çапла айланкаласа кун ирттертĕмĕр. Пирĕн гвардеецсем эрех илсе хатĕрленĕ. Хаçат тухнине хамăрăннах уявлас терĕмĕр. Юхмана кĕтсе пулмасть. Хам та шутсăр хĕпĕртерĕм те, вĕсен пуçарăвне хирĕçлемерĕм. Арçынсем пурте ман патра пухăнтăмăр. Эпир Сарпипе стена урлă çурăмпа çурăм тĕкĕнсе ларатпăр. Эпĕ шакканине илтсе Раиса Васильевна каçрĕ, сĕтел çине çур литр эрехпе сайра пулă кансерви лартрĕ.

Январĕн 23-мĕшĕ.

Ачасене хаçат салатассипе, сутассипе ĕçлеттеретĕп. «Союзпичет» киоскĕсем илмеççĕ, Тенюшев килĕшӳ туман. Виççĕмĕш номĕрпе ларатăп.

Январĕн 25-мĕшĕ, эрнекун.

«Союзпичете» кайрăм, ирех, 2 пин экземпляр салатма килĕшӳ турăмăр, иккĕмĕш номĕртен пуçласа. 1-мĕш номерĕ экспедицире тата 800 экземпляр юлнă. Ăна Мокина «Союзпичете» леçтертĕм. Сутнăшăн вĕсем пирĕнтен хаçат хакĕн 25 процентне сăптăрса юлаççĕ. Экспедици те ахаль ĕçлемест, 19 процент шăйăрать. 1-мĕш номĕре верстать тунăшăн (калăпланăшăн) 1680 тенкĕ куçарма ыйтрĕç, пичетленĕшĕн рескомрисем тата темĕн

чухлĕ илеççĕ-ха. 2-мĕш номĕртен пуçласа 10 пин тираж вырăнне 5 пин экземпляр кăна çапма ыйтса Павлов патне çыру çыртăм. Директор та, производство пайĕ те килĕшрĕç. Хаçат пленкисене 18 сехет тĕлне леçсе патăмăр.

Январĕн 26-мĕшĕ.

Партконференцин иккĕмĕш сыпăкĕ паян пулмалла. Политвĕренӳ çуртне кайрăм. Партократсене хураллакан КГБ çыннисем кĕртмерĕç. Юнашар каçăрăлса тăракан пичет секторĕн пуçлăхне Н.А.Григорьева каларăм та, вăл вырăсла: «Вы заявку не подавали, «Чăвашьен» дал, им выдали пропуск», - тесе пăрăнса утрĕ. Эпĕ те каялла пăхмасăрах уттартăм.

Январĕн 27-мĕшĕ.

27 градус сивĕ. Çил касать. Чăн-чăн хĕл хыпашлать. Ун пек чухне чуна усă, кĕпе-тумтире ярхана ярса çиле хирĕç утас килет. Пуçри шухăш пăтранăвĕн вучахĕнче вĕресе хĕретĕн. Вăя ниçта хума çук. Ĕçлемелле те кĕрешмелле, çĕнтермелле çеç! Çамрăклăх малалла утать, ватлăх - каялла...

Варсонофий Михайлова шăнкăравларăм та, редакцие пыма хушрăм. 3-мĕш номерĕн икĕ полосине макет турăмăр. Ыран каласплама пулать.

Тенюшев киле шăнкăравларĕ, февралĕн пĕрремĕшĕнчен редактортан тухма заявлени парас пуль, тет. Хăйĕн ирĕкĕ ĕнтĕ.

Январĕн 28-мĕшĕ.

11 сехетре планерка ирттертĕм. Тенюшев малтан итлесе ларчĕ, кайран, вĕçнелле, хăй калаçма пуçларĕ те, тилхепине пĕтĕмпех хăй аллине çавăрса илчĕ. Эпĕ вара, йӳтеме пуçланă ватă çынна кӳрентерес мар тесе, шарламарăм. Савăнса юлтăр ĕнтĕ терĕм.

Тухнă икĕ номĕре тишкерме Кĕркури Луча хушнăччĕ. Вăл, «Молодой коммунистра» ĕçлесе пиçнĕскер, обкомăн пичет секторĕнче редакцисене тустарма хăнăхнăскер, материалсене самай тĕплĕн вуланă. Пĕрремĕш номĕре ырларĕ, анчах пысăк япаласем пурри̇не палăртрĕ. «Тепре куриччен!» текеннине Виталий Енĕш çырнă пулмалла, чĕлхи капкăнла, терĕ. Унта хушаматсем кĕртсе, ятран çапмалла пулнă, тесе критиклерĕ. Авторăн пулнăччĕ те çав вĕсем, анчах, тĕп редактор мулкачланнине пула, парти обкомĕн аслă партокрачĕсене халăх умĕнче намăслантараймарăмăр çав, Юхман та хăюллăх çитеймерĕ Тенюшевăн сехĕрленĕвне çĕнтерме. Пĕр лăпкă юхха куçрĕç. Григорий Васильевичăн тăнĕ пур çав, хушаматсем ăçта кирлипе кирлĕ маррине профессионаллă туйăмпа шухăшлама пултарать. Начар çынсем мар редакцире.

Унсăр пуçне Анатолий Филиппов, Александр Мокин, Василий Кошкин хăйсемех мĕне тăраççĕ. Журналистикăри ылтăн пĕрчипе танлаштарма пулать вĕсене! Иккĕмĕш номĕрне тата лайăхрах тунă, терĕ Луч. Ун пирки Вăрнартан Михаил Васильев та шăнкăравланăччĕ.

В.И.Агеев, пирĕн художник, çур ставкăпа ĕçлет. Вăл пĕрремĕш страницăшăн, хăйĕн ӳкерчĕкне лартнă пулин те, тахçантанпах кулянать. Ятне начар шрифтпа çырнă, И.Я.Яковлев сăнĕ примитивлă, хаçатăн пичĕ пулмалла, хаçатра чăваш сăнĕ, чăваш культури çиçсе тăмалла, терĕ. Тата вăл ЧОКЦа «Вучах» ятлă хуртарасшăн. Тенюшев «Асамат» ятшăн - вăрнарсем сĕннĕ пек.

Пулас ответлă секретарьпе Клим Сергеевпа хаçат материалĕсене, вăл шутра ӳкерчĕксене те, хатĕррисенчен пухса тăватпăр, Агеева та планласа макет тунă çĕре хутшăнтаратăп. Манăн ялан кашни номĕре хăй майлă çивĕч, хитре, композици тĕлĕшĕнчен çыпăçуллă, вăйлă тăвас килет. Майĕпен эпĕ хамăн шухăш-ĕмĕте, çак талантсен пуçĕпе, аллипе пурнăçа кĕртсе пыратăп. Ан чăрмантарччĕр кăна мана, ура ан хуччĕр çеç ман пултарулăх çулĕ çинче. Тăрăшсан, тем те тума пулать.

Январĕн 29-мĕшĕ.

Çĕркаç лайăх шухăш çуралнăччĕ. Манăн хаçатра Чăваш епархийĕн пурнăçĕ çинчен çутатакан кăларăмсем чăвашла тата вырăсла пичетлес килет. Варринчи 4 страницăна вĕсене парасшăн. Ку укçа-тенкĕ енчен те, вулакансене ытларах явăçтарса тираж ӳстерессипе те, хаçатăн пĕлтерĕшлĕ ятне чăваш халăхĕ умĕнче çĕклессипе те çыхăннă, тесе ирпе Михаил Николаевича каласа патăм. Питĕ аван шухăш-ĕмĕт, тесе мухтарĕ вăл мана.

Юхмапа «Ишлейский» совхоз директорĕ патне «Волгăпа» кайрăмăр. Çăмăл машина пире Министрсен Совечĕ усă курма заказпа укçалла парать. Юрий Николаевич Машанов Чăваш наци премийĕсем валли 7 пин тенкĕ уйăрать.

Ишлейрен таврăннă чухне Михаил Николаевич мана Мускав ячĕллĕ кĕпер урлă каçса хăпарсан, епархи кантурĕ патĕнче антарса хăварчĕ.

Вунпĕр çурăра эпĕ Варнава владыко пӳлĕмĕн алăкне уçса «Благословите», - терĕм. - Доброго здоровья Вам, владыко!». Кĕрсен, владыко, Шупашкар тата Чăваш епископĕ, мана ăшшăн йышăнчĕ. Эпĕ ăна хам кам пулнине, мĕн сăлтавпа килнине пĕлтертĕм, «Вучах» хаçата кăтартрăм. «Я благославляю, хорошо

было бы сотрудничать, но сам очень занят. Этими вопросами у меня занимается Карлинов - отец Илия, он сейчас в Минске, на совещании по вопросам печати, 4 февраля будет, с ним решайте, я помогу», - терĕ.

Ăнăçу пуласса шанса тухрăм унтан.

Январĕн 31-мĕшĕ.

Эпĕ хаçата 5 пин экземплярпа пичетлеттермелле тунăшăн Тенюшев кӳреннĕ. Хăй хуçа пуласшăн-çке. Ним тумасăр, пире эрнере икĕ-виçĕ сĕнӳ парсах ырă ят илтесшĕн. Унăн мухтавĕшĕн эпир нушаналатпăр. Вăл подпискăпа малтанах çине тăрса ĕçленĕ пулсан, тираж тахçанах курăмлă пулмаллаччĕ. 10 пин экземплярпа пичетлес сĕнĕвне те хам патăм.

Юхмана паян хаçат сăн-пичĕ пирки ăнлантартăм. Яковлевпа Агеев ĕçĕсем ниепле те пĕр-пĕринпе шайлашаймаççĕ, уйрăлса тăраççĕ. Маçтăрлăх уйрăмлăхĕ. Владимир Иванович хăй те пынăччĕ. Виççĕмĕр калаçрăмăр. Малашне Агеев ӳкерчĕкĕпех пичетлес терĕмĕр.

Корректор начар вулать. Йăнăш нумай каять. Типографире пире уншăн питĕ хытă çунтарчĕç.

Февралĕн 4-мĕшĕ.

Хаçатăн 3 номерĕ тухрĕ. Тĕрлĕрен хаклакан пур: пĕрисем ырлаççĕ, теприсем - хурлаççĕ. Çапах та шутсăр йывăррăн пырать ĕç. Çынсем сахал. Çитменнине тата вĕсенчен хăшĕсем професси «чирĕпе» аптраççĕ.

Акă, ирпе Юхма машина чĕнчĕ, Мокина илме ячĕ. Саша пит савăк кăмăлпа ларса килчĕ «Волгăпа». Эпир Варсонофипе вăл вăхăтра 4-мĕш номер макечĕсене тăваттăмăр. Апатра çухалчĕ. Ан кай, çырусен страници ту васкавлă, терĕм. Мĕнле тусан интереслĕрех пулмаллине те вĕрентрĕм. Итлемерĕ. Эпĕ виççĕ иртсен типографине кайрăм. Вăл тата çӳлерех çĕкленсе пынă, темле ясар хĕрарăм патĕнче пĕчĕк йытă тупнă, унпа пӳлĕмрен-пӳлĕме аташса çӳренĕ. Юхми те, Тенюшевĕ те курнă.

Февралĕн 6-мĕшĕ.

Иван Яковлевич пырса ларчĕ. «Йывăр», - тет хăй, - эпĕ çак уйăх пуçламăшĕнчен ĕçрен тухма заявлени патăм, анчах та ăна, хамăр хушăра каласан, под сукно положили». Кăшт сĕнӳсем, кăтартусем парса хăварчĕ.

Юхмапа хăй патĕнче ĕç хыççăн чылай лартăмăр. Вăл калать, тепĕр икĕ номер кăларсан, хăв пусатăн, тет. Çыншăн ĕçлесе ывăнтăм. Чăтатăп-ха.

Февралĕн 8-мĕшĕ.

4-мĕш номĕре реском типографине пичетлеме патăмăр. Хакла ларнăран, пĕр тĕспе çеç кăларас терĕмĕр. 3-мĕш номĕртен хаçатăн ячĕ хитреленчĕ. Агеев ăна авалхи руно алфавичĕпе усă курса çырса пачĕ. Василий Кервен дежурнăй редактор пулчĕ. Вăл та начартарах вуланă, пленка çинче виçĕ йăнăш тупрăм, тӳрлеттертĕм.

Иван Яковлевич Ирăна, машинисткăна, кам ĕçе миçере çитни тата ĕçрен миçере кайни çинчен çырса пыма хушнă. Тĕлĕнтерет. Пире Горшкова ун çинчен вăрттăн систерчĕ.

Чулхула облаçĕнчи Балахнаран 3 тоннăна яхăн хаçат хучĕ илсе килнĕ. Халĕ çăва тухса каятпăр.

Пичет çуртĕнче Шупашкар районĕнчи Мăнал чиркĕвĕн настоятельне, Самар чăвашне Иоанн аттене - Иванчина тĕл пултăм. Эпĕ унпа владыко патне пырсан калаçнăччĕ. Вăл тӳрех: «Мĕнле унта сирĕн?» - тесе ыйтрĕ. Эпĕ: «Варнава «благославляю» терĕ, Карлиновпа канашлама хушрĕ», - тесе ăнлантартăм. Çапла хушса хутăм: «Епархи хăй хаçат кăларма йышăннă, регистрациленĕ». «Пĕлетĕп, вĕсем ăна вырăсларах кăларасшăн, çапах сирĕн хаçатра чиркӳ ĕçĕ-хĕлĕ çинчен ытларах çырни пăсмасть, эпĕ Юхма валли 1000 тенкĕ хатĕрленĕччĕ, ăна апла «Вучах» ячĕпе пырса парăп, мана квитанци кирлĕ пулать, укçа пирки Карлиновсене ан шарлăр», - терĕ.

Февралĕн 11-мĕшĕ.

Юхма ЧОКЦ правленийĕн президиумне пухатăп, унта Тенюшев ыйтăвне татса паратпăр терĕ, анчах хăйĕн сăмахне темшĕн тытмарĕ. Хула тăрăх пĕрле çӳренĕ чухне пуçлăхсем умĕнче «акă пирĕн редактор та, пулас редактор та», тет. Ĕçре çиччĕмĕш номĕртен пусатăн-ха, тесе хавхалантарать.

Тенюшевĕ пĕрмай темле кулăшла темăсем тупса хушса ларать, вĕрентет. Каясшăн мар пулас.

Василий Кервен, эпĕ йĕркелесе, ум кăтартса панă хыççăн, хаçатра «Улах» лартма пуçларĕ, пĕр разворотлăх (икĕ страница) материал хатĕрленĕ, çурри - манăн.

Хаçат тата 1000 экземпляр сутмалăх юлать. Вăрнарти Анатолий Хум малтан 1000 сутатăп тесе мухтанчĕ, 800 ярса патăм та, ĕç йывăр пырать, 200-пе çитет, терĕ.

Февралĕн 12-мĕшĕ.

Йĕпреçре ЧОКЦ филиалне уçас ыйтупа кайрăм, оргкомитет ларăвне ирттертĕм.

Вăрнара ӳксе ЧОКЦ филиалĕн правлени пуçлăхĕпе Хумпа хаçат сутас тата сарас ыйтупа ĕçлерĕм.

Февралĕн 14-мĕшĕ.

ЧОКЦ правленийĕн президиумĕ пулчĕ. Унта Иван Яковлевич Яковлев ячĕпе хисепленекен мĕнпур чăвашсен наци премийĕсем турĕç. 2 преми - виçшер пин. «Ишлейский» совхоз 35 пин тӳлеме шантарнă. «Вучахăн» Алексей Талвир ячĕллĕ 3 премине, «Пикен» Эмине ячĕллĕ 3 премине туса хутăмăр.

«Вучах» уявне ирттерме йышăнтăмăр.

Февралĕн 15-мĕшĕ.

Ирхине типографине кĕрсе полосасен пленкисене тĕрĕслерĕм. «Советская Чувашия» хаçатри Борис Ивановран, халĕ вăл пирĕн çур ставкăпа ĕçлекен фотокорреспондент, фотоӳкерчĕксем (хаçатра «сăнӳкерчĕк» тесе çырма пуçларăмăр) илсе кайрăм. Эпĕ пынă çĕре Кĕркури Луч пуçне тытса ларать. Арăмĕ кунта çавăтса çитерсе ячĕ, терĕ Кервен. Манпа тем пулчĕ-ха, терĕ Луч. Эпĕ, тем хăтланатăн-çке эсĕ, Иван Яковлевич Мокинпа иксĕре ăнлантару хучĕ çырма хушрĕ, терĕм.

Ĕнер Юхмапа гонорар пирки калаçрăмăр. Номĕре 1000 тенкĕ тумалла, терĕм. Шухăшласа пăхмалла, терĕ. Тенюшев ĕнер гонорар ставкисем илсе килнĕ те, тĕлĕнтерсех пăрахрĕ. Сăвă-калава 20 тенкĕрен мала мар, ытти материалсене (очерк, калав, повесть) 25 тенкĕрен мала мар тӳлетпĕр, текен хут çаптарса килнĕ. Тĕп редактор ячĕпе. Президиум ларăвĕнче тухса каларĕ.

5-мĕш номер хатĕр, улттă тĕлне вĕçлерĕмĕр. 1-мĕш номер 10 пинпе, 2-4-мĕш номĕрсем 5 пинпе тухрĕç. 5-мĕш номĕре 4,400 пинпе кăларатпăр. Хут пĕтсе çитнĕ, çăва тухаймарăмăр. Унсăр пуçне тата сутасси тепĕр нуша: 1000 экземпляр хамăрăн сутмалла, хаçат тума та вăхăт юлмасть.

Карлинов пуппа калаçрăмăр, Юхма патĕнче. Пĕр страницăна 300 тенкĕпе вĕсене «сутасшăн». Илия атте турткаланса тăрать. Хăйĕн хаçачĕ тухмалла-çке - «Православный собеседник». Вырăсла та, чăвашла та пичетлеме палăртнă. Сакăр страницăна икĕ эрнере 2 пин экземплярпа пичетлемелле. Редакторĕ Варнава хăй.

Ăна-кăна пăхмасăр эпир хамăр хаçатра «Чун уççи» ятлă кăларăм тăватпăр. Вĕсене кăштах вĕчĕрхентермелли япала. Хамăра пулăшакан чăваш священникĕсене ытларах тупма тăрăшатпăр. Ку кăткăс ĕçе эпĕ хам çине илтĕм.

Пирĕн халĕ штатра çак çынсем: тĕп редактор пекки, çур ставкăпа (210 тенкĕ) - И.Я.Тенюшев; унăн заместителĕ (çумĕ)

- эпĕ, 370 тенкĕ параççĕ; ответлă секретарьшĕн телевидени çынни К.С.Сергеев кашни номершĕн 40 тенкĕ илет; культура пайĕ (330 т.) - Г.В.Васильев-Луч; литература пайĕ (300 т.) - В.Г.Кошкин-Кервен; çырусен пайĕ (300 т.) - А.И.Мокин; выпускающий-технический редактор (220 т.) - В.М.Михайлов; художник çур ставкăпа (90 т.) - В.И.Агеев; фотокорреспондент çур ставкăпа (90 т.) - Б.К.Иванов; корректор (185 т.) - Л.Чермакова; машинистка (160 т.) - И.Горшкова.

Ĕçлеме питĕ йывăр. Пахалăх çук. Икĕ-виçĕ çын лавне туртатăп.

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчен практикăна тулай чăваш йĕкĕтне Александр Магарина ячĕç. Ачи пит тăнлăскер, журналистика факультетне чунĕ туртнипех, Турă панă ăс-халĕпех вĕренме килнĕскер. Малтанхи кунранах эпир ăна хаçат тума, çыру ăсталăхне вĕрентме пуçларăмăр. Мĕн тумаллине, мĕнле çырмаллине хăвăрт тавçăрса илсе пуçра ăслăн çавăрттарма пултарнине ман «ачасем» те тӳрех сисрĕç, ăна хамăр коллектив членĕ вырăннех шутлатпăр.

Практикине Магарин «пиллĕкпе» вĕçлерĕ, вĕренсе диплом илсен журналистика çулĕпех кайрĕ, Чăваш Республики Президенчĕн администраци аппаратĕнче массăлă информаци хатĕрĕсен яваплă вырăнĕнче ĕçлерĕ. Унтан ăна Телевидени комитечĕн председатель заместительне лартрĕç, культура министерствинче ĕçлерĕ, халĕ ЧР Кĕнеке палатин пуçлăхĕ.

Ӳкерчĕкре: В.Кошкин, А.Магарин, В.Кузьмин, А.Филиппов.

Борис Ивановăн ӳçĕ.

Паян штат йĕркине улăштарма Юхмана çапла сĕнтĕм: тĕп редактор - 420 тенкĕ, тĕп редактор заместителĕ, вăлах ответлă секретарь - 370, халăх пурнăç пайĕ - 300, пай корреспонденчĕ - 240, культура тата литературăпа искусство пайĕ - 300, корреспонденчĕ - 240, республика тулашĕнчи чăвашсемпе ĕçлекен пай - 300, тишкерӳçĕ (обозреватель) - 200, кăларăм редакторĕ (выпускающий) - 220, художник (çур ставка) - 100, фотокорреспондент (çур ставка) - 100, корректор - 180, машинистка - 180 тенкĕ.

Михаил Николаевич «Шухăшласа пăхатпăр, заманчивый япала», - тесе, кулкаласа йышăнчĕ.

Февралĕн 16-мĕшĕ.

Юхма киле шăнкăравларĕ. «»Эпĕ «Коммунизм ялавĕнче» пултăм, унта вĕсен пĕр номерĕн гонорарĕ 240 тенкĕ тăрать, пирĕн, калăпăшĕпе, вĕсен икĕ номерĕ чухлĕ, çавăнпа 500 тенкĕ тăвар-и пĕр номĕрне», - терĕ. Эпĕ ăна кашни страницăшăн 50 тенкĕ тӳлемелле, çапла вара пĕр номер 800 тенке лартăр, паянхи пурнăçра вăл пысăк мар, терĕм. Вăл вара: «Эсĕ мана тĕслĕхсем илсе кăтартса ӳкĕте кĕртрĕн», - терĕ. Эртелпе калаçса татăлма килĕшрĕмĕр.

Февралĕн 18-мĕшĕ.

Юхма пурне те аялти зала, И.Я.Яковлев ячĕллĕ клуба, пухрĕ. Малашне кашни тунтикун 9 сехетпе çакăнта хамăрăн ĕçсем çинчен калаçма кăштах пухăнатпăр, терĕ.

11 сехетре редакцире планерка турăмăр. Хăмпă е суя редактор Тенюшев каллех килсе ларчĕ. Вырăсла çырнă материалсем сĕнсе хăварчĕ, «ăслă сĕнӳсем» пачĕ. Уншăн ĕçлесе ывăнтарчĕ. Ответлă секретарĕ те çук. Михаил Николаевич каланă тăрăх, Иван Яковлевич, заявлени панă хыççăн, тата тепĕр уйăх «ĕçлеме» ирĕк илчĕ, тет. Хăй мана «Ман заявленине шала, под сукно пытарчĕç», - тесе суйрĕ. Ултавçăсем!

Мокинпа Васильева, ĕçсе çӳренĕшĕн, выговор пани çинчен приказ вуласа пачĕ тĕп редактор. Хут татăкки çине çапнă та. Тĕрĕссипе приказсене ЧОКЦ председателĕ çырать.

Мана редактора лартас пулсассăн, Василий Гавриловичăн заместитель пулас шухăш çуралнă. Ун пирки Кервен мана вăрттăн пĕлтерчĕ. Эп хирĕç мар. Ачи пултармаллискер. Хамăн ĕç ăнсан, илмеллех пуль çумма. Клим Сергеевич шанчăксăр, вăл «Чăвашьен» хаçатпа та калаçу пуçарнă, тахçанах. Иккĕлле çаптарать: хăшĕ усăллăрах та тупăшлăрах. Пирнешкел ухмах мар иккен çын-

сем, чи малтан хăйсемшĕн шухăшлаççĕ. Çавăнпа Юхмана çакăн пек штат сĕнтĕм: тĕп редактор заместителĕ, вăлах культура, литературăпа искусство пайĕн редакторĕ - 370 тенкĕ; ответлă секретарь - 330, ытти - малтанхи пекех.

Февралĕн 19-мĕшĕ.

Ĕнерхи ман сĕнӳпе Михаил Николаевич килĕшрĕ. Секретарь тума çапах та Василий Самойловпах калаçса пăхма хушрĕ.

Праски Витти (Петров) художник пычĕ. Хам патра унпа нумай калаçрăмăр. Мир, тĕнче, халăхсен туслăхĕ, чăваш искусстви çинчен пулчĕ калаçу. Ăслă, философилле тарăн шухăшлакан ентешĕм. Виçĕ статья çырма калаçса таталтăмăр.

Ун хыççăн Юхма патĕнче пултăмăр: Праски Витти, Владимир Агеев тата эпĕ. Михаил Николаевич вĕсене чăваш халăх галерейи тăвас пирки хавхалантарса ячĕ. Вĕсем пулăшма килĕшрĕç, хăйсен ĕçĕсене парнелеме пулчĕç. Ку ыйтăва виçмине правлени ларăвне лартатпăр.

Февралĕн 21-мĕшĕ.

ЧОКЦ правленийĕн президиумĕ пулчĕ. Унта гонорар ставкисем пирки пысăк калаçу турăмăр. Ку ĕçе хамăрах пуçартăмăр. Пирĕн хаçатăнне кашни номĕрне 800 тенкĕ, «Пике» журналăнне 3000 тенкĕ тума йышăнтăмăр. Иван Яковлевич каллех хăйĕн янравсăр юррине юрлать: «но... не более 20-25 рублей, независимо от обьема произведения», текеннине. Эпир хирĕçлерĕмĕр. Эпĕ каларăм: «Ăна хамăр редакцирех татса паратпăр».

Укçи-тенки пирĕн нумай мар. Ăна хаксемпе танлаштарса пăхсан, чухăнлăх куç умĕнчех. Акă, ăтăр тирĕнчен çĕленĕ çĕлĕк 250-300 тенкĕ тăрать, сысна, ĕне ашĕ - 12-13, пыл - 22, усламçу - 20, сĕт - 2, çăмарта (10 штук) - 3, купăста - 2, тăварланă хăяр -7, апельсин - 12, çĕрулми - 1, ыхра - 10, пальто - 600-1000 тенкĕ.

Ĕнер тунă штат расписанине Юхмана патăм.

Енĕше ĕçе илме шантарнăччĕ, анчах хăйне чĕнме васкамаççĕ. Манăн Семен Григорьева хăвăртрах тишкерӳçĕ тăвас килет. Тенюшевсем тем вăййи выляççĕ.

«Термен» культурăпа çутĕç ассоциацийĕ туса хурасси пирки те ыйту таталчĕ ларура. Чăвашсен обществăпа культура центрĕпе Ленинградри «Возрождение» производствăпа пултарулăх пĕрлешĕвĕ пĕтĕçсе ĕçлеме пулчĕç. Ассоциацин тĕллевĕсене палăртрĕç, сопредседателĕсене суйларĕç. Вĕсем - «Возрождение» пĕрлешӳн тĕп директорĕн заместителĕ, Çĕрпӳ ачи Валерий Дмит-

риевич Тимофеев тата ЧОКЦ председателĕ М.Н.Юхма писатель.

ЧОКЦăн 350 вĕллеллĕ утар пур. Ларура «Симпыл» ĕçнехĕлне пăхса тухрĕç, тупăшне чăваш культурине аталантарас çĕре яма килĕшрĕç.

Яковлев клубĕнче лару пуçланас умĕн питĕ кулăшла пулса тухрĕ. «Тăван Атăлта» ĕçлекен Андрей Алексеевич Алексеева ЧОКЦ секретарьне суйланă пулнă. Вăл правлени е президиум ларăвĕсене ялан кая юлса пырать, протоколсене вăхăтра çырса памасть иккен. Сӳрĕк çын. Çавăнпа Юхма ун вырăнне çырса пыма «Пикери» Любовь Федорована лартрĕ. Алексеев, лару пуçланни çур сехет иртсен хашкаса çитрĕ те, уншăн кăмăлсăр юлчĕ, сиксе тăра-тăра: «Эс, Миша, статуса пăсатăн, мана секретаре чăвашсен сьезчĕ суйланă, статуса пăсма юрамасть...» - текелерĕ, хĕремесленсех. Вăл, Любăна хăваласа, хирĕçлесех çырма кĕрсе ларчĕ. Ман вара ăна темшĕн «Статус Унтрийĕ» тесе пит калас килсе кайрĕ. Лару вĕçленсен, Михаил Николаевичран: «Статус Унтрийĕ кайрĕ-им?» - тесе юриех ыйтрăм та, Юхма питĕ ăшшăн кулса: «Ай, куна вара питĕ ăнăçлă, лайăх каларăн», - терĕ.Тата темиçе хут аса илчĕ: Статус Унтрийĕ...

ЧОКЦ председателĕн пĕрремĕш çумĕ И.Я.Тенюшев (сулахайри), ЧОКЦăн активлă членĕсем - Гурий Чаржовпа Анатолий Ыхра поэтсем, Петр Федоров композитор, «Вучах» хаçатăн тĕп редактор заместителĕ Владимир Кузьмин.

Борис Иванов ӳкерне.

«Термен» директорĕн должноçне Иван Ксенофонтович Ксенофонтова йышăнчĕç (220 тенкĕ). Вăл театр никĕсне хываканĕ пулать. Смета туса хатĕрленĕ.

Февралĕн 22-мĕшĕ.

Каçхине киле Юхмапа пĕрле троллейбусра таврăнтăмăр. «Мир» кинотеатр çумĕнче пурăнать. Вăл Георгий Краснов пекех, хыçалти алăкран мар, варринчен кĕрет, вара малалла иртет. Ахăртнех, хăйсене сыхлаççĕ, унта шанчăклăрах.

Февралĕн 23-мĕшĕ.

Юхма тӳрех ман пата çитрĕ. «Кам чи малтан ĕçе килнĕ-ха кунта?» - тесе пӳлĕме кĕрет. Эпĕ ăна тунтикун планеркăна пыма ыйтрăм. Тенюшева майласа ăсатмалла. Вĕлер те каясшăн мар, вăт намăссăр, юлашки номĕрсен пĕр материалне те вуламарĕ.

Виталий Енĕш пычĕ. Ĕнер телефонпа калаçнă хыççăн, вăл хаçат енне туртăннă, писательсен Союзĕпе çыхăннă ĕçсене туса пĕтерсен, вунсаккăрмĕш мартра ĕçе тухма пултаратăп, терĕ. Ответлă секретарь пулать. Заявлени çырса хăварчĕ.

Февралĕн 25-мĕшĕ.

9 сехетре Юхма хăйĕн планеркине ирттерчĕ. «Вучахăн» мĕнмĕн тумалли пур ку эрнере?» - тесе ыйтрĕ те манран, эпĕ çапла хуравларăм: «Хăвăртрах туллин ĕçлекен редакци формировать туса çитермелле те, чăн-чăн хаçат кăларма тытăнмалла!»

11 сехет тĕлне Тенюшев кĕштĕртетсе çитрĕ, яланхи пекех - дипломачĕпе. Планеркăна Михаил Николаевич та пычĕ тата унта Чăвашрадиоран Никоалй Морозов хутшăнчĕ. Иван Яковлевич ăна хăйĕн ĕçне кăтартса эфира кăларас шухăшпа çавăтса пынă пуль.

Дежурнăй Луч пулнăччĕ. Иртнĕ номĕре вăл тишкерчĕ. Юхма Мишшин Анатолий Миттов художник çинчен çырнă очеркне ырларĕ. Чăнах та вăйлă çырнă ăна, малтан вуланă чухнех хама та килĕшнĕччĕ. Авторăн ăсталăхĕ ку енĕпе те пурах çав. Хаçат лайăхланса пырать, тесе палăртрĕç.

Кун хыççăн 8-мĕш номĕре планлама пуçларăмăр. «Пирĕн тĕп редактор мĕн илсе килнĕ-ха?» - тесе ыйтрăм Тенюшевран. Малтанах вăл шарламарĕ, эпĕ вара хамăрăн хатĕр материалсен папкинчи япаласене черетлесе илсе каларăм. Иван Яковлевич хушса калама пуçларĕ. Умне тĕрлĕрен хаçатсенчен касса илнĕ татăксем сарса хучĕ. Икĕ аллине те пĕрер тытать те, «ак çаксене çитес номĕре куçарса пичетлес» тесе тĕлĕнтерсе ларать. Эпир чылайăшне хирĕçлерĕмĕр. Эпĕ, вăл «Трудран» касса илнĕ ком-

партин Раççей сьезчĕсем çинчен калакан пĕр начар статьяна куçарса пичетлеме хирĕçлесе, ун вырăнне хамăр депутатсен калаçăвне тумалла, терĕм. Юхма хаçатра ахаль çынсене те вырăн памалла, тет. Тенюшев материалсене вырăсла та партарасшăн. Ăна та йышăнмарăмăр. Тарăхнипе вара Иван Яковлевич «Ак эпĕ тăратăп та тухса каятăп!» - тесе тулхăрса илчĕ. Ăна никам та тăнласа итлеменнине кура, вăл часах шăпланчĕ, Юхма тухса кайсассăн, каллех вырăсла пичетлес пирки ыйтрĕ. Эпĕ те, ыттисем те, килĕшмерĕмĕр.

Юхма христиан тĕнĕ пирки çырнисене сивлет, христианствăн тĕп тĕллевĕ те пирĕн пек халăхсене чуралантарса лартасси пулнă, тет. Çавăнпа эпир урăхларах, хамăр чăвашăн авалхи ĕненĕвĕ çинчен ытларах çырма килĕшсе татăлтăмăр.

Планерка икĕ сехет хушши пычĕ. Вĕçленсен, тулти пӳлĕмрен Тенюшев: «Енчен те эсир штат расписанине эпĕ тунинчен пăсатăр пулсан, эпĕ мартăн пĕрремĕшĕнчен урăх кунта килместĕп», - тесе алăка шалтлаттарса хупса тухса кайрĕ. Михаил Николаевич калать: «Эпир ăна ахаль те çав вăхăтран ытла ĕçлеттересшĕн мар».

Çиччĕмĕш номĕртен хаçата çĕнĕ редактор ячĕпе çĕнĕлле кăларасси пулмарĕ. «Редактора» ăсатаймарăмăр. Тенюшев пенсионера лайăх. Вăл Чăвашгизра илемлĕ литература редакцийĕпе ача-пăча литератури редакцийĕн заведующийĕ, çав вăхăтрах - пирĕн «хуçа» та.

Февралĕн 27-мĕшĕ.

Ирпе Чăвашгиза кĕтĕм. Тенюшевпа иксĕмĕр хушăра çакăн пек калаçу пулса иртрĕ, вырăсла-чăвашла:

- Эпĕ сире, Владимир Прокопьевич, шанса илтĕм редакцие, Михаил Николаевича ун пирки кайран каланăччĕ çеç (суять, тĕрĕссипе эпĕ Юхма чĕннипе, шантарнипе пынă унта, Тенюшевшăн утăм та ярса пусас çукчĕ), эсир ялан мана хирĕçлетĕр, манăн сылтăм алă пулаймарăр, ман шанăçа тивĕçтереймерĕр, коллектива чăмăртаймарăр... Тĕп редактортан каяс тенĕччĕ, халĕ çӳлтен (рескомран ĕнтĕ) ан кай, тесе каларĕç.

- Эпĕ эсир планеркăра «Труд» хаçатран касса илнĕ парти сьезчĕсем çинчен калакан статьяна вуланă, вăл нимĕнле директивăллă, чаплă материал та мар, çавăнпа ун вырăнне хамăр депутатсен сăмахне пичетлемелле, тесе çеç хирĕçлерĕм. Планеркăра эпир пурте уççăн калаçатпăр-çке. Редакци ĕçĕпе унăн çыннисем çинчен вăрттăн пĕлтерсе тăракансем мансăрах пур. Эпĕ ку таран-

чен те хам ĕçлекен коллектива вараламан, сутăнчăк, йăпăлти пулман. Коллективне хăвăрăн чăмăртамалла пуль.

- Çапах та тĕп редакторăн сăмахĕ юлашки, татăклă сăмах (ун пирки вăл мана ĕçе кĕричченех аса илтернĕччĕ) пулмалла. Хаçат юлашки вăхăтра япăхран та япăх тухма пуçларĕ (ку ĕнтĕ мана хаçат тума пĕлмест, тĕп редакторта ĕçлеме пултараймасть, тесшĕн), йăнăшсем нумай каяççĕ.

- Эпĕ материалсене вуласа ĕлкĕрейместĕп. Пай пуçлăхĕсем нумай яраççĕ йăнăш.

- Машинисткăна çапма париччен вулăр.

- Унччен вула, набора янă чухне вула, кайран фотопленкăра вула... Эп пĕччен...

- Корректор тепре илĕпĕр. Эсир те шырăр. Планерка тунтикун мар, ытларикун 11 сехетре пулать. Материалсене ответлă секретарь ĕçĕсене тăвакан Клим Сергеев хатĕрлесе çитертĕр.

- Вăл пирĕн штатра тăмасть.

- Халь те приказ паман-и вара?

- Çук. Килĕшӳпе çеç ĕçлет (вăл ĕнтĕ тунтикунранпа телевиденирен «Чăвашьенне» куçса кайнă).

Хуçăк кăмăлпа уйрăлтăм хамăн «тĕп редактортан». Ĕçлес те килми пулса çитрĕ, пĕтĕм малашлăх план çине алă сулса пăрахса каяс килчĕ, анчах кăшт вăхăт иртсен, хамах хам алла илтĕм. Юхма машинистки Люба ман кăмăл çуккине сиснĕ, мĕншĕнне ыйтса пĕлчĕ. «Пĕр усал çын кăшларĕ», - терĕм.

Кăнтăрла иртсен Тенюшев пычĕ. Юхма патне кĕрсе тухсан вăл редакцире пулчĕ. Сĕтел çинчи хатĕр материалсене тытса та пăхмарĕ. Эпир Варсонофипе синька материалсене полосасене çыпăçтараттăмăр. «Иван Яковлевич, полосасене пăхатăр-и?» - тесе ыйтрĕ Михайлов. «Çук, Владимир Прокопьевич пăхать, эпĕ ывăнтăм», - тесе тухса кайрĕ. Кăшт вăхăтран, чунĕ чăтмарĕши, тепре кĕчĕ те, пĕр полосине пăханçи туса пĕр йăнăш тупрĕ. Вăл Юхмапа пиллĕкре тухса кайрĕ, эпир тăххăрччен хаçат туса лартăмăр. Сатту пичетленнĕ хыççăн хаçата тĕплĕн тишкерет, йăнăш шырать.

Февралĕн 28-мĕшĕ.

Юхма кунĕпех Министрсен Советĕнче пулнă, ЧОКЦ валли хăшпĕр ăнаçлă ĕçсем тунă. Унпа ĕнерхи пирки калаçса кайрăм та, вăл каларĕ: «Тенюшева кĕçех ăсатăпăр, ытлашши ачашласа тăмăпăр. Эсĕ вăл унашкал калаçнăшăн йывăра ан ил, ĕçле, малтан мĕнле шутланă, çавăн пекех пулĕ». Сана тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ ят пама тăратăпăр».

Мартăн 1-мĕшĕ.

Иртенпех реском издательствинче хаçата вăхăтра тата пахалăхлăрах пичетлес пирки вăшталанатăп, производство пайĕнче, тĕп инженер патĕнче нумай тавлашмалла пулчĕ.

Юхма чĕннипе 15 сехетре редакцие вĕçтертĕм. Михаил Николаевич хамăр патра Библие чăвашла куçарса пичетлесшĕн. Паян Библи куçаракансен комиссийĕн ларăвне ирттерет. Епархирен священниксем саккăрăн хăйсен вăрăм, хура тумĕпе пынă. Алексий 2 патриарх представителĕ Константин Петрович Логачев пур. Ирхине Варнава владыко хăйĕн çыннисене пухса çĕнĕрен библи комиссийĕ туса хунă. Малтанхи комиссипе хальхи комисси пирки тавлашуллă калаçу нумая тăсăлчĕ. Варнава, куçару ĕçне ЧОКЦран туртса илсе, хăй аллине илесшĕн.

18 сехетре эпĕ пĕрремĕш типографине тухса кайрăм, хаçат полосисене-пленкисене пăхса тухрăм, тупнă йăнăшсене тӳрлеттертĕм. 19 сехет те 20 минутра вĕçлерĕмĕр.

Çапла тĕп редакторсăрах Тенюшев тĕп редактор ячĕпе 16 страницăллă хаçат кăларатпăр. Чĕр мăшкăл мар-и? Тĕнчере çук мыскара.

Мартăн 5-мĕшĕ.

Иван Тенюшев 11 сехет тĕлне планеркăна килчĕ, тӳрех вырăсларан хăй куçарнă «Йытă ӳстерес тесен» статйи пирки ыйтма пуçларĕ. Икĕ номĕрте пичетленесси çинчен пĕлсен, хĕпĕртерĕ. Пирĕнпе ытлах хирĕлмерĕ. Унччен унпа Юхма темиçе те калаçнă, редакци коллективĕ хăйне йышăнасшăн пулманни çинчен ăнлантарнă ăна.

Юлашкинчен вăл çапла каларĕ: «Владимир Прокопьевич докладной çырманнине пула, Мокинпа Васильева ĕçсе çӳренĕшĕн выговор пани çинчен çырнă приказа кĕнекене кĕртмерĕмĕр, эпĕ ăна пăрахăçлатăп, уншăн Кузьмина тав тăвăр». Юхмапа иккĕшĕ манран чăнах та ĕнентерӳ хучĕ ыйтнăччĕ, анчах та эпĕ çырса памарăм, ачасене çăлса хăвартăм. Ĕçлеччĕр ыр кăмăлтан.

Мартăн 7-мĕшĕ.

Михаил Николаевич кăмăлсăр. Театр директорĕ Ксенофонтов ĕçсе лартнă та, темиçе кун ĕçе тухман. Вăл халĕ ун вырăнне çын шырать. «Советская Чувашия» хаçатăн собкорĕнче ĕçлесе пенсие тухнă Петр Гурьевич Кольцов тахçанах унăн заместителĕ, референчĕ пуласшăнччĕ, çавскер пынă та, вара ăна директор тума шутларĕ. ЧОКЦ артисчĕсем хамăр ĕçлекен çуртăн мăн

залёнче хёрарӑмсен кунӗ ячӗпе концерт пачӗҫ. Эпӗ пулаймарӑм, хаҫат пленкисем пӑхма тухса кайрӑм.

Мартӑн 9-мӗшӗ.

Ӗнер, уяв кунӗнче, Клим Сергеева ӗҫе пыма шӑнкӑравларӑм. Хаҫат страницисене макетласа хутӑмӑр. Кӑнтӑрла иртиччен ӗҫлерӗмӗр. Унсӑрӑн тунтикун ӗлкӗрейместӗп. Эпӗ материалсене редакцилесе пӗтертӗм.

«Пикен» 1-мӗш номерӗ пичетленсе тухрӗ.

Юхма виҫӗмкун пӗр интерес пӗлтерчӗ. Виталий Енӗш ответлӑ секретарь мар, «Вучахӑн» тӗп редакторӗ пуласшӑн-мӗн.

Мартӑн 12-мӗшӗ.

Иккӗмӗш планеркӑна Тенюшев каллех хӑй ирттерчӗ, мана шанмасть. «Труд» хаҫатран касса илнӗ статйине Клим Сергеева куҫарттарса тата Гитлер бункерӗсем ҫинчен калакан материала хӑй куҫарса пичетленӗ 8-мӗш номӗре ырласа пӗтерейместь.

Мартӑн 29-мӗшӗ.

Юхма Ялтӑран, ҫамрӑк критиксен семинарӗнчен (вӑл РСФСР секцине ертсе пынӑ), Мускав урлӑ таврӑнчӗ. Ирпе пирӗн пата кӗчӗ. «Мӗн питӗ тунсӑхлӑ ларатӑн?» - ыйтать манран. «Ытларикунран ытларикунччен ҫавӑн пек кӑмӑл пирӗн», - терӗм. Кӗркури Луч хушса хучӗ: «Ҫынни ӗҫре ҫунса ларать. Мӗнпур организациллӗ ӗҫӗ ун ҫине тиенет, материалӗсене те редакцилесе, вуласа тӑнран каять пуль... Тенюшев планеркӑна килет те, кунта запятая, унта точка лартман, тесе кӑмӑла хуҫса хӑварать. Шеллетӗп Кузьмина». «Редакцире ӗҫ халӗ йӗркеленсе пырать-ҫке, ан тунсӑхлӑр, пурте лайӑхах пулать», - тесе лӑплантарма тӑрӑшрӗ пире Михаил Николаевич.

Апрелӗн 1-мӗшӗ.

Сарпипе Праски Витти Эстонире чӑваш культурин уявӗнче пулнӑ. Раиса Васильевнана унта питӗ хитре кӗпе парнеленӗ. Унпа мухтанса илчӗ планеркӑра, ҫаврӑна-ҫаврӑна кӑтартрӗ.

ЧОКЦ планеркисене Тенюшев хӑй пымасть, мана ярать. «Вучахӑн» мӗн каламалли пур?» - тесе ыйтсассӑн, Юхмана эпӗ ҫапла пӗлтертӗм: «Эрнекун хамӑр пӳлӗмре калаҫни ҫумне манӑн хушмалли нимӗн те ҫук, ҫав ыйтӑва васкавлӑрах татса панинчен хаҫат шӑпи килет, халлӗхе савӑнмалли те, мухтанмалли те ҫукрах-ха, пирӗн каялла утмалла мар, малаллах каймалла».

Кайран хӑй патне кӗтӗм те, Михаил Николаевич калать: «Ун пек тунсӑхлӑ ан пул, кӑмӑлна ан хуҫ, эпӗ сана Тракторостройранпах лайӑх пӗлетӗп, пулӑшма тӑрӑшнӑ, пурте хамӑр шут-

ланӑ пекех пулӗ. Эпӗ Тенюшева издательство директорӗ урлӑ редактортан яма тӑрӑшатӑп-ха. Хӑй ниепле те ӑнланасшӑн мар».

Апрелӗн 2-мӗшӗ.

Пирӗн планеркӑна Юхма та пычӗ. Унта ытлашши хӗрӳ сӑмах ҫапакан пулмарӗ. Хаҫат хӑш кунпа тухни сиксе юлнӑ. Йӑнӑшсем нумай кайни ҫинчен каллех Тенюшев вӑрах каларӗ. Пайсен планӗсене ҫирӗплетрӗ. Кошкина каялла тавӑрса пачӗ. Вӑйлатмалла.

Апрелӗн 7-мӗшӗ, вырсарникун.

Мӑнкун ячӗпе телевидени-радио шавлать, хаҫат-журнал кӗрлет. Идеологи йӗппи тепӗр майлӑ куҫса ларчӗ.

Манӑн «Ялав» библиотекинче «Аттесен ҫулӗпе» повесть кӗнекен пичетленсе тухрӗ. Ӑна эпӗ «Ашшӗсен ҫулӗпех» ятпа виҫӗмҫул шӑпах ҫак вӑхӑтра вунӑ кун хушшинче ятарласа ҫав «Библиотечка» валли ҫырнӑччӗ. Нумай тытса тӑчӗҫ. Япалин хакне кура мар, ҫыннин чапне кура кӑларса пычӗҫ те кӗнекисене, ҫавӑнпа манӑнне ҫак вӑхӑта ҫитерчӗҫ.

Юхма Виталий Енӗше ответлӑ секретаре те, урӑх должноҫа та илесшӗн мар та, вара эпӗ ӑна секретаре Саша Мокина куҫарса, ун вырӑнне Вӑрнарта редакцире радио передачисемпе ӗҫлекен, ЧОКЦ филиалне ертсе пыракан Анатолий Иванов-Хума илсе килме сӗнтӗм. Унпа Михаил Николаевич килӗшет.

Ҫур ставкӑпа пӗрремӗш типографи корректорне ӗҫе илтӗмӗр. Пӗччен 16 страница тӗрӗслеме Люда Чермакована йывӑр.

Апрелӗн 8-мӗшӗ.

Ирех киле Варсонофий Михайлов шӑнкӑравларӗ, питӗ йывӑр пирки кӑнтӑрла иртмесӗр пыраймастӑп, терӗ. Ӑнлантӑм: мӑнкун лайӑхах тунӑ иккен. Пире шутсӑр ҫӑмӑл теҫҫӗ-ши вӗсем - Михайловсем, Мокинсем, Васильевсем, Филипповсем... Володьӑсем те халӑх праҫник-уявӗсенчен пӑрӑнса юлмаҫҫӗ вӗт. Володьӑсен те пыр пур, апла-тӑк, мухмӑр та пур. Мухмӑр чирне парӑнса ку таранччен ӗҫе тухмасӑрах пулман та... Кузьминсен чӑтмаллах, вӗсен пурин лавне те туртмаллах. Таса чунлӑх хистет мана темле йывӑрлӑхра та ҫӗнтерме. Унсӑрӑн... «Симӗс ҫӗлен» пӗтӗмпех явакласа илет: чунна, кӗлеткӳне, шухӑшна ӗмсе ҫӑтать. Тӗппипех пӗтерсе лартать, хӑртать пултарулӑхна.

Тӑххӑрта ЧОКЦ планерки пулмарӗ. Юхма Мишши хаклӑ хӑнапа хула тӑрӑх ҫӳрет-мӗн. Швецирен Библи институчӗн директорӗ Ракович господин килнӗ те, ӑна чӑваш культурипе паллаштарать.

15 сехетре аялти хутра тӗлпулу пулчӗ. Мӑнал чиркӗвӗн пупӗ Йӑван атте килнӗччӗ. Вӑл ЧОКЦпа «Вучаха» пулӑшсах тӑрать.

Апрелӗн 9-мӗшӗ.

11 сехетре редакци планерки пулчӗ. Ҫав вӑхӑта, ҫав куна курас килми пулса ҫитрӗ. Тенюшев пырса кӗрсенех, кӑмӑл пӗтет. Калаҫас та килмест. Луч пӗлтернӗ тӑрӑх, вӑл кунтан тупӑкра йӑтса тухмасӑр та кайма шутламасть иккен. Юхми юри тӑсса пырать. Лешӗ ӑна ырласа-мухтаса, йӑпӑлтатса пурӑнать те, ун ҫинчен статьясем ҫырать. Пурте ӑнлансах пӗтмен явлӑм пур тата вӗсен хушшинче - патӑрьелсен хушшинче. Маншӑн вӑл та паллӑ, вӗсен шухӑш-ӗмӗтне, каварлӑхне витӗр курса тӑратӑп, хӑйсене те, урӑх ҫынна та шарламан ҫеҫ.

Иван Яковлевич паян: «Кам айӑпа кӗнӗ - ҫавна укҫа ҫуррине ҫеҫ паратӑп, кам айӑпа кӗмен - нумай паратӑп», - тесе хӑратса ларчӗ редакци ачисене. Хаҫатӑн презентацийӗ тата ЧОКЦӑн ҫулталӑк пухӑвӗ умӗн пирӗн кӑмӑла хуҫать. Издательствӑра та вӑрҫаҫҫӗ тет хӑйне тӗп ӗҫӗнче йӗркеллӗ пулайманшӑн тата пултарулӑхӗпе ӑнтарайманшӑн.

Апрелӗн 10-мӗшӗ.

Кӑнтӑрла иртни виҫҫӗре хамӑрӑн хуҫан Михаил Николаевич Юхман, паллӑ журналистӑн, писателӗн Юхма Мишшин ҫуралнӑ кунне паллӑ турӑмӑр - 55 тултарчӗ. ЧОКЦ правленийӗн, «Пике», «Вучах» ҫыннисем эртелпе хӑйӗн пӳлӗмӗнче саламларӑмӑр. Сарпи пухӑвне уҫрӗ, профком председателӗ Кошкин «Диккенс пултарулӑхӗ ҫинчен» кӗнеке пачӗ, Эктел, Михайлов, Сачкова сӑмах каларӗҫ. Эпӗ те пуҫра мӗн пухӑннине каларӑм:

«Михаил Николаевичпа эпир хӗрӳ ӗҫре - Тракторостройра ҫывӑх паллашнӑччӗ. Эпӗ стройкӑра ӗҫлеттӗм, вӑл - ҫӗнӗ заводра. Эпир ҫитмен кӗтес юлмарӗ унта. Ӑна строительсем те, рабочисем те питӗ хисеплетчӗҫ. Писательсен Союзӗнче Юхмана партие илме тӑхтаса тӑнӑччӗ, сӑлтавӗ мӗншӗнни паллӑччӗ ӗнтӗ: чӑкӑлташсене куҫран пуҫ сӑннипе тирнӗшӗн. Анчах рабочи класс ӑна хӑй ретне йышӑнчӗ, ӑна партие илнӗ чухне Шупашкарти Калинин райкомӗн бюровӗнче хам та пулнӑччӗ.

Пилӗк ҫул каялла эпӗ Михаил Николаевича республикӑри Максим Горький ячӗллӗ библиотекӑра 50 ҫул тултарнӑ ятпа «Капкӑнран» саламланӑччӗ. Ун чухне ун аллинче «Политиздат» кӑларнӑ хӗрлӗ кӗнекесем-парнесем те пурччӗ, паян унӑн аллинче - виҫӗмкун Евангелипе ӳкернӗ сӑнӳкерчӗкӗ. Ирпе ӑна ӳкерӳҫи Борис Иванов ҫитерсе пачӗ. Акӑ, курӑр, авӑ епле кӑмӑллӑн тытса тӑрать Миха-

ил Николаевич Сăвап кĕнекине кăкăрĕ çумĕнче. Ăна вăл ăшăтать, паллах. Çав Сăвап кĕнекине унччен пире алла тытма та, кăкăр çумне çывхартма та чарнă, паянхи уççăнлăхра ăна вăл епле юратса тытса тăрать. Компартин Хĕрлĕ кĕнеки те, Туррăн Сăвап кĕнеки те ăшăтать унăн ăшчикне, чĕрине. Турă пулăштăр сире малашне те чăваш культуришĕн тăрăшмашкăн.

Çапла, эпир иксĕмĕр каллех хĕрӳ те кăткăс вăхăтра çак пысăк ĕçре тĕл пултăмăр.

Эпĕ те паян, хамăрăн «Вучах» ĕç эртелĕ, хаçат вулаканĕсен ячĕпе сире çуралнă кунпа саламласа малашне те çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатăп, хамăн чĕререн çырнă кĕнекеме чĕре çумĕнчен кăларса чĕререн парнелетĕп. Çак кĕнекери пек «Аттесен çулĕпех» малалла утар, çĕнтерер».

Юхма вĕçĕнче хăй сăмах каларĕ. Асăнмалăх сăн ӳкерттертĕмĕр.

Апрелĕн 11-мĕшĕ.

Григорий Васильевичăн дежурнăй пулмаллаччĕ. Типографирен Люда 4 полоса вуламалли пулчĕ тесе шăнкăравларĕ. Пăхатăп та, пӳлĕмри ман кӳршĕ Луч çуккă. шыраса тупаймарăм. Ирĕксĕрех вара кăнтăрла иртсен Вася Кервене ямалла пулчĕ. Анатолий Филиппов Тенюшев заданийĕпе çӳрет. Александр Мокин хулан нихăш кĕтесĕнчен те сасă памарĕ. Варсонофий Михалчпа полосасене саккăрччен çыпăçтартăмăр. Пĕрисем ĕçсе çӳреççĕ, теприсем - ĕçлесе тарлаççĕ.

Апрелĕн 12-мĕшĕ.

Луч ирех çитрĕ, аран-аран чăтса ларчĕ. Мухмăрĕ вĕлерет. Апата кайсан, килĕнчен хăй тахçанах пытарса лартнă эрехне илсе килчĕ, хăйма банкине, пĕчĕкскерне, янă. Манăн типографине каймалла пулчĕ. Ĕç хыççăн ĕçетĕп, терĕ. Темле-çке, чăтайĕ-ши?

Апрелĕн 15-мĕшĕ.

Юхма ирех кăмăлсăр. Хăй патĕнче чылай калаçса лартăмăр. «Тенюшев пирĕншĕн чăнах та тормоз пулса тăчĕ, - тет. - Çак эрнере президиумра ирĕксĕрлесех ямалла пулать ăна. Ун вырăнне сана хушмалла ĕнтĕ тĕп редактор ĕçĕсене туса пымашкăн».

Пире преми паратпăр тесе хаçатра çапса кăларнă хыççăн, «Пике» кăларакансем пуху ирттернĕ те, укçа хăпартса пама тата 70 процент преми илме, ĕçе 11 сехете çӳреме йышăнса, ЧОКЦ правленине протокол тăратнă. Хаяр çынсем пухăннă çав унта: Эктел, Сачкова, Федорова, Сорокина...

Планеркăра Юхма çавăн пирки каларĕ. «Пике» хăй укçипе 8 номер кăларма пултарать. «Вучах» 12 номер кăларса 34 пин кивçене кĕнĕ. Спонсорсем кирлĕ, мансăр пуçне никам та укçа шырамасть. Пире Министрсен Совечĕ кăçал пулăшмасть, - тет Михаил Николаевич. - Укçа нумай кирлисем урăх çĕре куçма пултаратăр».

Планеркăна хăйĕн штатра тăман заместительне Виталий Енĕше те чĕннĕ. Ку ахальтен мар-ха, тесе шутларăм. Чăнах та, Виталий Григорьевич хаçата лайăхлатмалли, спонсорсем тупмалли çинчен каларĕ. Редакци çумĕнче хуçалăх расчечĕ çинче ĕçлекен пĕр çын кирлĕ çавнашкалли, терĕ. Унччен калаçатчĕха вăл ун пирки.

Луч ĕçе пымарĕ, ура туртса лартрĕ тесе телефонпа пĕлтерчĕ. Ури мар, пырă туртса лартнă пуль-ха. Мокинĕ телефонпа шăнкăравларĕ, медкомиссире тĕрĕслеттерет сывлăхне, милицине ĕçлеме кайма хатĕрленет. Клим Сергеева макет тума пăрахтарас тетпĕр, укçа ӳстерсе пама ыйтать. Анатолий Хумăн Вăрнартан куçма кăмăл пур.

Апрелĕн 16-мĕшĕ.

Михаил Николаевич редакци планеркине хăй патĕнче иртеретĕп, терĕ. Тенюшев, ирех шăнкăравласа, кам хăш вăхăтра ĕçе килнине Ирăран тĕпчесе ыйтнă. 11 тĕлнелле кăштăртатса çитрĕ. Пирĕн çĕнĕ техничка урай çуса тухрĕ, çавăнпа эпир варринчи пӳлĕмреччĕ. «Атьăр, кĕрер, пуçлар», - терĕ те Иван Яковлевич, хăй чи малтан кĕрсе кайрĕ. Эпĕ: «Михаил Николаевич планерка хăй патĕнче ирттересшĕн», - тесе пĕлтертĕм. «Хăй кунта килтĕр!» - тесе Тенюшев хыттăн каларĕ. Эпĕ вара Юхмана чĕнме кайрăм. Мăкăртатса илчĕ те пирĕн аслă хуçа, Сарпипе пĕрле çапах та пычĕ. Клим Сергеева малтанах чĕнтернĕччĕ. Вăл та хашкаса çитрĕ.

Луч ĕçнĕ пирки иртнĕ номершĕн Василий Кошкин хуравлă пулнăччĕ. Вăл тишкерчĕ. Çивĕч, проблемăллă материалсем, вулакана питĕ туртакан япаласем сахалтараххине палăртрĕç. Михаил Николаевич хаçат хамăра пулăшакан организацисемпе уйрăм спонсорсем çинчен, аякра пурăнакан чăвашсен нуши-терчĕ пирки сахалтарах çырни, ЧОКЦ платформипе килĕшӳллĕнрех пырайманни çинчен тĕп редактора ăнланмаллах, илтмеллех каларĕ. Тенюшев хăйĕннех перет: «Эпĕ ку номĕре «3» кăна лартса пама пултаратăп, 8-мĕш номер пек хаçат кăларса кăтартаймарăр ĕнтĕ, - терĕ Юхма асăрхаттарнине илтмĕш пулса. Вăл номĕрте унăн

Мускав хаҫачӗсенчен касса илнӗ куҫару статйисем куҫа хылчӑк пек тӑрӑнатчӗҫ те... Хӑйшӗн чаплӑ ӗнтӗ. Вак йӑнӑшсемпе чакаланса кӗрсе кайрӗ. Юлашкинчен, кӑмӑлсӑррӑн, дисциплина ҫине куҫрӗ: «Кошкин 9 сехет те 15 минутра, Филиппов 9 сехет ҫурӑра кӑна ҫитсе ларнӑ...» Эпӗ те чӑтаймарӑм: «Мӗнле ҫитсе ларнӑ?» Эпир вара кунта ларатпӑр ҫеҫ-и? Хаҫата акӑ ҫак маттур ҫынсем тӑваҫҫӗ. Тен, вӗсем маларах та ӗҫе тытӑннӑ. Эпӗ, сӑмахран, ҫиччӗрех кунта. Михайлов та ирех типографире. Эпир - ирхине ҫиччӗрен пуҫласа каҫхине саккӑр-тӑххӑрччен, шӑматкун-вырсарникун та, праҫниксенче те ӗҫре, вӑхӑта шеллемесӗр ӑшталанатпӑр. Ӑна куракан-туякан ҫук, ҫак хаҫата мӗнле тунине сирӗн те пӗлес пулать» - терӗм тарӑхсах. Хирӗҫсех кайрӑмӑр тӗп тишкерӳҫӗпе. Раиса Сарпи, чӑтаймасӑр, тухса кайрӗ. Юхма та тӗлпулӑва васкарӗ.

Ун хыҫҫӑн хаҫат уявӗ умӗнхи ӗҫсем пирки калаҫрӑмӑр, урӑх тавлашмарӑмӑр.

Кӑнтӑрла иртсен пӗррере реском типографийӗн печатникӗсем тӑваттӑн килчӗҫ, унччен калаҫса татӑлнӑ пекех, кашни номершӗн вӗсене уйрӑммӑн 200-шер тенкӗ тӳлесси ҫинчен Тенюшев килӗшӳ турӗ. Ӑна та мана ҫыртарасшӑнччӗ, эпӗ килӗшмерӗм. Пурне те ҫынна тутарасшӑн.

Ман патран сывпуллашмасӑрах тухса кайрӗ. Хӑй вырӑнне вӑл пенсине тухнӑ Андрей Иванович Михайлов журналиста хӑварасшӑн, тет. Юхма каларӗ. Ун чухне Денис Гордеев та пурччӗ. Авӑ епле усал шухӑшлӑ вӑл - Тенюшев ултавҫӑ!

Секретарьпе выпускающий редактор ӗҫӗсене пӗр ҫынна - Варсонофий Михалча тутарса пырасси пирки Юхмапа калаҫрӑм. Килӗшет. Клима урӑх ан кил, тесе пӗлтертӗм, вӑл ҫилампах ҫак номӗре туса пӗтересшӗн.

Апрелӗн 18-мӗшӗ.

Ӗҫе ирех ҫитрӗм. Паян - хаҫатӑн презентацийӗ, уявӗ, ӗҫ нумай. Дежурнӑй пулма Кӗркури Луча ятӑм. Хӑнасем килме тытӑнчӗҫ. Кӑнтӑрла иртсен Тенюшев кӑштӑртатса ҫитрӗ. Ӗҫ пирки мар, тем урӑххисем ҫинчен, доклачӗ ҫинчен мухтанса калаҫать. Коридорта пирус туртса тӑратчӗ, унта та пулин манпа хирӗлсе илчӗ. «Эсир Клим Сергеевича урӑх кунта килме хушман, терӗҫ (элеклекенсем тупӑннӑ та). Ҫапах та ку вӑл - кадрсен ыйтӑвӗ, ун пирки манпа канашламасӑр калаҫма кирлӗ пулман», - терӗ. Эпӗ: «Сергеева приказпа ӗҫе илмен, вӑл килӗшӳ тӑрӑх ҫеҫ макетсем тӑвать, эпӗ ӑна ҫак номер страни-

цисем пирки каланӑ, халӗ, презентаципе ЧОКЦӑн ҫулталăк пухăвӗ пулса иртмесӗр, нимӗн те паллă мар, ҫавăнпа ӗҫ ҫук, тенӗ», - терӗм.

16 сехет тӗлне халăх пухăнса ҫитрӗ. Александр Мокин, массăллă ӗҫшӗн чи хуравли, пульницана каятăп тесе ҫухалнă. Филипповӗ, чернобылецсем республикăри иккӗмӗш пульница-ра хирӗҫлӳ тунă та, унта ҫырма кайса килетӗп, терӗ. Михайлов типографире. Васильев хаҫат вулать. Унччен пирӗн Кошкинпа иксӗмӗрӗн чупмалла пулчӗ.

Ман хуҫăк кăмăла хамăрьялсем килни уҫса ячӗ. Вăрнар рай-онӗнчен «Янгорчино» колхоз председателӗ Федор Григорьевич Кузьмин тата Хурăнсур клубӗн заведующийӗ Иван Констан-тинович Иванов килнӗ, механизаторсене ҫуракине кăларса янă хыҫҫăн - тӳрех. Кузьмина эпӗ президиума сӗнтӗм, Юхма спи-сока ҫырса хучӗ. Вăрнартан Анатолий Хум та килнӗ. Пӗрле лартăмăр.

Пухăва, салам сăмахӗ каласа, Юхма Мишши уҫрӗ, Тенюшева сăмах пачӗ. Иван Яковлевич докладне начар хатӗрленӗ, маларах мана вуласа пăхатăн-и, тенӗччӗ. Эпӗ залра итлетӗп, терӗм. Хаҫат кăларнă ҫӗрте эпӗ мӗнле ӗҫленине асăнмарӗ те, Кошкинсене мухтаса пӗтерчӗ, хаҫат нумай сарнăшăн мана та ырларӗ вара. Иван Константинович калать: «Хăйӗн замести-тельне асăнмарӗ ку редактор сирӗн ыттисене ырланă чухне, пит тӗлӗнмелле».

Кузьминпа Иванов мана питӗ ырă турӗҫ: «Вучах» хаҫат кăлармашкăн колхоз 1000 тенкӗ, колхоз театрӗ 25 тенкӗ пачӗҫ. Кайран Тенюшев мана «Янгорчино» колхозшăн сире пысăк тав», - тесе хамăр пӳлӗмре ҫынсен куҫӗ умӗнче алă пачӗ-ха, тавах уншăн.

Хаҫат кăларма ытти ҫынсем те укҫа хыв рӗҫ. Эпӗ те 25 тенкӗ патăм. Порфирий Афанасьев култарчӗ: «Арăмран пытарса хăварнă 20 тенкӗне хыватăп». Денис Гордеев, Василий Петров, Вита-лий Енӗш пирӗн ҫумра кулкаласа ларчӗҫ. Енӗшӗ хăть 20 тенкӗ пачӗ. Николай Егоров - Микулай М.И. Кулай тухса шурӗ. Ăна ку таранччен 1000 тенкӗ гонорар туса патăмăр, 10 тенкине те шеллерӗ.

Михаил Николаевич унашкаллисене урăх хаҫатра та, жур-налта та пичетлеместпӗр, терӗ. Тӗрӗс. Кам ЧОКЦа, «Вучахпа» «Пикене» пулăшать, ҫавсене хире-хирӗҫ пулăшăпăр. Унсăрăн эпир малалла каяймастпăр.

«Вучахра» вучах çулăмпах ялкăшать. Авă, редакци ĕçченĕсем - «лашисем» хăйсен юрттипе чупаççĕ, çĕнĕ номер тухнă хыççăн теприне хĕрсех кăларма хатĕрленеççĕ: Василий Кошкин, Владимир Кузьмин, Варсонофий Михайлов, Анатолий Филиппов, Ирина Горшкова, Александр Мокин.

Сылтăмра - пуçлăхсем. Ячĕшĕн шутланса тăракан тĕп редактор пекки Иван Тенюшев планеркăна пынă, йытă мĕнле усрамалли çинчен вырăсларан хăй куçарнă статья хаçатăн витĕмлĕхне татах та çӳлĕ шая çĕклеме пултарасси çинчен пурне те тăнлантарать. ЧОКЦ пуçлăхĕ Михаил Юхма ăна хăлха тăратсах итлесе ларать, куллине пытармашкăн тутине ывăçĕпе хупланă.

Борис Иванов вĕсене асăнмалăх ӳкерсе юлнă.

Апрелĕн 19-мĕшĕ.

10 сехетре ЧОКЦăн çулталăк пухăвĕ пуçланчĕ. Халăх ĕнерхинчен сахалтарах. Пирĕн Ирина Горшкова ĕнер презентацие килнĕ 3 çынна хаçат çырăнтарнă. Презентацие парти рескомĕнчен пичет секторне ертсе пыракан Николай Григорьев, Совминран культура министрĕ Герольд Алексеев, Шупашкар хула Совечĕн ĕçтăвком председателĕн заместителĕ Юрий Семенов пурччĕ. Трактор завочĕн директорĕ Ханиф Мингазов пирĕн ял ачипе Федор Кузьминпа президиумра юнашар ларчĕ. Вăл Чăвашсен общество центрне те, хаçата уйрăммăн та пулăшма пулчĕ.

Тухса калаçакансем пирĕн хаçата ĕнер те, паян та самаях шĕкĕлчерĕç. Тенюшев, чăтаймасăр, президиумран туха-туха каять, пирус мăкăрлантарса чунне лăплантарать. Намăс ăна, тĕрĕссипе, хаçачĕпе йĕркеллĕ ĕçлеймесĕр халăх укçине янтăласа илсе ларма. Çавăнпах-ши, «Ман юн пусăмĕ ӳссе кайрĕ. Тунтикун-ытларикун пулаймастăп сирĕн патра», - терĕ пуху вĕçленсен.

Эпир вунсакăр сехетре Хусана тухса кайрăмăр: «М.Н.Юхма, ЧОКЦăн Вăрнарти филиал пуçлăхĕ Анатолий Иванович Иванов-Хум, Чĕмпĕр чăвашĕсен Ульянов ячĕпе хисепленекен общество пуçлăхĕн çумĕ Василий Гаврилович Елагин, Канаш районĕнче çуралнăскер, тата эпĕ. Свияжска çити Совмин «Волгипе» ăсатрĕç. Раиса Васильевна Бородкина-Сарпи вăхăтлăха пирĕнтен юлчĕ. Тутарстанри Анат Камăри фольклор ушкăнĕ пуху хыççăн концерт пама килмеллеччĕ, вĕсем çитеймерĕç те, вара вĕсен вырăнне Петĕр Кольцов ертсе пыракан «Термен» театр Юхма Мишши драматург пьесипе лартнă спектакăле кăтартрĕ. Хусанта унта СССРти тĕрĕк халăхĕсен Ассамблейин иккĕмĕш сьезчĕ пулать. Çавăнта делегат пулса кайрăмăр эпир. Сарпи унта ыран Анат Камăри артистсемпе çитмелле.

Свияжскра нумай тăмарăмăр, хулаçум пуйăсĕпе Хусана кăртлаттарса çитрĕмĕр. Пире «Татарстан» хăна çуртне вырнаçтарчĕç. Эпир Юхмапа 614-мĕш пӳлĕме, Ивановпа Елагин 617-мĕшне лекрĕмĕр. Ресторан хупă та, Хумăн кăшт-кашт апатне çисе чей ĕçрĕмĕр.

Апрелĕн 20-мĕшĕ.

Форумне Атăл хĕрринче, Ленин мемориалĕнче, ирттереççĕ. Унта ятарлă автобуспа илсе çитерчĕç. Коран виçĕ-тăватă тĕрлине те сутаççĕ. Эпĕ «Священный Коран. Антология» тексннине тата

Ирвингăн «Жизнь Магомета» ятлă кĕнекине туянтăм. Коранпа тахçанах паллашас килетчĕ. Çырнă чухне те, пурнăçра та кирлĕ пулать.

Аслă пухăва 125 делегатпа 43 юхăм делегацийĕ пухăннă, якутсемпе таджик, туркка-месхетин таранах. Регистрациленĕ чухне мана та пĕчĕк хут татăкки тыттарчĕç, каярахпа унпа тепĕр хут пачĕç. Унта çапла çырнă: **«Мандат №75. Кузьмин В.П. является делегатом II-го сьезда народов Востока с правом решающего голоса».**

Ытларах тĕрĕк, тутар чĕлхисем янăраççĕ. Михаил Николаевич каланă тăрăх ку пухăва тутарсем хăйсен ĕçне, хăватне вăйлатас шутпа хăйсем патĕнче пухнă. Чăн та, çаплах пулса тухрĕ юлашкинчен. Президиум сĕтел хушшине ларма тытăнсанах сисĕнчĕ вăл. Михаил Николаевич чăтаймарĕ, тăрса ыйтрĕ: «Президиума кам суйланă?» «Эпир делегатсенчен малтан ыйтса килĕшнĕ тăрăх», - терĕ тутарсен общество центрĕн пуçлăхĕ, сьезда уçаканĕ Мулюков. Президиума вара Юхмана та чĕнчĕç. Ун хыççăн тин кашни халăх представительне ыйтса тухса чĕнсе лартрĕç. Редакци комиссине Юхмана кĕрттертĕмĕр.

Калаçу ытларах тутарсен, азербайджанецсен, туркка-месхетинсен тата ытти вак халăхсен нуши çинчен пычĕ. Тĕп тĕллевĕ - вырăс халăхĕн пусмăрĕнчен хăтăлса ирĕке тухасси, кашни халăхăн суверенитетне сыхласа хăварса пурнăçа кĕртесси.

Михаил Николаевич та тухса калаçрĕ. Вăл чăвашсем тутарсене мĕнле пулăшни çинчен каларĕ, эсир те пире хăвăр патра чăвашсен обществин ĕçне йĕркелесе яма пулăшăр, тесе ыйтрĕ. Куншăн алă çупрĕç. Вăл тата Ульяновскри И.Я.Яковлевăн чăваш шкулне чăваш халăхне тавăрса парас ĕç вăраха кайни çинчен каларĕ.

Сьезда Мускавран Трак ен чăвашĕ, унччен ЧАССР Министрсен Совечĕн пуçлăхĕ пулнă, халĕ РСФСР Аслă Канашĕнче наци ĕçĕсен пайне ертсе пыракан Леонид Прокопьевич Прокопьев та пынă. Тутарсем унпа пит вашаватах пулмарĕç курăнать, ăна президиума та лартмарĕç. Вăл çур кун итлесе ларчĕ те залра, кайран темле чиперкке майрапа, хăйпе пĕрле килнĕскерпе, тухса уттарчĕ. Пирĕнпе калаçрĕ. Елагин ăна Чĕмпĕр шкулĕ пирки аса илтерчĕ. Вăл тем сăмах пачĕ, унта çитес вăхăтрах пыма шантарчĕ.

Лару хыççăн тутарсем концерт лартрĕç. Аван. Юхма мана пĕр истори каласа пачĕ. «Татарстан» хăна çуртĕнчен инçех мар, çĕр

купаласа тунă çӳллĕ вырăнта, Мулланур Вахитов палăкĕ питĕ уççăн курăнса ларать. Вăл Тутарстанра Совет влаçĕшĕн кĕрешекенсене ертсе пыракансенчен пĕри, наркомнац комиссарĕ, Хусана тăшмансенчен хӳтĕленĕ çĕре хутшăннă паттăр пулнă. 1918 çулта ăна шурă гвардеецсем персе вĕлернĕ. Вахитов çинчен Михаил Николаевич «Кункăш - вилĕмсĕр кайăк» ятлă роман çырнăçке. Ăна Мускавра Политиздат вырăсла, Хусанта тутарла, Шупашкарта чăвашла кăларчĕç. Тутарсем çав хастар çынна, революционера хисеплесе палăк лартасшăн пулнă, анчах правительствăра чăрмавсем сиксе тухнă. Çак кĕнеке хыççăн вара çул уçăлнă. Çавăнпа Юхма ăна мăнаçлăн «Ман палăк», - тет. Тĕрĕсех те пуль. Палăкне уçнă çĕре ăна чĕннĕ, чăваш ачине тутарсем, пулăшнăшăн, хытă тав тунă.

Апрелĕн 21-мĕшĕ.

Атăл хĕрне чăвашсем тăватсăмăр та çурран кайрăмăр. Хусан урамĕсемпе истори асăнса пыратпăр. Кунта Шаляпин çуралнă, Максим Горький пулнă, Пирогов палăкне хисеплесе лартнă. Министрсен Совечĕпе КПСС обкомĕн çурчĕ (икĕ енчен кĕмелле) капланса ларать. «Акă çак çуртăн балконĕнчен Вахитов халăх умĕнче сăмах каланă, манăн роман çавăнтан пуçланать», - тет Михаил Николаевич. Атăл çыранĕнче калаçу тутарсемпе чăвашсем камсем пулни пирки пычĕ.

Кăнтăр апачĕ тĕлне Раиса Сарпи Анат Камăри Борис Никитин чăвашăн «Шăнкăравне» ертсе çитрĕ. Мулюков концерт партарма килĕшрĕ. Ай шăрантарчĕç вара пирĕн тулай чăвашĕсем тăван халăх юррисене, тутарсен юррине те юрларĕç. Пурте тăрсах хытă алă çупрĕç. Чăваш кунта та хăйĕн пултарулăхĕпе тĕлĕнтерчĕ. Концерт хыççăн ентешсем пĕрле пухăнса калаçрăмăр, вĕсене ăшшăн ăсатса ятăмăр.

Вĕçĕнче, суйлав вăхăтĕнче, кăмăл пăсăлчĕ. Малтан вĕсем координаци центрĕ тума палăртнă. Юхма мана унта виçĕ çын сĕнме хушнăччĕ: хăйне ЧОКЦран, Чĕмпĕрти общество представительне Елагина тата Пушкăрт чăвашĕсен ушкăн пуçлăхне Тарасова. Мулюков координаци центрне 9 çынтан çеç тăвас тесе сĕннĕ хыççăн тавлашу пуçланчĕ. Юхма та хĕрсех калаçрĕ. Эпĕ те унран юлмарăм. Вĕсем виçĕ регионран представительсем пухасшăнччĕ - 20 çын. Эпир Тутар, Пушкăрт тата Чăваш Республикисем - пĕр регион иккен. Тутарсенчен иккĕн, пушкăртсенчен иккĕн, пиртен пĕрре çеç. Тарăхсах кайрăмăр. «Мĕнле-ха вара эсир 2 миллионлă чăваш халăхне çапла мăшкăла тăратса хăва-

ратăр. Ку тĕрĕс мар. Эпир икĕ çын сĕнетпĕр!» - тесе кăшкăрсах каларăм. Тавлашсан-тавлашсан вара координаци центрне тăвас ыйтăва пăрахăçларĕç. Президентне тутара суйларăмăр. Вăл хăйĕн заместителĕсене тупать.

Ку Аслă пуху (вырăсла Ассамблея Тюркских народов е кĕскен АТН теççĕ) тĕнчене çакăн çинчен пĕлтерчĕ:

- АТН тĕрĕк халăхĕсен наци терменĕпе аталанăвĕн пĕрпĕтĕмлĕхĕшĕн кĕрешет;

- АТН халăхпа халăх хушшинче хирĕçӳ савăлĕ çапмасть, кашни халăхăн ирĕклĕ аталанăвне тата хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнать;

- АТН нацисем хушшинчи ыйтусене ирĕклĕн, политикăллă лару-тăрура татса парассишĕн тăрăшать;

- АТН мĕнпур обществăллă-политикăллă тата нациллĕ-демократиллĕ организацисемпе килĕштерсе ĕçлеме хатĕр.

Сьезд тĕрĕк халăхĕсен малашлăхĕшĕн тата вĕсен прависене хӳтĕлессишĕн çине тăрса 20 резолюци йышăнчĕ тата 9 чĕнӳ турĕ. Вăл шутран, 16-мĕш резолюцийĕ чăваш халăхĕшĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ăна вырăслах илсе кăтартăп: «О чувашской школе, фунционировавшей в г.Симбирске с 1868 по 1956 г.г.» ятлă вăл. Тексчĕ: «Делегаты II сьезда АТН поддерживают требование чувашской делегации сьезда вернуть эту школу чувашскому народу со всеми принадлежавшими ей зданиями и землями как колыбель его культурного и национального возрождения в конце XIX- начале XX веков, как его величайшую святыню.

Делегаты сьезда предлагают Верховному Совету РСФСР рассмотреть этот вопрос и сделать все необходимое для его быстрейшего решения».

Халăхсен массăллă юхăмĕсене хутшăнни акă мĕнле усă кӳме пултарать иккен. Л.П.Прокопьев çеç Мускав майрипе тaçтаччĕ...

Каçхине тăхăр сехет те иртсе кайрĕ. Çумăр вĕтĕртетет. Çара пуçăнах тухнăччĕ. Пуç тăрне эпĕ те, Юхма та, Елагин та сăмса тутрисем витсе ятăмăр. Çурран утрăмăр. ТАСС корреспонденчĕ, вырăсла çыракан тутар чăвашĕ Николай Сорокин хăйĕн штабхваттерне илсе кайрĕ, çитсенех телетайппа сьезд çинчен Мускава информаци пачĕ, арăмĕпе иккĕшĕ пире чăвашла хăналарĕç. Чăвашла юрласа та илтĕмĕр.

Апрелĕн 22-мĕшĕ.

Юхмапа ирех вокзалаваскарăмăр. Хум ĕнерех пуйăспа Вăрнара кайрĕ. Елагин Ульяновскаваскать. Сарпи артистсемпеччĕ. 7 сехет

те 15 минутра Хусантан тухса электричкăпа Свияжска çитрĕмĕр, унтан тӳрех «Икaруспа» 8 сехет те 45 минутра шупашкаралла ĕрĕхтертĕмĕр. 11-те эпир чăваш хулине çитрĕмĕр. Юхма киле кĕрсе тухатăп терĕ те, эпĕ тӳрех ĕçе кайрăм. Редакцире никам та çук. Михаил Николаевичăн ЧОКЦ пухăвĕнче тунă докладне статьялла майлаштарса «Пике» машинисткине хистесех çаптартăм. Çитес номер валли.

Çул çинче Юхма хамăрăн «Канаш» партине тăвас ыйтăва хускатрĕ. «Мĕнле пек, эсĕ ертсе пыма пуçласан ăна», - тет. Эпĕ пуçаруçа урăх кандидатсем сĕнтĕм.

Халĕ ĕнтĕ вăл Тенюшева редакцирен ярас тесех шутлать. Ирĕксĕрлесех.

Шупашкар районĕнчи Мăнал чиркĕвĕн пачăшки Йăван атте (малашне вĕсене çапла чăвашлах калас тетпĕр), Иванчин 1000 тенкĕ илсе пычĕ. Çуррине хаçат кăларма, çуррине Библие чăвашла куçарса пичетлеме тесе пачĕ. Тахçанах шантарнăччĕ. Улталамарĕ.

Михаил Николаевичпа вĕсем Чăваш Православи чиркĕвĕ тăвасси пирки чылайччен калаçса ларчĕç. Калаçăва эпĕ те хутшăнтăм. Шухăшĕ пĕрех пулнă иккен. Калаçăвне питĕ асăрханса Юхма пуçларĕ. Иванчин хавасах пулчĕ. Варнава ертсе пыракан епархи чăваш халăхĕшĕн ыррине ытлашши нимех те параймасть. Хăй вăл - вырăс, чăвашла пĕлмест, ватăлнă. Чăваш халăхне чăваш владыкиех кирлĕ ĕнтĕ. Ман шутпа унталла Йăван аттен хăйĕн те туртăнас ĕмĕт пур. Вăл питĕ ăслă, теорине вăйлă пĕлекен, богослови кандидачĕ пулма хатĕрленекен священник, архиерей, ыттисем хушшинче уçăмлăн уйрăлса тăрать. Чăвашлăха, чăваш халăхĕн авалхи тĕн йĕрки еннелле сулăннăшăн ăна тапăнса та пăхрĕç. Халĕ те юратмаççĕ куçран çивĕч каланăшăн.

Чăваш чиркĕвĕ тăвассине пуçарса ярас ыйтăва питĕ асăрханса йĕркелесе пымалла ĕнтĕ. Халăх лайăхрах ăнлантăр тесе майĕпен хаçатра çырусем пичетлеме пуçлас шухăш пур. Хаяр пачăшкăсемпе епархи пуçлăхĕсем те ĕненекенсене чăваш чиркĕвне тăвас шухăшлă çынсене хирĕç ан çавăрччĕр тесе «Вучахра» агитаци пуçласшăн. Ку ĕçе чи малтан ЧОКЦ хăй пуçарать. Юхма хамăр ушкăнпа Варнава владыко патне кайма палăртрĕ. Çак шухăшпа уйрăлтăмăр Йăван аттепе. Вăл хăй майлă çынсене шырать, эпир хамăр енчен ĕçе хĕмлентерсе яратпăр.

Иванчин протоиерейпа манăн редакцире чылай канашламалла пулчĕ. Сĕнтĕрвăрри енче пупра ĕçлекен ашшĕ пекех ырă кăмăллăскер, калаçма ухутаскер вăл. Хамăрăн малашлăх пирки

тавлашкаласа та илмелле пулчĕ. Юлашкинчен шухăша пĕр тĕвве çыхса, «Чăваш православи чиркĕвĕн сасси» ятпа «Вучахра» «Чун уççи» кăларăмсене вулакансем патне вăхăтра çитерме тăрăшас терĕмĕр.

1992 çулхи нарăсăн 3-мĕшĕнче черетлĕ кăларăм пичетленнĕччĕ. «Турă пулăштăр» ятпа тухнă статйинче Иоанн протоиерей Чăваш Православи Чиркĕвĕ чăвашсемшĕн мĕншĕн усăллă пулма пултарасси çинчен ĕненмелле палăртать. «Чăваш чиркĕвĕ туни, - тет вăл, - пĕртте вырăссенчен уйрăлнине пĕлтермест. Хамăр ăспа, тăван чĕлхепе Христос вĕрентĕвне, Христос ĕçне ăнланса илни, паллах, пире çавăн пекех Христос патне пыракан халăхсемпе тăванлаштарать, пĕрлештерет. Пур халăхсем те çапла шухăшласан аван та аван пулмалла. Православи вырăссем валли кăна мар, тĕнчери пур халăхшăн та, вăл шутра чăвашсемшĕн те пулнине кăтартăччĕ тесе шухăшлатăп».

Хаçат тухнă кун Йăван атте Мускав анлă урамĕнчи редакцие пĕчĕк хĕр ачипе пынăччĕ. Сăмах май кăларăмăн пулас планне пăхса тухрăмăр. Эпĕ хăнана Борис Ивановăн çакă сăн ӳкерчĕкне парнелерĕм. Акă камсем унта (сулахайран):Василий Кошкин поэт-журналист, Иван Иванчин, Владимир Кузьмин тата чăваш халăх художникĕ, «Вучаха» чунĕпе пулăшакан Владимир Агеев.

Михаил Николаевичпа киле пĕрле таврăнтăмăр. Ĕç пӳлĕмĕнчен тухнă чухне вăл темле ытарлăрах кулкаласа илчĕ те: «Тин çеç

арăм шăнкăравларĕ, эсĕ кил пурри çинчен шухăшлатăн-и, тесе ыйтрĕ», - терĕ. «Çуркунне çитни çинчен пĕлтерет вăл», - тесе кулса ятăм.

Пĕрмай ăшталанса çӳренипе, вăхăта, вăя шеллемесĕр общество ĕçĕшĕн кăна чуна парсах çунса та кайма пулать. Сывлăх енчен ĕнтĕ. Вăл калать-ха: «Вăхăт хăйĕннех кăтартса парать, кам халăхшăн мĕнле ĕçленине хăçан та пулин чăннипе калĕç халăхра». Эпĕ ăна çапла сĕнтĕм: «Пирĕн те ĕçре кашни çынна хăй вырăнне лартмалла, кашни хăй ĕçне тивĕçлĕ пурнăçласан, вара сире валли те, мана валли те ирĕклĕ вăхăт кăшт тупăнать, кунтах ларсан кунĕпе, ишсе тухаймастпăр, хушăран адрессĕр вырăна тармалла, никам та ан туптăр шыраса».

Апрелĕн 29-мĕшĕ.

Тĕрĕк халăхĕсен пухăвĕнче пуçа килнĕ шухăшсене, унта тĕл пулса калаçнă нумай наци çыннисен шухăш-туйăмне анлăн пĕтĕмлетсе тишкерӳллĕ статьясем çыртăм, хамăн çунатлă ĕмĕтĕме Чăваш Терменĕн малашлăхĕнче курса савăннине халăх умне кăлартăм. Вĕсем «Вучахра», «Хыпарта» пичетленчĕç. Юхма Мишши те «Советская Чувашия» хаçатра шухăшлавлă статья кăларчĕ.

Чăваш хамăр республика тулашĕнче йышлăн пурăнни наци аталанăвне нумай енчен чакарнине палăртрăмăр хамăр хайлавсенче. Халăх умĕнчи чаркăчсене сирсе ывăтма тата чăваш çыннисене çул уçса пама пире тĕрĕк халăхĕсен çак хăватлă вăйĕ те сахал мар пулăшу пама пултарать. Чăвашсен обществăпа культура центрĕн те малашне çав пĕрлешӳре - Тĕрĕк халăхĕсен Ассамблейинче - хамăр халăх интересĕсне тивĕçлипе хӳтĕлеме тăрăшмалла. Çавăнпа та малашне АТНа коллективлă член пулса кĕмелле. Çапла туни тĕрĕсех пулĕ тесе йышăнчĕ ЧОКЦ правленийĕн президиумĕ хăйĕн черетлĕ ларăвĕнче.

Тĕрĕк халăхĕсен Ассамблейинче чăваш делегацийĕ çĕртме уйăхĕнче Атăл тăрăхĕнчи халăхсен съездне Шупашкарта ирттер-

ме сӗнчӗ. Анчах пирӗн кӳршӗсем ку мероприятие те Хусантан кӑлармаҫҫӗ. Ах епле чее-ҫке, витӗмлӗ ӗҫлеҫҫӗ-ҫке тутарсем. Вӑйлӑ!

Мокин ирех Иван Яковлевич патӗнче пулнӑ. Айӑпа кӗрсен мӗнле майпа шывран типӗ тухмаллине аванах вӗренсе ҫитнӗ-ха ачи. Ку та хӑйне евӗр пултарулӑх ӗнтӗ. Пурин те тухмасть вӑл. Мана калать: «Эсир тӗп редактор пулатӑр, тесе пӗлтерчӗ Тенюшев». Ӗненмесӗр, кулса ятӑм Сашӑн юмахне илтсен. Тенюшев халь мана ҫав тери кураймасть хӑйӗн юррине юрламаншӑн тата хӑйӗн сылтӑм алли пулма килӗшменшӗн. Вӑл мана ӗмӗрне те тӗп редактор вырӑнне сӗнес ҫук. Хӑйсем малтан ҫав тӗллевпе кунта чӗнсе килнӗ пулин те, хӑйсене хаҫат туса патӑм пулин те. Мокин Тенюшев валли ман шухӑша пӗлесшӗнччӗ. Айван.

Кунӗпех 17-мӗш номӗрпе лартӑм. Киле каяс умӗн Юхма хӑйӗн пӳлӗмӗнче каларӗ: «Иван Яковлевич патӗнче Чӑвашгизра пултӑм. Вӑл каятӑп, тет. Редактор ӗҫӗсене тума мана хушса приказ ҫыратӑп, енчен те урӑхла тусан... эпӗ заявлени паман, каймастӑп, тет. 17-18-мӗш номӗрсене эпӗ редакторшӑн пусатӑп, ун хыҫҫӑн е маларахах та сана редактор ӗҫӗсене туса пыма хушса приказ ҫыратӑп. Мана вӑл ӗҫ кирлӗ мар, сана эпӗ кансӗрлесе пымӑп, ӗҫлӗр пӗр шухӑшпах».

Эпӗ кӑмӑлсӑрлантӑм. Ҫавна курнипе вӑл мана лӑпланма ыйтрӗ. Эпӗ вара ниепле те лӑпланаймарӑм. Киле ҫитсен, мӑшӑрӑмпа калаҫрӑм. Римма Ильинична калать: «Сана, ухмаха, пурте улталаса ӗҫлеттереҫҫӗ, ялан ҫын чури ан пул. Ытлашши те ан кулян. Кунашкаллине кӑна чӑтса ирттермен эпир иксӗмӗр».

Мана Юхма урӑх вариант шырама хушрӗ, эпӑ вара пуҫа та ҫӗмӗрмерӗм. Хӑйсем калаҫнӑ-килӗшнӗ, хӑйсемех татса паччӗр. Вӗсен хӑйсен хутшӑнӑвӗ, вӑрттӑнлӑхӗ.

Эпир пуҫа усмастпӑр. Тарҫӑ та пулмастпӑр.

Апрелӗн 30-мӗшӗ.

Юхма ҫиччӗрех пырса ларнӑ. Эпӗ саккӑр ҫитерехпе алӑка уҫса кӗтӗм. Манран маларах ӗлкӗрекенни редакцире ҫуккӑ. «Ӗнерхи пирки мӗн шухӑшлатӑн?» - тесе ыйтрӗ вӑл. Эпӗ: «Шухӑшласа пуҫа та ҫӗмӗрмерӗм, хаҫата малашне мӗнле лайӑхрах кӑларасси ҫинчен ӗмӗтленсе ыйхӑ та килмерӗ. Эпӗ сире ӗненсе, шанса кунта куҫрӑм та, урӑхла мӗнле пулма пултарать-ха, манӑн пӗтӗм пултарулӑх культурӑпа ҫыхӑннӑ, ӗҫлер», - терӗм. «Юрать, эпӗ сана шанатӑп, пӗр-икӗ номӗртен приказне сан ҫине ҫыратӑп, малтан ӑне Тенюшевпа пӗрле пуҫарса ятӑмӑр та ӗнтӗ, протоколсене пӑхкаларӑм та, ЧОКЦ хучӗсем ҫине малтан эпӗ председа-

тель, вăл казначей тесе алă пуснă, шеллес килчĕ, лайăхах тухса кайтăр хаçатран», - терĕ.

Ман патра 10 сехет çурăра пухăнтăмăр. Юхмапа Сарпи пычĕç. Тенюшев приказ кĕнеки хĕстерсе çитнĕ. Луч вырăнĕнче ларать. Вăл ура çине тăчĕ те приказран пуçларĕ: «Сывлăх начарланнине пула эпĕ малашне главнăй редакторта ĕçлейместĕп, хам вырăна ЧОКЦ правленийĕн председательне М.Н.Юхмана вăхăтлăх парса хăваратăп. Лайăх ĕçле, Михаил Николаевич, гонорарне хăв çеç ларт, эсир хаçат ку таранччен тытса пынă традицие çирĕп тытса пырăр. Эпĕ сире нумаях пулăшаймарăм ĕнтĕ, малашне те сирĕнтен уйрăлас килмест-ха. Мускав материалĕсене, эпĕ хаçатсенчен касса килсе панисене те, çĕннисене те куçарса пичетлеме ан манăр», - терĕ.

Раиса Васильевна, çулăмлă сăмах каласа, ăна виçĕ тикĕт курăкĕ (гвоздика) пачĕ. Эпĕ те калаçрăм, Юхма ыйтнипе. «Малтанхине, пуçарса яраканнине, - терĕм, - нихăçан та çăмăл мар. Мван Якăльчăн та хаçатшăн пайтах тăрăшмалла пулнă пуль. Эпир унпа Йĕпреçре пĕр çĕрте - пĕр çуртра ĕçленĕ: вăл - районти «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçат редакторĕнче, эпĕ - «Çĕнтерӳшĕн» редакторĕнче. Кунта та пĕрле, пĕр хаçатра ĕçлеме тӳр килчĕ. Çирĕп сывлăхлă пулăр, ăнăçу сунатăп. Пире ан манăр».

Пурте саламларĕç: суя-суя, кула-кула. Хăй рак пек хĕрелсе кайрĕ. Суя ыр ята илтсе чунне лăплантарчĕ-ши?

Çапла пирĕн Юхма буфер редакторĕ пулса тăчĕ. Тенюшев 16-мĕш номер таран пусать, 17-мĕшĕнчен - Юхма.

«Малашне мĕнле ĕçлесе пынă, çаплах ĕçлĕпĕр. Тĕрĕссипе ăна хаçата, иксĕмĕр тăрăшнипе пуçарса ятăмăр, халĕ те пĕрлех туса пыратпăр, - терĕ Юхма ман еннелле çаврăнса, унтан хушса хучĕ: - Владимир Прокопьевичпа эпир иксĕмĕр, Хусана кайсан, хаçата мĕнлерех майпа вăйлатмалли пирки нумай калаçрăмăр».

Çакăн пек камит пулса иртрĕ пирĕн патра. Тек ĕнтĕ пирĕн ĕçе хаклакан, пире укçа илме чăрмантаракан «Черненко» ытларикунхи планеркăсенче тарăхтарма та, кӳрентерме те пăрахать.

Майăн 25-мĕшĕ.

Чир аптăратнине пула трактор тăвакансен завочĕн медсанчаçĕнче икĕ эрне сиплентĕм. Ĕçрен пырса çӳрерĕç: Луч, Михайлов, Мокин, Кошкин. Юхмапа кашни кун телефонпа калаçнă. ЧОКЦ президиумăн анлă ларăвĕнче вăл мана ЧССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, хăйне Чăваш халăх писателĕ ятне пама йышăннă.

Эпĕ çук чухне вĕсем хаçата йĕркеллĕ кăларайман.

Июнĕн 1-мĕшĕ.

Пушкăртстанри Федоровка ялĕнчен А.Русаков Чăваш ССРĕн культура министрне Г.М.Алексеев юлташа, ЧОКЦ правленийĕн председательне М.Н.Юхма юлташа Уçă çыру çырнă. Автор унта мĕнпур чăваш культурине аталантармашкăн Шупашкартан шанчăклă пулăшу кĕтет, ку тĕлĕшпе культура министерствипе ЧОКЦăн туслăн килĕштерсе ĕçлемелле, тет.

Уçă çыру «Вучахăн» паянхи номерĕнче пичетленсе тухрĕ. Унăн айне редакци ячĕпе эпĕ вулакана пĕлме çакăн пек ăнлантару çырсаччĕ:

«Чĕрене тытса, куççуль кăларса çырнă çакнашкал çырусем ЧОКЦ правленийĕн кантурне те, редакцие те килсе тăраççĕ. Вăраннă Чăваш çак çĕр çинче ирĕклĕн, туллин, чăвашлăн сывласшăн, чăвашлăн пурăнасшăн, танмарлăх танатинчен хăтăласшăн. Пĕр сăмахпа каласан, унăн никам та мар, чăваш пулас килет.

Тăван халăхăн хуйхи-суйхине ăнланса чуна хывма пултарнă хастар та ăслă чăваш патриочĕсем ахальтен мар ĕнтĕ çĕршыври мĕнпур чăвашсене пĕршухăшлăхпа пĕртĕллевлĕх çулĕ çине кăларма пултарчĕç - Аслă Пуху пухса Чăвашсен обществăпа культура центрне туса хучĕç, унăн «Вучахне» чĕртрĕç, чăваш «Пикине» пуç çĕклеттерчĕç. Халĕ, авă, çав ывăнма пĕлмен хастар çынсемех тĕнчери мĕнпур чăваш хĕрарăмĕн Аслă пухăвне пуçтарчĕç. ЧОКЦ тени халĕ чăвашшăн паллă, янравлă, çав вăхăтрах - пулăшуллă ят. ЧОКЦ ĕçлет, кĕрешет, çĕнтерет. ЧОКЦ чăваш патриархĕн Иван Яковлевăн вилĕмсĕр чĕнĕвне, «Чăвашсем, чăмăртанăр!» текен çунатлă чĕнĕвне тĕпе хурса малалла пырать. Нимле усал вăй та чарса тăрайми хăватлă юхăм пулса тăчĕ вăл. Çав вăй татах та хăватлăрах, усăллăрах пулма пултарĕччĕ те ЧОКЦа пулăшакансем ытларах хутшăнсан, анчах... Ăна ура хуракансемпе вăрттăн чăрмантаракансем пурри пĕтĕм ырă ĕçе чарса тăрать. Çав килĕшмен, ăнланусăр этемсем хушшинче Чăваш республикин хуравлă хăш-пĕр пуçлăхĕсем те пурри вара пушшех чуна ыраттарать. Вăл шутра - ЧССР культура министрĕ Г.М.Алексеев та.

Герольд Михайловича çакă хисеплĕ ырăна чăваш халăхĕн культурине çĕклессишĕн мар, ĕçе майлаштарса вырнаçтарассишĕн лартса хăварнă пекех туйăнать. «Ют пукан» çинчи пуçлăх, ун çинчен мансах, чăваш культуришĕн тăрăшатăп тесе сăмах çаптарать, тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕрен юптарать, кама мĕнле килчĕ çапла улталать, хăйне хăй такамран та ăслăрах хума тăрăшать.

Чăвашсен обществăпа культура центрне ура çине тăмашкăн республика Министрсен Совечĕ тĕкĕ пама килĕшнĕччĕ. Укçи-тенкине вăл ЧОКЦа тӳрех параймасть-мĕн, культура министерстви урлă кăна куçарать. «Вучахпа» «Пикене» кăлармашкăн пулăшу кĕтсе ларатпăр. Çав йĕркепех Министрсен Совечĕ халăха вĕрентес ĕç министерстви урлă «Тантăшпа» «Çилçуната» çăлса хăварма йышăннă. Халăха вĕрентес ĕç министерстви çав хаçатпа журнала 380 пин тенкĕ куçарса панă пулсан, Алексеев юлташ вара пире 30 пин кăна пама ыйтнă. Акă вăл унăн ĕç мелĕ, чăрмав мелĕ. Чăвашсен обществăпа культура центрне май килнĕ таран ытларах пулăшса чăваш халăхне витĕм кӳрес вырăнне вăл çĕнĕрен чее номер хатĕрленĕ. Пире, паллах, чăваш халăхĕн анлă юхăмне хирĕç тăракан культура министрĕ кирлĕ мар. Чăваш ССРĕн Аслă Канашĕн те Чăвашсен обществăпа культура центрĕн шухăшĕпе килĕмшеллех пек. Чăваш культурин пуçĕнче чăн-чăн чăваш çынни, чăн-чăн чăвашла шухăшлакан чăваш культуриллĕ, пултаруллă та хĕрӳ çын кирлĕ.

Культура министерстви Чăвашсен обществăпа культура центрĕн правленине хăйĕнчен ан тĕртсе ятăр, хăй унăн анлă та пысăк ĕçне хутшăнтăр, пĕрле пĕр чăмăра пĕрлешсе чăваш халăхĕшĕн вăйне патăрччĕ».

Кĕрешӳре тепĕр вăйлă хум çĕклерĕ хаçат. Çакнашкал материалсем пичетлесе эпир халăха пулăшма тăрăшатпăр, хамăр çине вут-хĕм сапакансене, тавăрма хăтланакансене халăх куçĕ умне кăларса пыратпăр. «Вучах» унашкаллисене пĕçертме пăрахмасть. Хирĕçтăру, кĕрешӳ вăйлансах пырать.

Июнĕн 8-мĕшĕ.

ЧОКЦра пичет ыйтăвĕ чи хĕрӳллисенчен пĕри. Ку вăл - ахальтен мар. Сăмахран, хамăрпа кӳршĕллĕ тăванла халăхсен пĕчĕк ачисем валли пурин те журнал пур, пирĕн çеç çук-ха. Ун пирки хăçантанпа ĕнтĕ хĕрӳ сăмах çиппе вĕçетчĕ. ЧОКЦ çак ыйтăва та хăйĕн вăйĕпе татса пама шутларĕ. «Путене» ятлă журнал 24 страницăпа çĕнĕ çултан тухма тытăнмалла. Ăна халĕ регистрациленĕ, çырăнса илме индексне, хакне палăртнă. Анчах пулăшу кирлĕха. Чăваш пепкийĕн чунне чăваш сăмахĕ, чăваш йăли-йĕркийĕ, чăваш культури варăнса кĕтĕр тесен, аслисен чунлăрах, этемлĕрех пулмалла, укçа-тенке хĕрхенмесĕр хамăрăн пуласлăх ăру ăслăлăхĕ, чăвашлăхĕ çинчен шухăшламалла. «Путенене» эпир те çапла, чĕнӳ сăмахĕпе те пулин пулăшасшăн.

Халăх аталанăвĕнче юлашки вăхăтра мĕн чухлĕ чăрмав, путсĕрлĕх пулмарĕ пулĕ. Вăл шутра - чăваш çамрăкĕн пуласлăх-

не хирĕçле тунă идеологи диверсийĕ те. «Паянтан» хаçата чĕртсе яма тăрăшманни, ăна путарса хума хăтланни шăпах çакна çирĕплетсе парать те.

Çамрăксен «Паянтан» ятлă хаçачĕ тухма пăрахни паллă ĕнтĕ. Мĕн тăвăн, вăхăчĕ çапла: ирĕк панă чухне кашни организаципе уйрăм çынăнах хăй хаçатне кăларасси килчĕ пулĕ. Çавăнпах хунаса кайрĕç вĕсем. Мĕн ятли кăна çук! Анчах пичет шăпи ялан хăйне май пулнă, пулать те. Вулакана çывăххисем, унăн шухăшкăмăлне тивĕçтерекеннисем çеç нумайлăха сыхланса юлма пултараççĕ, ыттисем майĕпен, хăйсен пĕлтерĕшне çухатса, хупăнса пыраççĕ.

«Паянтан» хаçатăн телейсĕр щăпи те çавăн çинченех калать. Тӳррипе, чăваш çамрăкĕсене тăван чĕлхепе тухакан хаçат кирлĕ. Фабрикăсемпе заводсенчи, колхозсемпе совхозсенчи, институтсемпе техникумсенчи каччăсемпе хĕрсене, паллах, пĕртен-пĕр «Тантăш» (унчченхи «Пионер сасси») тивĕçтерме пултараймасть, - çапах та вăл шкул ачисен хаçачĕ.

Çавна шута илсе, Чăвашсен обществăпа культура центрĕ кăларакан «Вучах» хаçат редакцийĕ малтанхи номертен пуçласах комсомол пурнăçне çутатма тытăнчĕ. Ĕçлекен тата вĕренекен çамрăксем валли çине-çинех «Улах», «Çемье», «Шкул тата пурнăç» страницăсем йĕркелетпĕр, эстрада колелктивĕсем валли çĕнĕрен те çĕнĕ юрăсем нотăпа пичетлетпĕр.

Çавăнпах пирĕн «Паянтан» хаçата сыхласа хăварас килчĕ. Комсомол рескомĕ те çак шухăшпа килĕшрĕ, ыйтăва Чăвашсен обществăпа культура центрĕн правленийĕнче пăхса тухрăмăр. Наци терменĕшĕн ывăнма пĕмлесĕр тăрăшакан ЧОКЦ кунта та пархатарлă ĕç турĕ, «Паянтан» хаçата хăйĕн «Вучахĕ» çумне туртрĕ. Утă уйăхĕнчен пуçласа çапла чăваш çамрăкĕ хăйĕн хаçатне «Вучах» хаçатпа пĕрле кашни эрнере пĕр хут илсе тăма пултарать. ЧОКЦпа комсомол рескомĕ килĕшӳ турĕç.

Çакăн хыççăн ЧОКЦ правленийĕн председателĕ М.Н.Юхма, унăн заместителĕ Р.В.Сарпи тата Г.В.Луч комсомол ресскомĕн секретарĕ О.М.Цыпленков патне кайнă. Каярахпа унти тĕлпулу пирки Григорий Васильевич тарăхуллă статья çырчĕ. Ăна эпир «Вучахра» пичетлерĕмĕр: «Виçĕ сехет реском коридорĕнче» ятлăскерне, хаваспах.

Олег Цыпленков пире ыр кăмăлпах кĕтсе илчĕ, кăштах калаçса ларсан, рескомăн пĕрремĕш секретарĕ Н.С.Егоров патне илсе кайрĕ.

Николай Сергеевич пире, темшĕн-çке, ăмăрлăн кĕтсе илчĕ (эпĕ çĕнĕ секретаре пĕрремĕш хут курнăран çапла туйăнчĕ-ши?). Хăйсемпе малтан килĕшсе татăлнă хыççăн хатĕрленĕ ĕçлĕ хутсемпе паллашсан, секретарь кăмăлĕ кăштах уçăлчĕ. Сăлтавĕ те пурччĕ ĕнтĕ: унччен «Паянтана» çырăннă çынсем малашне тăватă страницăллă хаçат вырăнне, пĕр пус хушса тӳлемесĕрех, 16 страницăллă «Вучаха» илсе тăма пуçлĕç. Унăн шалти тăватă страницине «Паянтан» ятпах, çамрăксем валли ятарласа хатĕрлеме палăртсаттăмăр. Рескомăн хутпа укçа çеç уйăрса памаллаччĕ.

Анчах, кăшт вăхăт иртсен, рескомăн пĕрремĕш секретарĕ ку ыйтăва бюрора татса памалли çинчен пĕлтерчĕ. «Кам та пулсан, кăнтăрла иртсен виçĕ сехетре е виççĕ çурăра килĕр», - тесе ăсатрĕ вăл пире.

Эпĕ, хам та çамрăк чухне комсомолăн обком аппаратĕнче (анчах секретарех пулман!) ĕçленĕ те, йĕркене пăхăнса, 15 сехет тĕлне «пĕчĕк зал» тесе çырса çапнă алăк патĕнчи пукан çине çитсе лартăм. Коридорта мансăр пуçне никамах та çукчĕ, каярахпа темиçе каччă пырса тăчĕç.

Çур сехет иртсен, бюро ларавĕнчен пĕр çамрăк тухрĕ те, эпĕ мĕн сăлтавпа коридорта ларнине пĕлсен: «Юрĕ, тăхтăр, чĕнетпĕр» тесе шантарчĕ. Каллех кĕтме тиврĕ. Кĕтнĕ чухне вăхăт час иртмест. Пĕр сехет, иккĕ... виççĕ иртрĕ, - 18 сехет те 15 минутра бюро ларăвĕ хупăнни çинчен пĕлтерчĕç, - пирĕн ыйтăва ниепле те татса паман-мĕн унта. Çапла эпĕ комсомол рескомĕн коридорĕнче виçĕ сехет хушши усăсăр ирттертĕм. Йĕркеллĕ секретарь пулсан, çынна хисеплесе, чĕнсе пустуй лартнăшăн каçару ыйтмалла пек. Анчах Николай Егоров коридора тухса та пăхмарĕ.

Пăнтăх вăхăчĕ хăйĕн бюрокрачĕсемпе пĕрле аякка тăрса юлчĕ, çĕнетӳ тапхăрĕнче унашкалли пулмалла мар тетпĕр. Анчах мăнкăмăллă, харпăр хăйсĕр пуçне никамах та хисепе хуман комсомол вожакĕсем халĕ те пур иккен. Шел».

Комсомол организацийĕсене ертсе пыракансем хăйсене хăйсем мĕнле «турă» вырăнне хума пуçланине эпир ăнланса çитнĕччĕ ĕнтĕ. Вĕсенчен манăн тепĕр чухне кулас килетчĕ. Хăйсем пурнăç тути-масине лайăххăн туйса та çитеймен-ха, коммунистсен организацийĕсем пулăшса, ертсе пынипе пуçлăх картлашкипе улăхса кайнăскерсем, сăмсисене те типтерлĕрех шăлма вĕренеймесĕрех «эп кам!» тесе мăнкăмăллăн камантлама хăтланатчĕç. Пурнăç вĕсене вăхăтпала хăй вырăнне лартрĕ, кăмсамул аташăвĕ лăпланчĕ. Çавна май эпир те вĕсемпе пĕр чĕлхе тупсах ĕçлерĕмĕр, «Паянтан» хаçата йĕркеллех кăларса тăтăмăр. Çапах

та «Паянтан» ырана çитеймерĕ. Вĕсен укçи-тенки пĕтрĕ, хăйсем те хăйсемшĕн бизнес çулĕ çине тухрĕç. Пĕр хушă çамрăксен хаçачĕ пурпĕрех хăйĕн тивĕçне пурнăçларĕ. ЧОКЦ пулăшăвĕ те республика çамрăк гвардийĕшĕн харама каймарĕ, каччăсемпе хĕрсене паянтан ырана хăюллăн утса кĕме мĕн чухлĕ те пулин уссине пачех пуль.

Июнĕн 18-мĕшĕ.

Çĕнĕ çултан «Вучахăн библиотекине» кăларма палăртрăмăр.

Михаил Юхма редактор ĕнтĕ «историллĕ» 17-18-мĕш номĕрсене хăй пусса кăларчĕ, 22-23-мĕшсем те тухрĕç, анчах хаçата пĕтĕмпех ман алла пама васкамасть-ха. Манăн кăмăл çавăнпа уçах мар. Хаçатне халĕ 4 пинпе кăларатпăр, 16 страницăпах. Пĕрремĕш типографи наборланăшăнах 3 пин енне илет, çапнăшăн реском типографийĕ - тата çавăн чухлĕ.

Пирĕн халĕ ЧОКЦăн хамăрăн «Волга» пур. «Чувашавтотранс» парнелле панă. Хушăран эпир те усă куратпăр.

Июнĕн 29-мĕшĕ.

Хусанта Атăл тăрăхĕнчи халăхсен сьезчĕ пулать. Унта кайма тесе килĕшнĕччĕ. Халĕ, Юхман ултавне ăнланса çитнĕ хыççăн, каяс темерĕм.

Мана тĕп редактор тăватăп тесе суйса улталарĕ. Акă ĕнер тепĕр номер кăлартăмăр. Хăй мана яланах: «Пурте йĕркеллĕ пулать», - тесе шантарать. Хаçачĕ вара Варсонофий Михайловпа ман ĕнсе çинче ларать. Ĕçлесе пĕтермелле мар. Укçине ӳстерсе параймасть. Халлĕхе ĕçлетпĕр-ха, тет. «Паянтан» хаçата, «Вучах» ăшĕнчи 4 страницăна хатĕрлеме Г.Луча хушрĕ. Эпĕ В.Кервене тутарасшăнччĕ.

Июлĕн 16-мĕшĕ.

Арăмпа яла кайнăччĕ. Ĕнер, эрнекун, Вăрнартан таврăннă-таврăнман Юхма шăнкăравларĕ. Филиппов дежурнăй ӳсĕр, Луч та «салтака» кайнă, редакцире никам та çук, тет. Хăвăртрах кайса çитес номер материалĕсене вуласа патăм, набора яма типографине вĕçтертĕм, полосасен пленкисене тĕрĕслесе тухрăм. «Паянтан» пиллĕкмĕш номер тухать ĕнтĕ.

Виталий Енĕш «Путене» редакторĕнче çур ставкăпа икĕ уйăх ĕçлесе тинех чунне «кантарчĕ» пулас, чăтаймасăр заявлени парса тухса кайрĕ. «Капкăнра» та, писательсен Союзĕнче те мар çав кунта. Çав тери чăтăмлăх, çирĕп кăмăл кирлĕ. Юраймарăн - саншăн ыранах алăк хупă.

Хаçат 5800 экземплярпа тухать, 4000 çумне «Паянтан» подписчикĕсем хутшăнчĕç.

Тенюшев ЧОКЦ правленине издательстваран çыру çырнă, терĕ Михаил Николаевич. Вăл редакци штатне кĕскетесшĕн тата хаçат гонорарне пĕчĕклеттересшĕн. Вăт путсĕр! Маразматик!

Августăн 19-мĕшĕ.

Паян манăн çуралнă кун. Хаçатăн çĕнĕ номерĕ те кун çути курчĕ. Хĕрарăм ача çуратнă пекех питĕ асаплăн, йывăррăн тухать çут тĕнчене «Вучах». Журналистсемпе корреспондентсемсĕр пуçне икĕ типографи, вуншар ăстаçă тăрăшать уншăн.

Реском издательствин 13-мĕш номерлĕ сакăр хутлă капмар çурт Иван Яковлев ячĕллĕ мăн урамра. Юнашарах - 1-мĕш номерлĕ типографи. Çавăнта нуша куратпăр ĕнтĕ эпир полиграфистсемпе пĕрле.

Хаçат кăлармалли цеха Антонина Федоровна Горностаева инженер ертсе пырать. Хăй пекех çамрăксем нумай кунта, ветерансем те пур. Пирĕн материалсене çĕнĕ йышши фотонабор аппарачĕсемпе наборлаççĕ. Пуçлăх Вера Платоновна ырлать. Ун çумĕнчех - Галя Зайцева. Оля Яковлева монтажница та лайăх ĕçлет. Ира Красильникова операторпа Володя Якимов, Сергей Федоров наладчиксем электронлă аппаратсене чăрмавсăр, тикĕс ĕçлеттерме хăнăхса çитнĕ. Тепĕр цехĕнче саспаллисене линотиппа наборлаççĕ. Кунта Люда Михайлова уйрăмах ăста. Аля Павло-

ва, Венера Максимова, Рая Дмитриева, Роза Андреева, Светлана Анисимова, Галя Кузьмина линотописткăсем те ĕçре вăрвар. Линотиппа шăратса кăларнă йĕркесене хут çине ӳкерсе фотопленка тăваççĕ. Фотоцинкографи пӳлĕмĕнче Володя Гончаровпа Таня Куторкина васкасах фотопленка хатĕрлеççĕ. Сăнӳкерчĕксемпе те вĕсемех ĕçлеççĕ. Фотографсем хыççăн Светлана Афанасьева, Лиза Ефимова, Валя Размыслова монтажницăсем страницăсене ăшталансах калăплаççĕ. Хатĕр полосасене Василий Чернов, Михаил Харитонов, Лидия Белова, Елена Никитина ретушерсем тĕплĕн пăхса тухаççĕ, асăрханă кăлтăксене тӳрлетеççĕ. Монтаж хыççăн Слава Михайловпа Сергей Кудряшов страницăсене хут çине ӳкереççĕ те корректорсемпе редакторсене вулама параççĕ. Варсонофий Михалчпа иксĕмĕр эпир кашни номер кăларас умĕн çак технологи йĕркипе, çав пултаруллă çынсемпе ĕçлесе кун ирттеретпĕр. Куç та тĕтреллĕн куракан пулать. Сăрă, линотип вучахĕн усал шăршипе пуç кашлать. Хатĕр пленкăсене хул хушшине хĕстерсе реском типографийĕ еннелле утнă чухне Варсонофий сулахай куçне мăч хĕстернĕ май питне камитле йăлкăштарса илсен, туятăп: нервăсене кăштах юсамалла, ывăннине чӳхесе тасатмалла. Пичетлекенсен аллине пленкăсем лекнĕ хыççăн шанчăклăн сывласа яратпăр: ирччен номер пичетленет.

Августăн 22-мĕшĕ.

Раççейре каллех революци пулса иртрĕ-ши? Буржуаллă революци мар-ши?

«Çĕршыври чрезвычайлă лару-тăру вăхăтĕнче ĕçлекен патшалăх комитечĕ» туса хуни çинчен калакан указпа тата «Пĕтĕм çĕршыври гражданесене чĕнсе каланипе» аптăраса ӳкнĕ вăхăтра Мускавран Чăвашсен обществăпа культура центрĕн президенчĕ (председатель ырăнне çапла калама пуçланă) М.Н.Юхма тата «Термен» ассоциацийĕн генеральнăй директорĕ В.Д.Тимофеев питĕ пăлхануллăн çитсе кĕчĕç. Михаил Николаевич тӳрех «Вучахра» ĕçлекенсене хăй патне пухрĕ.

Вĕсем Мускава «Булгар» журнал кăларас ыйтупа кайнăччĕ, шăпах вара унта чи хăрушă та хĕрӳ тапхăра лекнĕ. Вĕсем пире Мускавра 18-20-мĕшĕсенче чăннипе мĕн пулса иртни тата хăйсем Раççей парламенчĕн «Шурă çуртне» хӳтĕленĕ çĕре хутшăнни, баррикадăсем туни çинчен хумханса каласа пачĕç. Вĕсем документсем илсе килнĕ.

- Раççей президенчĕ Б.Н.Ельцин тата РСФСР Министрсен Совечĕн председателĕ И.С.Силаев васкавлă кăларнă указсемпе постановление пире РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ За-

- Герои России — герои народа
- На Московских баррикадах
- Кто мешает возрождению чувашского народа?

ВУЧАХ

Çĕршыври мĕнпур чăвашсен хаçачĕ

Чăвашсен обществăпа культура центрĕ кăларать.

Ятарлă кăларăм • 22.08.1991 • Специальный выпуск

К ГРАЖДАНАМ РОССИИ

В ночь с 18 на 19 августа 1991 года отстранен от власти законно избранный Президент страны. Какими бы причинами ни оправдывалось это отстранение, мы имеем дело с правым, реакционным, антиконституционным переворотом.

При всех трудностях и тяжелейших испытаниях, переживаемых народом, демократический процесс в стране приобретает все более глубокий размах, необратимый характер. Народы России становятся хозяевами своей судьбы. Существенно ограничены бесконтрольные права неконституционных органов, включая партийные. Руководство России заняло решительную позицию по Союзному Договору, стремясь к единству Советского Союза, единству России. Наша позиция по этому вопросу позволила существенно ускорить подготовку Союзного договора, согласовать его со всеми республиками и определить дату его подписания — 20 августа с. г.

Такое развитие событий вызывало озлобление реакционных сил, толкало их на безответственные, авантюристические попытки решения сложнейших политических и экономических проблем силовыми методами. Ранее уже предпринимались попытки осуществления переворота.

Мы считали и считаем, что силовые методы неприемлемы. Они дискредитируют СССР перед всем миром, подрывают наш престиж в мировом сообществе, возвращают нас к эпохе холодной войны и изоляции Советского Союза от мирового сообщества.

Все это заставляет нас объявить незаконным пришедший к власти так называемый комитет. Соответственно объявляем незаконными все решения и распоряжения этого так называемого комитета.

Уверены, органы местной власти будут неукоснительно следовать конституционным Законам и Указам Президента РСФСР.

Призываем граждан России дать достойный ответ путчистам и требовать вернуть страну к нормальному конституционному развитию.

Безусловно необходимо обеспечить возможность Президенту страны ГОРБАЧЕВУ выступить перед народом. Требуем немедленного созыва Чрезвычайного Съезда народных депутатов СССР. Мы абсолютно уверены, что наши соотечественники не дадут утвердиться произволу и беззаконию потерявших всякий стыд и совесть путчистов. Обращаемся к военнослужащим с призывом проявить высокую гражданственность и не принимать участия в реакционном перевороте.

До выполнения этих требований призываем к всеобщей бессрочной забастовке.

Не сомневаемся, что мировое сообщество даст объективную оценку циничной попытке правого переворота.

Президент РСФСР — Б. Н. ЕЛЬЦИН

Председатель СМ РСФСР — И. С. СИЛАЕВ

И. О. Председателя Верховного Совета РСФСР — Р. И. ХАСБУЛАТОВ

19 августа 1991 года 9—00 утра

ОБРАЩЕНИЕ К ЧИТАТЕЛЯМ

[illegible]

103274 г. Москва К-274 Краснопресненская набережная, 2 Верховный Совет РСФСР г. г. ЕЛЬЦИНУ Б. Н., СИЛАЕВУ И. С., ХАСБУЛАТОВУ Р. И.

[illegible]

тонский илсе тухса пачĕ. Эпир вĕсене хăвăртрах Шупашкара илсе çитерсе çийĕнчех пичетлеттересшĕнччĕ, анчах пирĕн Чăваш республикине ертсе пыракансем хунта хушнисене йышăннă май, «Вучахăн» ятарлă кăларăмĕнче пичетлес терĕмĕр, хамăр та нумайлатса, вĕсене çийĕнчех халăх хушшине сарма тăрăшрăмăр,- пĕлтерчĕ Тимофеев.

- Çак кунсене аса илнипе халĕ те хумханатăп, - терĕ М.Н.Юхма.- Чунра малтан йывăрччĕ, çынсемпе калаçса халăх шухăшне пĕлсе пынипе çĕнĕ вăй кĕчĕ. Çав вăй пире те баррикадăсем çине тухма хистерĕ. Чăннипех пысăк хăрушлăх сиксе тухнăччĕ çĕршыв умне, çĕршывăн саккунпа суйланă Михаил Сергеевич Горбачев президента ĕçрен пăрнă. Конституцие хирĕçле, реакционерла хăтланнă комитет влаçа хăй аллине çавăрса илесшĕн пулнă. Çавăнпа Ельцинсем пĕтĕм ответлăха хăйсен аллине илнĕ, комитет йышăнăвĕсене те, комитетне хăйне те саккунлă мар тесе пĕтĕм çĕршыва пĕлтернĕ. Вырăнти влаç органĕсем конституципе килĕшӳллĕ саккунсене тата РСФСР президенчĕн указĕсене пурнăçласа тăнă. СССР президентне Горбачева халăх умĕнче тухса калаçмашкăн майсем туса пама ыйтнă. СССР халăх депутачĕсен чрезвычайлă сьездне васкавлă пухмалла, тенĕ.

Заговорщиксем çĕнтернĕ пулсан, паллах, пĕтĕм халăх юххине те пĕтерсе лартатчĕç, «Вучах» хаçата та хупатчĕç пуль. Юрать Раççей президенчĕ Б.Н.Ельцин, унăн соратникĕсем çирĕплĕх кăтартрĕç, юрать Мускав тата Ленинград çыннисем паттăрлăх кăтартрĕç, юрать çарти ăнлануллă салтаксемпе офицерсем халăха хирĕç каймарĕç. Эпир те çав кĕрешӳре хамăрăн тивĕçе чунчĕре хушнă пек тĕрĕс пурнăçларăмăр. Çавăнпа та «Вучахăн» ятарлă кăларăмне пирĕн халăх патне оперативлă çитермелле. Çакă - паянхи тĕп ĕç.

Хуçасем йышăннă. Анчах... мĕнле майпа? «Вучахăн» черетлĕ номерĕ тунтикун çеç тухать. Вара хаçатăн ятарлă номерне кăларма пурте çирĕппĕн килĕшсе татăлтăмăр. Шупашкарти типографисем пире унашкал кăларăм пичетлесе пама ниепле те килĕшес çуккине ăнланса Çĕрпӳри типографипе çыхăнтăмăр. Унта хаваспах йышăнма пулчĕç. Валерий Дмитриевичпа Михаил Николаевич çийĕнчех сĕтел хушшине ларчĕç, хăйсен куçĕпе курнине хăвăрт çырса пăрахрĕç. Анатолий Филиппов паллă журналист «Юнлă сăпас» кунĕ е кам «тăлласа» пынă Горбачева?» публицистикăллă статья васкавлăн çырса пачĕ. Манăн ку ытарлă пăтăрмах çинчен çырма пуç мимийĕ те йăшăлтатмарĕ, алă та çĕкленмерĕ. Ытла пăтрашуллă, ăнланса çитмелле мар хирĕçтăру.

Çыравçăн та кун пек чухне питĕ асăрхануллă пулмалла, такамăн ашкăнăвĕ, аçтахаллăхĕ хыççăн сиксе халăха пăтратмалла мар. Халăха суйса мар, чăнлăхпа пĕтĕçтермелле, чăн сăмахпа çĕклентермелле. Çапах та, кăларăм ĕçне хутшăнтăм.

Унта РСФСР президенчĕ Б.Н.Ельцин, РСФСР Министрсен Совечĕн председателĕ И.С.Силаев, РСФСР Аслă Совечĕн председателĕн ĕçĕсене туса пыракан Р.И.Хасбулатов çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче ирхине 9 сехетре Раççей гражданĕсене Чĕнсе каланине, Б.Н.Ельцинăн çав кун кăларнă 50-мĕшпе 61-мĕш номерлĕ указĕсене, СССР хĕçпăшаллă вăйĕсене, Хăрушсăрлăх комитечĕн, шалти ĕçсен министерствин салтакĕсемпе офицерĕсене Чĕнсе каланине, «Саккунсăр чрезвычайлă лару-тăру туса хуни çинчен» И.С.Силаев кăларнă Постановление, çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче 13 сехетре РСФСР Аслă Совечĕн президиумĕнче кам мĕн каланине, СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн заявленине тата ытти документсене кĕртрĕмĕр. Пĕрремĕш страницăна ЧОКЦ правленийĕ вулакансене чĕнсе каланине, ЧОКЦ президенчĕ М.Н.Юхма тата «Термен» ассоциацийĕн генеральнăй директорĕ В.Д.Тимофеев Б.Н.Ельцинпа И.С.Силаев тата Р.И. Хасбулатов патне янă телеграммăна вырнаçтартăмăр. «Чăваш халăхĕ яланах сирĕнпе, Раççейпе пĕрле пулнă, яланах пулать те», тенĕ унта. Юхма Мишшипе Валерий Тимофеев çырнă «Глазами очевидца» репортаж тĕп вырăн йышăнчĕ. Çапла çуралчĕ «Вучахăн» ятарлă кăларăмĕ. Вырăсла та, чăвашла та пичетлес терĕмĕр. Тимофеев типографие «Термен» хутне ăсатрĕ. Çĕрпĕве кайса килтĕмĕр, унта Филиппова хăвартăмăр. Ирпе Михайлов каять.

Типографи директорĕ В.М.Михайлов ĕçе хăвăрт тата хĕрӳллĕн йĕркелесе ячĕ. Типографи çыннисем чунпа ăнланса тăрăшрĕç. Ятарлă номер хăвăрт тухрĕ, ăна «Термен» ассоциацире ĕçлекенсемпе ЧОКЦ çыннисем çав кунах республикăри хуласемпе районсене салатрĕç. Хамăр патра Чăвашра, унашкал васкавлă кăларăм пĕрремĕш пулчĕ.

Октябрĕн 27-мĕшĕ.

1991 çулхи февралĕн 14-мĕшĕнче ЧОКЦ Чăваш халăхĕн И.Я.Яковлев ячĕпе хисепленекен наци премине туса хума йышăнчĕ, преми парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссине çирĕплетрĕ. Унта мани та кĕртрĕç. Октябрĕн 13-мĕшĕнче эпир И.Я.Яковлев премине Ульяновск облаçĕнчи И.Я.Яковлев ячĕпе хисепленекен культурăпа çутĕç обществине, Чăвашсен обществăпа культура центрĕн правлени председательне, паллă писателе

М.Н.Юхмана тата Тутарстанри Анат Камăри «Шăнкăрав» ансамбле (ертсе пыраканĕ Б.П.Никитин) парас терĕмĕр. Лауреат дипломне туса хатĕрлерĕмĕр. «Термен» ассоциацийĕн генеральнăй директорĕ Валерий Дмитриевич Тимофеев лауреатсене укçан хавхалантарма килĕшрĕ.

Ыран Чĕмпĕр чăвашĕсен наци уявĕ пулмалла. Унăн ĕçне хутшăнма эпир, ЧОКЦăн пысăк делегацийĕ, Шупашкартан хаваслăн тухса кайрăмăр. Пире Ульяновскра Ленин мемориалĕнчи çӳллĕ хăна çуртне вырнаçтарчĕç.

Октябрĕн 28-мĕшĕ.

Кăнтăрла тĕлнелле Чĕмпĕрти чăваш педучилищи (И.Я.Яковлев шкулĕ), халĕ унта культурăпа çутĕç училищи, патне çĕршывăн тĕрлĕ вырăнĕсенчен килнĕ чăваш представителĕсем йышлăн пухăнчĕç. Авалхи çурта тата унăн ăшчиккине Шупашкар районĕнчи Мăнал чиркĕвĕн пачăшки Иоанн-Йăван атте (Иванчин) светить турĕ. Яковлев ячĕллĕ культурăпа çутĕç обществин тата ЧОКЦăн пĕрлехи ларăвне И.Я.Яковлев ячĕпе хисепленекен чăваш педагогика училищи уçăлнăранпа 123 çул çитнине халалласа савăнăçлăн ирттерчĕç.

Мăн уявра лауреатсене чысларĕç. Наци премийĕн комисси председателĕ, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн хуравлă çынни, истори наукисен кандидачĕ Михаил Васильевич Румянцев И.С Кирюшкина, М.Н.Юхмана тата Б.П.Никитина дипломсем пачĕ.

Сăн ӳкерчĕкре (сулахайран): Валерий Дмитриевич Тимофеев, Борис Петрович Никитин, чĕмпĕрсен обществин ертӳçи Иван Сергеевич Кирюшкин тата Михаил Васильевич Румянцев сцена çинче.

Ноябрĕн 5-мĕшĕ.

Сентябрьте Александр Мокин Свердловск облаçне тĕрме çыннисене хураллама тухса кайрĕ, унтан «Вучах» валли хитре тĕрленчĕксем, очерксем ярса тăрать.

Анатолий Филиппов та çав вăхăтрах пирĕн патран кайрĕ, «Молодой коммуниста» вырнаçрĕ. Унта ăна ĕçлеме уçăмлăрах.

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче çырусен пайне Илья Александрович Степанова (Чăвашрадиора ĕçлесе пенсие тухнă) илнĕ. Аван çын вăл, таланчĕ çителĕклех, радиора пĕрле ĕçленĕччĕ.

Революци хыççăн Мускаврa та, кунта та пурнăç такана çинчи шыв пек чӳхенет, авăрти пек пăтранать. Раççей писателĕсем икĕ Союз туса хунă. Пĕринче пирĕн Мишши Юхмана наци литературисемпе ĕçлекен сопредседателе суйланă. Сьезда Юхма Мишши, Раиса Сарпи, Василий Кервен, Василий Эктел, Анатолий Тимофеев-Ыхра, Вениамин Погильдяков, Энтип Ваççи кайнă. Унтан килсен вĕсем хамăр патра çĕнĕ Союз тăвас ыйтăва хускатрĕç. Оргкомитетне унчченех йĕркеленĕччĕ.

Паян писательсен пухăвĕ пулчĕ. Унта писательсем питĕ асăрханса килчĕç. Акă вĕсем: Валентина Эльби, Ипполит Иванов, Алексей Медведев (ваттисем). Хăюллăн пынисем: Иван Вутлан (ЧССР писателĕсен Союзĕн правлени членĕ), Гурий Чаржов, Вениамин Тимаков. Хамăрăннисем: Юхма Мишши, Раиса Сарпи, Василий Кервен.

Пухăва Кервен уçрĕ. Президиума Кервена, Вутлана, Юхмана суйларĕç. Михаил Николаевич сăмах каларĕ. Резолюци йышăнтăмăр. Учредительнăй сьезда ноябрĕн 19-мĕшĕнче ирттерме палăртрăмăр. Оргкомитет председателĕ - Иван Вутлан, унăн заместителĕ - Раиса Сарпи, секретарĕ - Василий Кервен, членĕсем - Гурий Чаржов, Василий Эктел, Вениамин Тимаков, Андрей Алексеевпа Валерий Тимофеев (иккĕшĕ те Союзра тăмаççĕ). Сьездра çĕнĕрен Союз членне йышăнас ыйту та пулать. Ман хушамат унта чи малта тăрать.

Пире ку çуртран хăвалаççĕ. Хулара милици пайĕ тунă та, вĕсене вырнаçтараççĕ. Ĕнер эпир Мăшăрлану керменне, Володарски урамĕнчи 10-мĕш çурта çитрĕмĕр. Хула ЗАГСĕ куçса кайнă. Унта пӳлĕмсем сахал. Политвĕренӳ çуртĕнче 6 пӳлĕм параççĕ. Ку та çитмест, терĕç Юхмасем. Михаил Никалаевича каларăм: «Енчен те ЧОКЦ правленийĕпе çĕнĕ Союз правленине çак кермене вырнаçтарсан, пире, редакцисене, политвĕренӳ çуртне ярсан, аванрах пулмалла». Ман сĕнӳ çилпе вĕçрĕ пулас.

Ноябрĕн 19-мĕшĕ.

Чăваш писателĕсен йĕркеленӳ сьезчĕ Чăвашсен И.Я.Яковлев ячĕллĕ наци клубĕнче, Шупашкарти Мускав аслă урамĕнче, пулчĕ. Унта Чăваш ССР писателĕсен Союзĕнчен Александр Артемьев, Юхма Мишши, Раиса Сарпи, Василий Кервен, Василий Эктел, Григорий Луч, Гурий Чаржов, Вениамин Тимаков, Николай Теветкел, Александр Тимбай, Геннадий Мальцев, Константин Петров, Николай Симунов, Виталий Шемекеев, Анатолий Тимофеев-Ыхра, Николай Григорьев тата ыт.те. пурĕ 21 çын хутшăнчĕç. Ун пирки мандат комиссийĕн председателĕ Эктел пĕлтерчĕ.

Сьезда СССР писателĕсен Союзĕн правленийĕн секретарĕ В.Д.Осоцкий хутшăнчĕ, мари халăх писателĕ А.М.Юзыкайн килнĕ.

Чăваш халăх писателĕ Александр Артемьев, сьезда уçнă май, çапла каларĕ: «Самана улшăнса пыни пултаруллăн та хавхалануллăн ĕçлемеллине пĕлтерет. Хамăрăн пурнăçа çĕнĕлле йĕркелемелле. Паян эпир çавнашкал кунта пухăннă та ĕнтĕ. Чăваш писателĕсен Союзне йĕркелени - пархатарлă ĕç, эпир кивĕ, юрăхсăр меслетсенчен тасалатпăр».

Уççăн сасăласа Союз правленине Иван Вутлана, Раиса Сарпине, Юхма Мишшине, Василий Кервене, Василий Эктеле, Николай Симунова, Виталий Енĕше, Вениамин Тимакова, Гурий Чаржова, правлени председателĕ пулма Иван Вутлана, Раиса Сарпине заместитĕле, Василий Эктеле яваплă секретаре суйларĕç.

Çĕнĕ Союза илме ыйтса 14 çыравçă çырнăччĕ. Халлĕхе 7-не Чăваш писателĕсен Союзне уççăн сасăласа йышăнчĕç: Владимир Кузьмина, Зоя Нестерована, Михаил Сунтала, Иван Тенюшева, Анатолий Смолина, Варсонофий Михайлова, Любовь Федорована.

Тинех пуççапмастпăр Агиверсене! Ку таранччен çавă тытса пычĕ пире малалла каймашкăн. Хăйне пăхăнтарса чура тăвасшăн.

Сьезд хыççăн писатель ятне Ярославски урамĕнчи «Шӳрпе» столовăйĕнче - «Волжанкăра» çурăмăр: Варсонофий Михайлов, Михаил Сунтал, Анатолий Смолин, Григорий Луч, Вениамин Тимаков, Гурий Чаржов, Виталий Енĕш.

Декабрĕн 19-мĕшĕ.

Пĕр уйăхра пысăк событисем пулса иртрĕç. ЧССР писателĕсен союзĕнче Георгий Красновсем тăрăшсах кĕрешрĕç. Çĕнĕ Союз

туса хунă хыççăн Хв.Агивер «Кĕçех сирĕн Союза аркататпăр» тени пурнăçа кĕме пуçларĕ. Писательсен пухăвне ирттерсе Юхмана вăйлăн пырса çапрĕç. Çĕнĕ Союз составне кĕнĕ хăш-пĕр писательсем каяллах кивĕ Союза кайма килĕшнĕ, пухура каçару ыйтсах (Александр Артемьев, Вениамин Тимаков, Анатолий Ыхра тата ыттисем те).

Стокгольмран, Англирен, Швецирен Библи куçаракан институт çыннисем килчĕç. Библи куçаракан Петĕр Львов, Денис Гордеев, Порфирий Афанасьев, Виталий Енĕш, хăйсене ĕçлеме кансĕрленĕшĕн, Юхмапа кăмăлсăр. Епархи çумĕнчи комисси, Франци библейĕсемпе тата протестантсемпе пĕрле Библи куçаракансен семинарне ирттернĕ. Унта Енĕшсем те хутшăннă. Енĕш тинех ЧОКЦ çине алă сулчĕ.

Пуху хыççăн пуху пухать халĕ Юхма. ЧОКЦри тата писательсен Союзĕнчи кризиса пусарасшăн. Хăй патĕнче ĕçлекенсем ытларах укçа, ирĕклĕх ыйтаççĕ. «Пикесем» çурхи пикесем пек хĕрсе кайнă, вĕсене нимле вăй та лăплантараяс çук.

1992 çул.
Ĕç кĕнекинчен.
Январĕн 3-мĕшĕ.

«Советская Чувашия» хаçатра паян Чăваш ССР писателĕсен Союзĕн правленийĕн председателĕ Георгий Краснов пысăк статья пичетлесе кăларнă. Унта вăл юлашки вăхăтра чăваш писателĕсем хушшинчи хирĕç-тăру, пĕр-пĕрне кăшласа, ултавлă майпа Мускавра тĕкĕ шырани, Чăвашра çĕнĕ Союз туни мĕнле йывăрлăхсем патне илсе çитересси çинчен питĕ тĕплĕн ăнлантарса пама хăтланнă. Юхма Мишшипе Иван Вутлана шăршлă шывлă лаххан ăшнех путарасшăн.

Краснов статйи айĕнче «Отказываемся!» текен çыру пур. Ун айне А.Артемьев, Н.Григорьев, В.Енĕш, В.Кервен, Г.Луч, Н.Мартынов, К.Петров, Н.Петровский, Н.Симунов, В.Тимаков, А.Тимбай, А.Тимофеев, Г.Чаржов, В.Шемекеев, В.Эктел алă пуснă. «Эпир, - тенĕ вĕсем, - пурте Чăваш ССР писателĕсен Союзĕнче тăратпăр. Пирĕн Союз РСФСР писателĕсен Союзне кĕрет. Чăваш писателĕсен Союзĕн учредительнăй сьездне пыма пире пурне те чĕннĕ. Вĕсен пухăвĕ мĕнлерех иртнине куçпа курса пĕлес тесе кăна кайрăмăр унта. «Вучах» хаçатра сьезд отчетне вуласан тин эпир хамăра çĕнĕ Союз правленине, ревизи комиссине, «Эткер» журнал редколлегине, Союза йышăн-

малли комиссие, СССР писателĕсен Союзĕн сьезчĕн делегачĕсен составне суйланине пĕлтĕмĕр. Пурте эпир Чăваш писателĕсен альтернативлă Союзне кĕме, унăн ертсе пыракан органĕсенче пулма килĕшменни çинчен, хамăрăн РСФСР писателĕсен Союзне кĕрекен Чăваш ССР писателĕсен Союзĕнчех юлни çинчен хаçат урлă пĕлтеретпĕр».

Акă ĕнтĕ вăл унталла-кунталла çапкаланса çӳресе ылтăн пĕрчĕ хыпма хăтланакансен чухăнлăх култармăшĕ. Александр Артемьевĕ, сьезда уçнă чух, епле çулăмлă сăмах каларĕ. Михаил Юхма докладне сӳтсе явнă чухне унта акă мĕн-мĕн каларĕç ыттисем: **Александр Тимбай:** «Чăваш ССР писателĕсен Союзĕн правленийĕнче яланах пуçлăхсем тата парти обкомĕн юравçисем пулнă. Мана 60 çул тултарнă ятпа та çӳхе икерчĕ пек кĕнеке кăна кăларса пачĕç, правлени членне, издательствăн тĕп редакторне Георгий Орлова ылтăн саспаллисемлĕ хулăн кĕнеке парнелерĕç. Çĕнĕ Союз йĕркеленипе эпĕ çав тери кăмăллă, уншăн Михаил Николаевич Юхмана тав тăватăп»; **Виталий Енĕш:** «Республика тулашĕнчи чăваш çыравçисене çĕнĕ кĕнекесем кăларма паян йĕркеленнĕ Союз пулăшасса шанатăп»; **Николай Петровский-Теветкел:** «ЧР писателĕсен Союзĕн ĕçлев меслечĕсем кивелнĕ. Талантсăрскерсемех, правление блатпа çакланаççĕ те, ниме тăман япалисене кĕнеке издательствине вĕçĕмсĕр чыхаççĕ»; **Григорий Луч:** «Çĕнĕ Союз йĕркеленине ырлатăп. Анчах кунта та, кивĕ Союз пуçлăхĕсем пекех, хăйсен кĕнекисене кăна «чышма» ан тытăнччĕр»; **Виталий Шемекеев:** «Çĕнĕ Союз пĕр шухăшлисен Союзĕ» тенине сивлетĕп. Писательсем пурте пĕр шухăшлă пулма тытăнсан, литература пĕтет. Писательсен Союзĕн членне çыравçăсене тиркерех, суйларах йышăнасчĕ»; Мандат комиссийĕн председателĕ **В.П.Эктел:** «Çапла вара, мандат комиссийĕ пĕтĕмлетнĕ тăрăх, пирĕн йĕркеленӳ сьезчĕ хăйĕн ĕçне малалла тăсма, суйлавлă органсене çирĕплетме, Устав йышăнма тивĕçлĕ. Раççей писателĕсен Союзĕн йĕркеленӳ сьезчĕ йышăннă Устав тăрăх, çĕнĕ организаци тума СССР писателĕсен Союзĕн членĕсем вуннăран кая мар пулмалла, пирĕн вара икĕ хут ытларах та. Çавна май çĕнĕ Союз йĕркелеме Устав тăрăх та çын çителĕклĕ тесе пĕлтеретпĕр».

Юхма Краснов статйишĕн тата писательсен ушкăнĕн заявленийĕшĕн урса çӳрет. Кервене питĕ хытă тарăхнă, ăна сутăнчăк тет. Иксĕмĕр пĕрле юлсан, Михаил Николаевич калать: «Сутаççĕ, сутăнаççĕ, лайăх мар çынсем. Чи шанчăклисене те эпĕ халĕ сана тата Иван Яковлевича шутлатăп». «Çыннăн пĕрре тытнă шухăш-

па пĕр çулпа пымалла, унталла-кунталла çапăнмалла мар», - терĕм эпĕ.

Январĕн 21-мĕшĕ.

«Хыпар» хаçат редакцийĕ ыйтнипе «Хыпар» тухнă ятпа (1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма пуçланă, никĕслевçи Н.В.Никольский пулнă, вăл 1878-1961 çулсенче пурăннă) Чăваш пичечĕн кунĕ тесе палăртма йышăннă.

Паян Чăваш писателĕсен Союзĕн пухăвĕ пулчĕ. Унта Юхма Мишши, Раиса Сарпи, Василий Кервен (Иван Вутлан командировкăраччĕ) - хамăр Союзран, чĕннисенчен Валентина Эльби, Константин Петров, Виталий Енĕш тата члена илмен литераторсем пулчĕç.

Пухăва Союз правленийĕн хуравлă секретарĕ Кервен уçрĕ. Юхма Мишши хăй Сарпипе пĕрле Мускавра пулни çинчен каласа пачĕ. Вĕсем писательсен Союзĕсен пĕрлĕхне тунă çĕре хутшăннă, унта Михаил Николаевича СПС (Содружество Писательских Союзов) секретарьне суйланă. Унтан пире Кервен СССР писателĕсен Союзĕн членĕн (Раççей писателĕсен Союзĕ билетсем туса хатĕрлеймен) билечĕсене пачĕ, чи ваттисенчен çамрăкки таран: Иван Тенюшева, Варсонофий Михайлова, Владимир Кузьмина, Михаил Сунтала тата Анатолий Смолина. Иван Яковлевич строй умне тухнă пек шаклаттарса пычĕ те Василий Гавриловича ыталаса çĕклерĕ, сăмах каларĕ.

Члена кĕнисем укçа пухса эрех, çимелли илчĕç. Юхмапа Сарпие, Кервене чĕнтĕмĕр, Енĕш хутшăнчĕ.

Тин билетлă пултăмăр. Халĕ ĕнтĕ эпĕ те журналист-профессионал кăна мар - писатель-профессионал та. Хуравлăх тени тата ÿсет. Писатель ятне халăх умĕнче, тĕнче умĕнче тÿрре кăлармалла.

Январĕн 24-мĕшĕ.

Чăваш Аслă Канашĕнче пултăмăр: Юхма, Сарпи, эпĕ. «Вучах» ячĕпе манах сĕтĕрсе çÿрет-ха пуçлăх. Владимир Данилович Даниловран хаçат-журнал кăларма укçа ыйтатпăр. «Путенене» тытса тăма пулăшăпăр, ыттисене вара...» сăмахне ытарлăн вĕçлерĕ чиновник. Никама та кирлĕ мар иккен ЧОКЦ та, «Вучах» та, «Пике» те.

Юхма Йăван аттене чĕнсе илсе ЧОКЦпа редакцисен пÿлĕмĕсене тата вĕсенче ĕçлекенсене светить тутарчĕ. Ăна юлашки вăхăтра ЧОКЦ пуçлăхĕсене тата «Вучаха» тапăнакансем йышланнипе çыхăнтарнă.

Иоанн протоиерей «Чун уççи - Чăваш православи чиркĕвĕн сасси» кăларăма хатĕрлеме чунтан тăрăшать. Ăна эпĕ йĕркелесе, пуçарса янăччĕ. «Вучах» хаçат чăваш халăхне аталантарас, ытти халăхсем хушшинче чăвашсен тавракурăмĕпе культура шайĕ нимĕнрен те кая мар пултăр тесе тăрăшни курăнать ĕнтĕ. Чăвашсем хушшинче анлă сарăлнă е, урăхла каласан, чăвашсен пысăкрах пайĕ йышăннă Христос тĕнĕ православи чиркĕвĕн ĕçĕпурнăçĕ çинчен кăтартса паракан ятарлă кăларăм тухма пуçланине вара саламласа, пиллесе йышăнмалла, тесе шухăшлатăп», - палăртрĕ Иванчин «Турă пулăштăр» статйинче.

Февралĕн 5-мĕшĕ.

Пире 100 тенкĕ ĕç укçи ӳстерсе пачĕç. Ытти çĕрте пирĕнтен вунă хут ытларах илеççĕ. Пасарта сысна ашĕ 35, ĕне ашĕ 40, чăх тушки 60, хур 150, сĕт, çĕрулми 3, купăста 8, панулми 15-20, кафере шампански бутылки - 100, аларан шур эрех - 90 тенкĕ. Акă мĕн туянма пулать пирĕн хушу укçипе.

ЧОКЦ Уставне çĕнĕрен çирĕплетме хатĕрленĕ. Ларура сӳтсе яврăмăр. Эпĕ унта пĕр тӳрлетӳ патăм. Юхма хăй «Вучахăн» тĕп редакторĕ пулассине ĕмĕрлĕхех çирĕплетсе хăварма Устав проектне кĕртнĕ. Эпĕ каланине шута хумарĕ, халлĕхе çав редакципех кайтăр терĕ, тӳрлетмерĕ. Проекта Юстици министерствине сĕнчĕç.

Темиçе кун каялла «Хыпарта» ЧОКЦ правленийĕн членĕсене тата ЧОКЦ филиалĕсемпе ентешлĕхĕсен членĕсене чĕнсе калани» пичетленчĕ. ЧОКЦ правленийĕн ответлă секретарĕ А.Алексеев («Тăван Атăл» редакцийĕ), ЧОКЦ правленийĕн членĕсем В.Симаков (Сызрань хули), В.Станьял (Чăваш патшалăх университечĕ), Б.Тихонов (Стерлитамак хули) ЧОКЦ Уставĕпе Платформине аса илтерсе, 1992 çулхи мартăн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр ЧОКЦ правленийĕн анлă ларăвне пухма ыйтаççĕ. Ларура çакăн пек ыйтусем пăхса тухма сĕнеççĕ:

1. ЧОКЦăн халичченхи ĕç итогĕсемпе малашлăх çулĕ (президиум отчечĕ).

2. «Вучах» хаçатпа «Пике» журнал пахалăхĕ (тишкерӳ доклачĕ тата редакци коллегийĕсен отчечĕсем).

3. ЧОКЦăн пурлăхпа укçа-тенкĕ ĕçĕ-хĕлĕ (ревизи комиссийĕн информацийĕ).

Сăлтавĕ акă мĕнре иккен. Икĕ çул хушшинче те правлени членĕсене пурне те йыхравласа пĕр лару та ирттермен. Ревизи комиссийĕн ларăвĕ пачах та пулман. Секретариатра правлени

членĕсен спискĕ те çук. Çакă вăл ЧОКЦа никĕслекенсен прависене шута хуманнине, Центр Уставне пăснине пĕлтерет-мĕн.

«Уçă çыру» ЧОКЦ пуçлăхĕсен куçĕсене уçса ячĕ. Талпăнуллă тапăну хĕрсе çитнĕ. Кĕçех влаçшăн хаяр çапăçу пуçланать. Хӳтĕленмелле. Хирĕçле атака, вăйлă чукмар хатĕрлемелле.

Пуш уйăхĕн 14-мĕшĕнче (мартра) ЧОКЦ членĕсен курултайĕ (съезчĕ) пулать. «Уçă çырупа» ăмăртса ирттермелли мероприяти ĕнтĕ. Президиум паян ăна йышăнчĕ.

Юхма делегатсем суйлаттарасшăн мар, кашни организацине икшер çыру-чĕнӳ ярса паратпăр та, çав хут вара курултая кĕмелли документ пулать, унсăрăн никама та кĕртместпĕр, хурал тăрататпăр, тет Михаил Николаевич. Оргкомитет йĕркелерĕç.

Февралĕн 20-мĕшĕ.

Юстици министерстви ЧОКЦăн çĕнĕ Уставне тата Чăваш писателĕсен Союзне регистрациленĕ. Союза «Термен» ассоциацине кĕртме хут хатĕрлерĕç.

Пичетре Юхмана хирĕçле кампани вăйланчĕ. Шупашкар хулинчи вăрçăпа ĕç ветеранĕ Аркадий Иванов «Хыпарта» «Ăçталла юхатăн эс, Юхма?» ятлă йĕплĕ статья пичетлерĕ. Çав хаçатрах «Вĕçсе тухрĕ «Путене» статья тухнă хыççăн авторне, Василий Эктеле, редактор хăй ирĕкĕпе ĕçрен тухма заявлени çыртарнă. Юхма та интервью хатĕрленĕ, «Хыпар» хаçатпа унăн тĕп редакторне Алексей Леонтьева «хĕнет». Экзекуцине Сарпие те хутшăнтарнă. Мĕн кăна лăпăртатмарĕç пулĕ çапăçакансем икĕ енчен те пичетре, чăваш халăхĕн юхăмне мĕн чухлĕ çӳп-çап тăкса-сапса вараларĕç. Манăн пĕр енĕшĕн те пуça хурас килмест. Пĕрисем улталаççĕ, теприсем - кармаçăварсем. Кашниех хăйшĕн çунать. Пĕрин патне те çывхарма мана чĕре хушмасть, Урăх çемьере, урăх йăхра çуралса ӳснĕ çав эп. Манăн аннепе атте нихçан çынна улталаман, нихçан çынна шыва тĕксе яман, шăтăка та сиктермен. Таса çынсем пулнă вĕсем. Юнран пыракан çав ырă туйăм мана хура чунлă çынсенчен аякра тытать.

ЧОКЦăн II съезчĕ уçăлас умĕн мартăн 14-мĕшĕнче «Советская Чувашия» хаçатра пичетленнĕ «Пора дать объективную оценку» статьяра Андрей Алексеевпа Денис Гордеев «Верно служат Юхме «верноподданные» сотрудники В.Кузьмин, В.Михайлов и некоторые другие» тесе çырнăшăн чунтан пăшăрхантăм. Нихçан та эпĕ Юхман лакейĕ те, чурийĕ те пулма шутламан, пулман та. Эпĕ унта хаçат кăларма пынă, журналист тивĕçне пурнăç-

латăп, Михаил Николаевича журналистикăри тата литературăри пултарулăхĕшĕн, чăваш халăхĕн пуласлăхĕшĕн çак тапхăрта никамран та вăйлăрах, çĕнтерӳллĕрех пулнишĕн, иксĕлми хĕрӳлĕхшĕн, йывăрлăх умĕнче пуçа усманшăн, тĕлĕнмелле хăватлă йышăну шыраса тупма пултарнăшăн, чăтулăхĕшĕн, литературăри сăнарлă чĕлхишĕн, чăвашлăхшăн хисеплетĕп. Çак ырă енсенчен Статус Унтрисем аякра, хура пĕлĕт хыçĕнчех, кăптăртатса тăраççĕ. Сьезд уçăлнă кун «Хыпар» та Илле Ивановăн «Мĕн кăтартĕ ЧОКЦ сьезчĕ?» ятлă анлă статйине çапса кăларчĕ. Унта каллех Статус Унтрийĕ мăка çĕçĕпе лаштра юмана «касать».

Мартăн 14-мĕшĕ.

Сьезда чĕннĕ çынсем ĕнерех килме пуçларĕç. Паян ирех Чăвашрадио хаçатсенчи хайхи маларах асăннă материалсем пирки ЧОКЦа çапса хуçмалли чĕлхепех питĕ хаяр каларĕ. Юхма пусăрăнчăк çӳрет.

Ирхине ĕçе пытăм та, мăн çурт алăкĕн шал енче саккăртах Иван Тенюшевпа ЧОКЦ шоферĕ хуралта тăраççĕ. Канмалли кун та, район администрацийĕнче ĕçлекенсем çук. Çӳлте, пысăк залра, президиум вырăнĕсене майлаштарса лартрăмăр. Пирĕн «Вучах библиотекин» 1-мĕш номерĕ пичетленсе тухнăччĕ. Ăна суттарма бухгалтера сĕтел хатĕрлесе патăмăр, хамăр çынсем пухăнса пыраççĕ. Таçта та ĕлкĕрекен, ниçтан та юлман Петĕр Ялгир шĕкĕ хăйĕн кĕнекине сутма пуçларĕ. ЧОКЦăн курултайне (сьездне) ирттерме хатĕр ĕнтĕ.

Вуннă тĕлнелле аялти хутра шав пуçланчĕ. Анса пăхрăм та, тул енче халăх питĕ йышлă пуçтараннă. «Каварçăсем» те ЧОКЦăн иккĕмĕш сьездне ирттерме килнĕ-мĕн. Юхмана сирпĕтсе, Чăвашсен обществăпа культура центрĕн тилхепине хăйсен аллине çавăрса тытасшăн тапаçланаççĕ, алăка тӳнлеттереççĕ, тем сухăраççĕ. Мускаври переворот, революци пекех влаç çуртне штурмлаççĕ. Мускавра, танксенчен персе, ытти хĕç-пăшалпа правительствăн «Шурă çуртне» çавăрса илнĕ-ха, Шупашкарта вара... унччен КПСС Мускав райкомĕ валли тунă, халĕ район администрацийĕпе ЧОКЦ вырнаçнă «Хĕрлĕ çурта» хăвăртрах чăмса кĕрсе лекцисен залĕнчи президиум сĕтелне харсăррăн туртса илесшĕн. Акă, вунçиччĕмĕш çулхи «Аврора» крейсер туппісен хаплатăвĕ пек хăрушă сасă янăраса кайрĕ те, «Пикери» Людмила Сачковапа Галина Сорокина ватă Тенюшев салтака, Юхман шанчăклă хуралçине, тĕксе сирпĕтсех кĕрсе кайрĕç. Вĕсем хыççăн арçын каманти кĕрлесе фойене тулчĕ, Смольная туртса илнĕ вăхăтри

курайманлăх хăвачĕпе сулăнса малалла, иккĕмĕш хуталла шавласа хăпарса кайрĕ. Эпĕ унта хăпарнă тĕле «революционерсем» делегатсене регистрацилеме пуçланăччĕ. Çынсем пылак та тутлă апат çумне сырăннă шăна кproperly куписсем пек ушкăнсене кĕпĕрленнĕ, пурте чĕлхисене сăнăлантарнă, пĕрне-пĕри пӳлсе тем ăнлантараççĕ, куçĕсемпе пире çунтараççĕ...

Юхман вара ирĕксĕрех чакма тиврĕ, хăйĕн çарне епле те пулин туллинрех сыхласа хăварма пултаракан командующи пекех васкавлă маневр турĕ, шанчăклă çыннисене аялти хута йыхравларĕ, Яковлев ячĕллĕ клубра ЧОКЦăн, хăйĕн сьездне, пуçларĕ.

Аслă пухăва пĕрлех ирттерес тесе çӳлтен «пăлхавçăсен» делегацийĕ килчĕ: Василий Давыдов-Анатри, Анатолий Емельянов, Николай Терентьев халăх писателĕсем, Виталий Станьял, Валери Тургай. Терентьевпа Тургай тата Станьял пурне те çӳле чĕнчĕç. Юхма сьезчĕ вĕсене итлемерĕ, малалла ĕçлерĕ. Президиумра - Юхма, Тенюшев, Юшков, Борис Никитин (Анат Кама) Хĕрарăм каманти юсанă хыççăн тăна кĕнĕ Иван Яковлевич ларăва чĕтревлĕн ертсе пырать.

Кĕç Раççей президенчĕн представителĕ Н.Зайцев, хамăр республика премьер-министрĕн çумĕ В.Мидуков, Совмин представителĕ Н.Пыркин килчĕç. Аслăраххисене иккĕшне президиума лартрĕç. Вĕсем те сьезда пĕрле ирттерме чĕнчĕç. Хăш-пĕр делегатсем килĕшрĕç. Юхма хирĕçлерĕ. Тенюшев сьезда малалла тăсрĕ.

Ăçтан мĕн кăна шутласа кăлармасть Юхма. Хăйне сăмах парсан, тăчĕ те пĕлтерчĕ: «Хисеплĕ юлташсем! Сьезда эпĕ питĕ тĕплĕн çырса доклад хатĕрленĕччĕ, пичетлеттерме ĕлкĕреймерĕм, ăна тата сьездăн ытти докуменчĕсене хура тĕслĕ папкăна хунăччĕ, аялти хутри алăк патĕнчи революцилле тĕркĕшӳ вăхăтĕнче ăна такăшĕ вăрларĕ, çавăнпа доклад вырăнне ЧОКЦ ĕçĕ çинчен каласа çеç паратăп. Чăнах та каласах пачĕ вара. Хыççăн эпĕ ревизи комиссийĕн отчетне турăм. Юрать ман отчета никам та «пĕçертмен».

Папка «вăрланăшăн» Валери Тургая милицие илсе кайнă, тĕпченĕ хыççăн тӳрех каялла ăсатнă. Шӳтлесе, вăл залра «Эпĕ вăрларăм Юхма докладне» тесе хыттăн кăшкăрнă, тет-и?

Пирĕн сьездра малтан Пыркин, унтан Мидуков сăмах каланă хыççăн, Зайцев çӳлти сьезда хăпарчĕ, вăл «Кунти калаçу протоколра çеç юлма пултарать», тесе каласа хăварни асра юлчĕ.

Мĕнле пăтăрмах пулса иртнине вăл чăннипех ăнланать ĕнтĕ. Виçĕмкун ЧОКЦа пырсан та Зайцев питĕ тăнлă, ăнланулла калаçрĕ. Эпĕ ун чухне çапла каларăм: «Пĕр-пĕрне килĕштерсе ĕçлемесен, çаплах хирĕçсе пурăнсан, ĕç малалла каймасть, чăваш халăхĕн культури малалла аталанаймасть». Михаил Николаевича çакă çав тери килĕшмерĕ, унăн алли чĕтреме пуçларĕ.

8 çын тухса калаçнă хыççăн, съезд вĕçленчĕ. Çĕнетнĕ Устав йышăнчĕç, Консультаци канашĕ, правлени, ревизи комиссийĕ суйларĕç. ЧОКЦ председателĕнче М.Н.Юхма хăех юлчĕ. Иван Тенюшевпа Роза Петрова ура çине тăрса алă çупса ячĕç те, пĕтĕм зал тăрса алă çупса саламларĕ Михаил Николаевича.

Аякран килнĕ чăвашсем тата пирĕн коллективри хăш-пĕрисем тарса çӳле улăхрĕç. Тулай чăвашĕсене 22 çынна унта делегат шута илнĕ. Вĕсен мандат комиссийĕн председателĕ П.В.Моисеев съезда пĕлтернинчен çакă паллă пулчĕ: Станьялсем пухнă съезда 122 делегат, Юхманне 60 çын пынă.

Вася Кошкинпа съезд вĕçленсенех тухса кайрăмăр, пăтранакан кӳлĕре пире нимех те лекес çуккине туйса, «Атăл шывĕпех» чӳхесе тасатас терĕмĕр «Хĕрлĕ çуртра» ăша лекнĕ усал сывлăша.

Мăн съезчĕ вăраха тăсăлнă. Унта Юхман заместителĕ Сарпи, «Пике» сотрудници Сорокина, «Вучах» художникĕ Агеев, пĕрремĕш съездран куçнă Никитин, Тарават тухса калаçнă.

Иккĕмĕш хутри иккĕмĕш съезд М.Н.Юхмана, хăйĕн ĕçне начар туса пынă тесе хакласа, ЧОКЦ правленийĕн председателĕн тата «Вучах» хаçат редакторĕн ĕçĕсенчен хăтарма йышăннă, Чăвашсен обществăпа культура центрĕн председателĕ пулма Чăваш патшалăх университечĕн кафедра заведующине, филологи наукисен кандидатне Виталий Петрович Никитин-Станьяла тата «Вучах» хаçатăн редакторĕ пулма Денис Викторович Гордеев писателе суйланă. Юхман айăпне питĕ анлăн палăртма тăрăшнă съезда хатĕрлекенсем: «Михаил Николаевич ЧОКЦ Уставне пăснă, ЧОКЦра тăракансен шанăçне тӳрре кăларман, ĕçри вырăнпа тивĕçсĕр усă курнă, чăваш культурине аталантарас тĕллевре пăрăннă, элеклĕ харкашупа пăтраннă, центр хуçалăхне юхăнтарса янă...» Съезд протоколĕнчи йĕркесем кусем. Юхман халĕ пĕтĕм кантур документацине, пичетне, ЧОКЦ пурлăхне съезд суйланă комиссине памалла. Ăна вара Михаил Николаевичăн хальхи вăхăтри «чи çывăх тусĕ» Анатолий Ефимов-Кипеч ертсе пырать.

Çапла чăвашсен «икĕ хутлă сьезчĕ» Чăваш тĕнчинче икĕ пуçлă ЧОКЦ çуратрĕ.

Мартăн 17-мĕшĕ.

Юхма юххине те чакармарĕ, каялла та юхмарĕ, малаллах çул тытрĕ. Правлени ларăвĕ пухрĕ. Унта хăй, Тенюшев, Иванова бухгалтер, Христофорова секретарь, Тимофеев, Агеев, Петрова, Михайлов, Кошкин, Сарби, Юшков тата эпĕ пултăмăр. Раиса Васильевнан йăмăкне Альбина Любимована чĕннĕ.

Правлени президиумне 5 çынран суйлаттарчĕ. Юхма мана малтан чиперех: «Эсĕ президиум членĕ пулатăн, ман заместитель пулмастăн-и», - тесе çӳретчĕ, халĕ вара мана пăрса хăварчĕ.

Роза Николаевна Петрова каларĕ: «Михаил Николаевич питĕ ăслă, талантлă, опытлă çын, «Вучах» редакторне ăнах хăвармалла».

Михаил Юхман «чăн сьезчĕ» аялти хутра, И.Яковлев ячĕллĕ залĕнче (КПСС райкомĕн политвĕренӳ залĕ) ак çакăн чухлĕ çынпа ĕçлерĕ.

Тенюшевĕ лĕпĕртетрĕ: «Çак вăхăтра питĕ çирĕп çын кирлĕ, хаçата çăлса хăварма Михаил Николаевич кăна пултарать».

Сергей Юшков сĕнчĕ: «Тĕп редактора Кузьминах лартмалла. Вăл пулман пулсан эпир кун пек лайăх хаçат та кăларайман пулăттăмăр. Ун пек вăйлă журналистсене эпĕ яланах мала хурса хисеплетĕп».

Эпĕ тăрса хирĕçлерĕм: «Мана ахаль те кунта «Вучах» редак-

торĕ тăватпăр тесе виçĕ хутчен улталанă, мана вăл должнăç тек ĕнтĕ кирлĕ мар».

Президиум вара «Вучах» редакторĕ пулма М.Н.Юхманах çирĕплетрĕ, хăй палăртнă, хăй кĕтнĕ, хăй шаннă пекех. «Пике» журнал редакторне Раиса Сарпие, «Путене» редакторне Альбина Любимована шанчĕç.

Василий Кошкин мана «Атя, Володя, ку камите курма пăрахса Атăл хĕрне уçăлма каяр?» - тесе вăрттăн систерет (сылтăмра).

Çĕнĕ ставкăсем çирĕплетрĕмĕр. ЧОКЦ председательне 2000, «Вучах» редакторне 1700 тенкĕ тӳлемелле пулать. Эпĕ Кошкина палăртнă 1200 тенкĕрен 1500, Михайлова 1200-тен 1400 тенкĕ тума сĕнтĕм. Вĕсене вара 50-шар тенкĕ хуштарчĕç. Мана 1600 тенкĕ туса пачĕç. Ку ĕнтĕ хальхи вăхăтра сахал, анчах эпир 300-400 тенкĕ илнипех çырлахса ларнă-çке ку таранччен.

«Вучах» библиотекин» гонорарне çирĕплетрĕмĕр. Автора е кĕнеке пухса хатĕрлекен автора - 2000, художника - 300, редактора - 200, техредактора тата корректора - çĕршер тенкĕ, пĕтĕмпе 2700 тенкĕ.

«Вучахăн» халĕ икĕ тĕп редактор. Кампа ĕçлемелле-ши пирĕн? Кам хушнине итлемелле? Хăш редакторĕн çумĕ-ши эпĕ? Хăш редакторĕ тĕп-тĕплĕреххи-ши? Тăнран каймалла вĕт шухăшласа.

Станьялпа Гордеев çак кунсенче икĕ типографине те влаç

улшăннă май хаçата пичетлеме тăхтаса тăма хушнă çырусем çитернĕ.

Пирĕн корректор Люда Чермакова тунтикун хатĕр материалсене 1-мĕш типографине кайса паман. Вăл Юхмасене хирĕç, çӳлти сьездра та вĕсене питлесе тухса калаçнă. Варсонофий Михайлович вара çитес номер материалĕсене хăй парса килчĕ те, пăтăрмах пирки редактора çырса пĕлтерчĕ. Ăнлантару хучĕ çине Михаил Николаевич чалăшшăн çырса хучĕ: «Кузьмину. Брать обьяснительную, выяснить причину и доложить мне». Эпĕ ка-ларăм: «Кунта ĕнтĕ хăвăра пăхăнакан çынсемпе сирĕн хăвăрăн калаçмалла, ман мар». «Эсир калаçăр, эпĕ приказ çыраканни пулатăп», - тесе çиллессĕн тавăрса тухса кайрĕ манăн пĕр тĕп редакторĕ.

Мартăн 20-мĕшĕ.

Малалла мĕн пулса иртнине куç ан куртăр тесе Вăрнара командировкăна ыйтса кайрăм. Юхмасем çапах та хаçат кăларма пуçланă, анчах икĕ типографийĕнче те хирĕçлесе тăнă. Михаил Николаевич вара типографине хăй кайнă, тинех тĕп редактор ĕçĕсене пуçласа курăмлă пурнăçлама пуçланă. Тенюшев типографисене пĕрне те пĕрре те пырса курманччĕ хаçат кăларнă вăхăтра, çĕнĕ тĕп редакторăн ирĕксĕрех унта çитмелле пулнă. Ку ĕçе вара Юхма ЧССР Аслă Канашĕн председателĕн заместительне Борис Михайлович Яковлева кӳлнĕ. Лешĕ влаç пушшипе хăмсарнине кура икĕ типографийĕнче те «Вучахпа» малалла ĕçлеме килĕшнĕ.

Мартăн 23-мĕшĕ.

Эпĕ ĕçе пырсан пурте «Вучах» тухнипе-тухманни çинчен ыйтаççĕ. Хаçачĕ тухман иккен. Валериан Павлов çӳлтисене те пăхăнман, пичетлемен икĕ ЧОКЦ хаçатне. Икĕ хуçаран хăшĕ тӳлĕ-ши, тесе иккĕленнĕ пуль.

Мартăн 26-мĕшĕ.

«Хыпарта» паян Г.Макаров корреспондентăн ЧОКЦăн (Станьял) çĕнĕ правленийĕн пĕрремĕш анлă ларăвĕ пулни çинчен кĕске хыпарĕ пичетленнĕ. Лару ЧОКЦăн Яковлев ячĕллĕ наци клубĕнче пулса иртнĕ. Правлени Финанс министерствин контрольпе ревизи управленийĕн Юхмасен ĕçне тĕрĕсленин актне пăхса тухнă. Правлени ревизи актне тата ЧОКЦ председателĕ пулнă М.Юхман хăш-пĕр ĕçĕсем пирки Мускав районĕнчи экономика сферинчи преступленисемпе кĕрешекен пая (унчченхи ОБХСС) ярса пама йышăннă.

Ку ларăва Станьял Василий Кошкинпа мана та чĕннĕччĕ. Правлени членĕсене Виталий Петрович каларĕ: «Эпир Влади-

мир Прокопьевича, йĕркеллĕ çын тата опытлă, пултаруллă журналист тесе, хамăр патра ĕçлеме сĕнесшĕн, çавăн пекех - Василий Кервене те. Хаçат ятне улăштарасшăн, мĕншĕн тесен «Вучах» хăйĕн тивĕçне пурнăçлаймарĕ, çавăнпа ăна «Пĕрлĕх» ят памалла мар-ши?» Сĕнĕве ырлакансем те, сивлекенсем те пулчĕç. Ячĕ çинче мар, хаçатне хамăрăн кăларма тытăнассине хăвăртрах татса парасси, тесе килĕшрĕ правлени.

Вĕсен çирĕплетнĕ планĕ Чăваш Терменĕн малашлăхне уççăнрах, ĕненмеллерех кăтартакан тĕрĕслĕх, тасалăх çути пек те туйăнать. Влаçшăн çеç мар, чăваш халăхĕшĕнех питĕ ăслăн, анлăн ĕçлеме пуçлани манăн малтанхи шухăшсене те иккĕлентерчĕ. Çапах та халлĕхе пăрçа пек сиккелес килмерĕ, пуçра пĕр тĕвĕленнине салтса тепĕр çыхă тума васкамарăм-ха. Чăваш халăхĕн çывхарса килекен конгресĕнче татăклă улшăнусем пуласса чун сисет-ха. Унашкал туйăм мана ĕçре яланах тĕрĕс йышăну тума, Йĕпреçре те хам алăпа пусса кăларакан хаçата çĕнтерӳллех пыма пулăшнă. Ултав кӳллинче те путмарăм-ха, пурнăç киммине усал хумсем хирĕç çапаççĕ пулин те, кĕсмене вăйпах авăсатăп, умри телей çути патнеллех ишетĕп.

Михаил Юхма, чее маневр туса, аялти ЧОКЦа Мускавра РСФСР Юстици министерствинче регистрациллеттерсе ВЧОКЦ туса хучĕ те, иккĕмĕш хутри Станьялсен ЧОКЦне аяла персе чикрĕ, хăй чи çӳле хăпарса ларчĕ, Чăвашсен обществăпа культура центрĕн тилхепине каялла çирĕппĕнех алла çавăрса илчĕ, Çилçунатăн çурăмĕ тăрăх пушшине туртса çапрĕ. Лав малаллах тапранчĕ. «Вучаха» та Раççей калăпăшлĕ тăвасшăн, мана расчетсем хатĕрлеме хушрĕ. «Ĕç укçи те ӳсмелле, тĕп редакторăн 4 пин пулмалла, ыттисен унран 300-400 тенкĕ кăна пĕчĕкрех пулса пымалла», - тесе хавхалантарать.

Станяьлсем шăпланчĕç. Хаяр тытăçу умĕнхи шăплăх-ши ку е урăххи? Пĕлместпĕр-ха. Ĕçлеме халь лăпкă, шав, хирĕçӳ çук. Хаçат айне те Юхма çĕнĕрен хăй пусма пуçларĕ, пĕр хушă редколлеги ячĕпе тухнăччĕ. Пирĕн хаспатин Гордеев маррине, вăл малтанхиех - Юхмах пулнине ĕнентĕмĕр.

Хаçатсенче икĕ ЧОКЦ хушшинчи хирĕçтăру укиян хумĕсем пекех шавларĕ-ха. Халăх ĕнтĕ çав шава хăнăхса çитрĕ, йĕрĕнтерсе те çитерчĕ пуль ухмахла хăтлану.

Апрелĕн 24-мĕшĕ.

1-мĕш типографи хаçата малалла наборлама пăрахатпăр текен çыру ярса пачĕ. Чăнах та, ытла хаклă, тӳлесе çитермелле

мар. «Вучахӑн» пӗр номӗрне пичетлеме 20 пин тенке ларать. Пире укҫа уйӑрса паракан ҫук. Полиграфистсене те укҫа кирлӗ. Юхмапа иксӗмӗр директор патӗнче пулни те пулӑшмарӗ-ха.

Тӑкаксене кӑштах чакарас терӗмӗр. Ҫавна май ҫитес уйӑхран пуҫласа штатра тӑман авторсене гонорар тӳлеме пӑрахса, хамӑрӑн сотрудниксене гонорар укҫине ӗҫ укҫи ҫумне хушса тӳлеме килӗшрӗмӗр: тӗп редактора - 800, заместительне - 700, ответлӑ секретаре - 500, пай пуҫлӑхӗсене - 400-шер тенкӗ. Кашни номӗрте ҫапла 700 тенкӗ перекетленсе юлать.

Сентябрӗн 23-мӗшӗ.

Ҫу каҫипе нумай улшӑну пулса иртрӗ. Ҫӗршыв хуҫалӑхӗ арканса, экономики анса ларнӑ, культурӑна тапӑртатса таптаса лартнӑ вӑхӑтра пире те хӗссех ҫитерчӗҫ. Укҫа-тенкӗ ҫук. Хаксем ҫав тери ӳссе кайрӗҫ. Ӗҫ укҫи питӗ пӗчӗк, хырӑма тӑрантармалӑх та ҫитмест. 800 тенкӗ те, 1500 те туса пӑхрӗҫ манӑн ӗҫ укҫине. Пурпӗрех ӳсекен хаксем хыҫҫӑн хӑваласа ҫитме ҫук. Халӗ ӗнтӗ ҫак уйӑхран 3000 тенкӗ илмелле пулать. 1-мӗш числаран Василий Кошкин-Кервен шкула ачасене вӗрентме куҫрӗ те, унӑн ӗҫ укҫине пайларӑмӑр, ун шутӗнчен мана 300 тенкӗ хушрӗҫ. 3300 тенкӗ халӗ манӑн. Пӗр номерӗн гонорарӗ 1200 тенкӗ.

Хамӑр редакцире эпир халӗ ҫаксем юлтӑмӑр: Юхма Мишши, эпӗ, Варсонофий Михайлов, Илья Степанов, корректор, машинистка.

Чӑваш журналӗсене Раҫҫей Пичет министерстви хутшӑн тата полиграфи тӑкакӗсемшӗн укҫа пама килӗшнӗччӗ. Пирӗн Юхма та ҫавсен ретне кӗрттерчӗ «Вучаха». Халӗ ӗҫ укҫипе гонораршӑн кӑна укҫа тупмалла.

«Вучах библиотекине» малашне авторсен укҫипе е спонсорсен шучӗпе кӑларатпӑр. Пӗрне пичетлеме 35 пине ларать.

«Вучах» ҫумӗнче «Чӑваш литературин антологине» кӑларатпӑр (2 пин тенкӗ).

Иртнӗ пухура мана Чӑвш писателӗсен Союзӗн ответлӑ секретарьне суйларӗҫ. Кошкин вырӑнне. Вӗсем: Вутлан (Союз правленийӗн председателӗ), Тенюшев, Сунтал тата Смолин, ҫӗнӗ Союза пӑрахса киввине тарчӗҫ, Ҫӗнӗ Союз правленийӗн председательне Р.В.Бородкина-Сарпие суйларӑмӑр. Халӗ ӗнтӗ эпӗ арҫын ҫумӗ те, хӗрарӑм ҫумӗ те - иккӗшӗн ҫумӗнче вӗткеленетӗп.

Октябрӗн 22-мӗшӗ.

Варсонофий Михайлович Михайлов журналист, писатель 60 ҫул тултарчӗ. Етӗрне районӗнчи Асламас ялӗнчен. Эпӗ ӑна

Варсонофий Михайлович Михайлов варринчи пӳлӗмре хаҫатӑн «Улах» страницине ҫыпӑҫтарса калӑплать. Василий Кервен хӑйӗн кӑларӑмне майлаштарма пулӑшать. Ирина Горшкова вӗсене машинка кӗввипе хавхалантарать.

Борис Иванов вӑрттӑн ҫапса илнӗ.

литература псевдонимĕ тупса парса савăнтарнăччĕ. Пĕррехинче вăл, кăштах сыпкаласан, Кервенпе Луч çине ăмсануллăн пăхса илчĕ те: «Псевдонимпа пичетленсен, ман та ят чаплăрах янăрамалла та...» - тесе хăйĕн ытарлă куллипе пӳлĕме тултарчĕ. «Сирĕн ял таврашĕнче мĕнле паллă вырăнсем пур. Ялу ячĕпе пама юрамасть-ха, ăна тахçанах Анисим композитор ярса илнĕ, Асламас тĕнчипе кĕрлет. Аса ил-ха?» - терĕм. «Пирĕн ял витĕр Штранка шăнкăртатса юхса выртать!» - шкул ачи пек сиксе тăчĕ вăл. «Апла-тăк, Штранкин пулатăн, ыранхи номĕрте калаву Штранкин псевдонимпа тухать», - алă тытрăм тахçанхи шанчăклă тусăма. Ман сăмаха пурте ахăрсах çирĕплетрĕç. Варсонофий Штранкин мар, В.Штранкин тесе пичетленинине пула çак псевдоним каярахпа Юхмана та хулăпа тивертнĕ пек пĕçертсе илчĕ. Унăн тăшманĕсем элек хайлавĕсенче Юхма псевдонимĕсем хушшине «В.Штранкина» та кĕртсе ярса хăйсен пĕлменлĕхне кăтартрĕç.

Пурне те пухса саламларăмăр юбиляра. Профсоюз комитечĕ 200 тенкĕ уйăрчĕ. Михаил Николаевич патĕнче эпĕ Михайлова ЧОКЦ администрацийĕ ячĕпе курăмлă парне туса парасси çинчен виçĕ хут ыйту хускатнăччĕ, çук,хуçа килĕшмерĕ. Варсонофий Михайлович редакцире пурне те хăналарĕ. Кошкин та пырса ĕлкĕрчĕ юбиляр ячĕпе черкке çĕклеме.

Хамăр патра, «Янгорчино» колхозра, «Вучаха» пропагандăлас тĕллевпе, «Илем кунĕ» ирттертĕм. «Термен» ассоциаци автобусĕпе çумăр витĕр тухса кайрăмăр вăрнаралла. Юпа уйăхĕн 17-мĕш кунĕччĕ. Уявра Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ, ЧОКЦ правлени председателĕн заместителĕ Раиса Васильевна Сарпи сăвăç, чăвашсен паллă культуруçи Виталий Григорьевич Енĕш писатель, Федеративлă Германи Республикинчен чăвашсем çинчен кĕнеке çырма ЧОКЦа килнĕ Гамбург хулинчи Кай Элерс писатель, Чăваш халăх художникĕ Владимир Иванович Агеев, эпĕ, Василий Зиновьевич Дмитриев поэт, Чăваш Республикинчи «Термен» производствăпа творчество ассоциацийĕн генеральнăй директорĕ Валерий Дмитриевич Тимофеев тата Çĕрпел, Хурăнсур Çармăс, Кайри Тукай çыннисем паянхи пурнăç, литераурăпа искусство çинчен питĕ уçă кăмăлтан калаçрĕç. Писательсем хăйсен пултарулăхĕпе, Агеев выставкăна илсе килнĕ картинисемпе паллаштарчĕç. «Янгорчино» колхоз ĕçченĕсемпе Çĕрпелти вăтам шкулта вĕренекенсемпе вĕрентекенсем «Вучах» хаçатпа тахçантанпах туслине пултаруллăхра çирĕплетсе пачĕç.

ЧОКЦ правленийĕн президиумĕ, Юхма Мишши сĕннипе, Алексей Талвир ячĕпе хисепленекен премине туса хунăччĕ. 1991 çулта «Вучахра» пичетленнĕ чи çивĕч те витĕмлĕ, илемлĕ произведенисемшĕн: «Владимир Иванович Агеева - «Юрă - ĕмĕрлĕх палăк» ярăмри авалхи чăваш поэчĕсен портречĕсемшĕн тата хаçата илемлетсе кăларма тăрăшнăшăн; Виталий Григорьевич Енĕше - «Хуралсăр юлнă пуянлăх» очеркшăн; Надежда Сергеевна Ефремована (Шумкована), Тутар ССРĕнчи Анат Камăри фольклор ансамблĕн солисткине, хаçат корреспондентне - «Глубоко взволновал меня» статьяшăн; Владимир Прокопьевич Кузьмина - «Ирĕклĕх, пĕрлĕх», «Тĕрĕслĕх çулĕ çинче» публицистикăллă статьясемшĕн, «Илем» очеркшăн, «Тепре куриччен!», «Чышкă тытăмĕнчех», «Пайланнă Ямаш вăрманĕпе Шупашкар мэрĕ» фельетонсемшĕн; Иван Григорьевич Тарасова, Пушкăртстанри чăвашсен культура обществин яваплă секретарьне, хаçат корреспондентне - «Турци профессорĕ чăвашла калаçать», «Зависть в основе», «Пултарулăхпа хăюлăх укçаран пахарах» статьясемшĕн; Валерий Дмитриевич Тимофеева, хаçатăн Мускаври тата Санкт-Петербургри корреспондентне - «Глазами очевидца» (ятарлă кăларăм) репортажшăн çулталăк пуçламăшĕнче çав премине панăччĕ.

«Илем кунне» уявлама пынă ЧОКЦ ушкăнĕ сылтăмран): Петр Волков (Чăвашрадио), Василий Дмитриев, Владимир Агеев (Художжниксен союзĕ), Валерий Тимофеев («Термен»), Раиса Сарпи («Пике»), Виталий Енĕш (Писательсен Союзĕ), Владимир Кузьмин («Вучах») Вăрнар районĕнчи «Янгорчино» колхоз правленийĕнче. Пӳлĕм хуçи Федор Кузьмин хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа парать (сулахайран иккĕмĕшĕ).

Маларах эпĕ «Янгорчино» колхоз председателĕпе Кузьминпа пĕрремĕш лауреатсене пурлăх енчен хавхалантарас майсем пирки каласса татăлнăччĕ. Акă халĕ Илем уявĕнче Агеева, Тимофеева, Енĕше тата мана премие шучĕпе пĕрер сысна çури парнелерĕç.

Туслă та ăшă тĕлпулу «Илем кунне» вăйлатрĕ, ял çыннисемпе искусство ĕçченĕсен тата çыравçăсен чунне ăшăтрĕ.

Чуна темле йывăрлăх пусса тăрать пулин те, манăн тăван «Вучахшăн» хĕрĕве вăйсăрлатас килмест, хамăр ĕçлекен организаци ятне халăхра ырăпа асăнтарса çĕклес килет. «Хыпар» «Вучаха» сĕрĕм тивертекен хаçат, тет пулин те, «Вучахăн» чăваш халăхĕшĕн, халăх культуришĕн пичетлекен, пурнăç аталанăвĕшĕн тăвакан ырă ĕçĕ усаллинчен нумайрах-ха. Хаçатăн малашлăхĕ çеç кулянтарать. Ăна чĕртме пĕтернĕ ăс-хакăл вăйĕ çилпе вĕçсе каяссинчен хăратать.

М.Н.Юхма хăйĕн ĕçне республикăри обществăлла организацисемпе, ертсе пыракан пуçлăхсемпе, аслă шкулсемпе, заводсен, колхозсемпе совхозсен управленийĕсемпе, дирекцийĕсемпе, правленийĕсемпе пĕрле тачă çыхăнса йĕркелет. Акă, хамăртан инçех мар вырнаçнă приборсем тăвакан заводра та пулма тӳр килчĕ. Пире завод управленийĕн хуравлă представителĕ цехсем тăрăх илсе çӳрерĕ, заводăн технологи йĕркипе, инженерсемпе, рабочисемпе паллаштарчĕ Эпир кайран вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен хамăр хаçатра çырса кăлартăмăр.

Сăн ӳкерчĕкре: Владимир Кузьмин журналист завод хуçинчен Глеб Ильенкоран интервью илет.

«ВУЧАХĂН» АЛЕКСЕЙ ТАЛВИР ЯЧĔПЕ ХИСЕПЛЕНЕКЕН ПРЕМИ ЛАУРЕАЧĔСЕМ:

В. Кузьмин

В. Енĕш

В. Агеев

В. Тимофеев

Н. Ефремова

И. Тарасов

Ноябрĕн 10-мĕшĕ.

Октябрь праçникне кăçал шавсăр, патшалăх шайĕсĕр ирттерчĕç.

Пĕтĕм влаçа çавăрса илнĕ Борис Ельцин «демокрачĕсем» çĕршыв, халăх туприне Кремль али витĕр кăларса, хăйсен умне ылтăн тăвĕ купалаççĕ. Пурнăç тĕпĕнчи мĕнпур йăхтăр-яхтăр çиеле ишсе тухрĕ, пуç пулса тăчĕ. Халăхăн ирĕклĕхне, савăнăçне читлĕхе хупрĕç. Çĕршыв тĕпсĕр шăтăкалла чăмма пуçларĕ. Кам мĕн тума пултарать - вăрланă пуянлăхпа хырăмне тултарать, кам мĕнле улталама, çаратма пултарать - чи çӳллĕ пукан çине улăхса ларать. Карьеристсемпе йăпăлтисемшĕн, кашкăрсемшĕн çĕршывĕпех, тĕнчипех симĕс çул уçăлчĕ.

Юхма Мишши те çав юхăмра çăрттан пулă пекех ишет. Мускавран тухма пĕлмеççĕ Сарпипе иккĕшĕ. «Вучаха» çулталăк вĕçлениччен тытса тăмашкăн РФ Пичет министерствинчен 300 пин хăпăтса илме пултарнă. Хăйшĕн те тепĕр ырă ĕç тунă. «Мана Ельцинăн патшалăх премийĕн комиссине кĕртрĕç, ноябрĕн 18-мĕшĕнче ларăва каймалла», - тесе пĕлтерчĕ пире тĕп хуларан таврăнсан.

Ноябрĕн 18-мĕшĕ.

Виçĕмкун Юхма Мускава, Ельцин премийĕн комиссине хутшăнма, самолетпа вĕçсе кайрĕ. Ĕнер, Мускав хула администрацийĕн пуçлăхĕ А.Н.Грибов хушнипе, аялти хутри пирĕн Чăваш наци клубĕн япалисене фойене кăларса пăрахнă та, хăйсен çăраççине лартса, питĕрсе хунă. Унта вĕсем урăх организацине вырнаçтараççĕ иккен. ЧОКЦа иккĕмĕш хутран та хăвалаççĕ. Çавăн пирки хаçатра материалсем пичетлерĕмĕр. Тĕрĕссипе, унта ирĕксĕрлесе юлма май çук, темле хирĕçсен те, тапаçлансан та. Хамăра сĕннĕ çĕрех куçмалла пулать.

1993 çул.

Ĕç кĕнекинчен.

Январĕн 25-мĕшĕ.

Хаçат кăларма пуçлани икĕ çул çитрĕ. Ун пирки тĕп редактор М.Н.Юхма шăпăрт та шарламарĕ.

«Вучахăн» Талвир ячĕллĕ премине иртнĕ çулхи палăрнă ĕçсемшĕн памалли списока Тенюшева та кĕртсе хунă. Эпир, тĕлĕннипе, «Иван Яковлевич вăл, паллах, хăйне республикăри «ведущий журналистсенчен пĕри» тесе шутлать те, çапах та унăн премии условийĕсене тивĕçтерекен паха япали пулмарĕ-çке пĕлтĕр,

халăха култариччен, ăстарах çырмалла пуль», - терĕм те, Михаил Николаевич çирĕппĕн тавăрса хучĕ: «Çапах та Тенюшев пĕрремĕш редактор пулнă». Ăнлантăм: ку ыйтăва комиссисĕрех, малтанах татса панă. Çаплах пулчĕ те.

Укçа йӳнелсех пырать. Манăн ĕç укçи халĕ 4950 тенкĕ, ун çумне кĕçах 50 процент хутшăнмалла, терĕç. Çак уйăхра инфляци 40 процент уснĕ. Манăн арăм шкулта, вĕсен пĕчĕк ĕç укçи кăна, уйăхне 15000 енне илет. ЧОКЦ пуçлăхĕсен кĕсье укçи пирĕннинчен 4 хут ытлараххи çинчен те пĕлтерчĕç вăрттăн пире бухгалтерире. Епле аван ĕçлеме, э? Пасара нуша сумкки йăтса кай та... аш 400-450 тенкĕпе туян, пыл тутанас килсан, килограмĕ 1000 тенкĕ. Лавккара кĕпе 550, шур эрех 500, торт 280 тенкĕ.

Февралĕн 3-мĕшĕ.

Нумай анлă ĕç тăвать Шупашкарти «Термен» ассоциаци! Пурне те вĕсенчен тăватă тĕп тĕвве çыхнă. Халăха вĕрентес ĕçпе культура тата искусство аталанăвĕ. Наукăпа техника прогресĕн çĕнĕлĕхĕ. Экономика, социаллă пурнăç, экологи ыйтăвĕсем. Çак çыхăнура, ассоциаци правленине ертсе пыракан Валерий Дмитриевич Тимофеев шучĕпе, халăх хăвачĕн, этем ăсĕн, чысĕн, пултарулăхĕн иксĕлми вăйĕ, чăваш халăхĕн чĕрĕлĕх çăлкуçĕ. Кам çак пархатарлă ĕçре уйрăмах палăрать - çавна чыс та мухтав. Çак тĕллевпе ĕнтĕ вĕсем «Термен» премийĕсене туса хунă. Акă, унтанпа çулталăк ытла вăхăт иртрĕ. Виçĕмкун эпĕ, хам преми комиссийĕнче тăнипе усă курса, Юхма патĕнче ларакан Тимофеева сĕнӳ патăм: «Атьăр тăваттăмĕш премине «Вучах» хаçат редакцийĕн коллективне пама тăратар?» Калаçсан-калаçсан, манпа вĕсем килĕшрĕç.

Паян, кăнтăрла иртни иккĕре, Чăваш патшалăх университечĕн уйри тĕп корпусĕнче, çавра сĕтел хушшинче пуçтарăнтăмăр. Тавлашуллă хĕрӳ калаçу хыççăн, комисси çаксене пама йышăнчĕ «Термен» премийĕсене:

1. Халăха вĕрентсе çутта кăларассипе тава тивĕçлĕ ĕç тунăшăн Даниил Филимонович Филимонова (Даниил аттене), вилнĕ хыççăн.

2. Наукăпа техникăна аталантарассишĕн паллă çитĕнӳ тунăшăн И.Н.Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕн обществăлла наукăсен факультечĕн деканне, экономика наукисен докторне, Чăваш наука академийĕн член-корреспондентне Валентин Игнатьевич Ильдменов профессора.

3. Халăх валли пархатарлă ĕç тунăшăн - Чăваш Республикинчи медицина учрежденийĕсен Республика Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи лицензипе аккредитаци комиссийĕн председательне, медицина наукисен кандидатне Юрий Георгиевич Максимова.

4. Культурăпа искусствăри тава тивĕçлĕ ĕçшĕн - Чăвашсен обществăпа культура центрĕ кăларакан «Вучах» хаçат редакцийĕн творчество коллективне.

«Вучах» чăваш наци культурине аталантарассишĕн тăрăшса ĕçлет. Унăн страницисенче чăваш çынни хăйĕн тивĕçлĕ сассине уçăмлăн тĕнчене пĕлтерчĕ. Чăваш наци аталанăвĕн, халăх культурин, йăли-йĕркин, чĕлхин çивĕч ыйтăвĕсене вăл мĕнпур чăвашпа пĕрле анлăн хускатрĕ. Аякра пурăнакан ентешсем хаçатра уйрăмах хисеплĕ вырăн, тăваньен тĕпелĕн кăмăллă вырăнне тупма пултарчĕç. хаçат пулăшнипе республика тулашĕнчи чăвашсен культури, йăли-йĕрки чĕрĕлме пуçларĕ.

1992 çулта «Вучахра» «Юрă - ĕмĕрлĕх палăк», «Авалхи чăваш хулисем», «Авалхи чăвашсен чаплă çыннисем» историлле илемлĕ очерксем пичетленни чăваш халăхĕн культура ӳсĕмĕнчи паллă утăм пулчĕ. «Тăваньен аваллăхĕпе культури» рубрикăпа пичетленнĕ очерксем, статьясем чăваш ялĕсен ĕмĕртен-ĕмĕре куçса пыракан пуян кун-çулне уçса пачĕç.

Хаçат чăвашăн паянхи йăли-йĕркине, культурине, искусствине, пурнăçне анлăн çутатать.

«Термен» премийĕн лауреачĕ» ят илнисене диплом, лауреат палли тата 50 пин тенкĕ укçа параççĕ.

Февралĕн 17-мĕшĕ.

«Вучахăн» 100-мĕш номерĕ тухрĕ. Кăçал 8 номер пичетленчĕ.

Тĕп редактор, ЧОКЦ президенчĕ пире паллă кун ячĕпе кăнтăрлачченех саламларĕ. Чей чашкисем çине ярса шур эрех сыпкаларăмăр. Юхма та тутанса пăхрĕ. Вăл эрех-сăрапа туслă мар. Эрехне Степанов 500 тенкĕпе илсе килнĕччĕ. Укçине Роза Петровна удмурт писателĕн Ванюшевăн кĕнекиневаскавлăрах пичетлеме пулăшнăшăн Варсун Михайлова парса хăварнăччĕ. «Вучах» библиотекин» 3-мĕш номерĕ редакцие паян çитрĕ.

Апрелĕн 12-мĕшĕ.

Çырас та, ĕçлес те килмест. Укçи 7 пин çеç. Гиперинфляци халăха выçă кашкăр пек кăшлать, çынсен шăммипе тирне çеç хăварать. Вăрламасăр, лартмасăр-улталамасăр пурăнма май çук çĕршыв халĕ пирĕн. Кам çаврăнăçуллăраххи, чĕрĕреххи çеç хĕвел çутинче йăлкăшать. Юхмапа Сарпи - эрни-эрнипе команди-

ровкăсенче те таçти аякри тĕлпулусемпе уявсенче. Çапах та Михаил Николаевич мана ирĕклĕх парать. Мана та, Луча та, Михайлов-Штранкина та повĕçсем таранах пичетлеме чармасть. Трактор завочĕ тăвакансем çинчен çырнă «Çăлкуç» романа, «Хĕрсĕр ял та хĕсĕр мар» пьесăна кĕскетмесĕр «Вучахра» кун кăтартнăшăн эпĕ Юхмана тем пекех тав тăватăп. Тăрăшса ĕçленĕшĕн тав тунă пекех туйăнчĕ вăл мана.

Апрелĕн 19-мĕшĕ.

Хуçа аран-аран укçа ӳстеркелерĕ, мана уйăхне 15 пин туса пачĕ. Сахалтарах çав. Çăкăр буханки те 50 тенкĕ. Хамăра та хула тăрăх укçа ыйткаласа çӳреме ярасшăн. Унашкал чупма пуçласан, эпир хаçатне тăваймастпăр. 16 страница Варсунпа Илле тата ман ĕнсе çинче кăна ытларах вĕлкĕшет.

Июлĕн 9-мĕшĕ.

«Вучах» куç умĕнчех сӳнсе пырать. Кăçалхи 27-мĕш номер 1700 экземплярпа тухрĕ. Иккĕмĕш çур çулшăн подписка çавăн чухлĕ. Мĕнпур чăвашсен хаçачĕ хамăр республикăна 700 экземпляр, ытти республикăсемпе облаçсене («чикĕ леш енне») 400 экземпляр ытларах саланать, 500 экземпляр «Роспечать» киоскĕсене сутма паратпăр. Хакĕ 5 тенкĕ, пĕр жевачка чухлĕ.

Сентябрĕн 24-мĕшĕ.

Отпуска кайичченех манпа Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ Коновалов-Агивер вăрттăн калаçнăччĕ. Ман енне халĕ унăн кăмăлĕ йăлтах тепĕр майлă çавăрннă. Федор Георгиевич мана Союзăн «Илем» хаçатне кăларма чĕнет. Килĕшрĕм. Манашкал ухмах тупайман пулас.

Ĕçе куçарас пирки çырнă Агивер хучĕпе заявление Юхмана патăм. Чылай калаçса лартăмăр хăй патĕнче. Унччен сиснĕ пулас-ха. Тĕрĕк халăхĕсен виççĕмĕш конгресĕнче те (ăслăлăх институтĕнче) Агиверпе юнашар яланах пулнăччĕ те... Хирĕçлесе тăмарĕ.

Сентябрĕн 28-мĕшĕ.

Ĕнер «Вучахра» юлашки кун ĕçлерĕм. ЧОКЦ «Салют» керменте хамăр хаçат-журналсен уявне ирттерчĕ. Унта мана та Алексей Талвир ячĕллĕ преми грамотине пачĕç. «Вучахăн» тав хутне кăкăр çумне хĕстерсе таврăнтăм киле. «Кăмăлу тулчĕ-и халь?» - кулкаласа ыйтрĕ Римма Ильинична. - «Тĕп редактор та турĕç» сана, çак хут татăккипе те тăрантарчĕç...» Эпĕ те кулса ятăм: «Умра «Илем» çути йăлкăшать-ха...»

Паян ЧОКЦран ĕç кĕнекине илсе тухрăм. Юхма Мишши алă пачĕ те: «Лайăх ĕçлерĕмĕр, эпир кунтан кайсан хаçачĕ те тухаять, те тухаймасть», - терĕ. «Вучах» эпĕ кайнăшăн сӳнмест, мĕншĕн тесен тĕп редакторĕ кунтан виличчен те каяс çук, аплатăк - «Вучах» тухсах тăрĕ», - шухăшларăм ăшра. Маншăн пулсан ĕнтĕ пурпĕрех. Малтан, 1990 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнче, питĕ хавасланса ĕçе кӳлĕннĕччĕ. Тĕп редактор тăватпăр тесе суйса илсе пычĕ те, каярахпа Юхма хаçат тилхепине хăй çавăрса тытрĕ те, виçĕ çула яхăн нушаланса тертлентĕм мĕнпур чăвашсен хаçачĕ чăн-чăн чăваш трибуни пултăр тесе. 1991 çулта мана Чăваш ССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн ячĕпе хисеплеме пулчĕç - ăна вĕçне çитереймерĕç. 1992 çулта редакцие панă «Терменĕн» 50 пин тенкинчен те Варсунпа Иллен аллине те, ман кĕсьене те пĕр пус та кĕреймерĕ. Кăçалхи майăн 7-мĕшĕнче хăй сĕннипе мана Раççей Федерацийĕн Культура министерствин Хисеп грамотине пама тăратнă хутсем те аяла пулчĕç...

ЧОКЦра пĕрле ĕçленĕ юлташсем тата «Юхма Мишши союзĕнчи» писательсен пĕр ушкăнĕ (сулахайран сылтăмалла): малти ретре - Владимир Кузьмин, Людмила Сюзюкина, Альбина Любимова-Юрату, Михаил Юхма, Варсонофий Михайлов-Штранкин, Веналий Савельев-Саруи, Василий Дмитриев; хыçалти ретре - Сер-

гей Юшков, Гурий Чаржов, Анатолий Иванов-Хум, Петр Вашават, Розин Ярандайкин.

Раиса Сарпин «Пики» те Чăваш тĕнчинче хăйĕн илемĕпе ытлах йăлкăшаймарĕ, унăн кун-çулĕ кĕске пулчĕ. Ун выранне «Хыпар» хаçат издательство çурчĕ» «Чăваш хĕрарăмĕ» çуратрĕ. Ăна халăх юратса хăйĕн ăшă ытамне илчĕ.

Хĕн-хур айĕнче Юхма Мишшин «Вучахĕ» çунма пăрахрĕ. Иксĕмĕр хушăри туслăх çути сӳнмен-ха.

2002 çулхи раштав, 1.

Мана ЧОКЦ парнеленĕ кĕнекесем:
- Алăри пӳрнесем те тан мар. 1992 ç.
- Пучок смеха. 1992 г.
- Иван Мучипе Лапшу Çтаппанĕ курнă мыскарасем. 1993 ç.
«Вучахра» пичетленнĕ:
- Çăлкуç, роман. 1992-93 çулсем.
- Çĕр пики. Пьеса. 1991 ç.
- Хĕрсĕр ял та хĕсĕр мар, пьеса. 1993 ç.
- 25 калав, 10 очерк.

«ИЛЕМ» ЧĂВАШ ХĔВЕЛĔ ПЕКЕХ ÇУТАТТĂР, ĂШĂТТĂР ТЕСЕ

Чăваш Республики писателĕсен союзĕн правленийĕ вырнаçнă Володарски урамĕнчи 10-мĕш çурт (авалхи Ехрем хуçа çурчĕ). Пĕрремĕш хутра, сылтăмра, «Илем» редакцийĕ.

1993 çул.

Ĕç кĕнекинчен.

Августăн 25-мĕшĕ - сентябрĕн 3-мĕшĕ.

Ман пурнăçра та ăнăçлă, уçă улшăну пулать пулмалла. Иртнĕ уйăхрах эпĕ Чăваш Республикинчи писательсен Союзне ертсе пыракан Федор Георгиевич Коновалов-Агивер патне калаçма кайнăччĕ. Лайăх йышăнчĕ вăл мана. Писательсем ăна хăйсен ертӳçи пулма суйласанах вăл литературăпа искусство хаçачĕ кăларма тытăнасси пирки калаçу пуçарнăччĕ. Унпа ĕçлес тесе хĕмлене-

СВИДЕТЕЛЬСТВО О РЕГИСТРАЦИИ
СРЕДСТВА МАССОВОЙ ИНФОРМАЦИИ

Номер Ч 0070

от „29" сентября 199[illegible] г

НАЗВАНИЕ "Илем" (Илем)

(на языке оригинала и в переводе на русский язык)

ПРИМЕРНАЯ ТЕМАТИКА и (или) СПЕЦИАЛИЗАЦИЯ
культурно-просветительская, литературно-художественная

ФОРМА ПЕРИОДИЧЕСКОГО РАСПРОСТРАНЕНИЯ [illegible]

ЯЗЫК (И) чувашский

ТЕРРИТОРИЯ РАСПРОСТРАНЕНИЯ Чувашская Республика

УЧРЕДИТЕЛЬ (СОУЧРЕДИТЕЛИ) Союз писателей Чу[illegible] Респ[illegible]

Начальник Чувашской Региональной инспекции по защите свободы печати и массовой информации

1992 г. Тираж [illegible]. Заказ [illegible]

С.А. Александров

№ ______ Серия [illegible]

СВИДЕТЕЛЬСТВО

о государственной регистрации (перерегистрации) предприятия

[illegible]

(полное наименование предприятия, форма собственности)

Учредитель [illegible]

(полное наименование и их местонахождение)

Дата и номер Постановления Главы администрации Ленинского района г. Чебоксары Чувашской Республики от [illegible] 93 г. № 1294

(число, месяц, год, номер решения исполкома Совета)

Регистрационный номер 368 461 1197

Юридический адрес местонахождения предприятия [illegible] г. Чебоксары, ул. [illegible], 10

Основные виды деятельности предприятия [illegible]

Заместитель Главы администрации Ленинского района г. Чебоксары

«15» [illegible] 1993 г.

г. Чебоксары, типография № 1. Заказ [illegible]. 199[illegible] г.

кенсем те тупăннăччĕ. Вĕсем пĕр вăхăтра мана пулас редакци валли «Тăван Атăлта» пӳлĕм хăвăртрах пушатса пар, тесе телефонпа ӳсĕр-какăрла мăнкăлтатнине те манманччĕ-ха. Агивер хăйĕн пуçарăвне пурнăçа кĕртесшĕнех иккен. Малтанхи хăмпăсем çурăлнă та, ăна хаçат хуçи пулмашкăн урăх никам та мар, эпех кирлĕ пек туйăннă. «Тăван Атăлта» чухне темшĕн-çке сан тăшманун пăшал мишенĕ вырăнĕнче пулса тăтăм, унăн наркăмăшлă вăрттăн пульлипе сана хытах амантрăм. Сывал ĕнтĕ ман кăмăл сипечĕпе текелесе, сăмах-юмах хушшинче хăйĕн вăрттăн шухăшне уçса пачĕ, мана пĕр витĕмлĕ хутпа паллаштарчĕ:

ВЫПИСКА ИЗ ПРОТОКОЛА № 4
заседания правления Союза писателей Чувашской Республики, состоявшегося 30 июня 1993 года

ПРИСУТСТВОВАЛИ: Агивер Ф.Г. - председатель правления, Емельянов А.В., Исмуков Н.А., Семенов Ю.С., Кушманов Н.К. - члены правления.

ПРИГЛАШЕННЫЕ: Ефимов Г.А. - председатель ревизионной комиссии, Ялгир П. А. - директор бюро пропаганды СПЧР, Ставский М.А. - председатель профкома, Симунов. Н.В. - директор Чувашского отделения. Литфонда РФ.

ПОВЕСТКА ДНЯ:

2. Об учреждении газеты литературы и искусства «ИЛЕМ».

СЛУШАЛИ: Информацию председателя правления Союза писателей Чувашской Республики Агивера Ф.Г. Он сообщил о необходимости учреждения газеты литературы и искусства «Илем» Союза писателей Чувашской Республики и о своем решении в поисках средств для получения лицензии на разрешение выпуска газеты.

ВЫСТУПИЛИ: Семенов Ю.С., Ефимов Г.А., Исмуков И.А. Поддерживая инициативу председателя правления СП ЧР Агивера Ф.Г., они предложили подготовить необходимые документы для регистрации. Главный редактор журнала «Ялав» Семенов Ю.С. например, посоветовал, что из-за непрерывного роста цен на бумагу, типографские расходы, сначала надо подготовить калькуляцию для выпуска хотя одного номера. Председатель правления СП Агивер Ф.Г. согласился обоснованностью данного предложения и заявил, что в первую очередь нам надо получить лицензию для выпуска газеты.

ПОСТАНОВИЛИ:

1.Учредить при Союзе писателей Чувашской Республики газету литературы и искусства «ИЛЕМ».

2. Для обеспечения выпуска газеты литературы и искусства «Илем» изыскать денежные средства и выделить в здании правления СП ЧР необходимое помещение.

3. Выпуск газеты осуществить на общественных началах с тиражом в 20-30 тыс. экземпляров за один номер.

Проголосовали единогласно.

Выписка верна:

Председатель правления СП ЧР Агивер Ф.Г.»

Эпĕ ăна вара, ĕненсе те, ĕненмесĕр те, çав «Илем» хаçата кăларма пулăшатăп, терĕм. Вăл килĕшсе алă тытрĕ. Укçа шыратпăр-ха, терĕ те çав...

Унтанпа «Вучахра» отпуска та кайса килтĕм, шухăшĕ Агиверĕн улшăнман-ха, укçине çеç ниçтан та шыраса тупайман. Манăн ĕнтĕ ним çукран нимĕр пĕçермелле, Атăл хăйăрĕнчен ылтăн пĕрчи юхтармалла.

Çапах та эпĕ, малтанлăха сывласа ямаллăх, 300 пин тенкĕ тупрăм-ха. Хамăрăн, Вăрнар районĕнчи Хурăнсур Çармăс ачи Вячеслав Петрович Шлыков, Хусанти «Зилант» страховани фирмин Шупашкарти филиалне ертсе пыракан тусăм, пулăшма килĕшрĕ. Реклама валли тесе килĕшӳ турăмăр.

Йĕркелӳ, финанс ĕçĕсемпе пуçа çĕмĕретĕп. Смета турăм. 5 пин экземплярпа 1 номер кăларма 295 пин тенкĕ кирлĕ.

Ман вăл хаçата чăваш халăхĕн культура хаçачĕ тăвас килет. Агивер хирĕç мар, «культура» сăмах вырăнне «ăс-хакăл» тесе çырма сĕнет.

«Илем» Уставне эпĕ унчченех çырса хатĕрленĕччĕ те, ăна машинкăпа пичетлесе хутăм. Пулас хаçатпа ĕçлеме «Вучах» хуçи Юхма Мишши кансĕрлет, ман ĕнсе çине хушу хыççăн хушу купалать, хăй патĕнчен кайичченех туллинрех усă курса юлас тет пуль çав.

Агивер Союз правленийĕн ларăвне пухма хатĕрленет. Мана писательсен Юхма союзĕнчен кивĕ союза куçма ыйтса заявлени çырма хушрĕ. Çырса патăм. Çак кунсенче Ехрем хуçа керменне - Союз правленине - час-часах çӳреме пуçларăм. «Илеме» хăвăртрах та мĕнле илемлĕрех кăларма тытăнасси пирки нумай калаçатпăр, тавлашатпăр.

Сентябрĕн 23-мĕшĕ, кĕçнерникун.

Кăнтăрла иртсен иккĕре правлени ларăвĕ пуçланчĕ. Ман ыйтăва та пăхса тухрĕç, «в виде исключения» тесе Юхма союзĕнчен Мăн Союза куçма хаваспах ирĕк пачĕç. Хирĕçлемесĕр, тĕп редактора çирĕплетрĕç. Акă, протоколĕнчен илни:

«ВЫПИСКА ИЗ ПРОТОКОЛА №5
заседания правления Союза писателей Чувашской
Республики, состоявшегося 23 сентября 1993 г.

Присутствовали: из 8 членов правления - Агивер Ф.Г. - председатель правления, Семенов Ю.С., Лукин А.В., Исмуков Н.А., Кушманов Н.К, Ставский М.А. - члены правления.

Приглашенные: Ефимов Г.А. - председатель ревизионной комиссии, Смолин А.С., - член ревизионной комиссии, Эндип В.И. - зам. председателя правления СП ЧР, Давыдов Анатри В.И. - народный поэт Чувашии, Кузьмин В.П. - член МСПС (Международного Содружества Писательских Союзов).

ПОВЕСТКА ДНЯ:

1. Утверждения главного редактора, Устава газеты, литературы и искусства «Илем».

СЛУШАЛИ: Информацию председателя правления Союза писателей Чувашской Республики Агивера Ф.Г. Он сообщил, что завершают организационные работы по выпуску газеты литературы и искусства «Илем» (Искусство, Литература, Еткерлĕх, Малашлăх).

Есть предложение утвердить главным редактором газеты литературы и искусства «Илем» Кузьмина Владимира Прокопьевича. Кандидатура подходящая. Он хорошо знает газетное дело.

Работал в руководящих должностях журналов «Капкăн», «Тăван Атăл», газеты «Вучах».

ВЫСТУПИЛИ: Исмуков Н.А., Лукин А.В., Ефимов Г.А. Все они поддержали кандидатуру Кузьмина В.П.

Далее председатель правления СП ЧР Агивер Ф.Г. ознакомил присутствующих Уставом редакции газеты «Илем».

РЕШИЛИ: Принять информацию председателя правления Союза писателей Чувашской Республики Агивера Ф.Г. к сведению.

2. Утвердить главным редактором газеты литературы и искусства «Илем» Кузьмина В.П.

3, Утвердить Устав редакции газеты «Илем»: Общие положения; 2. Учредитель; 3. Программные цели и задачи; 4. Управление; 5. Заключительные положения.

Проголосовали единогласно.

Председатель правления Союза
писателей ЧР Ф.АГИВЕР.

Выписка верна:
Зам. председателя правления
Союза писателей ЧР Н.К.Кушманов».

Агивер сĕннĕ тăрăх, «Илеме» Искусство, Литература, Еткерлĕх, Малашлăх программипе кăларас, терĕç.

Савăнтăм - хытах, анчах - хăраса та кайрăм. Мана хаçат кăларма Союз правленийĕ укçа памасть-çке. Çуккă унăн ун валли пĕр пус та. Ĕç укçине те хăвăн шыраса тупмалла. Вăрçăра пăшалсăр тăрса юлнă салтак пек те, ыйткалакан пек те, вăрă пек те капла... Мĕнле пурăнма пултаран?.. Акă мĕнле йывăр çĕклем тиенчĕ ман çине! Паян правлени çирĕплетнĕ Устава килте çĕнетсе çĕнĕрен çапрăм.

«Зилантран» Шлыков укçа куçарса панă. Тăрăшать-ха ачи.

Эпĕ те редакцин Ĕç кĕнекине - Приказ кĕнекине уçрăм:

«Приказ №1
по редакции «Илем» («Краса») Союза писателей Чувашской Республики от 23 сентября 1993 года.

Во исполнение решения правления Союза писателей Чувашской Республики от 23 сентября 1993 года (протокол № 5) об

утверждении и приказа № 26 председателя правления Союза писателей ЧР от 23 сентября 1993 гола о назначении главным редактором газеты литературы и искусства (духовной газеты чувашского народа «Илем» ("Краса") Союза писателей Чувашской Республики, сего числа приступаю к исполнению своих служебных обязанностей.

На основе решения собрания трудового коллектива и по согласованию с правлением Союза писателей ЧР создать в редакции газеты "Илем" следующие отделы:
- культуры и по национальным связям;
- литературы и искусства;
- по проблемам социальной жизни, морали;
- коммерческий и рекламно-информационный.
Авторский гонорар установить за номер 40 тысяч рублей».

Сентябрĕн 26-мĕшĕ.

Юхма Мишши юлашки вăхăтра çыравçăсем хушшинчи хирĕçтăру-çапăçу хирĕнчи хура юпа пек хăрушшăн курăнма пуçларĕ те, тавçăруллă та вăйлă кĕрешӳçĕн вучахне чĕрĕ турат е усал çӳп-çап пăрахакансем ниепле те лăпланаймаççĕ-ха. Вĕсен шутĕнче «Тăван Атăлта» çăхан йăви çавăрнă Андрей Алексеев та пур. А.Тархун хушма хушаматпа «В.Кузьмин та куçрĕ» тесе «Хыпарта» йĕкĕлтешсе илчĕ. Вăл хăйĕн пĕчĕк хайлавĕнче Чăваш Республикинче писательсен виçĕ союзĕ пурри çинчен халăха пĕлтерет, пĕри - Чăваш Республикин писательсен Союзĕ (тĕп союз), тепри - Чăваш Республикин вырăс писателĕсен ассоциацийĕ, виççĕмĕшĕ - Чăваш писателĕсен Союзĕ (Юхма союзĕ). Ун шучĕпе, виççĕмĕш союзне тем пулнă, «иртнĕ çул, асар-писер тăвăл умĕн темрен хăранă мулкачсем пек, чылайăшĕ тĕп союза каялла куçрĕ». Андрей Алексеевича ĕненес пулсан вара, Союза сыхласа хăварас тĕллевпе, Юхма хăйĕн арăмне Роза Шевлепие тата Раиса Сарпи сăвăçăн ашшĕне Василий Яковлева члена илнĕ-пать. Ку хыпар - тĕрĕсех-ха. Сентябрĕн 17-мĕшĕнче йышăнтăмăр вĕсене хамăр рете. Анчах та, Алексеев тĕртсе илнĕ пек «иксĕлнĕ йыша ӳстерес тесе» мар, литературăри пултарулăхшăнах.

Роза Ивановна Юхма-Шевлепи 1951 çултанпах пичетленет, виçĕ кĕнеке авторĕ. Василий Егорович Яковлев-Велвокай та виçĕ кĕнеке кăларнă, вăтăрмĕш çулсенчех ăна чăваш классикĕсем ырланă. Патăрьел çыравçи Нăрваш Шăхалĕнчен Шу-

пашкара тухса ҫӳрейменнипе кӑна ытлашши чаплӑн курӑнмасть, халӗ те хӑй нумай ҫырать, тӗнчери юмахсене чӑвашла куҫарать. Икӗ хӗрне, Раисипе Альбинине, поэзи хирне кӑларма пултарнӑ. Виҫҫӗшӗн те вӗсен паккусӗ хулӑн. Василий Дмитриев-Шашкар, Варсонофий Михайлов, Роза Петрова, Петӗр Вашават, Сарра Баранова, Анатолий Иванов-Хум, Вениамин Савельев-Саруй, Розин Ярандай, Сергей Юшков Раҫҫей писателӗсен Союзӗн членне (Шупашкарти Юхма союзне) кӗни те Алексеев йышшисене кӗҫӗ ернӗ ҫын хыҫкаланнӑ пекех канӑҫсӑрлантарать. Хӑйсен кӗвӗҫӳпе ҫунакан ӑш-чикне вара вӗсем «А.Тархун» йышши пӑтранчӑк та тутӑсӑр шӗвекпе лӑплантарса хавхаланаҫҫӗ.

А.Тархун ҫырнӑ тӑрӑх, «...Юхма союзӗн «Вучах» хаҫатӗнче, сайра-хутра пулин те, ҫак союз членӗсен имшер сассисем илтӗнкелетчӗҫ. Уйрӑмах хаҫатра Пракух ывӑлӗн - Улатимӗр Кузьминӑн - шӑналӑк пек хайлавӗсем номертен номере пичетленсе пыратчӗҫ. Вӑл та пулин Юхма союзӗнчен тухса тарчӗ». Ҫав «шӑналӑксем» вӗсем манӑн Шупашкарти промышленность тракторӗсен заводне тӑвакан тата хӑватлӑ «улӑпсем» кӑларакан паттӑрсем ҫинчен ҫырнӑ «Ҫӑлкуҫ» роман пайӗсем пулнине пӗлмест-шим А.Тархун? Кӗнекен кӑларма май ҫук пирки, М.Юхма пулӑшнипе, юрать-ха ӑна вулакансем патне хаҫат урлӑ та пулин вӑхӑтра ҫитеретпӗр. Кам «имшер саслине» ӑна Алексеев мар, вулакан кӑна ҫирӗплетсе пама пултарать-ха. Хӑйне Чӑваш кӗнеке издательствинчен мӗншӗн «хаваспах» ӑсатса янине те, хӑйне писательсен Союзне мӗншӗн «хаваспах» йышӑнманнине те маннӑ, шеремет. Эпӗ вара Юхма союзӗнчен тухса тарман, икӗ союз правленийӗн килӗшӗвӗпе кивӗ союза ӗҫлеме куҫнӑ. Ун пирки А. Тархун хӑех ҫапла ҫирӗплетсе калать-ҫке: «...Тахҫан ЧРПС правленийӗ М.Юхма патӗнчен куҫакан урӑх пӗр писателе те тӗп союза илес мар тесе йышӑннӑччӗ. Чӑваш пичечӗ умӗнчи тава тивӗҫлӗ ӗҫӗсене шута илсе, правлени ҫавах та В.Кузьмин ыйтӑвне тивӗҫтерчӗ. Виҫӗ ҫул хушши «Вучахра» ҫунса пиҫӗхнӗ редактор ҫумми халӗ «Илем» хаҫатӑн пӗрремӗш номерне кӑлӑплать». Ҫапла, тӑрӑшсах кӑлӑплатӑп - кӑлӑплатпӑр.

Хушса каламалли кунта ҫакӑ ҫеҫ. Юхман чӑн-чӑн таркӑнӗсем хушшинче мана мар шырамалла Андрей Алексеев-Тархунӑн, Чӑваш кӗнеке издательствин директорне - И.Д.Тимофеев-Вутлана. 1962 ҫулта Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнчен чӑваш тата акӑлчан чӗлхисене вӗрентекен пулса тухнӑ Иван Дмитриевич Тимофеев, ҫарта тӑлмачӑра вунӑ ҫул, ун хыҫҫӑн учительте,

шкул директорӗнче, партипе совет органӗсенче чылай ӗҫленӗ коммунист хӑй чӑннипех служащи ҫемйинче ҫуралнине пурнӑҫра витӗмлех кӑтартса панӑ. Ҫитмӗлмӗш ҫулсенче вӑл, тӗнче тӑрӑх касса ҫӳренӗ хыҫҫӑн, литература тинӗсӗн Шупашкар сӑмсахне сӑмсине пырса тӗкнӗ-чикнӗ, сакӑрвуннӑмӗш ҫулсенче икӗ кӗнеке кӑларнӑ. КПСС обкомӗн культура пайӗнчи инструктор пуканӗ ҫине шанчӑклӑн сӗвенсен, уншӑн чӑваш литератури тинӗсӗнчи шурӑ карап тӗлӗкре кӑна мар, куҫ умӗнчех курӑнма пуҫланӑ. «Шурӑ ҫуртӑн» (Советсен ҫурчӗн) тӑваттӑмӗш хутӗнчен «ООН ҫуртне» («Чувашия» хӑна ҫурчӗ ҫумӗнчи кӑткӑ тӗми пек йӑшӑлтатакан нумай организаци, ҫав шутра Чӑваш кӗнеке издательстви те унтах, вырнаҫнӑ ҫурт) куҫ хупмасӑрах сикет те, директор пӳлӗмне, ӗмӗрлӗхе тенӗ пекех, патшалла кӗрсе ларать. Чӑваш Республикин писательсен союзӗнче вара чӑвашра ҫӗнӗрен ҫуралнӑ таланта СССР писателӗсен Союзӗн членне хаваспах илсе яраҫҫӗ. Алла мухтав ялавӗ тыттарнӑ ҫӗнтерӳҫӗ ҫар пуҫне талпӑннӑ. Акӑ ӑна турӑ панӑ: Юхма революционер ҫӗнӗ ҫар йӗркелет. Ҫара ертсе пыма Михаил Николаевич хӑйне ҫывӑх Йӑвана шанать. Ҫапла Тимофеев Чӑваш писателӗсен Союзӗн председателӗ пулса тӑрать. Чӑвашра та, Мускавра та ят илсе чапне ҫӗклеме хатӗрленет, анчах... Емельяновсемпе Красновсем айӑк пӗрчисене кӑштах юсакаласа илнӗ хыҫҫӑн, унӑн сасси вӑхӑтлӑха ҫӗтет. Умра ҫӑтмах мар, тамӑк курӑнакан пулать. Пӗрре ларнӑ ӑшӑ ӗҫ вырӑнӗнчен сирпӗнсе тухассинчен сехӗрленнӗ Вутлан вара, кутне вут пӗҫертнӗ пек хыпкаланса, Юхма патӗнчен тарать. Ҫапла вӗсем, Юхма патне хӑйма ҫиме пынӑ кушаксем, хӑйсене юрма кӑна лекнӗ хыҫҫӑн, килӗнчи куршук ҫумнех пуҫтарӑнчӗҫ. Ҫар пуҫӗ те, хӑйӗн ҫарне пӑрахсах, ялавне ҫунтарсах, кӗрешӳ хирӗнчен ҫапӑҫусӑр тарса пытанчӗ.

Ҫӗнӗ хаҫат «Илем» тухасси ҫинчен П.Тихонов-Ялгир та ӗнерех «Хыпарта» пӗлтернӗччӗ: «Чӑваш республикин писательсен союзӗн хаҫачӗ юпа уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче Чӑваш писателӗсемпе журналисчӗсен «Канаш» союзне йӗркеленӗренпе 70 ҫул тултарнине паллӑ тунӑ тӗле тухать. Хаҫатӑн тӗп редакторӗ пулма Владимир Кузьмин ҫыравҫӑна ҫирӗплетрӗҫ». Ҫирӗпленсех кайрӑм пуль ӗнтӗ халь ун хыҫҫӑн. А.Тархун - Статус Унтрийӗ - намӑс курчӗ ҫеҫ.

Сентябрӗн 29-мӗшӗ.

Йӗпреҫре туслашнӑ, халӗ «Потенциал» пӗчӗк предприятие ертсе пыракан Елчӗк ачипе Алексей Михайлович Васильевпа

тĕл пултăм. Вăл вăрман поселокĕнче Шупашкарти электроаппаратура завочĕн филиалĕнчен йĕркеленĕ çĕн завод хуçиччĕ. Туслăха эпир уйрăлмиех çыпăçтарнăччĕ. Хаçат кăларма укçа-тенкĕ тупасси пирки калаçса кайрăмăр. Хăйĕн халлĕхе май çуккă та, пиччĕшĕ патне шăнкăравларĕ. Унччен машзаводăн тĕп инженерĕ пулнă Роберт Михайлович «Батан» ятлă пĕчĕк предприяти йĕркеленĕ. Вăл укçа пама хаваспах килĕшрĕ. Кирлĕ хут çырса ун патне çитрĕм. 100 пин куçарса пачĕ.

Октябрĕн 5-мĕшĕ.

Раççей Федерацийĕн Пичет министерстви çумĕнчи пичетпе массăллă информаци ирĕклĕхне сыхлакан Патшалăх инспекцийĕн Чăваш регионĕн инспекцийĕ (хуçийĕ Станислав Александров) сентябрĕн 29-мĕшĕнче «Илеме» регистрациленĕ: Ч 0070. Пичет çуртĕнче çав свидетельствăна илтĕм. Унсăрăн халĕ нимĕн те пичетлейместĕн. Унăн докуменчĕсемпе аппаланса çур кун иртсе кайрĕ. 38 пин тӳлеттерчĕç.

Ехрем хуçа çуртĕнче ӳсĕрпе хуçалла кăшкăрса çӳрекен писатель те пулнă: «Ку хаçат та «Вучах» пекех виле çуралать!..» Эп ку союза пыриччен хăйсем темшĕн чĕртсе илемлентерсе янманçке «Илемне?» Мĕншĕн яланах çын аллинчи хур тукмаккине сĕлеке юхтарса ăмсанаççĕ-ши?

Килте хаçат уставне виççĕмĕш хут пичетлерĕм: банкра редакцин счетне уçма, налук инспекцийĕ тата ытти организацисене тăратма та кирлĕ.

Октябрĕн 6-мĕшĕ.

Республикăри Шалти ĕççен министерствин Пушар пайĕн пуçлăхĕ Смирнов полковник патĕнче пултăм. Валерий Васильевич, чăваш ачи, çĕнĕ хаçата кăларма пулăшас, тет.

ЦНТИ пуçлăхĕ А.С.Никитин хăй патĕнчен суйса, миçе хутчен ĕнтĕ шантарса çеç кăларса ярать.

Хамăн çывăх юлташсемпе туссене пурне те тенĕ пекех ура çине тăратрăм ĕнтĕ.

Пичет министрĕн заместительне Николай Галкина хаçата регистрациленин хутне парса хăвартăм.

«Чувашия» издательство директорĕ Валериан Петрович Павлов хаçат пичетлес ыйтупа кăмăллах калаçрĕ, ыйтса çырнă çырăвне йышăнчĕ.

Федеральнăй почтăн республикăри уйрăмĕнче хуçи, Светлана Терентьевна Тимофеева, хăйĕн çыннисене «Илемпе» ĕçлеме

хушнă. Хаçатăн индексне пачĕç: 54844. Уйăхра 4 хут кăларатпăр. 1 экземплярĕ 20 тенкĕ пулать. Почта тăкакĕсемпе пĕрле çырăнтармалли хакĕ - уйăха 371 тенкĕ. Танлаштарма: троллейбус билечĕ уйăха - 260 тенкĕ, телефоншăн - уйăхне 620, арçын костюмĕ - 10,500, шур эрех - 460, торт - 470, мăн витре çырла - 400, автобуспа 100 çухрăм кайма - 170 тенкĕ.

Октябрĕн 12-мĕшĕ.

«Чувашия» издательствăра хаçат пичетлеме килĕшӳ турăм. «Çилçунатра» ĕçлекен Василий Самойлова ответлă секретарь ĕçĕсене тутарасшăн. Вăл килĕшет. Материалсене пăхкалатпăр.

ЧР Министрсен Совечĕн председателĕ В.Н.Викторов патне пулăшу ыйтса хут çыртăм. Çитес çур çулта пире 13 миллион ытла укçа кирлĕ. Кайса патăм. Апатланма та вăхăт çитмест.

1-мĕш номер пичетлеме «Чувашия» издательствăна 85 пин тенкĕ куçарттартăм.

Хамăн çывăх тусăм, Республикăри çутçанталăка сыхлакан обществăн пуçлăхĕ Георгий Тимофеевич Тимофеев 800 килограмм хаçат хучĕ пачĕ. Юнашарти 1-мĕш типографирен куçармалла çеç.

Çав Элĕк ачипе эпĕ иксĕмĕр те Шупашкарта пурăнма тытăнсан çывăхлантăм. Çемьесем хушшинчи туслăх вăй илсе пычĕ. Пĕр-пĕринпе час-часах хутшăнаттăмăр. Партин аслă шкулĕнче вĕреннĕ чухне Георгий Тимофеевич çемйине пĕрлех илсе пычĕ, уйрăм çынсем патĕнче хваттерте пурăнчĕç. Унтах вĕсен иккĕмĕш ывăлĕ çуралчĕ. Елизавета Ивановна университетра вĕренчĕ, историк дипломне тăван çĕре таврăнас тĕлелле илчĕ, кайран Шупашкарти 43-мĕш вăтам шкулта пенсие тухиччен ĕçлерĕ. Упăшки те пенсие тухрĕ. Вĕсем вара арăмĕн ялне Йĕпреç районĕнчи Тымара куçса кайрĕç. Георгий Тимофеевич килти хуçалăх ĕçĕпе те, ытти çĕрте те канăçсăрах тăрăшрĕ. Кам шутланă-ха ăна нихçан та хуйхăрнине çынна кăтартмасăр кăмăл-сипетне юлташĕсен умĕнче, халăх хушшинче ялан çĕкленӳллĕн кăтартса пурăннă маттур арçынна йывăр чир çапса антарасса... Çул укçипе йывăрлăх пулнă пирки эпĕ тӳлевсĕр (50 çухрăмран иртсен билет туянмалла) малтан Элĕке, унтан Вăрнара, кайран Йĕпреçе çитме çула тухнăччĕ. Пересадка вăхăчĕпе усă курса райхаçат редакцине кайрăм. Унта çитсенех мана Корнилов редактор хаçат тыттарчĕ. Тĕлĕннипе шаках хытрăм çакна вуласан:

ПАМЯТИ ТИМОФЕЕВА ГЕОРГИЯ

На 68 году жизни после продолжительной болезни скоропостижно скончался Тимофеев Георгий Тимофеевич, бывший председатель исполнительного комитета Аликовского районного Совета народных депутатов.

Он родился 11 января 1937 года в дер.Тушкасы Аликовского района. После окончания средней школы получил высшее образование по специальности агроном.

Тимофеев Г.Т. за долгую трудовую деятельность занимал ответственные посты в органах комсомола: инструктора, заведующего отделом комсомольских организаций обкома ВЛКСМ, 1 секретаря Канашского РК ВЛКСМ. После завершения Горьковской ВПШ работал заведующим сельхозотделом Шумерлинского ГК КПСС. В 1974 году переведен в аппарат ОК КПСС инструктором сельхозотдела, утвержден в 1977 году заместителем заведующего этого отдела.

5 июня 1979 года избран председателем исполкома Аликовского районного Совета народных депутатов.

В 1986 году был переведен начальником отдела в Государственный агропромышленный комитет Чувашской АССР, затем плодотворно трудился в республиканском Совете Всероссийского общества охраны природы, в Министерстве труда и занятости Чувашской Республики. На заслуженный отдых вышел в 1997 году.

Какие посты не занимал бы Тимофеев Г.Т., всегда трудился с большой ответственностью к порученному делу. Его отличали принципиальность, последовательность и исполнительность. Светлая память о тебе навсегда сохранится в наших сердцах.

Анисимов В.И., Сергеев Н.М., Куликов А.Н., Сергеева О.И., Николаева М.М., Измайлов И.Е., Удяков Ф В Давыдова Р.Д., Степанова К.П., Козлов П.С.»

Вăл Вăрнар ачипе, КПСС Чăваш обкомĕн пĕтĕмĕшле пай заведующийĕпе Герольд Кондратьевпа çывăхчĕ. 1980 çулта вăрнарсен акатуйне пырсан «Химик» стадионта ÿкерттернĕ сăн.

«Березка» пĕчĕк предприяти пуçлăхĕпе Валерий Николаевич Николаевпа паллашрăм. Вăл Çĕнĕ Шупашкарта, «Химпром-ра», 20 çул ĕçленĕ. Хими хĕçпăшалĕ тăвакан виççĕмĕш площадкăри лару-тăрупа паллаштарчĕ. Ун ячĕпе шухăша яракан статья

çыратăп. «Çылăха каçарттармаллах» ятлă вăл. Хаçат «Тĕпелĕ» валли Праски Витти, Хуначи Кашкăр-Волков çинчен çыртăм. Кĕркури Луч та пулăшать. Борис Иванов сăн ӳкерчĕксемпе тивĕçтерет. Материалĕсене машинкăпа килте хамăннах пичетлеме тивет.

Октябрĕн 20-мĕшĕ.

1-мĕш номер материалĕсене типографине памалла, анчах ответлă секретарь çук. Самойлов хăйĕн юратнă ĕçкĕ юррине юрлама пуçланă та, таçта çухалнă, «çилçунатсем» те çилçунатпах шыраççĕ. Ăна пула вĕсем те пичет графикĕнчен тухса ӳкме пулта-

раççĕ. Хаçат-журналăн та хăйĕн çирĕп технологийĕ-çке. Варсонофий Михайлова «Вучахран» васкавлăн чĕнсе илтĕм. Кăнтăрла иртсен «Тăван Атăлăн» корректор пÿлĕмĕнче макетсем турăмăр. Хамăрăн кунта пÿлĕм çук-çке. Материалсене типографине набора патăмăр. Вĕсем тÿрех укçа ыйтрĕç. «Союзпичетпе» те 1 пинлĕх килĕшÿ турăм. Счет уçас, хаçата регистрацилес ыйтусемпе райсовет ĕçтăвкомне, банка, налук инспекцине каллĕ-маллĕ хутлатăп.

Октябрĕн 22-мĕшĕ.

Самойлов хăйĕн ĕç пуканĕ çине çитсе ларайман-ха. Праски Виттин хаçат ятне çырнă хутне «Çилçунатăн» тĕп редакторĕ Анатолий Смолин Василий Алексеевич пÿлĕмне уçса илсе пачĕ. Пирĕн материалсене наборламан. Хаçат кăларасси пулмарĕ. «Чувашия» издательство директорĕ Павлов пĕрремĕш номĕре хăйсен хучĕпе пичетлесе паратăп, терĕ. Кивçенле çеç çав.

Октябрĕн 22-мĕшĕ, ытларикун.

Ирпе çиччĕрех издательствăна çитрĕм. Варсонофий Михалча та пыма кăларăм. Çынсем ĕçе анчах пыраççĕ. Издательство директорĕ те çывăрмасть, унта тĕрĕслесех çÿрет, тĕп инженерĕ Валентин Филиппов та пĕрлех. Павлов пирĕн пирки камантă пачĕ те... тăххăрта пуçланчĕ вара. Ира, хамăр ялти Йăван Ананьев комбайнер хĕрĕ, ответлă секретарьпе полосасене калăплать. Хамах корректура вулатăп. Радио валли хаçат обзорне хатĕрлерĕм. Производство пайĕнче заказ çыртартăм та, çăмăллăн сывласа ятăм: çул уçă! Вунсакăр сехет иртсен 8 полосине (страницине) те туса, вуласа пĕтертĕмĕр. Хура-шупка тĕспе 2 пичет листи («Коммунизм ялавĕн» калăпăшĕ) чухлĕ 3 пин экземплярпа тухать. Халран кайрăм. Ира «Эсир паян питĕ ывăнтăр пуль», - терĕ те, кулса пуçа çеç сĕлтрĕм.

Союз правленийĕн председателĕ, вăлах «Тăван Атăл» редакторĕ Хветĕр Агивер, хаçат туса пĕтернĕ хыççăн Ехрем хуçа çуртне пыма чĕннĕччĕ, укçа пур ман, тенĕччĕ, Варсунăн та пĕрремĕш номĕре çăвас кăмăл çуралнăччĕ. Шăнкăравларăм та, Агивер тытмарĕ, вара килелле кайрăмăр.

Килте Римма калать: «Кун пекех нушаланса ĕçлени мĕн тума кирлĕ-ши пире?» Эпĕ ăна: «Пысăк ĕç турăмăр-ха», - тесе лăплантаратăп. Вăл, «ухмах упăшкине», хăнăхнăскер, кăмăлтанах çур литр шурă эрех уçса ĕçтерчĕ. Чăваш халăхĕн «Илемне» çапла иксĕмĕрех чи малтан çурăмăр.

Октябрӗн 27-мӗшӗ.

Чӑвашрадио сасси ирех янӑратса ячӗ:

«Халӗ «Илем» хаҫата пӑхса тухатпӑр.

Паянтан чӑвашӑн «Илем» хаҫачӗ тухма пуҫларӗ. Ӑна Чӑваш Республика писателӗсен Союзӗ кӑларать.

«Ҫут тӗнчен хӗрӗх те пӗр илем, тени пур чӑвашӑн, - ҫырать Юрий Сементер поэт. - Илем тени кашни пулӑмрах, кашни ӗҫрех, кашни ҫынрах пытанса пурӑнать. Ҫав илем пӗр хитре хӗлхем пулса ҫуталтӑр-и, сумлӑ та пархатарлӑ халӑхӑмӑр чунӗнче сӳнми кӑвайт пулса ялкӑштӑр-и».

«Манӑн чӑваша ҫӳле ҫӗклес, чӑваша мӗнпур тӗнчипе кӑтартас килет, - тенӗ Праски Витти художник хӑйӗн тарӑн шухӑшлӑ хайлавӗнче. - Ӑсӑм-тӑнӑм, кӗлеткем тӑван халӑх туйӑмне туйнишӗн эпӗ хӗпӗртетӗп. Ҫавӑнпа та чӑвашӑн авалхи, хальхи пурнӑҫне аталануллӑ йӗр ҫинче ӳкерсе халӑха халаллатӑп. Хамӑн халӑхӑн йӑли-йӗркине, чӗлхине, историне, тӗнне сӑнарласа сыхласа хӑварассишӗн эпӗ яланах кӗрешме хатӗр. Наци культури, халӑх илемӗ нихҫан та пӗтмелле мар. Ҫав вӑхӑтрах манӑн хамӑр халӑх ҫитӗнӗвне тӗнче культурипе хутӑштарса вӑйлатас, пуянлатас, тӑван халӑха тӗнче картне лартас килет. Йӑхран-йӑха куҫса пыракан йӑла-йӗрке, пуян чӗлхепе искусство - тӑван халӑхӑн пуласлӑх шанӑҫӗ, ытти халӑхсем хушшине шӑтарса кӗмелли анлӑ ҫул. Ҫав ҫула уҫрӑмӑр ӗнтӗ эпир. Ӑна сарса, такӑрлатса ҫеҫ пырасчӗ. Пӗтӗм эртелпе. Патшалӑх шайӗнче», - тесе чӗнет вӑл.

Чӑваш илемӗн «Тӗпелӗнче» паян Республика Наукӑсен Академийӗн пуҫлӑхӗ, Чӑваш патшалӑх университетне ертсе пыракан Лев Патнелеймонович Кураков. Паллӑ ученӑйпа, общество ӗҫченӗпе, чӑваш халӑхӗ ячӗпе, ӑста Тимӗрҫӗ хӗрӗ - вилӗмсӗр чӑваш хӗрарӑмӗ амӑшӗн туйӑмӗпе чунтан калаҫать. «Хӑвӑрӑн йышлӑ академикӗсен те, чӑвашӑн пур академикӗсен те аки тарӑн пултӑрччӗ, тӗмӗ тулли тӗшӗллӗ пултӑрччӗ, халӑхшӑн усӑллӑ пултӑрччӗ», - сума сӑвать хисеплӗ ватӑ пурнӑҫ шкулӗнче чӑваш халӑхӗнчен «Пиллӗк» паллӑ илме тивӗҫнӗ паллӑ ученӑя.

«Чӑваш кашкӑрӗ те тӗнче кашкӑрӗ-ши?» - текен сӑнарлӑ ҫырӑва та питӗ кӑсӑкланса вулама пулать. Хаҫат унпа пӗрех Геннадий Волков академике ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе хӑй юратакан «Шелттӗм-шелттӗм йӑмра ҫулҫи» юрӑпа саламлать, ӑсчахӑн-ҫыравҫӑн чӑваш халӑхӗн ырӑ йӑли-йӗрки ҫинчен калакан юмахне пичетлет.

Тĕпел çĕнни-хĕнли

Юпа уйăхĕ чăваш халăхĕн культура уявĕ пулчĕ. Илемлĕх тĕнчин анлă уçлăхĕнче ялкăшса çунакан çăлтăрăн - Максимов-Кошкинский çăлтăрĕн çутийĕ пирĕн пит-куçа çĕр çул иртсен те ăшшăн çупăрларĕ. Пултаруллă актер, режиссер тата драматург хăйĕн менелникне халăхпа кĕтсе илчĕ. Анчах унăн пурнăçĕнче те савăнăçпа телей çеç пулман. Арăмĕпе иккĕшне те вĕсене ним айăпсăр хупса лартнă. Хаçатра Иоаким Степанович Изида ятлă хĕрĕ патне 1940 çулта Улатăр тĕрминчен çырса янă çырăвĕ пичетленнĕ.

Номĕрте Энтип Ваççин «Çутçанталăк илемĕ, илем çутçанталăкĕ», Михаил Ставскин, Андрей Алексеевăн литературăпа еткерлĕх, малашлăх çинчен çырнă статйисем, Чăваш театрĕсенчи çĕнĕлĕхсемпе паллаштаракан интервьюсем, Юрий Скворцов сăввисем, Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн председателĕн Агиверĕн «Чăтăм» умстатйи, Иван Яковлев чăваш халăхне хăварнă Халалран илнĕ тĕп шухăшсемпе сĕнӳсем пичетленнĕ. «Капкăн» журналăн Иван Мучи ячĕллĕ преми лауреачĕ Виталий Енĕш хыпкаланнипе Иван Мучи сатирик хăйĕн «Аван мунчине» хутса янă...»

«Илем» хаçат та акă тĕнче анлăшне саланчĕ хăйĕн чăваш сассипе.

«Тăван халăхăмăра çак кирлĕрен те кирлĕ хаçата тĕнчене килтерес шухăш-ĕмĕт пурнăçланчĕ», - тенĕ «Чăтăм» статьяра Федор Георгиевич. - «Илем» тухма тытăнчĕ. Халлĕхе вăл ырă кăмăллă, енчĕкре укçа пур пархатарлă çынсен шучĕпе кăна калăпланать-ха. Хаçатçисем те çук. Редакторĕ кăна пур. Вăл - чăваш писателĕ Владимир Прокопьевич Кузьмин. Тăван республикăра пурăнакан хаçат-журналсенче нумай вăй хучĕ вăл. Çавăнпа вĕсен тертне-телейне питĕ лайăх пĕлет. Писательсен Союзĕн правлени членĕсем те шанчĕç ăна. Кӳлĕннĕ йывăр лава ăнăçлă туртса пыма мехел сунчĕç, пултарулăхăмăр çитнĕ таран пулăшма пулчĕç. Пурте пулăшсан, хаçат тăван культурăн пĕтĕм çыннисен хаçачĕ пулĕ».

«Илеме» «Чебоксарские новости» «Духовная газета чувашского народа» тесе тата ăна киосксенче сутма тытăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Радиопа хаçатсен тĕп хыпарĕсене итленĕ хыççăнах издательствăна вĕçтертĕм. Хаçат-журнал экспедицинче «Илем» выртать. 200 экземплярлă пĕр пачкине хул хушшине хĕстертĕм те «Роспечать» предприятине ларса кайрăм. Унта хаçата пӳлĕм хуçине Юрий Александрова кăтартрăм. Пичете париччен уйрăм статьясемпе тата полосасемпе çеç ĕçленĕ пулсан, халĕ эпĕ хам та хаçатăма саркаласа пăхса тухрăм. Мĕн чухлĕ вăй, вăхăт пĕтернĕ уншăн! 2000 экземпляр йышăнаççĕ: Шупашкара - 1200, районсене - 800. Килĕшӳ туса, разнарядкăсене экспедицине леçрĕм. Унтан, Пичет çуртĕнчен, Писательсен Союзне антăм. Аялти хутра Хветĕр Агивер, Хветĕр Уяр, Михаил Ставский тата Çамрăксен театрĕн директорĕ Виталий Николаевич Алексеев лараççĕ.

- Акă, хаçат çитрĕ, - терĕ те Агивер, тӳрех алă пачĕ. - Маттур. Пысăк ĕç турăмăр.

Вĕсем мана çĕркаç вуннăччен кĕтнĕ иккен, хăйсем телефонне кăларнă пулнă та, ун çинчен маннă, çавăнпа эпĕ шăнкăравласа тытаймарăм.

Хв.Уяр кайсанах алăка питĕрчĕç те, Ставский эрех ярса пачĕ. Мана валли хăварнă. Унтан Агивер Виталий Николайча лавккана чуптарчĕ.

Чăннипех савăнăç кунĕ пулчĕ вара. Çуралнă «Илеме» алла тытсах шыва кĕртрĕмĕр.

Ноябрĕн 17-мĕшĕ.

Çитес номерсен материалĕсене çыратăп, пичетлетĕп, пичетлеттеретĕп. Мана пулăшса вăхăта ирттернĕшĕн Варсонофий Михайлова хуçи чĕпĕтсе илнĕ те, ответлă секретаре «Халăх шкулĕ» журналăн ответлă секретарьне Илле Журавлева явăçтарас терĕм. Кăштах пыр чӳхемелĕх нухрат пултăр тесе хăйех ыйтрĕ те, шанчăклă ачах, терĕм. Кунĕпех номер туса лартăмăр.

2-3-мĕш номĕрсене пĕрлештерсе кăларма издательствăна 150 пин куçармалла. Кассăра 2 пин çеç юлчĕ. Ленин тата Калинин районĕсен администраци пуçлăхĕсем В.П.Степановпа И.А.Баскаков çур миллион пама пулчĕç. Чылайăшĕсем çăмах вырăнне сăмах кăна хыптараççĕ-ха. Кашни кун çав ыйтупа чупатăп, йăлăхтарсах çитерет. Юхма Мишши мĕнле чăтнă-ши, чăтать-ши тесе тĕлĕнетĕп. ЧР Аслă Канашĕн Кураков депутат ертсе пыракан финанс комиссине «Илем» кăлармашкăн çитес çулта 13 миллион кирлĕ, тесе хут çырса ятăм.

Ноябрĕн 24-мĕшĕ, юнкун.

Ирех тăрса хăш-пĕр материалсене машинкăпа çапрăм, типографине çитсе ĕçе тытăнтăм. Римма Ильинична та пулăшма

пыратăп терĕ, вуннăра çитрĕ. Пĕрле корректура вулатпăр. Канмасăр тенĕ пекех ĕçлерĕмĕр. 21 сехет тĕлне 16 полоса туса патăмăр. Икĕ тĕспе çапма. Полиграфистсем йăлăхсах çитрĕç пулас. Арăм та калать: «Мана ку ĕçшĕн миллион парсан та килĕшместĕп чакаланса ларма». Хамăр урараи ӳкес пек ывăннă пулин те, ыран Чăвашрадио «Илем» малалла чечекленни çинчен мĕнпур чăваша пĕлтерет. Обзорне-тишкерĕвне хатĕрлесе унта леçрĕм. Манăн шанчăкăма ĕненсе произодство пайĕ пичетлеме наряд çырса панă. Союз правленийĕнчен çеç хаçат пирки интересленекен те пулмарĕ, номерĕсене союз менелникне халалланă пулин те...

Пĕрремĕш страницăна мĕнле илемлĕрех тăвас пирки Праски Виттипе тĕл пулса канашланăччĕ. Вăл ун валли чăваш тĕррипе илемлетнĕ ӳкерчĕк илсе килчĕ. Укçа ыйтмарĕ. Çавă наци илемĕ, тĕсĕ парать ĕнтĕ малашне хаçата. Ăна пуçласа лартрăмăр, пĕрремĕш страницăна.

Кăларăм Константин Иванов классикĕн сăнĕпе, «Хальхи самана» сăввипе, «Чăвашăн ăсĕ - хурăç пул, Ăспа чул кас та вут кăлар!» çулăмлă чĕнĕвĕпе уçăлать. Унтах - Чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн вилĕмсĕр сăмахĕсем: «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» Ăсчах шухăшне малалла аталантарса, «Березка» пĕчĕк предприяти пуçлăхĕ Валерий Николаев хамăр кил хушшинчех хими хĕçпăшалĕ туса кăларни Чăваш республикишĕн, халăхшăн мĕн тери пысăк хăрушлăх пулни çинчен «Анчах... эпир пулнă, пур, пулатпăрах-ши? Çылăха каçарттарасчĕ» шухăшлавлă статья пичетленĕ.

«Вăхăт çитĕ, Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ. Хĕртнĕ хурçă пек пулĕ», - янăрать хаçатра Çеçпĕл Мишшин çитмĕл виçĕ çул каялла хĕмлентернĕ хайлавĕ.

«Тĕпеле» ку хутĕнче СССР халăх артисткине Вера Кузьминана чĕнтĕмĕр. «Калас сăмахăма каласа пĕтермен-ха халăха» тесе искусство вăйĕ çинчен хавхаланса канашлать вăл вулаканпа.

Ноябрĕн 20-мĕшĕ.

Илле Журавлевпа 2-3-мĕш номĕрсене хатĕрлесе çитертĕмĕр, анчах набора йышăнмаççĕ. 150 пин малтан куçармалла. Кĕсйи пушă. Писательсен Союзĕ 70 çул тултарнă тĕле правление Совмин 1 миллион куçарса парать. Çав шутран 200 пинне хаçат валли хăпăтса илесшĕн те...

Ноябрĕн 22-мĕшĕ.

Хамăн дипломати маçтăрлăхĕпе усă курса материалсене пурпĕрех набор цехне çитертĕм. Журавлевпа хаçат макечĕсене бело-

вик çине куçарса çур кун ирттертĕмĕр. Ира калăплама пуçларĕ. Кĕçнерникун 16 страницăпа кăларатпăрах, тесе мастерне тĕлĕнтерсех пăрахрăм. Вăл шанчăксăррăн пуçне сулать.

«Коммунизм ялавĕнче» «Илем» хаçатăн тĕп редакторĕн Владимир Кузьминăн «Чăваш хĕвелĕ пек çутаттăр, ăшăттăр» статйи пичетленсе тухрĕ:

«Чăваш хăйĕн сăн-сăпачĕпе, авалхи асамлă тумĕпе, ытарайми кăмăл-туйăмĕпе, пуян чĕлхи-çăварĕпе, юрри-ташшипе илемлĕ. Нумай ĕмĕрсем хушшинче çухалмасăр чечекленсе ÿснĕ çав пуянлăх чĕрĕлĕхĕ - пирĕнте хамăрта. Кашни чăваш - хăй тĕнче илемĕ. Çутçанталăк панă вăйпа, несĕлсен ăс-хакăл аталанăвĕпе вăл хăйĕн илемне ытти халăхсен илемĕнче хăйне евĕр уçăмлăн та ыррăн кăтартма пултарнă.

Акă чăваш халăхĕ валли тепĕр пысăк парне çуралчĕ - ăсхакăл хаçачĕ тухма пуçларĕ. Искусство, литература, еткерлĕх, малашлăх ыйтăвĕсем тĕп вырăнта пулнă май, ăна «Илем» ят патăмăр. Çав сăмахсен пуçламăш саспаллийĕсенчен ИЛЕМ сăмах тухнăран çеç мар, искусство, литература, еткерлĕх, малашлăх чăннипех чăвашăн пурнăç илемĕ пулса тăнăран питĕ вырăнлă пек ку ят.

Этем, кил-йыш, пурнăç, çутçанталăк, тĕнче илемне хаçатра пичетленекен очерксенче, тĕрленчĕксенче, статьясенче, сăвă-калавра, ÿкерчĕксенче, юрăсенче туйса ăша хывма пултарăр, хисеплĕ вулакансем. Халăхăн чечекленекен пултарулăхĕ сцена ăстисен, çыравçăсен, ÿкерÿçĕсен, кĕвĕ кĕвĕлекенсемпе кĕвĕ-юрă шăрантаракансен сăнарлăхĕнче уççăн палăрĕ. Халăх пултарулăхĕн ĕмĕртен ĕмĕре куçса пыракан илемĕ, ăсхакĕл культури наци пуянлăхĕ, чăвашăн тĕнчери ырă сăнĕ пулнине анлăн, хитрен кăтартса парасшăн, сăнарлă чĕлхепе ăна вулакан чун-чĕрине ăнланмалла çитересшĕн.

Чăваш халăхĕн культура еткерлĕхĕ ытти халăхсенни пекех-и, вăл мĕнле йывăрлăхсемпе аталанса пынă, халĕ ăна çĕнĕрен чĕрĕлме, чечекленме мĕн тата кам чăрмантарать, çав чаркăчсене сирсе ямашкăн пирĕн вăй-хал çитет-ши, йывăрлăхсене чăтса, тÿссе ирттерме пултарайăпăр-ши, хамăрăн тăван культурăна вăйлатмашкăн кам çине шанса лармалла-ши пирĕн,уншăн чи аслă пуçлăхран пуçласа хамăр таранах куллен çине тăмалла мар-ши, вăтанмасăрах хастаррăнрах кĕрешмелле мар-ши... Çак ыйтусем тавра хĕрÿ калаçу пуçарасшăн хаçатра.

Этемĕн ăсхакăл, шухăш-туйăм тĕнчи мĕнпе хитре-ши? Кил, картиш, урам, ял, хула илемĕ чуна туртать-и? Ĕç кăмăла уçать-и, ĕç вырăнĕ, ĕç тавралăхĕ хавхалантарать-и? Çыннăн ăс-тăнне, йĕрки-

тирпейне, чысне, ят-сумне пуянлатса ӳстерес çĕрте клубсем, культура çурчĕсем, библиотекăсем, музейсем, театрсем, пултарулăх ушкăнĕсемпе союзĕсем, хаçат-журнал, издательствăсем, шкулсемпе лицейсем, училищĕсем, аслă шкулсемпе техникумсем, сывлăх учрежденийĕсем, физкультурăпа спорт организацийĕсем, чиркӳсем мĕнле пархатарлăх кӳреççĕ-ха?

Чăвашăн паян кунхи культури, литературипе искусстви, халăха вĕрентес ĕçĕ, науки ытти халăхсеннипе, ют çĕршывсеннипе мĕнлерех çыхăнуллăн аталанать-ха? Чăваш çав аталануран мĕнле усă курать? Чăваш нацийĕн, культурин, литературипе искусствин малашлăх пур-ши?

Хаçат çак ыйтусене, пулăмсене, вулакансем пулăшнипе, йĕркипе çутатса тăрĕ.

Экономика, экологи, обществăпа политика, социаллă пурнăç ыйтăвĕсем кун йĕркинчен каймĕç. Вĕсем валли страницăсенче ялана тивĕçлĕ вырăн тупăнĕ. Вĕсем çинчен эпир интереслĕрех, сăнарлăрах, танлаштаруллăрах, тĕпчевлĕрех çырма тăрăшăпăр.

Хаçатра, тӳррипе илсен, этем чунĕ уççăн курăнтăр, çын илемĕ палăртăр, чун уççийĕ çиеле тухтăр. Пĕрне-пĕри ятласа, кӳрентерсе, сивлесе, кĕвĕçсе тарăхтармалли вырăн пулмĕ «Илем», таса та уçăмлă чĕлхепе калаçмалли, вăрçмасăр тавлашмалли чăваш тĕпелĕ - халăхăн ИЛЕМ тĕпелĕ пулĕ.

«Илем» - чун илемĕ, кил илемĕ, çемье илемĕ пултăр тесен пирĕн пайтах вăй хума тивет-ха. Çапах та, пĕтĕм чăваш халăхĕ пулăшсан, хаçат çав тĕллеве пурнăçлĕ. Халлĕхе питĕ йывăр-ха. Çара, тап-таса вырăнта шăтса тухрĕ «Илем». Вăл халăх чунчĕрине ăшăттăр тесе патшалăхран нимле пулăшу та пулман-ха.

Пурте калаççĕ, чăваша та ăсхакăл хаçачĕ - культура хаçачĕ кирлĕ, шутсăр кирлĕ, теççĕ. Шут шăрçине шаклаттарса пус çумне пус хушакан çеç курăнасшăн мар-ха халлĕхе патшалăх тытăмĕн тата Министрсен Канашĕн ĕçлĕ пулĕмĕсенче.

Хаçатăн кил вырăнне те пĕлтертĕмĕр ĕнтĕ. Вăл - Иван Яковлев ячĕпе хисепленекен аслă урамри Пичет çурчĕ. Ĕç вырăнĕ кăна çук. Улттăмĕш хутри вăрăм коридор çеç. Юлташла унта-кунта хĕсĕнкелесе кĕрсе çеç ĕçлекелетпĕр. Тавах «Чувашия» издательствăна ертсе пыракансемпе унта ĕçлекенсене. Пĕрремĕш номĕре кăларма вĕсем хапăлпах пулăшрĕç.

Тăван чăваш халăхĕ! Чăваш халăхĕпе туслă, ăна юратакан, хисеплекен, унпа юнашар ĕçлесе пурăнакан ытти халăх çынни! Эсир пулăшасса, эсир чăваш халăхĕн ăсхакăл хаçатне ура çине

тăратса, илем тĕнчинче пĕрле савăнасса ĕненетпĕр. «Илемĕн» енчĕкĕ уçă. Уçă кăмăллă кашни çын унта мĕн чухлĕ те пулин укçа ярасса шанатпăр.

Пулăшас текен организацисем пур-ха, çапах ыттисен те «Илем» еннелле илемлĕн çаврăнса пăхасчĕ. Çав хушăрах хаçатне те çырăнасчĕ. «Илеме» мĕн чухлĕ ытларах саратпăр халăх хушшине - çавăн чухлĕ нумайрах усă паратпăр халăх культурине çĕклеме. Çур çуллăха çырăнма 1851 тенкĕ çеç кирлĕ. Индексĕ паллă, «Роспечать» каталогĕнче 54844 номерпе тăрать. Кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнма пулать.

Чăвашла тухакан ытти хаçатсемле пĕрле «Илем» те хамăрăн пуян чĕлхепе тăванлĕх, хурăнташлăх, ыркăмăллăх туйăмне халăхра вăратса вăйлатма пулăшĕ тесе шутлатпăр эсир ăна çырăнсан тата вăй илме май килнĕ таран пулăшсан.

Туслă, илемлĕ пулар. Чăваш хĕвелĕ яланах çутаттăр, ăшăттăр пире».

Хаçата алла илсен, вулакан писательсен Союзĕн кун-çулĕ тата лару-тăрăвĕ, унта камсем-камсем тăнине тата камсене-камсене хисеплĕ ятсем, орден-медаль панине, Вырăс писателĕсен ассоциацийĕнче, Чăваш писателĕсен союзĕнче камсем пулнине, литературăпа искусствăри çĕнĕлĕхсемпе паллашса пĕлме пултарать. Кăçалхи раштавăн 12-мĕшĕнче пирĕн Чăваш патшине - президента суйламалла. Ун умĕн эпĕ «Лапшу Çтаппанĕ те Чăваш патши пулмаваскать» памфлет çыртăм. Юрий Сементер Чăваш халăх художникĕн Николай Овчинниковăн пултарулăхне тишкернĕ. Михаил Ставский те тусне, Николай Стурикова, «Ырми ĕçчен ялан шыравра» тĕрленчĕкпе халăх умне уççăн кăларать. Ватă çыравçăсенчен Филипп Андреев «Малашлăха шанса ĕçлерха, тăрăшар-ха», тесе пурне те туслăн пурăнма чĕнет. Вуламалли, шухăшламалли, тавлашмалли хаçатра пурах. Уншăн ахальтен ыйхă вĕçтермерĕм пуль, тесе хавхаланатăп.

Телефонпа каласса саламсем йĕркелерĕм:

«Çĕрпелпе Хурăнсур Çармăс тата Кайри Тукай ялĕсенче чăваш литературипе искусствине питĕ юратаççĕ. Чăваш писателĕсемпе, художникĕсемпе, артисчĕсемпе, композиторĕсемпе пирĕн тахçанхи çирĕп туслăх пырать. Çавна пулах Çĕрпелти культура çуртĕнче художество галерейи уçрăмăр. Ял культурине аталантарма пире çав туслăх нумай пулăшать.

Чăваш Республики писателĕсен Союзĕ чăваш халăхĕн ăсхакăл хаçачĕ «Илем» кăларма пуçланине эпир ырласа кĕтсе илтĕмĕр.

Çамрăк хаçата пулăшма пулатпăр. Çав вăхăтрах колхозсене, район администрацийĕсене, промышленность предприятийĕсене, ассоциацисемпе предпринимательсене хаçата мĕн май килнĕ таран пулăшма чĕнсе калатпăр. Уйрăм çынсен те ку патриотла ĕçрен аякра юлас марччĕ.

Хаçат тухнă ятпа тата Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн менелникĕ ячĕпе Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн правленине, «Илем» хаçат редакцине хресченле ырă туйăмпа саламлатпăр, хаçатăн ĕмĕрĕ вăрăм та çулĕ такăр пултăр тесе шанатпăр.

Вăрнар районĕнчи «Янгорчино» колхоз тата «Хорнзор» юлташлăх правленийĕсем».

«Хаçат кирлĕ - ăна пулăшмаллах!» текен рубрика-чĕнӳ уçас терĕм. Акă камсене калаçтартăм чи малтанах, паллах, хамăн ăспуçран тухнă сăмахсемпе:

«Тăван халăх искусстви маншăн тăван кил чунĕ пекех. Эпĕ пĕтĕм пултарулăха чăвашăн аваллăхне хамăн курăм-туйăм урлă пурте ăнланмалла, пурте ăмсанмалла, пурте савăнмалла уççăн, сăнарлăн кăтартса парас йĕрпе - несĕлсен йĕрĕпе тытса пыма тăрăшатăп. «Илем» хаçата та çав майлах пулăшатăп.

Эпир пултарулăх сĕмĕпе пулăшăпăр-ха. Çапах, ман шутпа, культура, литературăпа искусство ĕçченĕсен кăна мар (вĕсем хăйсем те çĕтĕк çăпаталлă), юлашки çулсенче пуйса кайнă, юлашки вăхăтра миллионшар, миллиардшар тенкĕ укçапа усă курма пултаракан ырă кăмăллă чăваш ачисем, ытти халăх ачисем те, чăваш халăхĕн ăс-хакăл хаçатне ура сырма пулăшмалла пек. Наци культурине вăйлатма пулăшнăшăн кашни усă çынна чăваш халăхĕ ĕмĕрĕпех числăн асăнĕ.

В.Агеев, Чăваш халăх художникĕ.»

«Илем» тухма пуçлани чăваш халăх историйĕнчи паллă тапхăр. Халăхăн çыруллă историйĕ пуçланнăранпа ятарлă ăс-хакăл хаçачĕ пирĕн пулман-ха. Куншăн пурин те пĕрле савăнмалла.

Анчах та, эпир пĕлнĕ тăрăх, редакци питĕ нушаллă йывăрлăхра иккен. Хаçат кăларма укçа-тенкĕ те, хут та çук. Нивушлĕ Республика Аслă Канашĕпе правительстви наци культурин массăллă кăларăмĕ валли нимĕн те тупма пултараймасть-ши?

А.Алексеев, Чăваш наци конгресĕн Аслă Канашĕн членĕ».

«Тепĕр чухне шухăшла-шухăшла тĕлĕнетĕп. Мĕншĕн-ха пирĕн культура ыйтăвне чи хыçала хăвараççĕ? Мĕншĕн ăна пурнăç ыйтнă шайра тытса тăма хăраççĕ? Ахаль те йĕркерен тухса кайрăмăр

ĕнтĕ. Ĕçĕнче те, пурнăçĕнче те, çынсен хутшăнăвĕсенче те ним латти çук. Ăсхакăл хавшать, культура сӳнсе пырать. Çав хушăрах пирĕн чăваш тĕнчинче тепĕр илем çăлтăрĕ çутăлса кайни маншăн, ĕмĕрĕме халăх культурине çĕклессишĕн ирттернĕ ватă çыншăн, çĕнĕрен çуралнă пекех туйăнчĕ. «Илем» хаçат мана пĕрремĕш номерĕнченех тыткăнларĕ. Ăна тата интереслĕрех кăларса тăрасчĕ. Унăн малашлăхĕ пысăк пуласса шанатăп.

Хаçата кăларса тăрассине патшалăх хăй аллине илсен, чăваш халăхĕ республикăна ертсе пыракансене мĕн тери тăванла тав тунă пулĕччĕ.

И.Иванов,
Вăрнар районĕнчи Хурăнсурти библиотека
заведующийĕ, ЧР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ».

«Халĕ эпир ку таранччен курман суйлав кампанийĕ хĕрсе пырать. Эпир пĕрмай суйлама хăнăхрăмăр пулас. Çирĕп йĕркерен пăрăнса вĕçĕмсĕр кĕл çинче пăрçа шыратпăр. Çав хушăрах хамăр камне те, хамăр ăçта çуралнине те, хамăр кам пулнине те манатпăр. Эпир, чăвашсем, чăваш чунлĕ пуласшăн, чăваш юнлĕ юласшăн. Пире нимле ултав та, нимле çаптаркка та кирлĕ мар. Пире хамăр пуçра тăма хамăрăн чăн-чăн чăваш чунлĕ Чăвашах кирлĕ.

Халĕ, Чăваш президенчĕ (патши), Раççей Аслă влаçĕн депутачĕсем пулассишĕн пултаруллă миçе çын кĕрешĕве тухмарĕ-ши? Миçе кандидат, хăйĕн малашлăхĕшĕн (пуç пулассишĕн) ăнтăлса, халăхăн, республикăн вуншар миллионĕсене пустуй пĕтерсе патшан халлĕхе çук ылтăнланă çемçе пуканĕ çине меллĕн те мăнкăмăллăн кĕрсе ларма ĕмĕтленет. Анчах çав ĕмĕт пĕр чăвашшăн çеç пурнăçланма пултарать-çке. Турă пулăшнипе, халăх шаннипе.

Çавăнпа ман шухăшăм çапла: ан юхтарăр-ха усăсăр халăх укçине! Эсир, хăвăра хăвăр шансах пĕтерейменнисем, тен, хăвăршăн тăккаламалли укçана хăвăр ялти е хулари культурăна çĕкленĕ çĕре, е «Илем» хаçата кăларнă çĕре яма тăрăшăр-ха, тархасшăн! Çитет пуль сире ачи вăййи выляса.

А.Павлов, «Шупашкарти пир-авăр
комбиначĕ» ассоциаци пĕрлешĕвĕнчи сварщик».

Ноябрĕн 25-мĕшĕ, кĕçнерникун.

Ирех типографиневаскарăм. Хайхи мастерпа тĕл пултăм. «Чăнах та пурнăçлама пултаратăр иккен эсир хăвăр мĕн шухăшланине, саламлатăп», - тесе ăшшăн алă пачĕ. «Çапла ĕçлемелле ăна!» - куларах хуравларăм. Хаçат-журнал экспедицийĕнче (ун

урлă пичет продукцийĕ пурте пĕтĕмпех тĕнчене саланать) пире валли хăварнă 5 пачка выртать - 976 экземпляр. Хаçат тухнă!

Пĕр вуннăшне илсе тухрăм та, «Березка» (Главпочтамт умĕнчи çуртра) директорне Николаева кĕртсе патăм. Вăл пулăшать, ăна хавхалантармаллах.

Ёнерпе паян Госкомиздатра «Российская книга» семинар ирттерет. Унта Раççей пичетпе информаци министрĕн заместителĕ килнĕ. Министерствăран пулăшу ыйтса ун валли çыру хатĕрлерĕм, ăна Госкомиздатăн председатель заместительне Галкина паянхи номĕрпе пĕрле парса хăвартăм.

Хаçата малалла регистрацилес ыйтупа районадминистрацинче вăхăт ирттертĕм. Апат çиме те май çук. Икĕ сехетре Союз правленийĕн ларăвĕ пуçланчĕ. Мана хаçат пирки калаçтарчĕç. Юбилей тума панă миллионран 200 пинне «Илем» валли уйăрма йышăнчĕç.

Ехрем хуçа çуртĕнче Союз правленийĕн пуçлăхĕсемпе Вырăс писателĕсен ассоциацине ертсе пыракан Вениамин Погильдяков хушшинче пуçланнă вăрçă-харçă хĕрсе пырать. Агивер иккĕмĕш хутра, вăл виççĕмĕш хутра лараççĕ. Погильдяковĕ лешсене хурласа пĕрмай хаçат çине темтепĕр сăрмаклать. Питĕ усал кăмăллă çын.

Ноябрĕн 26-мĕшĕ.

Чăваш академи драма театрĕнче Вера Кузьмина артисткăн пултарулăх касĕ пулчĕ. 70 çул тултарчĕ. Агивер арăмĕ Валя Константинова тата Союз технички Нина «Илем» номерĕсене сутрĕç. Вали: «Агивер хаçат кăларнă! Агивер хаçатне туянăр!» - тесе сасă сапса çӳрет. Манăн арăм та сутма пулăшрĕ вĕсене. Анатолий Розов художник 30 экземпляр туянчĕ, хăйĕн юбилей выставки çинчен материал пур-çке.

Выçăлла ирттернĕ кун та питĕ кăмăллă пулчĕ: маншăн та, Римма Ильиничнашăн та. Пĕтĕм савăнăçне, хуйхи-суйхине пĕрле палăртса, тӳссе ирттерме хăнăхнă-çке.

«Хаçата пулăшмаллах» рубрика валли хам çырса тата çак авторсене хутшăнтартăм:

«Тархасласа ыйтатăп. Редакцире ĕçлекен ырă кăмăллă çыравçăсене манран Раштав уявĕ ячĕпе ял саламĕ йышăнма ыйтатăп. Сире ĕçре те, кил-йышра та савăкпа туслăх тата ăнăçупа телей пултăр. «Илемĕн» тĕп редакторĕ çырнă «Чăваш хĕвелĕ пек çутаттăр, ăшăттăр» хайлав-чĕнĕве «Хыпарта» тата райхаçатра вуланă чух куççуль тухрĕ: витĕмлĕ çырнă!

Анчах... вăл çырнинчен мĕн усси? Чăваш ăсхакăлĕн хаçатне кăлармашкăн пурпĕрех Чăваш патшалăхĕн правительстви пулăшмасть иккен. Япăх. Питĕ кӳренмелле. Çуралнă хамăр пепкеме юри асăрхамасăр хăварнă пекех ку. Эпĕ, аллă çула яхăн тăван халăх валли çыракан, чĕрĕк ĕмĕр вырăнпа выртакан чĕрĕ чун, хамăрăн çамрăк хаçата аталантарма, вăйлатма Чăваш Президентĕнчен тархасласах ыйтатăп: Культура хаçачĕ пире питĕ кирлĕ!

Эпир «Илеме» çырăнтăмăр, ялта та, Çĕмĕрлере те çывăх çынсене çырăнма пулăшрăмăр, Шупашкарти тăвансене ăна çырăнмашкăн пур-çук укçана ярса патăмăр. Редакцие сăвăсем яратăп. Вĕсене пичетлени те маншăн çав тери мăн савăнăç пулĕ.

Анатолий Афанасьев,
Раççей писателĕсен Союзĕн членĕ,
Çĕмĕрле районĕнчи Вăрман Тăван ялĕ.

Аякра юлмастпăр. Вăрнар районĕнчи «Янгорчино» колхоз тата «Хорнзор» юлташлăх правленийĕсем Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн «Илем» хаçатне кăларса тăмашкăн колхозсене, совхозсене, юлташлăхсене, район, хула администрацийĕсене, промышленность предприятийĕсене, ассоциацисемпе предпринимательсене, учреждениcене, уйрăм çынсене Чĕнсе каланине ырлатпăр («Илем», 1993ç., 2№).

Хаçат литературăпа искусство тата культура ыйтăвĕсене çеç мар, пурнăçра хальхи вăхăтра чи кирлĕ те кăткăс ыйтусенчен пĕрне - экологи ыйтăвне - паллă вырăна хуни пире питĕ килĕшрĕ. Ку енĕпе редакцие хамăр енчен çырса та, укçа-тенкĕпе те пулăшăпăр. Хамăра хамăр сыхласа хăварассишĕн, хамăрăн культурăна тĕнче шайне çĕклессишĕн пирĕн хамăрăнах пĕрле алла-аллăн тытăнса çине тăмалла. Атьăр, аякра юлар мар çак пархатарлă та патриотла ĕçрен. Пулăшар «Илеме»!

Валерий Николаев,
«Березка» пĕчĕк предприяти директорĕ.
Шупашкар.

Гонорарне - хаçат кăларма. Çак çут тĕнчене çуралса çын пулни кăна мар, хамăр тăван халăхăн ăсхакăл хаçачĕ иртнĕ çул вĕçĕнче Чăваш çĕрĕ çине юпа яни те маншăн телей.

Эпĕ вăрçăченех çырма пуçланă пулин те, пичетленме йывăр пулнă мана. Шутласассăн, мана çеç-и, - нумай-нумай чăваш ачине. Вуншар çул хушши хаçат-журналта, кĕнеке издательствинче пĕрешкел хушаматсем хуçаланчĕç. Юлашки вăхăтра кăна, сăмах

ирĕклĕхĕ уçça тухнă май, пирĕншĕн те çул уçăлчĕ. çĕнĕ изданисем курăнса кайрĕç. Вăл шутра - «Илем» те. Ман шутпа чăваш хаçачĕ мĕн чухлĕ ытларах - чăваш сăмахĕ çавăн чухлĕ ытларах çитет Чăваш патне.

«Илеме» ырлатăп. Редакци авторсене суйламасть. Лайăх произведенисене хапăлласах йышăнать. Эпĕ те унăн яланхи авторĕ ĕнтĕ.

Манăн хаçата пулăшас килет. Унта пичетленнĕ хамăн произведенисемшĕн тивекен гонорара пĕтĕмпех хаçат кăларнă çĕре хăваратăп, ытти авторсене те ман пекех тума чĕнетĕп.

Филипп Андреев, писатель.»

Ноябрĕн 30-мĕшĕ.

Елена Александровна Ананьева бухгалтера хаçата регистрацилеме хатĕрленĕ документсене Ленин район администрацине леçтертĕм. Уншăн 31 пин тӳлемелле. Касса пушă та, килти Римма Кузьмина «банкиртан» 40 пин кивçен илтĕм.

Çамрăксен театрне халалланă 4-мĕш номĕре хатĕрлетпĕр. Театрăн литпай пуçлăхĕ Петр Кузьмич Андреев пулăшма килĕшрĕ. «Вучахра» пĕрле ĕçленĕ Василий Кошкин-Кервен ман пата ĕçлеме пычĕ. Ку номĕре вăл тăвать. Ăна мĕнпе тӳлемелле? Ку таранччен хам та, бухгалтер та ĕç укçи илсе курман.

Декабрĕн 2-мĕшĕ.

Шупашкар хулинче Ленин район администрацийĕ пирĕн хаçата тинех регистрациленĕ, ăна ĕнентерекен свидетельство пачĕç. «Редакция газеты «Илем» - предприятие общественной организации Союза писателей Чувашской Республики» ятлă ĕнтĕ пирĕн организаци. Патшалăх номерĕ: 3684011197. Адресĕ: 428032, г.Чебоксары, у.Володарского, 10, тел. 22-03-02.

Халĕ ĕнтĕ эпир саккун йĕркипе пенси фондне те, налук инспекцине те, статуправленине те, медицина страховани фондне те редакцире ĕçлекенсемшĕн укçа куçарса тăма тытăнатпăр. Вĕсем пире çирĕп тĕрĕслесе тăраççĕ. Карл Маркс урамĕнчи Коммерци банкĕнче счет уçрăмăр: 200609598, МФО 286017 49706701, ИНН 2128006553. Тархасшăн, такамран та укçа кĕтетпĕр çак счетпа, чăваш халăхĕн ăсхакăл хаçатне кăларма.

Манăн пулас заместитель, культура пайĕн заведующийĕ Кервен, ТЮЗ артисткисем астарнипех пулĕ, театртан тухма пĕлмест, çурчĕ хамăр кут хыçĕнчех те, интервью хыççăн интервью илет ăстаçăсенчен. Килне çакланмасăр театр вăрттăнлăхне пуçа чиксех тĕрĕслеме хатĕр. Мĕн тумаллине ăста туса килчĕ

унтан. Агивер те пĕрле майлаштарма пулăшрĕ. Василий Гаврилович, хăйĕн пултарулăх хăвачĕпе хăпартланнăскер, укçа çинчен те манса кайнă, «Ах, çав сар артисткăн шалти туйăмне вăрттăнлăхра уçса пăхаймарăм...» - тесе чĕлĕм туртакансем çумĕнче хашлатса тăрать.

Декабрĕн 16-мĕшĕ.

Çамрăксен театрĕ 60 çул тултарнине халалласа ятарлă 4-мĕш номер кăлартăмăр: Илле Журавлев, Вася Кошкин тата эпĕ. Театр директорне Виталий Алексеева типографине чĕнсе вулаттартăм. Ку ĕнер пулчĕ. Хаçатшăн вăл «Чувашия» издательствăна 450 пин тенкĕ куçарса паратăп, терĕ.

Çамрăксен театрĕнче (Гагарин урамĕнчи филармони çурчĕ) паян Чăваш республики писательсен Союзĕн 70 çулхи менелникне ирттертĕмĕр. Унта «Илеме» те кăштах сутрăмăр. Уяв каçĕн сценарине, концерт программине Чăваш драма театрĕн режиссерĕ Николай Корчаков хатĕрлерĕ. Союз правленийĕн председателĕн çуммисем Николай Кушмановпа Энтип Ваççи сахалтарах тăрăшрĕç пулас, Агиверĕн пысăкрах ĕçсем пулчĕç, çавăнпа паллă куна паллă тумалли йĕрке енчен вăйлах тухмарĕ унăн.

Гагарин урамĕнчи Муза çуртне хула çыннисем кăна мар, районсенчен те самай пухăннă. Филармоние тахçанах урăх çĕре куçарнă, кунта халĕ Вырăс драма театрĕпе Çамрăксен театрĕ. ТЮЗ директорĕ Виталий Алексеев хăйсен вăхăт шучĕпе писательсене тӳлевсĕр ирĕк панă шавласа илмешкĕн.

Чăваш рсепубликин пĕрремĕш президенчĕ пулассишĕн Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕ Лев Пантелеймонович Кураков тата Раççей правительствинче Юстици министрĕ пулнă, халĕ Мускаври адвокатсен кантурне ертсе пыракан Николай Васильевич Федоров халăхра ытларах ят илнĕ. Федоров хăйĕн пулас вице-президенчĕпе Энвер Азизович Аблякимовпа чĕрĕ чечек çыххи йăтса çитрĕ. Вĕсен хыçĕнче кандидат доверенăйĕ Петр Степанович Краснов хул хушшине хут папки хĕстерсе утать. Виçĕ шукăль çын театра темле уçă варкăш çавăрттарса кĕнĕ пекех туйăнчĕ. Вĕсем залра варрине ларчĕç.

Акă, писательсене малти ретсене вырнаçтарчĕç. Союз пуçĕ Федор Коновалов-Агивер савăнăçлă каçа уçрĕ те, кĕске сăмах каларĕ, унтан ЧР Аслă Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш çумне Борис Михайлович Яковлева халăх умне кăларчĕ. Пухăва ертсе пыраканĕ Анатолий Смолин поэт ватă писательсенчен интервью илчĕ. Саламсем пуçланчĕç. Саламлас текенсем нумай та,

черетленсе тăраççĕ, кашниех васкавлăн, маларах калаçасшăн. Эпĕ сцена çинче, айккинче пултăм та, пурте курăнать. Акă, Виталий Никитин-Станьял Агиверпе те, ыттисемпе те вăрçсах кайрĕ, микрофона хăех ярса илчĕ те: «Эпĕ Наци Академийĕ, Чăваш халăх конгресĕ тата Ăслăлăх институчĕ ячĕпе саламламасăр çакăнтан анмастăп», - тесе сăмахне пуçларĕ. Саламлама ăна чи вĕçнелле хăварнă-çке. Ун пек чухне вăхăт çитмесен те пултарать, вара банкетра çеç калаçтараççĕ. Ку ĕнтĕ авторитета пĕчĕклетет. Станьял, йĕркене пăсрĕ пулин те, хĕрӳлĕхĕпе çĕнтерчĕ. Ертсе пыракансен тавçăруллăрах пулмаллаччĕ те çав... анчах Агиверĕн, темиçе талăк чарăнмасăр ĕçнĕскерĕн, пуçĕ çаврăнса кайрĕ пулас, Смолинĕ аптăраса ӳкрĕ, тилхепине туртса карăнтараймарĕ. Эпĕ те аран-аран йĕпреçсене варрине кĕртсе ятăм. Вĕсем - «Красный фронтовик» колхоз председателĕ, чăваш литературине çав тери юратакан Гурий Андреевич Андреев тата районти культура пайĕн пуçлăхĕ «Илеме» валли радиоприемник парнелерĕç.

- Эсир пире ăсхакăл çăкăрĕ çитеретĕр, эпир сире çĕр çăкăрĕ çитеретпĕр. Пĕрле тутлăхлă, ăслă, мал ĕмĕтлĕ пулар, - терĕ йĕпреçсен делегаци пуçлăхĕ, Республикăри хресченсен Союзĕн правлени членĕ, районти организацине ертсе пыракан Г.А.Андреев.

Пăтăрмахсем кулăшлансах пычĕç. Николай Федоров чечекĕпе выляса кулкаласа ларать. Хăйне сцена çине çаплах чĕнменшĕн пăлханать те, тарăхать те пуль. Петр Краснов, сцена хыçне пырса, президент кандидатне хăвăртрах сăмах парăр, тесе Агивере виççĕ каларĕ, Федор Георгиевич: «Кам вăл пирĕншĕн кунта?» - тесе алă çеç сулчĕ. Эпĕ те кандидатпа асăрхануллăрах, ăслăрах пулмалла тесе каласа пăхрăм, çук, никама та итлемест писательсен пуçлăхĕ. Çав хушăрах Петĕр Ялгир микрофона Смолинран ярса илчĕ те: «Эпир кунта Кураков юлташа кĕтнĕ, чăваш писателĕсем Лев Пантелеймоновичшăн сасăлаççĕ!» - тесе залра аça çаптарчĕ. Шавлама пуçларĕç.

Кăштах тăн пырса кĕчĕ пулмалла та Агивере, тепĕр темиçе çын хыççăн, пуху хупăнас умĕн, Федорова тин сăмах партарчĕ. Николай Васильевич, нервисен асаплăхне чăтса ирттернĕ хыççăн, питĕ лăпкăн, килĕшӳллĕ, çыхăнуллă сăмахсемпе саламласа калаçрĕ, Союза малашне чĕрĕ чечек пек илемлĕн ешерме сĕнчĕ. Красновĕ Агивере ентешле хĕртсе хăварчĕ. Ку малашне ахалех вĕçленес çук-ха, тесе шухăшларăм камит курса тăнă май, мĕншĕн тесен Советсен çуртĕнче Курак çеç мар, Сĕнтĕрвăрри юрисчĕ

Федоров та Пĕрремĕш Микулай ячĕпе патша йăвине çавăрма пултарать-çке. Умра - суйлав.

Концертне кураймарăмăр. «Россия» ресторанта писательсемпе хăнасем, çыравçăсем каçхи апата пухăнчĕç. Банкечĕ аван иртрĕ.

Вася Кошкин ялтан ашшĕ вилме выртнă текен телеграмма илчĕ. Ыран вăл Патăрьел енчи Упамсара тухса каять. Каллех пĕччен тăрса юлатăп. Луч урăх пулăшасшăн мар, укçа ыйтать.

Декабрĕн 22-мĕшĕ.

Илле Журавлевпа Çĕнĕ çул номерĕн 4 страници валли (çур хаçат) материалсене типографине ăсатрăмăр.

Хаçата «Роспечать» урлă сарма 1500 экземплярлăх килĕшӳ турăм. Уншăн вĕсем сутнă хакĕн 45 процентне шăйăраççĕ. Подпискăпа çитес çулшăн 183 экземпляр кăна сарăлнă.

Декабрĕн 24-мĕшĕ.

Виталий Алексеев ТЮЗ уявне турĕ. Халăх йышлă пухăннă. Писательсен уявĕнчен вăйлăрах йĕркеленĕ.

Пĕлтерӳ пичетленĕшĕн пушар инспекцине 300000 тенкĕлĕх счет кайса патăм. Укçине куçараççĕ. Хаçатăн тепĕр 4 страницине хатĕрлесе çитертĕмĕр.

Декабрĕн 27-мĕшĕ.

Иртнĕ вырсарникун Чăваш Республикин пĕрремĕш президентне Николай Федорова суйларĕç. Ялгирсен ĕмĕчĕ татăлчĕ. Курак ылтăн йăва çавăраймарĕ. Агиверсен пуçĕ тăрринче хура пĕлĕтсем капланма пултараççĕ.

Чăваш телевиденийĕпе радио комитетне ертсе пыракан Канаш ен ачи Сергей Лукианович Павлов Федоров президента кăвак экран пулăшнипе республика халăхĕ умне кăларчĕ. Унăн черетлĕ ыйтăвĕсенчен пĕри çакă пулчĕ: «Чăваш литературине аталантарас, чăваш писателĕсене пулăшас енĕпе эсир хăвăрăн малашнехи ĕçре мĕн тунă пулăттăр?» «Чăваш литератури чăваш халăхĕн пурнăç аталанăвĕпе пĕр тан аталанса пырасса шантаратăп, Писательсене эпир пулăшсах пырăпăр», - терĕ Николай Васильевич.

1994 çул.

Ĕç кĕнекинчен.

Январĕн 6-мĕшĕ.

Ĕнер «Илемĕн» кăçалхи пĕрремĕш номĕрне пичетленĕ.

Вася Кошкин Патăрьелĕнчен анчах таврăнчĕ, ĕçлеймерĕ те, ашшĕне пытарма тухса кайрĕ.

«Советская Чувашия» хаҫатӑн кӑларӑм редакторӗ Николай Петров пулӑшма пуҫларӗ. Эрех кӗленчи этикеткисемпе хӗр вырӑнне выляма юратнӑран ӑна редакцирен пӑрнӑ. Ачи кӑмӑллӑскер, опытлӑскер, ҫавӑнпа ӑна хамӑр штата илес терӗм. Савӑнчӗ.

Январӗн 10-мӗшӗ.

Материалсем ҫыратӑп, хамах машинкӑпа пичетлетӗп». «Зилантран» Валентин Шлыков тата ҫур миллон куҫарса пачӗ. Укҫашӑн выҫӑ кашкӑр пекех чупатӑп, тата виҫӗ ҫӗрте пултӑм. Ленин район администрацийӗн финанс пайӗн пуҫлӑхӗ Ундрицов мана пӗр спонсор тупса пачӗ. «Чувашия-поддержка» страховани компанийӗ пур иккен пирӗн республикӑра. Ӑна, Анатолий Григорьевич калана тӑрӑх, Ҫӗнӗ Шупашкар чиперкке пики Зинаида Валерьевна Воробьева, хӑйӗн вӗренекенӗ, питӗ ӑнӑҫлӑ тытса пырать. Ундрицов телефонпа калаҫса илчӗ те, «сире мадам кӗтет» тесе кулӑпа ӑсатса ячӗ. Мир проспектӗнчи 80-мӗш ҫуртра мана хаклӑ хӑна пекех кӗтсе илчӗҫ, паллашнӑ хыҫҫӑн, «Илеме» илемлетме 300 пин тенкӗ ыранах куҫарса пама пулчӗҫ.

Кунӗпе чупса пурпӗрех укҫа тупрӑм!

Пире Совмин (Финанс министерстви) ҫитес вӑхӑтра укҫа памасть. Эпир ыйтнӑ ҫыру ҫине ҫапла хуравларӗҫ: «Финансирование редакций газет осуществляется за счет средств учредителей. Газету «Илем» учредили не органы представительной и исполнительной власти республики, в связи с чем нет основания для выделения средств из бюджета на ее издание. Заместитель министра финансов ЧР Р.А.Кондратьева».

Пикесем те пӗр мар иккен. Вӑрнар пики чурӑсрах кӑмӑллӑ, епле хыткукар. Пирӗн «Илем» ҫумӗнче хӑшӗ илемлӗреххи ҫакӑнтанах паллӑ ӗнтӗ.

Госкомимущество пӗлтерӳшӗн 500 пин куҫарса пачӗ. Пӗлтерӗвӗсене ытти хаҫатсем тухнӑ хыҫҫӑн хатӗррисене полосана тӳрех илсе лартатпӑр та, счетне кайса паратпӑр ҫеҫ. Анатолий Иванов-Хум унта ӗҫлеме куҫнӑ та, пире самай пулӑшать, тӗрӗссипе - мана, ентешле, юлташла.

«Шупашкар керамики» фирмӑна Вӑрнар районӗнчи Мӑн Явӑша ачи Борис Николаевич Якушкин ертсе пырать. Вӑл унччен Калинин райсовет ӗҫтӑвкомӗн председателӗн заместителӗнче ӗҫлетчӗ. Фирмӑн менелникӗ ячӗпе «Илемӗн» ятарлӑ номерне кӑларма килӗшсе татӑлтӑмӑр. Уншӑн вӑл мана 500 пин парать, паллах, хаҫат валли.

Пушар инспекцийӗнчен те пулӑшу килсех тӑрать.

«Чувашия-поддержка» директорĕ
Воробьева Зинаида Валерьевна

Кошкина, ялĕнчен таврăнсанах, укçа шырама хулана кăларса ятăм. Ним усси те пулмарĕ. Хăй малтан: «Финанс министрĕ Николай Смирнов пирĕн Упамсар тăрăхĕнчен, лайăх çын», - текелесе мухтанса çӳрерĕ те, ун патĕнчен те пуш алăпах таврăнчĕ.

Январĕн 20-шĕ.

Çĕнĕ президент министрсем лартать. Информаципе пичет министерстви турĕç. Министрĕ - Петр Краснов. Кандидат довереннăйĕнче Федоровăн шанăçне тивĕçтернĕ иккен.

Агивере ун патне ирĕксĕрех илсе кайрăм. Министр пире патшалăх бюджетне кĕртесси пирки ырринех каламарĕ. Эпĕ хаçат нушисем çинчен президент патне çырнă хутсем ун патĕнче. Çулталăк пуçламăшĕнчех çакăн пек çыру хатĕрлесе, çыннисене алă пустарса тухрăм, президент администрацине çитертĕм, кăçалхи 2-мĕш номĕрте пичетлесе кăлартăм:

Чăваш республикин президентне
Н.В.ФЕДОРОВА

Хисеплĕ Николай Васильевич!

Эсир Чăваш патшалăхне çирĕп алăра тытса тăрас, унăн экономикине вăйлатас, чăваш нацине, культурине малалла аталантарса халăх пурнăçне пур енĕпе те лайăхлатас тесе республикăра пурăнакан пĕтĕм халăх умĕнче тупа тума хатĕрленнĕ вăхăтра çыратпăр Сирĕн пата çак çырăва.

Чăваш президентне суйланă хĕрӳ тапхăрта чăваш халăхĕн ăсхакăл хаçачĕ «Илем» çуралчĕ. Культура хаçачĕ тухма пуçлани чăваш халăх историйĕнчи пαллă тапхăр шутланать. Тăван халăхăмăрăн çырулла историйĕ пуçланнăранпа кунашкал ятарлă культура хаçачĕ пирĕн пулманччĕ-ха. Культура, литературăпа искусство, вĕрентӳ, наука ĕçченĕсем ăна хапăлласа, юратса кĕтсе

илчĕç. Хаçат малтанхи номерсенчех пирĕн тертлĕ те хавхалануллă, тăван халăхшăн сывлăха, вăй-хала шеллемесĕр тăвакан пултарулăх ĕçне анлăн та ăстан çутатма пуçларĕ. Хаçатра искусство, литература, еткерлĕх, малашлăх ыйтăвĕсем пире кăна мар, культурăра, халăх вĕрентĕвĕнче, наукăра ĕçлекенсемшĕн те, тĕнчере пурăнакан пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн питĕ кирлĕ. Пурăна киле унăн вырăсла кăларăмĕ те кун курмалла. Мехел пӳрсен, Эсир çак ĕçе пулăшма чăтăм çитерсен.

Анчах та хаçатне тытса вулама кăна çăмăл иккен. «Илеме» кăларма Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн пĕр пус та пулман, халĕ те çук. Чăваш халăхĕн чăн-чăн патриочĕсем çине тăнипе тата пулăшнипе кăна «Илем» халăх патне çитме пултарчĕ. Çапах та унтан-кунтан тархасласа пухнă укçа-тенкĕпех вăйлă, вулакансене чăннипех тивĕçтерекен хаçат тума питĕ йывăр. Редакци иртнĕ çулхи сентябрьтенпе шалусăр ĕçлет, мĕншĕн тесен, пулăшу паракансен укçине пĕтĕмпех хаçат кăларнă çĕре тата хут туянма ярать. Редакцин ĕç пӳлĕмĕсем те çук.

Çав вăхăтрах патшалăхăн, халăхăн миллионĕсем юр пĕрчи пек вĕçсе çухалаççĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри те пулин «Илем» енчĕкне кĕрсе ӳкес пулсассăнах, чăваш та илемлĕреххĕн кулса янă пулĕччĕ.

Президент суйлани те чăваш халăх историйĕнчи паллă тапхăр. Суйлав умĕнхи тĕлпулусенче Эсир, Николай Васильевич, культура хайлавĕсене те мала хурса ăнăçлă татса парасси çинчен халăха шантартăр. Çав шанăçра эпир «Илем» хаçатăн шăпине те ăнăçлă татса парассине, ăна çĕнĕ çултан патшалăх шучĕпе йĕркеллĕ кăларса тăма пуçлассине куратпăр.

Эсир Чăваш Республикинче пурăнакансене, уйрăмах чăваш халăхне панă Тупара «Илемĕн» пайĕ те пултăрччĕ тесе шанатпăр.

Чăваш халăх писателĕсем: А.С.Артемьев, А.В.Емельянов, Л.В.Таллеров, Н.Т.Терентьев, Ф.Е.Уяр; чăваш халăх поэчĕ В.И. Давыдов-Анатри; Чăваш халăх художникĕ В.И.Агеев; Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ Ф.Г.Агивер; филологи наукисен докторĕ, писатель Ю.М.Артемьев; СССР халăх артисчĕсем: В.К.Кузьмина, В.Н.Яковлев; Халăхсен туслăхĕ орденлĕ Чăваш çамрăкĕсен театрĕн директорĕ В.Н.Алексеев; Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн художество руководителĕ тата тĕп дирижерĕ, Раççей искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Ю.В. Васильев; ЧР Вăрнар районĕнчи Хурăнсур Çармăсри клуб заведующийĕ И.К.Иванов; Чăваш Республикин культура тата наци хутшăнăвĕсен министрĕ В.П.Иванов; Чăваш Республикин сывлăха сых-

лас ĕç министерствин тĕп хирургĕ-онкологĕ В.И.Кузьмин; Чăваш Республикин Наукăсен Академийĕн президенчĕ, Раççей Федераци наукăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Л.П.Кураков; Чăваш аталану партийĕн пуçлăхĕ Н.Е.Лукиянов; «Советская Чувашия» хаçатăн тĕп редакторĕ Н.Н.Максимов; Чăваш композиторĕсен Союзĕн правлени председателĕ А.Г.Васильев; «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ А.П.Леонтьев; Чăваш Республикинчи композиторсен Ассоциацийĕн председателĕ А.М.Михайлов; Чăваш наци конгресĕн президенчĕн çумĕ В.П.Никитин-Станьял; «Хисеп палли» орденлĕ республика вырăс драма театрĕн тĕп режиссерĕ Б.И.Носовский; Раççей халăх художникĕ Н.В.Овчинников; «Ялав» журналăн тĕп редакторĕ, Чăваш Республикин культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Ю.С.Семенов-Сементер; Чăваш Республикин культура ĕçченĕсен профсоюзĕн комитет председателĕ Ф.К.Павлов; ЧР Муркаш районĕнчи Катикассинчи ĕç ветеранĕ, Раççей Федерацийĕн йăла службин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ О.В.Тямина; Чăваш Республикин писателĕсен Союзĕн Литература фончĕн директорĕ М.А.Ставский; Чăваш Республикин оперăпа балет театрĕн директорĕн заместителĕ Г.Ф.Филиппов; Чăваш Республикин Аслă Канашĕн культурăна, чĕлхене тата наци хутшăнăвĕсене аталантарас ĕç Комиссийĕн председателĕ, Чăваш Республикин Министрсен Совечĕ çумĕнчи ăслăлăх тĕпчев институчĕн пай заведующийĕ А.П.Хузангай; Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ художникĕ В.П.Петров-Праски Витти; Чăваш Республикин культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ В.А.Эльби писатель, «Илем» хаçатăн тĕп редакторĕ В.П.Кузьмин».

Президент вуланă-ши ăна, вуламан-ши, пĕлместпĕр, анчах Краснов пирĕн çак пысăк эртелĕн ыйтăвне татса пама шутламаннине çеç пĕлетĕп.

Çамрăксен театрĕ те 450 пинне, Союз правленийĕн председателĕ те 200 пинне хаçата памарĕç. ТЮЗпа килĕшӳ туман. Ыранпаян ĕçрен тухса каймалли директорне бухгалтерĕ итлемест, культура министерствинчен те итлеттерејмерĕç. Федор Георгиевичĕ «Правлени шантарнă 200 пине гараж юсама ятăмăр, урăх çĕрте шыра», - терĕ те хăяккăн çаврăнса тăчĕ. Камăн хаçачĕши вара ку «Илем» - манăн е Союзăн? Тĕлĕнмелле!

Январĕн 27-мĕшĕ.

«Чувашия» издательствăна укçине те куçарман, хаçат хутне те илсе пыман. Производство пайĕ пичетлеме заказ çырмасть. Эпĕ вара тĕп инженера шыраса тупрăм. Валентин Иванович

Филипповпа çыхăнусем çывăх. Вăл кунта тахçантанпах ĕçлет. Хăналама тиврĕ. Заказ та çырăнчĕ, хаçат та тухрĕ. Парăмĕ çеç чакмарĕ, хушăнчĕ.

Кошкин каллех яла, килне тухса кайрĕ.

Февралĕн 10-мĕшĕ.

Улттăмĕш номĕре хатĕрлесе çитертĕм, анчах пичетлеме тытса чарчĕç. Укçа та куçармаллăх çук, хут та пĕтнĕ. Юрать-ха производство пайĕн пуçлăхĕ Галина Борисовна Владимирова, уçă кăмăлне кура, хаçат çапма ирĕк пачĕ. Савăнтăм. Ыран каллех «Илем» тухать!

Февралĕн 16-мĕшĕ.

7-мĕш номер вăхăтрах тухрĕ. Ĕнер Ставскипе иксĕмĕр Хветĕр Агивере Мускава, «Пĕтĕм тĕнчери» писательсен союзĕсен (унчченхи СССР) пĕрлешĕвĕн конференцине ăсатса ятăмăр. Тĕп хулара вăл «Илем» валли укçа шыратăп-ха, терĕ.

Çитес номĕре сиктеретĕп. Халĕ хут ыйтăвĕпе çине тăрса ĕçлетĕп. Издательствăна кăштах укçа куçарттартăм.

Василий Кошкин ялтан тин таврăнчĕ, манпа телефонпа кăна калаçать. Эпĕ ăна «Чувашкерамикăна» кайса материалсем тума хушрăм.

Февралĕн 23-мĕшĕ.

Агивер Аслă Канаш депутачĕ пулма хатĕрленет. Пĕрремĕш страницăра ун çинчен статья памалла. Андрей Алексеев çырчĕ. Ман Кошкин нимĕн те туман, ĕçлесшĕн те мар пулас. Уççăн каламасть. Агивер, Мускавран пулăшу вырăнне, эрнелĕх мухмăр çеç илсе килнĕ.

Февралĕн 28-мĕшĕ.

Ĕçре Кошкин тавраш̆ĕ те курăнмарĕ. Керамика заводне «Пионер сассин» фотокорреспондентне Сергей Журавлева ятăм, вăл ӳкерчĕксем туса пачĕ. Тӳлевсĕрех. Вĕсен умĕнче хама ырă мар туятăп. Материалĕсене çырма хамăннах каймалла пулчĕ. Каçпа килте вĕсене машинкăпа çапса лартăм.

Мартăн 1-мĕшĕ.

Издательствăна 1300 пин тенкĕ кивçене кĕнĕ. Хутшăн та

тӳлемен. Питӗ нумай чупмалли кун пулчӗ. Ирех «Чувашсбербанка» вӗҫтертӗм, шантарнӑ 250 пин вырӑнне 60 пин аран-аран хӑйпӑтса тухрӑм. Ыйткалакан пӗр чӗл ҫӑкӑр тархасласа ыйтса илнӗ пекех епле хӗпӗртерӗм! ТЮЗ пӗлтӗрхи 450 пине халӗ те куҫарман. Пичет министрӗ Краснов патӗнче пултӑм. Петр Степанович: «Манӑн укҫа ҫук, сирӗн «Илеме» те, «Вучаха» та бюджета кӗртмен, райхаҫатсене ҫеҫ кӗртнӗ», - тет. Вӑл писательсен Союзӗн аппаратӗнче ҫын нумаййи, ытти пултарулӑх союзӗсене патшалӑх пачах пулӑшманни, Агиверсен ҫемйи ҫеҫ Культура министерстви урлӑ тӑранса пурӑнни ҫинчен ыйту хускатрӗ. Союз штатӗнчи ытлашши 3 ҫынран редакци штачӗ тусан, йӗркеллех пулмалла, терӗ вара юлашкинчен.

«Юман» фирмӑран 830 килограмм хаҫат хучӗ туянтӑм. Укҫине арӑмран, Риммӑран, 150 пин илсе кайрӑм. Владимир Михайлович Ивановӑн кантурӗ Ҫӗрпӳ районӗнчи Янсакасси ҫумӗнчи Вӑрманкасра. Турттарма лери колхоз машинине тупса пачӗ. Савӑнӑҫа ниҫта хураймастӑп. Арӑм куҫранах кулать: «Тӑнсӑр».

Кошкин пусӗпех ҫухалчӗ. Вӑл манашкал тӑнсӑр мар пулас, тӳлевсӗр такамшӑн тӑрмашмасть.

Мартӑн 4-мӗшӗ.

Хаҫат вырӑсла тухрӗ. Тиражне «Стройкерамика» фирмине ӑсатрӑм, 400 экземплярне, кандидатшӑн агитациленӗ ҫӗрте усӑ курма, Агивере кайса патӑм. Суйлав кампанийӗ валли кандидатсене бюджет укҫинчен икҫӗршер пин уйӑрса параҫҫӗ. Ҫавна Федор Георгиевич «Илеме» парнелерӗ.

Чӑвашрадио хаҫатӑн кашни тишкерӗвӗшӗн 1060 тенкӗ илет.

Хаҫатӑн презентацине ирттересшӗн. Хатӗрленме пуҫларӑмӑр. Радиопа тухса калаҫрӑм.

«Илем» кӑларма уйрӑм ҫынсенчен укҫа пухатпӑр. Усӑ кӑмӑллисем пур. Акӑ, А.П.Казанов писатель, вырӑс драма театрӗн директорӗ В.И.Сергеев, Чӑваш писателӗсен пуҫлӑхӗ Ф.Г. Агивер 5-шер пин, Ҫӗнӗ Шупашкарти «Жигули» фирмӑра ӗҫлекен Альбина Сарри юрӑҫ 2 пин, «Капкӑн» редакторӗ В.Н.Николаев, Чӑваш ялхуҫалӑх институчӗн проректорӗ С.И.Васильев, Союз библиотекарӗ В.К.Константинова тата Союз шоферӗ Ю.Ф.Коновалов (Агиверӗн арӑмӗпе ывӑлӗ), Етӗрне районӗнчи Иваньково ял администрацийӗн пуҫлӑхӗ М.Я.Михайлов - 2 пиншер, Литфонд директорӗ М.А.Ставский 2,5 пин, «Илем» редакторӗ В.П.Кузьмин 4 пин, Раҫҫей халӑх художникӗ Н.В.Овчинников 10 пин, Петӗр Львов писатель 20 пин (чемпион!) хывреҫ.

Пĕчĕкрех сум паракансем те тупăнкалаççĕ. Михаил Ставский ку укçапа мухмăр чĕртесшĕн, анчах эпĕ те тӳрех кассăна хыватăп. Правленире ĕçлекенсем пĕри те хаçат малашлăхĕшĕн çунмаççĕ, хăшĕсем хăйсен кĕнекисене кăларма самаях укçа тупаççĕ - писательсен Союзĕ ячĕпе. Спонсорсен шучĕпе кĕнеке пичетлес пулас-тăк, манăн та алçыру туллиех. Эпĕ вара хамшăн мар, «Илемшĕн» ыйткаласа çӳретĕп.

Нарăсăн 25-26 кунĕсенче Шупашкарта Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен Ассамблейи ĕçлерĕ. Унта Чăвашстан, Пушкăртстан, Тутарстан, Мари Эл, Мордва тата Удмурт çĕрĕсенчи наци, общество юхăмĕсемпе организацийĕсен делегацийĕсем хутшăнчĕç. Йĕркелӳ пухăвне Чăваш наци Конгресĕн президенчĕ А.П.Хузангай уçрĕ, Атăл-Урал тăрăхĕнчи халăхсен аталанăвĕ, çывăхланăвĕ тата терменлĕхĕ çинчен тарăннăн та анлăн каласа пачĕ.

Докладчик шухăшне ырланă май, тухса калаçакансем «Хамăра сыхласа хăварас тĕллевпе чăн-чăн федерализмшăн кĕрешме пĕрлешмелле», «Раççейри наци политики уйрăмах РФ Конституцине йышăннăранпа уççăнах япăхланма пуçларĕ», «Раççейре кашни халăх пĕр сас парса сасăламалли процедура кирлĕ», «Пирĕн ыйтусене тĕнчери правасемпе çеç татса пама пулать», «Хамăршăн хамăр тăрăшма Ассамблея питĕ кирлĕ», «Раççей Федерацийĕн йышĕнчи республикăсен статусне, прависене тĕпчекен наука центрĕ йĕркелемелле», - тесе çирĕп сĕнӳсем пачĕç.

Пуху Меморандум, Регионти гражданлă саккунсен никĕсĕсем çинчен пĕлтернине, халăхсемпе власть тытăмĕсене чĕнсе каланине тата ытти документсене йышăнчĕ, хими хĕçпăшалне хирĕç кĕрешнĕшĕн айăпланакан Вил Мирзоянов ученăя хӳтĕлесе РФ Президенчĕ ячĕпе телеграмма ячĕ.

Атăл-Урал ТХА секретариатне икĕ çуллăха кашни республикăран икшер çын, Атнер Хусанкай писателе ТХАн тĕп секретарьне суйларĕç.

Ку форумра манăн Хусанта тĕрĕк халăхĕсен Аслă пухăвĕнче паллашнă çынсемпе тĕл пулма тӳр килчĕ. Ассамблея çинчен çырнине «Илемĕн» 9-мĕш номерĕнче пичетлерĕм.

«Ăшра тулнине кăларар-ха» рубрика çуралчĕ. Ку вăл ахальтен мар. Шухăшлавçăсен, политиксен чĕрĕ сăмахне халăх патне ăнланмалла çитерес килет.

Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕр умĕнхи кисренӳллĕ те алхасуллă пурнăçра Чăваш тĕнчи те лăпках мар. Наци аталанăвĕнче халăх пуласлăхĕнчи палăрмалли уйрăмлăх çĕнелĕвĕ вăй илсе пырать. Çавна

май Михаил Сунтал писателе Чăваш наци конгресĕн президенчĕпе Атнер Хусанкайпа калаçма ыйтрăм. Михаил Павлович сĕнĕве хапăлласах йышăнчĕ. Атнер Петрович хăйĕн философилле шухăштуйăмне хут çине çырса пачĕ. Ăна «Çакă çутă тăнчере... кашнин хăйĕн вырăнĕ» ятпа çапса кăлартăм. «Шанатăп, эпир çак XXI-мĕш ĕмĕре хамăрăн чăваш сăнĕпе, чăваш ăсхакăлĕпе, чăваш патшалăхĕпе, чăваш ӳнерĕпе кĕретпĕр тесе шутлатăп. Вĕсене çухатсассăн, тĕнче умĕнче, Турă умĕнче намăс пулать пек туйăнать...» - тăрăшсах вулаççĕ чăвашсем Хусанкай ăсчаха.

«Чăваш халăхĕн çăлтăрĕсем» рубрикăпа халăхра ят илнĕ çыравçăсем, ӳнерçĕсем, мусăкçăсем, юрăççем çинчен илемлĕ, тулли очерксем пичетлеме пуçлани те хамăрăн интеллигенци çыннисем хушшинче ырă туйăм çуратать иккен. Пирĕн хаçата вулас, унта пичетленес текенсем йышланчĕç. Иван Ахратăн «Юрламасăр чун чăтмасть» очеркĕ чăваш халăхĕн чунпа çывăх композиторне Александр Сергеева илем тĕнчине çĕнĕрен кăларнă пекех пулчĕ.

«Поэт парни» кĕреке те уçăлчĕ. «Эпир, чăвашсем, чăваш пуласшăн» тесе Юрий Сементер поэт унта вулакансене хăйĕн çĕнĕ сăввисемпе хавхалантарчĕ.

«Аваллăхпа паянлăх паттăрĕсем» ярăма «Тухăç алăкне уçнă Бичурина» халалласа уçрăм, вулакансене малтанах шантарнине пурнăçларăм, Чăвашăн тата Раççейĕн тĕнчипе чапа тухнă мухтавлă ывăлĕпе - ученăйпа, писательпе çĕнĕлле паллаштартăм.

«Çемье - пурнăç илемĕ» страницăсем те интереслĕ, тыткăнуллă. «Кашни пуçра пин шухăш», «Тавлашу ан пултăр харкашу» рубрикăсемпе тухнă хайлавсене те халăх хапăлласах вулать.

Юхма Мишши, Валери Туркай тĕрлĕрен суйлавсенче шавласа халăха тĕлĕнтернĕ, çапах депутат мандатне çĕнсе илеймесĕр çуна-çуна кайнă хыççăн, Хветĕр Коновалов-Агивер каллех чапшăн çунма пуçларĕ. Алексеев-Тархун ун çумĕнче, куршук вырăнне çутă пакет йăтса, тарçă пек вĕткеленсе çӳрет, ăçта килчĕ унта, пилĕк-ултă çын пухса, тивĕçлĕ кандидатшăн сасăлама ӳкĕтлет. Кандидачĕ Чăваш патшалăх Канашĕнче ĕçлеме пултаракан тивĕçлĕ çынах пуль-ха та... Халăх культурине малалла вăйлăн аталантармалли программа урăх нихăш кандидатăн та çук. Илем пултарулăхĕ те ĕнтĕ унăн тăван халăхран тухнă пултарулăх. Çавна шута илсех «Илемре» çакăн пек хайлав кăлартăм:

ХАЛĂХ КУЛЬТУРИШĔН

Писателе этем чунĕн инженерĕ тени тĕрĕсех пуль. Çыравçă сăнар урлă кăна мар, хăйăн тавракурăмĕпе те, пултарулăх хĕрӳлĕхĕпе

те халăха аталантарма, обществăна малалла кайма пулăшать. Çавăн йышши чăн-чăн ăслă этемсенчен пĕри вăл - Федор Георгиевич Коновалов (Хветĕр Агивер).

Комсомольски районĕнчи Нĕркеç ялĕнче çуралса ӳснĕ, Шупашкарта, Мускавра вĕренсе ăслăланнă, Чăвашрадиопа Чăваш телевиденийĕнче, чăваш журналĕсенче нумай çул вăй хунă журналист, писатель яланах халăх нуши-тертне чи мала хурса, çынсене мĕнле те пулин туллинрех пулăшас тесе, халăх культурине, тăван литературăпа искусствăна тĕнче шайне çитерес тесе вăйне-халне шеллемен. «Тăван Атăл» журналăн тĕп редакторĕнче ĕçленĕ тата Чăваш Республики писателĕсен Союзне (110 çын) ертсе пынă май, çĕршывĕпе паллă писатель, драматург культура ыйтăвне малашне те чи мала лартать.

Патшалăх Канашĕн депутачĕ пулма ăна 2-мĕш Ленин администраци-территори округĕ тăрăх кандидата тăратнă.

Хисеплĕ суйлавçăсем! Эсир вырсарникун çак тивĕçлĕ кандидатшăн хăвăр сассусене пĕр шухăшлăн парсан, хамăрăн республика, унта пурăнакан мĕнпур халăх культуришĕн пĕрле кĕрешме хатĕррине палăртăр.

Хветĕр Агивершĕн сасăлар!»

Культура çыннисем халĕ хисепре мар çав, ухмах халăх хăйĕн пусмăрçисене, ултавçăсемпе укçа-мул хуçисене куçпа курсах аслă влаç хăлăпне тыттарать, кайран пуçне те, кутне те хыçатьха, анчах хăйĕн ултав танатинчен ниепле те йăшăлтатса тухаймасть, суйлав хыççăн суйлав кампанийĕнче çав йăнăшах тăвать. Политика вăййипе асса кайнă çынсем те пуçĕпе пĕлĕте шăтарас пек çӳлелле кармашаççĕ.

Суйлав хыçалта ĕнтĕ. Культурăшăн тăрăшакан Агивер кандидат та халăх хыçне тăрса юлчĕ. Çуркунне те çитрĕ. Эпир паллă куна хатĕрленетпĕр. 14-мĕш номерте «Илем» уявне хутшăнăр!» чĕнӳ пичетлесе кăлартăм хам ятпа:

«1994 çулхи ака (апрель) уйăхĕн 27-мĕшĕнче, эрнекун, Шупашкарта, Володарски урамĕнчи 10-мĕш çуртра (Ехрем хуçа çуртĕнче) «Илемĕн» паллашу уявĕ (презентаци) пулать.

Чăваш Республики писателĕсен Союзĕ никĕсленĕ ăсхакăл хаçачĕ иртнĕ çулхи кĕркуннерен пуçласа этем, кил-йыш, пурнăç, çутçанталăк, тĕнче илемне кашни çын ăша хывма, халăхăн чечекленекен пултарулăхĕ çыравçăсен, сцена ăстисен, ӳкерӳçĕсен, кĕвĕ кĕвĕлекенсемпе кĕвĕ-юрă шăрантаракансен сăнарлăхĕнче уççăн палăрма пултартăр тесе, халăх пултарулăхĕн ĕмĕртен ĕмĕре куçса

пыракан илемĕ, ăсхакăл культури, çырулăхĕ наци пуянлăхĕ, чăвашăн тĕнче умĕнчи ырă сăнĕ пулнине анлăн, хитрен кăтартса парасшăн, çак пархатарлăха сăнарлă чĕлхепе вулакан чун-чĕрине яланлăхах варăнтарасшăн çине тăрать. «Илем» хамăрăн пуян сăмахпа тăванлăх, хурăнташлăх, ыркăмăллăх, мăнаçлăх туйăмне халăхра вăратса вăйлатма пулăшать.

Акă ĕнтĕ унăн 17(22)-мĕш номерĕ кун çути курĕ. Çуралнă ачана шыва кĕртнĕ пекех, çĕнĕ хаçата та чăвашăн культура керменĕнче халăхпа пĕрле тĕнчене кăларма вăхăт çитрĕ. Çав паллашу кунĕ - «Илемĕн» савăк кунĕ - чаплă уяв пуласса шанатпăр.

Паллашу уявне ирттерме Чăваш Республикин культура тата национальноçсен ĕçĕсен министерстви, Шупашкар хула администрацийĕ, пултарулăх союзĕсем хутшăнаççĕ. Унта вăйлă концерт пулĕ.

Чăваш халăхĕн ăсхакăл хаçачĕ уççăн сасă пани вăл хальхи йывăр пурнăçри тепĕр пысăк çĕнтерӳ сассийĕ вырăнĕнчех. Анчах «Илеме» ура çине тăмашкăн, аталанмашкăн, Чăваш патшалăхĕ халлĕхе пулăшаймасть-ха. «Ача кипки çине» ырă кăмăллă çынсем хĕрхенсе хушăран пăрахса панă укçа-тенкĕпе çеç тытăнкаласа пурăнать-ха «пепке». Çавăнпа эпир сире, «Илем» уявне хутшăнма кăмăл тăвакан, халăх культуришĕн чуна пама хатĕр тус-тăвансене, патриотсене, чăваш пичечĕн пепкине чăпăл тунă çĕре тулли кĕсьепе килме сĕнсе, Турă умĕнче чĕнсе каласшăн: тархасшăн пулăшăр!

Тăван чăваш халăхĕ! Чăваш халăхĕпе туслă, ăна юратакан, хисеплекен, унпа юнашар ĕçлесе пурăнакан ытти халăх çынни! Эсир пулăшасса, эсир «Илеме» ылтăн шывĕпе капăрлатнă хаклă кипкепе чĕркесе ура сыртарасса, илем тĕнчин кĕрекинче пĕрле савăнасса шанатпăр, ĕненетпĕр. «Илем» енчĕкĕ яланах уçă».

Нумай чупмалла, чылай çынпа калаçмалла, «ăслărах пуçлă», аслăрах-ассирех пуçлăхсемпе канашламалла пулчĕ, районсене çыру-чĕнӳсем ятăмăр. Юрать-ха манăн чи çывăх пулăшаканăм, Литфонд пуçлăхĕ, пĕр пус укçасăр хуçа пур Ехрем хуçа çуртĕнче. Михаил Александрович Ставскипе пĕр мăн пӳлемре саркаланса ларатпăр. Пирĕн пата калаçса вăхăт ирттерме, канма писательсем кĕрсе лараççĕ. Шавлă тĕлпулăвĕсене те Агивер унтах йĕркелет. Кермене кĕрсенех, анлă йышăну пӳлĕмĕ пур. Пурне те курăнмалли вырăна «Илем» историйĕпе паллаштаракан стенд туса çакрăм. Акă, ака уйăхĕн 27-мĕшĕ те персе çитрĕ. Манăн 17-мĕш номер вăхăтрах тухрĕ. Вăл «Хаçат мĕнле çуралнă, мĕнпе

сывлать, мĕнле пурăнать-ши...» ятлă хам çырнă умстатьяпа уçăлать.

Пăлханмалли кун. Ун пек чухне яланах чун вырăнта мар, мĕн туса çитерейсмерĕмĕр-ши тесех шухăшласа çӳретĕп. Бухгалтера алăк çумне укçа пуçтарма лартрăм. Хăшин-пĕрин патне телефонпа шăнкăравлатăп. Кермен хаваслă сасăсемпе янăраса кайсан тин чун юрласа ячĕ: тавах Турра!

Майăн 1-мĕшĕнчи номĕрте уяв отчетне халăх умне кăлартăм:

«Ака уйăхĕн 27-мĕшĕнче Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн керменĕнче «Илем» хаçатăн паллашу кунĕ - презентаци пулчĕ. Уява Чăваш Республикин Пичет министрĕ П.С.Краснов тата Культура министрĕ В.П.Иванов пычĕç, хăйсен сăмахĕнче вĕсем «Илем» хаçата малашне кăларса тăмашкăн пулăшма шантарчĕç.

Чăваш халăхĕн ăсхакăл хаçатне саламлама Шăмăршă районĕнчи «Шăмăршă хыпарĕ» хаçат редакторĕ П.И. Фомин тата «Шухăш» хаçат редакторĕ И.М.Саландаев, Вăрмар районĕнчи культура пайĕн заведующийĕ Ю.А.Максимов, ветерансен канашĕн пуçлăхĕ А.В.Петров, искусствăсен шкулĕн директорĕ Н.П.Иванов, Çĕмĕрлери «Вперед» хаçат редакторĕ В.В.Комаров поэт, Етĕрне районĕнчи Иваньково ял администрацийĕн пуçлăхĕ М.Я.Михайлов, хаçатăн Куславкка районĕнчи корреспонденчĕ И.М.Миронов инçе çула пăхмасăрах килнĕ.

Хаçата Раççейри «Сервис» страховани компанийĕн правлени председателĕ В.П.Шлыков, Чăваш ялхуçалăх институчĕн ректор заместителĕ С.И.Васильев тата Л.Я.Тянгов доцент, Виктор Петровăн сатира театрĕ, Чăваш академи юрăпа ташă ансамблĕн коллективĕ ячĕпе ЧР тава тивĕçлĕ артистки Людмила Семеновапа Геннадий Кержеманкин баянист, Çĕнĕ Шупашкарти çамрăк композитор-юрăç Олег Семенов, «Жигули» ансамбль солистки Альбина Сарри, республикăри вырăс драма театрĕн директорĕ В.И.-Сергеев, Çутçанталăка сыхлакан Раççейри обществăн Чăваш Республикинчи канашĕн правлени председателĕ Г.Т.Тимофеев, Порфирий Афанасьев, Сарра Баранова, Филипп Андреев писательсем, «Капкăн» журналăн тĕп редакторĕ В.Н.Николаев, чăвашăн çĕнĕ хаçатне юратакан тата ытти туссем те саламларĕç.

«Эхо» юлташлăха ертсе пыракан, «Встреча» хаçат редакторĕ А.Г.Крысин журналист «Илемĕн» 5 номерне кăлармалăх хаçат хучĕ парать. Пухăва пынă чылай çын хаçата укçан пулăшрĕç.

Савăнăçлă пухăва ватă çыравçăсенчен пĕри, чăвашсен паллă поэчĕ Георгий Ефимов ертсе пычĕ. Чăваш Республики писатель-

сен Союзĕн правлени председателĕ Ф.Г.Агивер тата хаçатăн тĕп редакторĕ В.П.Кузьмин «Илеме» мĕнщĕн, кам валли тата мĕнле кăларма пуçлани, редакцин «йывăрлăхĕсем», хаçатăн малашлăхĕ çинчен каласа пачĕç.

Пухăва пухăннисен шухăшĕ çапла пĕр тĕллевлĕн çирĕпленчĕ: «Илем» чăваш халăхне кăна мар, республикăра пурăнакан мĕнпур çынсене кирлĕ, çавăнпа хаçата республика органĕсен те, организацисен те, халăхăн та пулăшмаллах.»

Ехрем хуçа çурчĕн иккĕмĕш хутри анлă пӳлĕмĕнче сцена пекки те пур. Лармалли пуканĕсем чылай, пурне те хăнасем йышăнчĕç. Шăнăçайманнисем уçă алăкран итлесе тăраççĕ. Культура министрĕ Иванов пĕрмай хăпăнса пĕтнĕ стенасене, тĕллĕн-тĕллĕн тухса тăракан электропроводкăна сăнать, сăмах каланă чухне те кунта юсав ĕçĕсем капитальнă тумаллине палăртрĕ. Вăл, паллах, çак çурта писательсем ырă курччĕр, Агивер халăх театрĕ тутăр тесе мар, хăйсем валли палăртать, методика центрне çакăнта куçарма тахçанах палăртаççĕ-çке. Красновĕ тата хăйне пĕчĕк чĕнӳ хучĕ кăна панăшăн пĕчĕк ача пек кӳреннĕ. Иванова пысăкки лекнĕ иккен. Эпир вĕсене чăнах та икĕ тĕрлĕ хатĕрленĕччĕ. Хамăрăн пуç çитмен ĕнтĕ.

Укçа çук та, хăнасене хăналаймарăмăр, хăшĕсем кӳренчĕç те пуль. Хамăн кĕсье пушă. Союз пуçлăхĕ, каçхи апата антармаллăх, Чăваш театрĕн кафинче «Атăл шывĕ» тупкаларĕ.

Хамăрăн хаçат пурри аванах çав, писательсен пурнăçне, еткерлĕхне хамăрла - анлăн, май пур таранах çутататпăр. «Сăмах ăстисем» рубрикăпа очерксем, тĕрленчĕксем, статьясем пама пуçларăм. Писательсене вăл кăмăла кайрĕ.

Ака уйăхĕн варринче чăваш халăх писателĕ Хветĕр Уяр 80 çул тултарчĕ. Ăна пĕр номĕре халалларăмăр. «Халăх сумлĕ сакăр вунă çул» ятпа уçăлчĕ вăл. «Иксĕлми пултарулăх», «Мĕнре-ши Уярăн очерк ăсталăхĕ?», «Академик чувашского слова» статьясем тухрĕç. Тепĕр номĕрте эпĕ информаци патăм:

«Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн керменĕнче пуçласа чи пысăк уяв иртрĕ. Унта ытларикун Чăваш халăх писателĕ, Чăваш наци Академийĕн академикĕ Федор Ермилович Афанасьев-Хветĕр Уяр 80 çул тултарнине чысларĕç. Менелнике чăваш лицейĕнче вĕренекенсем, писательсем, пултарулăх канашĕсен представителĕсем, тусĕсем, юлташĕсем, тăванĕсем, патшалăх тытăмĕн хуравлă çыннисем саламларĕç. «Кунта Чăваш патшалăх Президенчĕн Н.В.Федоровăн хăйĕн те пулмаллаччĕ ĕнтĕ, уявне

те республика шайӗнче пӗр-пӗр пысăк керменте ирттермеллеччӗ, ку вăл чăваш халăхӗн аксакалне хисепе хуманни пулать», - тесе палăртрӗ Валерий Тургай поэт.

Юнкун Уяр союз правленине кутамкка йатса çитрӗ, менелник ячӗпе панă мӗнпур хисепе унта тултарчӗ те çурăм хыçне çакса ячӗ. «Тавтапуç, сывă юлăр», - тесе çула тухрӗ. Çывăх та, çав вăхăтрах инçе те унăн çулӗ. Самар облаçне çитиех. Унта ăна тăван çӗрӗ-шывӗ, тăван ялӗ Сухари-Матак кӗтет. Менелник малалла тăсăлать. Ырă сунар, ăнăçлăх, çирӗп сывлăх сунар пултаруллă çыравçа».

«Ман пурăнас килет пӗр вӗççӗр»...» - çапла калаçса тухрӗ халăх умне Çемен Элкер çу уйăхне çутăлтарса ярса. Май хӗвелӗ пек çутă, ăшă, хитре номер кăлартăмăр ун ячӗпе.

«Йӗпреçпе пысăкупакассисем хăйсен ентешӗ 100 çул çитнине анлăн паллă турӗç. Çак кун Семен Васильевичăн тăван ялӗ уйрăмах тараватлă пулчӗ. Ял ӗçченӗсем патне çыравçăсен пысăк ушкăнӗ, художниксем, тӗпчевçӗсем, аслă органсен ертӳçисем килсе çитрӗç. Вӗсем хушшинче - тăванӗсем те. ЧР писательсен Союзӗн ертӳçи Ф.Агивер, Н.Петровский-Теветкел поэт, «Ялав» журнал редакторӗ Ю.Сементер, «Илем» хаçат редакторӗ В.Кузьмин, Йӗпреç район администрацийӗн пуçлăхӗн çумӗ В.Михалик. ЧР Вӗрентӳ, наука тата аслă шкул министрӗн çумӗ В.Сапожников, ЧР Культурăпа национальнăçсен ӗçӗсен министрӗ В.Иванов тата ыттисем те уяв ячӗпе саламларӗç, шкулти Çемен Элкер музейне парнесем пачӗç», - тесе палăртрӗ «Хыпарта» Н.Смирнова корреспондент «Кушлавăш тăрăхӗнчи хӗвеллӗ кун» статйинче.

Мана унта çакă питӗ асра юлчӗ. «Кушлавăш текен вуникӗ ял уйне» кӗрекен Хураçырмара çуралса ӳснӗ Виталий Родионов тахçантанпах Элкер еткерлӗхне тӗпчет. Ентешӗн пултарулăхне пичетре нумай çӗнӗлӗхпе пуянлатрӗ. Купăс калама та, юрă çырма та ăста писатель-ученăй ялти фольклор ушкăнӗпе халăха тӗлӗнтерчӗ.

Хаçат писательсемшӗн, литература критикӗсемшӗн, тӗпчевçӗсемшӗн уççăн калаçмалли юратнă кил пекех пулса тăчӗ. Юрий Яковлев хăйӗн чунне кунӗн-çӗрӗн кăшлакан ыйтăвӗпе - чăвашлăхăн малашлăх ыйтăвӗпе тухса калаçса интеллигенци çыннисене хӗрӳллӗн тавлаштарса ячӗ. Чăвашăн орфографийӗпе пуканелле выляма пуçланă чӗлхеçӗсене питлесе чылайăн хăйсен усăллă шухăшӗсене уçса пачӗç.

«Халăх шкулĕн» редакцийĕнче ĕçлекен Иван Чермаков ман çума «çыпçăнчĕ». Ăна поэи ыйтăвĕсем канăç памаççĕ. Георгий Ирхине ирех шĕкĕлчесе тухнă та вăл пĕр страницăллăх тишкерÿ сăмахĕсем явса пăрахнă. Поэтăн чăваш шăпчăкне, Валентин Урташ-салтака сума суса шăрçаланă сăввисене те чиксе пынă. Сăнарлă, патриотла, илемлĕ сăмахсем куç умĕнче вĕлтлетеççĕ. Анисим Асламас юрра хывнă иккен ăна. «Именчĕк шурă шăплăхра çуралнă юрă...» статья-тишкерĕве университет студенчĕсем каçса кайсах вулаççĕ, терĕç «Илемĕн» çĕнĕ номерĕ тухнă хыççăн.

Хавхаланнă Чермаков манран тата нумайтарах ыйтма пуçларĕ: ăна темиçе страница таранах кирлĕ-мĕн. Хаçатра çапла «Поэзи - мĕскĕн хĕр, пайтах чĕнмесĕр тÿсрĕн» ятпа харкашусăр тавлашу пуçарса ятăмăр. Тавлашăвăн вĕçне Чăваш университетĕнче тĕвĕлерĕмĕр.

Хаçат страницисене тултарас кăмăллисем йышлă-ха, анчах çав лаптăка çĕнĕ çĕр уçнă пек уçса пыма пулăшаканĕсем сахалтарах. Çапах та, ăна-кăна шутламасăр, çыравçăсен ĕмĕтне тивĕçтерме тăрăшатăп. Астăватăп-ха, «Тăван Атăлта» ĕçленĕ чухнех Николай Исмуков çамрăк поэта чунтанах пулăшнăччĕ. Митта Ваçлейĕн чăваш философийĕпе аташакан Патăрьел ачи каллех ман куçран ыйтуллăн пăхрĕ. Ăнлантăм: ăшă кăмăл кирлĕ. Вырăсла куçарнă «Митта» поэмине номĕртен номĕре пичетлесе пытăм. Анатри чăвашран тав сăмахĕ илтрĕм.

Аякри ентешсенчен те çырусем килсех тăраççĕ. Акă, Ставский тыттарнă хулăн конверта уçрăм та, унта çырнине сасăпах вуларăм:

«Илем» хаçат валли Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен «Канаш» хаçат авторĕсем çинчен çырнă статьяна ярса паратăп. Шел, халлĕхе Сирĕн хаçатăра пирĕн енче çаплах çырăнтармаççĕ. Темиçе экземпляр Шупашкарта туянса килнĕччĕ, тата хăшне-пĕрне юлташсем ярса пачĕç. Çапах та чи малтанхи номĕрне курса пулмарĕ. Вăл мана вырăнти И.Я.Яковлев музейĕ валли кирлĕччĕ. Тен, тупса ярса парăр? Салампа, Анатолий Юман. Аслă Нагаткин».

Михаил Александрович «Илемĕн» пĕрремĕш номĕрне тÿрех пуш конверта чикрĕ. Эпĕ Юманăн «Сăвăçа ÿсме мĕн кирлĕ?» статйине икĕ номĕрте пичетлерĕм.

Тавлашуллă ыйтусене халăх çине кăларни хаçатăн ят-сумне ÿстерсех пырать. Писательсемсĕр пуçне музыка асамлăхĕн çын-

нисем те редакци тавра пуçтарăнчĕç. Анисим Асламас хăйне евĕр шухăш асапне уççа кăларасшăн. Майĕпен ăна пулăшса пыратăп. Иван Аршинов та пӳлĕме кĕвĕллĕ туйăм хумĕпе хускатать. «Чăваш кĕввинче чăвашлăх кирлĕ» тесе Иван Гаврилович пĕр страница тултармаллăхах шăкăртатса калаçрĕ. Акă, 8-мĕш номерте тепĕр дискусси пуçланчĕ.

Иван Гавриловича чăвашăн чăн-чăн кĕввине таçти аçтаха кĕвви путарса лартма пуçлани, çамрăк музыкантсемпе композиторсем ют юхăма кĕрсе ӳкни канăç памасть.

Унăн калаçăвĕ чăннипех хускатрĕ пулас вулакансен чунчĕрине. Ун хыççăн редакцие çырусем киле пуçларĕç. Çав тавлашуллă шухăша чăваш халăхĕн аслă калаçăвне кĕртсе ярасшăн ĕмĕтленнĕ хамăн тĕллев пурнăçланса пынишĕн хĕпĕртесе ĕçлерĕм. Тархасшăн, чуна уçсах калаçар-ха: пĕр-пĕрне хисеплесе, кӳрентермесĕр. Тавлашу ан пултăр харкашу, терĕм.

Хамăрăн кĕвĕ çуккă-шим пирĕн?

«Чăваш кĕввинче чăвашлăх кирлĕ», - тесе тĕрĕсех калать Иван Аршинов. - Таçти аякри чăнкăр-чанкăр, тăнкăр-танкăр, пăн-пан, ян, йăн-ян тăнтанлăха чăваш сцени çине те кăна мар, Чăвашрадиона та, Чăваш телевиденине те шутсăр çăмăлттайлăн кĕртсе ятăмăр пулас эпир, хамăра хамăр хисеплеме пĕлмен (тен, пултарайман!) чăвашсем. Чăваш эстради мăйăлтилĕхпе, алсулăхпа тата тăпăртатупа тулса ларчĕ. Куçа хупса итлесе ларсассăн, ăнсăртран Америкăна, Испание, Германие, Африкăна лекмерĕм-ши тесе те тĕлĕнетĕн. Куçа уçатăн та, умра сăрланнă чăваш «пикиех» çара пĕççисене çутăлтарса микрофона ĕмсе тăрать, теменĕле ăнланмалла мар чĕлхепе калаçса юрлайкаласа авăнать. Чăвашрах иккен. Вара хăлхана «Линкка-линкка авкаланма» кĕвви кĕрсе каять те, сцена çинчи тарăхтаруллă ӳкерчĕк таçта кайса çухалать.

Мана эсир ку ватă çын, йӳтенĕскер, ним ăнланмасăр лăпăртатать тесе ан шутлăр. Çамрăк эпĕ. Çирĕм пиллĕкре çеç. Музыкăна та ăнланатăп. Анчах çав шоу шăв-шавне çеç килĕштерместĕп. Украин, молдаван, тутар, чикан хăйĕн кĕввине леш тĕнчере те манма пултарайман пекех пирĕн чăвашсен те хамăрăн аваллăхран аталанса илемленнĕ тăван кĕвве нимле çăмăлттай кĕввипе те улăштарас марччĕ.

Алексей Александров.
Йĕпреç поселокĕ.

Хăй те кивелмен-ши?

Иван Аршинов «Куккукĕпе» «Çамрăк мотоциклист юрри» хыçала тăрса юлнă музыка ĕнтĕ вăл. Авторĕ те «модăрах мар» пуль. Пире халĕ Анатолий Никитинсем, Иван Андреевсем, Светлана Асаматсем кирлĕ. Чăвашрадио мĕн чухлĕ çĕнĕ туйăмлă юрăсем парать юлашки вăхăтра! «1993 çулхи юрăсем» ярăмри юрăсем чуна тыткăнлаççĕ. Мана вĕсенчен «Куçусем» ятли шутсăр кăмăла кайрĕ. Хам çинчен çырнă пекех туйăнчĕ. Кам-ши унăн авторĕ? Нотине тупасчĕ. Вĕренсе хамăн юрласчĕ, хамăн юлташсене, хĕрсене юрлаттарасчĕ.

Глеб Павлов.
Шупашкар.

Професси шайне çитмен пуль

«Эпĕ те юрăпа ташă сюити çыртăм. Анчах кам лартать-ха ăна? Çичĕ çул выртрĕ сунтăхра»,- тет И.Аршинов.

Питĕ тĕлĕнтерет-ха ку. Енчен те çав сюита шутсăр вăйлă пулсассăн, ăна Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн ертӳçи Юрий Васильев мĕншĕн сцена çине кăларман-ха? Професси шайне çитеймен пуль çав, çавăнпа, тен, ăна Патăрьелĕнче кăна лартнă.

И.Аршинов «Чăвашлăх юрри» çырма пуçланине ырлатăп. Ăнăçу сунатăп ăна.

Неонила Музыкантова.
Çĕнĕ Шупашкар.

Мĕнле телейлĕ пуль вĕсем?

Пĕтĕм чунтан, хурланса та хумханса каласа парать И.Аршинов хăйĕн музыкăри пурнăçĕ, хальхи вăхăтри музыка аталанăвĕ пирки. Арăмĕ ачисене ашшĕпе хăварса ăна пăрахса кайсан та пуçа усман композитор, хăйĕн пултарулăхĕпе çĕнĕ йĕрсем шыранă, тупнă. Анатолий Цветков сăмахĕсемпе çырнă юрри унăн халăх юрри пулса юлчĕ.

Унашкал чăваш чунне вăратма, юрлаттарма маçтăр композиторсем пирĕн юлашки вăхăтра йышланчĕç. Вĕсем чăваш музыка культуринче чăвашлăха уçăмлăн тытса пыма тăрăшаççĕ. Акă, çак уйăхăн 5-мĕшĕнче манăн Чăваш академи драма театрĕнче пулма тӳр килчĕ. Халăх лăк туллиехчĕ залра. Тăванлăх уявĕ пырать иккен. Анатолий Никитинăн «Эй, тăван, тус-тăван» ятпа пичетленнĕ кĕнекине мăнаçлăн паллă турĕç. Унăн пĕтĕм халăх юратакан юррисене паллă юрăçсем шăрантарчĕç. Арăмĕ те, аллăмĕш

шкул учительници, упӑшкин юррине Людмила Семенова артисткӑпа юнашар тӑрса юрларӗ. Хӗрачийӗ те юрӑсем ҫырнӑ. Вӗсене вӑл пӗрле вӗренекен чӑваш ачисемпе пит хитрен илӗнтерчӗ.

Ҫемье тӗрекне юрату кӑна мар, музыка та ҫирӗп кӑшӑлпа ҫирӗплетнине туйрӑм вӗсенне. Мӗнле телейлӗ пуль вӗсем?

А.Иванова, Шупашкарти
чӑлхапа-трикотаж фабрикинче ӗҫлекен.

***«Ытла намӑс мар-и-ха** - консерваторисенчен нумай пулмасть вӗренсе тухнӑ чӑваш композиторӗсем вырӑс юррисен мелодийӗсене проката илсе вӗсене хӑйсен пек кӑтартаҫҫӗ», - тесе тӗрӗсех палӑртать Аршинов. Кунашкал мыскарасене эпӗ хам та тавҫӑрнӑ, анчах ун пирки ку таранччен шавламан. Юлашки вӑхӑтра чӑнах та, чӑвашлӑх ячӗпе витӗнсе, тӗрлӗрен халӑхсен юрри-кӗввинчен вӑрланӑ шӑв-шава чӑваша пуҫ тӑррине алӑ ҫӗклесе ҫупса та, тапӑртатса та, хуҫкаланса та ирӗксӗрлесе «парнелеҫҫӗ» кашни кун ҫуралакан «чӑваш эстрадин ҫӑлтӑрӗсем». Ку сиенлӗ йӑларан хӑтӑласчӗ, халӑхран мӑшкӑллас марччӗ.*

Иван Васильев, Элӗк сали.

Пирӗн ыйтӑва тивӗҫтереймӗр-ши?

И.Аршинов «Чӑвашлӑх юрри» ятлӑ чӑвашла произведени ҫырма хатӗрленнине ҫинчен пӗлтернӗччӗ. Ҫырнӑ-ши ӑна вӑл? Кам сӑмахӗсемпе кӗвӗлет-ши? Ҫакӑн ҫинчен пӗлсе унпа паллашас килет, хамӑрӑн ансамбльте усӑ курсан та питӗ лайӑх пулнӑ пулӗччӗ ҫӗнӗ произведение.

Станислав Гаврилов, Канаш хули.

Редакцирен: Сирӗн ыйтӑва тивӗҫтеретпӗр. Акӑ вӑл, Карливан Татьянин ҫырнӑскер, кӗввине те хӑех - Аршиновах чӑвашла майлаштарнӑ:

ТӐВАН ЧӐВАШЛӐХА УПРАР-И

Чӑваш ҫӗршывӗ Атӑлпа ҫыранлӑ.
Вӑл космоса вӗҫмелӗх ывӑл панӑ.
Чӗлхи Ивановла ҫемҫе те Ҫеҫпӗлле хӑватлӑ.
Авалхи ӗмӗрсенчех чӑваш пуҫланнӑ,
Ӗмӗрсен ӑс-хакӑлне чӑваш пуҫтарнӑ,
Ӗҫлӗхпе сӑпайлӑх пӗр-пӗрне тупӑнӑ, -

Çĕр çине чăвашлăх - çĕн культура аннă.
Ĕçченлĕхпе сăпайлăхра ун вăйĕ,
Юрри-кĕвви-ташши те тумĕ хăйĕн.
Анчах чăваш тӳнтер культурăна путма пуçланă наци.
Тӳнтер культура юхăмне сивлер-и, -
Пуласлăха чăвашлăхах илер-и, -
Чăвашлăхран пуçлантăр-ӳстĕр чăн цивилизаци.

Пуш пичке шăв-шавĕ чунсене пушатрĕ,
Саркаланчăк хуçкаланчăксем çуратрĕ.
Çурма çарамаслăхран çăлсам, эй, Турă!
Çук! Çук! Чăваш валли мар çак ют культура!
Çак ют культура нишлĕхне сирер-и,
Чăн-чăн аталанушăн кĕрешер-и, -
Чăвашлăха та çынлăха хисеп туман тискерлĕх пĕттĕр!
Пуласлăха чăвашлăхах илер-и,
Чăн-чăн аталанушăн кĕрешер-и, -
Чăваш çĕршывĕ пултăр-и цивилизаци центрĕ!
Тăван чăвашлăха упрар-и!!!

Çĕр пин композитор çĕршывĕ пулса каймарăмăр-ши?

Чăваш çĕршывĕ çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ çĕршывĕ пулнишĕн эпир тĕнчипе мухтанатпăр. Анчах...

Кунĕн-çĕрĕн, кирлĕ-кирлĕ мар çĕртех кĕрлекен юрă-кĕвĕ шĕвелсе, ютланса пыни шухăшлаттармаллипех шухăшлаттарать. Анăçран юхакан çак юхăма Аршинов тĕрĕс асăрханă. Çавăнпа вăл чăваш кĕввинче чăвашлăхах кирлĕ тесе çирĕплетет.

Чăнах та, кам купăс туртма пуçланă, кам гитара пăнтăртаттарма киленнĕ, кам сцена çинче чан çапма кĕрĕшнĕ - пурте юрă çыраççĕ. Хăйсем композицине те ăнкармаççĕ-ха, пуçра юлнă тахăмăн тĕрлĕ юрă-кĕвĕ çеммипе хăйкăлтатса кăшкăрнă пекки тăваççĕ те, çав винегрета халăха сĕнеççĕ. Магнитофон пленки çине çыртарса пасарсенче, концертсенче ылтăн вырăнне хурса сутаççĕ, радио-телевиденине шăвăнса кĕрсе кассетисене укçалла тĕксе хăвараççĕ те, тĕнчене култараççĕ. Хăлхана хупласа хуратăн та вара шухăша каятăн: чăннипех çĕр пин композитор çĕршывĕ пулса кайрăмăр пулмалла эпир.

Музыка культури ӳсни питĕ лайăх. Талантлă композиторсем çурални - тата лайăхрах. Вĕсене халăх тӳрех йышăнать. Ытти çӳп-çапĕ вара...

Чăваш юрри-кĕвви ытларах та ытларах, анлăрах та анлăрах сарăлтăрччĕ. Анчах... унăн пахалăхĕ, янравлăхĕ, чăвашлăхĕ пур халăхра та хăйĕн уйрăм илемĕпе тĕлĕнтертĕрччĕ.

В.Баранов. Сĕнтĕрвăрри.

Музыкăра чăвашлăх пĕтсе пынишĕн композиторсен союзĕпе ассоциацийĕ те айăплă. *Унчченхи пек çирĕплĕх çук, профессионализма урамри, ĕçкĕри фольклор улăштарчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче, ун хыççăн та арçын сахалланса юлнипе купăс калакан та çуккăччĕ, хĕрарăмсем, кăшт-кашт сыпкаласан е çан-çурăм хĕрĕвне йăкăштатса та пулин пусарас майпа, кăмака питлĕхĕ тытса ташлатчĕç. Çавăн патне таврăнатпăр пулас майĕпен.*

Сасă янравлăхĕ те кирлех мар иккен хăйсене юрăç текенсене, хăюллăрах пулмалла çеç халăх умĕнче, сассине ăна аранжировщик текен музăкçăсем укçалла юсаса, йĕркелесе параççĕ. Яппун тата такам мур аппарачĕсем халĕ темле хăйăлтирен те ĕлĕкхи Михайлов е Утесов, Комиссаров е Охливанкин, Казакова е Чумакова туса хума пултараççĕ. Хайхи «çăлтăр» вара, качака путекки пек сиккелесе, çăвара карса кăна «талантланать». Унăн чаплăлатнă сасси унсăрах зала çурать. Тăнсăр куравçă-итлевçĕ ывăç тупанĕ хĕриччен алă çупать. Çырса илнĕ çав кассетăпа «çăлтăр» кунне вунă концерт та пама хатĕр. Ялсене çӳресе çĕр çыннисен юлашки укçи-тенкине йăкăртса таврăнать те, Шупашкар çывăхĕнче кермен лартать, питĕ хаклă çăмăл автомашина туянать, никамран чаплăрах тумланать.

Икĕ питлĕ питлĕх кĕввине никам та хуплаймасть-ха.

Римма Ильина, Элĕк районĕнчи Торпкасси ялĕ.

Эстрада юррисен хушшинче лайăххи те нумай

Эпĕ, консерваторирен вĕренсе тухман пулин те, пушарникре ĕçленĕ хушăра, юрă çырма юрататăп. Музыкăна ачаранах юратни музыкăпа пурăнни мана хавхалантарать, чунăма çĕклет. Хам сисмесĕрех чун-чĕрере çĕнĕрен-çĕнĕ, илемлĕрен-илемлĕ кĕвĕ çуралать, чăваш юррине куçать. Чи малтан çĕнĕ юрра арăмпа юрласа пăхатпăр, унтан паллă, ăста музыкçăсемпе канашланă хыççăн, халăх çине кăларатпăр: е пĕччен юрласа, е арăмпа пĕрле. Автор юрри мана питĕ килĕшет.

Юлашки вăхăтра пирĕн республикăра пултаруллă ансамбльсем хăйсен сассисене уçăмлăн янраттарчĕç. Çĕнĕ Шупашкарти «Жигули» ансамбль юррисем кăмăла каяççĕ. Пур, нумай пирĕн çам-

* răксем çырнă, çамрăксем шăрантаракан янравлă юрăсем. Вĕсенче чăваш кĕвви уйрăмах палăрса тăрать. Манăн хамăн та вĕсемпе танлашас килет. Кашни илемлĕ, чуна тыткăнлакан юрра халăх йышăнни вăл хăех композиторсен пултарулăхне тивĕçлĕ хак пани пулать.*

Олег Семенов, çамрăк композитор-юрăç.
Çĕнĕ Шупашкар хули.

Композиторы или аранжировщики?

С интересом слежу за продолжающимися в газете «Илем» откликами на статью «Чăваш кĕввинче чăвашлăх кирлĕ», а сама писать никак не решалась. Но не выдержала и не могу молчать после того, как утром 5 апреля 1994 года послушала по Чувашрадио передачу «Çĕнĕрен çырса илнĕ юрăсем». Ведь мелодию песни «Аякри тантăшăма» из этой передачи мы еще пели всем зрительным залом на творческом вечере композитора, руководителя Ассоциации чувашских композиторов Анатолия Михайлова, посвященном его 60-летию: «А Цивиль река течет, По весне в Цивильск влечет...»

Когда послушал песни Анатолия Никитина и сравниваю их с русскими, и вот так получается:

«Эй, тăван- тус-тăван...» - «Ай, дедушка, дедушка, седая бородушка...», «Урхамахсем тăраç тапăртатса...» - «Ой, вы кони, вы кони стальные...», «Хĕрарăм куççулĕ» - «Малая земля»...

Список можно было продолжить долго и невольно возникает вопрос? Как же песни могут быть по-чувашски, когда их исходным материалом являются русские мелодии? Именно против засорения чувашской музыки чужеродными интонациями выступает чувашский композитор Иван Аршинов. В этом я с ним согласна.

А песни разные важны, песни разные нужны: и эстрадные, и хоровые, и сюиты и пр. Но если они чувашские, то на чувашской основе.

Октябрина Винокурова, г.Чебоксары.

Нихçан та кивелмест

Глеб Павлов «И.Аршиновăн «Куккукĕпе» «Çамрăк мотоциклист юрри» хыçа тăрса юлнă музыка ĕнтĕ вăл. Авторĕ те халь «модăра мар» пуль», - тесе çырнăччĕ 11-мĕш номĕрте.

Çук, ку пĕртте тĕрĕс мар. И.Аршиновăн «Куккукĕ» ĕмĕрлĕх халăхра юлнă. Унăн кĕвви Анатолий Цветковăн сăмахĕсемпе пĕрле,

чăн-чăн чăваш юрри. Юлашки вăхăтра юрату нăйкăшлăхĕпе вылянчăклăхĕ çинчен çăрса тултарнă çусăр нимĕре халăха ирĕксĕрлесе талăкĕпе çитерме хăтланнă май, «Куккук» пек юрăсене радиопа та сахал пама пуçларĕç. Маншăн вара çак юрă, çемье арканнă вăхăтра, вăй кĕртекен чĕрĕ кĕвĕ пулса тăчĕ. Маншăн çеç-ши? Çĕршер, пиншер чăваш çамрăкне шухăша ярать, хумхантарать унăн чуна пырса тивекен, чĕрене ыраттарса макăртакан, çав хушăрах çирĕпленме, малалла пăхма чĕнекен юрри. Çавăнпа манăн ун сăмахĕсене «Илемре» пичетлеттерес килет.

Василий Владимиров.
Çĕмĕрле хули.

Редакцирен: Хисеплĕ В.Владимиров тата пирĕн хаçата вулакан ытти чăвашсем, сирĕн ыйтăва тивĕçтерсе, «Куккука» пичетлетпĕр.

КУККУК

Сăвви Анатолий Цветковăн (Вăрнар районĕнчи Чиркӳллĕ Хапăс ялĕ)

Кĕвви Иван Аршиновăн (Шупашкар хули)

1. Çăкалăхра вĕçет куккук,
Хăй мăшăрне вăл йыхăрать.
Ун мăшăр пур, йăвийĕ çук,
Чĕппийĕсем, чĕппийĕсем ют йăвара.
Ун мăшăр пур, йăвийĕ çук,
Чĕппийĕсем, чĕппийĕсем ют йăвара.
2. Хăй сисеймест - иртет кунçул,
Вăл авăтать сас пĕтиччен.
- Куккук, тухмасть-и сан куççуль,
Пепкӳсене, пепкӳсене аса илсен?
Куккук, тухмасть-и сан куççуль,
Куккук, тухмасть-и сан куççуль,
Пепкӳсене, пепкӳсене аса илсен?
3. Халь саншăн хăв чĕппӳсенчен
Çав йăрă мăшăр пахарах.
Кампа-ши кăмăл туличчен
Йăпанăн эс, йапанăн эсĕ ватлăхра?
Кампа-ши кăмăл туличчен,
Кампа-ши кăмăл туличчен,
Йăпанăн эс, йăпанăн эсĕ ватлăхра?
4.Ăна-кăна шухăшламасть,
Пĕр вĕçĕм авăтать куккук.

Никам та хирĕç сас памасть,
Тăван та тус, тăван та, тус та унăн çук.
Никам та хирĕç сас памасть,
Никам та хирĕç сас памасть,
Тăван та тус, тăван та, тус та унăн çук.

Чăвашланса каяççĕ

Эпĕ хам та музыкăсăр пурăнаймастăп, купăс калама, юрлама çав тери юрататăп, чăваш композиторĕсем, композитор марри-сем çырнă юрăсене пĕрмаях юрлатăп, çынсене те юрлаттаратăп.

Аршиновăн чăваш музыка культурин малашлăхĕ çинчен пуç-арнă калаçăвĕ хыççăн чăнах та туйма пуçларăм хăшин-хăшин ултавлăхĕ çинчен. Сисмесĕрех эпир чăваш сăмахĕсемпе пĕрле ытти халăхсен кĕввине янраттаратпăр иккен. Пĕрмай радио-телеви-денипе, магнитофонпа итленĕ май тата юрла-юрла çав ют кĕвĕсем хамăр халăхăн тăван кĕввисем пекех туйăнма пуçлаççĕ. Массăллăн халăх хушшине сарăлаççĕ вара вĕсем, уйрăмах - çамрăксен хушши-не. Чĕлхе вырăсланса пынă пекех, кĕвĕ те ютланса пырать-мĕн. Çак суя «чăнлăхран» хăтăлас тесен пирĕн çĕнĕ юрăсене вĕтĕ ала витĕр кăлармалла. Пĕли-пĕлми кĕвве тӳрех радиопа телевиденире мухтаса халăх хушшине сармалла мар.

Борис Никитин.
Вăрнар районĕнчи Хурăнсур.

Хаçатçăсем пĕлеççĕ те, ăнланаççĕ те, тахçантанпах тăсăлакан йăла пур журналистикăра. Мускавран е Шупашкартан сиксе тухнă чи кирлĕ, чи хăватлă йышăнăва халăх мĕнле хак панине тĕнчене сарас тĕллевпе ĕççыннисен, тава тивĕçлĕ паттăрсен ячĕпе çĕкленӳллĕ сăмахсем çырса хаçатăн пĕрремĕш страницисене тул-тараттăмăр, вĕсен шухăшĕпе хăйсемле выляттăмăр. Хаçатра питĕ кирлĕ ыйту, проблема тавлашăвĕ пуçарса янă хыççăн та такам ячĕпе тăнран кайса калаçатăн, хăвăн шухăш-ĕмĕтне унăн шухăшĕ тесе вулакана ĕнентеретĕн. Унсăрăн май та çук. Чăвашăн пĕчĕк çĕршывĕнче анлă çĕршыври, Мускаври пек мар-çке, кĕтсе лар-ха вулакан вăранасса, эс панă хаяр е тутлă шĕвекпе хĕрессе е пылакланса ирĕлессе редакцире. Эпĕ те яланхиллех ăшталантăм, «Илемĕн» кашни номерĕ валли «пӳрнерен ĕмсе» шухăшлавлă çырусем «çыртăм», чăваш кĕвви, чăваш музыки пирки пуçра капланнине халăх тинĕсне кăларса ярса савăнтăм, кăштах лăплантăм. Анисим Асламас çеç, мана ку ыйтăва вăхăтра хус-катнăшăн ырласа, хăй аллипех çырса пачĕ. Чăвашла яках тух-

мастчĕ пулас та унăн, вăл ялан вырăсла çырать, нумай, хаяр çырать. Вăл, халăхра чăваш композиторĕсемех текеннисенчен пĕри, чăваш музыкин аталанăвĕшĕн пĕтĕм хăвачĕпе хаярлансах çине тăрать, ăна хакламаннисемпе, хăйне хисеплемен путсĕрсемпе юлашки вăйĕпе кĕрешет. Авă епле çивчĕ унăн хĕç-пăшалĕ:

Нужна ли национальная гордость?

Без национальной гордости нет художника-гражданина. У чувашей, находившихся столетиями под игой других народов, она почти начисто отсутствовала. Только после Октября, когда была, получена автономия, начала она появляться.

Робость, покорность, честность и скромность, присущие чувашскому народу, дали возможность представителям других народов «командовать» нами в своих интересах. Не пора ли нам защитить себя от всякого рода глумления. Лично я, например, захода в театр оперы и балета, филармонию, музучилище, даже в музфак пединститута, не чувствую как у себя дома. Здесь открытое, демонстративное пренебрежение к чувашскому, национальному музыкальному искусству. Да и в ведущих музшколах и школе искусств г. Чебоксары такое же отношение. Все это зависит от Министерства культуры и межнациональных отношений и его политики. В учреждениях музыкальной культуры, в руководстве должны быть люди компетентные - и обязательно коренной чувашской национальности, душой болеющие за культуру своего родного народа. У нас немало таких одаренных людей.

Кто сегодня командует театром оперы и балета? Кто командует филармонией? Надо же честь знать и совесть иметь. Бородин, признанный композитор во всем мире, себя не считал композитором, считал лишь любителем. А в газетах трезвонят и по радио шумят у нас о любителях или начинающих музыкантах как о ведущих композиторах Чувашии. Я бы обиделся, если меня назвали бы ведущим агрономом республики, хотя и тружусь иногда на садовом участке. Не следует путать музыкальное искусство с художественной самодеятельностью и фольклором, как это было раньше при старом руководстве министерства культуры. Надо создать «Ассоциацию любителей музыки» («АЛМУЗ»), куда вошли бы все нынешние союзы, ассоциации, общества во главе с признанным чувашским музыкантом. За подлинный расцвет культуры надо бороться так, как настойчиво боролся наш великий чувашский просветитель И.Я.Яковлев.

Я полностью согласен с Иваном Аршиновым. Он — за подлинную чувашскую музыкальную культуру. Прежде всего надо разорвать «круговую поруку» в чувашском музыкальном искусстве. Не надо из зависти друг к другу жертвовать развитием музискусства родного народа. Еще Михаил Сеспель призывал к сплочению чувашей. Почаще надо выступать по радио и телевидению, в печати подобно старейшему талантливому чувашскому поэту Георгию Ефимову в защиту родного искусства и литературы. Не надо обижаться на то, что приходится иногда делать замечания самодеятельным бардам. Нельзя сутками кормить людей «недопеченным пирогом».

Когда идет планомерный развал экономики и культуры, нам нельзя молчать и бороться с теми, кто этим занимается. Бездуховность нации - это гибель ее.

Итак, нужна ли нам национальная гордость?

Анисим Асламас, заслуженный деятель искусств Российской Федерации и Чувашской Республики, участник Великой Отечественной войны.

* * *

Хаçатра калаçса ывăннă хыççăн, чăваш халăхне ернĕ хăрушă чир пирки куçа-куçăн тавлашас килчĕ. Иван Аршинов та мана хĕтĕртет. Анчах пире Культура министерствинче те, Чăваш композиторĕсен Союзĕнче те, композиторсен Ассоциаци текен кĕтĕвĕнче те кăмăллăн ală паракан пулмарĕ. Шухăшлавлăх çил-тăвăлĕ майĕпен лăпланчĕ. Пуш параппансемпе питлĕх кĕвви ют патшалăхсеннинчен те хăватланса пычĕ, «çăлтăрсен» сассисем кăна тĕнче юрăçисен янравлăхне çитеймерĕç, музыка шавĕнче кăмари сĕрлевĕ хутăшса пăчланчĕ, йăлтăркка тумпа авкаланакан пике-юрăç пĕççисем çӳлерех те уççăнрах çуталса астарчĕç...

Чăн-чăн чăваш кĕвви мар, ют çĕр кĕвви - астаруллăх шавĕ - кирлĕ иккен паянхи чăваш хунавне. Шел, тăванлăх хĕрĕвĕ усăсăр сая каять, наци культурине малалла чечеклентереймест. Мĕн тăвăн, шухăшпах чунăма лăплантарма, малашне мĕн пулса тухасса кулянса кĕтмелле пулать.

«Илем» хускатнă шав çапах та халăхра паян кунччен те шăпланмасть, вăл пурнăç шухăшлавне тарăнах кĕрсе юлнă иккен. Кăмăллăх сăнарĕ.

Кун кӗнекинчен.

Июлӗн 12-13-мӗшӗ.

Ку шухӑш тахҫанах, икӗ-виҫӗ уйӑх каяллах, ман пуҫра ҫуралнӑ, ӑна эпӗ хут ҫине те шӑрҫаласа хунӑччӗ. Тӗп шӑнӑрӗ ҫакӑнта: чӑваш халӑхӗн ӑсхакӑл хаҫатне Чӑваш наци конгресӗ, Чӑваш аталану партийӗ, Тӗрӗк халӑхӗсен Ассамблейи, Чӑваш Республики писателӗсен Союзӗ тата ытти обществӑлла организацисем пулӑшнипе кӑна чӗртсе пыма, халӑх хушшине анлӑ сарма пулать.

Ӗнер Советсен ҫуртӗнче тӗрӗк халӑхӗсен Ассамблейин (ТХА) пуҫлӑхӗпе Вячеслав Александрович Тимофеевпа тӗл пулса калаҫрӑм. Эпӗ ӑна ҫитес вӑхӑтрах Атнер Хузангайпа, Хветӗр Агиверпе, Николай Лукьяновпа (ЧАП) пӗрле сӗтел хушшине ларма палӑртни ҫинчен пӗлтертӗм. Вӑл хавасах пулчӗ. Халӗ ыттисемпе канашламалли ҫеҫ юлать.

Унсӑрӑн «Илеме» патшалӑх тӳпинчен никам та пулӑшмӗ. Вӑл халӗ, хамӑршӑн тата вулакансемсӗр пуҫне, никама та кирлӗ мар.

Хаҫат мӗнлерех пулмалла?

1. Чи малтан ӑна Раҫҫей каталогне кӗртмелле.

2. Редакци Канашне тумалла.

3. Редакцире чӑваш культурипе нацисем хушшинчи ҫыхӑнусен пайне ӗҫлеттерме тытӑнмалла (штатра ҫын кирлӗ).

4. ЧНК, ЧАП, ТХА пулӑшнипе хаҫата патшалӑх пулӑшӑвӗ парассине саккунпа ҫирӗплетмелле.

5. Ятне улӑштарса, «Чӑваш Хӗвелӗ» тесе памалла.

Тем тӗрлӗ те шухӑшлатӑп, хаҫат, вуланӑ хыҫҫӑн, мӗн те пулин чӗркеме е шӑлма, макулатурӑна пама, е чӑмӑрккаласа пӑрахма кӑна паянхи япала вырӑнне ан пултӑрччӗ, пичетленнӗ хайлавсем нумай вӑхӑтлӑха усӑ кӳрсе пурӑнччӗр, тесе ӗнтӗ чи лайӑххине пичетлес килет. Шырасан-шырасан... Акӑ, тепӗр ҫӗнӗ ярӑм ячӗ тупӑнчӗ.

«Асран кайми асаилӳ», «Асран кайми аваллӑх», «Асаилӳн кӳлли тарӑн (пуян)», «Асаилӳн хапхине уҫсан», «Асаилӳн хапхи аслӑ», «Аваллӑх арчи (арчине уҫсан)...» «Аваллӑх арчинчи ахах» ят шӑранса тухсан, пуҫ мими урӑх пӗр путлӗ шухӑшлав та памарӗ, хаҫат вара ҫакна йышӑнчӗ - тепӗр рубрика уҫӑлчӗ.

«Культурӑна савакансен клубӗ (КСК) уҫассипе тӗрмешетӗп. Унта ҫак ярӑмсем пулаҫҫӗ:

Эстетика урокӗсем (Илем Илемпийӗн сӗнӗвӗсем).

Музыка тӗнчи (Купӑс Йӑванӗ юрлаттарать-ташлаттарать).

Чаршав уҫӑлсан (Ухтер Мучи асаилӗвӗсенчен).

Сӑнарлӑх тӗкӗрӗ (Праски Витти чӑваш тӗнчин тӗррине тӗрлет).

Юлашки сраницӑра «Ха-ха!» сценине шавлаттарасшӑн. Унта Иван Мучипе Лапшу Ҫтаппанӗн «Ку тӗрӗсех-ши?», Ухтер Мучин «Юрлас-и, юрлас мар-ши?», «Кӗлпук Мучин «Сысна кӑнтӑрли», Капкӑн Енӗшӗн «Кулӑш пасарӗ», Тимӗр Улатимӗрӗн «Ҫӳп-ҫап шӑтӑкӗнче» камичӗсене лартатпӑр.

Хаҫатӑн хӑйӗн «Турӑ кӗтесӗ» пулать. Ӑна сӑвапласа тӑма Шупашкар районӗнчи Мӑнал чиркӗвӗн пупӗпе Йӑван аттепе-Иванчинпа килӗшсе татӑлтӑм.

Пуҫра «Илем» шухӑшӗ ҫеҫ, хамӑн пулас хайлавсен геройӗсем те вӑхӑтлӑха тапӑрта канаҫҫӗ, чарусӑртараххисем кӑна калав-повеҫре, романра хушӑран халӑх умне сике-сике тухаҫҫӗ.

«Иртнӗ эрнере эпир хамӑрӑн ҫывӑх юлташа, пичетре нумай ҫул хушши пӗрле ӗҫленӗ, туслӑ пурӑннӑ Алексей Гаврилович Крысина ҫуралнӑ Муркаш районӗнчи Пӑсӑрман ялне илсе кайса юлашки ҫула ӑсатрӑмӑр. Ҫуралнӑ кунне пӗрле, юнашар ларса савӑнӑҫлӑн паллӑ тума хатӗрленнӗ вӑхӑтра...

Ҫу варринчи хӗвеллӗ кун унӑн килйышӗшӗн, тӑванӗсемпе хурӑнташӗшӗн, тус-юлташӗсемпе ҫывӑх ҫыннисемшӗн тата паллӑ журналиста сума сӑвакансемшӗн ытла та йывӑр, хурлӑхлӑ кун пулчӗ. Ун пирки Алексей Крысин пурӑннӑ Шупашкарти Мичман Павлов урамӗнчи хурлӑхлӑ митингра та, ял масарӗнче те, асӑну апат сӗтелӗ хушшинче те «Эхо» («Ахрӑм») юлташлӑхра пӗрле ӗҫленӗ юлташӗсем А.В. Порфирьевпа А.Г. Волков, пиччӗшӗ И.Г. Крысин, тӑванӗ П.А. Крысин, вӑтӑр ҫул каялла Чӑваш ялхуҫалӑх институтӗнчен пӗрле вӗренсе тухнӑ, халӗ Чӑваш Республикинчи профсоюзсен комитечӗсене ертсе пыракан П.В. Ивантаев, «Коммунизм ялавӗнче» («Хыпарта») нумай ҫул хушши пӗрле ҫӗрӗн-кунӗн ывӑнмасӑр хаҫатшӑн тӑрӑшнӑ И.М. Матросов, А.П. Казанов, В.Н. Николаев, С.А. Карягин, В.Л. Никитин-Станьял. Ҫывӑх юлташӗсем В.П. Кузьмин, И.К. Ксенофонтов, Г.Т. Тимофеев, А.Я. Кушев, Муркаш районне тата унти хуҫалӑхсене ертсе пыракансем, тантӑшӗсем, ытти ҫынсем те унӑн килти, ҫемьери, ӗҫри, халӑх хушшинчи кӑмӑллӑхӗпе чунлӑхне, ӗҫченлӗхӗпе пултарулӑхне, ҫынлӑхне чунран хурланса палӑртрӗҫ.

Алексей Крысин яланах ҫул ҫинче, халӑх хушшинче ӗҫпе пулнӑ. Унӑн пери ҫивӗччӗ, чӗлхи сӑнарлӑччӗ, ӗҫ йӗркелес таланчӗ питӗ пысӑкчӗ. Мӗн чухлӗ ҫынна, организацие, коллектива пулӑшман пуль ырӑ кӑмӑлӗпе хӑйӗн кӗске ӗмӗрӗнче. Пирӗн «Илем» хаҫата кӑлар-

машкăн та хаçат хучĕ парнелерĕ вăл. Тавах ăна ЧР писателĕсен Союзĕ ячĕпе.

Салтакран килсен Вăрнар райхаçатĕнче ĕçленĕ чухнех паллашнă та эпĕ ырă кăмăллă Муркаш ачипе, юлашки вăхăтченех туслăха çухатман.

Пĕр çулне вăл Вăрнара пырсан Виссарион Кожанов тунă ўкерчĕк ал айне лекрĕ (сулахайран сылтăмалла): «Çĕнтерў çулĕ» хаçатăн редакторĕ Михаил Васильев, РОВД начальникĕн заместителĕ, халĕ Шупашкарти милици шкулĕнче ĕçлекен Леонид Ананьев полковник тата Алексей Крысин. Туслăччĕ вĕсем.

Уйрăлу сăмахĕ çăмăл мар. Çывăх çынран уйрăлма пушшех йывăр. Йывăр тăпру çăмăл пултăр, çывăх юлташăмăр. Чăваш журналистикинче паллă йĕр хăварнă пултаруллă çыравçă яланлăхах халăх асĕнче юлĕ.

Владимир КУЗЬМИН. «Илемре» пичетленнĕ.

Ĕç кĕнекинчен.

Сентябрĕн 13-мĕшĕ.

Хаçата кăларма йывăрлансах пырать. Чупса çўресе хăшкăлтăм. Çĕнĕ Шупашкарти «Хўтлĕх» («Защита») акционер страхобществи 500 пин куçарса пачĕ. Çак укçапа 32-33-мĕш номĕрсене

кăларса ятăм пĕрлештерсе. Тавах хамăрăн Çĕрпел ял Советне кĕрекен Кайри Тукай ачине Виталий Аркадьевич Матвеева. Ентешлĕх туйăмĕн вăйĕ самаях пулăшать иккен.

Çитес çул валли подписка пĕлтертĕмĕр. Çур çуллăх çырăнма - 6200 тенкĕ.

Тата ăçтан укçа тупмалла-ши?

Чӳк уйăхĕ.

«Чувашия» издательствăна 3 миллион ытла кивçене кĕнĕ. Раççей пичет министерстви ярса панă укçапа ăна саплаштартăм.

Унччен, авăн уйăхĕнче, хамăрăн Пичет министрĕ П.Краснов патĕнче («Чувашия» хăна çурчĕ çумĕнчи çуртра) пĕччен виçĕ хутчен, Хв.Агиверпе тепре пултăм. Петр Степанович ыйтнипе мана хаçат тăкакĕсен шутне палăртакан хут илсе пытăм. Калаçу тил юрттиллех пыратчĕ-ха... Краснов пӳлĕмсем пирки сăмах пуçариччен. «Тăван Атăл» редакцийĕн 8 пӳлĕм, ĕçлекенни - 8 çын. Улпутлах пурăнаççĕ ĕнтĕ. Министра, кăмпа пек карталанса шăтакан хаçатсем валли, аренда шучĕпе, икĕ пӳлĕм кирлĕмĕн. Вĕсене вăл шăпах Агивертен ыйтса илесшĕн пулчĕ. Федор Георгиевич кутăн качака пек пуçа пăркаларĕ. Петр Степанович та майракисене çутатрĕ. Мăн пӳлĕмре икĕ мăнттай кукалеççĕ, пĕрне-пĕри ентешле-каçалла çамкаран шаклаттараççĕ те шаклаттараççĕ. Эпĕ тӳре вырăнĕнче, ăшра кулкаласа, çапăçу мĕнпе вĕçленессе кĕтсе ларатăп.

Вл.Кузьмин Каçал енсен «Качака такисем» траги-комедине курать.

- Кам эс, шутласассăн?..

- Министр. А эс ху тата кам?

- Писательсен Союзĕн пуçлăхĕ. Эс хăвна çĕр кăвапи вырăнне хуратăн.

- Эпĕ мар, эсĕ тахçанах хăвна çĕр кăвапи вырăнне хума тытăннă. Никама та итлеместĕн. Никампа та килĕшместĕн. Çав анлă пӳлĕмсене икшер çын лартма май килмест-и? Юрĕ, пĕр пӳлĕмне çеç пар пире, теприне «Илем» редакцине вырнаçтар. Мана ку çырлахтарать. Килĕшсе алă тытар-и?

- Çук, килĕшместĕп. Эс - паян министр, ыран... сана халăх манать. Мана - писателе... халăх ĕмĕрĕпех асра тытать.

Краснов ман еннелле шеллевлĕн пăхса илчĕ те:

- Ме, тыт апла счетна! - тесе, эп панă хута писательсен пуçлăхне персе пачĕ.

Икĕ така хушшинче выртакан лӳчĕркеннĕ хута çĕклесе эпĕ кĕрешӳ пӳлĕмĕнчен салхуллăн тухрăм. Редакцин 10 миллион тăкакĕ саплашăнмасăрах юлчĕ.

Ун хыççăн иккĕ те кĕрсе калаçрăм министрпа. Петр Степанович мана яланхиллех ăшшăн йышăнать, сăмаххи çеç пĕрешкел:

- Пӳлĕм пирки Агивере ӳкĕте кĕртĕр, вара сире тата ытларах пулăшу пулать.

Мĕн тăвăн ĕнтĕ кутăн каçтакана, Агивер Краснов умĕнче шлепкине те хывмасть, пуçне те çапмасть. Пирĕн - тӳсмеллех.

1995 çул.

Ĕç укçи илейместĕп. Мускав укçипе кăштах усă курса юлтăмăр. Çĕнĕ çул парни турăмăр.

Агивер мана, кăштах пулăшас тесе, «Тăван Атăла», проза пайне ертсе пыма, çур ставкăпа илчĕ, коридор вĕçĕнчи 601-мĕш пӳлĕме кĕртсе лартрĕ. Эпир Федор Георгиевичпа çине тăрсах банксем тăрăх чупатпăр. «Чувашкредипромбанк» пĕлтерӳ шучĕпе 6300 пин, «Приволжский» банк 5 миллион куçарчĕ. Кăштах ĕç укçи те илтĕмĕр. Пĕрремĕш типографире писательсен сьезчĕ умĕн икĕ номер хăпартлансах кăлартăм. Пĕр номершĕн (2 пичет листи) 1300 пин тенкĕ тӳлетĕп. Союз правленийĕнчен мĕнле мăшкăлланине çак цифрăпа 17 миллион питĕ аван ăнлантарса параççĕ.

Пултарулăх союзне «пултаруллă демократсем» ахăра-ахăрах Йăлăм шурлăхне путарчĕç. Вĕсене, халăх илемне таптаса çăрнăшăн, литературăпа искусство, культура ĕçченĕсем, аçтаха-

на ылханнă пек ылханаççĕ. Эпир, «Илем» хаçата вулакансен ячĕпе, «Чувашкредитпромбанк» хуçине, Канаш ен паттăрне В.В.Гурьева, «Приволжский» пуçлăхне, Элĕк ачине Г.Г.Ордеева, халăхра ĕмĕрлĕх ырă ят хăварнăшăн, ăнăçу та, çирĕп сывлăх сунатпăр. Вĕсен ячĕ ĕмĕрĕпех чăваш чунне ăшăтса тăтăрччĕ.

Кăçалхи 1-мĕш номĕрте Чăваш Республики писателĕсен союзĕн председателĕ Ф.Г.Агивер «Терт» статьяра çапла çырчĕ: «Писательсем, ӳнер, кĕвĕ-çемĕ, театр тĕнчине калăплакансем пуртепурте «Илем» хаçатра хăйсен хăтлă килне тупрĕç. Яшши те, ватти те. Тăван Республика пуçĕнчи тăван культурăшăн яваплă хĕсмет укçине илсе тăракансем çеç «Илем» хаçата чăваша кирлĕ мар хаçат вырăнне хучĕç, вăл таптанса пăчланасса, пурнăçран çухаласса ĕмĕтленчĕç.

Илем пурне те иленмест, Илеме иленесси - терт. Пурăнтăр «Илем» те, пурин чунĕ-чĕрине те ырă шанăç сĕнсе чăваш тĕпелне чыс-сум кĕрттĕр.

«Илем» хаçатăн тепĕр çаври пуçланчĕ. Ку çавра Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн черетлĕ XVI сьезчĕ умĕн тапранать.

Çавра пуçĕнче - «Илем» хаçатăн тĕп редакторĕ Владимир Кузьмин. «Илем» шăпи пекех хаçата пурăнтарас, ăна çăлса хăварас кăмăлĕ те унăн чăтăмлă. Пур-çук укçапа йӳнеçкелетпĕр пулин те, еслă пиччемĕр Петĕр Хусанкай калашле «малта йăлтăртатать-ха шанчăк». Чăваш енчĕкĕн кантрине тытса тăракансем чăваш халăхне писательсем те, вĕсен хайлавĕсем те, вĕсем çуратнă «Илем» хаçат та кирлĕ мар тесе ăссăр кăмăлпа хĕрĕнеççĕ пулсан, писательсем те, халăх чунĕн çулпуçĕсем, пĕр йӳçсе тăкăнакан тарăхăвĕпе çапла калаççех: эсир, капласкерсем, хăвăр кама кирлĕ? Ырра çул парăр!»

«Илем пулнă, пур, пулать те. «Илем» тухнă, пур, тухать те!» - тесех çырса кăлартăм та çав çакă 38-мĕш номĕре...

Хаçатăн утăмĕ малах каяймарĕ. Кăçалхи 3(40)-мĕш номĕре Иван Мучин 100 çулне халалларăм, ум-кăларăмĕнче «Иван Мучин аван мунчине» хутса ятăм. Вуламалли вăйлă хаçатах тухрĕ авăн уйăхĕн 27-мĕшĕнче. Акă мĕн çинчен вуласа-кулса чунне кантарчĕç сынсем: «Иван Мучи «Иван Мучи мар» текен суеçĕсем çинчен, Иван Мучин «Пăрçа» калавĕ, Кĕлпук Мучи, Ухтер Мучи Иван Мучипе Ехрем хуçа çуртĕнче. Чăваш культурин ĕçченĕсене хăйăрлă арпа кам çитерет, Иван Мучи Чапаевпа, Ленинпа, Илемпипе тĕл пулни»...

Çапла, кампа кăна тĕл пулса калаçмарăм-ши, кама кăна телефонпа е çырупа чăрмантармарăм-ши ку хаçатшăн: Чăваш халăхĕн «всенародно избранный» президентне Николай Федорова «О, мой народ!..» одине вуланă вăхăтра, Чăваш Патшалăх Канашĕн патшине В.С.Шурчанова «Мана президента суйласассăн эпĕ чăваш литературипе искусствине Андриян Николаевичран та çӳллĕрех шая çĕклетĕп» тесе шантарнă кунсенче, Раççей Федераллă Пухăвĕн председатель çумне В.Н.Викторова «Эпĕ чăваш пулсан та, Мускавра та не йăваш», тесе модăллă кунтăк шлепкине Хĕрлĕ площадь чулĕ çине çавăрса çапнă» чухне, ЧР Патканашĕн комитет председательне Г.Н.Архипова культура, халăха вĕрентес ĕç, наука, нацисем хушшинчи çыхăнусем тата информаципе çыхăну букварьне саспаллин-саспаллин вуласа каçуннăй пӳлĕме шăршлантарнă кунсенче, Патканашăн тепĕр комитетне ертсе аыракан Н.В.Селиванова бюджет, налук, укçа пуххи, банк юптарăвĕсене çырма кансĕрлесе, ЧР информаципе пичет министерствинче камит лартма пуçланă Ф.И.Шарков министра тата кама-кама кăна мар-ши? Пĕринчен те «Илем» пирки илемлĕ сăмах илтеймерĕмĕр. Мускавран та хурлăхлă хыпар килчĕ: «Ваша просьба о выделении финансовой помощи газете «Илем» рассмотрена в Комитете РФ по печати. К сожалению, вынуждены сообщить, что по Закону о федеральном бюджете на 1995 год предусмотрено выделение госдотаций лишь ограниченному кругу изданий: для инвалидов по зрению, детей и литературно-художественным журналам. В связи с этим оказать государственную поддержку газете «Илем» не представляется возможным.

Зам. начальника Управления
средств массовой информации М.Шайков».

Пуçа ал арманĕ пек çавăрттарнă-çавăрттарнă май, ырă шухăш та кĕрпеленсе тухать. Чӳкĕн 17-мĕшĕнче республикăри ялхуçалăх ĕçченĕсен кунĕ пулмалла. Кайрăм Федотов министр патне. «Илемĕн» ятарлă номерне кăларма килĕшсе татăлтăмăр. Александр Иванович ялхуçалăх предприятийĕсене ертсе пыракансем патне çыру çырма сĕнчĕ, унта хăй те алă пусать. Çапла турăм та. Муркаш районĕнчи Евтихий Андреев ячĕллĕ колхозран 2 миллин куçарса пачĕç те... урăх ниçтан та пĕр пус килмерĕ.

Хаçатне, министерствăн информаци енĕпе ĕçлекен Петр Сидоров тата Семен Игнатьев фотокорреспондент пулăшнипе

вăхăтрах, хитрех кăларса ятăм, 1-мĕш типографирен тӳрех опера театрне, ял ĕçченĕсен уявне çитерсе патăм. 1500 пине ларчĕ.

Çапла «Илем» хĕрĕх пĕррере...

Юлашки номер ан пултăрах тесе тата тем те шухăшлатăп.

Предпринимательствăна тата халăх ăсталăхне аталантармалли çĕнĕ министерство тусан, ăна Вăрнар районĕнчи Аслă Тăвальyшкăнь ялĕнчи пултарулла чăваш Владимир Евсеевич Федоров ертсе пыма пуçларĕ. Ун патĕнче темиçе те калаçрăмăр. «Илем» çумĕнче «Аласти» хаçат кăлармалли бизнес-план туса хатĕрлерĕм. Министерствăн хăйĕн укçи çук, Предпринимательсене пулăшакан республика фончĕ, Илемлĕ аласти ассоциацийĕ, Предпринимательсен канашĕ, Суту-илӳпе промышленность палати иккĕленсе тăчĕç. Федоров патĕнче пухăнса канашларăмăр - ĕç тухмарĕ.

ПЛАН-БИЗНЕС ИЗДАНИЯ ГАЗЕТЫ ПРЕДПРИНИМАТЕЛЕЙ, ХУДОЖЕСТВЕННЫХ ПРОМЫСЛОВ И РЕМЕСЕЛ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ПРОГРАММА:

Перспективы сохранения, развития и возрождении художественных промыслов и ремесел в дальнейшем усилении роли социально-экономической и культурной жизни чувашского народа.

ЦЕЛИ И ЗАДАЧИ:

Пропаганда наследия традиционного народного искусства - декоративно-прикладного творчества мастеров.

Знакомство с историей развития народных промыслов и ремесел.

Проблемы сохранения, возрождения и развития традиционных художественных промыслов.

Современное состояние и перспективы усиления, государственной поддержки предприятий, выпускающих товары народного потребления с художественным уклоном, единичных мастеров и мастеров предпринимателей.

Восстановление старых и открытие новых центров художественных промыслов и ремесел, природных ресурсов.

Традиции народного искусства и создание системы подготовки мастеров прикладного художественного творчества.

Очерки, рассказы о народных мастерах.

Непрерывная связь деятелей культуры, литературы и искусства с мастерами народных промыслов и ремесел.

Массовое распространение передового опыта мастеров и лучших образцов художественного мастерства в народе.

ИСПОЛНИТЕЛИ:

Редакция газеты «Илем» - предприятие общественной организации Союза писателей Чувашской Республики.

Республиканский Фонд поддержки малого предпринимательства.

Ассоциация мастеров народных промыслов и художественных ремесел Чувашии.

Министерство по развитию предпринимательства и ремесел Чувашской Республики.

ФОРМА, ОБЬЕМ И ИСТОЧНИКИ ФИНАНСИРОВАНИЯ:

Периодичность - 2 номера в месяц.

Формат А-3.

Обьем - 3 условно-печатных листа, 12 стр.

Разовый тираж — 3000 экз.

ФИНАНСИРУЕТСЯ: Предпринимательским фондом, Министерством и Ассоциацией.

Смета расходов на издание прилагается. Издание нерентабельное.

ОЖИДАЕМЫЕ РЕЗУЛЬТАТЫ:

Оказание помощи Министерству по развитию предпринимательства и ремесел Чувашской Республики, Ассоциации мастеров народных промыслов и художественных ремесел Чувашии, Союзу предпринимателей Чувашской Республики в выполнении Закона

Российской Федерации «О предприятиях и предпринимательской деятельности», Закона «О государственной поддержке малого предпринимательства в РФ, Закона ЧР «О государственной поддержке малого предпринимательства в Чувашской Республике» и государственной программы «Сохранение и развитие культуры и искусства Чувашской Республики в 1994-2000 гг.»

РАСПРОСТРАНЕНИЕ:

Через представителей Министерства, районных и городских агентств поддержки малого предпринимательства, агентство «Чувашпечать» и по подписке.

ПЕРВАЯ НЕОБХОДИМОСТЬ:

Для организации выпуска первых номеров и на приобретение газетной бумаги и предоплаты типографии, необходимо перечислить на расчетный счет редакции газеты «Илем» 15 (пятнадцать) миллионов рублей.

РЕКВИЗИТЫ РЕДАКЦИИ:

428019, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13, 6-й этаж, комн. 601.

Расчетный счет №363411 в АО «Чувашкредитпромбанк» г.Чебоксары, МФО 049706725, корр. счет 700161225, инн 2128006553, на издание газеты культуры чувашского народа.

Главный редактор газеты «ИЛЕМ» В.П.КУЗЬМИН.

«Илем» çумĕнче чăваш ентешлĕхĕсен «Туслăх» хаçачĕ кăлармалли план та туса хатĕрлерĕм, ăна ентешлĕхсен пуçлăхĕсене валеçсе патăм. Килĕшекенни тупăнмарĕ.

«ТУСЛĂХ» - ЧĂВАШ ЕНТЕШЛĔХĔСЕН ХАÇАЧĔ

Чăваш халăхĕн культура, ăсхакăл хаçачĕ «ИЛЕМ» çумĕнче тухать

ТĔЛЛЕВĔ: Шупашкарта тата Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан чăвашсем юлашки вăхăтра хăйсен пĕрлĕхне çирĕплетсе обществăллă, социаллă, культурăллă пысăк вăй пулса тăчĕç. Республикăра, тĕп хулара, районсенче пулса иртекен аталану çĕкленĕвĕнче ентешлĕхсем çĕнĕрен те çĕнĕ курăмлăх кăтартаççĕ. Тунă ĕçе, мĕн палăртнине чăваш тĕнчине сарма эфир та, пичет страницисем те тăвăр. Кашни ентешлĕхĕн хăйĕн ырри, мухтанмалли, пĕрле сӳтсе явмалли ыйту темĕн чухлех. Ытларах çак ыйтусем мала тухаççĕ:

- Ентешлĕх - тăванлăх, туслăх, çирĕплĕх, пулăшу, аталану.

- Ăсхакăл, культура, литература, искусство, наука, еткерлĕх, малашлăх.

- Ĕçри ӳсĕм, пурнăç телейĕ, мул, пуянлăх, ырăлăх, ватлăх, социаллă хӳтлĕх, хурăнташлăх.

- Халăхсем хушшинчи туслăхпа тăванлăх, атте-анне, тăван ял, çуралса ӳснĕ, пурăнакан çĕршыв туйăм сипечĕ, тивĕçлĕх.

- Тулай чăвашĕсем - хамăр ентешсем.

ЙĔРКЕЛĔВĔ:

Обществăлла Канаш - кашни ентешлĕхрен пĕр çын, редакцие пулăшма - тепĕр çын

Ентешлĕхе ертсе пыраканĕ «Илем» редакцийĕпе килĕшӳ тăвать.

Хаçат кăларăмĕ е уйрăм ентешлĕхĕн ятарлă кăларăмĕ Чăвашпичет, ентешлĕх канашĕсем, районсен администрацийĕсем урлă тата ытти майсемпе те вулакансем патне çитет.

УКÇА-ТЕНКĔ САПЛАШĂВĔ:

«Туслăх» кăларма килĕшекен ентешлĕх малтанах, килĕшӳ тунă хыççăн, «Илем» редакцине 3 миллион тенкĕ куçарать, ку суммăна куçарнă хыççăн тепĕр уйăхран кашни уйăхра 1 миллион парса тăрать.

«Илем» хаçатăн тĕп редакторĕ В.П.Кузьмин.

* * *

Малтан «Илеме» хăйсем çеç кăларма пултарас текенсем те, ăна кăларма йышăннă чăвашсен Писательсен союзĕ те, Союзне ертсе пыракансем те çурăмпа çаврăнса тăчĕç, Культура министерстви те пулăшма шутламарĕ. Ман хăлхара пĕр хурлăхлă сасă: «Темле йывăр килсен те, укçа шыраса тупса, пуçланă ĕçе малаллах тăрăшса туса пырăр...» Манăн вара, ĕç укçисĕр тапаçланса пурăнаканскерĕн, çынсенни пек пуçа тăхăнмалли те, костюм, пушмак илмелли те ниçтан укçа тупма çук. Арăмăн, учительницăн ĕç укçийĕ те, мана, хăйне тата икĕ ачана выçă вилесрен çăлса хăвармалăх кăна. Ыйткалакан хутаççи çактарчĕ мана çапла чăвашсен ăсхакăл хаçачĕ. «Илем» пирĕншĕн «Выçлăх» пулса тăчĕ.

Кам кунашкал нушана тӳссе курнă - ăнланать. Кам ăнланманни - паянхи кунччен çурхи шапа пек ахăрса савăнать.

Хаçат кăларнăшăн тӳлемелли парăмсенчен еплерех хăтăлса пынине аса илсессĕнех ăш вăркама, чун тăвăрланма, чĕре сикме тытăнать. Налук инспекцийĕ пуçран виличчен те каймасть пулĕ. Пурнăçри чи хумхануллă та чăтма çук йывăр вăхăт пулчĕ вăл маншăн, пирĕн çемьешĕн. Юрать юлашкинчен умри тарăн шăтăк умĕнче чарăнмалли самант сиксе тухрĕ. Вара çакăн пек документ çуралчĕ:

Илем

ЧТО ЖДЕТ НАС ВПЕРЕДИ

АРБИТРАЖНЫЙ СУД ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Именем Российской Федерации
Решение

г. Чебоксары, 6 октября 2003 года

Инспекция МНС России по Ленинскому району г. Чебоксары обратилась с иском в суд о ликвидации предприятия общественной организации Союза писателей Чувашской Республики - редакции газеты «Илем» в связи с не представлением сведений, в соответствии с Федеральным законом «0 государственной регистрации юридических лиц».

Представитель ответчика в заседании суда исковые требования признал, суду пояснил, что газета не издается с 1995 года, трудового коллектива нет, Союз писателей Чувашской Республики ликвидирован.

Руководствуясь статьями 110, 167-170 Арбитражного процессуального кодекса Российской Федерации, суд

РЕШИЛ:

Исковые требования Инспекции МНС России по Ленинскому району г. Чебоксары удовлетворить.

Ликвидировать предприятие общественной организации Союза писателей Чувашской Республики - редакцию газеты «Илем», зарегистрированное постановлением Главы администрации Ленинского района г. Чебоксары от 2.12.1993 г. № 1294 по адресу:г. Чебоксары, ул. Володарского, дом 10.

Судья О.В.Манеева.

Çакăнпа «Илем» юрри вĕçленчĕ. «Илем» çапла, 1995 çулхи чӳк уйăхĕнче 41 номер тухнă хыççăн, урăх кун çути кураймарĕ.

2003 çул.

ШĂТНĂ КАРАП ÇИНЧЕ

Федор Георгиевич Коновалов, нумаях пулмасть-ха Каçал тăрăхĕнчи ĕмĕртен пултарулăх енĕпе палăрнă Нĕркеç ялĕн пĕр çырми ячĕпе Агивер хушаматлă пулса тăнăскер, чăваш çыравçисен кăвайчĕ умĕнче хĕртĕне-хĕртĕне, пуçне Мускавра тата ытларах пысăклатса пĕлĕте шăтарса çӳл тӳпене çитме хатĕрскер, çунатлă ĕмĕчĕпе капашсăр мăнă карап вĕрсе хăпартрĕ пулас. Майĕпенех карап капитанĕ пулса тăчĕ. Камантинче ĕнтĕ унăн - çĕр алла яхăн писатель: çыравçăран çăравçă таранах. Çапла вăл, авалхи çулçӳревçĕ капитансем пекех мăнттайскер, 1980 çултанпа хăюллăнах тытса пыратчĕ-ха Ăслăлăх карапне. Сисмен те, 1923 çулта çуралнă шавкăнсен ушкăнĕ хăй çитмĕле çитни çинчен Агивере шавлăн пĕлтерчĕ: «Чăваш çĕрĕ-палуби çинче халăхпа пĕрле «алран кайми аки-сухипе асран кайми ати-аннине» асăнса юрланă хыççăн юман хăма çинче линкка-линкка ташласа савăнар пĕреххут!»

Çыравçăсен каманти - Чăваш Республики писателĕсен Союзĕ 1993 çулхи раштавăн вун улттăмĕшĕнче Гагарин урамĕнчи Вырăс драма театрĕ, унчченхи Филармони çурчĕ умĕнче, якорь ячĕ.

Писательсен Союзĕн- канашĕн 70 çулхи менелникĕ шавласа иртрĕ.

Çав кун шăтма пуçларĕ те ĕнтĕ Агивер капитанăн ĕмĕтри сывлăш карапĕ.

Пичет министрĕн шайĕнчи тавлашу хыççăн та Хветĕр Агиверĕн кăмăлĕ уçăлмарĕ. Çавна пула Петр Иванович Краснов хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлаймарĕ. Вăл ыйтнă пӳлĕмсенчен пĕрне Агивер мана кĕртсе ячĕ, тепринчен склад турĕ. Эпĕ ĕнтĕ халĕ «Тăван Атăл» журналăн проза пайне тытса пыратăп. Укçине çур ставкăпа тӳлеççĕ. Çăкăрпа чей ĕçмеллĕх тата хушăран килька илсе çимеллĕх çиткелет.

Агивер карапĕн шăтăкĕ сарăлса пыма пуçлани пурне те курăнать ĕнтĕ. Союз председателĕн ĕçĕпе килĕшмен ушкăн, Валери Тургай ертсе пынипе, Аслă влаç ячĕпе çыру çырнă. Уставри вăхăтчен маларах сьезд пухса пуçлăха вырăнтан кăларса çапасшăн та, Союза хăйсен аллине тытса илесшĕн. Уншăн хĕрӳ кампаниех пуçарса ячĕç: хаçатсенче пит кăсăклă, шухăшлаттармалли статьясем пичетлеççĕ, элек сăмахĕ сараççĕ. Союз правленийĕн ларăвне пухрĕç. Валери Тургайпа Хĕветĕр Уяр сьезда халех, васкавлăн ирттермелле тенине правлени членĕсем хирĕçлерĕç. Эпĕ сĕннĕ тăрăх, сьезда лайăх хатĕрленсех, 1995 çулхи çурла уйăхĕн 25-мĕшĕнче ирттерме йышăнчĕç.

Эпӗ те хамӑн редакципе писательсен Аслӑ пухӑвне тивӗҫлӗн кӗтсе илме хатӗрленетӗп, ҫавна май чӑваш ҫыравҫисен кӑмӑл-туйӑмне халӑха, «Илем» вулаканӗсене анлӑрах пӗлтерес тӗллевпе, анкета туса хатӗрлерӗм, ҫак ыйтусем ҫине хуравлама сӗнтӗм:

1. Хамӑрӑн пултарулӑх Союзӗн ӗҫне паянхи пурнӑҫ ыйтнӑ пек йӗркелесе ҫӗнетсе пымашкӑн Эсир мӗн тума тата мӗнле сӗнӳ пама пултараттӑр?

2. Пултарулӑх Союзӗ темиҫе пая пайланса кайни камшӑн усӑллӑ тата вакланни мӗн патне илсе ҫитерет?

3. Юлашки виҫӗ е пилӗк ҫул хушшинче Эсир пысӑк калӑплӑ мӗнле произведени ҫыртӑр, вӗсене ӑҫта пичетлеме пултартӑр, миҫе кӗнеке кӑлартӑр, халӗ мӗнле ӗмӗт-туйӑмпа ӗҫлесе вулакана мӗн парнелеме васкатӑр?

4. Ҫырнисӗр пуҫне урӑх ҫӗрте ӗҫлени пултарулӑх утӑмне чакарать-и е хӑвӑртлатать?»

Агивер те съезд умӗн самаях тӑрмашса ларчӗ. Ҫавна май унӑн «Во имя родства душ» хайлавӗ пиҫсе ҫитрӗ. Автор унта хӑй литература историкӗ, тӗпчевҫи, ӑстаҫи, писательсен ертӳҫи пулнине, союзшӑн чӑннипех ҫуннине тата ӑна сыхласа хӑварассишӗн кӗрешнине уҫӑмлӑнах кӑтартса пачӗ. Ку енӗпе унӑн ӑсӗ ҫитет.

«Прошелестели над бездной времен пятнадцать многотрудных вех писательских мыслей и утраченных иллюзий,- начинается его статья в роли ударной силы.- Добрую половину своей жизни, как и мои сверстники по литературному цеху, я отдал благополучию нашего Союза писателей. Нас, «шестидесятников», окружали великие сыны чувашской нации - С.Эльгер, П.Хузангай, Я.Ухсай; И.Максимов-Кошкинский, П.Осипов, В.Урдаш, Н.Ильбек, А.Алга, С.Шавлы, К.Турхан, Ю. Скворцов, А.Воробьев... И сейчас, как озоновая оболочка, обрамляет наш Союз созвездие ярких писательских имен. Это народные писатели Хв. Уяр, В.Давыдов-Анатри, А.Артемьев, Н.Терентьев, А. Емельянов, Л.Таллеров, писатели Г.Ефимов, В.Эльби, А.Галкин, Г.Орлов, П.Ялгир, Г.Хлебников, Н.Дедушкин, Н.Теветкел, Ю.Айдаш, В.Эндип, Ю.Семендер, П.Афанасьев, М.Сениель, Н.Исмуков, В.Шемекеев, Н.Мартынов, З.Нестерова, В.Ахун, И.Лисаев, Н.Максимов, В.Петров, В.Бурнаевский, Г.Краснов, К.Петров, Ф.Андреев, А.Казанов, И.Вутлан, В.Игнатьев, А.Хузангай, И.Егоров, В.Эктел, В.Тимаков, П.Эйзин, П.Яккусен, Л.Мартьянова, Н.Артемьева, И. Митта, Л.Сарине, Л.Сачкова, С.Азамат, М.Желтов, Г.Ирхи, И.Ахрат, М.Ставский, В.Кузьмин, Г.Фе-

доров, В.Родионов, Ю.Артемьев, А.Чебанов, В.Чекушкин, Г.Юмарт, В.Тарават, А.Юман, В. Енеш, В.Кервень, Н.Сидоров, А.Медведев, Г.Илебер, М.Васильев (Вурнары), В.Тургай, А.Смолин, Г.Чаржов, Н.Кушманов, А.Ильин, В.Чебоксаров, Д.Гордеев...»

Çак ăслăлăх вăйĕпе Агивер-председатель Аслă влаçсене, уйрăмах Культура министерствине дуэле чĕннĕ майлах пулса тухрĕ. Сăлтавĕ пур. Писательсен союзне укçа-тенкĕрен пистерчĕç. Володарский урамĕнчи 10-мĕш çурта, ĕлĕкхи Ехрем хуçа çуртне, писательсенчен туртса илесшĕн... Ку статья çӳлти пуçлăхĕсемшĕн бомба çурăлнă пекех пулчĕ пулас, Советсен çурчĕ енчен кĕçех аслати сасси хăлтăртатса çитрĕ.

Халлĕхе писательсен керменĕ шутланакан чаплă çурта çыравçă халăхĕ тулчĕ. Иккĕмĕш хутри залра ларма вырăн çук, çавăнпа коридорта та итлеççĕ. Анатолий Никитин композитор калым тăвать: хăйĕн аппаратурипе çырать, ӳкерет. Ăна уншăн 1 миллион панă.

Чĕнсе хыпарланă пулин те, ЧР президенчĕпе Министрсен Кабинечĕн пуçлăхĕ писательсене сивлерĕç, пухăва пымарĕç. Ку сивĕлĕх хумĕ вăл филармонире ирттернĕ писательсен уяв пухăвĕ вăхăтĕнче пулас президента Н.Федорова Ф.Агивер кăнттамлăхне пула вăхăтра салам сăмахĕ паманнинчен пуçланнă кăмăл тăвăлĕн хаярлăхĕ пулнине сисĕмлех туйрăм.

Ф.Г.Агивер юлашки виçĕ çул хушшинчи ĕç-пуç тата хальхи лару-тăру пирки каласа пачĕ, унăн çумĕ Энтип Ваççи сăвăçсен секцийĕн ĕçĕпе паллаштарчĕ. 23 çын тухса калаçрĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ пултарулăха аталантарас тата Союзăн пурлăх никĕсне çирĕплетес ыйтусене хускатрĕç, паха сĕнӳсем пачĕç.

Валери Тургай, Хĕветĕр Уяр, Денис Гордеев, Порфирий Афанасьев тата вĕсен хӳрешкисем, Агивере сирпĕтес тĕллевпе, сьезда хăйсен енне çавăрса ярасшăн пулчĕç. Пурте вĕсем хирĕçле, урмăшла, тарăхтаруллă тухса калаçрĕç. Тăварне хĕрхенмерĕç. Анчах та вĕсен пăлхавлă ĕçĕ халлĕхе ăнмарĕ, путланчĕ.

Микулай Теветкел карикатурăллă стена хаçачĕ кăларчĕ. Уярпа Давыдов-Анатрине кулса-мăшкăлласа хытă панă. Ах тарăхнă лешсем. Чăтаймасăр, Василий Иванович хаçата сьезд пĕтичченех хăпăтса кайнă.

Владимир Чекушкин философ çамрăк «председателе» Тургая саламлама тесе, дипломатпах сцена çине тухрĕ. Анчах Тургай çунса кайрĕ, вара Чекушкинăн ирĕксĕрех тирне улăштарма тиврĕ. Сасăлав результачĕсене пĕлнĕ хыççăн, Агивере саламларĕ,

дипломатӗнчен туртса кӑларнӑ шур эрехе пуҫласа ӗҫрӗ, кӗленчине айккинчи сӗтел ҫине лартрӗ. Секретариат сӗтелӗ хушшинче Михаил Ставский пӗчченехчӗ. «Ах, мухмӑрлаччӗ, тавах Турра» тесе, виҫҫӗ ярса ӗҫрӗ. Ҫыннисем ахӑраҫҫӗ.

Правлени йышне Анатолий Емельянова, Иван Вутлана, Виктор Овчарова, Георгий Федорова, Юрий Семендере, Любовь Мартьянована тата Федор Агивере суйларӗҫ.

Ҫӗнӗрен суйланӑ правлени хӑйӗн ларӑвӗнче Союз ӗҫне малашне мӗнле майпа, кампа-мӗнпе ӑнӑҫлӑрах, пултаруллӑрах йӗркелесе тытса пымалли тӗп ҫул-йӗре палӑртрӗ, ӑсталӑх енчен ӳссе аталаннӑ ҫыравҫӑсене писательсен Союзӗн ретне илмелли комиссие ҫирӗплетрӗ: Георгий Ефимов - председатель, Владимир Кузьмин - председатель заместителӗ, Юрий Айдаш, Георгий Федоров, Василий Давыдов-Анатри, Виталий Родионов, Алексей Васильев.

«Илемӗн 3-мӗш номерӗнче эпӗ «Пуҫпуласшӑн кӑна ӗҫлер мар пуҫпа» ятпа йӗплӗ хайлав кӑлартӑм. Унта ҫакна палӑртрӑм:

«Ҫуркуннеренпех капланса тӑракан аслатиллӗ ҫумӑр ҫурла уйӑхӗн вӗҫнелле тинех ҫилтӑвӑллӑн ҫавӑрттарса ҫуса ячӗ литература уйӗнче. Ҫиле хирӗҫ сурса чӑваш тӗнчине тарӑхтарнӑ пӑлхав ҫӑравҫисене Аслати пуҫран ҫапрӗ те, Шупашкарти Ехрем хуҫа ҫуртне (Писатель керменен) хӗвел пушшех ҫутатса, ӑшӑтса ячӗ. Чӑваш ҫыравҫисен мӑн ҫарӗ пуҫа чиксе таракан вак ушкӑна шеллесе ӑсатрӗ, вара эртеллӗн йӑлл кулса юрласа ячӗ. Университетран чӑваш интеллигенцийӗ ячӗпе саламлама килнӗ Владимир Чекушкин философ-ҫыравҫӑ писательсен чӑваш хорне хавассӑн та илемлӗн ертсе пычӗ.

Ҫапла вӗҫленчӗ Чӑваш Республики писателӗсен союзӗн черетлӗ вун улттӑмӗш сьезчӗ.

Союзӑн унчченхи правлени членӗсен пуҫӗ ҫине пӑрлӑ ҫумӑр ҫутарма эртелтен чалӑшнӑ ушкӑна хӑшпӗр хаҫатсем те самаях пулӑшрӗҫ, пӗр шухӑшланнӑ кутӑн чӑкрашсем сьезд хыҫҫӑн та шӑршлӑ сӗрӗмпе халӑха минретме хӑтланчӗҫ.

Анчах... кӑлӑхах. Сьезд йышӑнӑвӗсем ӗҫ ҫине, пурнӑҫ ҫине урӑхла пӑхма хистеҫҫӗ. Чакаланса, хирӗлсе, ҫын ҫӑварӗнчи татӑкшӑн хапсӑнса ҫухӑрашнипе те, ҫӗленле вӑрттӑн сӑхнипе те, кӗтесрен сисмесӗр ура хунипе те, ҫурӑм хыҫӗнче чышкӑ-муклашкӑ кӑтартнипе те Союза малалла ярайман. Пултарулӑхра вӑйлӑ произведени, ӑслӑ пуҫ, таса кӑмӑл-сипет, ҫирӗп юлташлӑх, эртел пӗрлӗхӗшӗн, малашлӑхӗшӗн чунтан ӑнтӑлни ҫеҫ ҫӗнтерет.

Пуҫпуласшӑн, чапшӑн кӑна ҫӗмӗрер мар пуҫа, хисеплӗ ҫыравҫӑсем - тӑван халӑх ӑсчахӗсем! В.Красов».

Авӑн уйӑхӗ.

Аслатиллӗ ҫумӑр пек иртсе кайнӑ съезд хыҫҫӑн та ҫанталӑк уяртмарӗ. Писательсен союзӗн пуҫӗ ҫине наркӑмӑш пӗрӗхме пӑрахмарӗ. Ку вӑл йӑлтах пуҫлӑх пуканӗ ҫинче лараканран килет-мӗн. Николай Максимовпа калаҫнӑ чухне эпӗ ӑна тахҫанах ӑнланнӑччӗ-ха. «Пирӗн пуҫлӑх урӑххи пулсан, писательсен Союзне те, санӑн «Илемна» та президент пулӑшать», - тетчӗ вӑл хӑюллӑнах. Агивере Президент енчен те, Правительствӑран та, чӑн та, юратмаҫҫӗ, хисепе хумаҫҫӗ, писательсем хушшинче те ӑна манманнисем йышланса пыраҫҫӗ. Кун пирки паллӑ писательсем кӑна мар, республикӑри литература пурнӑҫӗпе ҫывӑх хуравлӑ ӗҫченсем те ытларах та ытларах уҫҫӑн калаҫаҫҫӗ. Союз ирттерекен мероприятисене Николай Максимов, Порфирий Афанасьев, Денис Гордеев, Василий Петров, Хӗветӗр Уяр, Иван Лисаев, Юрий Артемьев, Геннадий Хлебников, Валери Тургай, Николай Исмуков, Василий Кошкин хутшӑнмаҫҫӗ. Чӑваш литературинчи сулмаклӑ вӑй Союз картишӗ леш енче хӑйӗн шухӑшлав позицийӗпе аякра тӑрать! Пухусенче ҫын сахал. Мероприятисем ячӗшӗн ҫеҫ пулса иртеҫҫӗ. Чӑваш халӑх писателӗсем Александр Артемьев, Лаврентий Таллеров, Николай Терентьев килӗсенче «питӗрӗнсе» ларҫҫӗ. Пӗр Василий Давыдов-Анатри ҫеҫ: «Эпӗ чӑваш халӑх поэчӗ» тесе юбилейсенче, юбилярсен савӑнӑҫлӑ каҫӗсенче чикансем евӗр пӗр юрӑ - салам юрри янраттарса ҫӳрет.

Ехрем хуҫа керменӗ те ӗнтӗ темле тунсӑх керменӗ пек туйӑнать. Малтан унта хӑпартланса кӗрес килетчӗ, халӗ - чун туртмасть. Манӑн унта ӗҫ сӗтелӗ те пур ӗнтӗ. Керменӗн ҫӑра уҫҫийӗ те пур. Михаил Ставскипе ларакан пӳлӗм уҫҫийӗ те пур... Чун уҫҫийӗ ҫеҫ ҫук. Ҫапах та хушӑран кӗркелесе тухатӑп.

Ӑҫта та пулин ӗҫ урапи чарӑнса ларма пуҫласан, ман ялан ҫав урапана малалла кустарса яма пулӑшас килет. Ҫынсен ӗҫне хапсӑнмасӑр хамӑн ӗҫе типтерлӗ те вӑхӑтра туса пынипе чуна кантаратӑп.

Агивер ӗнтӗ икӗ пысӑк ӗҫ туса пырать. Шухӑш-ӗмӗчӗ унӑн тӗнче калӑпӑшне вырнаҫми. Чӑваш литературинче унашкал прототип та ҫуккӑ пуль. Хушӑран ӑна ӑслӑ сӑмахсем те сӗнсе пӑхатӑп. Явка, путсӗр сутӑнчӑкӗсем шӑрса кӑтартнипе хастарланма та пултарать. Ҫын сӑмахӗ хыҫҫӑн кайма юратать. Пуҫлӑхӑн ҫак чи киревсӗр енӗ уншӑн пусару-тавӑру енӗ пулни маншӑн тахҫанах

паллӑччӗ те, ҫапах чуна хытарса ӗҫлеме тиветчӗ. Психологи опычӗ евӗр пӗр-икӗ усӑллӑ сӗнӗвех парса пӑхрӑм та ӑна, вӑл ман шухӑша ним улӑштармасӑр пурнӑҫланине туйса, ӑнлантӑм: «Ку ҫыннӑн пуҫлӑх мимийӗ тасах мар». Пурӑна киле вӑл хӑйӗн тӑшманӗсене пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн йӗплеме пуҫларӗ. В.О.Максимов - Валем Ахуна, Порфирий Афанасьева, Денис Гордеева журнал редколлегийӗнчен кӑларма хал ҫитерчӗ. Хӑй те мана час-часах чӗнет, манпа канашлать, сӗнӳсене йышӑнать. Малтантарах ман пирки: «Ҫак Вӑрнар ачи ялан вӗрентме юратать», - тесе епӗллӗн кулкалатчӗ те, хӑй ҫумӗнче кам пуррине туйнӑ хыҫҫӑн, тепӗр чухне шлепкине хывма та хатӗрччӗ. Усӑллӑ ӑслӑ сӑмах пӑсмасть пуль ҫав. «Тӑван Атӑл» редакторне суйланнӑ хыҫҫӑн шӑв-шавра сан пирки ҫӗлен чӗлхипе павракан пӗр ырӑ мар ҫынна ахалех итлерӗм, - тет мана куҫран пӑхма вӑтанса.

1996 ҫул.
Кӑрлач.

Чӑваш ҫыравҫисен ҫулталӑк тертленӗвӗн канашлӑвӗ пулчӗ. Унта кашни писатель хӑйӗн пултарулӑхӗнчи пурнӑҫ сӑн ӳкерчӗкне курма пынӑ. Нумайӑнах мар. Темиҫе чӑкраш пӗр-пӗринпе вӑрҫса илнине лӑпкӑ чунлисен курас та, итлес те килмест ӗнтӗ. Йӑлӑхтарса пырать пӗр йышши камит. Хальхинче Хӗвел хӗрӗвӗ ытларах ҫунтарнӑ-ши «гладиаторсене», вӗсем килӗсенче Джованйолин «Спартакне» вуласа ларнӑ пулас. «Сӑнӑлакансем» ҫуккине кура пурте ассӑн сывласа ячӗҫ. Пухура Михаил Ставский критик доклад турӗ. Унта вӑл манӑн «Тӑван Атӑл» журналӑн пӗлтӗрхи 9-11-мӗш номӗрӗсенче пичетленнӗ «Тымар» романа самай ырларӗ. Агивер те ун пирки произведенин лайӑх енӗсене асӑнчӗ.

Пуш уйӑхӗ, 25, тунтикун.

Культура министерстви журнал кӑларма укҫа памасть. Ҫавӑнпа Писательсен союзӗн те, редакцин те (иккӗшне те Хӗветӗр Агивер хӑй аллинче тытса тӑрать) укҫа-тенкӗ тупмалли вӑйӑра сиккелеме тивет. Ҫавна пула журналӑн тӗп тематики улшӑнчӗ. Кам укҫа сӗнет - редакци ҫавна хӑйсен пурнӑҫӗ пирки журнал номерне кӑларса парать. «Ялав» журнал та ҫав ҫул ҫинех тухрӗ. Кунта вара питӗ ҫаврӑнӑҫулӑх кирлӗ.

Элӗкрен Владимир Ямаш писатель килчӗ. Ӑна эпир Агиверпе ӑслӑ ӗҫ тума хушнӑччӗ. «Тӑван Атӑлӑн» пӗр номерне элӗксене халалласшӑн. Уншӑн 10 миллион укҫа кирлӗ. Эрнекун хут ҫырса

Элĕк администрацине ятăмăр. Ямаш администраци пуçлăхĕпе Кононовпа тĕл пулса калаçнă. Улттăмĕш номере вĕсене парас терĕмĕр. Виççĕмĕр вара унта мĕнле материалсем ярас пирки калаçса лартăмăр.

Юрий Айдаш пĕлтĕрхи декабрь çурринчех, телевиденирен арăмĕпе уявран таврăннă чухне, троллейбус çумĕнче икĕ урине те амантнă пулнă, пульницана кайман, килĕнче сипленет. Арăмĕ ĕç укçи илме вăхăтра пырать. Ĕç укçи ставка çурăпа илсе тăрать. Уншăн камăн ĕçлемелле-ха? Паллах, редактор мана та ытларах кӳлет «Тăван Атăла». Мăшкăл мар-и?

Çу уйăхĕн 8-мĕшĕ.

Юрий Айдаш ĕçе тухрĕ. Ăна «Чăваш республикин искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ят пани çинчен хаçатсенче указ тухрĕ. Епле чаплă! Вĕсем патшалăх паракан мухтав ячĕсене хăçантанпа ĕнтĕ черетпе илсе пыраççĕ. Ыттисене пăрса хăварсах. Мĕнле намăс мар!

Çу уйăхĕн 12-мĕшĕ, эрнекун.

Агивер 11 сехетре Союз правленине пухрĕ. Правлени членĕсем ларăва та пымаççĕ. Вĕсенчен хăшне эпĕ иртнĕ сьездранпа та ларура пĕрре-иккĕ çеç курнă. Унта та вĕçне çитиччен чăтса лараймаççĕ. «Ман питĕ васкавлă ĕç» тесе шулĕкле тухса шăваççĕ. Мĕн калăн - чăваш писателĕсен туррисем-çке. Пурне те пуççаптарма пултараççĕ ку тĕлĕшпе. Ассах кайма пуçланă! Правленире лару протоколне çыракан та çук, мана çыртараççĕ.

14 сехетре Писатель çуртĕнчех «Тăван Атăлăн» 65 çулне паллă тума шутланăччĕ. Юрий Семендерпе Анатолий Емельянов васкаççĕ те вĕсене шампански уçсах хăналарăмăр. Емельянов 150 грамм чухлĕ шурринех ячĕ. Ефимов, кĕсйинчен эмел кăларса кăтартрĕ те, ĕçмерĕ. Вĕсем вара тухса кайрĕç. Виссарион Синичкин ӳсĕрличченех пушатрĕ черккесене. Эпĕ - кăшт çеç.

Палăртнă вăхăта редколлеги членĕсем, редакцире ĕçлекенсем тата малтан редакторта ĕçленисем, яланхи дежурнăй ĕçкĕçсем пуçтаранчĕç. Иккĕмĕш хутри залра тĕп редактор Агивер журнал кунçулĕ çинчен каласа пачĕ. Лаврентий Таллеров, Александр Галкин, Петĕр Львов хăйсем редакторта мĕнле ĕçленине аса илчĕç. Редактор пулнă Георгий Краснов пымарĕ. Юлашки вăхăтра вăл унашкал мероприятисене пачах хутшăнмасть. Хăйне евĕр мăнкăмăллă çын. «Çилçунат» редакторĕ Анатолий Смолин саламларĕ.

Çу уйăхĕн 15-мĕшĕ.

«Хыпар» хаçатра çакăн пек информаци пичетленнĕ:

Çурта илесшĕн, писательсем парасшăн мар.

Виçĕмкун ЧР Писательсен союзĕнче тăракансен пĕр ушкăнĕ 10 сехетре Шупашкарти Володарский урамĕнчи 10-мĕш çуртра-Писательсен çуртĕнче пухăннă. Ахальтен чĕнмен иккен вĕсене. ЧР Писательсен союзĕн ертӳçи Х.Агивер пĕлтернĕ тăрăх, унта патшалăх çыннисен пĕр ушкăнĕ Писательсен çуртне ЧР Писательсен союзĕнчен тивĕçлĕ документсем çырса йышăнма пымалла пулнă. Темшĕн пыман.

Сăмах мĕн çинчен пыни вулаканшăн уçăмлăрах пултăр тесе ЧР патшалăх пурлăх комитечĕн председателĕ Н.Артемьева ЧР Писательсен союзĕн правленине янă çырăвăн тĕп шухăшне илсе кăтартас килет. Председатель хăйĕн çырăвĕнче ЧР Писательсен союзĕнчен асăннă çурта - Ехрем хуçан пулнăскерне - ЧР Культура тата нацисем хушшинчи хутшăнусен министерствин «Еткер» наука-производство центрĕн балансĕ çине пама ыйтать, писательсен правленине Уруков урамĕнчи 2-мĕш çуртра вырăн тупса пама, Писательсен çуртне юсанă хыççăн унта икĕ пӳлĕм уйăрма шантарать.

«Хыпар» хăй вăхăтĕнче пĕлтернĕччĕ, Ехрем хуçан пулнă çуртшăн асăннă министерствăпа ЧР Писательсен союзĕ хушшинчи калаçусем темиçе çул пыраççĕ. Писательсем парасшăн мар ăна, патшалăх органĕсем вара - илесшĕн. Писательсен союзĕн правленийĕ унпа тухăçлă усă курайманнишĕн, юхăнтарса янишĕн кăмăлсăр. Сăмах май, çурта чылайранпа юсаман - юсамалла. Хула варринче вăл илемсĕр, юхăнса ларни пăшăрхантарать чиновниксене. Писательсен ертуçи Х.Агивер каланă тăрăх, çурта юсама укçа спонсорсенчен çителĕклĕ тупнă-мĕн.

В.Николаев.

Ку ыйтупа Федор Агивер виççĕмĕш çул ĕçлет, кĕрешет. Мĕн пулса тухĕ ĕнтĕ.

1996 çул, чӳк-раштав.

Союз правленийĕ те, Союз ретне илекен комисси те майĕпен ĕçлеççĕ. Эпир комисси витĕр кăларнисене правлени членĕсем халлĕхе хирĕçлемеççĕ-ха, хамăр тунă ĕç çинчен халăха хыпарласах тăратпăр. Георгий Андреевич чирлекеленĕ тата «кахалланарах панине» пула комиссине ман ытларах ертсе пыма тивет.

Çĕнĕ çултан пуçласах айланкаласа пыратпăр. Пирĕн совет халăхĕ, вăл шутран ытларах Раççей халăхĕ, чухăнлăхра нушаланса пурăннăскер, чăтать, Кавказпа Прибалтика халăхĕсене хăйĕн йĕмне хывсах пуйтарать, пирĕн... чăтас пулать. Августăн 19-мĕшĕнче, хам 59 çул тултарнă кун, «Тăван Атăлта» май уйăхĕн ĕç укçине илтĕмĕр. Чухăнлăх!

Авăн уйăхĕн тăваттăмĕшĕнче те пире ĕç укçи памарĕç. Акă, декабрĕн 17-мĕшĕнче эпир августшăн ĕç укçи илтĕмĕр. Çав хушăра мĕнпе тăранса пурăннă-ши?

Союз тавра хура çăхан явăнать, Агивер вĕсем валли ятарласа ăшă йăва çавăрнă тейĕн. «Советская Чувашия» хаçатра 18-мĕш числара пичетленнĕ çак статья паянхи вăхăт пăтранăвне уçса парать.

Не тот эмир - не тот мир

«Редкая птица долетит до середины Днепра», - восклицал незабвенный Гоголь. «Редко какой гость залетит в Союз писателей Чувашии», - скажет несведущий прохожий, глядя не голубой особняк купца Ефремова по ул.Володарского. Может, и ошибается, а может, и нет. Кажущийся пустынным, с обвалившимися мраморными плитками, засоронными семечками и окурками полом, этот дом время от времени просыпается, как спящий Везувий, и напоминает то ли сельскую сторожку, то ли агитпросветклуб 20-х годов.

Это здание давно уже перестало быть очагом литературы и кузницей молодых талантов, а превратилось в прибежище писателей-коммунистов и окололитературных проходимцев. «Можно ли построить коммунизм в отдельно взятой творческой организации?» - вопрошал на страницах газеты бывший директор несуществующего Литфонда и литконсультант со звучной фамилией Ставский, красиво поставив последнюю точку на своей карьере в этой организации.

Писатели-коммунисты одними из первых в республике провели перерегистрацию, сменив аббревиатуру КПСС на КПРФ. Скоро примкнули к агитирующим за кандидата в президенты России Г.Зюганова. Листовка лидера коммунистов до сих пор висит на стене коридора. Тут же нашли место агитки блока народно-демократических сил, профсоюзов. Одна из них начинается словами «Выçса виличчен кĕрешсе вилер!» («Чем умереть голодной смертью, умрем в борьбе!»).

От пещерной идеологии внутри здания СП каждый шаг отзывается гулом. Напрасно вы будете искать тут новости литературы, поздравления в адрес юбиляров. Торжества, различные презентации проводятся в гуманитарном институте, литературном музее, национальной библиотеке и в других местах. А актовый зал СП предоставляется только для собраний коммунистов, на которые несведущих заманивают приглашениями как на заседание литературной секции. Уму непостижимо, как обьяснить многочисленные призывы агитстенда умереть вместе в борьбе, - это смахивает на какую-то религиозную секту. Однако журналы чувашских писателей «Ялав» и «Тăван Атăл» умирают медленной и мучительной смертью - это уж точно. И виной тут не одни несознательные читатели и невнимательные власти. Ведь нашел же редактор «Ялава» 7 миллионов рублей для уплаты штрафа то ли налоговой полиции, то ли инспекции за какие-то грехи. «Ялав» успешно подзарабатывает рекламой, привлекает средства районов. За 10 миллионов выпустил «Тăван -Атăл» - «именной» номер аликовцев. Однако редактор того же журнала не мог найти единственный миллион для включения индекса журнала в общероссийский каталог, тем самым напрочь отвергнув читателей диаспоры за пределами республики и не сумев перешагнуть даже тысячный рубеж подписки.

Что касается намеков на «голодную смерть», это не относится к председателю СП Чувашии, главному редактору журнала «Тăван Атăл», доценту университета Хведеру Агиверу. Находит он средства и на платную учебу на юридическом факультете одного из филиалов московского вуза. Но не видать того респектабельного мужчины ни в СП, ни в редакции. К тому же он - лидер народно-патриотических сил республики в вечной идеологической борьбе.

«Эмир, который не приближает к себе Поэта, - глупый эмир, но Поэт, который стремится быть приближенным к эмиру, вдвойне глуп» - гласит восточная поговорка. Но тем не менее эмиров в политической жизни и поэтов-приспешников пока хватает. Приходит на ум и реплика известного литературного героя: «Служить бы рад - прислуживаться тошно». Думается, что некоторые писатели забыли, что у них единственное призвание - служить народу. Кузьма Голодный».

Журналистсем хушшинче нимĕн те пытармалли çук. Ку статьян авторĕ унччен Чăвашсен обществăпа культура центрĕнче

«Пике» журнал кăларса пурăннă вăхăтра харкашуллă пуш хайлавсем сăрмакласа чапа тухнă Василий Петрович Сидоров-Эктел пулнине те тӳрех ăнланса илчĕç.

Маншăн вăл ним пекех те туйăнмарĕ. Эпĕ ăна кăмари таш-шинчи йĕплĕ самант вырăнне çеç хутăм. Маншăн чи хакли - паян августшăн ĕç укçи илни.

САВĂНĂÇ! Çитес çулта манăн «Тăван Атăл» журналта «Вăрланă юрату» повесть пичетленет. Ун пирки нумай пинлĕ пĕлтерӳ тухрĕ.

1997 çул, авăн, 26.

Хветĕр Агивер хăйĕн хăмпă карапне çĕнĕ ят пачĕ: «Хурăнташлăх». Çав караппа малалла ишсе вăл Остап Бендертан та иртсе кайма шутлать. Ильфпа Петровăн шухăш хăватĕнчен те вăйлăнрах тапаçланать. Хăйĕн программипе вăл, Чăваш Республики президенчĕ пулса, чăваш халăхне рай туса пама шантарать.

Со второй попытки взял первый барьер на пути к президентскому креслу писатель Ф.Г. Агивер.

На днях в Чувашском пединституте собралась инициативная группа численностью 109 человек и выдвинула его кандидатом в президенты Чувашии. Коллег по писательскому перу здесь было немного, все больше сотрудники пединститута и университета, друзья Федора Георгиевича.

Сам соискатель президентских лавров официально обьявил, что он теперь не Коновалов, отцовскую фамилию сменил на звучный литературный псевдоним Агивер. А президент Агивер —это звучит гордо! О своих политических пристрастиях он выразился более чем кратко: «Я демократ!».

Хотя на этот счет известно, что Ф.Г. Агивер возглавляет Чувашское региональное отделение Народно-патриотического союза, весьма и весьма близкого к КПРФ. Одновременно он в одном лице и председатель Союза писателей ЧР, и главный редактор журнала «Тăван Атăл», и преподаватель ЧувГУ. И вот смело пошел на покорение новой заветной высоты! Даже немно-

го жаль, что с избранием Ф.Г. Агивера президентом республики столько народу может лишиться своего непосредственного идейного и педагогического пастыря.

Четвертый по счету выдвинувшийся претендент счел себя самым старшим в когорте борцов за президентство, Федору Георгиевичу стукнуло пятьдесят четыре. Поговаривают, что в недрах его писательской организации уже готовы представления на высокие звания «народного» и должности для сподвижников-литераторов. Недостатка в помощниках на политической ниве у маститого писателя, по всей вероятности, не предвидится. Главным уполномоченным по сбору автографов - подписей населения в пользу Ф.Г. Агивера должен стать Ю.С. Ялавин, тут же обьявленный заместителем председателя СП ЧР.

Радостную весть о выдвижении Ф.Г. Агивера на пост президента Чувашии принес в редакцию известный поэт П.А. Ялгир, тоже участвовавший в собрании. На всякий случай корреспондент поинтересовался у Петра Алексеевича: «Вот вы, член КПРФ, с кем все же пойдете на выборы - с Агивером или с Шурчановым?» Поэт Ялгир ответил, что хотел бы сохранить это в секрете.

Н. Васильев.

«Республика» хаçатăн çурла уйăхĕнче тухнă 30-мĕш номерĕнче «пулас патша» Алексей Кряжинов журналиста самай мухтанса кăтартнă, **«Федор Агивер: «Хурăнташ» спасет чуваш»** шухăшлав тĕрри те тĕрленнĕччĕ хаçат страницинче. Унта идеолог хăйĕн шухăшне уççăнах халăх умне кăларать:

- У Вас есть своя теория? Или, скажем, идея, способствующая такому сплочению?

- Есть. Эту теорию я называю «Хурăнташ», что в переводе на русский язык означает «родство». При этом я имею в виду не только родственные связи, а прежде всего родство душ. Возьмем, к примеру, евреев; Чем они сильны? Именно душевным родством, преданностью идее, верностью традициям. И нам, чувашам, так надо жить. Наш девиз или, как хотите, формула жизни должна звучать так: «Чуваш, помоги чувашу и со всеми народами живи душа в душу».

- Ну, это пока только теория, причем далекая от воплощения...

- Тут я с вами не совсем согласен. Воплотить ее в практику - дело, конечно, нелегкое, но вполне реальное. С чего начинать?

Во-первых, надо провести перепись чувашского населения в республике и за ее пределами, там, где компактно проживают чуваши. Когда сведения соберут и систематизируют, мы будем знать, чем располагаем, в каком направлении работать.

Во-вторых, следует подумать о финансовой поддержке движения «Хурăнташ». Придется, видимо, создать фонд чувашской нации, куда бы перечисляли деньги предприниматели, деловые люди, хозяйственники, все, кому дорого будущее чувашского народа, кто действительно хочет истинного возрождения нации.

- Федор Георгиевич, все это заучит заманчиво, но очень наивно. Вы хотите подменить экономику другими категориями: духовными, национальными.

- Это не совсем так. Я предлагаю модель для возрождения не только чувашского народа, а, может быть, народов всей нашей матушки-России. Здесь духовное и материальное глубоко взаимосвязано. Надо только пристальнее всмотреться и идти по этому пути. Знаю, новое всегда настораживает, но, поверьте, другого пути не существует. А так называемые «экономические категории» привели страну к краху. Народ нищенствует. Не составляют исключения и писатели. Видимо, правительству хочется иметь голодных писателей, поэтов, художников, артистов, композиторов... Наша экономика все больше попадает в зависимость от западных капиталистов. У нас же, как у русских, так и у чувашей, должен быть свой путь развития — через духовное возрождение, с глубокими экономическими обоснованиями уклада жизни.

- Но ведь и президент Николай Федоров об этом же печется.

- На словах — да, а на деле?.. Что-то я не вижу результатов. Нам нужен такой президент, который денно и нощно в поте лица трудился бы на благо народа, боролся за его возрождение, знал нужды и чаяния простых людей.

- А Вы знаете?

- Конечно. Я же, как раньше принято было говорить, от сохи, деревенский. Выходец из семьи простых чувашей, с молоком Матери впитал речь, песни и предания своего народа. Мне уже 54 года. Работал учителем в сельской школе, служил в армии. Окончил пединститут, трудился на Чувашрадио и телевидении, в журналах «Ялав», «Тăван Атăл», «Капкăн», в аппа-

рате Союза писателей ЧР, учился на высших литературных курсах Литинститута им. А.М.Горького в Москве. Сейчас преподаю в ЧГУ им. И.Н.Ульянова, являюсь главным редактором журнала «Тӑван Атӑл». Заканчиваю юридическое отделение Московского государственного социального университета. Написал немало книг... Сейчас занимаюсь созданием чувашского театра «Хурӑнташ». Он будет своеобразным,отличающимся от остальных драматических театров. В нем будут ставиться не только пьесы. Планируем проводить встречи с писателями, поэтами, композиторами, другими деятелями литературы и искусства. Здесь авторы будут знакомить со своими произведениями. Пусть из сел приезжают певцы, танцоры, народные умельцы и порадуют земляков своим мастерством. Этот театр, одним словом, должен стать духовным центром, обьединяющим народ, фундаментом движения «Хурӑнташ». В перспективе — строительство в Чебоксарах Дома чувашской нации.

- Ну что ж, остается только пожелать вам успехов.

Беседу вел Алексей Кряжинов.

Успехи, ӑнӑҫу еплерех пулса пычӗ-ши унӑн.

Пирӗн Союз председателӗ ӗнтӗ малашне Коновалов-Агивер. Ун пирки хӑйсен ялӗнчи ҫырма ячӗпе юридици йӗркипех ҫӗнӗ хушаматлӑ пулса тӑчӗ. Хӑйсен кӳршинчи Патӑрьел ачи Геннадий Лисин, еврейсене ҫывӑхрах пулас тесе Айги хушаматпа ҫӳреме тытӑннӑскер, мӗн, Федор Георгиевич унран ӳксе юлать-им, вӑл та тек така ҫӑмарти касакансен йӑхӗнчен мар, ҫырмари шапасен хурӑнташӗ пулсан та... Мускав енче кам ӑна-кӑна тӗрӗслесе хыпкаланать. Агивер те Айги пекех ӑнланмаллах мар янӑрать. Ӑна илтсен пӗр-пӗр еврей та чеен аллине тӑсса пама пултарать.

Суйлав та шавласа иртрӗ, Агивер те президент пулаймарӗ. Николай Федоров президентӑн инаугурацине те пымарӗ вӑл. Карап путассине сиснӗ йӗкехӳресем тинӗсе сикнӗ пекех старпомӗпе помӗ те, Энтип Ваҫҫипе Николай Кушманов, ик еннелле тарса ҫухалчӗҫ, хуҫаран суд урлӑ ӗҫ укҫи шыраса илесшӗн.

1998 ҫул.

Арӑслан ҫулӗ те писательсемшӗн нимӗнле хӑватлӑ чӗрчун чунӗллӗ ҫул мар. Ҫырни ним усси те памасть. Кӗнеке кӑларма май ҫук. Хӑвӑн 20-60 миллион пулмасан.

Унччен кашни ҫул Мускавра та Шупашкарта икшер-виҫшер кӗнеке кӑларса асса пурӑннӑ Емельяновсемпе Ефимовсем

те пуҫӗсене усрӗҫ. Вӗсем ҫапах та патшалӑх пенсийӗ виличчен илмелле президент умӗнче йӑпӑлтатса юлчӗҫ.

Давыдов-Анатри президент патӗнчен тухма пӗлмест теҫҫӗ. Ӑна паман преми юлмарӗ пулас. Ҫуралнӑранпа 80 ҫул тултарнине Писательсен союзӗ йӗркелесе парайманшӑн хытӑ кӳреннӗ тет. Президент кутне-пуҫне ҫуллакансем хушшинче палӑрнисем татах та пур. Интеллигенци умне те, халӑх умне те питне кӗҫҫе ҫӗлесе тухас пулать те ӗнтӗ унашкаллисен... Вӗсем патшалӑх хуранӗ ҫумӗнче тутлӑ салма яшкине лӗрккеҫҫӗ. Чӑваш халӑх поэчӗ, писателӗ ятне илессишӗн те вӗсен хӑйсен уйрӑм черет иккен.

Кӑрлач, 28.

Хветӗр Агивере Писательсен союзӗн председателӗнчен кӑларас текенсен ушкӑнӗ шӑлне хӑйрасах тӑрать. Пичет ҫуртӗнчи 8-мӗш хутра вӗсен тӑвӑл штабӗ. Пирӗн редакцире те пӑшӑл пӑтти вӗреме кӗрсе пырать. Андрей Алексеев, Любовь Мартьянова, Елизавета Осипова (ӗҫсӗр сулланса ҫӳрекенсем) редактор валли тамӑк хуранӗ айне вут хума пуҫларӗҫ. Айдашӗ чӗлӗм тӗтӗмӗ ӑшӗнче уҫҫӑн курӑнмасть. А.Алексеев пӗлтӗр тата иртнӗ уйӑхра журналшӑн пӗр йӗрке те путлӗ хатӗрлемен. Хӑй чи малтан коридорта: «Пире Агивер укҫа памасть!» тесе кӑшкӑрса тӑрать. Мӗншӗн ӗҫ укҫи тӳлемелле-ши ӑна?!

Нарӑсӑн 3-мӗшӗ, ытларикун.

Писательсен союзӗнче правленипе йышӑну комиссийӗн пӗрлехи ларӑвӗ пулчӗ. Агивер Союз ӗҫӗпе паллаштарчӗ. Унӑн правленире пултарулӑх ӗҫӗпе ӗҫлекен те ҫук. Писатель керменӗ Союз аллинче мар. Халӗ унта «Монолитстрой» организацийӗ юсав ӗҫӗсем тума хатӗрленет.

Ирӗккӗн, уҫҫӑн сасӑласа, Юлия Николаевана, Михаил Захарова (Мерчене), Руфин Гусева (вырӑса, юридици докторне, Агивер хӑй валли таҫтан тупнӑскерне), Измаил Григорьева, Константин Шачкина, Николай Дворова (Тутарстан чӑвашне), Владимир Рыбкина, Осип Алексеева (Ӑсан Уҫӑпне), Михаил Васильева (Вӑрнартан) Союза илтӗмӗр. Михаил Алексеевича хам тӑрӑшнипе илтерттертӗм. Хӑй пӗлсе те юлаймарӗ. Акӑ, хам енчен ӑна сӗннӗ шухӑшӑм:

РЕКОМЕНДАЦИЯ,

данная ВАСИЛЬЕВУ Михаилу Алексеевичу для вступления в Союз писателей Российской Федерации.

В чувашскую литературу Михаил Васильев, скромный парень из села Большие Яуши Вурнарского района, как народной волной

пробился после флотской службы. Доброй душой, сильным характером, неповторимым лиризмом продолжил он неугасаемую позицию своего земляка, урожайного поэта Алексея Воробьева.

Стихи, поэмы, новеллы Михаила Васильева притягивают читателей, волнуют, вдохновляют, заставляют бороться за честность и справедливость.

В нашем народе он давно стал признанным литератором. У него многогранный художественный и общеобразовательный талант для развития чувашской культуры.

Исходя из этого, я рекомендую Васильева Михаила Алексеевича в Союз писателей Российской Федерации.

Владимир Прокопьевич Кузьмин, член Союза писателей СССР с 1992 года. Членский билет № 06313.

25 декабря 1998 года».

Çавăн пек пулăшмалла та çывăх туссене!

Кулăшсăр эпĕ пурăнаймастăп, çавăнпа мĕнле те пулин кăлтăк чĕлхе çинче выляса илетех. Пичет çуртĕнчи улттăмĕш хутра пирĕн редакципе юнашарах чăваш чиперкки-майри Вера Савельева тытса пыракан «Хресчен сасси» хаçат çурхи çаран пек ешерет. Вăл унта самай паттăр йĕкĕт-сухаçăсене пухса тултарнă. Вĕсен хушшинче Патăрьел енчи Рыбкинсем: Владимирпа Сергей тар кăларатчĕç. Владимирĕ вĕлерет пьесăпа сăвă çырса. Композиторсемпе пĕрле юрă кĕвĕлесе ассах кайма пуçларĕ. Апат çиме мансах ĕçре те, канура та шăрантараççĕ илемлĕ сăввикĕввине чăваш хресченккисемпе маттур йĕкĕтсем. Рыбкинăн та, ытти сăвăçсем пекех, писатель ятне илтес килсе кайнă. Тăкуменчĕсем ман алла лекрĕç. Манăн ăна хавхалантарас килет. Агивер ăна Союза илме тăхтасшăн, Атăл çăрттанĕпе хăналамасăр ман кăмăл уçăлмасть, тесе куç айĕн сăнăлать. Хуçан кăмăлне уçас тесе, «По щучьему велению, по моему хотению...» юмахласа, сумккăран тĕтĕмленĕ мăн пулăсем туртса кăлартăм. Çăпата пекскерсене мана Рыбинскра пурăнакан тăванăм ярса панăччĕ. «Пичет çуртĕнчен, Рыбкин парни», - терĕм те, Федор Георгиевич йăлл кулса ячĕ, Союза илмелли кандидатсен списокне Владимир Рыбкина та кĕртме хушрĕ.

Агивер Измаил Григорьевăн ашшĕ ятне ниепле те аса илеймест. Эпĕ вара кулмасăрах «пулăшрăм»: Суворович. Суйлав списокне те Измаил Суворовичпах кĕчĕ.

Пуш, 24.

Çивĕч ыйтупа «Хыпарта» Денис Гордеев публицистăн «Ăçта халь Ухсайпа Хусанкай Союзĕ?» ятлă пысăк статья пичетленчĕ.

«Чăваш Республикинчи Писательсен союзĕн пуçлăхĕ Ф.Г. Агивер питĕ телейлĕ тейĕн. Ĕç-пуçĕ унăн хăй шутланă пекех пулса пырать. Ултавпа суяна сăмахпа эрешлеме пĕлсен, халăх паттăрĕ пулса юлма май пуррине вăл республикăра никамран та лайăхрах пĕлет.

Кам та пулин тиркесе е вĕрентсе калама тăрсан, çитменнине тата ку апла мар, ак çапла пулмалла тесен, вăл пурне те пĕр сăмахпа татса хурать: «Мĕн, эс Ухсайпа Хусанкай Союзне тĕп тăвасшăн-им?» Теприсен хăй çылăхне çын çине ярас йăла пур çав. Никам та мар, Ухсайпа Хусанкай Союзне вăл хăех пĕтерсе лартрĕ. Çук вăл халь паян. Ăна чĕртсе тăратас тесен, теприсен çунса ĕçлеме тивет. Юри пăтăрмах çĕклесе халăх паттăрĕ пулас текенсене айккинерех пăрăнса тăма ыйтар-ха», - тенĕ унта.

Кун кĕнекинчен.

Писательсен союзĕ, Ехрем хуçа çуртне куççанах, ĕçлетчĕ. Федор Георгиевич вара хăй Агивер хуçа пулса тăчĕ. «Илем» хаçата манчĕ, ман çине анчах шанса, хăех пĕтерчĕ. Издательство тăватăп, Литература театрĕ тăватăп тесе лĕпĕртетрĕ, режиссер пулма çыннине те, Иван Ксенофонтов артиста тупрĕ, билечĕсене те çаптарса хучĕ. Вăхăт малаллах иртсе, иртсе пычĕ. Тăватă çул хушшинче нимĕн те пулмарĕ, çурчĕ пушă ларчĕ. Сăнчăрти йытă пек никама та çывăха ямарĕ. Халĕ «керменте» никамах та çук. Агивер те Юхма Мишши хыççăн хăвалать - кам кирлĕрех, çавна Союза илет. Хăшне-пĕрне эпĕ, хам пулсан, Журналистсен союзĕ çывăхне те ярас çук.

Пĕлтĕр тĕп редактор «Тăван Атăлта» Николай Симуновăн «Ан йĕр эсĕ, Лена» романне харăсах 5 номерте кĕнекен-кĕнекен туса ятарлă кăларчĕ, тăванĕсем пуян, укçа тăватăп, терĕ. Пулăшаканĕпе Ялавинпа Тутар Республикине кайса çӳрерĕ, редакцие пĕр пус та пырса кĕмерĕ. Журнал номерĕсене редакци пӳлĕмне, складне тултарчĕ. Коллектива юхха ячĕ.

«Тăван Атăлта» çынни нумай, ĕçĕ çеç ик-виçĕ çын çине тиенет. Ялавин Сергей писателĕн номерĕ 1-мĕш, халĕ те тухман-ха. 2-мĕшĕ - Иван Яковлев номерĕ, тухса кайрĕ-ха. 3-мĕшĕ - ял хуçалăх академийĕн, май çурринче тухмалла. Унпа эпĕ ĕçлетĕп. 2-мĕшне Герман Желтухин турĕ. 4-мĕш номерне набора яман. Ку вăл секретлă номер, тет тĕп редактор. Кĕçех никам та çырăнми пулать пирĕн журнала. Куç умĕнчех тĕпленет «Тăван Атăл».

Утă уйăхĕн 29-мĕшĕ.

«Тăван Атăла» «Хыпар» çумне куçарасси пирки тахçанах сăмах тухнăччĕ. Пичет комитечĕн коллеги членĕ Алексей Петрович Леонтьев Агивере кун çинчен пуçласа илтетĕп тесе улталанă. Федор Георгиевич лăпланнă. Ялне амăшĕн 80 çулхи менелникне ирттерме тухса кайнă. Хăйне Культура министрĕ Ольга Денисова учредитель пулма пăрахатпăр тесе çуркуннех асăрхаттарнă. Журнала Пичет комитечĕ çумне куçарасси пирки калаçатчĕç. Унăн председателĕ Николай Григорьев документсем хатĕрлеме те хушнă пулнă. Мăран редактор çывăрса юлнă. Тахçанах коллектив пухăвне ирттермелле те йышăну тумаллаччĕ.

Ытти чухне редакци çыннисем ĕçе вăхăтра тухмаççĕ е пачах та пымаççĕ. Паян пурте ирех пур. Эпĕ апатра чухне вĕсем вăрттăн канашласа хунă иккен.Агивере редакцие ертсе пыма шанмалла марри пирки тахçанах кавар тăватчĕç-çке. Лешĕ, ухмаххи, вĕсене шанса пурăннă.

Айдаш ман пата кĕрсе ыйтрĕ: «Эсĕ, Володя, «Хыпар» çумне пĕрлешес пирки мĕн шухăшлатăн?». «Маншăн çавах, эпĕ ĕçрен кайма хатĕрленетĕп, çапах та, тĕп редактор çук-çке, хăй килессе кĕтер», - терĕм.

Пухăва Юрий Григорьевич пухса, ертсе пычĕ. Вăл - тĕп редактор заместителĕ-çке. Андрей Алексеев - çыравçи. Ку таранччен хамăр хушăра илтмен хаяр сăмахсемпе ятларĕç хуçана. Пĕр саслăн «Хыпара» куçма килĕшрĕç. Агивере шанманни çинчен йышăну тунă чухне: «Ку пункт мĕн тума кирлĕ тата, тăхтар, васкар мар», - тесе хирĕçлерĕм. Пичет комитечĕн коллеги членĕ Алексей Леонтьев халех, çакăнтах йышăнмалла тесе çирĕппĕн каларĕ. Ун сĕнĕвĕпе-хушăвĕпе хавасах пулчĕç. Редакцин укçатенкĕ ĕçне тĕрĕслеме йышăнчĕç.

Христосăн вун икĕ вĕренекенĕсенчен пĕри, Иуда текенни, шутсăр йывăр вăхăтра хăйнех, вĕрентеканнех, вăтăр кĕмĕл укçалла сутса янă пекех, хăйĕн вĕрентекенне, пулăшаканне, çуллă пурнăç туса параканне, мĕн пур ырă тунине шута илмесĕр, кут хыçĕнче шăтăк чавса хуртарттарчĕç. Кун пирки эпĕ кăштах систертĕм те, пĕри ним пулман пекех, каласа тĕлĕнтерчĕ: «Кунта эпир Хветĕр Агиверпе çамрăкранах 30 çул хушши туслă пулнине манмалла. Пире паян укçа кирлĕ!».

Тĕлĕнмелле! Хветĕр Агивер вĕсене пурне те пулăшнă, ура çине тăратнă - пухура ларакансене. Халĕ вĕсем, усал шухăшпа урмăшнăскерсем, ăна çурăм хыçĕнчен наркăмăшлă сăнăпа

сӑнӑларӗҫ. Урӑлса ҫитсессӗн... Ҫук, урӑлса ҫитекен ҫынсем мар вӗсем, тӑрӑ пуҫпа шухӑшласа хӑйсен йӑнӑшне Агивер умӗнче те, Турӑ умӗнче те каҫару ыйтасса кӗтме хӗн вӗсенчен. Ку ҫӳлти влаҫсем пуҫланӑ спектаклӗн пӗрремӗш пайӗ ҫеҫ пулчӗ. Хура ӗҫ малаллах аталанса пычӗ.

Андрей Алексеев хӑйӗн ӗмӗрӗнче кунашкал хавасланса йӑрт-ярт ӗҫлесе курман та кӑтартман та пуль, халӗ йӗрленсе кайрӗ, хӑйӗн уйрӑлми тусне ӗҫрен кӑларттарассишӗн йышӑннӑ официаллӑ протокола васкавлӑ пичетлеттерсе Пичет комитетне ҫурхи айӑр хӑвӑртлӑхӗпе кайса пачӗ. Ӗҫ тунӑ. Хв.Агивер малашне «Тӑван Атӑл» редакторӗ мар!

Ҫӗртме уйӑхӗн 30-мӗшӗ.

Хветӗр Агивер Аслӑ Каҫалран, килӗнчен, таврӑнчӗ. Эпӗ ӑна мӗн пулса иртни пирки йӗркипе каласа ӑнлантартӑм. Пуху пухрӗ. Калаҫса лартӑмӑр. Пӗри те унпа килӗшмест. Кайран кашнинпе уйрӑммӑн калаҫса тухрӗ. Хӑйӗн куҫӗ умӗнче хӗрарӑмсем, вӗсемпе пӗрле Андрей Алексеев та, ӗнерхи пуху йышӑнӑвне пӑрахӑҫлама килӗшнӗ пекки тунӑ, анчах ку вӑл тӗп редактора вӑрттӑнла лӑплантарни ҫеҫ пулнине тӳрех туйрӑм. Пурпӗрех пӗрре пуҫланнӑ каварлашу вӗҫнех ҫитмелле.

Утӑ уйӑхӗн 1-мӗшӗ.

Хв.Агвиер каллех пуху пухрӗ. Пурте пур: Агивер хӑй, заместителӗ Айдаш, ответлӑ секретарӗ Желтухин, публицистика пайӗн заведующийӗ Алексеев, проза пайӗн заведующийӗ Кузьмин, поэзи пайӗн заведующийӗ Мартьянова, технически редактор Петров, Осипова корректор, Андреева машинистка, Вишневская бухгалтер.

Калаҫса-тавлашса илнӗ хыҫҫӑн пӗри те Федор Георгиевича майлӑ пулмарӗ. Эпӗ, протокол ҫыраканскер, алӑ тӑратма та маннӑ. Шухӑшӑм ман иккӗленӳллӗччӗ.

Утӑ уйӑхӗн 2-6-мӗшӗ.

«Хыпарта 2-мӗш числара информаци тухрӗ:

Тӑван Атӑл» «Хыпар» ҫемйине кӗресшӗн

«Тӑван Атӑл» журнал йывӑрлӑхра пулни вӑрттӑнлӑх мар. Ӑна кӑларса тӑма каякан тӑкаксем (типографи, пӳлӗмсен аренди тата ытти те) валли укҫа-тенкӗ ҫук. Редакци ӗҫченӗсем вӑхӑтра шалу илеймеҫҫӗ.

Паллах, кун пек чух йышра кӑмӑлсӑрлӑх туйӑмӗ вӑй илет. Кӑларӑм пуласлӑхӗ тӗтреллӗ. Ҫавна май редакци коллективӗн ҫак кунсенче иртнӗ пухӑвӗнче журналӑн тӗп редакторне Хветӗр

Агивере шанманнине палӑртнӑ. Журналистсем «Тӑван Атӑла» «Хыпар» Издательство ҫурчӗн» йышне илсе журнала унӑн вӑйӗпе кӑларса тӑмашкӑн ыйтма йышӑннӑ. Халӗ ҫак ыйтӑва ЧР Пичет комитечӗ тишкерет.

Т.Петров.

Агивере эпӗ тӗп редактор заместителӗн правиллӗ коммерци пайӗн заведующийӗн должноҫне тума сӗнтӗм. Вӑл манпа килӗшрӗ. Унта ӗҫлеме Писательсен союзӗнчи хӑйӗн коммерци енӗпе ӗҫлекен заместительне Юрий Сергеевич Ялавина йышӑнчӗ.

3-мӗшӗнче 1997 ҫулшӑн 400 тенкӗ ӗҫ укҫи пачӗҫ. Чи савӑнаканнисем - Мартьяновапа Алексеев. Хаксем: сахӑр кг - 9 тенкӗ, чӑх - 26, тӗтӗмленӗ аш - 23, ӗне пӗверӗ - 24, ҫӗр улми - 6, мандарин - 18, шур эрех - 0,5л. - 21,10, хӗрарӑмсен хӗллехи атти - 390, пӑта - 7, цемент - 26, автобуспа Шупашкартан Вӑрнара - 11,30 тенкӗ. Пенси уйӑхне 388 тенкӗ.

Ҫакӑн пек пирӗн пурнӑҫ карттини.

Агивер хӑйне ЧР Патшалӑх Канашне депутата суйлама кандадата тӑратрӗ.

6-мӗш числара эпӗ те, Агивер те отпускра. Унӑн ӗҫӗсене Юрий Ялавин пурнӑҫласа пырать.

Кӑнтӑрлапа коллектив пухӑвӗ пуҫтарӑнма пуҫларӗ. Андрей Алексейч Агивере эрнекун ҫапла приказланӑ: «Хыпара» куҫма килӗшместӗп, тунтикун пуху ирттермелле!» Хӑй вара ӗҫе те пымарӗ. Юрий Айдаш ирех сассӑр пулса ларнӑ. Вениамин Тимаков поэтпа мана хирӗҫ сывалма кайрӗ. Каялла хӑюллӑ утса килчӗҫ. Елизавета Осипова самаях ӳсӗр килчӗ, сумккине ҫӑмламас йытӑ лартнӑ. Пухура калаҫакансене чӑрмантарсах перкелешсе ларчӗ. Герман Желтухин сасӑлав умӗн: «Сирӗн суйлама ҫын ҫитет, эпӗ йышӑнусемпе килӗшетӗп, мӗн тӑвас тетӗр - тӑвӑр, манӑн халӗ питӗ вашнӑ ӗҫе васкамалла», - тесе ыйтса тухса кайрӗ.

Сасӑлав пулчӗ. Тавлашкаласа-мӑнкӑлтатса хӑйсен ӑнланусӑрлӑхне, тирпейсӗрлӗхне кӑтартрӗҫ: Люба Мартьянова, Марина Андреева, Лиза Осипова.

Коллектив пухӑвӗн июнӗн 29-мӗшӗнче йышӑннине пӑрахӑҫласа, «Государственное учреждение «Тӑван Атӑл» ятлӑ редакци ҫурчӗ тӑвас тесе йышӑнтӑмӑр. Куншӑн пурте сасӑларӗҫ.

Утӑ уйӑхӗн 23-мӗшӗ, кӗҫнерникун.

Тӑван яла кайса килнӗ, чуна уҫӑлтарнӑ хыҫҫӑн, Шупашкарӑн ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ енчи «Европа» суту-илӳ ҫурчӗ умӗнче 8

сехетре Агиверпе тӗл пултӑмӑр. Хӑй патне чӗнчӗ. Хваттерӗ унӑн пысӑк.

Вӑл халӗ ӗнтӗ «Тӑван Атӑлӑн» тӗп редакторӗ мар. Вунӑ кун каярах редакцие Пичет комитечӗн председателӗ Николай Алексеевич Григорьев пынӑ, редакци ҫыннисемпе пухӑнса калаҫнӑ. Унччен маларах ӑна, заявлени ҫырма сӗнсе, тӗп редактортан кӑларнӑ. Комитет приказӗпе, лайӑх ӗҫлесе пынӑшӑн, ӗҫ кӗнекийӗ ҫине благодарность-тав мухтавне ҫырса панӑ. Икӗ питлӗх ташши мар-и?! Пухӑвӗнче шутсӑр хытӑ шавларӗҫ тет куянсем - мӗскӗнсем. Упана ҫурӑм хыҫӗнчен пуш кӗленчепе персе. Нимӗнле намӑс-симӗс те ҫук. «Тӑван Атӑла» Герман Желтухин аллине хӑварма килӗшнӗ-йышӑннӑ.

Эпӗ ӗнтӗ, Агивер сӗнӗвӗпе Писательсен союзне куҫма хатӗрленекенскер, пулас мӑн хуҫапа малашнехи ӗҫсем пирки калаҫса лартӑм.

Хӑмпӑ карапӗн шӑтӑкӗ аслӑланса пырать пулин те, капитанӗн Ӗмӗт ҫыранне ҫитиччен ишмеллӗх шухӑш вӑйӗ пурри сисӗнет-ха.

1999 ҫул.

Кӑрлач, 19.

«Советская Чувашия» хаҫатра паян Анатолий Ефимов-Кибечӗн «Куда завела Союз писателей «Красная оппозиция?» ятпа писательсен Союзӗн пӗлтерӗшне ӳстермелли ҫинчен самай курӑмлӑ статья пичетленнӗ.

Унта вӑл:

«В трудное положение Союз писателей завели его руководители, точнее, «красная оппозиция». Мне думается, что Союз писателей нужен, но он должен функционировать на профессиональной основе, ради родной литературы, ради служения родному народу. Проблем у Союза писателей накопилось немало. Большинство из них возникло из-за пассивности правления. Надо вернуться к вопросам творческого плана. Разве бывший особняк купца Ефремова, в котором находится правление Союза писателей Чувашии, общими усилиями не сумеем превратить в подлинный культурный центр республики? Тогда ни у кого не поднимется рука отобрать это здание в пользу какой-либо коммерческой организации. Во главе Союза нужен авторитетный лидер, хороший организатор»,- тенӗ.

Кăрлач, 25.

Писательсен союзĕн 75 çулхи менелникне, каярах юлса та пулин, вырăс драма театрĕнче уявларăмăр. 144 писательтен нумайăшĕ пынă. Ваттисенчен Валентина Эльби, Хĕветĕр Уяр, Константин Петров, Георгий Ефимов, Петĕр Ялгир тата ыт. те пур. Анчах маншăн пĕр вăйлă аксакал та çук. Унччен эпĕ писательсен пухăвĕсенче Турхан, Ухсай, Хусанкай, Осипов, Алагер, Талвир тата ытти шурсухалсене кураттăмччĕ. Паян вĕсем çуккă. Паян вĕсен ретне йышăнакан та курăнсах каймасть. Уяра илес пулсан кăна. Вăл та ватăлнă, çапах хавхалануллă. Пуху хыççăн Чăваш педуниверситечĕн столовăйĕнче апатланнă чухне, манпа калаçса ларчĕ. «Шурча таврашне» вĕçлерĕм, - тет. - Ытти халăхсем, писательсем, искусство çыннисем чăваш халăхĕ çинчен мĕн-мĕн каланисене пухса кĕнеке хатĕрлерĕм. Унчен пичетлеме чарнă е сивленĕ хамăн произведенисене пухса кĕнеке кăларасшăн. Сывлăх начарланса пырать-ха.» Уççăн, кăмăллăн калаçрĕ. Арăмпа та калаçрĕ. Эпĕ «Тăван Атăлта» ĕçленĕ чухне вăл манпа нумай калаçатчĕ. Тен, вăл мана литературăра ним вырăнне те хумасть пуль, çапах та, юнашар ларса литература ыйтăвне хускатни, вăл мана хисепленине туйрăм.

Вырăс драма театрĕнче юнашар Аркадий Казановпа лараттăмăрччĕ. Аван журналист-писатель. Пĕрне-пĕри ăнланатпăр. Сулахай енче пуш вырăн пурччĕ те, унта Николай Терентьев драматург кĕрсе ларчĕ. Унпа çыхăнусем лайăх. Ахальтен вăл ман çума лармасть. Сухал ӳстернĕ. Темиçе çул ĕнтĕ Чурачăк çывăхĕнче, Кăшнаруйĕнче пурăнать. Савăнăçлă пуху вăхăтĕнче пĕрмай шӳтлесе лартăмăр.

ЧР Президенчĕн администрацийĕ ячĕпе Анатолий Смолин (унта пичет ыйтăвĕсемпе ĕçлет) Писательсен союзне çӳллĕ, хитре кăкшăм парнелерĕ. Ăна алла илнĕ май, Агивер председатель те шӳтлесе, те аслă хуçи çине тарăхса, кăкшăмĕн тĕпĕ шăтăк пуль, терĕ. Çивчĕ сăмахшăн кӳрше каçман Смолин çухалса каймарĕ, саламланă чухне Агивере çунтарса илчĕ: «Аялти шăтăкки вăл тăрри шăтăкки мар».

Пухун пĕрремĕш пайне Агивер хăй ертсе пычĕ. Доклад пеккине начар турĕ. Сӳрĕккĕн. Иккĕмĕш пайне, маларах та, Георгий Ефимовпа Петĕр Ялгир тăсрĕç. Никама та кăмăла каймарĕ. Çынсем кулаççĕ вĕсенчен.

Банкетра эпир пĕрле лартăмăр: Виталий Родионов, Валентин Абрамов, Георгий Федоров профессорсем-писательсем. «Хамăр çынсемпе лартăмăр»,- терĕ Виталий Григорьевич.

Ĕçрĕмĕр, çирĕмĕр, юрларăмăр. Алкаш-писательсем, кăнса пĕтменнисем, пирĕн умри пуш кĕленчесене, юлман-ши тесе пуль, тĕрĕслесе кайрĕç. Хăшĕсем пукан çинченех урайне тĕшĕрĕлсе анчĕç. Пыр хыртарса ялан çухăракан писатель алăк урлă тăсăлса выртнă. Çынсем ун урлă каçса çӳреççĕ. Чи хытă ĕçнисем, пуçа çухатнисем пурте - Хв.Агивере председательтен кăларса çапма хатĕрленекенĕсем тата «Тăван Атăл» редакторĕнчен кăларма пулăшакансем. Намăс та мар вĕсене ун умĕнче. Федор Георгиевича Союз юбилейне тума Культура министерстви те, никам та пулăшман, хăй çине тăнипе хăналарĕ пурне те: çывăх çыннисене те, тăшманĕсене те. Авă мĕнле аван савăнмашкăн çын шучĕпе! Намăссăрлăх!

* * *

Выписка из протокола заседания правления Союза писателей Чувашской Республики от 25 января 1995 года:

«Постановили: Утвердить заместителем председателя Союза писателей Чувашской Республики по оргмассовой и творческой работе КУЗЬМИНА Владимира Прокопьевича».

Пуш, 15.

Ăслăлăх тĕпчев институчĕпе пĕрле вĕсем патĕнче конференци пулчĕ. Чăваш литературин иртнĕ пилĕк çулхи ĕçне сӳтсе яврăмăр. Тавлашуллă калаçусем пулчĕç. Конференци аван иртрĕ, аптрамасть тесен те юрать, пĕлтерчĕ институтăн литфольклор пайĕн пуçлăхĕ Виталий Станьял.

Президиумра чăваш халăх писателĕ Анатолий Емельянов, чăваш халăх поэчĕсем Георгий Ефимов, Александр Галкин, писательсен Союзĕн председателĕн заместителĕ Владимир Кузьмин, Ăслăлăх институчĕн директорĕ Алексей Трофимов, Валентина Эльби, чăваш илемлĕ литературине пропагандăлакан пай пуçлăхĕ Петр Ялгир, ЧР Президентне пулăшаканĕ Анатолий Смолин, Виталий Станьял пулчĕç,

Хветĕр Агивер Мускава кайнăччĕ. Çеçпĕл Мишшин 100 çуллăхне халалланă паянхи тишкерӳпе ăслăлăх калаçăвне хутшăнаймарĕ.

Федор Георгиевич хăйĕн заместителĕпе Ялавинпа ахаль çӳремест-ха. Унăн кĕнеке кăлармалла. Кĕнеке кăларма мĕн чухлĕ укçа кирлĕ - сахалтан та 50-60 пин. «Хурăнташ» кĕнекипе вăл тĕнчене чăваш халăхĕн ертӳçи пек тухма ĕмĕтленет. Кĕçех Раççей Патшалăх Думин суйлав кампанийĕ пуçланмалла. Çавĕнта вăл кан-

дидата тăрасшĕн çунать. Унччен хамăрăн Патшалăх канашне икĕ хутчен те тухса пăхрĕ. Пăх çеç хыпрĕ. Чăваш Республикин Президенчĕ пулас тесе те шăв-шав çĕклерĕ - ĕç тухмарĕ. «Тăван Атăл» редакторĕнчен те сисмесĕрех тухса ӳкрĕ. Ĕçĕ пур çĕрте те ăнсах пыраймасть. Пĕр тĕллевпе мĕнпур вăя пухса пĕр вучаха хĕмлентерсе çунтарма пултараймасть. Ăслă шухăшне сапаласа ярать, идейисене, чăтăмсăррăн, маларах уçса парать те, çапла майпа песплатах ытти пуçтахсене парнелет. Ăсĕ пур-ха хăйĕн, анчах çав ăс-тăн пултарулăхне анлăрах тума халĕ çитеймест курăнать. Пур матрос та капитан пулаймасть çав. Пурне те ырă тăвасшăн тата хăй. Ырă тунă çыннисем хăйнех лапрапа вараласçĕ. Сăмахран, Андрей Алексеев тăмпуç, «шултра ученăй», Агивере хирĕç сикрĕ-сикрĕ те «Тăван Атăлта», анчах умрине курма пултарайман «суккăр», редакцире сыхланса юлаймарĕ. Çĕнĕ тĕп редактор ăна алăк еннелле кула-кулах тĕллесе кăтартнă: «Эсĕ халĕ пире кирлĕ мар».

Ака, 6.

Василий Эктел каманти Чăваш писателĕсен Литература фондне иртнĕ уйăхрах йĕркеленĕ. Ăна Мускавран Ганичевсем çапла тума сĕнсе янă иккен. Çав Литфонд тавра пухăнакан писательсен ушкăнĕ Агивер Союзне торпеда пек çапса сирпĕтмелли вăй пулать пулас! Епле вăрттăн хатĕрленеççĕ!

Агивер хăйĕн сылтăм аллипе Юрий Ялавинпа ЧР Юстици министерствинче пулнă та, унта вĕсене хăвăр Литфонд тăвăр тесе сĕннĕ.

Учредительнăй пуху пулчĕ. Хветĕр Агивер, Юрий Ялавин, Геннадий Уткин, Александр Пăртта, Юрий Иванов тата эпĕ Чăваш Республикин Литфондне туса хума йышăнтăмăр. Документсем хатĕрлесе ыранах вĕсене Минюста тăратмалла. Унтан ЧР Писателĕсен союзĕ ячĕпе Пĕтĕм тĕнчери писательсен союзĕсен пĕрлешĕвĕпе (Международное сообщество писательских союзов в пределах бывшего СССР) васкавлă килĕшӳ тумалла. Ун пирки мускавсемпе Агивер калаçса татăлнă. Эктелсенчен маларах ĕлкĕрмелле. Вĕсем халлĕхе Юстици министерствине документсене тăратман, тет.

Çĕнĕ Литфонд членĕсем пулма, ăна Юстици министерстви регистрациленĕ хыççăн, Лаврентий Таллеров, Василий Игнатьев, Александр Галкин тата ыттисем те самаях йышлăн çырăнчĕç.

Пирĕн пуçлăх тепĕр çĕнĕлĕх пĕлтерчĕ: ЧР Писательсен союзне çĕнĕрен регистрацилемелле, питĕ васкавлăн.

Çав вăхăтрах эпир те правлени ĕçĕсене туса пыратпăр. Йышăну комиссийĕ те, правлени составĕ те çывăрса лармаççĕ: планпа ĕçлеççĕ. Петр Тихонов журналист пирĕн ĕçе пичетре çутатса тăрать. Акă вăл чăваш халăхне мĕн çинчен пĕлтерчĕ:

ПИСАТЕЛЬСЕН ЙЫШĔ ХУШĂНЧĔ

Шупашкарти Писательсен çуртĕнче çĕнĕ йыша Раççей Федерацийĕн Писательсен союзĕн член билечĕсене пачĕç. Мускав çирĕплетнĕ хыççăн тĕп хуларан 7 билет илсе килнĕ. Çыравçă документне Александр Аслут (Николаев) поэт, очеркист, публицист, Микиш Павăлĕ (Крысин) сатирик, Мария Карягинăпа Анатолий Кипеч сăвăçсем, Валентин Абрамов критик-литературовед илчĕç. Писательсен йышне Красноармейскипе Елчĕк сăвăçĕсем Леонид Антоновпа Юрий Иванов та кĕчĕç. Билетсене Чăваш Республикин Писательсен союзĕн председателĕ Хветĕр Агивер пачĕ.

П.Тихонов.

Кун кĕнекинчен.

Çу, 14.

Ирех мана Агивер Писатель çуртĕнче мухтанса шантарчĕ: «Чăваш президенчĕ пулатăп. Сана министр портфелĕ паратăп, халăх писателĕ ятне илетĕн».

Çĕртме, 22.

Эпĕ яла, çуралнă Хурăнсур Çармăса, пĕтĕм ăшран канма кайса килтĕм. Çав вăхăтра Хветĕр Агивер коопераци институтĕнче чăваш писателĕсен чрезвычайлă съездне ирттернĕ. Съезд президиумĕнче - Хветĕр Агивер, Геннадий Уткин, Васлей Давыдов-Анатри, Лаврентий Таллеров, Александр Галкин. Шухăшлама тăн çитмест!

Çурла, 28.

Ĕнерех Агивер телефонпа Атăл леш енне чĕннĕччĕ. Риммăпа ирех çула тухрăмăр. Федор Георгиевич пире килĕнчисĕр пуçне пур çĕрте те нихçан хăйĕнчен уйрăлман арăмĕпе Валипе пристаньре кĕтсе илчĕç. «Омич» катерпа Атăл урлă каçрăмăр.

Агиверсем çак кунсенчех писательсен пултарулăх çуртне уçма хатĕрленеççĕ иккен.

Хуçа пире малтан кану çурчĕн хуçалăхĕпе паллаштарчĕ. Виссарион Синичкин кĕрӳшĕ самай юсаса çĕнетнĕ. Римма кайран Вальăпа кухньăра чакаланса кун ирттерчĕ. Эпĕ вĕсене шыв кӳрсе тăтăм.

Чӳк уйăхĕ.

Агиверсемпе чиперех пурăнаттăмăрччĕ-ха, çемьесемпе те хутшăнкаланă. Ĕçре унта тем мыскари те сиксе тухаь те, чăтăмлăх та çитмест пуль тепĕр чухне, кăмăл-туйăм та улшăнать Ырăлăххи çапах та асран каймасть. Килте юлташăн кĕнекине алла илсен, пилĕк çул каяллахи аса килчĕ. Пĕрле ĕçленĕ ырă вăхăт.



Чӳк, 15.

Çеçпĕл Мишшин уявĕ. Ун умĕн чăваш вулаканĕсем «Хыпарта» çак информаципе паллашма пултарчĕç:

УКРАИНĂНА - ÇЕÇПĔЛЕ ПУÇ ТАЙМА

Кăвар чĕреллĕ поэтăмăрăн Çеçпĕл Мишшин 100 çулхи юбилейне паллă тăвас кун çывхарнăçем çывхарса килет. Чыслава Украинăран, Çеçпĕл ĕмĕрлĕхе канлĕх тупнă вырăнтан, пуçлас терĕç.

Чернигов облаç администрацийĕн пуçлăхĕ Н.П.Бутко йыхравланипе унта юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче Чăваш енĕн сумлă делегацийĕ тухса кайрĕ. Çеçпĕл Мишшин фончĕн вăйĕпе инçе çул çӳреве тухнă делегацие ЧР вĕрентӳ, аслă шкул тата ăслăлăх министрĕ Н.Григорьев ертсе пырать. Ушкăнра, тĕпрен илсен, Çеçпĕл премийĕн лауреачĕсем самай йышлă: Ю.Сементер, В.Тур-

кай, П.Афанасьев, А. Смолин, А.Тарасов, О.Мустаев. Журналистсен йышӗнче «Советская Чувашия» хаҫатӑн тӗп редакторӗ Н.Максимов, «Хыпар» хаҫатӑн тӗп редакторӗн ҫумӗ Г.Максимов тата ыттисем те.

Кану программине чӑваш патшалӑх оперӑпа балет театрӗн солистки, ЧР тава тивӗҫлӗ артистки, Ҫеҫпӗл премийӗн лауреачӗ З.Прокопьева тата ҫамрӑксем юратса итлекен «Альянс» ушкӑн илемлетӗҫ.

Чӑваш Ен делегацийӗ Черниговра, Остерта тата ытти вырӑнсенче те пулӗ, Ҫеҫпӗл Мишшин тата ӑна лайӑх пӗлнӗ ҫынсен вил тӑприсене пуҫ тайӗ.

Тӗп уяв юпа уйӑхӗн 12-мӗшӗнче Чернигов хулинчи Т.Шевченко ячӗллӗ музыкӑпа драма театрӗнче иртмелле. Унта хӑнасем Киевран та пырса ҫитӗҫ. Ҫав шутра - пирӗн ентеш П.Чичканов ӳнерҫӗ тата ҫыравҫӑ.

Уяв Чӑвашра Шӑхран-Канаш районӗнчи Касакасси ялӗнче пуҫланать. Унта эпир нумайӑн тухса кайрӑмӑр. Автобусра Николай Максимов тусӑмпа ӑш-пиллӗн калаҫса пытӑмӑр. Вӑл та Ҫеҫпӗл ҫӗрӗнче, Кӑшнаруйӗнче, ҫуралнӑ-ҫке. Уншӑн вӑл - ентеш.

Ҫанталӑк начар, ҫумӑр ҫӑвать, пылчӑк. Шӑхасанта шкул умӗнче, Касакассинче (Ҫеҫпӗлте) митинг пулчӗ, яла ҫитсен - бюсчӗ умӗнче, ҫуралнӑ килӗ патӗнче, шкул умӗнче. Федор Мадуров юманран питӗ хитре, курӑмлӑ скульптура тунӑ. Ҫамрӑк Мишша чӗрӗ пекех. «Хамӑн япаласемпе турӑм, хамах турттарса килсе вырнаҫтартӑм, ял ҫыннисем сӑра та ӗҫтермерӗҫ», - терӗ манпа калаҫнӑ вӑхӑтра кӳренӳллӗн скульптор.

Республика Министрсен Кабинечӗн председателӗн ҫумӗ Петр Васильевич Ивантаев тата Культура министрӗ Ольга Григорьевна Денисова ҫумӗнче хӑшпӗр ҫыравҫӑсем кушак ҫурисем пек ачашланса ҫӳреҫҫӗ. Ҫеҫпӗл Фончӗн директорӗ Валери Тургай питӗ кӑмӑллӑн, ҫунат хушса вӗҫнӗ пек ҫӳрет. Ку уявшӑн вӑл ӗҫне нумай тунӑ-ҫке. Савӑннине ниҫта хума пӗлеймесӗр хитрен ташласа та илчӗ. Чаплӑ, курӑмлӑ ӗҫ!

Ҫӗнӗ шкул ҫуртне уҫрӗҫ. Ҫак кун тӗлне ятарласах кирпӗчрен икӗ хутлӑ тунӑ, классем анлӑ, ҫутӑ. Культура ҫуртне те ҫӗнетсе, мрамор плитисемпех, майланӑ. Унта савӑнӑҫлӑ пуху пулчӗ. Ҫав ҫыравҫӑсемех хӑйсем мӗнле лӗпӗртисем пулни кунта пушшех палӑрчӗ: Ивантаевӑн ҫӑварне тата Денисован пӗҫ хуҫшине кӗрсе кайманни ҫеҫ. Кайран Пикшик ялӗ ҫумӗнчи «Колос» кафере апатлану-ӗҫкӗ пулчӗ. Мӗн кӑна ҫу-ук сӗтел ҫинче! Дон-Агиверӗн

Санчо Панси, Андрей Алексеев, сысна пек чаплаттарса ларчĕ. Вăл ун пек апатсенчен Шупашкарта пĕринчен те юлмасть. Митингсенчи президиумсене те паян та чĕнмесĕрех кĕре-кĕре тăчĕ. Телевиденипе хăйне пуçлăхсемпе юнашар кăтартасшăн вилет.

Чӳк, 16.

Çеçпĕл уявне килнĕ хăнасене ирхине П.В.Ивантаев Шупашкарта йышăнчĕ. Хушнă тăрăх, эпĕ Самар делегацийĕпе калаçса çӳрерĕм. Çеçпĕл палăкĕ умĕнче митинг пулчĕ.

17 сехетре Чăваш академи театрĕнче савăнăçлă пуху пуçланчĕ. Николай Федоров президент вырăсла доклад турĕ, тĕрĕссипе, Станислав Александров чĕлхеçĕ (президент администрацийĕнче ĕçлекенскер) питĕ вăйлă çырса панă, çавна вуласа пачĕ.

Раштав, 3.

Чăвашсен обществăпа культура центрĕнче виçĕ çул ĕçлерĕм. Унăн председателĕ Михаил Николаевич Юхма мана манман иккен. Тĕрĕсссипе илсен, манма та май çук ĕнтĕ. Алла-аллăн тытăнсах ĕçлерĕмĕр пĕр хушă. Обществăн 10 çулхи юбилейне чĕнсе, хăй алă пуснă хутне аларан пачĕ, ырă сунсах кĕтетпĕр, терĕ.

14 сехет тĕлнелле вырăс драма театрĕн çуртне пытăм. Халăх йышлă, паллаканни те нумай. Лару пуçлансан, доклад тунă чухне, Михаил Николаевич, ятран мана тата Иван Яковлевич Тенюшева çеç асăнчĕ. «Вĕсем», - терĕ вăл. - ЧОКЦ ĕçне вăйлатассипе те, «Вучах» хаçата йĕркелесе кăларса тăрассипе те калама çук пысăк ĕç турĕç. Çавăншăн вĕсене ура çине тăратсах хыттăн та ăшшăн саламлар-ха».

Вĕçне çитичченех лартăм. Савăнăç пухăвĕ 21 сехетченех тăсăлчĕ. Калаçса ĕшеннĕ хыçăн, канма, пединститутăн «Сарпике» кафине сĕтелсем хушшине пухăнса лартăмăр. Çинĕ-ĕçнĕ хушăра хĕрнĕ чĕлхене малалла якатрĕç. Юхма мана та сăмах пачĕ. Эпĕ Михаил Николаевич ЧОКЦ тивлечĕпе Чăваш писателĕсен союзне хастаррăн йĕркелесе ярса пултаруллă çыравçăсене хăй тавра пуçтарма пултарни, вĕсене малалла аталантарма пысăк пулăшу пани çинчен каларăм. Ман сăмахăм, паллах, ăна питĕ килĕшрĕ.

Раштав, 29.

Яланхи пекех нумай çыратăп: хаçатсемпе журналсем, Чăваш-радио валли те, кĕнекесем валли те. Манăн чун-хавалĕн чи çывăх туртăмĕ - ял çыннин кăмăл-туйăмĕ, хуйхи-суйхи.

Республика ял хуçалăх министрĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ А.Коршунов хăйĕн ĕç пӳлĕмне чĕнчĕ. Пире вĕсем чапа кăларнă

иккен! «Хыпартан» Сергей Карягина, «Хресчен сассинчен» Сергей Рыбкина, телевиденирен Мария Мареевана, радиоран Юрий Фролова, министерствăн пресс-центрĕнчен Петр Сидорова тата мана ял хуçалăх тематикипе нумай çырса палăрнăшăн ырларĕ тата алла çыхмалли хаклă сехетсем парнелерĕ. Унтах манран интервью илчĕç, каçпа «Юлашки хыпарсен» передачисенче кăтартнă. Ăна манăн кĕрӳсем çемйипе курса савăннă.

Кăçалхи пултарулăх ĕçĕн биографийĕнчи тепĕр çитĕнӳçĕнтерӳ тесе хĕпĕртерĕмĕр арăмпа иксĕмĕр те.

2000 çул.

Кун кĕнекинчен.

Нарăс, 7.

Ехрем хуçа çуртне - Писатель çуртне - патшалăхăн Шупашкар хулин харпăрлăх шутне кĕртрĕç. Çӳлтен палăртнă тăрăх ăна паян Ф.Г.Агивер Чăваш наци Конгресне актпа парать. Конгресс хуçипе Архиповпа иккĕшĕ кăкăртан тытса çапăçманни çеç. Писательсен союзне пĕр пӳлĕмпе библитотека пӳлĕмне пама суеçтереççĕ. Николай Архипов каланине ĕненсен, кунта 13 организаци ĕçлемелле пулать. Пӳлĕмĕ 9 çеç, залпа пĕрле.

Хĕветĕр мана тахçанах каланăччĕ Союзра урăх ĕçлеместĕп тесе. Влаçсене хирĕç кĕрешсе-çапăçса пăхрĕ - çĕнтереймерĕ, арман çунаттисемпе кĕрешекен Дон-Кихот вырăнне тăрса юлчĕ. Компромисс текен çăлăнăçпа вăхăтра усă курса юлаймарĕ. Нимĕн те пулмарĕ Агиверĕн, «Тăван Атăлпа» та çунса кайрĕ, халĕ те Писатель çуртне турттарса илтерчĕ. Çитес çурла уйăхĕнче ăна писательсен сьездĕнче хура сăхман тăхăнтараççĕ пуль.

Эпĕ те ăна ĕненсе-итлесе нумай çухатрăм. Хăй мана, тăрăшса ĕçлесе панăшăн, укçине те тӳлемерĕ. Союзра унăн заместителĕнче шутланса тăратăп çулталăк ытла. Уншăнах ман тараватлăха пĕчĕклетеççĕ пур çĕрте те. Йăнăшрăм.

«Тăван Атăлăн» çĕнĕ редакторĕ те, вăхăтра тӳлемен ĕç укçине, 6 пине яхăн, памасть, Агивертен кайса ил, тесе мăшкăллать. Çиме-тумланма хаклă: сĕт литăрĕ - 6-8, çу кг - 15, ĕне ашĕ-30-33, сысна ашĕ - 43, бройлер - 40, докторски кăлпасси - 50, скумбри пулă - 48, çăмарта - 15, хура çăкăр - 4,20, çĕрулми - 5 тенкĕ.

Çу, 6.

Культура министерствине шăнкăравларăм. Унтан мана кулянтарчĕç. Писательсен союзĕнчен «ЧР культурин тава тивĕçлĕ

работникĕ» хисеплĕ ят пама тăратнăччĕ мана. Культура министрĕ Денисова пире кураймасть те, «Кузьмин Агивер çынни» тесе манăн кандидатурăна сирсе хăварнă.

Çурла, 2.

Ĕç кĕнекинчен.

Илем кунĕ. Хв.Агивер хăйĕн хваттерне чĕнчĕ. Правленипе йышăну комиссийĕн ларăвĕ ирттерет. Çумăра пăхмасăрах 12 сехете кайрăм. Арăмĕпе иккĕшĕ тата Йĕпреç ачи Николай Жирнов çыравçă (Юхма Союзĕнче тăрать) пур. Георгий Федоров профессор, писатель кĕçех килмелле-мĕн. Ыттисемпе вăл телефонпа калаçса татăлнă. Сасă çитет иккен.

Туллиех мар сĕтел кĕтет. Икĕ пуçне икĕ графин шур эрех тултарса лартнă. Икĕ турилккене йӳçĕтнĕ хăяр касса хунă. Çĕнĕ çĕрулми пиçнĕ хыççăн тăварланă пулă лартрĕç.

Калаçу хĕрӳ пуçланчĕ. Писательсен союзĕн сьездне çак уйăхăн 24-мĕшĕнче ирттерме палăртнăччĕ. Халĕ раштавăн 22-мĕшне хăварчĕç. Сăлтавĕсем: хатĕрленме вăхăт юлман. Федор Георгиевич щутланă тăрăх, Николай Федоров президент унччен вырăнтан хăпăнма пултарать.

Эпĕ ялта чухне Агивер нумай çынна Союз членне йышăннă. Унта предпринимательсем таранах пур.

Федоров та çитрĕ, калаçăва хĕрсех хутшăнчĕ. Виççĕмĕр те эпир пĕр енче, Çĕнĕ кăнтăр районĕнче, пурăнатпăр. Агивер пире Союзăн «Москвичĕпе» киле леçтерчĕ. Ывăлĕ 27-ре, авланман, тахçантанпах çак машинăпа ĕçлет.

Авăн, 5.

Шупашкарта «Жизнь» ятлă ирĕклĕ хаçат тухать. Çавăнта çапла çырнă.

ПИСАТЕЛИ БЬЮТСЯ ЗА ПРОКЛЯТОЕ КРЕСЛО.

НЫНЕШНЕЕ лето запомнилось, в числе прочего, ожесточенной взаимной перепалкой в республиканских СМИ членов Союза писателей Чувашии, которая завершилась 29 августа очередным, XVII сьездом тружеников пера. Закрутила это дело инициативная группа в составе пяти человек. Один из инициаторов, поэт Петр Ялгир сообщил корреспонденту «Жизни», что предлогом для большого сбора послужило истечение 25 августа срока полномочий председателя правления СП Федора Агивера. Из рассказа Петра Алексеевича вышло, что еще в июле прошлого года Агивер собрал группу писателей, хорошо угостил и (воспользовавшись временным отключением литераторов от

суровой реальности) подсунул им чистые листы бумаги. На которых вся группа тут же наставила автографы. Впоследствии оказалось, что таким образом собирались подписи, необходимые для перерегистрации писательского обьединения. Чем Федор Георгиевич и не преминул воспользоваться. Он якобы составил фиктивный протокол о проведении съезда под 17-м порядковым номером и тем продлил собственное пребывание в председательском кресле.

За последние пять лет «царствования», считает Ялгир, председатель правления ничего не сделал на пользу чувашской литературе и литераторам. Посему возникло коллективное решение изменить неправильный порядок вещей. Члены инициативной группы поднапряглись, оповестили коллег, иногородним разослали соответствующие письма и собрали-таки 78 из 138 членов СП.

Участники сьезда как один проголосовали за непризнание Агиверовых деяний и выбрали себе нового руководителя - поэта Валерия Тургая.

- Будь проклято это кресло! Никогда не верил, что столько просижу в нем, - эмоционально отреагировал отвергнутый лидер на появление корреспондента «Жизни». А дальше поведал, что не считает легитимными «решения ГКЧП», поскольку по забракованному противной стороной уставу законными считаются сьезды с двумя третями кворума. «Настоящий XVII сьезд уже прошел, - продолжает настаивать Федор Георгиевич. - Следующий, XVIII по счету, состоится 22 декабря. На нем я намерен уйти с поста председателя, дабы разрядить напряженную обстановку».

Неприятности у Агивера, по его словам, начались еще три года назад - после появления в печати статьи по поводу некоторых высказываний президента Федорова. Причем сам Николай Васильевич, возможно, об этом и не догадывается. «Старается его окружение, - утверждает Федор Агивер. - Сколько раз как председатель Союза писателей я пытался пробиться к президенту, писал письма - все безрезультатно. Зато не успели собраться недовольные, как тут же появилось сообщение, что их готовы финансировать. Между тем раскол - не на пользу Чувашии. Мы должны жить в мире. Потому на протестантов зла не держу и буду уходить, но строго на законном основании».

Александр Егоров.

Юпа, 22.

Писательсен союзĕн çĕнĕ хуçисем пуçласа пысăк ĕç турĕç. Вуншар çул хушши пухса пынă кĕнекесен пуххи иккĕмĕш хутра пуянланса тăрать. Мĕн тумалла унпа? ЧНК пуçлăхĕ Архипов Союз правленине урамалла хăвалать. Тургай, Ефимов, Ялгир, Гордеев пĕрле пухăнса вара çапла йышăнаççĕ те: кĕнекесене наци библиотекине, гуманитари институтне тата Чăваш патшалăх университетне парнелер. Çапла майпа Архипов валли çӳлте пысăк пӳлĕм пушанать. Унта юлнă архив докуменчĕсене, Писательсен документ пуххисене тата асăну япалисене аялти хутра эпир Ставскипе ларнă анлă пӳлĕме çӳп-çап вырăнне хурса тăкса купалаççĕ. Акă çапла (451 страницăра):

Çав вăхăтрах Агивер писательсене алă пустарса çӳрет. Вĕсене Тургайсен сьездĕнче пулман тесе ĕнентересшĕн. Халĕ Союз членĕсем 160 ытла. Çав эртелпе Федор Георгиевич раштавăн 22-мĕшĕнче черетлĕ вунсаккăрмĕш сьездирттерме хатĕрленет. Икĕ енĕпе те кĕрешӳ хĕрсе пырать.

Чӳк, 9.

«Советская Чувашия» хаçат статйине вулар-ха:

ДЕЛО ПИСАТЕЛЕЙ ДО СУДА НЕ ДОЙДЕТ

Нынче прокуроры и для писателей пишут. Поэтому сегодня в среде чувашских литераторов горячо говорят в основном на юридическом языке. На такой стиль настроил их прокурор Ленинского района Чебоксар Олег Ильин.

Как известно, в августе состоялся 17-й отчетно-выборный сьезд Союза писателей Чувашии. На нем был избран новый состав правления во главе с Валерием Тургаем. При этом на сьезде не было ни отчета прежнего главы союза Федора Агивера, ни его самого. Зато ему крепко досталось от своих коллег-товарищей. Позже в прессе стали появляться сообщения о слаженной работе нового правления. Например Национальной библиотеке было передано 7898 экземпляров книг из собрания союза, которые до сих пор оставались бесхозными, негде хранить их и теперь из-за отсутствия помещения. Прозаик Аристарх Дмитриев выдвинут на соискание литературной премии Президента России, а поэтесса Раиса Сарби представляется к присвоению почетного звания.

Между тем, как утверждает В. Тургай, союз не может работать нормально, законно, ибо документация и печать все еще в руках Ф. Агивера. Поэтому новое правление письменно обрати-

лось к нему с предложением вернуть необходимые атрибуты. Бывший ответил так же письменно. Четко и ясно в двух пунктах: ваше августовское мероприятие - это не съезд, а лишь собрание; 17-й съезд состоялся еще в июле 1999 года как очередной, на котором было принято решение провести отчетно-выборный съезд в декабре 2000-го. Словом, извините, товарищи коллеги, но я пока председатель правления, поэтому хозяйство союза оставляю у себя, а вот в декабре, уже на 18-м съезде, посмотрим, чья возьмет. Ф. Агивер - писатель с юридическим дипломом, его доводы подтверждались соответствующими документами: протоколом 17-го съезда образца 1999 года и уставом союза, зарегистрированным Минюстом республики.

Так новое правление оказалось в патовой ситуации. Это при том, что на съезде, который родил его, присутствовали люди из правительства, благословляли писательский актив на возрождение былой славы творческого сообщества. Но нынче это к делу не пришьешь.

И пошел В. Тургай искать правду. В прокуратуру. Там согласились, что дело писателей - творчество, а не разборки. После

ЧР Писательсен союзӗ: 2000 ҫулхи август.

месяца проверки стражи закона выдали на свет свое сочинение. «Главным героем» в нем оказался тот самый 17-й сьезд образца 1999 года.

Прокуратура установила, что в тот день писатели в действительности собирались — почти сто человек. Но не как на сьезд, а на обсуждение вопроса перерегистрации устава и внесения изменений в него Эта процедура тогда была обязательна для всех общественных организаций. Писатели, опрошенные прокуратурой, показали, что тогда они не видели устава, подготовленного для перерегистрации. Полагали, что он в слово в слово соответствует прежнему. Теперь же увидели и устав, и разницу. Самой существенной считают то, что их союз сегодня не является субьектом или частью Союза писателей России, как было прежде. Это они называют сепаратизмом.

Словом, писатели должны сказать огромное спасибо прокуратуре за разбор самого видного за последнее время их «творения». И за то, что она помогла им своими глазами лицезреть устав. Но все же странно: ведь они сами принимали его с изменениями и дополнениями. И за целый год ни разу не пожелали посмотреть, что же в результате получилось? А что касается спора о сьезде, можно заметить: уважаемые литераторы еще по прежнему уставу должны были знать, что изменения и дополнения в такой документ принимаются только сьездом.

Итак, прокуратура свое дело сделала - прояснила ситуацию. Но принять какое-то решение она в данном случае не вправе. Это - дело самой организации или даже суда. Так что патовая ситуация для нового правления все еще остается. И вот почему.

17-го сьезда образца 1999-го, выходит, не было. Значит, нет и факта принятия нового устава, зарегистрированного потом Минюстом. Из этого следует, что союз живет под прежним уставом. Но тут есть весомое «но». Все общественные обьединения в 1999 году должны были пройти перерегистрацию. Не сделавшие этого подлежали ликвидации решениями судов по искам Минюста. Союз писателей Чувашии не ликвидирован, ибо он вовремя зарегистрировал свой обновленный устав. Устав, который был принят не по уставу.

Теперь вопрос: на основании какого устава состоялся сьезд, избравший новое правление? Прежний тогда уже не действовал. Значит, сьезд прошел под вторым. А что это за устав, мы уже знаем. Получается, и сам сьезд, не будем конкретизировать, та-

кой же. Более того, выходит, и весь союз теперь такой.

Законный выход - признать судом нынешний устав недействительным. Доводов тут предостаточно. Тогда пойдет такая цепочка. Союз останется без устава и будет ликвидирован. Затем создается новое обьединение литераторов, созывается учредительный сьезд, на нем принимается новый устав, регистрируется в законном порядке. В этом случае можно будет сказать: с днем рождения, юный союз писателей! И похвалить его актив за то, что выдержал такую канитель процедуры.

Но есть, как обычно бывает в законе, и лазейка. Не нужно никаких судов, а просто надо закрыть глаза на происхождение нынешнего устава, на заключение прокуратуры. И начать жить и работать, будто ничего и не произошло. Правда, тогда в уставе останутся действующими положения, которые писателям не нравятся. Например, сегодня наш союз не является частью Союза писателей России. Но это можно исправить без особых хлопот. Нужно собрать сьезд, внести изменения в устав и оформить процедуру в Минюсте. И все вернется на свои места. В том числе, после прокурорского заключения, и печать с документацией.

В. Тургай, хоть и показывал себя иногда поэтом скандальным, вряд ли пойдет на первый вариант. Уж слишком большой может случиться скандал, если решиться на суд. Ведь речь зайдет и о документах, и о подписях.

Впрочем, во всей этой истории, кажется, вообще можно было обойтись без большого шума. Разногласия случаются в любой общественной организации. На то они и общественные. В данном случае писательскому активу перед тем, как взяться за проведение отчетно-выборного сьезда, думается, просто надо было почитать свой устав. Он хранится в Минюсте, а народ там грамотный, ответил бы и на вопросы.

Когда верстался номер.

Стало известно, что состоялось очередное заседание правления Союза писателей Чувашии, на котором принято решение о проведении внеочередного сьезда 22 ноября. Главной темой на нем ожидается как раз внесение изменений и дополнений в устав. Новое правление уверено, что чувашские литераторы снова воссоединятся с российскими, станут, как прежде, и членами Союза писателей России. Как сообщил В. Тургай, переговоры об этом уже начались.

В.Васильев.

Раштав, 22.

Шупашкарти Союзсен çуртне самай пухăннă писательсем. Агивер пĕлтернĕ тăрăх, сьезчĕ кунта мар, урăх çĕрте иртет. Тургай сьездне ирттерме (паян пулать) Союзсен çуртĕнче вырăн панăшăн вăл телефонпа хуçисене хытă ятланă тет.

«Чувашэнергосбыт» автобусĕпе Кăнтăр поселокĕ хыçĕнчи автосалона илсе çитерчĕç. Вĕр-çĕнĕ çурт, малярсем те кайман, ĕçлеççĕ.

Сьезчĕ пулнă пекки пулчĕ. Союзăн правленине суйларăмăр: Хв.Агивер, Юрий Ялавин, Геннадий Уткин, Людмила Смолина, Михаил Ставский, Николай Иванов (Яки), Николай Васильев-Ытарай, Афалек Энтепе, Энтип Ваççи.

Вĕçĕнче апат çитерчĕç, эрех ĕçтерчĕç.

«Кунашкал вăрттăн пуху пуласса пĕлмен, пустуй укçа та пĕтерсе çӳреместĕмччĕ, ухмах, апат çиме çĕр çухрăма яхăн автобуспа чупса икçĕр тенкĕ ытла расхутлантăм, Агивер камитне куртăм, авă епле улталаççĕ пире», - терĕ Вăрнар ачи Михаил Васильев тăван еннелле çула тухнă май.

Çапла «банкет сьезчĕ» ирттерчĕ Агивер. Ку мыскара хыççăн «Советская Чувашия» хаçатра çак материал пичетленчĕ:

ПИСАТЕЛЬСКАЯ «МАЕВКА» В ДЕКАБРЬСКУЮ СТУЖУ

О противостоянии в Союзе писателей Чувашии мы неоднократно рассказывали нашим читателям. Кажется, конфликт в минувшую пятницу вышел на новый виток: «свергнутый» председатель правления Федор Агивер не обьявил о капитуляции, а провел со своими сторонниками «плановый» сьезд.

Начало сьезда затянулось по организационным причинам. Писателям пришлось долго топтаться в фойе Дома союзов, затем на автобусе их доставили в столовую одной частной фирмы в южном поселке. «В самый последний момент обьявили, что не могут нам предоставить зал, - говорит Ф. Агивер. - Но назревший форум мы смогли бы провести, как маевку, даже на какой-нибудь мельнице».

В отчетном докладе правления, с которым выступил Ф. Агивер, было подчеркнуто, что писательская организация в последние годы работала недостаточно активно из-за плохого финансирования. В такой ситуации руководители СП России не возражают, чтобы в Чувашии действовали три Союза писателей с одинаковыми полномочиями. Заключен договор с организацией М. Юхмы, определен срок проведения обьединительного сьезда. «Ве-

роломство» некоторых коллег, которые рвутся к власти по чьему-то указанию, докладчика просто удручает. Как было заявлено, с имуществом СП все в порядке: автомобиль и гараж на месте, а библиотеку хотят вернуть через суд.

Выступившие в прениях, проявляя осторожность, стремились говорить лишь о своих «цеховых» делах: призывали сохранять единство, сетовали, что мало выходит книг, их тираж невысок. Предложение литературоведа Ю. Яковлева поднять обсуждение на несколько ступеней повыше и повести разговор о «времени и литературе» не было услышано. Как и на альтернативном сьезде, проведенном в августе, не была дана оценка даже тем немногим произведениям, которые вышли в последнее время.

На сьезде были внесены изменения в устав творческой организации, в соответствии с которыми чувашские литераторы вернулись в лоно СП России. Единогласно на безальтернативной основе председателем правления вновь избран Ф.Агивер.

В.Алексин.

Раштав, 29.

«Çамрăксен хаçачĕ» Чăваш писателĕсен çапăçакан «Автанĕсенчен» çĕнĕ çул умĕнхи интервью илнĕ:

МĔН ТУРĂР, МĔН ТĂВАЙМАРĂР?

Валери ТУРКАЙ, поэт, Чăваш писателĕсен союзĕн ертӳçи:

Хам ертсе пыракан Çеçпĕл фончĕ хăйĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премине кăçал чăннипех те тивĕçлĕ çынсене тата коллектива пачĕ: 1-мĕш вице-премьера Петр Ивантаева, Канаш районĕн администраци пуçлăхне Ананий Иванова тата Украинăри Остер хулинчи «Нимене» ансамбле. Кунсăр пуçне кăçалхи çурла уйăхĕн 29-мĕшĕнче чăваш писателĕсем хăйсен черетлĕ 17-мĕш сьездĕнче мана чăваш писателĕсен союзне ертсе пыма шанчĕç. Ку - маншăн пысăк чыс. Анчах вăхăт эпĕ юридици енчен пăхсан Писательсен союзĕн саккунлă председателĕ пулса тăманнине кăтартса пачĕ.

Паянхи кунччен те Агивер пире пичет, организаци уставне, пурлăхне тата ыттине тавăрса памарĕ. Çапла вара Агивере саккун енĕпе çĕнтерейменрĕм. Мораль тĕлĕшпе, халăх шаннине илес пулсассан эпĕ ăна çĕнтертĕм теме пултаратăп. Çапах та чăваш писателĕсен чи сумлă пайĕ манпа пĕрле. Анчах Агивер команди урăхла шутлать, унăн хăйĕн политики.

Çак интервьюна парас умĕн кăна эпир хамăр правленипе çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ шухăш патне пырса тухрăмăр. Халь каласа тăмастăп, ун пирки эсир каярахпа пĕлĕр.

Пĕтĕмĕшле илсен 2000 çул маншăн хĕрӳ ĕç çулĕ пулчĕ. Уйрăмах çурла уйăхĕн 29-мĕшĕ хыççăн эпĕ чăннипех те çанă тавăрса ĕçлерĕм. Чи интересли - çакă мана питĕ килĕшрĕ.

Хветĕр АГИВЕР, писатель, ЧР Писательсен союзĕн ертӳçи: 2000 çул маншăн питĕ тертлĕ çул пулчĕ. Писательсен сьезднеирттересси питĕ чăлханса пычĕ. Çынсем хыпаланчĕç, йĕрки-аркине чухласа çитереймесĕрех хăйсен темиçе пухăвне ирттерчĕç. Эпир ĕнтĕ йĕркеллĕ пултăр тесе раштавăн 22-мĕшĕнче хамăрăн черетлĕ 18-мĕш сьезда ирттертĕмĕр. Унта мана председателе суйларĕç. Çĕнĕ правлени, ревизи комиссийĕ суйларăмăр. Пирĕн писательсем йышлă та - хăшĕсем чап хыççăн хăваласа кайни питĕ пăшăрхантарать. Унччен çыравçăсен хушшинче унашкаллине курман, халь вара хăшĕ-пĕрисем ĕç тăвассишĕн мар, мĕн те пулин çиес, илес тесе чăмăртанаççĕ.

Пире сьезд ирттерме те чăрмантарчĕç. Ку пачах саккуна хирĕçле. Çӳлти, влаçри чиновниксем хĕтĕртсе тăни сисĕнчĕ. Вĕсен эпир пулăшăр-ха тесе каламасăр пирĕн хушша-хуппа кĕмелле мар. Пирĕн çурта, кану çуртне юсама вĕт пулăшмаллаччĕ. Шалусăр çынсене пурăнма кансĕр. Пире лапчăтса хумалли мелсемпе ĕçлерĕç, ĕçлеççĕ. Килĕшӳ кирлĕ. Пĕр-пĕрин хушшинчи килĕшĕве аркатакансене кăмăлламастăп. Писательсен ĕçне пĕр 35 çул курса ĕçленĕ май пĕлетĕп: килĕшӳре кăна тăванлăх-хурăнташлăх йĕрке-арки тытăнса пырать. Паянхи çапкаланса çӳрекен хăш-пĕр çыравçăсем çакна кăштах шута илесшĕн мар. ***Çывăх юлташа та хăвăнтан чылай ытларах ĕçлесе курнă çын пирки нихăçан та усал калама юрамасть. Кайран çав сăмах хăвнах пырса лекет. Хăвăншăн кăна мар-çке, ыттисемшĕн те ĕçлемелле.***

2001 çул.
Ĕç кĕнекинчен.

Пуç машинкки пĕрмаях çапать. Аçтаха çулĕнче эпĕ, Агиверĕн «Камит театрĕнче» тĕп рольсенчен пĕрне выляса пурăннă хушăрах, хамăн пурнăçшăн та тăрăшса ĕçлерĕм. Çак кĕнекесене пичете хатĕрлесе хутăм: Тăванлăх асамачĕ, Çĕр пики, Юрату кăварĕ, Шăмăсăр чĕлхе, Вăрланă юрату, Ман пурнăç - мăн пурнăç. Агиверсемпе Тургайсем те тăрăшсах ĕçлеççĕ. Идеологин икĕ фронтĕнче те хĕрӳ çапăçусем пулса иртеççĕ. Пĕри тепринчен парăнасшăн мар. Темле çапăçу та çухатусăр, çĕнтерӳсĕр пулмасть. Агивер фронтĕнче, акă, çĕнтерӳ ячĕпе салют пачĕç, хăйсен Писателĕсен союзĕн правленин 9 саслă сассипе: «В.Тургая, Д.Гор-

деева, П.Ялгира СССР писателĕсен союзĕн членĕнчен кăларас». Вĕсем чăваш литературин аталанăвне пăсса, аркатса пыраççĕ-мĕн.

«Автансен» тепĕр фронтĕнче - пăлхану. Валери Тургай Хветĕр Агивере хирĕç çивĕч перопа атакăна çĕкленет, «Чебоксарские новости» хаçатпа унăн çăварне хупласа лартать:

СПАСИБО ЗА ИСКЛЮЧЕНИЕ!

Мне кажется, журналисты уважаемых «Чебоксарских новостей», получив «сенсационное» письмо за подписью Константиновой В.К., супруги Агивера Ф.Г., (копия этого письма, направленного во все редакции газет Чувашии, у нас имеется), могли вспомнить лермонтовское «А судьи кто?» Но, увы, они этого не сделали. И я вынужден сегодня напомнить уважаемым читателям «ЧН» кое-что из новейшей истории Союза писателей ЧР (СПЧР).

Наш союз зарегистрирован Минюстом ЧР 12 июля 1999 г. На первой странице устава СПЧР написано следующее: «Принят на втором заседании 14 съезда союза писателей Чувашской Республики, состоявшемся 10 января 1991 года. С изменениями и дополнениями принят на 17, внеочередном съезде Союза писателей Чувашской Республики 22 июня 1999 года».

Самое интересное заключается в том, что 22 июня 1999 года... никакой «внеочередной съезд» СПЧР не проводился!.. Это, кстати, на своем письме от 31.10.2000 г. подтвердил и прокурор Ленинского района г.Чебоксары О.К.Ильин. То есть Ф.Агивер, тогдашний председатель правления СПЧР, зарегистировал в Минюсте ЧР документы фактически несостоявшегося форума СПЧР и продлил полномочия свои и членов «старого» правления СПЧР.

К сожалению, об этом литературная общественность Чувашии узнала только в августе 2000 года, когда писатели в соответствии со своим Уставом от 10.01.1991 г. и в связи с истечением полномочий Ф.Г. Агивера (25.08.2000 г.) решили созвать свой очередной, 17 съезд СПЧР.

Только с помощью прокуратуры Ленинского района г.Чебоксары нам, писателям, состоящим на учете в СПЧР, удалось ознакомиться... с собственным Уставом, зарегистрированным Минюстом ЧР от 12.07.1999 г.

Да, де-юре Ф.Агивер (до решения суда) сегодня является председателем правления СПЧР. Но де-юре членами общественной организации «Союз писателей Чувашской Республики» на сегод-

няшний день являются и Ю.С.Семенов (Семендер), и Л.В.Мартьянова, и В.В.Овчаров, и И.Д. Тимофеев (Вутлан), и Г.И. Федоров. К огромному сожалению, одного из членов данного правления - Анатолия Викторовича Емельянова - в конце прошлого года мы проводили в последний путь.

Так кто же нас, В.Тургая, Д.Гордеева и П.Ялгира, исключил из Союза писателей? Вы, неназванные писатели, которые, повторяю, на сегодняшний день де-юре являются членами правления СПЧР? Нет. Этого быть не может. Потому что эти писатели, как и все мы, не знали, что 22.06.1999 г. Ф.Агивером был проведен «внеочередной, 17 сьезд СПЧР», и все они обьявили о своем решении участвовать в создании Союза профессиональных писателей ЧР, председателем правления которого избран автор этих строк.

Тогда, спрашивается, кто это там заочно исключает писателей из их творческой организации?

Ах, да, кажется, вспомнил!..

Это же Ф. Агивер всю осень твердил нам всем, что 22 декабря 2000 г. в Чебоксарах будет проведен внеочередной (опять внеочередной!), 18 сьезд СПЧР, на который из Москвы должны были приехать Валентин Распутин, Василий Белов, Валерий Ганичев (председатель правления СП России) и другие высокие гости!

Да, 22.12.2000 г. по инициативе Ф.Агивера в одной из частных чебоксарских фирм действительно собрались 17 (семнадцать) из 141 члена СП России, которые состоят на учете в СПЧР. Было там и множество окололитературных людей. Да, на том «форуме» избрали новое правление СПЧР: Ф.Агивер, Л.Смолина, Н.Ыдарай, Г.Ирхи, М.Ставский, Г.Уткин (подписавший, кстати, протокол несостоявшегося «внеочередного, 17 сьезда СПЧР), Ю.Ялавин, Н.Иванов и А.Эндебе. Но этот руководящий орган СПЧР не является легитимным, поскольку кворума на так называемом 18 сьезде СПЧР не было.

Вот кто судит нас! Вот кто исключил В.Тургая, Д.Гордеева и П.Ялгира из Союза писателей! Как говорится, все было бы смешно, если бы не было так печально.

Дорогой Федор Агивер! Дорогие члены правления «агиверского союза»! Вместо того, чтобы устраивать всякого рода судилища и мешать процессу обновления творческого союза писателей Чувашии, вы бы расплатились с долгами вашего Союза! Ведь только Чебоксарскому муниципальному предприятию «Теплосеть» вы должны 86005 руб. 91 коп., а ОАО «Связьинформ» - 3043 руб. 46 коп. Или же вы не знаете об этом?

Честь имею!

Валери ТУРГАЙ, член Союза писателей России.

Вăрçăра яланах кам та пулин çĕнтерет, парăнать. «Советская Чувашия» хаçатра пичетленнĕ информаци çакна питĕ аван кăтартса парать.

ПИСАТЕЛИ ССОРЯТСЯ

Президиум Верховного суда Чувашии поставил точку в затянувшемся споре литераторов республики. Так называемый «старый агиверовский» союз писателей приказал долго жить.

Несколько лет назад, когда группа литераторов собралась на свои традиционные «посиделки», было принято опрометчивое решение: назвать «мероприятие сьездом, семнадцатым по счету. Несмотря на отсутствие кворума и большинства членов правления, собравшиеся дружно поддержали идею, и председателем СП вновь был избран прозаик и драматург Ф. Агивер. Принятые на импровизированном «сьезде» документы послужили основой для перерегистрации творческой организации в Министерстве юстиции республики. Когда казус был обнаружен, писатели собрались на «законный» сьезд и сместили Х.Агивера со своего поста. Тот с таким поворотом событий не согласился. Московский районный суд Чебоксар нашел доводы оппонентов Агивера обоснованными, но высшая судебная инстанция республики вернула дело на новое рассмотрение на том основании, что экс-председатель не мог сам участвовать в тяжбе, из-за болезни. На вышестоящей судебной лесенке Ф. Агивер ратовал за «многосоюзную литературную Чувашию», но Фемида нашла его доводы неубедительными.

Верховный суд Чувашии 29 июня вынес решение признать XVII внеочередной сьезд Союза писателей Чувашии несостоявшимся и принятое на нем решение о продлении полномочий Фе-

дора Агивера недействительным. Таким образом, сегодня общественной организации Союз писателей Чувашии не существует. Есть только Союз профессиональных писателей Чувашии, зарегистрированный 16 февраля 2001 года. Решение это окончательное и обжалованию не подлежит.

Но остается неизвестной судьба 22 человек, подавших заявления в Союз писателей Чувашии с тем, чтобы их в него приняли. Удостоверения им вручили, а членские билеты - нет. Союз писателей России их дела даже не рассматривал. И теперь специальная комиссия будет их пересматривать. Наверняка, не все останутся в Союзе.

Кроме того, возникает еще один вопрос: как быть с Союзом чувашских писателей Михаила Юхмы? Руководители Союза профессиональных писателей считают, что их организация должна быть единственной подобной в республике. Кое-кто из-под крыла Юхмы уже перешел в нее. Но многие еще остались. Так что же,впереди— новая война?

Марина ПОРФИРЬЕВА.

* * *

Писательсем, пахчари культурăллă ӳсен-тăран пекех, виçĕ йăранра тымар ячĕç: пĕрне, Чăваш писателĕсен союзне Юхма Мишши сиплĕ шывпа шăварать; теприне, Чăваш профессионал писателĕсен союзне - Валери Тургай çурхи çырма шывĕпе; виççĕмĕшне, Чăваш Республики писателĕсен союзне - Хветĕр Агивер аслатиллĕ çумăр хыççăнхи пăтранчăк шывпа шăвараççĕ. Тур калашле виççĕ тенĕ пекех пулса тухрĕ иккен арпа кăрманĕнчи суккăрла тĕркешӳре.

Пысăк шайлă пĕр анлă пухура, ĕрлешĕве ертсе пыраканĕ, янăравлăн пĕлтерет:

- Халĕ халăх умне чăваш çыравçисен пуçлăхне чĕнетпĕр!

Çынсен хушшинчен виçĕ арçын çӳллĕ вырăналла талпăнать: малта - çамрăкки, варринче - вăтамраххи, хыçалта - ватти.

-Эпĕ пĕр пуçлăх çеç чĕнтĕм-çке, кунта вара юмахри çĕленĕнни пек виçĕ пуç,- йĕркипе тăрса тухнăскерсем çине тĕлĕнсе пăхать ертсе пыракан.- Калăр-ха, хăшĕ вара сирĕнтен писательсен пуçлăхĕ?

- Эпĕ! - çăвăр автанла каçăрăлса ӳкет Валери Туркай.- Чăваш Республикинчи профессионал писательсен канашĕн председателĕ.

- Эпĕ! - маччана ӳссе çитесле хăлаçланса мăнланать Хветĕр Агивер. - Чăваш Республики писателĕсен «Хурăнташлăх» канашĕн председателĕ.

- Эпĕ! - сылтăм аллине кăкăрĕ çине хурса пуçне пĕкет Юхма Мишши.- Чăваш писателĕсен союзĕн председателĕ.

- Эх-ха-хай, сирĕнпе, аптриш,- алă сулать ĕрлешĕве ертсе пыраканĕ. - Виççĕр те ялти хальхи юхăннă пĕрлешӳллĕ хуçалăх хуçи пекскер кăна иккен эсир - пĕри те чăн пуçлăх мар. Çуккăшим тĕп пуçлăх чăваш çыравçисен? Куртăн-и камит, тăван халăх?

Хăйсене хăйсем никамран та пултаруллăрах текен этемсем пĕр-пĕринпе хирĕçсе кайсан, Ăслăлăх тĕнчинче яланах аçа çапать.

Аçа çапса минретнĕ хыççăн çапла виçĕ ушкăнĕ те виçĕ юхăмпа ишет. Агиверĕн «Хурăнташ» хăмпă карапĕ, пути-путаймансксер, халăх тинĕсĕн лăпкă хумĕсем çинче хăяккăн ярăнса выртать, пăтранчăк шывра пултарулăх йăранĕн пуçĕ хăрса типсе пырать. Сиплĕ шывпа шăварма вĕреннĕ Юхма Мишшин йăран пуçĕ чечекленсе тăрать. Çурхи çырма шывĕнче çăвăнакан Валери Тургайăн çунаттисем хăйĕн пултарулăх йăранне çĕнĕ хумлăн ешĕрме вăй парса тăраççĕ. Çав йăранра писательсен ушкăнĕ вăйлă çимĕçлĕ - вăйлă шухăшлă. Йăранăн - тымарĕ çирĕп.

2001 çул.
Авăн, 3.

ЧНК Президенчĕ Геннадий Архипов Чăваш Республикин профессионал писателĕсен союзĕн правлени кантурне урама кăларса янă хыççăн, эпĕ вăл асамлă обществăлла организаци ăçта хӳтлĕх тупнине аран пĕлтĕм. Ехрем хуçа çурчĕпе урам урлах иккен, авалхи Пичет çуртĕнче, Володарски урамĕн пиллĕкмĕш хутĕнче, пĕчĕк пӳлĕмре.Союз правленийĕн пуçлăхĕпе Тургайпа унăн çумĕ Гордеев варринчи сĕтел хушшинче ларакан чиперкке бухгалтерĕн йăлтăр куçĕсене ытарлăн пайласа лараççĕ.

Эпĕ, вĕсене чăрмантарса, Мускав валли Союз карточкине хамăн пурнăç докуменчĕсемпе тултарса лартрăм та çулталăкшăн 50 тенкĕ укçа хыврăм. Эпĕ те ĕнтĕ малашне Агиверĕн путакан хăмпă карапĕн камантинче мар - Профессионал писательсен пуевуй-пулевой камантинче.

«Профессионалсем» профессионаллах ĕçлеççĕ иккен. Вăй пур: Чăваш Республикинчи писательсен тĕп вăйĕ - вĕсен пултарулăх йăранĕнче.

2002, çу, 21.

Валери Тургай камантин - Чăваш профессионал писателĕсен кантурне - Вăрнарта пурăнакан Михаил Алексеевич Васильев писателĕн анкетине те, вăл чăннипех «Профессионалсен» ретĕнче тăнине ĕнентерекен официаллă хута, пуçлăхсен аллине парса хăвартăм.

Утă, 2.

«Чăваш Магелланĕн» хăмпă карапĕнче виçĕ çул çурă тĕтрелĕхрен тухаймасăр ишнĕ хыççăн эпĕ, алла пĕр пус та укçа илсе килмесĕр, хастарланса кайма пултаракан хăш-пĕр писательсем пек пират та пулаймарăм, çавăнпа, калама çук тарăхса, «ăс-хакăл тинĕсĕнче компассăр ишекен капитанпа» сывпуллашрăм.

2010 çул.

АСРА ЮЛНӐ САМАНТСЕМ, ВӐХӐТСЕМ

* * *

Вӑрнар районӗн «Социализм ҫулӗпе» (Ҫӗнтерӳ ҫулӗ») хаҫачӗ маншӑн журналистика ҫулӗн пуҫламӑшӗ (старчӗ) пулнӑ. Унта ӗҫленӗ вӑхӑта эпӗ «Ман пурнӑҫ - мӑн пурнӑҫ» кӗнекере (2007 ҫ.) тӗплӗн ҫырса кӑтартнӑччӗ. Тӑван хаҫатӑмпа, редакци коллективӗпе, активисчӗсемпе нихҫан та ҫыхӑну татман. Урӑх ҫӗре куҫсан та яланах ҫырса тӑнӑ, унӑн юбилейӗсене хутшӑннӑ.

Журналистикӑри малтанхи ӳсӗмсемшӗн ҫырав ӗҫӗнче пӗрремӗш хут хамӑр хаҫатра «Хисеп грамоти» илтӗм. Утмӑл ҫул тултарнӑ ятпа редакци мана тата тепӗр Хисеп паллипе хавхалантарчӗ. 2010 ҫулта хаҫат 80 ҫул тултарнӑ ятпа кӑларнӑ «Вӑрнарӑн вӗҫӗмсӗр кӗнекинче» «Вӑрнар шкулӗ асрах юлӗ» статья пичетлерӗм.

1982 ҫулта, «Капкӑнра» ӗҫленӗ чухне, мана вӑрнарсем хӑнана чӗнчӗҫ. Хампа пӗрле эпӗ хаҫат тӑвакансемпе тата ӑна кӑларма пулӑшаканӗсемпе тӗл пулма паллӑ сӑвӑҫа, Ҫавалкас Мӑратра ҫуралнӑ Юрий Григорьевич Айдаша тата хамӑр районпа чикӗллӗ Пратьякасси ачине, вӑйлӑ сатирике Виталий Григорьевич Енӗше пӗрле лартса кайрӑм. КПСС райкомӗн лекцисем ирттермелли залӗнче питӗ хӗрӳ, туслӑ калаҫу пулчӗ. Эпир хамӑр енчен, вӗсем хӑйсен енчен пултарулӑх юррине шӑрантартӑмӑр. Респуб-

ликăра тахçанах палăрнă кулăш ăсти, «Капкăн» корреспонденчĕ, «Мир» совхоз строителĕ Степан Александрович Юркин пирĕнтен шит те уйрăлмарĕ. Сăмах-юмахĕ унăн та кутамккипех пухăннă иккен.

Çавăн чухне пире Виссарион Кожанов фотоаппарачĕпе çатлаттарса илнĕ (сулахайран): Ю.Г.Айдаш, В.Г.Енĕш, С.А.Юркин тата В.П.Кузьмин.

* * *

«Социализм çулĕпе» ута-ута, вăрман витĕр Йĕпреçе çитсе тухрăм, «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» («Çĕнтерӳшĕн») пуç мимине килениччченех пăтратрăм: вунă çула яхăн. «Виçĕ юман» повесть çырса Чăвашгизра кĕнеке кăлартăм, çав хушăрах хам журналист пулни çинчен те манмарăм: ăсталăха ӳстерсе пытăм, çамрăксене хаçат тума, çырулăхра хăюллă та талпăнуллă пулма вĕрентсе хăнăхтартăм. Уншăн мана вĕсем ку таранччченех пысăк тав тăваççĕ. Вĕсен пултарулăхĕ ӳснишĕн эпĕ чунтан хĕпĕртетĕп.

Дмитрий Киселевăн сăн ӳкерчĕкĕнче (сылтăмран): Геннадий Мальцев, Людмила Мальцева, Олег Мальцев, Владимир Давыдов журналист (Каçал енрен), Мария Киселева, Владимир Кузьмин Мальцевсен Валерий ятлă ачипе.

Йěпреçри тěлпулусенче хамăрăн ăшри туйăма çиеле кăларса хěрӳ калаçăва малалла тăсатпăр.

Хастар юлташăмсем-ěçтешěмсем мана пысăк хак пачěç: хаçатăн 5-пинěмěш номерě тухнă ятпа 1979 çулта Хисеп кěнекине кěртрěç, 1997 çулта С.В.Элкер ячěллě журналистика премийěн лауреачě туса хучěç.

КПССăн Ленинградри аслă шкулěнчен вěренсе таврăннă Элěк ен журналисчě Геннадий Степанович Мальцев Йěпреç редакцийěнче революцилле улшăнусемех турě, унччен кивěлле ěç меслечěсене çěнетме ăна эпě те сахал мар пулăшрăм. Пěр-пěрне ăнлансах çěмěрттереттěмěр.

* * *

Иртнě ěмěрěн аллăмěш çулěсен вěçнелле СССР журналисчěсен Союзне, çав вăхăталлах Чăваш АССР журналисчěсен Союзне те туса хунă. Эпě ун чухне Вăрнар райхаçатěнче ěçлеттěм. Петр Алексеевич Тихонов редактор мана та Союза кěме сěнчě. Мана унта 1960 çулта илчěç.

1961 çулхи нарăсра ман ятпа Шупашкартан çыру килчě. «Советская Чувашия» хаçат редакторě, ЧАССР журналисчěсен Союзěн правлени председателě Матвей Семенович Семенов çапла пěлтерет: «Уважаемый тов.Кузьмин! Поступил ваш билет члена Союза журналистов СССР. Постарайтесь получить его при первой же возможности. Вступительный взнос 5 рублей, стоимость билета - 1 рубль, членский взнос - 5 рублей (за весь год).

В Чебоксарах вручили нам, группе газетчиков, дорогой наш билет в торжественной обстановке. Как мы были рады!

Членство в Союзе очень вдохновляло. С тех пор я постоянно участвую в общественной жизни Союза, оказывал немалую помощь правлении. Постоянно состоял членом правления. Воз-

главляю первичную журналистскую организацию при Союзе писателей Чувашской Республики.

Вот один из моментов в ходе работы XV сьезда журналистов Чувашии в здании комплекса туризма и отдыха «Волжанка» (2005 г.).

Фотокорреспондент газеты «Хыпар» Геннадий Верблюдов моментально сгруппировал нас, ветеранов печати, заснял (слева): Иван Яковлевич Тенюшев, Павел Афиногенович Крысин, Михаил Иванович Иванов, Андрей Иванович Михайлов, Владимир Прокопьевич Кузьмин.

* * *

Районти литераторсен пӗрлешӗвӗ - республикӑра вӑйлисенчен пӗриччӗ. Унта ҫамрӑк ҫыравҫӑсене вӗрентме Шупашкартан кашни уйӑхрах паллӑ писательсемпе поэтсем килетчӗҫ. Акӑ, хальхинче те...

Сӑн ӳкерчӗкре (сылтӑмран сулахаялла): райхаҫат редакторӗ, литпӗрлешӳ ертӳҫи П.А. Тихонов-Ялгир, Чӑваш кӗнеке издательствин редакторӗ А.А. Галкин сӑвӑҫ-юптаруҫӑ, 1929-1930 ҫулсенче Вӑрнар районне ертсе пынӑ В.И. Краснов-Асли писатель, ЧАССР радиокомитечӗн ял хуҫалӑх передачисен редакторӗ А.А. Воробьев поэт, редакцин парти пурнӑҫ пайӗн заведующийӗ В.П. Кузьмин прозаик. 1962 ҫ.

* * *

Çыру ĕçĕн тепĕр енĕ вăл манăн - литература. Ăна эпĕ журналистика маçтăрлăхĕпе пĕр явăмлăн туса пыратăп. Раççей писателĕсен Союзĕнче тăнă май, хамăрăн Чăваш писателĕсен Союзĕн ĕçĕ-хĕлĕпе те çыхăннă. 2010 çулхи чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕнче съезда хутшăнтăм. Каллех Геннадий Верблюдов куçĕ тĕлне пултăм.

Наци библиотекинче акă эпир, шавлă калаçу вĕçленнĕ хыççăн (сылтăмран): Анатолий Юман (Чĕмпĕр), Аркадий Казанов, Раиса Сарпи, Юрий Артемьев, Владимир Кузьмин, Иван Тенюшев; хыçалти - Улькка Элмен (Вăрнар).

* * *

Чăваш Республики писателĕсен Союзĕнче, Ленин урамĕнчен авалхи Ехрем хуçа çуртне (халĕ Воробьев композиторсен урамĕ) куçсан та, правлени председателĕ Ф.Г. Агивер тăрăшнипе, çыравçăсен кулленхи пурнăçĕнче литературăпа искусство, культура ĕçченĕсемпе ирттернĕ асра юлмалли тĕлпулусем, савăнăç каçĕсем тăтăшах пулатчĕç. Вĕсенчен пĕри вăл - Союз правленине 1967-1978 çулсенче ертсе пынă Николай Степанович Дедушкин писателĕн-критикĕн менелникĕ. Уява вăл çуралнă Тутарстанри Пăва районĕнчен тăванĕсем, Шупашкартан чăваш писателĕсем пухăннăччĕ. Асăнмалăх сăн ӳкерттертĕмĕр.

Сăн ӳкерчĕкре, савăнăçлă пухăва хутшăннисен пĕр ушкăнĕ (сулахайран): Владимир Кузьмин, менелникçĕ тăванĕсем, Юрий Сементер, Николай Дедушкинпа Измаил Григорьев полковниксем, Андрей Алексеев, Надежда Силпи, Клавдия Вишневская, Анатолий Смолин, Николай Иванов - Микки Микули.

* * *

Совет империйĕ арканнă, никама пăхăнман Раççей патшалăхĕ туса хунă хыççăнхи çулсенче идеологи хăмпи те шапах çурăлчĕ. Ирĕклĕх сывлăшĕ çыравçăсене те уççăнлăха кăларчĕ.

Чăваш ен писателĕсемпе журналисчĕсем те ăнлансах пĕтермелле мар шавлă та кăткăс пурнăç танатинче тапаçланаççĕ. Çĕнтернĕ социализм тапхăрĕнчен капитализм йĕрки еннелле сулăннă май, çирĕп турта хушшинчен тухса ӳкнĕ çыравçăсем укçа хыççăн хăвалама пуçларĕç. Хăйсен пичĕсене бизнес сăррипе сăрланă журналистсем ассах кайнă, пуйсах пыраççĕ. Чăваш çыравçисем хушшинче çĕрме пуян улпутсемпе тарçисем пулса кайрĕç. Çапла ĕнтĕ вăл - обществăри улшăну тапхăрĕ хăшин-пĕрин чун-чĕрине çиййĕнчех улăштарать. Кунта вара тасалăх, тĕрĕслĕх, ырă малкурăмлăх çĕнтерет.

2012 çулхи юпа уйăхĕ.



Тупмалли

Умĕн калани 3

Каллех Шупашкарта - Пичет çуртĕнче 4

Чавашрадио хумĕсем çинче 44

Чун-хавал хĕлхемĕ йăлкăшсан 69

«Капкăна» пуçа чиксен 122

«Тăван Атăл» та лăпкă юхмасть 187

Чăваш халăхĕн «Вучахĕ» умĕнче 260

«Илем» чăваш хĕвелĕ пекех çутаттăр, ăшăттăр тесе 352

Шăтнă карап çинче 417

Асра юлнă самантсем, вăхăтсем 461

Кузьмин Владимир Прокопьевич

Жизнь моя кипучая

На чувашском языке

Издается в авторской редакции

Компьютерный набор *Р.Поповой*

Подписано в печать 23.01.2013. Формат издания 60x84/16.
Печать оперативная. Бумага офсетная.
Гарнитура Times ET Chuvash. Физ.п.л. 29,25.
Тираж 150 экз. Заказ № К-438.

Отпечатано в типографии ИП Сорокин А.В. «НовоеВремя».
428034, Чувашская Республика,
г.Чебоксары, ул.Мичмана Павлова, 50/1.
Телефоны (8352) 41-27-98, 46-43-46.

180.e

ЭПЁР – ВĂРНАРСЕМ

Камсем эпĕр?
Вăрнарсем –
Мухтав илнĕ ĕçченсем.

Камсем эпĕр?
Вăрнарсем –
Улăп вăйлĕ паттăрсем.

Камсем эпĕр?
Вăрнарсем –
Тĕнчери чиперккесем.

Камсем эпĕр?
Вăрнарсем –
Ялан пулнă малтисем.
Ялан пулăпăр малтах!

МЫ - ВУРНАРЦЫ

Кто же мы?
Вурнарцы -
Батыры-бойцы.

Кто же мы?
Вурнарцы -
Все в труде борцы.

Кто же мы?
Вурнарцы -
Вечные творцы.

Кто же мы?
Вурнарцы -
Строим и дворцы.

Кто же мы?
Вурнарцы -
Слава красоты.

Кто же мы?
Вурнарцы -
В мире молодцы!